К82.3(=Чув)
Х-17
Ч-39210

ЧӐВАШ ХАЛӐХ ПУЛТАРУЛӐХӖ

# ХАЛӐХ ЭПОСӖ

Национальная библиотека ЧР
4-039210

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ ГУМАНИТАРНЫХ НАУК

ЧӐВАШ ПАТШАЛӐХ ГУМАНИТАРИ ӐСЛӐЛӐХĔСЕН ИНСТИТУЧĔ

ЧУВАШСКОЕ КНИЖНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО

ЧӐВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ

ЧУВАШСКОЕ НАРОДНОЕ ТВОРЧЕСТВО

# НАРОДНЫЙ ЭПОС

ЧЕБОКСАРЫ — 2004

a2

К 8239(=44в)
Х17

ЧĂВАШ ХАЛĂХ ПУЛТАРУЛĂХĔ

# ХАЛĂХ ЭПОСĔ

ПРОВЕРЕНО

а6

ШУПАШКАР — 2004

УДК 821.512.111
ББК 82.3(2 Рос=Чув)—6
Ч 12

*Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн*
*Ăслăлăх канашĕ пичете çирĕплетнĕ*

Редакци канашĕ:
***В.С. Григорьев, В.Д. Димитриев, М.Г. Кондратьев, В.П. Станьял, А.А. Трофимов, Г.Ф. Юмарт***

Редакци ушкăнĕ:
***Н.И. Егоров, В.Г. Родионов, В.П. Станьял, А.А. Трофимов, В.Г. Харитонова, Г.Ф. Юмарт***

Рецензентсем:
филологи наукисен докторĕсем ***Н.И. Егоров, В.Г. Родионов***

Ăслăлăх редакторĕ ***Г.Ф.Юмарт***
Пухса хатĕрлекенĕсем ***Г.Ф. Юмарт, И.Г. Трофимова***

ПРОВЕРЕНО
20 12 21 МАР 2017

Ч-39210

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Ч 12 **Чăваш халăх пултарулăхĕ.** Халăх эпосĕ. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. — 382 с.

Нумай томлă «Чăваш халăх пултарулăхĕ» кăларăмăн иккĕмĕш кĕнекинче чăваш халăх эпосĕн тексчĕсем — улăп халапĕсемпе эпосла поэмăсем, мифла пейĕтсемпе истори юррисем пичетленеççĕ. Унта Н.Шелепи, С.Элкер, Çуйăн Хĕветĕрĕ тата ытти поэтсем çак жанрпа сăвăласа çырнă произведенисем те паллă вырăн йышăнаççĕ.

**УДК 821.512.111**
**ББК 82.3(2 Рос=Чув)—6**

© Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, 2004
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2004

**ISBN 5—7670—1333—0**

# ХАЛĂХ ЭПОСĔ — ХАЛĂХ КУН-ÇУЛĔ

Улăп тăпри çине ларса кансан вăй кĕрет тенĕ мăн асаттемĕрсем. Çак ытарлă сăмахра халăхăн аслă халалĕсенчен пĕри палăрать: улăпсен хавалĕпе пурăнакан хăй те улăп пек вăйлă пулĕ, апла çитĕнме халăхсен ĕмĕрхи ăс-халне ăша хывма тăрăшмалла. Чăвашсен нумай ĕмĕр хушшинче туптаннă идеалĕсем уйрăмах улăп халапĕсенче йĕрленсе юлнă. Халăх кун-çулне, унăн авалхи тавра курăмне фольклорăн пысăкрах пĕлтерĕшлĕ жанрĕ — халăх эпосĕ — хăйне май анлă ӳкерсе кăтартать. Тăван халăх пултарулăхĕнче вăл пуринчен ытла улăп халапĕсен формипе йĕркеленнĕ.

Халăх культурин хакĕпе пĕлтерĕшне тăтăшах унăн эпосла хайлавĕсем уçăмлăн кăтартса параççĕ. Акă, авалхи грексен пурнăçне малтан «Илиадăпа» «Одиссейăра» куратпăр, кăркăссен вăрăм та пуян кун-çулне «Манаса» вуласа пĕлетпĕр, карелсемпе тата финсемпе паллашас тенĕ чухне «Калевалăна» тытатпăр. Халăх пултарулăхĕн эпосла сăнарĕсем йăхсемпе ăрусене, каярахпа вĕсен пĕрлешĕвĕсене, нацисене пĕр чăмăра пĕрлешсе аталанма пулăшнă. Çакă вăл, паллах, чăвашсемшĕн те хамăра кура çапла пулнă.

Этемлĕх аталанăвĕн шайĕ, общество йĕрки, социалла пурнăç, халăхăн историри кун-çулĕ, пурăнакан çĕр-шывпа çут çанталăк мĕнле пулнине кура тĕрлĕ вăхăтра харпăр халăхăн эпосĕ тĕрлĕ мелпе, тĕрлĕ калăппа аталаннă. Хăй вăхăтĕнче çакна çителĕклĕ таран шута илмен пирки чăваш халăх эпосне пухса кăларасси вăрăма тăсăлчĕ. Кунпа пĕрлех ăна ытти сăлтавсем те чылай чăрмав кӳчĕç. Вăл шутра, сăмахран, хальхи тăван çырулăх каярах вăй илни те, эпос ыйтăвĕсене ятарласа тĕпчеменни те, материалсене çителĕксĕр пухни те пулчĕ.

## 1

«Улăп» сăмах хальхи вăхăтра халăх хушшинче пысăк пӳ-силлĕ, вăйлă паттăр пĕлтерĕшпе çӳрет. Авалхи вăхăтра вăл çар çыннине пĕлтернĕ. Ку вăл ытти тĕрĕк чĕлхинче те çавăн пекех (алп, алып). Ăру-йăх е вĕсен пĕрлешĕвĕсен пуçлăхĕсем хăйсен сумлăхне кăтартма тĕп ят çумне çак сăмаха хушса каласси те пулнă. Акă ăна эпир чăвашсен мăн аслашшĕсем — сăварсем — çинчен эрмен историкĕсем çырса хăварнисенче те куратпăр: VI ĕмĕрти сăварсен пуçлăхне Алп-Илитвер тесе каланă (кунта «алп» тени «улăп» тенине пĕлтерет).

Чăвашсен тахçанхи несĕлĕсем улăпсем çинчен пĕлнине сĕм авалах тĕнче пулса кайнипе тĕнче тытăмĕ çинчен хывнă халапсенче кăна мар, ытти истори материалĕсенче те тĕл пулатпăр. Ибн Фадлан Пăлхар патшалăхне çурçĕр енчен темĕнле шултра халăх çынни шывпа ишсе çитнине, çав питĕ çÿллĕ кĕлеткеллĕ çынна çакса вĕлернине асăнать, унăн ал çырăвĕнче çавăн пекех хазарсене хирĕç питĕ çÿллĕ юлан утçăсем çапăçни çинчен каланă.

XII ĕмĕрте Вăтам Атăл тăрăхĕнче пулнă тепĕр çул çÿревçĕ, араб çынни — Абу Хамид ал-Гарнати Пăлхарта питĕ пысăк кĕлеткеллĕ çынна курни çинчен пĕлтерет. Унăн çÿллĕшĕ çичĕ чике ытла-мĕн, ячĕ — Данки, вăл лашана ахаль çын путеке хул хушшине хĕстернĕ пек тытма пултарнă, лаша чĕркуççи шăммине курăка татнă пек хуçнă имĕш. Пăлхар патши ăна валли ятарласа тимĕр кĕпе (кольчуга) тата пысăк хуран пек шлем тутарнă. Çапăçура вăл юман чукмарпа çапăçнă. Çул çÿревçĕ пĕлтернĕ тăрăх, ун вăйĕ çав чукмарпа слона вĕлермелĕх те пулма пултарнă. Данки хăйне çынсемпе кăмăллă, сăпайлă тыткаланă. Пăлхарта вăл алăкран çăмăллăн кĕмелли мунча пĕрре кăна пулнă. Çав пысăк этемпе пĕртăван хĕрарăм та Пăлхар хулинчех пурăннă тет. Вăл хăйĕн Адам ятлă упăшкине хыттăн ыталанă та, лешĕн аяк пĕрчисем шартах хуçăлнă, çын тÿрех вилнĕ.

Тăшманпа тăшман хушшинчи çапăçусем улăпла çынсен тытăçăвĕпе пуçланнине вырăссен вăтам ĕмĕрсенчи историйĕнчен те чылай пĕлетпĕр. Акă Куликово хирĕнчи 1380 çулхи паллă çапăçу та икĕ енчи икĕ паттăр тытăçнипе пуçланнă. Историре пулса иртнĕ çавăн пек фактсем халăх пултарулăхĕн мелĕсене кура фантастика элеменчĕсемпе, пысăклатса-ÿстерсе каланипе пуянланнă, çавна пулах вĕсем ĕмĕрсем хушшинче аса çирĕп кĕрсе юлнă.

Чăваш халăх эпосĕ пулнă-и, пулнах тăк мĕнлерех сăнарлă — çакна тăван наука часах татса параймарĕ. Апла пулин те тăван халăхăн эпосла хайлавĕсене пухасси, вĕсене хак пама тытăнни пайтах вăхăт ĕнтĕ. Эппин, çак ĕç мĕнле аталанса пынă-ха?

Чăвашсен улăп халапĕсене чи малтан çырса илекенĕ вăл — Капитон Милькович этнограф. Вăл 1783 çулта çырса хăварнă тĕслĕх («Тĕтĕм витĕр улăп курăнать») малтанхи хут 1827 çулта «Северный архив» журналта çапăннă, каярахпа ăна В.К.Магницкипе Н.В.Никольский те пичетлесе кăларнă. К.Милькович тĕл пулнă халап сюжечĕ чылай хăйне евĕрлĕ те пуян, ăна шăп та шай çав хальлĕн урăх çырса илмен. Христос тĕнне кĕмен чăвашсен шучĕпе, чÿк çимĕçĕн юлашкине çунтаракан вут тĕтĕмĕнче улăп мĕлки палăрать-мĕн, хăй шурă тумлă, çÿçĕ кăвак, унăн пĕвĕ пĕлĕте çити çÿллĕ имĕш. Ку тĕслĕхре улăп сăнарĕ киреметçĕсен тĕнĕпе çыхăнни, вăл вилнĕ паллă çынсен культĕнчен аталанни лайăх сисĕнет.

Асăннă материал хыççăн чăвашсем çинчен çырнă литературăра улăп халапĕсем чылай вăхăт хушши пачах курăнмаççĕ. Ку вăл çак сăлтавран килнĕ: пичетленнĕ очерксен авторĕсене ытларах йăла-йĕрке, хуçалăх ыйтăвĕсем интереслентернĕ, халăх эпосне пухса тĕпчесси Российăра XIX ĕмĕр варринче çеç вăй илме тытăнать-ха. Каярахпа халăхсен историпе этнографине анлăрах çырса кăтартнă май улăп халапĕсене те çырса илме пикенеççĕ.

1871 çулта В.А.Белинин чăваш букварĕ валли халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене пухнă май улăппа сухаçă çинчен калакан халапа çырса илет. 1876 çулта М.Ф.Федоровăн «Авалхи çынсем» халапĕ пичетленет. Унта та

халăх эпосĕн тĕп сăнарĕ самай колоритлă та тулли курăнать: хальхи халăх аслашшĕсем пысăк пӳ-силлĕ те питĕ вăйлă этемсенчен пулнă имĕш, улăпсем хальхи пек этемсене пĕтерес пысăк айăпа кĕнĕ-мĕн. Кунтах М.Ф.Федоров халăх хушшинче анлă сарăлнă сюжетсенчен пĕрне çырса кăтартать: улăп суха сухалакан çынна лаши-сухапуçĕпех кĕсйине чиксе килет, амăшĕ пурне те каялла кайса яма хушать.

Н.И.Золотницкий, В.К.Магницкий, С.М.Шпилевский ĕçĕсенче улăп тăприсем епле пулса кайни çинчен калакан кĕске халапсем тĕл пулаççĕ. Ун варианчĕсем пурте пекех пĕр пĕлтерĕшлĕ (улăп тăприсем çӳллĕ те патвар çынсем уринчи тăпрана силлесе хăварнăран пулса кайнă теççĕ).

XIX ĕмĕрте пухнă материалсенчен уйрăмах мăкшă çĕр виçевçи В.И.Михайлов 1879—1892 çулсенче çырса хăварнă ал çыру паха. Унта маларах та, кайран та пачах асăрхаман е сахал тĕл пулакан çĕнĕ сюжет йĕрĕсем те пуян сăнарланнă. Акă вĕсенчен хăш-пĕри: Улăп — аслă паттăр — шăматкун çуралнă; вăл чăвашсен çĕр-шывне хӳтĕленĕ; вăл тутар-монголсемпе çапăçнă, юнкун вилнĕ; Улăпăн вăрçă хатĕрĕсем — айпăлтапа хĕç; вĕсене çĕр хапха урлă хурас йăла пулнă. Унчченхи тĕслĕхсенче «улăп» сăмах ытларах пайăр мар ята пĕлтернĕ пулсан, кунта ăна уйрăм çын ячĕпех асăннă, унăн кун-çулне халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнтарни те уççăнах сисĕнет, Улăп чăвашсен чи юратнă, чи аслă паттăрĕ пулни курăнать.

XX ĕмĕр умĕн çырса илнĕ ытти тĕслĕхсенчен А.В.Рекеев материалне асăнма юрать. Унта улăп ӳт-пĕвĕн пысăкăшне палăртса каланă çĕнĕ детальсем пур: улăпсем вăрмансем урлă çаран тăрăх утнă пек çӳренĕ, йывăççене курăка кăкланă пек тăпăлтарнă т.ыт.те.

Çĕнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче Н.И.Ашмарин хăйĕн нумай томлă «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» хатĕрлес тĕллевпе фольклор пухма ятарлă программа пичетлет. Çак вăхăтрах Н.В.Никольский те халăхăн йăли-йĕрки çинчен калакан материалсене çине тăрса пухма тытăнать. Çакă вара тăван халăх эпосĕн тĕслĕхĕсене ытларах пухма хавхалантарать, çул уçать. Ку ĕçе чылай çын хутшăнать (Г.Т.Тимофеев, И.Д.Никитин-Юркки т.ыт.те). Çĕршывра революци юхăмĕ сарăлса пыни вак халăхсене хăйсен кун-çулĕ çинчен хытăрах шухăшлаттарать. Улăп çинчен калакан материалсемпе çĕнĕ вариантсем çыра-çыра илнипе пĕрлех хăш-пĕр çыравçăсем вĕсемпе литературăра усă курасси çинчен шухăшлама пуçлаççĕ, эпос ыйтăвĕсене хускатма тытăнаççĕ. Акă Г.И.Комиссаров 1901 çулта хăй çырса илнĕ улăп халапне сăвăласа хурать. Г.Тихонов-Кăлкай А.С.Пушкинăн «Полтавине» чăвашла куçарнипе паллашнă май 1909 çулта И.Н.Юркин «хамăр чăваш çыннисене çĕклесе ярас» тĕллевпе тăван фольклорăн эпосла материалĕсемпе пысăк калăплă хайлавсем çырма кирлине астутарать: «Эпĕ хамăр чăвашсенĕн эпосне çырăттăм; унта Кочубей пеккисем пĕтес çук, çырма кăна ан ӳркен. Чăвашсенĕн халапĕсем пит нумай та пит аван, вĕсене халĕ пирĕн, чăвашсенĕн, пуçтарас пулать». Анчах Октябрьти революциччен вĕсене ятарласа тĕпчес ĕçе никам та тытăнайман, çырса илнĕ материалсенчен пайтахăшĕ пичетленеймесĕрех юлнă, вĕсем сапаланчăк упраннă.

Асăннă тĕслĕхсем прозăпа çырнăскерсем пулсан, 1906—1908 çулсенче Д.Месарош Хусана илни çинчен «эпосла вăрăм поэма» тĕрлĕ вырăнти чăвашсем хушшинче сарăлни çинчен асăнать. Кунсăр пуçне, Д.Месарош хăй те улăп тăприпе улăп шăмми çинчен калакан халапсене çырса илнĕ. Совет самани чăваш литературипе культурине аталанма хăш-пĕр енчен анлă çул уçса панă лару-тăрура халăх эпосĕн пуянлăхне палăртасси, унпа

усă курасси чĕрĕлсех пырать. Октябрьти революци хыççăн чи малтан эпосла улăп сăнарĕ Çеçпĕл Мишшин «Вăрман ачисем» калавĕнче тĕл пулать: авал Атăл паттăр пулнă-мĕн, куçĕ-пуçĕ — çăлтăр, пичĕ — уйăх, çӳçĕ — çиçĕм унăн пулнă тет», ашшĕ унăн — Киремет, хăй вăл вăрçăра çапăçса вилнĕ, «пытарнă ăна ылтăн тупăка тинĕсĕн тĕпне». Чăнах та, çак сăнар хăй тытăмĕпе чылай енчен халăх эпосĕн геройĕпе пĕр евĕрлĕ, çавăнпа ку сыпăка Çеçпĕл Мишши халăхран çырса илнĕ теме те май пур, ахальтен мар ăна И.И.Одюков хăй хатĕрленĕ улăп халапĕсен пуххине те кĕртнĕччĕ. Халапа сăвăласа çырнине тата калаври персонаж ăна юрласа панине кура халăхра юрласа каланă пуль тесе те шутланăччĕ. Тепĕр тĕлте И.И.Одюков хăех Çеçпĕл ку сăнара калăпланă чухне фольклорпа тӳреммĕн усă курнине иккĕленсе палăртнăччĕ. Çак шухăша çирĕплетекен материал та пур. 1917 çулта «Хыпар» хаçатра Турхан Энтри çырнă «Чăваш историйĕ» пысăк статья пичетленнĕ, унта хунсен патши Атилла пирки çапла каланă вырăн пур: «Атăлăн ӳтне ун халăхĕ кĕмĕл тупăк ăшне хурса Тăнай шывне пĕвесе чарса, вăхăтлăха урăх çĕре ярса, шыв тĕпĕ типсен çавăнта шăтăк чавса пытарнă тет. Унтан пĕвине татса, шывне хăйĕн вырăнне ярса савнă пуçлăхин ӳтне шывпа витнĕ тет». Çеçпĕл хăй калавĕнче шăпах çак материалпа усă курнă тесе татăклăнах калама пулать: унта та, кунта та Атăл паттăра сăнлакан детальсем пĕр пек. Киремете асăннине, паттăр сăнсăпатне ӳкерсе панине Çеçпĕл хăй хушса хунă, чăваш юмахĕсен мелĕпе усă курнă. Ун пек ăсталăх Çеçпĕлĕн «Çĕн кун аки» сăввинче те вăйлă сисĕнет: поэт халăх эпосĕн сăнарне çĕнĕ саманари чăваш ĕç çыннипе çыхăнтарать, ăна интернационализм туйăмĕ витерет, ытти çыравçăсене ку енĕпе ырă тĕслĕх кăтартать.

Совет саманин малтанхи вунăçуллăхĕнче, кунсăр пуçне, А.Петрова, М.Юман, И.Юркин, Г.Комиссаров, Ф.Романов, Тевет материалĕсем пичетленеççĕ, унччен асăрханă сюжетсене пуянлатакан детальсем те пайтах, çĕнĕ сюжетсем те курăнкалаççĕ. Çапах вĕсенче чăвашсен авалхи эпосĕн пуянлăхĕ питĕ чухăн курăнать-ха.

Ытти халăхсен эпос кĕнекисем тăтăшрах тухса пынă май чăваш çыравçисем улăп халапĕсен пĕтĕмĕшле пуянлăхне çыхăнуллă кăтартас, ăна çивĕч чĕлхепе сăвăлас ыйтăва хускатаççĕ. 1924 çулта «Сунтал» журналта ку тĕлĕшпе «сăмах ваклас йĕркепе» Степан Лашман «Юрă-сăвăсене, халапсене пухса йĕркелесе поэма çырма пулĕ-ши?» ятпа ятарлă пĕчĕк статья пичетлет. «Халăх сăмахлăхĕнчен йĕркелесе тунă произведенисем ытла та илемлĕ пулаççĕ, вĕсенче халăх чунĕ, пуçĕ, чĕри, куçĕ пит лайăх курăнать», — тет вăл илемлетнĕ эпос пĕлтерĕшне палăртса. Автор «Калевала» тĕслĕхĕпе чăвашсен эпосне йĕркелеме чĕнет, «пирĕн те Улăп пуррине, халапсенче урăх вăйсем те пуррине, кĕрешӳ те пуррине» асăрхаттарать, «Улăпиада» поэма çырма хатĕрленме кирлине палăртать. Шел пулин те, С.Лашман хускатнă пысăк ыйту тăрăх «сăмах ваклесси» пулаймасть, пичетре пĕр статья та тухмасть. Çакна пăхмасăрах Семен Элкер улăпсем çинчен калакан сюжетсен ярăмне йĕркелет, ăна сăвăлла каласа парать, малтанхи хут ăна «Улăп» ятпа 1927 çулта «Сунталта» пичетлет (10 №). Унта пĕтĕмпе вунă сюжет ытла: Улăп çеçен хирте амăшĕпе пурăнать, йывăç чукмар тăвать, выльăх пăхать, çĕленсемпе тата арăслансемпе, çавăн пекех пĕчĕк пӳллĕ хурахсемпе çапăçать, чулсене салатать, Алтай енчен анăçа пурăнма куçать, çĕр ĕçлекен этеме лаши-сухапуçĕпех кĕсйине чиксе килет, амăшĕ хушнипе каялла кайса ярать. Юлашкинчен

улăп тăприсем урине çыпăçнă пылчăк-тăпрана силленипе пулни çинчен каланă. Кайранхи кăларăмсенче (1941, 1956, 1960) поэт хăй сăвăланă халапа — «Улăпсем», тĕп персонажа Ахрат тесе ят панă, Эсреметпе Хăямат сăнарĕсене хушнă. С.Элкер кунта чăвашсен несĕлĕсем куçса килнине тĕрĕсех кăтартнă, чăваш халапĕсен стильне те вырăнлă тытса пынă, унăн чĕлхи уçăмлă та яка, автор тăван поэзишĕн чи характерлă сăвă виçипе — çичĕ сыпăклă силлабикăпа такмаклать. Анчах халапра халăхăн сĕм авалхи тапхăрĕ кăна сăнарланнă, ăна пĕтĕмĕшле çеç кăтартнă, çавăнпа вăл асамлă юмах пек вуланать. Çакна та асăрхаттарса хăвармалла: С.Элкер каланă тăрăх, халапсен ярăмне сăвăланă чухне кăркăссен «Аджа» ятлă халапĕпе те усă курнă, хăйĕнчен те хушса çырнă, çавăнпа ăна халăх эпосĕн чăнчăн тĕслĕхĕ тесе калама пултараймастпăр.

С.Элкер халăх эпосĕ çинчен каярах та, 1961 çулта, çырса хăварнă. «Улăпсем çинчен» ятлă ал çырăвĕнче чăвашсем хушшинче Улăп çинчен калакан мĕнле-мĕнле сюжет упранса юлнине палăртать, çаксене асăнать: Улăп вăрмансем, шывсем урлă утать, вăл çӳллĕ йывăççене пĕç хушши витĕр хăварать, ватă йывăçа армути тесе тăпăлтарать, суха тăвакансене кăвакарчăн е çĕр хурчĕ вырăнне хурать те амăшĕ патне кĕсйине чиксе каять, амăшĕ ăна сухаçăсене тивме хушмасть, улăп тăприсемпе çаврака лупашкасем Улăп урин йĕррине тата вăл силленĕ тăпрана пĕлтереççĕ. С.Элкер кунта хăй сăвăланă эпос материалĕсенчи сюжетсенех илсе кăтартать. Унччен пичетленнĕ е архивсенче выртакан хăш-пĕр тĕслĕхсене вăл шута илеймен. 1947 çулта поэт Çуйăн Хĕветĕрĕн «Улăп» ятлă сăвăлла халапне редакциленĕ, анчах «Улăпсем çинчен» статьяна çав халапри çĕнĕрех сюжетсене те кĕртмен: ахăртнех, Çуйăн Хĕветĕрĕ усă курнă сюжетсене асамлă юмах жанрĕн элеменчĕсем кăна тесе шутланă пулас.

С.Элкер манăçнă хăш-пĕр сюжетсем çинчен те пĕлтерет: Улăп пек паттăрсем, былинăлла пăхаттирсем çинчен каланисем пирĕн урăх юмахсем те пулнă: вĕсенчен чи палли «Хĕвеле ирĕке кăларни» — Михаил Петрович (Тинехпи) çырса хăварни. Анчах Тинехпи хăй ача чухнех илтнĕ юмаха чылай манса кайни çинчен хăех каласа парать. Вăл халĕ те питĕ пысăк фантазиллĕ, вăйлă та илемлĕ юмах.

Тата фольклора юратакан Илле Тукташ та час-часах ĕлĕк, хăй ача чух, час-часах илтнĕ пĕр юмах çинчен асăнатчĕ. Ку юмах пĕр вăйлă паттăр Пăта патшан пăта пек тăрăнакан çар çыннисемпе çапăçса вĕсене çĕмĕрни çинчен, çав паттăр хăйĕн тăван халăхне усал тăшмансенчен хăтарса ирĕклĕ кун-çул пани çинчен калатчĕ. Анчах та манса кайнă пирки Тукташ ку юмаха çырса хăварма пултараймарĕ. «Ку юмах вара чăн та чăваш халăхĕн былиниех», — тетчĕ вăл ăна çырайманнишĕн шеллесе.

Асăннă юлашки икĕ юмах çинчен И.Тукташ хăй те «Чăваш фольклорĕ» кĕнекен малтанхи кăларăмĕн ум сăмахĕнче каланă. Вĕсене тĕпчевçĕ çакăн йышши ытти асамлă юмахсемпе пĕрле вырăс тата тĕрĕк халăхĕсен эпосĕпе танлаштарать, вĕсен пĕрпеклĕхĕсемпе уйрăмлăхĕсене палăртать. Çапла вăл чăваш наукинче халăх эпосне тĕпчес ĕçе пуçарать, чылай уçăмлă та çивĕч шухăшсем калать. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Н.В.Никольский И.Тукташ хатĕрленĕ «Чăваш фольклорĕ» кĕнекен ал çырăвне рецензиленĕ май чăваш юмахĕсенче тĕл пулакан эпос сюжечĕсене асăнать, чăваш эпосне аталанма тутар ханĕсен пусмăрĕпе патша влаçĕн йĕрки чăрмантарнине палăртать.

И.Тукташ тĕпчевĕ çакăн пек пысăк ыйтусене татса парать: чăвашсен «пĕтĕмĕн сыхланса упраннă эпос тĕслĕхĕсем пачах та çук», «чăваш юррисем хушшинче героикăллă эпос йĕрĕсем ... пачах тĕл пулмаççĕ», «каярахри вăхăтсенче хывнă чăваш юмахĕсен тĕп форми юрă мар, повествовани», анчах авал «сăвăласа, юрă манерĕпе каласа панă» юмахсем те çӳренĕ, «чăвашсен авал эпосла произведенисем чăн та пулнă, анчах вĕсем историлле йывăр сăлтавсене пула вăрахăн-вăрахăнах манăçа тухса пынă, юлашкинчен вара пĕтĕм фольклор пуянлăхĕнче вĕсен йĕрĕсемпе пĕчĕк тĕпренчĕкĕсем кăна тăрса юлнă». Хăй шухăшĕсене ĕнентерме автор чылай тĕслĕх илсе кăтартать.

Тĕпчевĕн 1941 çулхи вариантĕнче И.Тукташ улăп халапĕсене тишкермен-ха, Улăп сăнарне унта «пысăк кĕлеткеллĕ паттăрсем» пирки каланă май çеç асăннă. 1949 çулта тухнă «Чăваш фольклорĕ» кĕнекере ум сăмах авторĕ И.Тукташ улăп халапĕсене те чылай енчен хак парать. Кунта вăл С.Элкер сăвăланă ярăмри сюжетсене тĕпе хунă, архивсенчи пичетленмен текстсене явăçтарма ĕлкĕреймен, çавăнпа Улăп паттăр çинчен калакан халапсем питĕ сахал упраннине кăтартать: «Ĕмĕрсем урлă утса тухнă халăх геройĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен эпир хальхи вăхăтра татăккĕсĕксем кăна тĕл пулатпăр. Вăл епле çуралса ӳсни, хăй ĕмĕрĕнче епле тăшмансемпе çапăçни, халăхăн пулас телейĕшĕн епле мухтавлă ĕçсем туса хăварни — çаксем нимĕн те паллă мар», — тет И.Тукташ.

Тĕпчевçĕ Улăп сăнарне нумай енчен тĕрĕс хак парать. Ун шучĕпе, Улăп йăваш та тӳрĕ кăмăллă пулнă, вăл хăйне тĕкĕнмен чухне никама та хур тумасть, çавăнпа ăна чăвашсем мĕн ĕлĕкренех чи юратнă паттăрĕ тесе шутланă. Улăп халапĕсене И.Тукташ «истори тусанĕ айне пулса çухалнă эпос тĕпренчĕкĕсем» тесе тĕрĕсех хаклать, çавна май чăвашсен халăх эпосĕ пулнине татăклăнах çирĕплетсе калать.

Хамăр çĕршывра халăхсен эпосне тĕпчесси вăйлансах пынă лару-тăрура çак пĕтĕмлетӳсем чăвашла çĕнĕ материалсем пухса пичетлеме, пĕтĕм тĕслĕхсене анлăрах тишкерме май пачĕç. Ку вăл чăваш халăхĕн тĕрлĕрен науки вăй илнĕ май пĕрле пулса пычĕ.

1940—1970 çулсенче Н.Данилов, В.Каховский, В.Иванов-Паймен, Юхма Мишши улăп халапĕсен çĕнĕ тĕслĕхĕсене пичетлеççĕ. Вĕсенчен уйрăмах 1963 çулта «Сказки и предания чуваш» кĕнекере кăларнă «Улăп историйĕ» пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăл текст халăх историйĕн вăрăм тапхăрне анлă кăтартать. Кунта чăвашсен несĕлĕсем Çурçĕр Кавказра пурăнни те, Вăтам Атăл тăрăхне куçса килни те уçăмлă йĕрленнĕ, маларах выльăх ĕрчетсе пурăнни, унтан çĕр ĕçне тытăнни те сăнарланнă, тĕнпе йăлайĕрке паллисем те ӳкерĕнсе юлнă. Халапра улăпсен икĕ ӳсĕмне куратпăр: турă çĕр çине янă улăпăн йĕкĕреш ывăл çуралать. Ку тĕслĕхре çĕнни нумай — улăпсем мĕншĕн пысăк айăпа кĕнине ăнлантарса парать: тусем хушшинчи вĕтĕ çынсене ырра вĕрентме янă улăп турă ирĕкĕнчен тухать — вĕтĕ çынсен кĕтĕвĕсене туртса илет, хăйсене тĕрлĕ çĕре хăваласа ярать, çавăнпах ăна турă кайран ту çумне сăнчăрласа хурать.

В.Каховский археолог республикăри улăп тăприсене тĕпченĕ май вĕсенчен хăш-пĕрисем историри паллă ĕç-пулăмсемпе (вăрçă-харçăпа) çыхăннине кăтартрĕ, халăх хушшинче çӳрекен халапсен тĕрлĕрен варианчĕсене чылай пухрĕ, вĕсем çинчен пĕтĕмлетсе каларĕ, çапла вара тăван тавралăхри улăп тăприсем çинчен лайăхрах пĕлме пулăшрĕ.

В.Иванов-Паймен «Кĕпер» романăн пуçламăшĕнче усă курнă улăп

халапĕн сюжечĕ оригиналлăхпа уйрăлса тăрать: Атнер улăп çăпатине Киреметвăрлать, улăп çӳрекен вырăнсене шурлăх-йӳçлĕх туса хурать, чухăнсене ырă пурнăç туса парасшăн тăракан паттăра ĕмĕрлĕхех çывратса ярать. Татса калама çук, прозаик хăй фантазийĕпе улăштарнă вырăн та пур-и тен унта, çавăнпа ăна чăн-чăн фольклор материалĕ теме хĕн.

Халăх эпосĕн материалĕсене пухса тĕпчесси уйрăмах юлашки çирĕм-çирĕм пилĕк çул хушшинче вăй илчĕ. Улăп халапĕсене пухас ĕçре чи малтанах И.И.Одюков, Çуйăн Хĕветĕрĕ, Иван Патмарпа Юхма Мишши нумай тăрăшнине палăртмалла. Чăваш наука тĕпчев институчĕ ирттернĕ фольклор экспедицийĕсем вăхăтĕнче те чылай текст çырса илнĕ, наука архивĕсенче те сахал мар çĕнĕ ал çырусем тупнă. Тĕпчев институчĕ халăх эпосĕн çивĕч ыйтăвĕсене татса парас тĕллевпе ятарлă комисси йĕркелерĕ, комисси ларăвĕсенче фольклор материалĕсем тăрăх эпосла поэма йĕркелес хăш-пĕр ыйтусене сӳтсе яврĕç. Çак тапхăрта чăваш тĕпчевçисем халиччен пухăннă материала тĕрлĕрен наука куçĕпе тишкерчĕç, вĕсен пахалăхне тата халăх культуринчи пĕлтерĕшне чылаях анлă кăтартса пачĕç.

1975 çулта И.И.Одюков чăваш халăх эпосĕн тĕслĕхĕсене «Улăп» ятпа уйрăм кĕнекен пухса кăларни чăваш фольклористикинчи паллă ĕç пулса тăчĕ. Кĕнекере малтанхи хут çапăннă материал нумай, вĕсенчен чылайăшне И.И.Одюков хăй пухнă. Ум сăмахра паллă фольклорист пичетленекен халапсем чăвашсен историйĕпе мĕн тери тачă çыхăнни çинчен кĕскен каласа панă, ăнлантарусенче текстсене хăçан, кам, ăçта çырса илнине кăтартнă, вĕçĕнче улăпсем çинчен калакан литература библиографине кăштах кĕртнĕ. Кĕнекене шкул çулĕнчи ачасем валли кăларнă, унта юлашки тапхăрчченпухăннă чи паллă сюжетсем çеç кĕнĕ, наука аппарачĕ те ăшăх, çавăнпа ăна чăн-чăн наука кăларăмĕ теме çук. Апла пулин те кĕнеке халăх эпосĕн пуянлăхне, унăн уйрăмлăхĕсене унчченхинчен чылай анлă кăтартать. «Пĕлĕт çĕклекен улăп», «Пĕлĕт çинчи улăп», «Вĕçсе çӳрекен улăп» ятлă текстсем хăйсен идейипе сăнарĕсене кура чăвашсен сĕм авал хывнă халапĕсем пулма тивĕçлĕ, вĕсенче, сăмахран, халăхăмăр несĕлĕсем Атăл çине куçса килнĕ хыççăнхи пурнăç паллисем сисĕнмеççĕ. Вулакансемшĕн унччен улăпсен паттăрлăхĕ çинчен калакан сюжетсем паллă пулман пулсан, кунта вара вĕсем чылаях пысăк вырăн йышăнаççĕ: улăпсем Алтăркуçпа, темиçешер пуçлă аçтахасемпе, Хусан ханĕсемпе, паллă мар Терпет хунпа çапăçаççĕ («Улăппа çăткăн Алтăркуç», «Улăппа çичĕ пуçлă Аçтаха», «Çунатлă урхамах», «Ахплат паттăр»). Çак тĕслĕхсем тăван халăх пултарулăхĕнче хăй вăхăтĕнче паттăрлăх эпосĕ те пулнине татăклăн çирĕплетсе пачĕç. Кĕнекери текстсем улăпсем çĕр ĕçĕпе пурăнма тытăннине витĕмлĕ сăнласа кăтартаççĕ. Сăмахран, Асамат паттăр Улăпа тимĕр тĕрен туса парать. Малтанхи вăхăтра эпир эпос геройĕсене ятсăр паттăр пек çеç пĕлнĕ пулсан, кунта вĕсен тĕрлĕрен ятне тĕл пулатпăр (Улăп, Асамат, Юман, Таттаймăс, Çĕрпӳ, Ахплат т.ыт.те). «Хĕр хуйхи» халапра Улăпăн Савтепи ятлă савнă хĕр-тусĕ пулни çинчен каланă. Çак фактсем халăх эпосĕн тематики анлă пулнине кăтартрĕç. Вăл чăнах та çапла пулнине Çуйăн Хĕветĕрĕ, Иван Патмарпа Юхма Мишши ятарласа пухнă материалсенчен те курма пулать (халĕ вĕсем Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх архивĕнче упранаççĕ). Çуйăн Хĕветĕрĕ сăвăласа «Улăп» ятпа паттăрлăх халапĕсен ярăмне йĕркелесе çырчĕ, Юхма Мишши вара литература тĕлĕшĕнчен илемлетсе прозăлла каласа пачĕ.

Унта тĕпре тăван фольклор материалĕсем тăраççĕ пулин те, вĕсене халăх пултарулăхĕн таса тĕслĕхĕсем теме çук, çавăнпа вĕсене тишкересси — уйрăм ĕç. Асăннă энтузиастсен нумай çул хушши пухса пынă тексчĕсем тăван халăх эпосĕн тĕнчине тата анлăрах курма пулăшаççĕ. Халĕ кăларакан кĕнекен тĕп тĕллевĕсенчен пĕри вăл — тĕпчевçĕсем валли материалсем пухса парасси, халăх эпосĕн тĕслĕхĕсене пухса тĕпчес ĕç аталанăвне анлăрах пĕтĕмлетесси.

Юлашки тапхăрта чăваш тĕпчевçисем халăх эпосĕ çинчен çырнă литература сахал мар ĕнтĕ. Вĕсенчи тĕп шухăшсем мĕнлерех-ха?

М.Я.Сироткин 1965 çултах чăваш халăхĕн эпос хывас пултарулăхĕ асамлă юмахсен формипе кăна мар, çурма мифла халапсенче те палăрнине асăрханăччĕ, çакна вăл чăвашсен несĕлĕсем Алтай çывăхĕнче, Çурçĕр Кавказра, каярах Вăтам Атăл тăрăхĕнче пурăнни çинчен, йăх пуçĕсем çинчен калакан халапсенче курнă. Ун шучĕпе, авалхи историлле ĕç-пулăмсем асамлă юмахсенчи улăпсем тăван çĕршĕн, ирĕклĕхшĕн çĕленсемпе çапăçни урлă çеç сăнарланса юлнă-мĕн, çав юмахсем анлă эпосла юрăсем е былинăсем валли никĕс пулса тăрайман, çак процеса тутар-монголсен пусмăрĕ чарса лартнă. М.Я.Сироткин, тĕпрен илсен, И.С.Тукташпа Н.В.Никольский шухăшĕсен йĕрĕпех пырать, вĕсен пĕтĕмлетĕвĕсене аталантарать, анчах вăл улăп халапĕсем халăх пултарулăхĕнче уйрăм жанр форми пулса юлнине тĕллесе кăтартмасть. Сăлтавĕсене ăнланма çăмăл: халăх эпосĕн хайлавĕсене ун чухне сахал пухса кăларма ĕлкĕрнĕ.

Чăвашсен улăп халапĕсене С.В.Элкерпе И.С.Тукташах ытти халăхсен (вырăс тата тĕрĕк халăхĕсен) эпосĕпе танлаштарса пăхма тытăннăччĕ, вĕсен сюжечĕсемпе сăнарсен пĕрпеклĕхĕсене палăрткаланăччĕ. Çакă этнограф куçĕпе тишкерекен П.В.Денисова чăваш халапĕсем пăлхар, венгр тата тутар халăхĕсен эпосĕпе пĕр тымартан аталаннине асăрхама май пачĕ, вăл халăхсен авалхи çыхăнăвĕсене кăтартрĕ, вĕсем йăх-ăру хутшăнăвĕсенченех, йăхсем çеçен хирсем тăрăх куçса çӳренĕ вăхăтранах юлнине палăртрĕ.

Тĕрлĕ халăх эпосĕнчи çыхăнусем В.Ф.Каховскишĕн чăвашсен авалхи историри кун-çулĕ çинчен калакан шухăшсене çирĕплетме вырăнлă материал пулса тăчĕç, историк юнашар пурăннă халăхсем пĕр-пĕрне культура витĕмĕ кӳнине кăтартса хăварчĕ.

Çапла танлаштарса тĕпченĕ май В.Я.Канюков тăван халăх эпосĕн тематикипе жанр формин уйрăмлăхĕсене уççăнрах чикĕлеме тăрăшрĕ. Вăл каланă тăрăх, улăп халапĕсем Вăтам Азипе Уралти тĕрĕк халăхĕсен паттăрлăх эпосĕпе пĕр тымартан матриархат тапхăрĕнчех аталаннă. Пирĕн хăш-пĕр сюжетсене питĕ çывăххисем Атăлçипе Балтикăçи угро-финнсен фольклорĕнче те пур иккен. Тĕпчевçĕ чăваш халăх эпосĕ мĕншĕн иртерех аталанма пăрахни çинче чылай чарăнса тăрать. Тĕпрен илсен, вăл унчченхи фольклористсем каланине пĕтĕмлетсе çырчĕ.

Халăх педагогикине тишкерсе тухас тĕллевпе Г.Н.Волков та улăп халапĕсене те аякка хăвармарĕ, вĕсенче халăхăн пурнăç хăнăхăвĕ сăнарланса юлнине палăртрĕ. Çакна вăл улăпсем те пысăк айăпа кĕрсе йывăр инкеке лекни çинчен калакан сюжетра асăрхарĕ. Улăпа ту хырçи çумне сăнчăрлама хистенĕ сăлтав вăл — кĕвĕçӳ-çăткăнлăх туйăмĕ. Тата çак сюжетрах ырă пахалăх пур: улăп хăйĕн йăнăшне туйса илет, ăна татăклăнах сивлет, ахальтен мар вăл хăйĕн йĕкĕреш ывăлне хăй тунă пысăк йăнăшран сыхланма, пурнăçра ырă вăрлăх кăна акма пиллесе-халалласа хăварать.

Çакă вăл халăхăмăрăн йывăрлăхра туптаннă, хаклă хакпа тупнă ăс-халĕ. Вăл вулакансемшĕн — паян кун та усал ĕçе сивлеме вĕрентекен ырă тĕслĕх.

А.К.Салмин «Чăваш эпосне йĕркелеме май пур-и?» статьяра хускатнă ыйту чăваш фольклористикишĕн чăнах та çивĕч шутланать: автор чăваш халăх эпосĕн пуянлăхне унăн халапĕсенче кăна мар, паттăрлăх халапĕсенче те шырама кирлине асăрхаттарчĕ. Çакна шута илсе çитерейменнипех ĕнтĕ эпос тĕпчевçисемпе çырулăх эпосĕ йĕркелес текенсем «тĕрĕс çул çине ўкеймен» имĕш, тăван халăх эпосĕн аталанăвне тĕплĕ çутатса параймарĕç. А.К.Салмин аса илтерни çĕнĕ шухăш мар-ха, ăна Н.В.Никольский, И.С.Тукташ, М.Я.Сироткин та палăртса хăварнăччĕ, анчах «таса эпос шыранипе» пĕр вăхăтра паттăрлăх юмахĕсенчи эпос туртăмĕсене кирлĕ пек хакламанни те пулчĕ, паттăрлăх юмахĕсене асамлă юмахсемпе шайлаштарчĕç. Ку вăл, пĕр енчен, жанр ыйтăвĕсене наукăра уçăмлăн татса пĕтерменнинчен те килчĕ. Çитменнине, паттăрсем çинчен калакан юмахсене халиччен те ятарласа анлăн тишкерейимен-ха, ун пек юмахсене уйрăм кĕнекен те пухса кăларман.

«Паттăрлăх эпосĕ, пысăк произведенисем хальлĕн мар пулин те, юмах-халап майăн паян кунччен упранать», — тет А.Салмин. Вăл кунтах эпосла халапсен пĕтĕмĕшле тытăмне палăртать, тĕслĕхсемпе çирĕплетет, паттăрлăх юмахĕ халăх эпосĕн «кĕçĕн форми е ун аталанăвĕн умĕнхи тапхăрĕ» тесе шутлать. Асăннă фольклорист çине тăрса асăрхаттарни хăш-пĕр авторсене халăх пултарулăхĕн материалĕсем тăрăх çырулăх эпосĕ йĕркелеме хавхалантарчĕ. Çуйăн Хĕветĕрĕпе Юхма Мишши халăх халапĕсене тата паттăрлăх юмахĕсен еккипе йĕркелесе çырнисем чылаях ăнăçлă пулчĕç, вĕсене тăван халăх историне анлăрах кăтартма, халăхăн авалхи паттăрлăхне курăмлăрах ўкерсе пама май килчĕ.

Кунта А.К.Салминăн тепĕр ĕçне те ырăпа асăнса хăвармалла. Вăл чăваш эпосне калмăксен «Джангарĕпе» танлаштарса пăхрĕ. Çакă тăван фольклор тĕпчевçисене чăваш халăх пултарулăхне ытти халăхсен ăсталăхĕпе тĕплĕрех танлаштарса ĕçлеме хистет, вăл тăван эпос пуянлăхне ăнкарма ăнăçлă мел пулса тăрать.

Çапла ĕçлени Юхма Мишшине те çакăн йышши урăх материалсен пĕлтерĕшне уçăмлăрах кăтартас çул çине кăларчĕ. Кунта сăмах чăвашпа мари халăхĕсен улăп халапĕсене танлаштарса пăхни çинчен пырать. Чăваш Республикин Етĕрнепе Çĕрпў районĕсенчи чăвашсем хушшинче Кăнар улăп çинчен çырса илнĕ халапсем пур. Кăнар сăнарĕ марисен Онар паттăрĕпе пĕр иккен. Çак пĕрпеклĕх икĕ халăх кўршĕллĕ пурăннинчен килет — çапла çирĕплетет Юхма Мишши. Кăнар паттăр ячĕ, ун шучĕпе, чăвашсем хушшине марисенчен куçса сарăлма пултарнă. Ку шухăшпа чиперех килĕшме пулать. Чĕлхемĕр саккунĕ те çакна хирĕçлемест. Кунта çапла хушса калама пулать: историрен паллă ĕнтĕ, туçи марисем ĕлĕкех сахал мар чăвашланнă. Кăнар паттăр сăнарĕ вирьял чăвашĕсем хушшинче сарăлни шăпах çакăнтан килнĕ те ĕнтĕ.

Асăннă тĕпчевçĕсенчен чылайăшĕ халăх эпосĕн ыйтăвĕсене ытти темăна çутатнă май тишкернĕ пулсан, И.И.Одюковăн «Чувашские сказания об улпах» статйи чăваш фольклорĕн çак жанрне ятарласа хак панă тĕп ĕç пулса тăчĕ. Вăл 1970 çулсен варри таран пухнă пĕтĕм материала тата вĕсем çинчен çырнă тĕпчевсене анлăн пĕтĕмлетрĕ, татса паман хăш-пĕр ыйтусем пирки уçăмлă сăмах каларĕ. Статья авторĕ улăпсем çинчен çырнă

литературăна мĕн авалтан тишкернĕ май малтанхи тĕпчевçĕсен шухăшне çирĕплетме çĕнĕ тĕслĕхсем илсе кăтартать. Атăлçи тĕрĕк халăхĕсен эпосла халапĕсем Пăлхар патшалăхĕ вăхăтĕнче е çав патшалăха кĕнĕ йăхсен унччен кун-çулĕнче йĕркеленнĕ. Çакна унччен палăртнăччĕ (Н.В.Никольский, И.С.Тукташ, М.Я.Сироткин, П.В.Денисов, В.Я.Канюков, В.Ф.Каховский). Шухăша ĕнентерме паллă фольклорист чăвашсен улăп халапĕсене нумай тĕрĕк халăхĕн эпосĕпе танлаштарать, вĕсен пĕрпеклĕхне уççăн курать. Ăна май вăл «улăп» сăмахăн кун-çулне тĕрĕк халăхĕсен тĕп аслашшĕн Ашинăн династийĕ таранах йĕрлесе тухать, çав сăмаха патшасенчен пайтахăшĕ титул вырăнне хăйсен ячĕ çумне хушса каланине чылай асăнать. Çапла вара, чăвашсен «улăпĕ» хăйĕн аталанăвĕпе авалхи тĕрĕксен пурнăçĕпе çыхăнни иккĕлентерӳсĕр факт пулса тăрать.

Хăй умĕнхи хăш-пĕр тишкерӳçĕсемпе килĕшсе, В.Я.Канюков çапла каланăччĕ: «чăвашсен героикăлла эпос упранса юлман», çакă вăл вĕсем уйрăм халăх пулса йĕркеленнĕ самана йывăр пулнинчен килме пултарнă, çавăнпа хăйсем халăх пулса чăмăртаннă вăхăтра — «хăйсен историне мухтаса юрлас тапхăрта чăвашсем тăшман пусмăрĕ айне нумайлăха лекмелле пулса тăнă, халăхăн хăйĕн паттăрлăхĕпе мăнаçлăхне мухтама сăлтавĕ çĕтнĕ, эпос аталанăвĕ чарăнса ларнă».

Çак пĕтĕмлетĕве И.И.Одюков пĕр иккĕленмесĕр йышăнать, анчах та тăван фольклор материалĕсем ăна хирĕçлени курăнать. Чăвашсен паттăрлăх эпосĕн тĕслĕхĕсем пурри халĕ аванах сисĕне пуçларĕ: улăпсем тĕрлĕрен çĕлен-аçтахапа çеç мар, пусмăрçă-патшасемпе, Хусан ханĕсемпе кĕрешеççĕ. Акă Улăп тутар-монголсемпе çапăçса вилни çинчен калакан сюжет тĕслĕхне В.И.Михайлов 1878—1881 çулсенчех çырса илнĕ, ун пек текстсем юлашки вăхăтра пайтах тупăнчĕç, çавăнпа чăвашсен «героикăлла эпос упранман» тени тĕрĕс мар пулса тухать.

Чăваш халăх эпосĕ мĕншĕн пĕчĕк калăплă формăпа — улăп халапĕсем хальлĕн — аталаннин, вăл эпосла поэма формипе вăй илейменнин сăлтавне чăвашсем нумай вăхăт пусмăра лекнипе çыхăнтарни ĕнентерӳсĕр курăнать. Ку вăл чăвашсем çĕр ĕçĕпе пурăнма ытти тĕрĕк халăхĕсенчен маларах çыхăннăран та килнĕ теме пулать. Халăха сапаланарах пурăнма тивнĕ пулсан та «пĕрлĕхлĕ ушкăнпа» пурăнасси пачах çухалман. Халăхăн патшалăх интересĕсене сыхлас тивĕçĕ пĕчĕкленнĕрен тата уйрăм çĕре яланлăха çирĕп вырнаçнăран тĕрлĕ вырăнти чăвашсем пĕр-пĕринпе сахалрах хутшăннă, çавна май пысăк эпос традицийĕсем вăйлă аталанайман. Чăвашсем пусмăрта пурăннă пулин те, вĕсен хăйсен çĕршывне, тĕнне сыхласси пĕтсе ларман, кĕрешĕвĕ чарăнман, çавна май ăна сăнарлама эпос форми кирлех пулнă. XIII ĕмĕртенпе халăхăмăр пусмăрта пурăнни эпосăмăра хăйне евĕр йĕркеленĕ.

Улăп халапĕсенче Хусан ханĕсене хирĕç çапăçнисем упранса юлнине кура чăваш халăх эпосĕ XVI ĕмĕрчченех аталаннă теме пултаратпăр. Ун хыççăн, чăнах та, халăх историе «эпос куçĕпе мар, урăхла виçепе пăхма пуçлать». Ку вăхăтченхи пурнăçа сăнлакан истори халапĕсенче миф, эпос традцийĕсем вăйлă-ха.

И.И.Одюков тĕпчевĕн пысăк пĕлтерĕшĕ акă мĕнре: унта улăп халапĕсен жанр паллисене халичченхинчен туллирех кăтартнă, çĕнĕ материал чылай явăçтарнă. Автор шучĕпе, улăп халапĕсенче мифсемпе пĕрпеклĕх сахал мар, вĕсем хăйне уйрăм жанр пахалăхĕсене çителĕклĕ пĕрлештерсе тăраççĕ. Чăваш эпосĕн тексчĕсенче сĕм авалхи сюжетсем тĕп вырăн

йышăнаççĕ. Вĕсем йăх-ăру, матриархат тапхăрĕнченех килеççĕ, çĕнĕ эрăченех йĕркеленнĕ, хăйсен ĕлĕкхи сăн-сăпатне нумай улăштарман.

Улăп тăприсем çинчен калакан халапсем те авалхи тапхăртах, чăвашсен мăн аслашшĕсем Атăл çине куçса киличченех, йĕркеленнĕ иккен. Çакна И.Одюков çапла ăнлантарать: Чăваш Республикинче улăп тăприсен хисепĕ пилĕкçĕртен иртет, вĕсем чăвашсем ку вырăна киличченех пулса кайнă. Халăхăмăр вĕсене хальхи вырăна куçса килсессĕн тин «улăп тăпри» тесе ят панă. Ку вăл хамăр фольклора кӳршĕ халăхсеннипе танлаштарнинчен те курăнать-мĕн (тутарсемпе марисен халапĕсенче улăп тăприсем улăп хăй çăпатинчи тăприне силлесе хăварнипе пулса кайни çинчен каланисем çук).

В.Я.Канюков чăваш паттăрĕн, ытти халăхсенни пек, юлташĕсем çук тесе çирĕплетнĕччĕ. И.И.Одюков сăнанă тăрăх, чăваш халăх эпосĕнче сакăр улăп тĕл пулать: Улăп, Марка, Алтăр Хайпулла, Таттаймăс, Курмин Курминч, Туппин Туппинч, Атăл паттăр, Лапшу Çтаппанĕ. Ку ятсенчен Çеçпĕл Мишши калавĕнчен илнĕ Атăл паттăр ячĕ чăн-чăн халăх эпосĕпе çыхăнманнине малтан палăртрăмăр ĕнтĕ. Лапшу Çтаппанĕ те мĕн авалтан килекен ят мар, вăл совет саманинче Куçма Чулкаçăн «Сунарçă халапĕсем» кĕнеки урлă сарăлнă. Юлашки вăхăтра пухса-тупса палăртнă текстсенче ытти улăпсен ячĕсем те пур: Асамат, Юман, Çĕрпӳ, Сикпăрçа, Хĕлиман т.ыт.те. Атăл паттăр тенĕрен тата çакна каласа хăвармалла: çак ятпа çӳрекен паттăр халăх пултарулăхĕнче чăнах тĕл пулать, вăл чăвашсене Христос тĕнне кĕртессине хирĕç питĕ хытă тăнă иккен, Атăл юхан шывне те ун ячĕпе панă имĕш.

И.И.Одюков улăпсен çӳллĕшĕпе утăмĕ тĕрлĕрен пулнине палăртать. Вăл халăх эпосĕнче паттăрăн ăрăвĕ çинчен каланине пĕтĕмлетет. Текстра улăп ытларах амăшĕпе кăна пурăнать. Улăпăн ашшĕ пурри çинчен калани питĕ сайра, кун пек халапсем йĕркеленессе те каярахпа йĕркеленнĕ, вĕсем чăваш эпосĕн малтанхи тапхăрĕшĕн характерлă мар. Халапсен тĕп сăнарĕ — улăп. Вăл амăшĕн ирĕкĕнчен тухмасть, ку ĕнтĕ ывăлĕ çамрăк пулнăран, пурнăçа сахал пĕлнĕрен кăна çапла. «Улăпсем Кавказран Атăл çине куçса килеççĕ» халапра улăпăн ашшĕ Аслати Турă пулнă пек ăнланмалла, чылай халапра улăпсем пĕтесси те Турă хăватĕнчен килет, анчах унăн сăлтавне уçăмлăн каламан.

Чăваш халăх эпосĕнчи улăп тăшман тапăнсан-хĕсĕрлесен кăна кĕрешĕве-çапăçăва тухать, хăй пуçласа урăх йăх çыннисене тустарни улăпсем Атăл çине килни çинчен калакан сюжетра çеç тĕл пулать.

И.И.Одюков улăпсем мĕн-мĕн ĕçлесе пурăннине те сăнаса тухать, вĕсем малтан сунарçă, кĕтӳçĕ пулнине, каярах çĕр ĕçне тытăннине йĕрлесе пырать. Улăпсен вăййисем çинчен асăннă май тĕпчевçĕ пĕр сюжета кăна палăртать (улăпсем пĕр-пĕрне шыв урлă япала персе выляççĕ). Çав сюжетăн тепĕр вариантĕ «Улăпсен вăрçи» ятпа сарăлнă, унта пĕри тепĕрне тихапа перет, тепри — ачапа. Кунта усă курман текстсенче улăпсем лашалла, шаккăмла выляççĕ.

Улăпсем ăçтан ăçталла куçса çӳрени çинчен халапсенче сахал каланă. «Улăпсем Кавказран Атăл çине куçса килеççĕ» сюжетра вĕсен çулйĕрĕ чăвашсен мăн аслашшĕсем хальхи вырăна çитсе тухнипе пĕр килет. Улăпа «çеçен хир паттăрĕ» тесе асăнни пур, анчах улăпсем ытларах вăрмансем урлă çӳренĕ пек тухать. Халапсенче «Атăлтан кăнтăр-анăçа», «çурçĕр-тухăçран кăнтăр-анăçа», «кăнтăртан анăçа — Ишеке» тенисем

те, И.И. Одюков шучĕпе, пăлхарсем, пăртассем, сăварсем VI—VIII ĕмĕрсенче кăнтăртан çурçĕре куçнине пĕлтереççĕ.

Кунта çакна асăрхаттарса хăвармалла: улăпсем ăçталла кайнине хăшпĕр чухне халапçăсем çывăхри улăп тăприсем хăш еннелле вырнаçса кайнине шута илсе палăртаççĕ, çавăнпа ку факта манса хăварни йăнăш шухăш хускатма пултарать. И.И.Одюков ыйтăва пĕтĕмлетнĕ май тата акă мĕн калать: улăп халапĕсенче халăхăмăр несĕлĕсем Алтайран Европăна куçса килни çинчен асăнмаççĕ, вĕсем Кавказран Вăтам Атăл тăрăхне хăпарни çинчен калакан тĕслĕхсене улăпсем çинчен калакан малтанхи халапсенчен чылай кайран хывнă.

Юлашкинчен И.И. Одюков улăпсем çинчен калакан халăх хайлавĕсен ятне вĕсен жанр уйрăмлăхĕсене кура уйрăм терминпа çирĕплетме кирлине асăрхаттарать. Унчченхи тĕпчевсенче тĕрлĕрен ят пани палăратчĕ: И.С. Тукташ «эпосла юмахсем», Н.Ф. Данилов «легендăлла юмах» тенĕччĕ, П.В.Денисов «эпосла халап», В.Ф. Каховский «предани» тесе каланăччĕ т.ыт.те. И.И. Одюков асăннă жанра «улăпсем çинчен хывнă эпосла халапсем» теме сĕнет, вăл ытти жанр формисенчен (мифран, легендăран, преданирен) хăйне евĕрлĕхĕпе уйрăлса тăнине уçăмлă кăтартать. И.И.Одюков хăй пухса кăларнă «Улăп» кĕнекере ку жанра «улăп халапĕ» тет. Ун хыççăн ăна кулленхи пичетре çапла каласси йăлана кĕчĕ.

И.И.Одюков хăйĕн 1973 çулта пичетленнĕ «Чувашские сказания об улыпах» статйинче улăп халапĕсене пурне те шута илеймен, çавăнпа-и, тен, вăл та чăвашсен паттăрлăх эпосĕ пулнине асăрхаймасăр иртнĕ. Кайран вăл çак пысăк çитменлĕхе тӳрлетсе çырчĕ, улăпсем «вăрçа хутшăннисене», вĕсем «нумай пуçлă çĕлен-аçтахасемпе е алтăркуç-çăткăнсемпе» «хăйсем çине тапăнакан тăшмансемпе (этемсемпе) çапăçнине» ятарласа асăнчĕ, «Улăп» кĕнекере ун пек тĕслĕхсене чылай пичетлерĕ.

Ытти пĕлтерĕшлĕ тĕпчевсенчен В.Д.Димитриевăн «Чувашские исторические предания» ĕçĕн пĕрремĕш пайне асăнмалла. Унта автор халиччен пичетленмен улăп халапĕсемпе нумай усă курнă, вĕсем тăван халăхăн историри кун-çулне çутатса парас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăннине кăтартнă. Кунта анлăрах сюжетлă халапсене кĕртнĕ, вĕсем историри чăнлăхенчен пурнăçпа мĕнле çыхăнса тăнине ĕнентернĕ, ăна май халăх эпосĕ пĕлтернисене истори факчĕсемпе, ытти халăхсен фольклорĕпе танлаштарнă.

Пăхса тухнă пĕтĕм материал, тĕпрен илсен, вĕсен авторĕсем улăп халапĕсене тĕпчес ĕçĕн çулĕ çине ӳкнине кăтартса параççĕ. Унта ку фольклор хайлавĕсен тĕп туртăмĕсемпе паллисене чылай уçăмлă кăтартнă.

## 2

Чăваш халăх эпосăн малтанхи туллирех пуххине (Улăп халапĕсем. 1993 ç.) икĕ пайран йĕркеленĕ, унта традицие кĕнĕ чи пĕлтерĕшлĕ тĕслĕхсене — улăп халапĕсене тата эпосла поэмăсене кĕртнĕ. Улăп халапĕсенче халăх эпосĕн сăн-сăпачĕ таса хальлĕнрех палăрать, çавăнпа вĕсене уйрăм пая уйăрнă. Эпосла поэмăсем шутне сăвăласа каланă халапсем кĕреççĕ.

Улăп халапĕсенчен пайтахăшĕ малтанхи хут пичетленеççĕ. Вĕсенчен хăш-пĕрисем унччен пулнă сюжетсен варианчĕсем кăна шутланаççĕ, теприсем вара — пачах çĕнĕ текстсем. Сăмахран, Арамаçи туне, улăпсем айăпа кĕнине асăнни унччен пĕр-икĕ хутчен кăна тĕл пулнăччĕ, халĕ ун

пек тĕслĕхсем темиçе те пухăнчĕç. Кун пек сăнар-сюжет уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Арамаçи пирки калас пулсан, ку вăл чăвашсен мăн аслашшĕсем авал Зороастр тĕнĕпе пурăннине пĕлтерет. Вăл Ахдра Моздра сăмахсенчен пулса кайнă, Зороастр тĕнĕнче ырă вăя пĕлтерет. Аму шывĕпе Авраль çăл куçĕн ячĕсем те чăвашсен несĕлĕсен авалхи историйĕпе çыхăннăскерсем пулма тивĕçлĕ. Улăп халапĕсен çĕнĕ текстчĕсем хушшинче мифологипе çыхăннă вырăн нумай, вĕсем халăхăмăр эпосне кăна мар, унăн миф пуянлăхне те туллирех курма пулăшаççĕ.

Текстсене май килнĕ таран хронологипе тематика тăрăх вырнаçтарма тăрăшнă. Калас пулать: эпос сюжечĕсем, вакă пулин те, чылай чухне ушкăншарăн çыхăнса тăраççĕ, пĕр текстрах икĕ е темиçе сюжет пĕрлешнĕ. Чылай чухне вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма çук, çавăнпа хронологие яланах шута илме меллĕ мар. Çав сăлтава пула тĕл-тĕл пĕр тематика ушкăнĕнчи сюжет ыттисенче те тĕл пулать. Тематика ушкăнне кĕртнĕ чухне текстри паллăрах сюжета тĕпе хунă. Пĕр пекрех хăш-пĕр сюжетсене кĕнекере пичетлемен, вĕсем ал çырура е хăш текстпа пĕрле тĕл пулнине ăнлантарусенче ятарласа асăрхаттарнă.

Сăмах мĕнле сюжет пирки пынине тӳрех асăрхама меллĕ пултăр тесе халапсен ячĕсенче чылай чухне сюжет йĕрне кĕскен асăннă.

Чăваш халăх эпосĕн форми сăвăлла та пулма пултарни чылайччен паллă марччĕ. Ун пирки çирĕплетсе калани сахалччĕ-ха. Ку тĕлĕшпе чи малтанхи хут Дьюла Месарош сăмах хускатнă. 1909 çулта вăл, икĕ çула яхăн чăвашсен хушшинче фольклорпа этнографи материалĕсем пухса çӳрени çинчен отчет тунă май, чăвашсен ĕлĕк «эпосла поэмăсем» пулнине, анчах вĕсем манăçа тухнине палăртнă. Тĕслĕхшĕн вăл Хусана илни çинчен калакан истори халапĕсене илсе кăтартать, вĕсене шăпах «эпосла поэмăн» е «вăрăм-вăрăм юррăн» проза хальлĕн упраннă сыпăкĕ тесе шутлать. Чăнах та, халăхра Хусана илни çинчен хывнă юрăсем пулнă, вĕсен хăш-пĕр тĕслĕхĕсем упраннă, пĕр варианчĕ Хусана илнине чылай кăткăс сюжетпах ӳкерсе кăтартать, ăна чиперех «вăрăм-вăрăм юрă» теме юрать.

Сăвăланă эпосла поэмăсем авал чăвашсем хушшинче чăнах çӳренине пуçласа И.С.Тукташ 1941 çулта асăннăччĕ. «Хĕвелпе уйăха тыткăнран хăтарни» юмаха, ăна çырса параканĕ каланă тăрăх, «кăкăртан тухакан хулăн сасăпа, шыв пек юхса пыракан сăвăллă чĕлхепе каласа панă» имĕш. Çакна шута илсе фольклорист асăннă юмаха Вăрăм Якку «сăвăллă, юрă манерĕпе каласа панă тесе» шутлать, юмахăн малтанхи варианчĕ «шăпах эпосла формăллă» пулма пултарнине палăртать. Унпа пĕрлех И.С.Тукташ тепĕр тĕслĕх илсе кăтартать: Н.Ф.Данилов пĕлтернĕ тăрăх, Пишпӳлек районĕнче пĕр халапçă хăйĕн халапĕсене сăвăласа каланă иккен.

1970 çулсенче Чăваш наука тĕпчев институчĕн архивне ярса панă хăйне евĕр материалсемпе чăваш тĕпчевçисен çĕнĕ ĕçĕсем халăхăмăрăн эпосла поэмăсем пулнине те шанчăклăнах çирĕплетеççĕ.

Сăвăласа каланă эпос традицийĕсем уйрăмах мăн кĕрӳ такмакĕнче лайăх сисĕнеççĕ. Çакна Н.И.Егоров чĕлхеçĕ чăвашсен саламаликне — мăн кĕрӳ такмакĕн пĕр пайне — тишкернĕ май уçăмлă кăтартса пачĕ. Саламалик арçын туйĕн халăхĕ хĕр килне çитичченхи çул-йĕрне фантастикăлла сăнлать: çул çинче кĕрӳ каччи тĕрлĕрен хăрушă чĕр чунсемпе «тĕл пулса çапăçать» имĕш, ăна «пулăшакан» ырă вăйсем те пур. Çакăн çинчен каласа парасси, тĕпчевçĕ шучĕпе, авалхи авлану форминченех сыхланса юлнă: хĕре урăх ăруран е йăхран çапăçса илме тивнĕ-мĕн (кĕрӳ



НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Ч-39210

каччи нӳкерсем, авалхилле каласан — çар çыннисем, сыхласа пынипе туя тухать, хĕр илме каять).

Н.И.Егоров шучĕпе, мăн кĕрӳ такмакĕн эпосла паллисем унăн сюжет йĕрĕпе композици тытăмĕ паттăрсем çинчен хывнă асамлă юмахсене тата мифсене çывăх пулнинче курăнаççĕ. Кĕрӳ каччине çул çинче Талай кӳлĕ патшине, аçтахана (хура çĕлене) т.ыт. тăшмансене çĕнтерме шур сухаллă ватăпа кӳлĕ патши хĕрĕ пулăшаççĕ, вĕсемпе пĕрле ытти ырă вăйсем те (пăлан, вăкăр, ут, ăмăрт кайăк, тимĕрçĕ) йывăр çула тĕрĕс-тĕкеллĕн иртме тĕрлĕ енчен çăмăллăх кӳреççĕ. Çĕлене çĕнтерни, Талай патшинчен ун хĕрне илсе тухни яр уççăнах паттăрлăх эпосĕн тĕп сюжечĕсене асилтереççĕ. Çав вăхăтрах саламаликри чылай сăнар мифла тавра курăм элеменчĕсене питĕ çывăх: кӳлĕ варринче ылтăн юман, ун çинче ылтăн йăва, йăвара ылтăн çăмарта т.ыт.те. Сюжетпа композици, сăнарсен пĕр евĕрлĕхĕ çеç мар, саламалике эпосла поэмăсемпе унăн стилĕ те çывăхлатать. Эпосла пысăк хайлавсенче япалана тĕрлĕрен вак-тĕвек таранах анлăн сăнлас туртăм вăйлă палăрать. Çакă мăн кĕрӳ такмакĕнчи нумай-нумай япалана (тăва, юхан шыва, кӳлле, хĕре, ута, тĕрлĕрен чĕр чунсене, кĕпере, хапха-юпана, пахчана, кĕлете, пӳрт-урая, сĕтеле, пичкене т.ыт.те) сăнланă чухне те уççăн курăнать. Акă, сăмахран, çул кăтартакан пăлана мифла сăнар калăпĕпе ӳкернĕ:

Çитмĕл çухрăм çеçен хир урлă каçнă чух
Вун икĕ мăйракаллă пăлан кайăк
Пирĕн куçа курăнчĕ.
Унăн мăйракисем ылтăн,
Чĕрни вĕçĕсем кĕмĕл,
Хӳри вĕçĕсем çут кăлкан,
Тĕкĕ-çăмĕсем сар ука.
Мăйракипе пĕлĕте перĕнмест,
Урипе çĕре перĕнмест.
Мăйракипе шăйрать те —
Тем вăрăмăш йĕр тăвать,
Чĕрнипеле пусать те —
Пире кайма çул тăвать,
Хӳри вĕçĕпе шăлса якатать,
Çавăн çулĕпе килтĕмĕр, хăта.

Саламаликĕн хăш-пĕр пайĕсене (композици блокĕсене) мăн кĕрӳ кăларса пăрахма та, вырăнтан вырăна куçарма та, анлăлатма е кĕскетме те пултарать. Çакă, Н.И.Егоров калашле, саламалике тĕрĕкпе монгол халăхĕсен паттăрлăх эпосĕн хайлавĕсене çывăх тăратать. Унăн сюжечĕ, фантастикăллă пулин те, пурнăçри куракансен-пĕлекенсен куçĕ умĕнчи геройпа, кĕрӳ каччи сăнарĕпе, çыхăннă. Çавăнпа-и, тен, е çĕленсем тытăçнине халĕ йăлишĕн çеç каланăран-и — эпос паттăрĕ çĕленпе çапăçнине вара анлă сăнласа паман, ун çинчен кĕскен асăннипех иртнĕ.

Н.И.Егоров саламаликри сăнарсем чăвашсен мифĕсемпе тачă çыхăннине чылай тĕслĕхе тĕплĕ тишкерсе кăтартать, кунта çав кĕвĕсем ытти халăхсен (сăмахран, пушкăртсен) эпосĕпе пĕр евĕрлĕ пулни те пĕлтерĕшлĕ. Мăн кĕрӳ такмакĕнчи миф тĕнчин уйрăмлăхĕ те пур иккен: мифсенче çут çанталăкри япаласем пулса кайнă процеса, ун аталанăвне кăтартнă пулсан, кунта йĕркеленсе çитнĕ космос тĕнчи ӳкерĕннĕ, ăна кулленхи пурнăç лару-тăрăвне кĕртнĕ. Саламаликре, юмахсемпе эпосри евĕр, туя сăнласа

пани çук, ку вăл хăй туй пуçламăшĕпе çыхăннăран килет-мĕн. Кунта кулленхи пурнăç деталĕсене (хапха, пӳрт, пĕлĕт, мунча, пахча сăн-сăпатне) ӳкерсе кăтартнă чухне те эпос стилĕпех — гиперболизаципех — уса курнă. Речитатив формипе сăвăласа калани хăй те мăн кĕрӳ такмакĕ питĕ авалхи жанр форми икkenне кăтартать (эпоса юрласа каласси йăлана каярах кĕнĕ). Тĕпчевçĕ шучĕпе, тĕрĕкпе монгол халăхĕсен паттăрлăх эпосĕпе саламалике вĕсен сюжетпа композици тытăмĕ, сăнарсен пĕр евĕрлĕхĕ, кулленхи пурнăçпа фантастика çураçуллă пĕрлешни, сăвăласа калас мел т.ыт.те тăванлатать. Н.И.Егоров саламалике миф йышши паттăрлăх эпосĕн сĕм авалтан упранса юлнă татăкĕ тесе хаклать. Çак сăнавсемпе пĕтĕмлетӳсем тăван халăх эпосĕн хăйне евĕр пуянлăхне асăрхама, шута илме май пачĕç, чăвашсен сăвăлла эпосĕн формипе паллаштарчĕç, тăван фольклора тĕпчес ĕçре çĕнĕ сăмах пулса тăчĕç.

Мăн кĕрӳ такмакĕн тексчĕсен калăпăшĕ тĕрлĕрен пулнине кура унта халăх эпосĕн элеменчĕсем те тĕрлĕ виçепе йĕрленеççĕ. Н.И.Егоров хăй тĕпчевĕнче ытларах «Чăваш халăх сăмахлăхĕн» IV томĕнчи текста тĕпе хунă. Ун пек вăрăм текст халĕ питĕ сайра тĕл пулать. Халиччен пичетрен тухнисенчен К.Прокопьев, Д.Месарош, Н.Золотов, Кашкăр Микули, Х.Паасонен варианчĕсене асăнмалла. Вĕсенче пуринче те авалхи сăвăлла эпос традицийĕсем чылай сисĕнеççĕ. Халăхра ку жанр тĕслĕхĕ паян кунчченех чĕрĕ пурăнать. Калас пулать, халĕ вăл цивилизаци условийĕсене кура пĕтсе пырать ĕнтĕ, унăн аваллăх тĕшши вăйсăр палăрать.

«Эпосла поэмăсем» пая кĕртнĕ ытти сăвăлла текстсенче те халăх эпосĕн кĕввисем уçăмлăн илтĕнеççĕ. Çакă вăл чи малтан вĕсен сюжечĕсенчен лайăх курăнать: унта пуринче те тĕрĕк халăхĕсен эпос классикинче анлă сарăлнă сюжетсен варианчĕсем тĕп вырăн йышăнаççĕ: улăпсен паттăрлăхĕ хăйсем юратнă хĕре е пулас мăшăрне, çавăн пекех тăван-пĕтенне хăтарас кĕрешӳре палăрать. Йăх-ăру интересĕсене хӳтĕлесси маларах, эпос аталанăвĕн пирвайхи тапхăрĕнчех, çивĕчрех пулнă. Çĕршыв е патшалăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешни халăх пултарулăхĕнче те каярах йĕрленме пуçланă. Ку тема чăваш халапĕсенче (прозăллисенче те, сăвăллисенче те) питĕ сахал палăрать. Çакă вăл чăваш халăх эпосĕнче йăх-ăру тапхăрĕнчи пултарулăх тĕпре тăнине пĕлтерет. Вăл уйрăмлăх, паллах, халăхăмăр кунçулĕнчен нумай килнĕ: Атăлçи Пăлхар патшалăхĕнче те мăсăльман тĕнне йышăнман йăхсен пуç пулса тăракан вăйсене пăхăнса пурăнма тивнĕ, вĕсем çĕр ĕçĕпе ытти хăш-пĕр тĕрĕк йăхĕсенчен маларах пурăнма тытăнни те хăй витĕмне кӳрсе хăварнă.

Мăн кĕрӳ такмакĕ чăваш халăх эпосĕн таса хальлĕнрех, улăштармасăр тенĕ пек çырса илнĕ материалĕ пулсан, эпосла поэмăсенчи ытти текстсене литература тĕлĕшĕнчен «якатса», урăхлатса çырса пани сисĕнет. «Альпи улăпăн» чĕлхи, тĕпрен илсен, мăн кĕрӳ такмакне çывăх пулнă-и, тен: çичĕ сыпăклă силлабика хушăран сахалрах е ытларах сыпăклă сăвă йĕркисемпе черетленет, çырса илекенĕ (Г.Алексеева-Тяканова) текста темиçе пая пайланă, кашнине уйрăм ят парса тухнă. «Улăппа пикеç-хĕрĕн» малтанхи пайне пĕр çынтан, юлашкине урăххинчен çырса илнĕ-мĕн. Кунта сăвăлла текст икĕ пайĕнче те прозăпа черетленсе пырать. Кун пек мел чăваш халăх эпосĕшĕн мĕн тери характерлă пулнипе пулманнине уççăн татса калама хĕн. Çапах çакна палăртмалла: улăп халапĕсенче те юрăлла текстсем кĕртекĕрте лартнă вырăн тĕл пулкалать, асамлă юмахсенче те ун пеккисем сахалах мар, анчах унта юрă-сăвăлла текст иккĕмĕшле вырăнта тăрать.

И.А.Патмар çырса илнĕ «Пурçăхан Улăпĕпе» «Йăпар» эпосла поэмăсен сюжечĕсем чылай кăткăс, хăйне евĕрлĕ. Кунта çырса пыраканăн чĕлхи халапçăсен стильне улăштарни хăш-пĕр чухне ытти текстринчен ытларах сисĕнет: кăткăс сăмах çаврăнăшĕсем тĕл пулаççĕ, сăмах пĕр пек тикĕс кĕвĕллĕн юхса пымасть, вырăнти калаçушăн характерлă мар сăмахсем сике-сике тухаççĕ. Ку вăл халапçăсем каланине наука кăтартнă пек тĕрĕс çырса илейменрен те килнĕ пулас. Апла пулин те «Альпи улăп», «Улăппа пикеç-хĕр», «Пурçăхан Улăпĕ» тата «Йăпар» эпосла поэмăсем чăвашсен сăвăлла эпосĕн пуянлăхне сулăмлă кăтартаççĕ, ăна çĕнĕ сăнарсемпе, шухăшсемпе, ӳкерчĕксемпе пуянлатаççĕ. Сăвăлла текстсене вĕсен стилĕпе сюжечĕсем кăна мар, сăнар тытăмĕ те пĕрлештерсе тăрать. Саламаликри Талай кӳлĕ патши «Улăппа пикеç-хĕр» поэмăри Тала патшапа пĕр тымартанах пулма пултарать. Альпи улăп кӳлĕ «патшинчен» (çĕлентен) çынна хăтарни те саламаликри ситуацие асилтерет. Сăмах май каласан, Альпипе çĕлен тытăçăвне, çавăн пекех ытти поэмăсенчи çапăçусене тĕплĕ сăнласа панă, çакă вĕсене мăн кĕрӳ такмакĕнчен сисĕнмеллех уйăрса тăрать.

Асăннă поэмăсем паттăрлăх эпосĕн классикăлла сюжечĕсемпе йĕркеленнĕ пулин те, халăхăн мифологилле тавра курăмне анлă палăртаççĕ, улăп халапĕсем пекех, халăх историйĕн маларахри тапхăрне ӳкерсе параççĕ, çавăнпа кунта пĕтĕмлетнĕ фантастикăлла сăнарсем (сăмахран, çĕленсемпе алтăркуçсем) тĕпре тăраççĕ, историпе тӳреммĕн çыхăннă ханпатша ячĕсем питĕ сахал. Вĕсенчен хăш-пĕринче халăх хăйĕн пин çул авалхи пурнăçне асра тытни курăнать. Акă «Йăпар» поэмăра Варачан ятлă уçланкăна асăннă. Ку ят тӳрех чăваш несĕлĕсен (сăварсен) Çурçĕр Кавказра пурăннă чухнехи тĕп хули ятне аса илтерет. Ку поэмăрах Тервел патша ятне тĕл пулатпăр. Дунайçи пăлхарсен те Тервел патша пулни паллă. Тĕрлĕ халапра Амму шыв ячĕ пур, вăл Аму-Дарьяна çывăх. Кун пек ятсем татах чылай: Саваш хули, Пирмет çырми, Сарă шыв, Хура ту, Хĕрлĕ ту, Шурă шыв, Ылтăн ту, Ула шыв, Эккен кӳлĕ, Ийпен ялĕ, Эврель (Авраль) çăл куçĕ т.ыт.те. Çак халапсем историпе мĕнле çыхăннине татса парасси — малашнехи ĕç. Вĕсем пурнăçпа тӳреммĕн çыхăннах пулсан, халăхăмăр кун-çулĕн аваллăхне çутатса паракан документсем пекех хаклă. Паллах, кунта халăх эпосĕн ытарлăхне, пĕтĕмлетӳллĕ сăнарлăхне ялан асра тытмалла.

«Пусйĕкĕтпе Айпике» тата «Питахирпе Янсихере» поэмăсем хăйсен пахалăхĕпе тăван халăх эпосĕн системишĕн ют мар, анчах вĕсен хăйне евĕрлĕхĕ те пур: ку хайлавсем чăвашсем хушшине пушкăртсенчен сарăлнă. Çакă вĕсене Пушкăрт Республикинче çырса илнинчен те, поэма-юмахра пушкăртсен пайăр ячĕсем тĕл пулнинчен те курăнать. Çак тĕслĕхсем чăваш халăх эпосĕн контакчĕсене чĕррĕн кăтартаççĕ. Асăннă поэмăсен паллă уйрăмлăхĕ вăл — вĕсене юрласа калани.

«Пусйĕкĕтпе Айпике» поэмăна П.А.Федоров-Минюк тĕрлĕ çынтан çырса илсе йĕркеленĕ, халапçăсен чĕлхине чылай улăштарнă. Апла пулин те поэмăн халăхра çӳренĕ сюжетне, сăнарсен системине хăй хальлĕнех упраса хăварнă. Вăл каланă тăрăх, «Питахирпе Янсихере» юмах та сăвăлласкер пулнă-мĕн, анчах унăн сăвăлла текстне пĕтĕмпех çырса илеймен. Ку юмахăн прозăлла вариантĕнче халăх эпосĕн пĕтĕмĕшле паллисем уçăмлă сисĕнеççĕ, çавăнпа ăна кĕнекере сăвăлла текст пуçламăшĕпе пĕрле пичетленĕ. Çакă вĕсене пĕр-пĕринпе танлаштарма, юмахсен пĕрпеклĕхĕсене уйăрма, сăвăлла текст сюжечĕн тытăмне туллирех курма пулăшать.

Кĕнекене кĕртнĕ прозăлла тата сăвăлла текстсем чăваш халăх эпосĕ ытти халăхсен фольклорĕпе мĕн тери çыхăнса тăнине анлăрах кăтартма май параççĕ. Ăна май тăван халăх пултарулăхĕн хăйне евĕрлĕ паллисене, унăн авалхи тымарĕсене тĕплĕрех пĕтĕмлетсе сăнама май килет. Чăваш эпосĕн тĕпчевçисем умĕнче тăракан пысăк тĕллевсенчен пĕри шăпах çакă пулса тăрать те ĕнтĕ.

Улăпсем пĕр-пĕрне тихапа тата ачапа пени çинчен калакан йышши сюжет Кавказри халăхсем хушшинче те çӳрет: адыгейсен улăпĕсем сăртсене тытса пенĕ имĕш. «Пусйĕкĕтпе Айпике» сюжечĕ пирки те çавнах каламалла. Чăваш халапĕнче Улăпа тăшмансем улталаса тарăн шăтăка ярса вĕлерме тăраççĕ. Ăна çывăх детальсем узбексен «Алпамышĕнче» тĕл пулаççĕ. Тĕрĕссипе, ку сюжет тĕрĕк мар халăхсен фольклорĕнче те сарăлнă (сăмахран, ăна Библире те куратпăр). Тĕрĕкпе монгол халăхĕсен фольклорĕнчи сăнарлăхăн, илемлĕх мелĕсен тата стилĕн çакăн евĕр параллелĕсем чăваш халăх эпосĕн аталану тымарĕсене тĕплĕрех çутатса пама тивĕç.

Акă мĕн паха: ытти халăх эпосĕнче пирĕн мăн асаттесен кун-çулĕн ӳкерчĕкĕсем те упранса юлнă, анчах та вĕсем хамăр сăмахлăхра çук. Вĕсенчен пĕр хайлавĕ Атăлçи Пăлхар патшипе унăн хĕрĕ çинчен пĕлтерет. Пушкăрт халăхĕн чылай вăрăм халапĕ çапла хыпарлать: пушкăртсен Алар ханĕпе пăлхар ханĕ Пулар сунарта пĕрле çӳренĕ чухне хăйсен çуралман хĕрĕпе ывăлне çураçаççĕ. Пулар хĕрĕ Барсын-хылу паттăрлăх кăтартакан йĕкĕте кăна качча тухма килĕшет. Алар хан ывăлĕ арман чулне урапа тапса ту çине хăпартать. Вара пике ун тусĕ пулма кăмăл тăвать. Пулар хан кунта çыннăн чăн-чăн ятне çеç мар, Пăлхар çĕршывĕн патшине те пĕлтерме тивĕç. «Барсын-хылу» тенине хальхилле Парспи теме юрать. Тутарсен эпосĕнче вăл «Барсын-сулу» ятпа çӳрет. «Сулу (сăлу)» пике тени пулать. Çак хĕр ячĕ узбексен эпосĕнче те пур. Ун сăнарĕ — «Алпамыш» эпосра тĕп сăнарсенчен пĕри. Вăл X—XIII ĕмĕрсенче аталанса кайнă пулас. Акă X ĕмĕр пуçламăшĕнче Багдат элчи Ибн Фадлан Атăлçи Пăлхара килнĕ чухне огузсен ханĕ патĕнче хăнара пулать. Ку ханăн арăмĕ Пăлхар патшин Алмушăн хĕрĕ иккен. Хан-патшасем çапла пĕр-пĕринпе хурăнташланасси татах та пулнă. Парспи сăнарĕ çавăнтан çуралнă теме пулать. Барс кĕлеткине пăлхарсен элемĕ çине ӳкерни çинчен шанчăклă хыпарсем юлнă. Хĕр ятне çавна асра тытса панă ахăр. Юхма Мишшин «Ылттăнпик» поэминче вара тутар халăх эпосĕн персонажĕ Ылтăнчеч тĕл пулать. Ку ят «ылтăн çӳç» тенине пĕлтерет. Тĕрлĕ халăх эпосне пĕр-пĕринпе тĕплĕрех танлаштарсан тата чылай тĕлĕнтермĕш хыпар тупăнма тивĕçлĕ.

Ытти халăхсем хăйсен эпосне малтанхи хут пичетлесе кăларнине сăнасан акă мĕн курăнать: эпоса йĕркелесе çитерес ĕçе сăмах ăстисемпе пĕрле тĕпчевçĕсем те сахал мар хутшăннă. «Калевала», «Калевипоэг», «Лачплесис», «Сияжар» тата ытти эпосла поэмăсене хутла вĕреннĕ сăвăçсемпе ăслăлăх çыннисем вак-тĕвек юрăсемпе халапсене Вăтам Азири акынсем юрласа панине çырса илсе редакцилеме те фольклористсем нумай вăй хунă. Апла пулсан эпир ун йышши хайлавсене те халăх эпосĕ шутне кĕртме пултаратпăр. Улăпсемпе историри паллă ĕçсем çинчен поэтсем сăвăланă халапсем юлашки çĕр çул хушшинче пирĕн чылаях пухăнчĕç. Вĕсенче халăх халапĕсен сюжечĕсемпе сăнарĕсем тĕпре тăраççĕ, халăх шухăшлавĕпе чĕлхи вăйлă палăрать. Ку йыша чи малтан Н.Шелепин «Уксах Тимĕр Пӳлере илни», С.Элкерĕн «Улăпсем», Çуйăн Хĕветĕрĕн «Улăп» эпосла поэмисене кĕртмелле. Вĕсенче халăх сăмахлăхĕнчи ăсталăх тапса тăрать.

Ку енĕпе ыттисем те сахал мар вăй хунă, анчах вĕсен поэмисенче ытти халăх фольклорĕпе усă курни те, историксен ĕçĕсене вуласа çырни те сисĕнет, уйрăм çыннăн авторлăхĕ маларах тăрать (В.Ахунăн «Улăппа пикеç-хĕр», Юхма Мишшин «Ылттăнпик» поэмисем), çапах та эпос традицийĕсем чĕрĕ пулнине кăтартаççĕ. И.Тăхтин «Элихун», Г.Тал-Мăрсан «Силпи — пăлхар пики» хайлавĕсенче фольклор çиелти паллă çеç, вĕсене литература мелĕсене тĕпе хурса çырнă. П.Хусанкайăн «Валем хуçапа Сулпике», В.Бараевăн «Али-паттăр», Г.Краснов-Кĕçĕннин «Сарпулат паттăр çинчен хунă юрă», В.Давыдов-Анатрин «Чеменпе Мерчен» тата «Илле паттăр», Юхма Мишшин «Çичĕ пике-элтти» хайлавĕсене асамлă юмах тытăмĕ шăнăрласа тăрать, вĕсенче истори сăн-сăпачĕ йăваш палăрать. Кун-çул (истори) эпосĕ чылай чухне паттăрлăх эпосĕпе шайлашать. Тĕпчевçĕсем мифла эпос, юрату эпосĕ (вырăсла ăна «романический эпос» теççĕ) пурри çинчен те калаççĕ. Мифла эпос шутне «Саламалик», Н.Шелепин «Константин хулипе Валем хуçа» поэмисене кĕртмелле. Вĕсенче мифсен сăнарĕсемпе сюжетсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Юрату эпосĕн тĕслĕхĕсем чăвашсен те пур иккен: «Альпи улăп», «Пусйĕкĕтпе Эльпике», «Хура çăрха». Тепĕр чухне пĕр хайлаврах тĕрлĕрен эпос хутăшăвĕ тĕвĕленет. Тĕрлĕ йышши эпоса пĕр-пĕринчен уйăрса пăхма кирли çинчен Н.И.Егоров «Чăваш халăх эпосĕ еплерех» статьяра лайăх палăртса каланă. Çакна шута илменни халăх эпосĕн тĕсĕсене тĕрĕс хаклама чăрмантарать.

Н.И.Егоров унччен маларах В.Я.Канюков каланă шухăша уçăмлатать: чăвашсен эпосĕ Ылтăн Уртаччен вăйлăрах аталанма пултарнă, мăн асаттесен ун чухне хăйсен патшалăхне хӳтĕлес кăмăл-туртăм хастарлăрах пулнă. Ытти халăхсен пусмăрĕ çакна каярах сĕвĕртсе янă. XX ĕмĕрте халăх эпосĕн традицийĕсем çĕнĕрен чĕрĕлсе тăнине те çавăн пек сăлтавпах ăнлантармалла. Чăвашсем уйрăм республикăра ирĕклĕнрех пурăнма тытăнниех халăхăн мăнаçлăхне çĕклеме пулăшрĕ, хăй кун-çулĕ çинчен эпосла поэма чылай хывма хавхалантарчĕ.

## 3

Ăслăлăх сюжетлă юрăсене те халăх эпосĕ шутне кĕртет. Чăваш тĕпчевçисем ку ыйтăва ятарласа тишкерни курăнсах каймасть. И.И.Одюков чăваш балладисене ушкăнласа пухнă май вĕсен эпослăхне анлăн кăтартса панă теме çук. Вăл ытларах балладăсен тематикипе илемлĕхĕ çинче чарăнса тăнă. Чăваш халăх эпосĕн кĕнекине кăларнă май сюжетлă юрăсем çинчен кĕскен те пулин каласа хăварма тивет.

Тишкерекен юрăсене юлашки тапхăрта «пейĕтсем» тесе каласси çирĕпленчĕ. Унпа В.Г.Родионов, М.Г.Кондратьев, А.А.Осипов хăйсен пысăк тĕпчевĕсенче анлă усă курчĕç. Ку термин чăваш фольклористикинче XIX ĕмĕртех курăнкаланă. Тутарстанпа Пушкăртсан республикисенчи чăвашсен чĕлхинче ку сăмах тăтăш тĕл пулать. Чăвашсем хушшине вăл пушкăртсемпе тутарсенчен куçнă. Юхма Мишши сюжетлă юрăсен пуххине «Çамрăклăха аса илсе» ятпа кăларчĕ. Унта жанр тĕсĕн ятне «пайăтсем» тесе кăтартнă. Эпир кунта анлăрах сарăлнă «пейĕт» ăнлавпа усă курăпăр. Унăн тĕп палли — юрă текстĕнче сюжет йĕрĕсем палăрса тăни. Чылай чухне вĕсем аталанса та çитмен е кĕскелсе юлнă. Хăш-пĕр чухне чăваш юрринче сюжета кĕскен асăнса кăна хăварнă, ăна анлăн ӳкерчĕклесе паман.

Чăвашсен сюжетлă юррисене виçĕ тĕп ушкăна уйăрма пулать: мифла пейĕтсем, кун-çул пейĕчĕсем тата йăла пейĕчĕсем. Юлашки ушкăна хăйне уйрăм ярăмсем туса тишкерме меллĕ. Кунта усал амаçури, телейсĕр юрату, сарăмсăр вилĕм, вăрă-хурах тата ыттисем çинчен калакан юрăсем кĕреççĕ. Малтанхи икĕ ушкăнпа танлаштарсан, йăла пейĕчĕсем халăх кунçулĕн хальтерехри тапхăрĕ çинчен каласа пара́ççĕ. Вĕсенче лирика паллисем ытларах сисĕнеççĕ, çавăнпа ку хайлавсене халăх эпосĕнчен уйăрса пăхма та май пур. Мифла пейĕтсемпе кун-çул пейĕчĕсем вара халăхăмăрăн историйĕпе тачă çыхăннă. Вĕсем хăйсен шалти туртăмĕсемпе улăп халапĕсене тата эпосла поэмăсене çывăх тăраççĕ, авалхи пурнăçа сăнлаççĕ.

Чăваш пичетĕнче мифла пейĕтсем çинчен юлашки тапхăрта М.Г.Кондратьевпа Н.И.Егоров хускатса çырчĕç, вĕсен тематикипе илемне те тишкерчĕç. Кун йышши юрăсен тексчĕсем уйрăм ушкăн хальлĕн çапăнса тухаççĕ. Вĕсен тĕслĕхĕсене сахал тупса палăртнă. Çапах пĕтĕмĕшле çапла калама пулать: мифла пейĕтсем чăвашсен авалхи тĕнче курăмне сăнарлаççĕ, унта мифла шухăшлавпа мифла сăнарсем тĕп вырăн йышăнаççĕ, турăсем, тĕнче тытăмĕ, халăх кун-çулĕ çинчен ытарлă каласа панă. Халăх юррине сăнарласа калани те çав текстсене питĕ çывăх. «Сак-сук» юрă чăвашсен хушшине тутарсемпе пушкăртсенчен куçнă. Хăйĕн сăнарлăхĕпе вăл та мифла пейĕт шутланать. Асăннă хайлавсенче истори сăн-сăпачĕ уçăмлă мар, ытларах халăхăн сĕм авалхи сăнĕ йĕрленсе юлнă. Ку хайлавсем ĕлĕкхи фольклор шутне кĕреççĕ.

Кун-çул пейĕчĕсем (вĕсене халиччен «Истори юррисем» тесе каланă) самаях йышлă иккен. Ку ушкăна паллă çынсемпе паллă пулнă пуçлăхсем çинчен калакан хайлавсене кĕртме хăнăхнă. Пирĕн шутăмăрпа, çакăнтах халăх кун-çулĕнчи уйрăм тапхăрсене, асаттесен культурăпа суту-илӳ çыхăнăвĕсене, авалхи пурнăçăн пĕлтерĕшлĕрех паллисене сăнлакан юрăсен тексчĕсене те кĕртме юрать. Тепĕр чухне пĕр-пĕр хула ятне асăнниех пире авалхи тĕнчене илсе çитерет. Акă ту çумĕнчи Мерчен хула ячĕ VII ĕмĕрсенчи Сăвар патшалăхĕн тĕп хулине аса илтерет (историксем ун ятне Варачан, Варсон тесе каланă). Тахçанхи пурнăç çинчен хывнă юрăсен тексчĕсем кĕске, вĕсем малтан вăрăмрах та пулма пултарнă. Кайран çав хыпарсюжетсем çĕнĕ юрăсен сăнарлăх юнашарлăхĕ (параллелизмĕ) шутне куçнă, танлаштаруллă ӳкерчĕк вырăнне юлнă. XVIII—XX ĕмĕрсенче вăрçă-харçăсем çинчен хывнисем вăрăмрах сюжетлă, унта асăнакан çынсемпе япаласене анлăрах сăнланă. Халăхăмăрăн шăпине кура ку хайлавсенче асаттесен кун-çулĕ ӳкерĕнсе юлнă, вĕсен чун хавалĕн çирĕплĕхĕ палăрать, чăваш утса тухнă тертлĕ çул чылай уçăмлă курăнса тăрать.

* * *

Халăх эпосĕн çĕнĕ пуххи 1994 çулта тухнă «Улăп халапĕсем» кĕнекерен туллирех те анлăрах, çапах та ку кăларăма мĕнпур тĕслĕх кĕнĕ теме çук. Архивсенче тишкермен материал пайтах-ха. Чылай экспедици материалĕсене тĕплĕ пăхса тухман. Çакă вăл пĕччен туса ĕлкĕрмелли ĕç те мар. Çитменнине, халăхра халиччен çырса илменни те тупăнма тивĕçлĕ. Чăваш эпосĕ аталанма чарăнман. Ку ĕç ĕлĕкхи майпа пымасть ĕнтĕ, çырулла культурăпа техника цивилизацийĕ ăна пусарса тăрать. Халăх ăнĕн шайĕ те урăхланнă, анчах унăн авалхи тымарĕсем чĕрĕ, питех хăрса ларман. Улăп халапĕсене хывасси, халăх еккипе эпосла поэмăсем çырасси

халĕ те йăларан тухса ӳкмен. Акă «Тантăш» хаçатра юлашки вăхăтра шкулта вĕренекен ачасем темиçе халап та пичетлерĕç. Вĕсенчи сюжетсемпе сăнарсем çĕнех мар ĕнтĕ, анчах юмах-халапа хăйсене евĕрлĕ çĕнетни, аваллăх идеалĕсемпе хавхаланни хаклă. Çак пулăм яланах ăнăçлă пырать теме çук. Студентсем çырса илнĕ пĕр халапра ялти ачасем улăп ачине панулми вăрлаттараççĕ. Кунта паттăрлăхран ытла усал ĕç туни мала тухать, авалхи улăпсен сăваплă сăнарĕ хавшани курăнать. Ун пек халапсене шута илни те кирлĕ. Е.П.Михайлов археолог республикăри улăп тăприсене тишкерсе çырнă ĕçре вак-тĕвек текст самаях илсе кăтартнăччĕ. Хальлĕхе вĕсене ку кĕнекене кĕртеймерĕмĕр. Эппин, малашне вĕсене те шута илмелле, çĕнĕ кăларăма кĕреймен тĕслĕхсене тата тимлĕрех пухса пымалла. Унпа пĕрлех халăх эпосне тĕпчессине вăйлатмалла. Çак ĕçе ăнăçлăрах туса пыма текстсен çĕнĕ пуххи чылай çăмăллăх кӳме тивĕçлĕ. Кӳршĕ халăхсем ку ыйтупа хулăн кĕнекесемех кăларчĕç. Вĕсенчен тĕслĕх илсе, çав кĕнекесемпе кирлĕ пек усă курса чăваш эпосĕ çинчен курăмлă кĕнеке кăларма шанчăк пур, анчах чăвашла çырнипе çеç çыхăнни çителĕксĕр, вырăсла тĕпчевсем те кирлĕ, ăна май чăваш халăх эпосĕн чи паха тĕслĕхĕсене ытти чĕлхепе пичетлесе кăлармалла. Чăваш эпосне ытти халăхсеннипе лайăхрах танлаштарса пăхни унăн пуянлăхĕпе пĕлтерĕшне туллинрех уçса парĕччĕ. Халăх эпосĕпе илемлĕ литература хушшинчи çыхăнусене тĕпчени нацилĕхе палăртма, çапла вара, вулакана хавхалантарма пулăшĕ, ытти çыравçăсене ăсталăха ӳстерме ырă тĕслĕх кăтартĕ. Эпос традицийĕсене пăхăнарах çырнă хăш-пĕр поэмăсем кĕреймерĕç (сăмахран, М.Сениэлĕн «Саврăш паттăрĕ», Б.Борленăн Пăртас турхан, А.Ильинăн Кĕтерне патша çинчен çырнисем). Ун йышши хайлавсем тăван поэзире татах та нумай. Юлашки вăхăтра акă авалхи паттăрсем çинчен калакан халапсене сăвăласа сахал мар пейĕт çырчĕç.

Халăх эпосĕ халăх кун-çулĕ кăна мар, вăл унăн идеалĕ те, хавалĕ те, чун илемĕ те, пултарулăхĕ те. Çак пуянлăхпа мĕн чухлĕ тухăçлă усă куратпăр, çавăн чухлĕ улăп чунлă пулăттăмăр. «Управ та тирпей — пирĕн хунтă, телей», — тетчĕ Митта Ваçлейĕ. Атьăр-ха çавна ялан асра тытар, хамăр пуянлăхпа тирпейлĕн те кал-каллăн усă курар.

***Г. ЮМАРТ***

# УЛĂП ХАЛАПĔСЕМ

## УЛĂПСЕМ ЕПЛЕ ПУЛСА КАЯÇÇĔ

### 1. Улăп — ĕмпӳ ачи

Улăп вăл пĕлĕт çӳллĕш калама çук вăйлă çын пулнă.

Улăп вăл Арамаçи тăвĕ çумĕнчи сарлака уйра çуралнă. Унăн амăшĕ çеçен хирте пурăнакан халăхăн хĕрĕ пулнă тет. Ашшĕ вара ĕмпӳ пулнă тет, вăл урăх çĕрте пурăннă тет.

Улăп вăл уйăх тулнă каçхине çуралнă. Кайран, ӳссе çитсессĕн, Улăпа тăшмансем «уйăх тулнă каçхине çуралнă» тесе мăшкăлланă.

Улăп çуралнине пĕлсессĕн Аслаттипе Хунхаççи вăра кайнă тет.

— Улăп вăл мана та нумай инкек кӳрĕ-ха, — тесе каланă тет Çӳлти турă Хунхаççине.

Улăп вăл ӳсессе кунпа та сехетпе те мар, кашни чĕрĕмпе ӳссе пынă тет.

### 2. Амăшĕ ачана Улăп ятлă хума хушать

Энтĕп ятлă çын вăрмана кайрĕ тет. Авалхи юмансене касса йăвантарнă май ахлатнă сасă илтрĕ тет. «Кам-ши ку, ами? Инкекпе аптраса ӳкнĕ çын мар-ши?» — шухăшлать Энтĕп. Вăл сасă енне кайрĕ тет те пĕр уçланка çитрĕ тет. Курать тет те тĕлĕнсех каять тет Энтĕп: уçланкă варринче пĕр акăш-макăш хĕрарăм выртать тет, çумĕнче вунă чике тăршшĕ ывăл ача выртать тет.

Пысăк хĕрарăм Энтĕпе курчĕ тет те каларĕ тет:

— Çак ачана ан пăрах, этем. Ытла йывăр çăмăллантăм, хам вилессе сисетĕп. Ачана Улăп ятлă хур. Кашкăр варне çитсен пăрахса хăвар: чĕр чунсем чĕчĕ ĕмĕртсе ӳстерччĕр. Вун икĕ пушăтран çăпата туса пар, — тесе каларĕ тет те куçне хупса вилсе кайрĕ тет.

Энтĕп пилĕк пăтран та йывăртарах Улăпа аран-аран çурăмĕ çине хучĕ тет те Кашкăр вăрманне илсе çитерчĕ тет, вун ик пушăтран çирĕп кăна çăпата туса пачĕ тет.

Унтан Энтĕп яла кайса ял-йыша чĕнсе килчĕ тет те, Улăп амăшне чавса пытарчĕç тет. Çав вырăна халĕ Улăп сăрчĕ тетпĕр.

### 3. Улăп мĕншĕн вăйлă пулнă

Çӳлти турă Улăп çуралнă кунхине пӳртĕнче кахалланса ларнă тет. Çавăнпа вăл тăвас ĕçе пĕтĕмпех унăн арăмĕ тунă.

Çӳлти турă хăйĕнчен тăван ачи валли вăй хатĕрлесе хунă пулнă. Унăн арăмĕ кĕвĕçнипе çав вăя Улăпа панă тет.

## 4. Улăп амăшĕ хĕвел патне вĕçет

Улăп амăшĕ аллисене сарса çичĕ хутчен çӳлелле сиксе илнĕ те ăмăрт* пулса тăнă, ывăлĕ вăраниччен кукамăш патне çитсе килме шутланă.

Ăмăрт вĕçрĕ çӳлелле,
Хĕвел патне çитмелле.
Хĕвел — çутă амăшĕ,
Ăмăртăн кукамăшĕ...

## 5. Улăп ашшĕ Лăп

Улăпăн ашшĕ, Лăп ятлăскер, питех те вăйлă, питех те хăватлă пулнă. Урине пĕрре пусса пин-пин тискер кайăка вĕлерме пултарнă. Лăп асар-писер аслă пушар ăшне кĕрсе кайсан вут-çулăм лăп! сӳннĕ. Тинĕсе кĕрсен шыв типсе ларнă. Лăпа хирĕç кĕрешме пултаракан вăй çуккипех ĕнтĕ, çĕнтерӳ çăмăллăн килнипех вăл телейсĕр пулнă. Лăп вара хăйĕн ывăлне Улăпа телей уççи — кĕрешӳ — парса хăварнă.

# УЛĂПСЕН АЧАЛĂХĔ

## 6. Улăп сăпки

Улăп алăри ача чухнех питĕ пысăк ача пулнă. Ун валли сăпка каштине те юманран тунă тет. Анчах çав юман кашта та Улăпа чăтайман, хуçăлса аннă. Ун çытакки те вун икĕ сӳререн пулнă тет.

## 7. Улăп çытакки

Улăп сăпка ачи чухнех пысăк пулнă. Ăна валли виçĕ сӳререн çĕленĕ çытакки те тăвăр пулнă: тăхăннă чухне шар! çурмаран çурăлнă тет.

## 8. Улăп кĕпçе юратать

Улăп кĕпçешĕн каççах кайнă. Пĕччен ӳсекен курăка ăçта курать: «Ку кĕпçе тутлă-и?» — тесе тытать те кăклать. Йӳçĕ кĕпçе пулсан чăмлавне лач! çĕре сурать тет. Ăçта сурчăкĕ ӳкет, çавăнта вара кӳлĕ пулать. Çак кӳлĕсем халь те пур тет.

## 9. Улăп ачи ухă перет, пăр айĕпе ишет, тăва тапса салатать

Этем ачисем уничере выляса çӳреççĕ тет. Çаксем патне Улăп ачи пынă тет те çавсемпе пĕрле вылясшăн пулнă тет. Хăй çапла каласа юрлать тет:

Этем ачи-пăчисем,
Пĕчĕк шăкăр-макăрсем!
Çӳл тӳпере çăлтăр вылять,
Çăлтăр тавра уйăх вылять.

---

* Ăмăрт кайăк.

Эсир — çăлтăр, эпĕ — уйăх,
Ман та сирĕнпе вылясчĕ,
Выляттарăр-ха мана пĕрле, —

тесе каларĕ тет.

Ачасем каларĕç тет:

— Выляма илессе илĕпĕр те, эсĕ малтан ухă персе кăтарт. Уххуна персе кăларса яр та вĕçсе анакан ухă йĕппине шăлупа çыртса чар. Ухă йĕппине шăлупа тытан тăк пирĕнпе выляма илĕпĕр, тытаймасан — айăпĕ хăвăнта, — теççĕ тет.

Улăп ачи виçĕ аршăнлă уххине салтса печĕ тет те çӳлелле, хăй месерле выртрĕ те кĕтсе выртать тет. Нумай кĕтнĕ-и, сахал-и — ухă йĕппи шăхăрса килет тет. Улăп ачи ăна шăлĕпе кап! анчах ярса илчĕ тет. Унтан каллех ачасем патне пырса выляма илме ыйтать тет. Ачасем ухă йĕппи шăхăрнинчен хăраса тарса пĕтнĕ тет. Улăп ачи каллех юрлать тет:

Этем ачи-пăчисем,
Пĕчĕк шăкăр-макăрсем!
Çӳл тӳпере çăлтăр вылять,
Çăлтăр тавра уйăх вылять.
Эсир — çăлтăр, эпĕ — уйăх,
Ман та сирĕнпе вылясчĕ,
Выляттарăр-ха мана пĕрле.

Этем ачисем ăна татах выляма илмеççĕ тет-ха.

— Хăв вăйна кăтарт малтан, вара хамăрпа выляма илĕпĕр, — теççĕ.

Улăп ачи этем ачисенчен:

— Хамăн вăя кăтартас тесен мĕн тăвас пулать-ха ман? — тесе ыйтать пулать.

Лешсем (этем ачисем ĕнтĕ):

— Выляма выляттарăпăр та, эсĕ малтан ав çав Атăл куçне чăмса кăтарт-ха пире. Шыв айĕпе виç çухрăм кайса пăр шăтарса ишсе тух. Пăр шăтарса тухсассăн — хамăрпа выляма илĕпĕр, тухаймасан — айăпĕ хăвăнта, — теççĕ тет.

Улăп ачи Атăл куçне чăмрĕ тет те пăр айĕпе çичĕ çухрăм чăмса кайрĕ тет. Çичĕ çухрăмран çичĕ аршăн шăннă пăра шăтарса тухрĕ тет. Улăп ачи çыран хĕрне тухса этем ачисем патне пычĕ тет те юрлать тет:

Этем ачи-пăчисем,
Пĕчĕк шăкăр-макăрсем!
Çӳл тӳпере çăлтăр вылять,
Çăлтăр тавра уйăх вылять.
Эсир — çăлтăр, эпĕ — уйăх,
Ман та сирĕнпе вылясчĕ,
Выляттарăр-ха мана пĕрле.

Этем ачисем Улăп ачине çаплах выляма илмеççĕ, татах ĕç хушаççĕ тет:

— Выляма выляттарăпăр та, эсĕ пире хăв вăйна кăтарт-ха. Атту пуçĕпе хĕрĕх чалăш хĕрлĕ тăва виççĕ тапса салатайăн-а? Салатсан — хамăрпа выляма илĕпĕр, салатаймасан — айăпĕ хăвăнта.

Улăп ачи хĕрĕх чалăш хĕрлĕ ту патне пычĕ тет те сулахай урипе тапрĕ тет, ту сулланса илчĕ тет, сылтăммипе тапрĕ тет те, ту саланса кайрĕ тет. Ту вырăнне тĕмеске кăна тăрса юлчĕ тет. Çав тĕмескене Улăп ачи тĕмески теççĕ.

## 10. Улăп кĕпер вырăнне çырма урлă выртать

Нимене-е, нимене-е!
Хăмла Поли ниме тăвать!
Нимене-е!

Çавна Улăп илтнĕ тет. «Эпĕ ниме курман, ниме мĕн вăл? Тавай çакăнтан ниме курса ларас», — тесе сăрт çине хăпарса ларчĕ тет.

Нумай-и, сахал-и вăхăт иртрĕ тет — ялтан ниме тухрĕ пин лавпа. Ниме вăрмана кĕрсе кайрĕ тет.

Улăп кичемрен шаккăмла выля пуçларĕ тет. Пĕр шаккăмĕ аллинчен ÿкет тет те, аялалла йăваланса анать те тарăн çырма хĕррине ишĕлтерсе антарать.

Каçаларахпа ниме те киле таврăнать, анчах кĕпер çук та — çырма урлă каçаймаççĕ.

Вара Улăп кĕпер вырăнне çырма урлă хăй тăсăлса ÿкрĕ тет те хăй çинче пин лавлă нимене каçарса ячĕ тет.

## 11. Улăп лашалла вылять

Пĕрре çав Улăпа тула выляма кăларса янă тет çапла каласа:

— Улăп, юхмалла икерчĕ пиçиччен тулта выляса çÿре. Вăрмана ан кайнă пултăр, унта — кашкăрсем, уя та ан тух, унта — çĕленсем, çынсене çиеççĕ.

Улăп пуçларĕ тет лашалла выляма, пĕрене лашине пĕрех уялла тытрĕ тет.

## 12. Улăп суха тăвакан этемпе лашине кĕсйине чиксе килет

Уйра пирĕн пек çынна курсан Улăп лаши-çыннипех кĕсйине чикет те киле таврăнсан амăшне калать тет:

— Анне, çак кайăк-и е пукане?

Амăшĕ калать тет:

— Ай-уй, ачам, ку ни кайăк, ни пукане мар, çын вăл. Эпир вилсен е кунтан кайсан пирĕн вырăна вĕсем юлĕç, çĕр ĕçĕпе ĕçлĕç. Аçтан илсе килтĕн, çав вырăна кайса яр.

Улăп çынна лаши-сухипех илсе кайрĕ тет те кĕсйине чиксе хăй вырăннех ячĕ тет.

## 13

Ĕлĕк пиртен малтан çĕр çинче шултăра, çÿллĕ этемсем — улăпсем — пурăннă тет. Пĕрре ярса пуссан таçта çитиччен ярса пусатчĕç тет. Вăрманти юмансене йĕм пĕççине чĕрет тесе армути вырăнне кăлара-кăлара ывăтатчĕç тет.

Пĕрре çав улăпăн ачи хире кайнă тет те хирте этемсем суха тунине курнă тет. Суха тăвакана сухи-лаши-мĕнĕпех кармане чиксе таврăнать тет те амăшне калать тет:

— Анне, темĕскерле сар кайăк тытса килтĕм, хирте çĕре тăрмалать, — тесе калать тет.

Амăшĕ калать тет:

— Ан тив, ачам, вĕсене: эпир пĕтсен çĕр çинче çавăн пек çынсем пулĕç, — тесе калать тет, — вĕсен хыçĕнчен тата вĕт халăх пулĕ, — тесе калать тет, — тырă акса, тырă туса, авăн çапса илекеннисем пулĕç, — тесе калать тет.

Çавăнпа чăвашсем: «Тĕнче пĕтсен çĕр çинче пирĕн хыçран çавăн пек вĕтĕ халăх пулĕ»,—теççĕ.

## 14

Чăвашсем каланă тăрăх, пирĕн халăх йăхĕсем пулса кайиччен малтан вĕсен аслашшĕсем питĕ пысăк пӳ-силлĕ, калама çук вăйлă этемсем пулнă. Вĕсем çинчен çапла калаççĕ.

Турă çав пысăк этемсем вырăнне пирĕн пек этемсене туса хурать. Çав пысăк этемсенчен пĕри, Улăнк ятлăскер, хирте çӳренĕ чухне пĕрремĕш хут çав пĕчĕк этеме тĕл пулать. Суха сухалакан Улăнк çав çынна лаши-сухипех илсе кĕсйине чикет те килне илсе каять.

Киле çитсенех амăшне вăл хирте ула такка тупни çинчен каласа парать. Амăшĕ ăна мĕн тупса килнине кăтартма хушать. Улăнк çав этеме лаши-сухипех кĕсйинчен кăларса кăтартать.

Вара амăшĕ ывăлне çапла ăнлантарать:

— Пысăк пӳ-силлĕ улăнксем пĕтсен вĕсем вырăнне çав пĕчĕк этемсем пурăнмалла, вĕсене пĕтерсен пысăк çылăх пулĕ.

Çапла калать те ывăлне çав пĕчĕк этеме нимĕн усал тумасăрах хăй ĕçленĕ вырăна кайса яма хушать. Улăнк кайса ярать.

## 15

Ĕлĕк Улăп ятлă çын пурăннă. Пирĕн çын хире тухнă таракан пек тет. Вăл суха сухаланă. Ăна Улăп тытнă, лаши-масарĕ-суха пусĕпех кĕсйине чикнĕ те амăш патне илсе килнĕ. Амăш каланă: «Эй, ачам, — тенĕ, — мĕншĕн тытрăн? — тенĕ. — Каллех кайса яр вырăннех, — тенĕ. — Эпир пĕтетпĕр ĕнтĕ, — тенĕ, — çав çын çуралать», — тенĕ.

## 16

Пĕрре Улăп уя кайнă тет. Уйра пĕр çын ака тăвать тет. Улăп çӳллĕ пулнă тет. Улăп ака тăвакан çынна лаши-сухи-этемми качкипех кĕсйине чикрĕ тет. Киле таврăнсан амăшне каларĕ:

— Апай, эпĕ кайăк тупрăм, — терĕ те кĕсйинчен кăларса кăтартрĕ тет.

Амăшĕ каларĕ тет:

— Ан тив, пирĕн хыççăн çавăн пек çынсем пулаççĕ, — терĕ тет.

## 17

Ĕлĕкхи çынсем икĕ чалăш çӳллĕш пулнă. Пирĕн енче пĕри суха тăвакана курнă та çыннине хул хушшине хĕстерсе кайнă. Карчăкĕ апат çитерме килет те — старикĕ çук, ăна илсе кайнă.

Халĕ уйра тĕмескесем пур, улăп çăпатисенчен силленĕ тăпра. Çав улăпсем Çĕпĕр енчи сĕм вăрмансенчен килнĕ. Унта вĕсене çимешкĕн питĕ нумай тискер кайăк пулнă. Çавсене çинĕ. Вĕсенйăх пулнă.

Çĕпĕрте ĕлĕк тĕрме çыннисем вăрман каснă. Вĕсем патне пĕр хĕрарăм тухнă, унăн çӳллĕшĕ виçĕ метр ытла. Вăл нимĕн те тăхăнман, çынсенчен хăраса тарнă.

## 18

Улăпсем вĕсем çӳллĕ кĕлеткеллĕ пысăк çынсем пулнă, анчах вĕсем пурте вилсе пĕтнĕ ĕнтĕ, пĕри те юлман. Вĕсенчен пĕрне хальхи çирĕм çын та çĕнтереймен пулĕччĕ. Ярса пусмассерен вĕсем пилĕк çухрăм утнă, чи çӳллĕ вăрман та вĕсен пĕççи çӳллĕш кăна пулнă, улăпсем ун урлă утса пынă чух вăрман чăштăртатса та шăтăртатса юлнă. Пĕр улăпĕ ултă лашапа суха тăвакан хресчене лаши-суха пуçĕ качкипех çĕкленĕ те амăшĕ патне килне илсе кайнă:

— Кур-ха, анне, кăткăсене илсе килтĕм, çаксем çĕре сухалаççĕ! — тенĕ.

Иртсе кайнă май вăл хăй çăпатине тулнă тăпрапа тусана силле-силле хăварнă, çавăнтан вара пысăк купасем пулса юлнă. Вĕсене улăп тăпри теççĕ.

Чавнă чух çĕр çине тухакан авалхи чĕр чунсен шăммисене, халăх ĕненнĕ тăрăх, тахçанхи улăпсенчен юлнă теççĕ. Вĕсене улăп шăмми теççĕ.

## 19

Пиртен малтан улăпсем пурăннă тет. Çав улăп ачи пĕри пирĕн пек çын сухаланине курнă тет те: «Мĕнле кайăк ку? Хăй пĕчĕкçĕ çеç, çаплах çĕре хуратать. Киле илсе таврăнса аннесене кăтартам-ха», — тесе çав пирĕн йăхлă çынна хăйне, суха пуçне, лашине — пурне те пĕрле кĕсйине чикрĕ тет.

Илсе таврăнсан амăшне:

— Эп пĕр кайăк тупрăм, — тесе кăтартать тет.

Амăшĕ:

— Ай, ачам, ку кайăка ăçтан тытнă, çавăнтах кайса яр. Пиртен вара çак çынсем пурăнĕç пирĕн вырăнта, — тесе каларĕ тет те, вара ачи çав çынна хăй вырăннех кайса ячĕ тет.

Çав çынтан вара халь пурăнакан çынсем пулнă тет.

## 20

Авал пит пысăк çынсем пурăннă тет. Вĕсем суха тунă чухне çăпата ăшне тулнă тăпрана урине çăмăллатас тесе силлесе тасатнă тет те, çавăнтан кайран улăп тăпри пулса кайнă тет.

Вĕсем пит пысăк пулнă тет. Çӳренĕ чухне пысăк, ватă юмансене армутисене таптаса çӳренĕ пек çӳренĕ тет.

Пĕрре çапла пĕр улăп хăйĕн ватă амăшĕ патне хиртен хальхи этеме суха пуç-мĕнĕпех кĕсйине чиксе пынă тет те амăшне каланă тет:

— Анне, эпĕ хиртен пĕр хитре кайăк тупса таврăнтăм, — тесе каларĕ тет.

Амăшĕ ăна хирĕç каларĕ тет:

— Ачам, ачам, вăл кайăк мар, вăл этем. Ăна каллех хăйĕн вырăнне кайса яр. Халĕ ĕнтĕ эпир пĕтмелле, çаксем малалла пирĕн вырăна юлмалла, — терĕ тет.

Çав çынтан вара халĕ пурăнакан çынсем çуралса пулса кайнă тет.

## 21

Нумай ĕмĕрсем иртсен улăпсен йăхĕ пĕте пуçланă. Пирĕн пек вĕтĕ этемсем çуралса тухнă.

Пĕрре пĕр улăп ачи хирте выляса çӳренĕ чухне унччен нихăçан та курман хуртсем тĕл пулнă: вĕсем çĕрĕн питне чĕрсе курăк тымарĕсене çĕмĕрнĕ, çĕр тăприне çӳлелле кăларнă. Улăп ачи çав хуртсене аллипе тытса илнĕ те кĕсйине чиксе васкаса килне кăтартма илсе кайнă. Васканипе вăл çулне-мĕнне уямасăр тӳрех утнă. Анчах ăна юман вăрманĕ тĕл пулса утма чăрмантарнă. Ватă юмансем унăн урине çакланнă. Улăп ачи юмансене çилленсе каланă: «Мĕн-ха ку армутисем утма чăрмантараççĕ!» Вара юмансене армути тесе тăпăлтарма тытăннă. Çапла аллипе пайтах юман кăкласа аяккалла ывăтнă та тикĕс çул çине тухнă. Çав çулпа хăвăрт килне çитнĕ.

Килте амăшĕ пулнă. Улăп ачи хавасланса кĕсйинчен хăй хурт тесе ят панă чĕр чунсене кăларнă та алă тупанĕ çине лартнă. Хăй амăшне чĕнсе илсе каланă:

— Анне, пăх-ха часрах: епле тĕлĕнмелле хуртсем тупрăм эпĕ хирте! Вĕсем çĕре чĕреççĕ, курăксене хăртаççĕ! — тенĕ.

Амăшĕ хуртсене тинкерсе пăхнă та каланă:

— Çук, ачам, ку хурт мар — этемех. Этемми авă — икĕ уралли. Тăвата ураллисем — унăн лашисем пулаççĕ, вĕсем туртакан япали ака пуç пулать. Çав этем çĕре пăсмасть — çĕре чĕрсе курăк вырăнне çăкăр тумалли тырă акса ӳстересшĕн... Пирĕн пек шултăра этемсем, улăпсем, вилсе пĕтеççĕ ĕнтĕ: пирĕн вырăна вĕтĕ этемсем, çавăн пеккисем, пулĕç ӳлĕмрен. Çавăнпа ан тив, сиен ан ту çĕнĕ этеме, çĕрĕн хуçине, ăçтан илсе килтĕн, çавăнтах лашисемпе тата ака пуçĕпе пĕрле илсе кайса яр! — тенĕ.

Улăп ачи амăшĕ хушнă пекех тунă.

Çавăнтан кайран улăпсен йăхĕ чăнах та пĕтнĕ, пирĕн пек этемсен йăхĕ ĕрченĕ. Вĕсене чĕрĕп çĕр ĕçлеме, тырă акса тума вĕрентнĕ.

Анчах хальхи этем йăхĕ те ĕмĕрех пулмĕ. Вăл пĕр ĕмĕрсен хушшинче пĕтсе ларĕ те пирĕн пек этем вырăнне ытла та вĕтĕ этемсем çуралса тухĕç. Вĕсем çĕртен сасартăк ушкăнĕ-ушкăнĕпе тухса ĕрчесе кайĕç. Пысăкăшĕ енчен вĕсем пирĕн хурт-кăпшанкăсем анчах пулĕç. Вĕсем вун иккĕн пĕр улăм пĕрчине анчах йăтĕç. Авăн çапмалли йĕтемĕ вĕсен пирĕн кăмака тĕпĕнчен ытла мар пулĕ.

## 22

Авал çĕр çине шыв туличчен малтан Улăп ятлă çынсем пурăннă тет. Вĕсем пит пысăк пулнă.

Пĕрре улăпăн ачи уя вылямa тухнă та суха тăвакан çынна курнă. Улăп ачи ун патне пынă та: «Ку мĕнлескер?» — тесе çынна лашипе суха пуçĕмĕнĕпех тумтирĕн кĕсйине чиксе амăшĕ патне илсе пынă. Амăшне каланă:

— Пăх-ха, апи, пирĕн тĕслĕ кайăк тупрăм, çĕре шăйăрса йĕр туса çӳрет, — тенĕ.

Амăшĕ ывăлне каланă:

— Ан тив ăна эсĕ. Вăл пирĕнтен кайран пурăнмалли этем пулать. Ăна тивиччен ак çакна ту: ларса ăшăнма вут кăкласа кил, — тенĕ.

Ывăлĕ вăрмана кайнă та ватă юмансене кăкĕ-мĕнĕпех тăпăлтара-тăпăлтара кăларса пысăк юмана амăшĕ патне аплипех сĕтĕрсе çитернĕ.

Амăшĕ каланă вара:

— Çук, ачам, эсĕ нумай пурăнас çук, сан вырăнна çав эсĕ тытса килнĕ кайăк пурăнмалла. Виличчен эсĕ ĕçлесе пурăнма вăрман тăпăлтарса вырăн уçса парах. Сана вăл уншăн ĕмĕр-ĕмĕрех асăнса пурăнĕ, — тенĕ.

Ытла пысăкскерсем выльăх-чĕрлĕхе пĕтересрен Турă вĕсене шывпа пĕтернĕ вара.

## 23

Ĕлĕк пĕрре тапса сăрт куçаракан çынсем пурăннă тет. Чипер этемсене çĕр чавакан хуртсем тесе шутланă тет вĕсем.

Пĕр Улăпĕ çапла Атăл тăрăх улăхрĕ тет те ака тăвакан çынсене курчĕ тет. Хайхи пĕр çыннине лаши-сухи-мĕнĕпех хĕвне чиксе кайрĕ тет Улăп, килĕнче амăшне кăтартрĕ тет.

— Анне, анне! Пăх-ха, эп çĕр чавакан хурт тупрăм. Хăй пĕчиккĕ çеç, анчах çĕре чаваласа хуратать. Ал çупкăм пек лаптăк хураласа тăкнă, — терĕ тет.

Амăшĕ вара:

— Ачам, ачам! Ку хурт мар, ку — çĕр сухаласа çăкăр тăвакан этем. Малашне пирĕн вырăна çак çынсем юлĕç. Халь ку этеме ан тив, ав çавăнта çерем çине кăларса яр,—терĕ тет.

Улăп вара этеме кăларса ячĕ тет. Çавăнтан вара чăвашсем ака-суха туса Атăл хĕрринче пурăнма пуçланă тет. Улăпĕсем вăрман кăкласа хăртни чăвашсене уйсем тума пит пулăшнă тет. Ватă юмансене те армути тăпăлтарнă пек тăпăлтара-тăпăлтара пачĕ тет вара Улăп этеме. Ĕлĕк кунта вăрман нумай пулнă тет, вара çав Улăп кăкласа пĕтернĕ тет тыр-пул акса тума. Халь вăрман юлашкийĕсем çырма-çатра хĕррисемпе тăвайккисенче кăна юлнă тет, ака-суха тума юрăхсăр çĕрте.

## 24

Ĕлĕк пĕрре Улăп çул çинче пирĕн хальхи ăрури çынна суха тунине курнă. Улăп вара ку суха тăвакан лаши-суха пуçĕ-мĕнĕпех кĕсийине чиксе килне илсе каять. Килĕнче кĕсийинчен кăларса:

— Аттей, пăх-ха, эпĕ вĕтĕ кайăк тупрăм, пăхăр-ха епле интереслĕ,— тесе тĕлĕнсе тăнă.

— Ай, ачам, ан тив. Ăçтан тупрăн, çав вырăна кайса яр. Ку кайăксем — эпĕр пĕтсен пирĕн вырăна юлакан кайăксем, — тенĕ Улăп ашшĕ.

## 25

Улăпсем вĕсем пысăк пӳллĕ çынсем пулнă, сĕм вăрмансем тăрăх эпир курăк çийĕн утнă пек çӳренĕ. Кирек хăш йывăçа та, чи пысăккисене те, курăк евĕр çăла-çăла ывăтнă. Çăпатийĕ питĕ пысăк пулнă, çавăнпа унтан

силленĕ тăпра тĕме пулса юлнă. Çавăнпах уйсенче тĕл пулакан тĕмесене чăвашсем авалхи улăпсем çăпатаран силлесе хăварнă тăпра купи тесе шутлаççĕ.

Тепĕр темиçе ĕмĕр иртсен хальхи вĕтĕ халăх çуралнă. Улăпсем çав çынсен хушшинче те пурăннă-ха. Пĕррехинче пĕр тĕлте çынсем ултă лашапа суха тунă. Иртсе пынă май Улăп вĕсене асăрхать. Вăл вĕсене лашимĕнĕпех кĕсйине чикет те килне йатса каять.

Амăшне кăтартса çапла калать:

— Аннем, пăхсам мĕнлерех тĕлĕнтермĕш хуртсене тупрăм, вĕсем хирте çĕре чавалаççĕ, — тет Улăп.

Амăшĕ ăна вара çапла тавăрса калать:

— Вĕсене илсе килнĕ çĕре каялла кайса яр, кусем хуртсем мар, çынсем. Эпир кĕçех пĕтетпĕр, çĕр çинче вара вĕсем пирĕн вырăнне пурăнĕç, — тет.

## 26

Вăрман хĕрринче Улăп суха тăвакансене курнă. Вĕсене пуçтарса шăлавар кĕсйине чикнĕ те киле илсе таврăннă. 7 суха пуç, 7 лаша, 7 çын илсе кайнă тет. Кайран, амăшĕ хушнипе, вĕсене каялла илсе килсе хăварнă та çăпатине салтса, тăприне шаккаса тĕмеске туса хăварнă.

## 27

Улăп хиртен килне таврăнма тухнă тет. Сасартăк вăл çĕрте тем чаваланнине курнă. Шухăша кайнă вара Улăп: «Мĕн хурчĕ ку? Мĕн чавалать ку? Мĕншĕн çапла çĕре пăсать?» Анчах хăй ыйтуне хăй ниепле те хурав параймасть. Вара хурта илсе кĕсйине чикет те амăшĕ патне илсе каять.

— Анне, — тет вăл хайхискерне кĕсйинчен кăларса кăтартса. — Эпĕ темĕскерле сиенлĕ хурта илсе килтĕм, пĕчĕккĕ пулсассăн та çереме пăсать хăй. Çитменнине тата, темĕнле урăх хурта та кӳлсе янă.

Амăшĕ Улăпа хуравланă тет:

— Ку хурт мар, ачам. Ку — этем. Вăл çĕре пăсмасть, вăл çĕр ĕçлесе пурăнать: çĕре сухалать, унтан вăрлăх акать, кайран хăйне валли тырă пухса кĕртет. Кӳлни те хурт мар, вăл лаша, этеме пулăшаканĕ. Ачам, этеме сиен ан кӳр, ăçтан илтĕн, çавăнта кайса хур. Аслă турă çапла каланă: пурăна киле эпир вилетпĕр иккен, пирĕн вырăна вара çĕр çине этемсем юлĕç.

Улăп амăшне итлесе чăнах та этемпеле ун лашине каялла уя илсе кайса янă. Пыра киле вара Улăппала унăн амăшĕ çухалнă, çĕр çинче чăнах та çынсем йышлăн пурăнма тытăнса кайнă.

## 28. Улăп ачасене амантать

Пĕр карчăкпа старикĕн ватлăхра ача çуралнă. Ача ятне Улăп ятлă хунă тет. Улăп кунпа, эрнепе мар, минутпа, сехетпе ӳснĕ тет. Çуралнă кунах ачасемпе выляма урама тухнă. Ачасен аллисене тытнă — аллисем хуçăлнă. Юратса чăмăртама тăнă — ачасем антăхса кайнă. Чупма тăнă — ăна çитекен те пулман тет.

Каярахпа ялти ача-пăчасен ашшĕ-амăшĕсем Улăп çинчен ашшĕне каласа панă: «Чармасан, — тенĕ, — вĕлеретпĕр» — тенĕ.

Улăпа ашшĕ тула кăларас мар тесе пӳрт пĕрени çумне çапнă пăтаран кăкарса лартнă. Улăп кăшт туртăннă та пăтана кăларса пăрахнă. Ашшĕ пӳрт пĕренинчен кăкарнă. Улăп шыв ĕçесшĕн кăшт туртăннă та пӳрт пĕренине кăларса хунă. Ку усал ачана чараяс çук тесе сарай юпинчен кăкарса лартнă тет. Улăп кăшт сулăннă та, сарай юпи хуçăлса кайнă. «Ну, ачам, эпĕ сана усраяс çук. Ху çулупа ăçта каяс килет — кай. Ял халăхĕнчен иртеес çук», — тесе ашшĕ Улăпа килĕнчен кăларса янă.

Улăп килĕнчен тухса утнă. Кашни утăмĕ çичĕ çухрăм пулнă тет. Çăпатине кĕнĕ, тĕпне çыпăçнă тăприне силленĕ те, мăн тĕмеске пулса юлнă тет.

## 29. Улăп тĕнче курма тухса каять

Пурăннă тет ĕлĕк-авал пĕр хĕрарăмпа ывăлĕ. Ывăлĕ кунпа мар, сехетпе ӳснĕ тет. Вăл çитĕннĕ тет те амăшне калать тет:

— Çук, анне, эсĕ мана тăрантарма пултараймастăн, çавăнпа эпĕ тĕнче курма тухса каятăп. — Çапла каларĕ тет те амăшĕпе сывпуллашса тухса кайрĕ тет.

Пурăнсан-пурăнсан ку ача улăп пулса тăчĕ тет. Вăл хăйĕн пысăк та вăрăм урисемпе утса çӳренĕ тет. Вăл пуснă чух çĕр кисреннĕ, пуснă вырăнĕсем çырма пулса юлнă.

Улăпăн кĕтӳ пулнă тет. Вун ик витре кĕрекен хуранĕ пулнă тет. Кашни пĕçермессерен вăл çичĕ така пуснă тет.

# УЛĂПСЕН ПĔВĔ-СИЙĔ, ТУМĔ-ЮМĔ, КĂМĂЛĔ

## 30. Улăпăн кĕпи асамлă

Улăп хăй патĕнче çитмĕл те çичĕ патшалăхран илсе килнĕ хĕрсене тытса усранă тет, хăй валли ĕçлеттернĕ тет. Хĕрсем итленĕ тет Улăп каланине.

Пĕрре вĕсем Улăп валли шурă йĕтĕн пирĕнчен кĕпе çĕлеме шутланă тет. Çитмĕл те çичĕ ана çине йĕтĕн вăрри акрĕç тет, пăхса ӳстерчĕç тет, шурă сӳс турĕç, арларĕç, çип турĕç тет, тĕртрĕç те шур пир турĕç тет. Шурă пирне çитмĕл те çичĕ тĕспеле хитре тĕрĕ тĕрлерĕç тет. Вара çак пиртен çичĕ эрне те çичĕ кун кĕпе çĕлерĕç тет.

Çак кĕпене тăхăнсан Улăпăн тата вăй хутшăнчĕ тет. Вăл çĕр çул ларакан юмансене кăкла-кăкла ывăтнă тет, юманĕсем тинĕс леш енне кая-кая ӳкнĕ тет. Çапла Улăп çитмен çĕр юлман, çĕнтермен тăшман юлман тет.

## 31. Улăп амăшĕпе пĕрле çӳрет, чĕр чунсене курать

Ĕлĕк пĕр Улăп ятлă çын пулнă. Çав Улăп питĕ пысăк çын пулнă тет. Унăн амăшĕ те пулнă тет. Вăл кирек ăçта кайнă чух та амăшне хăйпе пĕрлех илсе кайнă тет.

Çав Улăп пĕрре таçта кайнă чух ун куçне урапа тукунĕ татки кĕнĕ тет. Вара киле таврăнсан амăшне: «Анне, куçа темскер кĕрсе кайрĕ, мăкăлтатать», — тет. Вара амăшĕ кăларчĕ тет.

Çав Улăппа амăшĕ тĕрлĕ чĕр чунсене çисе пурăннă тет.

Вăл кăткăсене хăй пек пысăк пулма вĕрентнĕ тет. «Эсир ман юлташ пулатăр», — тенĕ тет.

Вăл кирек ăçта кайнă чух та патаксăр кайман тет.

Вăл пĕр çимесре виçшер-тăватшар кайăк çинĕ тет. Шыв ĕçнĕ чух пĕр пĕвене пĕтĕмпех ĕçсе янă тет.

Пĕрре мăн çул çине ларса ура салтнă тет. Вара пĕр урине силлерĕ тет те пĕр мăкăр туса лартрĕ тет. Тепĕр урине силлесен тепĕр сăрт пек мăкăр туса хучĕ тет. Вара урисене силлесен хăй те: «Ах, çăмăл пулчĕ», — терĕ тет.

Вара тискер кайăксене хăваласах патакпа çапса ÿкерет тет. Кайăкне тытсан: «Апат пулчĕ, анне!» — тесе калатчĕ тет. Вăл пит пысăк, вăйлă çын пулнă тет.

Çав Улăп пур çĕрте те пурăннă тет. Унăн пичĕ-куçĕ питĕ пысăк пулнă тет. Тăнă чух алли çĕре чут тивмен тет. Вăл пĕрре ярса пуссан çĕр аршăн ытла пуснă тет. Унăн шăлĕ тискер кайăксен шăлĕ пек пулнă тет.

Çав Улăп пĕрре шыв хĕрне аннă тет. Унта пĕр шапа тухнă тет. Шапа:

— Мĕн туса тăран эс кунта, Улăп пичче? — тесе калать тет.

Улăп ăна хирĕç:

— Сана курма килтĕм, — тет.

Улăпăн амăшĕ вилнĕ тет. Вăл амăшĕ вилсен питĕ куляннă тет. Çав Улăп: «Эпĕ вилсен çак çĕр çинче пĕчĕк çынсем пулаççĕ, — тенĕ тет. — Çав çынсем пĕчĕккĕ пулаççĕ, — тенĕ тет. — Ун чухне, ман пек, кайăксене тытма пултараймаççĕ, — тенĕ тет. — Çав çынсем çĕр ĕçлесе пурăнаççĕ, — тенĕ тет. — Вĕсем питĕ вăйсăр пулаççĕ тата питĕ имшер пулаççĕ», — тенĕ тет.

## 32. Улăп вăрман тăррине курăк пек татать

Улăп сăртран сăрта кăна пусса çÿренĕ, вăрмансене тăрринчен тытайса татса пăрахнă — курăк таптанă пек. Пысăк, шултăра пулнă вăл. Ун чухне ку çынсем пулман, кайран, улăпсем пур чухнех, пирĕн ку çынсем пулнă.

## 33. Улăпшăн йывăççем армути çÿллĕш

Улăп питĕ пысăк çын пулнă тет. Утса пынă чухне, эпĕр халĕ армутисене пĕç хушшине тăва-тăва хăварнă пек, вăрăм йывăççене пĕç хушшине туса утса çÿренĕ тет.

## 34. Улăп юмансене армути кăкланă пек кăклать

Улăп тени тĕлĕнмелле мăнă, вăйлă пулнă тет. Çÿренĕ чух çĕр, пин çул ÿснĕ вăрман урлă йывăççене пĕç хушши витĕр кăларнă тет. Пин çул ÿснĕ юмансене армути тункатине кăкланă пек çăмăллăн кăкланă тет.

## 35. Улăп вăрмана шур арăм* вырăнне хурать

Вăрман урлă каçнă чух Улăп:

— Шур арăмсем йĕм тĕпне çакланчĕç, — тесе калать тет.

Вăрмана шур арăм вырăнне анчах хунă вăл.

* Шур армути.

## 36. Улăп юмансене кăклать

Пĕррехинче Улăп хирпе пынă. Утсан-утсан сасартăк йĕмĕ çумне темĕнле çум курăксем çыпçăннине курах каять, вĕсем ун шăлаварне темиçе çĕрте çĕтсе те пĕтернĕ. Улăп вара çилленет каять, çав çум курăксене турта-турта кăларма тытăнать. Пĕр-рех туртать те темиçе çум курăкне çăлса илет, таçта çити ывăтса ярать, çапла хăй валли çул туса пыма тытăнать. Ку çум курăкĕ тесе шутланă япала юмансем пулнă иккен. Юмансене çапла çăла-çăла илсе утнă май Улăп пĕр уçланкăна тухнă та çĕр çине ларса çăпатине тулнă тăпрана силлеме шутланă. Вара икĕ çăпатине силленĕ вырăна икĕ пысăк тĕмеске тăрса юлнă, халăх вĕсене Улăп тăпри теме тытăннă.

## 37. Улăп çăпати — ял урамне шăнăçми

Авал пулнă паттăрсем çич çухрăмлă утăмлă, хĕвеле тытнă ывăтнă, вăрмана тымарпа çăлса пăрахнă. Унăн çăпати пулнă иккен ял урамне шăнăçми. Çăпати çумĕнчи пылчăкне силлесе ывăтса ярсассăн пулса тăнă çӳл тусем.

## 38. Улăп çăпати пĕр-икĕ çухрăм тăршшĕ

Ĕлĕк-авал, темиçе пин çул каялла, тĕнчере чи пысăк çын пулнă тет. Унăн пуçĕ пĕлĕте перĕнсе тăнă тет, алли-урисем çĕр хăлаç пулнă тет. Çăпати вара пĕр-икĕ çухрăм тăршшĕ те пулнă имĕш.

Улăп утнă чух пĕрре ярса пусса вуншар çухрăм тăршшĕ утнă тет. Улăп ытла йывăр пулнипе унăн урисем çĕр ăшне пута-пута кĕнĕ тет. Кашни ярса пусмассеренех унăн ларса çăпатине силлемелле пулнă тет. Çăпатинчен силленĕ тăпра ту пек пулса юлнă тет. Çав пирĕн патăрти тĕмеске те улăп çăпатинчен тăпра силленипе пулнă тет.

## 39. Улăп çăпати çичĕ чалăш

Улăп тени питĕ пысăк çын пулнă. Çăпати çичĕ чалăш тет, утти çичĕ çухрăм тет. Кашласа ӳсекен вăрмансем пĕç хушши витĕр кашласа юлнă тет.

## 40. Улăп çăпати пылчăкĕ — çитмĕл çичĕ пăт

Улăп çăпати çумне çыпăçнă пылчăкĕ те çитмĕл çичĕ пăт туртнă тет.

## 41. Улăп атти пуçĕ — çур метр

Улăп тăпри Çĕн Сала патĕнче. Унта Улăпăн аттине тупнă, атти пуçĕ çур метрлă. Пахум суха сухаланă чух тупнă. Пурнать-ха Пахумĕ. Çĕньял чăвашĕ вăл. Пĕрле ĕçленĕ чух каласа пачĕ.

## 42. Улăп сулли — касмăк кăшăлĕ пек

Аллине тăхăнакан сулли те касмăк кăшăлĕ пек пулнă теççĕ. Вăрман йĕм тĕпне çĕтсе пĕтерет тесе туйрасене çăла-çăла тăкнă тет.

## 43. Улăп шăлĕ — пĕр кĕрепенкке

Улăп çăпатине силлесе хăварнă, тĕмĕ юлнă. Кайран сăвăрсем йăва тума пуçланă.

Улăпăн пĕр шăлĕ пĕр кĕрепенкке пулнă.

## 44. Улăп шăммисем

Йăмраллă енче çырмара шăмăсем чавса кăларнăччĕ, вĕсем 4—5 м тарăнăшĕнче выртнă. Вĕсем потоп чухне пытанса юлнă. Эп вĕсене ача чухне кайса курнăччĕ. Вырăнĕ кунтан пилĕк çухрăма яхăн, вăрман урлă. Çав шăмăсене улăп шăммисем тетчĕç.

## 45. Улăп хăйри сĕтел пек

Эп хĕр чухне атте мана вăрмана илсе каятчĕ. Чуневар çырма хĕрринче, Чарту каринче, пушăт касаттăмăр.

Çавăнта пушăт касма кайнă чух атте пĕрмаях Чарпуçĕнче чарăнатчĕ те: «Улăп чулĕпе пуртă хăйрас-ха», — тесе лаша чарсах пы-ысăк хăйра чульпе пурттине хăйраса илетчĕ.

Улăп хăйри пысăкчĕ вăл. Сĕтел пек те пур, пысăк сĕтел пек.

Пурттине хăйраса пĕтерсен урапа çине ларатчĕ те çул тăршшĕпех улăпсем çинчен юмах яратчĕ.

Вăрман урлă эпир хыт хура урлă каçса çӳренĕ пекех çӳренĕ тет улăпсем. Çав тери пысăк пулнă ĕнтĕ вĕсем.

Чарпуçĕнчи улăп хăйрипе улăпсем çава лапаткаланă тет. Лапатки пĕрре темскерле тухса ӳксе çĕтсе юлнă. Чăнах та, лапатка манер пур çав хăйра чулĕ.

## 46. Улăп йывăрăшне лаша чăтаймасть

Ĕлĕк-авал Улăп паттăр пулнă тет. Çав паттăрăн ни хĕç пулман (вутхĕç текенни), ни лаши пулман (Çил çунат ятли). Улăп питĕ пысăк пулнă çав: утланать тет лаша çине — лаши ăна чăтайманнипе кукленсе ларнă тет. Хайхи Улăп аптраса çитет — ниçта ун валли лаша çук.

## 47. Улăп амăшĕ кĕпе çĕлет

Ĕлĕк улăп текен халăхсем пурăннă. Вĕсем питĕ пысăк пулнă. Вĕсем вĕтлĕхсене куршанак тесе касса çӳренĕ тет. Çăпатине тулнă тăпрана тăкса хăварсан ту пулса юлнă тет.

Пĕр улăпăн амăшĕ пулнă тет. Вăл каланă тет: «Çил пултăм, тăвăл пултăм, çич кунта пĕр кĕпе çĕлерĕм».

Ку ĕнтĕ вĕсем питĕ пысăк иккенне пĕлтерет.

Эпĕ çамрăк чухне Патĕрьелĕнчи атă çĕлекен патĕнче икĕ аршăна яхăн вăрăмăш пĕç шăмми курнăччĕ. Ăна çав улăпăн пĕç шăмми тетчĕç. Ăна Пăла айккинчен тупнă тетчĕç, шывпа юхса килнĕ тетчĕç.

## 48. Улăп шăлавар çĕлет

Улăп пĕр кунхине кунĕпе шăлавар çĕлесе ларнă тет.

Çĕлесе пĕтернĕ те тăхăнса янă, уçălма тухнă. Вăрман урлă каçнă

чухне шăлаварĕ йывăç тураттине çакланса чĕркуççи таран çуркаланнă тет. Улăп хайхи çилленсе кайнă та йывăçсене кăкла пуçланă тет, йывăçсене кăкла-кăкла вăл вăрман хĕррине тухнă.

## 49. Улăп хĕрĕ ашшĕ валли йĕм çĕлет

Пĕр улăпăн тăвата ача пулнă тет: виçĕ ывăл, пĕр хĕр. Улăпăн хĕрĕ ашшĕ валли йĕм çĕлет тет, çĕлесе те çĕлесе пĕтереймест тет. Хăй вара çапла юрлать тет:

Çил пултăм, тăвăл пултăм,
Çичĕ кунта пĕр йĕм çĕлерĕм,
Ана та юлашкинчен
Инкесем пулăшрĕç.

## 50. Улăпсем йăрăмлă шăлавар тăхăннă

Улăпăн ашшĕпе амăшĕ ватă пулнă. Улăппа ашшĕ йăрăмлă шăлавар, кĕпе, амăшĕ чăваш кĕпи тăхăннă, çемйипех çăпата сырнă.

## 51. Улăп чухнехи выльăхсемпе чĕр чунсем

Улăп чухне уй-хир кайăкĕ те шултра пулнă теççĕ. Хальхи лаша-ĕнесем ун чухне кăткă пек вĕтĕ пулнă теççĕ. Йытăпа кушак мамонт пек шултра пулнă тет.

## 52. Улăп чухнехи выльăхсем

Улăп вăхăтĕнче хальхи кайăк-кĕшĕк те шултăра пулнă. Хальхи лаша-ĕнесем вара кăткă пек вĕтĕ пулнă тет. Йытăпа кушак вара слон пек шултăра та ăратлă пулнă тет.

## 53

Улăп чухне хальхи кайăк-кĕшĕк те питĕ шултра пулнă тет. Хальхи лаша-ĕнесем вара питĕ вĕтĕ пулнă тет. Çак улшăнусем вăхăт иртнипе пулнă имĕш.

## 54

Улăпсем пурăннă чухне хальхи кайăк-кĕшĕк те шултра пулнă тет. Хальхи лаша-ĕнесем вара кăткă пек вĕтĕ пулнă тет. Йытăпа кушак карап пек пысăк пулнă тет.

## 55. Улăппа этемсем

Улăп çав хатер пысăк япала пулнă тет у*. Пĕррĕ тата çапла ал тупань çине алă çын лартнă тет те пирн пек çынсăне çапла каласа тĕлĕнсе тăрать тет: «Ай тур-тур, апăршасăм! Алли пур, тяппи пур, хăлхи те пур, шăмми

* Вăл.

те пур, çăварĕ те пур, кусĕ те пур хăйсен, чĕлхи те пур, сасси те пур. Мĕлле усăм, калла-малла чупса çӳреç усăм», — тесе шалт тĕлĕнсе пăхать тет. Вара калла ячĕ тет, амăш курса вăрçрĕ тет те — ячĕ тет вара.

## 56. Улăп ятлă паттăр

Чăвашсен ĕлĕк (авал) Улăп ятлă паттăр пулнă. Улăп пит шутсăр вăйлă пулнă. Тата вăл пит пысăк пулнă. Унăн амăшĕ Улăп валли пĕр çул пир тĕртсе кĕпе-йĕм çĕленĕ.

## 57. Кавказ тăвĕсем хушшинче тăракан улăп

Ĕлĕк хальхи пек çынсем полман тет. Пирн вырăна тем пысăкăш çынсем — улăпсем полнă. Халĕ тĕмескесем пор вĕт. Вот çав тĕмескесем улăпсенчен полнă. Улăпсем таçта та çӳренĕ. Вĕсем Вăтам Кавказ тăвĕсем патĕнче те полнă. Унта тăрсан вĕсен çор кĕлетки çеç корăннă, çорри вара пĕлĕт ăшĕнче полнă. Вот мĕнле пысăккă полнă вĕсам. Халĕ вара онта уяр çанталăкра икĕ улăп тăни корăнать тит.

## 58. Улăп çурчĕ

Тахçан асаннесем хăйсем ярмă[н]ккана кайнă чух Улăп хĕрĕсене курнисене каласа паратчĕç. Интересленсех итлеттĕмĕр. Ярмă[н]кка хальхи хыр вăрманĕ хыçĕнче пулатчĕ ун чух. Эпир, касри хĕрсем, пуçтарăнса вăйă курма каяттăмăр. Улăп çурчĕ умĕнчен иртсе каятчĕ çул. Вара эпир хапха айĕнчен выртса пăхаттăмăр. Улăп хĕрĕсем, сап-сарă çӳçлĕскерсем, картишĕнче çӳретчĕç. Çурчĕ пысăкчĕ. Йĕри-тавра хӳме, чăх-чĕп вĕçсе каçаяс çук.

# УЛĂПСЕМ ТĔНЧЕНЕ ХĂТЛĂХ КӲРЕÇÇĔ

## 59. Пĕлĕт çинчи Улăп

Ĕлĕк-авал çĕр çинче нимĕн те пулман тет, пĕр пĕлĕт анчах пулнă тет. Пĕлĕчĕсем çĕр çумĕнчех пулнă тет.

Пурăнсан-пурăнсан улăпсем килчĕç тет. Вĕсем сунар ĕçĕпе пурăннă тет. Пĕр Улăпĕ сунартан килчĕ тет те пĕлĕт çине канма выртрĕ тет. Питĕ ывăннипе çывăрса кайрĕ тет.

Кăшт тăхтасан юлташĕсем те сунартан таврăнчĕç тет, çывăракан Улăпне вăратаççĕ тет. Вăратрĕç тет, ку, çывăраканскер, темĕн чухлĕ вăратсан та тăмасть тет. Вара кусем çилленсе каяççĕ те çывăракан Улăпа пĕлĕчĕмĕнĕпех çӳлелле тĕртсе улăхтарса яраççĕ тет. Улăпĕ çаплах çывăрать тет, вăранмасть тет.

Çывăрсан-çывăрсан хай Улăп вăранать тет. Пăхать тет, йĕри-тавра никам та курăнмасть тет, пĕлĕтсем анчах чупаççĕ тет. Вара ку тăчĕ тет те юлташĕсене шырама пуçларĕ тет. Пĕлĕтсем тăрăх пĕр еннелле чупать тет — никам та çук тет, тепĕр еннелле каять — каллех юлташĕсене тĕл пулмасть тет. Вăл чупнă чух пĕлĕтсем кĕмсĕр-кĕмсĕр! тăваççĕ тет, вăл ăçта пусать тет, çав тĕлте аслати тухать тет, çиçĕм пулать тет. Никама та шыраса тупайманнипе Улăп çав тери хурланса йĕрсе ячĕ тет, вара унăн куççулĕнчен çумăр пулса çурĕ тет.

Çав Улăп çĕр çине анаймарĕ тет, пĕлĕт çинче ĕмĕрлĕхех пурăнма юлчĕ тет, пĕчченех пурăнать тет. Тин ĕнтĕ çĕре анаймасть тет. Кайран вара çак Улăп турă пулса юлчĕ тет.

## 60. Улăп пĕлĕте тĕкĕлесе тăрать

Тахçан, ĕлĕк-авалах, чăваш çĕрне пĕр улăп килнĕ тет. Хăй вăл питĕ пысăк пулнă. Хулпуççийĕсем унăн пĕлĕте тĕкĕлесе тăнă, пуçĕ пĕлĕтсем хушшинче пулнă, хăй вара пĕр утăм пусса çичĕ çухрăм кайнă тет.

## 61. Улăп пĕлĕте перĕнсе тăрать

Çав тери вăйлă та пысăк кĕлеткеллĕ çын пулнă вăл, хулпуççийĕсемпе вăл кăвак пĕлĕте перĕнсе тăнă, кашласа ларакан сĕм вăрмансем ăна хыт хура тĕмĕсем пек кăна туйăннă, пысăк йывăç тăррисем урлă утса кайнă, вĕсене аллипе туртса тăпăлтарнă.

## 62. Улăп пĕлĕте çӳлелле тĕртсе хăпартать

Ĕлĕк пĕлĕт çĕртен йăмра çӳллĕш анчах пулнă. Вăл çынсем мĕн ĕçленине пăхса тăнă. Çав вăхăтра улăпсем пулнă, вĕсем пĕлĕтрен çӳллĕ пулнă. Пĕлĕт улăпсене çӳреме чăрмантарнă. Пĕр улăпĕ вара капла çӳреме кансĕр тесе пĕлĕте çӳлелле тĕртсе хăпартса янă. Пĕлĕчĕ çав тери куляннă тет.

## 63. Улăп уйăха пĕлĕт çумне çакать

Авал пĕлĕтпе уйăх пуç тăрне перĕннĕ тет. Улăп пĕлĕте çӳлĕк вырăнне хурса алсине, çĕлĕкне пĕлĕт çине хунă тет.

Пĕрре асăрхамасăр çамкине уйăха перĕнтерсе ыраттарчĕ тет. Улăп тарăхнипе уйăха пĕррех персе ячĕ тет. Яка мар пĕлĕт тăрăх уйăх сиккелесе хăйпăнса пĕтрĕ тет. «Эх, капла уйăха пĕтертĕм вĕт. Kaçхине мĕнле çутăпа çӳрĕп-ха?» — тесе каялла уйăх катăкĕсене пуçтарса çыпăçтарчĕ тет те ӳлĕмрен перĕнсе ан чăрмантартăр тесе уйăха пĕлĕт çумне çакрĕ тет.

Çавăнпа уйăх пĕрре пĕтет, тепре çĕнĕрен пуçтарăнать.

## 64. Улăп çĕмрĕк уйăха пĕлĕт çумне çыпăçтарнă

Ĕлĕк уйăх аслăк çинче пулнă тет. Пĕрре улăп асăрхамасăр пуçĕпе уйăха перĕннĕ те çĕре, чул çине, ӳкернĕ тет. Уйăх катăкăн-катăкăн ванса кайнă. «Эх, аслаттей ятлаçать», — тесе уйăха катăкăн-катăкăн илсе пĕлĕт çумне çыпăçтарса хучĕ тет.

## 65. Улăп тӳшекĕ — пĕлĕт

Улăп ашшĕ Çӳлти турă умĕнче питĕ пысăк айăпа кĕнĕ пулнă. Ăна вара Çӳлти турă аслă ту çумне сăнчăрласа лартнă.

Улăп хăй ашшĕне ирĕке кăларма ыйтас тесе Çӳлти турă патне кайнă.

— Сан аçу çынсене мана пăхăнмасăр пурăнма вĕрентет, — тенĕ ăна

Çӳлти турă. — Хăçан та хăçан вăл мана итлеме тытăнать, çавăн чухне кăна эпĕ ăна ирĕке кăларатăп, — тенĕ.

Çапла ним ĕç кăлараймасăр улăп каялла килне таврăнать. Çул çинче вăл çав тери ывăнать, вара кăтра пĕлĕтсем çине выртать те çывăрса каять. Çавăнпа ĕнтĕ халăхра халĕ те: «Улăп тӳшекĕ — пĕлĕт», — теççĕ.

## 66. Çунатлă улăп

Улăп вăл тахçан авал çĕр çинче мар, пĕлĕт çинче пурăннă.

Пурăнсан-пурăнсан улăп Çӳлти турăпа хирĕçсе кайнă. Çӳлти турра ун чухне Аслатти тенĕ. Аслатти вара улăпа çĕр çине антарнă.

Улăп çĕр çийĕпе вĕçсе çӳренĕ тет, ывăнсан канма ларнă. Вăл канма ларнă тĕлте шăтăк-путăксем пула-пула юлнă.

Улăп хăйне пĕлĕт çинчен антарнăшăн Аслаттине çав тери çилленнĕ. «Эх, сирпĕтсе антарап та-ха сана хăвна та пĕлĕт çинчен!» — тенĕ.

Çӳлти турă çакна илтнĕ те улăпа таçта урăх çĕре хăваласа янă.

## 67. Вĕçсе çӳрекен улăп

Ĕлĕк-авал çĕр çинче пирĕн пек çынсем пурăнман, пысăк этемсем пурăннă. Вĕсем çӳлтен вĕçсе çӳренĕ, ывăнсан канма çĕр çине пусса илнĕ. Çĕр питне пуссан вĕсен урисен йывăрăшне çĕр çийĕ чăтайман, путса аннă. Çав вăйлă, йывăр çынсене улăп тенĕ.

Улăпсем вăрмансем урлă урисене ярса пусса çӳренĕ. Тавралла вăрман пулнă, сăртлă вырăнсем курăнса ларнă. Çĕр çине урисемпе пуссан вĕсен урисем çĕре путса ларнă. Вара вĕсем урисене туртса кăларнă чух çăпатисем ăшне тăпра тулнă, çав тăпрана тасатса хăварнă. Улăп çăпатисенчен тăкăнса юлнă тăпраран сăртсем пулса кайнă. Хамăрăн Шануй çырминче те çавăн пек тăпра пур, ăна асаттесем те, эпир те улăп тăпри тесе калатпăр.

## 68. Турă Улăпа пĕлĕт çинчен хăваласа ярать

Тахçан авал Улăп çĕр çинче мар, пĕлĕт çинче пурăннă тет. Пĕрре-хинче Аслатипе — Илья Пророкпа — Улăп вăрçăнса каяççĕ. Илья Пророкĕ тарăхнипе Улăпа çĕр çине хăваласа ярать. Улăпĕ хăйне валли вырăн шыраса вĕçсе çӳрет тет. Вĕçсен-вĕçсен канма ларнă. Вăл канма ларнă çĕрте путăк юлнă.

Улăпĕ хăйне пĕлĕт çинчен антарнăшăн Аслатине питĕ хытă çилленнĕ тет. Ăна юлашки сăмахсемпе вăрçнă. Çакна Çӳлти Турă илтнĕ те Улăпа таçта урăх çĕре хăваласа янă тет.

# УЛĂПСЕМ АТĂЛ ÇИНЕ КИЛЕÇÇĔ

## 69. Улăпа кашкăр ертсе каять

Илтнĕ-и эсир, тусăмсем, сăвапла кашкăрăн юррине? Илтнĕ пулĕ. Вăл паян та Улăпа ертсе çӳренĕ чухнехи пекех юрлать, пирĕн пата Аша Пихампарăн кăмăлне çитерет.

Аслă Асаттесен ĕмĕрĕнче инçетри Ылтăн тăвĕсем енче Улăп паттăр хăйĕн халăхĕпе пурăннă. Кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе выльăх усранă. Учĕсем вĕсен хирсем тăрăх ĕрĕхсе çӳренĕ, самăр вăкăрсем мĕкĕрсе çӳллĕ тусене хускатнă.

Кунсем иртнĕ. Çулсем кемелнĕ. Улăп паттăр пĕррехинче анăçри тулăх хирсем еннелле куçса кайма шухăш тытать. Йăхсен пуçлăхĕсене пĕр çĕре пуçтарса хăй тĕллевне каласа канаш тăвать. Йăхсен пуçлăхĕсем унпа килĕшеççĕ. Улăп вара çав каç, çур çĕр çитсен, турăсемпе калаçма ту тăррине тухса тăрать. Кĕллисене туса пĕтерсен Улăп умĕнче сасартăк кашкăр курăнса каять. Ун тавра çап-çаврака çутă иккен. Этем чĕлхи кăларса аслă паттăра вăл çапла калать:

— Аслă Улăп, Аша турă хушнипе эпĕ сана хам хыççăн анăçалла ертсе кайăп. Эсĕ ан шиклен, ман хыççăн патваррăн ут. Эпĕ ялан санпа пĕрле, сан умăнта пулăп, сан выльăхусене, халăхна упрăп, — тет.

Хускалать вара Улăп халăхĕ ирхине ирех анăçалла куçма. Ун умĕнче вăхăтран вăхăта кăвак кашкăр курăна-курăна каять. Чарăна-чарăна уласа ярать тет. Пихампар йытти улавĕ Улăп халăхне юрă пек илтĕнсе пынă, ун кĕлетки çĕрле ялан çавра çутă варринче курăннă.

Ватăсем каланă тăрăх, Улăп халăхне çав кашкăр Арамаçи тăвĕсем патне ертсе тухнă тет. Çапла пуçланнă тет пирĕн мăн асаттесен ку тăрăхри пурнăçĕ.

## 70

Эпир Кашкăрсем. Пирĕн несĕл Альшихре чи ватти шутланать, вăл Кашкăр йăхĕнчен ĕрчесе тухнă.

Тĕне кĕртнĕ чухне тиексем пирĕн хушамата вырăсла Волков тесе çырнă. Асаттесен аслă ашшĕ çавăншăн питĕ тарăхатчĕ тет:

— Мĕнле Волковсем пулар эпир?! Кашкăрсем эпир, — тесе калатчĕ тет. — Улăп халăхне кунта Пихампар кашкăрĕ ертсе килнĕ. Эпир çав кашкăрăн, çав халăхăн тымарĕнчен, — тесе Улăп çинчен халап каласа паратчĕ тет.

Çапла, Кашкăрсем эпир, сăваплă таса чунăн несĕлĕнчен.

## 71

Кăнна Кушкинче пурăнакан ватăсем ĕлĕкрех пире улăп çинчен тĕрлĕрен халапсем каласа паратчĕç, ял çумĕнчи ту çине кашкăр килсе уланине халаплатчĕç. Çавăнпа вара пирĕн ялсем çуллен Аша Пихампара асăнса чӳк туса ирттенĕ иккен, çав вырăнтах ял пуçласа янă. Çав кашкăр пирĕн ялăн управçи-сыхлавçи пулнă теççĕ. Вăл та пирĕн улăпа çакăнта килме çул кăтартса пынă пулать. Улăп паттăр кашкăр чĕлхине пĕлнĕ, çеçен хире тухса тăрса унпа ула-ула калаçнă.

Ĕлĕк-авал пирĕн чăвашсем хамăрăн йăласене, йĕркесене лайăх тытса пынă. Ахальтен мар ĕнтĕ асатте çывăрма выртас умĕн:

Аша турă, каçар,
Аша турă, çырлах,
Пирĕн выльăха-чĕрлĕхе упра, —

тесе сылтăм алла чĕре çине хурса тайăлма хушатчĕ.

## 72. Улăпа сăрт çумне сăнчăрланă

Ĕлĕкрех турă улăпа сăрт çумне сăнчăрласа хунă тет. Улăп сăнчăрсене туртса татса пĕтернĕ тет. Çав сăнчăра татнă чух пĕтĕм çĕр чĕтренсе тăнă тет, тинĕссем хумханса тăнă тет.

Çапла калатчĕç ĕлĕк. Мĕншĕн сăнчăрланине пĕлместĕп çав, тем çылăх тунă ĕнтĕ вăл.

## 73. Улăпсем Кавказран Атăл çине куçса килеççĕ

Авалхи саманара каланă тăрăх, çак эпир пурнакан таврара сĕм авал, этем тавраш пулман чухне, сĕм вăрмансем кăна кашласа ларнă вăхăтра, ирĕкре, тинĕссем леш енче, кăнтăр енче, çӳллĕ Арамаçи тăвĕ çинчен Улăп аннă. Ăна çĕр çинче этеме тĕрĕслĕхпе тӳрĕлĕхе вĕрентме, усал-тĕселсемпе кĕрешме Аслати турă янă пулнă. Улăп калама çук вăйлă, питĕ пысăк ӳт-пӳллĕ пулнă. Тарăн çырма шывĕсем, çӳллĕ вăрмансем ăна пилĕк таран кăна пулнă.

Ту çинчен ансан Улăп айлăмра темĕн чухлĕ выльăх кĕтĕвĕ курах кайнă. Çав кĕтӳсем вĕтĕ этемсен пулнă, этеммисем выльăх усранипе тăранса тумланса пурăннă. Çав тери нумай выльăха курсан Улăп хăй вăйлă пулнипе пурнăçра малтанхи хут сăхланса каять те мĕнпур кĕтĕве хăй аллине тытса илет, арăм тума илемлĕ хĕр суйласа тупать те вĕтĕ этемсене чăлпар салатса ярать.

Улăп пĕр хуйхă-суйхăсăр пурăннă. Айлăмри çарансемпе пĕчченех усă курнă, унта никама та яман. Кĕçех ăна арăмĕ икĕ ача — йĕкреш ывăл — çуратса панă. Ывăлĕсем те питĕ çӳллĕ ӳснĕ, калама çук вăйлă пулнă. Вĕсем ашшĕ кĕтĕвĕсене кĕтнĕ, сунара çӳресе йăпаннă. Вĕсем ухăпа кирек хăш тискер кайăка та çичĕ çухрăмран тивертме пултарнă.

Пĕррехинче, калăм кунĕнче, вĕсен амăшĕ вилсе каять. Арăмĕ вилнĕшĕн Улăп ăна хупланă çĕр тăприне ылханать те арăм тума урăх хĕр тупас çăмăлпа Арамаçи тăвĕ çине хăпарать. Виç кун иртет — Улăп таврăнмасть. Пăшăрханса ӳкнĕ ачисем ашшĕне шырама каяççĕ те ту тӳпинче чул çумне сăнчăрласа лартнăскере тупаççĕ. Ывăлĕсене курсассăн вăл çапла каланă пулать: «Аслати турă хушнине туманшăн, тăван çĕршыва хисеплеменшĕн чул ту çумне ĕмĕрлĕхех сăнчăрпа кăкарса ямалла пултăм. Ачамсем, хăвăр пуçăртан усал вăрлăха пĕтĕмпех кăларса пăрахăр, нихăçан та çынсене усал ан тăвăр. Халĕ ĕнтĕ тӳррĕнех çурçĕрелле уттарăр. Виçĕ кунтан тинĕсе юхса кĕрекен аслă юхан шыв çĕррине çитĕр. Унтан вара çав юхан шыв хĕррипе кайăр. Çичĕ çултан шыв икĕ пысăк юппа юпленнĕ çĕре çитĕр. Унта çитсен тӳр кĕлли тăвăр та кĕçĕнни — икĕ шыв хушшине, асли — сылтăм енне вырнаçăр. Çакă сирĕн йăхăн тăван çĕршывĕ пулĕ, ăна ĕмĕр-ĕмĕрех хисеплĕр, сирĕн ăрăвăр унта ырă вăрлăх актăр».

Ачасем ашшĕ халалне тума сăмах парса унпа ĕмĕрлĕхех сывпуллашнă. Ывăлĕсене ăсатса янă чухне ашшĕ вĕри куççулĕпех йĕрсе янă. Унăн куççулĕ ту çи пăрсене ирĕлтернĕ те, айлăма шыв юхса аннă, çарансене шăварнă, вара пĕтĕм улăхра тутлă шăршлă хĕрлĕ мăкăнь чечек çурнă.

Улăп ывăлĕсем хăйсен кĕтĕвĕсемпе çурçĕрелле çул тытнă. Вĕсен нумай хутчен ту çи этемсем тапăннине сире-сире яма тивнĕ. Виçĕ кунтан

вĕсем юхан шыв тинĕсе юхса кĕнĕ вырăна çитнĕ, ăна Этел* тесе ят панă. Унтан вĕсем юхан шыв хĕррипе малалла кайнă. Сарă ту патне çитиччен нумай хутчен вĕсен çеçен хир çыннисем тапăннине сире-сире яма тивнĕ, кайран вĕсем вăрман çыннисенчен хӳтĕленнĕ.

Çичĕ çултан, юлашкинчен, юхан шыв юпленнĕ çĕре çитнĕ. Икĕ юхан шыв хушшине чарăнса юн кун кăвакал пусса тӳр кĕлли тунă. Тӳр кĕлли çакнашкал пулнă: «Эй, Çӳлти туррăм! Эпир пĕтĕм кил-йышпа санăн ятна хисеплесе, кăвакал пусса, парне парса, санран тархасласа, тилмĕрсе ыйтатпăр. Пирĕн кил-йыш сыпăкран сыпăка ĕрчесе тăтăр, ăна пур инкекрен те хăтар: пур тăшмансенчен, усалсенчен, чир-чĕрсенчен, вуткăвар тухассинчен, выçлăхсем пулассинчен сыхласа тăр. Тырă-пулăсем кĕр пулсан кĕлет тулли пулччăр. Выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчесе картиш тулли пулччăр. Мĕн пуçланă ĕçсенчен, мĕн тума тытăннă япаласенчен, шухăшсенчен те пысăк телей пулса тăтăр. Çакна ыйтнисене эсĕ парассинче сан çине шанса, ĕмĕтленсе тăратпăр».

Кĕлĕ тунă хыççăн Улăпăн пĕр ывăлĕ пурăнма икĕ юхан шыв хушшинче чарăннă, тепĕр пĕртăванĕ Атăлăн сылтăм енне, Сăрă шывĕ патнелле вырнаçнă. Вара вĕсем вăрман хушшисене сухаласа çур тырри акса тума тытăннă.

Пĕррехинче çав Улăп сунарта çӳренĕ май ула-чăла хире тухнă та кун пек ула-чăла хире пуçласа курнипе тĕлĕнсех кайнă. Çав хир хуçи вырăс пулнă. Улăп унран тĕлĕнсе ыйтать: «Мĕншĕн-ха сирĕн хирте тырă симĕсси те пур, сарри те пур?» — тет. Вырăсĕ: «Симĕсси вăл — çурхи тырă, пиçсе çитекенни — кĕрхи тырă, ыраш», — тесе ăнлантарать. Çавăнтан вара Улăп ыраш акма вĕреннĕ, вырăссен ялне вăл Улатăр (ула тырă) тесе ят панă.

Пĕтĕм чăваш халăхĕ Улăп кăкĕнчен хунаса кайнă.

## 74. Улăппа амăшĕ выльăхсене ту çинчен Асамат кĕперĕ тăрăх Атăл хĕррине каçараççĕ

Ĕлĕк-авал, темиçе ĕмĕр каялла, Арамаçи тăвĕсен таврашĕнче Улăп паттăр пурăннă. Унта вăл пӳрнепе шутлайми, карт патакки çитейми йышлă выльăх-чĕрлĕх усранă. Нимле инкек, нимле синкек çулăхайман тет ăна.

Анчах та пĕррехинче çапла Арамаçи тăвĕсем хаяррăн кĕрлеме, шавлама тытăннă тет. Халиччен нихăçан та ун пек пулман тет: аслати шатăртатать тет, çиçĕм çатăртатать тет, чашласа çумăр çăвать тет. Ту çинчи тăрă кӳлĕсем, шурă шывсем чăтаймасăр йăвисенчен тухса аялалла, айлăмалла вирхĕнчĕç тет. Ту аркинчи сип-симĕс çарансене йăлтах шыв хупланă. Шыв таппи ӳснĕçемĕн ӳссе пынă. Улăп выльăх-чĕрлĕхĕ çакна пула выçăпа аптра пуçларĕ тет.

Улăп паттăр вара халран кайнă вăкăрсене, ĕнисене, лашисене, сурăхĕсене йăта-йăта ту таврашĕнчен инçетелле, уçă çĕрелле, кăларма тытăнать. Виçĕ кун та виçĕ каç тултать Улăп хăй выльăх-чĕрлĕхне — тултса пĕтерейместь. Çак инкекрен ăна ватă Асамат хăтарать. Асамат вăл хăр пĕччен пурăнакан паттăр, тимĕрçĕ пулнă.

Çичĕ кун та çичĕ каç хушшинче çав ватă паттăр тимĕрçĕ тĕлĕнмелле

* Атăл.

чаплӑ, ҫӗр ҫинчи чечексен илемӗпе ялкӑшакан чӗнтӗрлӗ кӗпер туса лартать. Пӗр вӗҫӗ унӑн Арамаҫи тӑвӗсене перӗнет, тепӗр вӗҫӗ Атӑл хӗрринчи аслӑ улӑха анать тет. Улӑппа амӑшӗ вара выҫӑпа аптранӑ выльӑхсене ҫав кӗпер тӑрӑх шавлакан-кӗрлекен тусенчен аяккалла, Атӑл хӗрринелле, емешӗл ешерсе выртакан ҫарансем патне хӑваласа каҫарчӗҫ тет.

Улӑп выльӑхсем каҫса пӗтсенех ҫав тӗлӗнмелле кӗпер куҫран ҫухалчӗ тет. Халӗ вӑл ҫулла, ҫанталӑк илемлӗ вӑхӑтра кӑна курӑнать. Акӑ мӗншӗн пирӗн чӑвашсем ҫумӑр ҫунӑ чухне пӗлӗт ҫинче курӑнакан илемлӗ кӗпере Асамат кӗперӗ теҫҫӗ.

## 75. Улӑп амӑшӗ Атӑл тӑрӑхне яланлӑх вырнаҫма шутлать

Улӑп йӑхӗ вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳренӗ тет. Ҫут Атӑл хӗррине тухса Улӑп амӑшӗ:

— Ачам, куҫса ҫӳренипе аҫу та, пиччӳ те часах ҫӗре кӗчӗҫӗ. Хам та вӑхӑтсӑр ватӑлтӑм. Ҫитӗ кун чул ҫӳренипе, вырнаҫар Атӑл ҫуттине, — терӗ тет.

Ҫакӑнтан вара Улӑп йӑхӗ ҫут Атӑл хӗррине вырнаҫса пурӑнма пуҫӑннӑ тет.

## 76. Улӑпсем Ҫӗпӗр енчен килеҫҫӗ

Ӗлӗкхи ҫынсем икӗ чалӑш ҫӳллӗш пулнӑ. Пирӗн енче пӗрре суха тӑвакана курнӑ та ҫыннине хул хушшине хӗстерсе кайнӑ. Карчӑкӗ апат ҫитерме килет те, старикӗ ҫок — ӑна илсе кайнӑ.

Халӗ уйра тӗмескесем пор. Вӑл — улӑп тӑприсем — ҫӑпатисенчен силленӗ тӑпра. Ҫав улӑпсем Ҫӗпӗр енчен, сӗм вӑрмансенчен килнӗ.

## 77. Улӑп хӑйӗн ачисене пӗр-пӗринпе туслӑ пурӑнма пиллет

Улӑпӑн ачи-пӑчи нумай пулнӑ. Вӗсем ӳссе ҫитсессӗн вӗҫӗ-хӗррисӗр ҫеҫен хирте выльӑх-чӗрлӗх кӗтсе пурӑнма тытӑннӑ.

Пӗррехинче ашшӗ патне ывӑлӗсем пуҫтарӑннӑ та ҫеҫен хирте курӑк сахалланса пынипе тӗрлӗ ҫӗрелле сапаланса каяс тенине пӗлтернӗ.

— Ывӑлӗсем ӳссе ҫитсессӗн яланах ашшӗ килӗнчен уйрӑлса тухаҫҫӗ, — тенӗ вӗсене Улӑп. — Вӗҫме ҫуралнӑ кӑйкӑра сӑрт ҫумне сӑнчӑрласа лартни килӗшӳллӗ мар, эпӗ сире чарса тӑмӑп. Анчах ан васкӑр-ха.

Вӑл юнашар тӑракан ачине:

— Ҫанталӑк шӑрӑхлатса кайрӗ, хӗвел хӗртет, ҫӗрелле сур-ха, — тенӗ.

Ывӑлӗ питӗ тӗлӗннӗ, ҫапах та ашшӗне хирӗҫлеме хӑяйман, ҫӗрелле сурнӑ. Унӑн сурчӑкӗ хӗвел питтинче ҫӗре ӳксенех пӑсланса типнӗ.

— Халӗ ӗнтӗ, ачамсем, ҫак васан тавра пуҫтарӑнса тӑрӑр та пурте пӗрле сурӑр, — тенӗ Улӑп

Ывӑлӗсем харӑссӑн сурнӑ, васанра кӳлӗ пулса тӑнӑ.

— Куртӑр-и ӗнтӗ, — тенӗ Улӑп, — пӗччен суран — типсех пырать, ушкӑнпа суран — кӳлӗ пулать. Эсир ҫакна та ан манӑр, пӗр-пӗринчен уйрӑлса ан кайӑр, кашни ӗҫӗре пӗрле туса пырӑр.

— Атте, эпир ниçта та çĕнĕ кӳлĕ тăвасшăн мар, — тенĕ Улăпа кĕçĕн ывăлĕ.

Улăп çакна илтсессĕн кăшт шухăшласа тăнă та çурчĕ патне утса кайнă. Унта икĕ шăпăр тăратса хунă. Улăп васкамасăр пĕр шăпăрăн çыххине салтнă.

— Çак шăпăр вуллисене хуçăр-ха, — тенĕ вăл.

Ывăлĕсем шăпăр вуллисене пĕрерĕн-пĕрерĕн часах хуçса пĕтернĕ.

Вара Улăп кĕçĕн ывăлне тепĕр шăпăрне салтмасăр панă, хуçма хушнă. Кĕçĕн ывăлĕ шăпăра ниепле те хуçайман. Ун хыççăн ыттисем те ăна хуçас тесе тăрăшса пăхнă — пĕри те шăпăра хуçайман.

Улăп вара çапла каланă:

— Пĕччен утан — пĕкĕрĕлен, ушкăнпа утан — çунат хушан теççĕ. Малтанхи шăпăр вуллисене эсир пĕрерĕн-пĕрерĕн ним те мар хуçса пĕтертĕр. Иккĕмĕш шăпăра вара хуçаймарăр, мĕншĕн тесен ку шăпăрăн кашни вулли теприн тĕрекĕпе тĕревленет, кашни вулли теприне пулăшать. Эсир те çаплах, пĕчченшерĕн пурăнсан инкекпе хурлăх айне пулăр, ушкăнпа, пĕрпĕринпе килĕштерсе пурăнсан сире нимĕнле инкек те çĕнес çук.

Улăп ачисем вара ашшĕне итленĕ, пĕчченшерĕн уйрăлса кайман, виçĕ ушкăна çеç пайланнă. Кашни ушкăнĕ ашшĕне хăйпе чĕннĕ.

— Çук, çук, мал енне кайăп, — тенĕ Улăп. — Мал ен — сăваплă ен. Эсир те ялан ирхине мал еннелле пăхăр, эпĕ паллă парасса кĕтĕр. Паллă парсанах унталла пырăр. Хăçан та пулин эпир пурте мал енче пĕрле пуçтарăнса телейлĕ пулăпăр.

Улăп пехилне итлесе халĕ те чăвашсем хăйсен алăкĕсене мал еннелле уçăлмалла касаççĕ.

## 78. Улăп чăвашсене Атăл урлă каçарать

Улăп пит пысăк тет вăл. Пĕрре çапла арки çине алă çын лартнă тет те Атăл урлă каçарса янă тет. Чăваш Атăл урлă çапла каçнă тет вăл.

## 79. Улăп кĕпер вырăнне выртать

Çĕн çĕре каçакансене улăп юхан шыв урлă кĕпер вырăнне выртса тулли лавсене (ачи-пăчипе вылльăхсене) каçарса янă тет.

## 80. Улăп Атăла пĕвелет

Ĕлĕк пĕр çын кĕтӳ пăхса пурăннă тет.

Пĕр çулхине типĕ çул пулнă, çу каçипе те çумăр пĕр тумлам ӳкмен. Атăл та типсе кайнă, урлă сиксе каçмалла пулнă юлнă тет. Кĕтӳ пăхса пурăнакан çыннăн выльăхĕ-чĕрлĕхĕ шывсăр шалт аптранă, вилсе пĕтме пуçланă.

Улăп курнă та çакна, çав кĕтӳçе хĕрхеннĕ. Вара Атăл хĕрринчи сăрта хулпуççипе пырса тĕртет те çав сăрта йăвантарса Атăла пĕвелет. Вара Атăл тулса кӳлĕ пулнă. Çав кӳлле «шыв кӳлли» тенĕ.

Кайран çумăрсем пулнă та, Атăл тулса «шыв кӳллине» татса кайнă. Улăп тунă пĕве халь те юлнă, Жигули тăвĕсем теççĕ ăна. Çав тĕлте Атăл пысăк кукăр тăвать, Самар кукри.

«Жигули» сăмах «шыв кӳлли» тенинчен тухса кайнă.

## 81. Улăп Атăл тăрăхĕнче нумай çӳренĕ

Тахçан-тахçан, хальхи этемлĕх пуçланиччен, Улăп тата унăн амăшĕ пулнă.

Улăп тĕлĕнмелле пысăк та çирĕп вăй-хăватлă паттăр пулнă. Вăл çĕр пичĕ тăрăх вырăнтан вырăна куçса çӳренĕ. Уйрăмах Атăл тăрăхĕнче нумай çӳренĕ теççĕ. Вăл вăхăтра хирсем сахал, ытларах вăрман пулнă. Улăп утса пынă чух авалхи юмансем ун пĕç хушши витĕр тухса юлнă, кирлĕ пулсан вăл вĕсене армути кăкланă пек кăкланă.

## 82. Пăлхарти улăпсем

Мана Текин кунта елтĕпер çĕрĕ-шывĕнче пĕр калама çук пысăк пӳллĕ этем пурри çинчен каласа панăччĕ. Вара çак çĕршыва çитсен эпĕ ун çинчен елтĕпертен ыйтрăм. Вăл вара çапла каларĕ:

— Чăн та, пирĕн çĕршывра ун пекки пурччĕ, анчах вилчĕ. Вăл ку çĕршыв çынни пулман, çитменнине, ахаль çын та мар. Ун халапĕ акă мĕнле. Хăш-пĕр сутуçăсем яланхи пекех Атăл шывĕ хĕрне тухнă. Ку шывĕ тулса хăпарнă та çырантан тухса сарăлнă. Пĕррехинче вара, эпĕ ун çинчен пĕлме ĕлкĕричченех, сутуçăсен пĕр ушкăнĕ ман патăма çитрĕ те, сутуçăсем çапла каларĕç: «Эй, елтĕпер! Шыв тăрăх çын юхса килнĕ. Вăл пирĕнтен инçех мар пурăнакан халăх çынни пулсан ку вырăнта тăма пире май пулас çук, пирĕн вара урăх çĕре куçса кайма кăна тивет», — терĕç. Вара эпĕ вĕсемпе пĕрле шыв хĕрне çитиччен юлан утпа кайрăм. Акă ман умра хайхи çын, ун çӳллĕшĕ манăн «чикепе» виçсен вун икĕ чике, унăн пуçĕ чи пысăк хуран пек, сăмси чĕрĕк чикерен ытла мар, куçĕ пысăк, пӳрнисем вара пурте чĕрĕк чикерен иртеççĕ. Ăна курни мана хăратса пăрахрĕ, эпĕ те ытти çынсем пекех хăраса кайрăм. Вара эпир унпа калаçма тытăнтăмăр, вăл хăй ним те шарламарĕ, пирĕн çине кăна пăхса тăчĕ. Эпĕ ăна хам пурăнакан вырăна илсе çитертĕм те ун çинчен ыйтса пĕлме Вису çĕршывĕнче пурăнакансем патне çыру ятăм. Вĕсем пирĕнтен виçĕ уйăх каймалăх çĕрте. Ман патăмра вĕсем ку çын яджуджсемпе маджуджсен йышĕнчен тесе пĕлтерсе çырса ячĕç: «Вĕсем пирĕнтен виçĕ уйăх каймалăх çĕрте. Пире вĕсенчен тинĕс уйăрса тăрать, вĕсем унăн леш çыранĕнче. Вĕсем выльăх евĕрлĕ, çарамас, çара уран, пĕр-пĕринпе выльăх пек ерĕшеççĕ. Аслă та хăватлă аллах вĕсем валли тинĕсрен кунсерен пулă кăларса парать, вĕсем пурте хăйсемпе çĕçĕ илсе пыраççĕ те пулă пĕвĕнчен хăйпе хăйĕн кил-йышне çитмелĕх касса илеççĕ. Эхер те пĕри хăйсене тивĕçтерекен виçерен ытларах илсен унăн хырăмĕ ыратма пуçлать, унăн кил-йышĕнчисен те хырăмĕсем ыратма пуçлаççĕ, хăш-пĕр чух вилсех каять, вĕсем те пурте вилсе каяççĕ. Вĕсем пулăран хăйсене кирлĕ чухлĕ касса илсен пулли каялла çаврăнать те тинĕсе путать. Çапла вĕсем куллен çакăн пек пурăнаççĕ. Вĕсемпе пирĕн хушăри тинĕс вĕсен пĕр енче пулать, вĕсене тепĕр енчен тусем хупăрласа тăраççĕ. Вĕсем ялан тухса кĕрекен хапхаран вĕсене хӳме уйăрса тăрать. Аслă та хăватлă аллах вĕсене хăйсем пурăнакан çĕрсене кăларас тесен вăл вĕсене хӳме уçса парать, вара тинĕс типсе ларать, вĕсемшĕн пулăсем те пĕтеççĕ».

Унтан эпĕ елтĕпертен хайхи пысăк пӳллĕ çын çинчен ыйтрăм та, вăл çапла каларĕ:

— Вăл ман патăмра пĕр вăхăт пурăнчĕ. Çапла та пулатчĕ: ун çине пĕр-пĕр арçын ача пăхсанах вилсе каятчĕ, йывăр хĕрарăм пăхсан хырăм пăрахатчĕ. Вăл пĕр-пĕр çынна ярса тытсассăн ăна икĕ аллипе мĕн вĕлеричченех чăмăртатчĕ. Эпĕ çакна курсан вара хăй виличчен кĕтесси тесе ăна çӳллĕ йывăçран çирĕп сăнчăрпа çакрăм. Унăн шăмми-шаккипе пуçне курас тетĕн пулсан вĕсене сана илсе кайса кăтартма пултаратăп, — терĕ.

Эпĕ вара каларăм:

— Аллах ячĕпе тупа тăватăп, çавна манăн питĕ курас килет, — терĕм.

Çапла вара вăл манпа пĕрле юлан утпа пысăк вăрмана пычĕ, унта капмар йывăççем ӳсетчĕç. Мана пысăк йывăç кутне илсе пычĕç, ун айĕнче çав çын пуçĕ. Эпĕ вара унăн пуçĕ пысăк катка пек иккенне куртăм, аяк пĕрчисем вара унăн пальмăн типнĕ пысăк тураттисем евĕрлĕ, унăн ура тунипе чавса шăммисем те çавăн майлах. Эпĕ çакăнтан тĕлĕнсе кайрăм та çаврăнса утрăм.

## 83

Пăлхар хулинче эпĕ адитсен йăхĕнчи çынна куртăм: унăн çӳллĕшĕ çичĕ чике ытла, эпĕ унăн пилĕкĕ таранччĕ. Вăл вăйлăччĕ: пуснă лашана тытатчĕ те унăн шăммисене хуçатчĕ, тирĕпе шăнăрĕсене хăвăрт, пĕр самантрах туртса çуратчĕ, эпĕ çав хушăра ăна пуртăпа та касса татаяс çук. Пăлхар патши ун валли тимĕр кĕпе тутарнă, ăна хайхи çын вăрçа кайнă чухне хăйпе пĕрле лавпа турттарса çӳрет. Унăн тимĕр çĕлĕкĕ пысăк хуран пекех. Çак çын çирĕп юмантан тунă пысăк чукмарпа çапăçать, чукмарне вăйлă арçын та йăтаймасть. Хăйĕн аллинчи чукмарĕ çак çыншăн хамăр аллăмăрти патак пек кăна. Тĕрĕксем ăна хисеплесе тăраççĕ, вăл хирĕç пынине курсанах: «Ку пирĕн турă пире çилленнине пĕлтерет», — тесе аяккалла тараççĕ. Анчах хăй вăл ырă кăмăллă та йăвашскер. Пăлхар хушшинче сарлака алăклă çӳллĕ пĕр мунчасăр пуçне вăл шăнăçмалăх урăх мунча çукчĕ.

## 84

Пăлхар хулинче вара эпĕ 530 çулта* адитсен йăхĕнчи çӳллĕ çынна куртăм. Унăн çӳллĕшĕ çичĕ чике ытла, ăна Данки тесе чĕнеççĕ. Вăл лашана этем пĕчĕк путеке йăтса илнĕ пекех хул хушшине çĕклесе илетчĕ. Хăй питĕ вăйлă: лаша ури тунине алăпах хуçатчĕ, тирĕпе шăнăрне ыттисем ешĕл курăка татса илнĕ пекех татса çуратчĕ. Пăлхар патши ăна валли тимĕр кĕпе хатĕрлеттернĕ, çав кĕпене лавпа турттарса çӳреççĕ, пуçĕ валли тунă тимĕр çĕлĕкĕ хуран пекехчĕ. Çапăçу хускалма тӳр килмессерен вăл юмантан тунă чукмарпа çапăçать, ăна вăл алăри патак пекех çăмăл тыткалать. Чукмарĕпе слона çапса ярас тăк вăл ăна та вĕлерме пултарать. Хăй вăл ырă кăмăллă та сăпайлă. Пуçăм унăн пилĕкĕ таран кăна пулин те, тĕл пулмассерен вăл мана хисеплесе саламлатчĕ.

Пăлхар хулинче сарлака алăклă пĕр мунчасăр пуçне вăл шăнăçмалăх урăх мунча çукчĕ, вăл çăвăнма çавăнта çӳретчĕ. Çак çын Адам ывăлĕсенчен чи тĕлĕнмеллискерччĕ, ун пеккине эпĕ урăх курман. Унăн хăй пек

---

* 1135—1136 çулсенче.

çӳллĕ аппăшĕ пурччĕ. Эпĕ Пăлхар хулинче ăна темиçе хутчен те куртăм. Унта мана Якăп Нуман тӳре çапла каласа пачĕ: «Çак çӳллĕ адит хĕрарăмĕ хăйĕн Адам ятлă упăшкине вĕлерчĕ вĕт.

Лешĕ вара Пăлхар хулинчи чи вăйлă арсенчен пĕриччĕ. Арăмĕ ăна хăй кăкăрĕ çумне пăчăртаса ыталанă та унăн аяк пĕрчисене хуçса пăрахнă, лешĕ вара тӳрех вилсе кайнă».

## УЛĂПСЕН ВĂРÇИСЕМ. ТĔРЛĔРЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ

### 85. Турă, Усал тата Улăп

Турă тĕнче тума шутласа хунă. Вара вăл шывран тип çĕр уйăрса илнĕ те йĕпескерне типĕтме хĕвел çине сарса хунă. Шывне пĕр çĕре пуçтарса хунă, çĕрне типĕтме хунă. Ларать хайхи çапла çĕре типĕтсе. Çĕрĕ типсе пырать, ак хайхи курăк та тухать, ешерме те пуçлать, çĕр чечекленме те пуçлать. Турă çакна курса савăнса çеç ларать иçмасса...

Çакна Усал курнă та таçтан хăяматран хура пĕлĕтсем хăваласа килнĕ, шалкăм çумăр çутарма пуçланă. Пăрлă-юрлă çумăр çуса ярса çĕр питне йĕпетсе тăкма шутланă. Усал йывăç-курăка хăртса-çĕртсе пĕтересшĕн пулнă. Чипер чечексене веç пĕтĕм пăр çапса-ватса пĕтернĕ. Çĕр шыва кайнă.

Çакна кура тăркач Турă пĕр юмана кăкласа кăларнă та Усала хӳтерме тытăннă. Пĕрре йывăç тăррипе çавăрса парать Усала, тепре кучĕпе çавăрса çапать. Кассăн-кассăн пĕлĕт хăваласа пыракан Усал пĕлĕт ăшне те, пĕлĕт хыçне те пытанса пăхать. Турă ăна таçта пытансан та пĕрех тупса çапать. Тĕнчере, патька, аçа та çиçĕм кĕрлесе кăна тăрать. Турă Усала пĕррех! туртса çапать те, хура пĕлĕт чăл та пар сапаланса каять, çумăр пулса çĕре тăкăнать. Усал çумăр ӳкнĕ çĕрте курăк хăрса хуралса ларать, усал çумăр тивмен çĕрте чиперех ешерсе ларать.

Турă капла май килменнине курать те Усала кăшкăрса калать:

— Эсĕ мĕскершĕн капла эпĕ тунă ырă япалана пăсатăн? Элле, эпĕ санран аслă мар-и? Элле, хам туса пултарнă пĕлĕтпе эп хам хуçа мар-и? Элле, çĕр çине çумăр эпĕ хушнипе çума пăрахрĕ-и? Чарăнăр та пурсăр та мана итлесе тăрăр! Ман сăмахран ан тухăр!

Тумак çумăр çавăнтах çума чарăнчĕ тет. Çӳлтен çумăрĕ çăвать те — çĕр çине пĕр тумлам та ӳкмест, йăлтах пăсланса каялла хăпарса каять тет. Усал çакна кура тăркач эх пуçларĕ тет хирĕç вĕртерме. Питĕрлене-питĕрлене хирĕç вĕрет тет çав, çумăра çĕр çумнелле çуптарса пырать тет иçмасса. Турă Усала тата хытă хаярланса хăвалама пуçларĕ тет. Усалĕ йывăç тăрне тарса пытаннă тет те унтан кутне çапса йĕкĕлтешсе тăрать тет. Турă йывăçа та аçа çапса çунтарчĕ тет. Усалĕ унтан тарса кайнă та ĕне хӳри айне кĕрсе пытаннă тет, тăрсан-тăрсан ĕне мăйраки çине улăхса ларса кутне çапса кăтартать тет. Турă, кăтăрса кайнăскер, ĕнине аçа çапса çунтарчĕ тет. Усалĕ татах тарса кайрĕ тет те лупас айне пытанса ларчĕ тет. Ларсан-ларсан шулап тăрне улăхса кутне çапса кăтартать тет. Турă, тарăхнипе, лупас айне те аçа çапса çунтарчĕ тет. Усалĕ, кĕлесĕрскер, татах тарса хăтăлчĕ тет те этем ăшне тарса пытанчĕ тет. Турă, этем ывăлне хĕрхеннипе ним тума аптраса тăчĕ тет.

Тăрсан-тăрсан:

— Эй, этеме те эпĕ хам тума пултарнă-çке! Пĕр çапап та пĕр пăрахап! — терĕ тет.

Аça-çиçĕм кăларса этеме çапса пăрахмах тăнăччĕ тет Турă — ун патне Улăп чупса пычĕ тет:

— Атте Турă, этем йăхне так кулăх ан пĕтер, хăвнах кирлĕ пулĕ. Усала пĕтерме хам пулăшам, — терĕ тет.

Вара турă Улăп сăмахне кунчĕ тет:

— Çапса салатса яр çав хура çумăр пĕлĕчĕсене, пĕр тумлам та ан хăвар, — терĕ тет.

Улăп вара çитмĕл те çичĕ çын харăс тытса çавăрайми, çавăрайми мар, çĕклейми юман чукмар илчĕ тет те Усал хăяматран хăваласа килекен хура пĕлĕт карти çине вăрса ячĕ тет. Вара пĕтĕм пĕлĕт кĕрлесе кайрĕ, хура çĕр кисренсе кайрĕ, тумак çумăр пĕлĕчĕ тĕтре пулса саланса кайрĕ тет. Чукмарĕ кĕрлесе анса çĕре çитиччен Улăп ăна çавăрса илет те татах пĕлĕт çине вăрса ывăтса ярать, çавăрса илет те татах вăрса ярать. Хура пĕлĕтсем çанталăк хĕрринелле тарса-тарса пыраççĕ, Улăп вĕсене хыçалтан вăра-вăра пырать иçмасса! Çанталăк хĕрне çитнĕ çĕре ку тĕнчере пĕр усал пĕлĕт татки те юлмарĕ тет. Улăп вĕсене пĕтĕм çапса салатса ячĕ тет. Çĕлен-калтасем çĕр шăтăкĕсене тарса пытанчĕç тет. Тискер енлĕксем тĕнче хĕрне, хура вăрмансене тарса кайрĕç тет. Улăп çаплах чарăна пĕлмесĕр çĕр çĕмĕрсе çӳрет тет. Ĕнтĕ çĕр кăкри те силленме пуçларĕ тет. Ара, çĕр çамрăк пулнă та-ха ун чух, çĕр кăкри хытса çитеймен пулнă-ха.

Çакна кура тăркач Турă Улăпа хăй патне чĕнсе илчĕ те:

— Ĕнтĕ çитĕ, лăплан! — терĕ тет.

Улăп лăпланнă пек пулчĕ те калать тет:

— Атте Турă! Ĕнтĕ хушнă ĕçе турăм пулать. Халь мĕн ĕçлес ĕнтĕ ман малашне? — тесе ыйтать тет. — Усал-тĕселсене хăваласа ятăм. Тăшманусем текех çук ĕнтĕ. Тата мĕн хушатăн? — тет.

Турă вара ăна:

— Ав çĕр пичĕ çинче унта та кунта шыв кӳлленсе тăрать, çĕре типме памасть. Çĕр пичĕ йĕпресе тăрать. Çав шыва пĕр çĕре пуçтар! — терĕ тет.

Пуçларĕ тет вара Улăп çĕр пичĕ çинчи шыва пĕр çĕре вĕрсе пуçтарма: унтан вĕрет те — шывĕ кунталла палкаса тухать, кунтан вĕрет те — шывĕ лерелле сăрхăнса тухать. Ниепле те мая килтерме çук вĕт, иçмасса! Пур шыва ăçтан пĕр çĕре пухса пĕтерĕн ăна?

Улăп кăтăрса кайрĕ тет те хайхи, ӳпке тулли сывлăш илчĕ те — хаш-ш! вĕртерсе кăларчĕ тет. Пĕтĕм шыв çырма-çырма пулса пĕр еннелле юхма пуçларĕ тет. Çав шыва халь Атăл тетпĕр. Вара пĕтĕм шыв çав çырмасем тăрăх юхса пĕр çĕре пухăнчĕ тет те тинĕс пулса тăчĕ тет. Унта çав малтанхи хура шывсем, усал шывсем юхса тулнă та, çавăнпа тинĕсне Хура тинĕс теççĕ.

Хура тинĕс вăл таçта тутар çĕрĕнче тет. Тинĕс пулнине кура тăркач, тинĕс леш енчи халăх: «Çуй килет! Çуй килет!» — тесе çуйхăнма пуçларĕ тет. Макрашаççĕ-çухрашаççĕ тет тутарсем, чăваш вăрçăпа тухнă тесе хĕвĕшеççĕ тет çав пĕтĕм, çар пухаççĕ тет. Вара вĕсем чăваш çĕрĕ çине вăрçăпа килнĕ тет те пĕтĕм ялĕ-хулисене çунтара-çунтара тухнă тет. Ак ку çак пирĕн Пӳлер хулине çав тутарсем çĕмĕрсе-аркатса тăкнă теççĕ. Ав лерелле тата унта Палхар пур, ăна та çавăн чухне аркатса тăкнă теççĕ. Ун чухне чăвашсем пит хытă тăнă тет, вăрçăра пит нумай тутар вилнĕ тет.

Кайран унта тутарсем çав вăрçăра вилнисене асăнса миçĕтсем лартнă, вилнисем çине чул юпасем лартнă. Унта халь те тутарсем таçтан-таçтан та асăнма килсе çӳреççĕ.

Ну, хайхи мĕн... Улăп тĕнчери шыва пуçтарса пĕтернĕ те татах Турă патне ĕç ыйтма пынă: «Мĕн тăвас та, мĕн тăвас?» — тесе кăна тăрать. Турă вара ăна ним ĕç те тупса пама ăс çитереймен пулас та:

— Атя, çитĕ ĕнтĕ. Мĕн тумаллисене туса пĕтертĕн. Выртса кан ĕнтĕ пĕр кана, — тенĕ.

Улăпĕ вара Турра итленĕ те канма выртнă. Çĕр çинех... Ара, ун чухне урăх япала пулман та-ха... Турă вара ăна çĕрпе витсе хунă. Çаврăнкаланă чухне çĕре хускатасран хăраса çĕр чĕтренесрен тем çӳллĕш тĕмеске туса хунă. Ту пек. Çавна вара халь те «Улăп тăпри» теççĕ. Улăп çав тăпра айĕнче выртать теççĕ. Çуй килсен ăна пырса чĕнмелле пулнă та, вара вăл халăха пулăшма тăрса тухмалла пулнă.

Хăшĕсем калатчĕç, çав тутарсем вăрçăпа килсен чăвашсем Улăпа чĕнсе кăларнă тетчĕç. Вара вăл чăвашсене пит пулăшнă тет. Ăна вара тутарсем пĕр юмăç карчăкĕ вĕрентнипе шăтăк чавса, шăтăка ярса тытнă та çиелтен çĕрпе хупласа тĕмеске туса хунă тетчĕç. «Улăп тăпри» çапла пулнă текелетчĕç...

Хăшĕсем тата урăх тĕрлĕ те каласа кăтартатчĕç.

Турă хушнипе канма выртнă Улăп çĕр айĕнче пайтах çывăрса выртнă тет. Çанталăк хушши лăпкă тăнă ĕлĕк, çынсем вăрçă вăрçман, çапăçмантуман. Çавăнпа Улăпа пырса тăратакан та пулман. Улăп тăпри çине вăрман шăтса ӳссе ларнă.

Улăпа ăна так кулăх пырса хускатма юраман. Турă хушман. Халăх хушшинче ламран лама халап çӳренĕ: «Тăшман тапăнса килес-тăвас пулсан пире пулăшаканĕ Улăп пур. Çуй килсен вăл шăтăкран тухать тет, тăшмана витĕр вăрса тухать тет. Çавăнпа Чăваш хутлăхне никам та вăрçăпа кĕме хăйман.

## 86. Улăп сăнчăрсем татать

Ĕлĕк Турă Улăпа сăрт çумне сăнчăрласа хунă тет. Улăп сăнчăрсене туртса татса пĕтернĕ тет. Çав сăнчăра татнă чух пĕтĕм юр чĕтренсе тăнă тет, тинĕссем хумханса тăнă тет.

Çапла калатчĕç ĕлĕк.

Мĕншĕн сăнчăрланинине пĕлмесп çав, тем çылăх тунă ĕнтĕ у.

## 87. Улăпсем — пĕчĕк çынсен тĕрекĕ

Улăп тăприне силлесе хăварнă чухне пĕр тырă выракан хĕрарăм калать тет:

— Эпир кун пек пурнатпăр-пурнатпăр, эпир сан пек мăнă мар-çке, эсĕ питĕ мăнă, — тесе калать тет.

— Эп çавăн пек пысăк çын пулнă. Ĕлĕк тата пысăк çынсем пулнă та, эпир пĕчĕкленнĕ, — тесе калать тет. — Эпир вилсессĕн çакăн пек çынсем — эсир юлатăр. Сирĕн пек çынсем нумай пулаççĕ, — тет. — Унтан сирĕн пеккисем вилеççĕ те, вун иккĕн пĕр автан пусаканнисем пулаççĕ, — тесе калать тет. — Эпир ĕçленипе пурăнатăр халь, — тесе калать тет ку пысăк этеммийĕ.

## 88. Улăп чăвашсене хӳтĕленĕ

Сĕм авалах шăмат кун ирхине, хĕвел тухнă чух, аслă паттăр — Улăп — çуралнă. Ача чухне унран тĕлĕнмелли ним те пулман. Ӳссе çитĕнсен вара, пысăк кĕлеткеллĕ пулсан, вăл мĕн пур этемрен маттур пулса тăнă. Вăл акă мĕнле пулнă теççĕ чăвашсем: пĕвĕ тĕлĕнмелле çӳллĕ, хулăнăшĕ — хăлаç çурă, урисем аршăнтан тачка, ури ытти этемсенчен тăвата чĕрĕк чухлĕ пысăкрах пулнă. Питĕ тĕреклĕ, калама çук вăйлă курăннă. Мĕн пур этем унран хăраса тăнă. Вăл чăвашсен çĕрĕсене сыхласа пурăннă, чăвашсем ăна пула хăйсем тĕллĕн пурăнма пултарнă.

Улăп хăйсен чиккинчен каçса ик çухрăм таранах кайса çӳренĕ, кайран вара каялла таврăннă.

Вăл çимессерен ултшар кĕренке таякан икĕ çăкăр, пĕр хуран пăтă çисе янă, вун пилĕк стакан кĕрекен алтăрпа шыв ĕçсе янă.

«Чăвашсем ун хӳттинче ĕмĕр пит лайăх пурăннă, — тесе каласа параççĕ. — Улăп тăнăçлăха паттăр пек хӳтĕлесе тăнă, ăна упрама-çирĕплетме тăрăшнă», — теççĕ. Чĕмпĕре пырсан унти Карамзин палăкне курса чăвашсем халĕ те çав тĕлĕнмелле Улăпа аса илеççĕ. «Улăп пек ларать», — теççĕ.

## 89. Улăп çичĕ хуйха та чăтма пултарнă

Çыннăн хуйхи çиччĕ: хăравçăлăх, эрех, кил-йыша макăртакан еркĕн, хут пĕлменни, турра манса мулшăн хапсăнни, сутăнчăк пулни, ал ĕç тума пĕлменни. Телейĕсем этемĕн ак çаксем: сывлăх, юрату, лайăх мăшăр, сак тулли ача-пăча, хут вĕренни, ал ĕç туни, çуралнă çĕршыв.

Улăп çичĕ хуйха та чăтма пултарнă. Çавăншăн та вăл сăрт патшинчен ашшĕн вут-хĕçĕпе çил çунатне илсе тухнă. Сăрт патши хĕрĕ Мерчен Улăпа çиччĕмĕш телейне парайман та, Улăп каллех киле таврăннă. Çуралнă çĕршыв пахах çав. Вăл Мерченĕн ултă телейĕнчен те хаклă-мĕн.

## 90. Улăп чĕр чунсене пĕлĕт çине хăпартать

Тахçан авал тĕнчене шыв илнĕ тет-и? Улăп, пĕлĕте пуçĕпе перĕнсе тăраканскер, тĕнче ан пĕттĕр тесе çийĕнчи кĕпине хывнă та хутаç туса çĕр çинчи чĕр чунсене мăшăрăн-мăшăрăн тултарса пĕлĕт çине хăпарса силленĕ тет. Шыв чаксан вара сĕвек кĕперри тăрăх çĕр çине антарнă тет.

## 91. Улăп çынсене вут тупса парать

Пĕррехинче Улăп Арамаçи тăвĕ патĕнчен аслă тинĕс хĕррине кайма тухнă. Çул çинче вăл йĕре-йĕре чупакан çынсене курать.

— Мĕн пулнă сире? — тет кусене Улăп.

Вĕсем тăшмансенчен тарнă иккен. Çурçĕр енче пурăнакан тискер йăхсем вĕсен вутне туртса илсе хăйсене вĕлерсе пĕтерме тытăннă. Улăп вара вĕсене каç пулсан вут тупса пама пулать.

Чăнах та, каçпа вăл уххине туртса кăларать те çӳл тӳпери çăлтăра персе катать. Сасартăк çынсен пуçĕ тăрринче вут-хĕм çиçме тытăнать, аслати кĕмсĕртеттерсе ярать. Çеçен хир çыннисем хăраса тарма тытăнаççĕ.

— Ан хăрăр! Ан хăрăр! — тесе аран лăплантарать вĕсене Улăп.

Çав самантра тӳперен вут-хĕм сапса çăлтăр катăкĕ ӳкет. Улăп юнашарти айлăмра ӳсекен юмана тĕпĕ-тымарĕпех туртса кăларнă та çăлтăр катăкĕ тĕлне тытнă. Юмана вут хыпса илнĕ.

— Вут тупăнчĕ! — тесе савăнса кайнă çеçен хир çыннисем.

## 92. Улăп — çĕмренçĕ

Улăп калама çук вăйлă çын пулнă. Вăл ухăпа çӳренĕ. Ăна çавăнпа Улăп çĕмренçĕ тенĕ.

Пĕррехинче Улăп çеçен хир варринче шăнса хытма тытăннă çынсене курнă. Вăл вĕсене питĕ шелленĕ. Çавăнпа вара уххипе персе çӳл тӳпери çăлтăра катса антарнă, çынсене вут тупса панă.

## 93. Улăп Турăран çумăр çутарма ыйтать

Çĕр çинче çынсем çумăрсăр питĕ антранă тет. Çăлсем, çырма-çатрасем типсе ларнă, йĕри-тавра тĕтĕм пулнă, тусан явăннă тет. Ӳсекен йывăç-курăксем хăрса, типсе ларнă. Кашни утакан чĕр чун çӳлелле пăхса çумăр кĕтнĕ тет.

Çĕр çинчи çынсем çумăрсăр нушаланни çинчен Улăп Турă патне кайса каласа панă тет. Турă вара ачине пĕр курка шыв сапса пама хушнă тет. Турă ачи ашкăнас шухăшпа тулли шыв каткине пĕтĕмпех йăвантарса янă тет. Çакăнтан вара хĕрĕх талăк та хĕрĕх каç çумăр çунă тет. Çакăнтан хайхи тĕнчене шыв илнĕ тет.

## 94. Улăп пĕлĕте çумăр çутарать

Пирĕн ял патĕнче Киремет хирĕ пур. Çав хирте ĕлĕк Киремет хаяр пурăннă тет. Вăл пурăннă хирте йывăç-курăк ним те ӳсмен тет, шыв та пулман тет унта.

Пĕрре Улăп пĕлĕт çинчен çав пуш хире курнă тет те пĕлĕтрен ыйтнă пулать:

— Мĕнле пуш хир ку? Унта камсем вилесем пек выртаççĕ?

Пĕлĕт каланă:

— Чăвашсем вĕсем, çĕн çĕре куçса каякансем. Вĕсене Киремет хаярĕ хăй пуш хирне астарса куç хывса илсе килнĕ ешĕрекен хир пек кăтартса. Вĕсем шыв çуккипе пурте вилеççĕ те Киремет хаярĕн апачĕсем пулаççĕ.

— Апла пулсан эс унта çумăрна çу, — тет Улăп.

Пĕлĕт калать тет:

— Ăна валли тачка пĕлĕт кирлĕ. Çав çумăр пĕлĕчĕ виç кун хушши витререн тăкнă пек çумăр çутармалла. Халь ман çумăр кунта çĕре çитиччених типсе ларать. Ав лере иртекен пĕлĕт пек хура çумăр пĕлĕчĕ пулсан çак пуш хире шăварма пултарать. Анчах вĕсем кунта килес çук, ку вырăн — ылханлă вырăн.

— Ирĕкпе хăйсем килмеççĕ пулсан вĕсене кунта вăйпа илсе килмелле, — терĕ тет Улăп.

Кайран ăна хирĕç пыракан тачка хура пĕлĕт çине пĕррех сикрĕ тет Улăп. Хура çумăр пĕлĕчĕ çĕре перĕниччене тайăлса кайрĕ тет. Улăп пĕлĕте вăр-вар ярса илчĕ тет те каларĕ пулать:

— Халех çав пуш хирте çумăр çутар!

Пĕлĕт калать пулать:

— Çак çĕре çумăр çутарса çылăха кĕместĕп ĕнтĕ. Ылханлă çĕре вунă çулта пĕрре кăна çумăр кирлĕ. Çичĕ çултан кунта тепĕр çумăр пĕлĕчĕ килет, вăл çуса çылăха кĕтĕр.

Пĕлĕт хăй çулне тăсасшăн тет. Улăп ăна ямасть малалла. Пуçларĕç тет Улăппа пĕлĕт тăрмашма: пĕри пуш хире туртать, тепри унтан тарасшăн тет. Улăп пурпĕрех çумăр пĕлĕтне пуш хире сĕтĕрсе кĕчĕ тет. Пĕлĕт çумăрне çумасть тет. Хайхи Улăп пуçларĕ тет пĕлĕтрен вĕрен явма! Вĕрен явма пуçласан пĕлĕт янра-янра йынăшса е уласа çумăрне пуçларĕ тет пуш хире чĕресрен тăкнă пек çутарма!

## 95. Улăп çумăр çутарма шыв йăтать

Çумăр çук. Уй-хирте тусан вăркăшать. Йывăç-курăк хăрнăçем хăрать. Çырма-çатрасем типеççĕ. Юхса выртакан çăл куççем куçĕсене хупаççĕ. Çынсем чӳк тăваççĕ, киремете чун параççĕ — пурпĕрех çумăр çук.

Улăп çĕр çинчи йывăрлăха курса чăтаймарĕ — Турă патне кайрĕ тет те:

— Çĕр çунать. Пĕр кас çумăр кирлĕ, — терĕ тет.

— Ман кунта шыв пĕтнĕ, — тет Турă.

— Халăха ан нушалантар. Хам шыв йăтса парам, — терĕ тет Улăп. Вăл вара хĕрĕх те пĕр саркавай шыв йăтса пачĕ тет.

## 96. Улăп Йĕрĕх çĕмĕрейми пӳрт лартать

Эпĕ кукаçисем патĕнче пурăнтăм. Ун чухне мана кукаçи çăпата туса пачĕ. Çăпати вара çав тери хитреччĕ, чăтма çук. Улăп пек тимĕр йывăç хуппинчен тунă пулсан — çĕр çула чăтмалла. Çапах та ăна тăхăнсан намăс пулас çук. Халь çавăн пек тимĕр йывăççем ӳсмеççĕ. Ăна Йĕрĕх пĕтернĕ. Улăп Йĕрĕхе пĕтермен пулсан чăвашсем çурт-йĕр лартса та курас çук.

Пĕлетĕн-и мĕншĕн? Çав Йĕрĕх усал пĕренерен тунă çурт-йĕре курайман: пĕренерен тунă çуртсене ăçта курать, çав çурт-йĕре Йĕрĕх хушнипе шĕкĕсем, пин-пин тĕслĕ хурт-кăпшанкăсем сырăнаççĕ те кĕрпелентерсе йăвантарса яраççĕ. Çав усал кăмăлне çемçеттерес тесе ăна тем те панă, анчах вăл хăй ĕçне пăрахман — çурт-йĕрсем шĕкĕсем çинипе ишĕлсе аннă. Ĕлĕк шĕкĕсем те хальхи пек вĕтĕ пулман, йĕке хӳресем пек пысăк пулнă тет.

Пĕрре Улăп çав Йĕрĕхпе тĕл пулнă тет. Йĕрĕх унтан ыйтнă тет:

— Кам пулатăн?

— Платник. Кирлĕ пулсан сан валли те пӳрт лартма пултаратăп. Ĕçшĕн те хаклă илместĕп: пĕр мăшăр çăпаталăх тимĕр йывăç хуппипе сан пуçри пĕр пайăрка çӳçе илетĕп.

— Юрать, — терĕ Йĕрĕхĕ. — Эрне хушшинче пӳртӳ тӳнсе каймасан сана тимĕр йывăç хуппи паратăп, пĕр пайăрка çӳçе те пуçран тăпалтаратăп. Пӳртӳ тӳнсе кайсан сан пуçу ман пулать. Куратăн-и унта — шăпах сан пуçу валли пĕр шалча юлнă. Пуçна çав шалча çине тăхăнтарсан ман шăпах çĕр пуç шăмми пулать.

Çавăнтах Йĕрĕх Улăп пурттине илет те пĕррех тимĕр йывăça пуртăпа касать — Улăп пуртти аврине тивичченех лапчăнса ларать тет: пуртă — пуртă мар, пуртă — тимĕр муклашки. Улăп пурттине илет те вут чуль çине хурса ăна чышкипе çапса тӳрлетет.

Улăп Йĕрĕхе вун икĕ кун хушшинчех пӳрт лартса пачĕ тет. Ун чух Улăпăн пулăшаканĕ те пулман тет. Пӳрчĕ патша çуртĕнчен те илемлĕ пулнă тет.

— Эй, хуçа, пӳртне йышăн, — терĕ тет Улăп Йĕрĕхе. — Çак пӳрт пушарпа çунса каймасан хăв ĕмĕрне мар, ачу-пăчун мăнукне те çитĕ.

Йĕрĕхе пӳрт те килĕшет тет, Улăп пусĕ те кирлĕ тет ăна. Кукалет тет кăна аптранипе.

Йĕрĕх сике-сике шăхăрма тытăнчĕ тет. Унччен те пулмарĕ тет, пӳрт тавра йĕке хӳресем пек шĕкĕсем, пин-пин тĕслĕ хурт-кăпшанкăсем сырăнчĕç тет те тытăнчĕç тет пӳрт пĕренисене кăшлама. Кăшлаççĕ, кăшлаççĕ тет, анчах ĕçĕ ним те ăнмасть тет, пĕренесем хурçăран та хытă тет. Йĕрĕх çавна курать тет те пуçларĕ тет пӳрт çине вĕрме: пӳрт пĕренисем шăтăр-шатăр туса анчах исленсе выртаççĕ тет. Йĕрĕх тарçисем каллех пӳрте тапăнчĕç тет. Хурт-кăпшанкăсемшĕн пĕренесем çемçе пек тет, анчах хурт-кăпшанкисем пĕренесем çумне çыпçăна-çыпçăна ларчĕç тет, ним тума та çук тет. Йĕрĕх йăлт аптраса çитрĕ тет. Пӳрт шыврa çĕртĕр тесе Йĕрĕх вăрманта виç-тăватă кун çумăр çутарчĕ тет. Çумăртан та пӳрт тӳнсе каймасть, хĕвел пек çуталса ларать тет вăрманта. Йĕрĕх çавна курсан ай вĕçтерчĕ тет сĕм вăрманалла.

Улăп, мĕн, ухмах пулнă-им? Вăл, кайăк патши хушнă пек, самăй сухăрлă пĕренесенчен пӳрт лартнă. Сухăрлă пĕренене шĕкĕ ăçтан çиейрет? Йĕрĕхĕ те ухмах, çавна чухлайман: вĕрире сухăрлă пĕрене ăçта çĕрет, ирĕлсе тата лайăхрах сăмалаланса ларать. Улăп çав çăпатана кукамăшне парне туса панă тет шăрça пуçлă туса. Çĕр çул тăхăн — çĕтĕлмест тет. Ахальтен мар çав Улăп аслашшĕ патĕнче, Плиска старик патĕнче, çичĕ çул хушшинче çичĕ ĕç тума вĕреннĕ.

## 97. Улăп хăвăл юмантан шан тăвать, унта пыллă карас тултарать

Пирĕн таврара кунта чăтлăх вăрман пулнă. Унта пыл нумай пулнă теççĕ ваттисем. Вăрманти йывăç хăвăлĕсенче пыл хурчĕсем туллиех пулнă. Улăп çакăнтан иртсе çӳренĕ чухне пыл шăршине сиснĕ, пыл хурчĕсем çӳлтен вĕçсе çӳренине курнă. «Эхе! — тет Улăп, — кунта пыл тутанма май пур иккен», — тесе савăнать. Вара пуçлать пыл хурчĕсем ларнă йывăççене туртса кăларма, пылĕсене аллисемпе ывăçласа илме. «Пылне карасĕнчен мĕнле уйăрса илес, пылне ăçта ярас, пыл çумне çыпăçнă хурт-сене мĕнле тасатас?» — тесе шухăшласа ларать вăл. Часах вăл ăс тупать: хăвăл юмана кăкласа кăларать те шан тăвать, çав шана хăвăлри пыллă карассене тултарать, хуртсенчен тасатать. Вара хурчĕсем ĕçсĕр ан минресе çӳреччĕр тесе шанне тăпрапа витсе хурать. Çавăнта вара тепĕр тĕмеске пулса ларать. Улăп хăвăл юмансене тăпăлтарнă вырăнта вăрман çаралсах юлнă, уçланкă пулса юлнă. Çав уя эпир паян кун та Шануй пусси тетпĕр. Çав уйран пыл юхса çырма тунă. Çав çырмана Шануй çырми тетпĕр. Вăл ĕлĕкренех пулнă.

## 98. Улăп Сехмете хăваласа ярать

Сехмет вăл Çӳлти туррăн хĕрĕ пулнă. Ăна Улăпсăр пуçне урăх никам та çĕнтерме пултарайман.

Сехмет ун чухне чăвашсене пĕтерме çĕр çине çурри хĕрарăм, çурри арăслан пулса килнĕ. Анчах Улăп çакăн çинчен пĕлнĕ те Сехмете каялла хуса* янă.

Çӳлти турă та Улăпа çакăншăн нимĕн те тăвайман.

## 99. Улăппа Эсремет сăрт ишмелле тавлашаççĕ

Улăп Эсреметпе тĕл пулнă тет те, Эсремет каланă тет:

— Кам çак сăртран пĕрре çапса хăйăр тăвать, çав çиеле тухать, кам çавна тăваймасть — вăл парăнать.

Эсремет сăрта чышкипе пĕррех кĕрслеттерчĕ тет, сăртран касăк-кĕсĕк чулсем çеç юлчĕç тет. Улăп çапрĕ тет сăрта — сăрт хăйăр пулса ишĕлсе анчĕ тет. Эсремет хăранипе хăйăр айне путса Улăпран тарчĕ тет.

Эсремет çынсене анчах мар, хуласене çĕре çăттарма пултарнă тет.

## 100. Улăп Эсреллĕ çырми пуçĕсене тататъ

Улăп паттăр çын пулнă. Вăл пăрăс сăнчăрĕнчен те çип туса çăмха тума пултарнă.

Пĕрре Улăппа Эсреллĕ тĕл пулнă тет. Çав Эсреллĕ Улăп чунне кăларасшăн пулнă. Унăн кукамăшĕ çĕр амăшĕ пулнă та — Улăп чĕрине вăшваш кăларайман.

Эсреллĕ Улăпа çапла каланă:

— Кам кама ăсталăхпа çĕнтерет, çав теприн чунне илет, — тенĕ.

Улăп килĕшрĕ тет Эсреллĕпе. Эсреллĕ калать тет:

— Çак сăнчăрпа эпĕ çырма-çатра тăватăп, шывпа тултаратăп. Эсĕ çав шывсене çак сăнчăрпа талăк хушшинче Çавала йăтса куçаратăн. Куçарсан — сана чуна паратăп, Чăвашран каятăп, куçараймасан — чуну ман пулать, юрать-и?

— Юрать, — тет Улăп.

Эсреллĕ пуçларĕ тет сăнчăртан çитмĕл те çичĕ татăк тума. Сăнчăр татăкне ăçта перет, çавăнта çырма выртать, çырминче чăп тулли шыв. Эсреллĕ ăшĕнче шутлать тет: «Вăл сăнчăрпа çырмаран шыва Çавала куçарас çук — чунĕ манăн пулать», — тет. Савăннипе чут анчах ташласа ямасть тет.

Улăп та пăрăс сăнчăрне илет те тавай сăнчăртан турта-турта çип тăвать те çăмхалать.

— Çак çăмха Эсреллĕ çырми пуçĕсене татса Çавала тухтăр! — терĕ тет кăшкăрса Улăп. Çакăнтах шăппăн: «Кукамай, пулăш мана, мăнукна!» — терĕ тет. Улăп çăмхана пĕррех вăркăнтарать Çавал еннелле.

Тимĕр çăмха Эсреллĕ çырми пуçĕсене татса Çавала çитиччен чăнах та тăсăлса выртрĕ тет. Ара, сăнчăра ункăсенчен тăваççĕ-çке, çавăнпа пуль юхан шыва Ункă теççĕ. Улăп çăмхине пирĕн ял вырăнĕнчен пенĕ тет.

* Хăваласа.

## 101. Улăп Вутăша хăваласа ярать

Вутăш шыва кĕрекенсене хуçлатса лартса авăра та шыва путарать е тата хитре хĕрарăмсене астарса хăйĕн еркĕнĕ тăвать тет.

Ĕлĕк Çавала вутăш ернĕ тет. Вăл Ункăра, Сĕлескертен çӳлерехри авăрта, пурăннă тет. Çав авăра халь те Вутăш авăрĕ теççĕ. Çав Вутăш утă çулма аннă хĕрсене юратса пăрахнă тет те вĕсенчен хăйĕн еркĕнĕ тăвасшăн пулнă тет. Хĕрсем килĕшмен пулать. Кĕçĕн çынсем те çаплах килĕшмен тет. Вара Вутăш тарăхать те Чăвашри мĕн пур вучахри вут-кăвара сӳнтерет — ним тума та çук.

Улăп ват карчăксем вĕрентнипе Вутăша мĕнле тĕп тăвасси çинчен Юхма старикрен ыйтса пĕлет. Юхма сӳпĕлти пулнă тет, суеçсене юратнă тет. Улăп ăслă та чее пулнă та çав Юхма старике чике тăршшĕ лартса хĕвел татăкне илет Вутăша хуса яма. Хĕвел татăкки Вутăша кунтан хуса ярать, чăвашсен каллех вучахра кăвайт çунать.

## 102. Улăп акăшне шырама каять

Улăп хăй паттăрне ултă çулта кăтартнă тет.

Улăпăн акăшĕ пĕрре Эврел çăл куçне шыв ăсма кайнă пулнă. Хитре те илемлĕ хĕре ытараймасăр Ариман аçтаха çавра çил пулса пынă та Илтепие вĕçтерсе кайнă.

Амăшĕ хĕр çухалнăшăн татăлса макăрнă. Ултă çулхи Улăп çакна илтет те амăшне калать:

— Апай, акая шырама каятăп, — тет.

— Эй, ачам, ӳссе çит-ха. Сан чĕчĕ шăлĕ те ӳкме пуçăнман. Пиччӳ кайсан хăть мĕнле...

— Эп кайрăм, — тет ку.

Ултă çулхи Улăп çула тухиччен вăрмантан çĕр çулхи хунав юмана кăкласа, тураттине ирткелесе туя тăвать те çула тухса утать. Ăçта каять — хăй те пĕлмест.

Кун каять-и, эрне-и — хырăм выçнă, çиме çук. Курах каять сăрт хĕрринче сурăх кĕтӳ пăхакансене.

— Ачасем, акая шырама тухрăм. Хырăм выçă. Мĕн те пулсан çитерсе ямăр-ши? — ыйтать тет Улăп.

— Инçе çула тухнă çынна çитерес, — теççĕ тет те кĕтӳ ачисем пĕр сурăхне пусса пĕçереççĕ тет.

Яшка пиçсен хуранпах Улăп умне лартса параççĕ. Кĕтӳ ачисем ун-кун çаврăниччен Улăп сурăха пĕчченех çавăрса хурать.

— Тавтапуç! — тет те малалла утать.

Эрне-и, уйăх-и каять Улăп. Улăпăн хырăм татах выçă. Ăçта мĕн çиесси çинчен шухăшлать. Пăхать — ту хĕрринче тĕве кĕтĕвĕ çӳрет. Тӳрех кĕтӳ еннелле утать.

— Ачасем, акая шырама тухрăм. Хырăм выçă. Мĕнпе те пулин ыр тумăр-ши? — ыйтать Улăп.

— Çитерес çула тухнă çул çӳрене, — теççĕ тĕве кĕтӳ пăхакансем.

Çав сехетрех вĕсем чи пысăк та чи мăнтăр тĕвене пусса хурана яраççĕ. Хуранта тĕве вĕрет. Улăп яшка вĕренĕ май яшкине тутанса пăхать. Тĕве апачĕ пиçнĕ çĕре хуранта шăммисем кăна юлаççĕ.

— Юрĕ, çирĕм, ачасем. Тавтапуç сире! — тет те Улăп малалла васкать.

Тепре хырăм выçиччен мĕн чул кайнă — пĕлместпĕр, кĕтмен-туман çĕртен Улăп хăй умĕнче чаплă çурт ларнине курать. Нумай шутласа тăмасăрах çиме ыйтасчĕ тесе çурта пырса кĕрет. Кил карти алăкне уçать — ун умĕнче хăйĕн тăван акăшне Илтепие тĕл пулать.

— Эх, шăллăм, епле хăтарас? Ман упăшка Шуйттан вĕт. Сана вăрансанах вĕлерет, — тет Илтепи.

— Таса вилĕмрен ма хăрас, — тет Улăп. — Эпĕ айăплă мар, сан упăшку. Ман ăна вĕлермелле.

Çак калаçăва илтсе çывăракан Шуйттан тухать.

— Кам ку? — ыйтать хайхи.

— Сан пултăру курма килчĕ, — тет Илтепи.

— Эпĕ санăн кĕçĕн пултăру, акай патне килтĕм, — тет Улăп.

— Çураçма е çапăçма? — тет Шуйттан.

— Çапăçма, — тет харсăррăн Улăп.

— Çапăçма эппин, — тет те Шуйттан çавăнтах чи пысăк виçĕ тĕвене пусса хурана ярса пĕçерттерет. Яшка пиçет те Улăпа сĕтел хушшине лартса, виçĕ тĕве ашне кăларса ун умне хурса парать.

— Кўп йысну патне килнĕ пек чух, — тет Шуйттан.

— Лайăх, питĕ хырăм выçнăччĕ, — тет те Улăп пĕр турам, пĕр тумлам хăвармасăр пĕчченех çисе ярать. Кăшланă шăммисене кăна Шуйттан умне купаласа хурать.

— Хуçа валли пĕр турам хăварман, кăна хальччен те курман. Хăна-и эсĕ, хăна мар, шампа. Тух тула, чунна илсе çием! — тет Шуйттан.

Шуйттанпа Улăп тухаççĕ. Улăп юман вуллинчен туратсене irtкелесе тунă туйине алла тытсан Шуйттан шикленсе илет.

— Вăрçар мар, тăван пулар, — тет Шуйттан.

— Çитĕ сана ман акайран мăшкăллама. Этем ывăл-хĕрĕ Шуйттанпа нихçан та тăван пулас çук, — тет те Улăп юман туйи айне хурса Шуйттана вĕлерет.

Ирĕке тухнипе савăнса Илтепи макăрса ярать. Акăшне хĕрхеннипе Улăпăн та куççуль тухать. Илтепи куççулĕ хăй çулĕпе, Улăпăн хăй çулĕпе юхаççĕ тет. Аякра икĕ пĕртăван куççулĕ пĕрлешсе Аму кўлли пулать тет. Аму кўллине Илтепи куççулĕпе Шуйттан вилли юхса анчĕ тет.

Çавăнтан вара шыври шуйттан е шыври пулса кайнă теççĕ.

## 103. Шуйттан ачисем Улăпран мăшкăллаççĕ

Улăпран шуйттан ачисем тек мăшкăлланă тет. Улăп çывăрса кайсан пĕçерен хĕвелпе, тепĕр чух сивĕ уйăхпа тĕксе вăратнă тет.

Пĕрре Улăп питĕ хытă çывăрса кайнă тет. Шуйттан ачисем пĕрре аллинчен хĕвелпе пĕçертнĕ, тепре уйăхпа уринчен шăнтнă тет. Улăп вăранса кайнă та тарăхнипе хĕвеле пĕр аллипе, уйăха тепĕр аллипе тытса вăйранах персе янă тет. Хĕвел çитмĕл çичĕ талăк, уйăх хĕрĕх пĕр талăк чарласа çўлелле хăпарса кайнă тет.

Çакăнтан вара хĕвел-уйăхпа шуйттан ачисем выляйман тет.

## 104. Улăппа Шуйттан

Пурăннă тет пĕр улăп. Вăл питĕ вăйлă, питĕ çӳллĕ пулнă тет. Ак пĕрре вăл уй-хире тухать те пĕр старик чупса килнине курах каять.

— Ăçта чупатăн, асатте? — тесе ыйтать.

Старик сывлăш çавăрса илет те калать:

— Ах, ывăлăм, пĕлетĕн-и мĕн пулчĕ? Эпĕ вăрмана сунара тухса утрăм. Унта вара аташса çӳрерĕм-çӳрерĕм те ӳçланка тухрăм. Курах кайрăм: çитмĕл çичĕ шуйттан лара парать! Мана нушалантарма тытăнчĕç вĕсем. Вĕлерсех пăрахатчĕç! Юрать-ха тарса ӳкрĕм! Мана вĕсем çав-çавах вĕлеретпĕр терĕç, — хурлăхлăн вĕçлерĕ сăмахне старик.

— Ан кулян, асатте, саншăн тавăратпăр вĕсене, — тет те улăп вăрмана каять. Старик каланă пекех, çав уçланка тухать. Унта, чăн та, шуйттансем лараççĕ иккен. Пур шуйттанĕ те улăпран хăраса тарса пытанать. Пĕри кăна тăрса юлать. Улăп шуйттана вĕлересшĕн пулать. Лешĕ калать тет:

— Улăп, атя вăйпа мар, ăспа тупăшар. Çĕнтерекенни вара çĕнтерейменнине виçĕ хутчен чиртет.

— Юрать, — тет улăп.

Шуйттан улăпа тупмалли юмах парать:

— Мĕн хӳреллĕ, анчах ĕне мар? Мĕн хура, анчах çĕр мар? Мĕн ухмах, анчах çын мар?

— Кăна пĕлетĕп — эсĕ ху! — тет Улăп. Вăл шуйттана тупмалли юмах парать:

— Кам çынсене пулăшать? Вĕсене йывăр самантсенче пăрахса хăвармасть? Кам пит çӳллĕ?

Шуйттан шутлать, шутлать, анчах айван пулнипе ниепле тавçăрса илеймест.

Улăп шуйттана пĕрре чиртет те унăн пĕр мăйраки ӳссе ларать, тепре чиртет — тепĕр мăйрака ӳссе ларать. Тепре чиртме тытăнать те, шуйттан шăтăкне кайса ӳкет. Çапла шуйттан икĕ мăйракапа тăрса юлать.

## 105. Улăп хăйĕн ашшĕне хăтарасшăн патша çарĕпе çапăçать

Ĕлĕк-авал пулнă тет пĕр паттăр патша. Вăл таçти-таçти çĕршывсене те çитсе курнă, темĕнле паттăр çынна та çĕнтерме пултарнă тет. Пĕррехинче çапла патшана та инкек-синкек килсе хупланă: вăл хăйĕн çарĕпе вăрман ăшĕнчи шурлăха кĕрсе кайнă та тухаймасăр тарăхнă. Салтакĕсем те патшана усă парайман: пĕрин хыççăн тепри шурлăха кĕре-кĕре ӳкнĕ. Патша çарĕ сахалланнăçемĕн сахалланса пынă.

Çакна таçтан аякран, Хурал тăвĕсем çинчен, пĕр хресчен пăхса тăнă, пулăшма шутланă. Çав хресчен Паттăрпи ятлă пулнă.

— Ара, этемсем вĕт кусем, путса вилеççĕ-тĕр, — тенĕ тет.

Çапла каланă та патша çарне Атăл хĕрне, Мăнçар тăвĕсем çине, кăлара-кăлара пăрахнă. Патша çак вăйлă этем пулăшнăшăн савăннă та, хăранă та. «Ку çамрăк хресчен ахаль çын мар», — тенĕ те йăлăнма тытăннă.

— Кăмăл пулсан эсĕ ман патăмра пурăн, анчах эсĕ пире киле çитме те пулăш ĕнтĕ, — тенĕ.

— Пулăшăп, — килĕшнĕ Паттăрпи.

Анчах вăл патша патĕнче пурăнма та, ун кĕрӳшĕ пулма та килĕшмен. Çапах патшапа çарне хăйсен çĕрне çитме май парать. Хытă чысланă вара патша Паттăрпие. Патша ăна хăй çĕршывĕ тăрăх кăтартса çӳренĕ. Пĕррехинче вăл Паттăрпие хăй патне чĕннĕ те каланă:

— Леш тĕнчене каякан çĕр шăтăкне кĕрсе курăн-и? — тенĕ.

Паттăрпи килĕшнĕ, шăтăка кĕрсе кайнă. Вăл çав шăтăк патшан тăшманĕсене тытса усрамалли шăтăк пулнине пĕлмен. Паттăрпи шăтăка кĕрсенех патша хушнипе унăн тарçисем шăтăк умне вут тултарса чĕртсе яраççĕ Паттăрпи ан тухтăр тесе.

Паттăрпи шăтăка кĕрсе кайсан патша тарçисем унтан ыйтаççĕ:

— Эсĕ кам пулатăн, аçу-аннӳсем ăçта санăн? — тенĕ.

Паттăрпи тĕрĕснех калать:

— Атте-анне çук манăн, эпĕ сывлăшран çуралнă, анчах манăн савнă хĕр пур, Ырăпи ятлă. Вăл Хурал тăвĕ çинче пурăнать, — тенĕ.

Çакна илтсенех патша тарçисем шăна-пăван пек пухăнса Хурал тăвĕ патне кайнă, Ырăпие шыраса тупнă. Ырăпие вăрă-хурахсем пек хупăрласа илнĕ те патша патне илсе пынă. Ăна та вĕсем патша тарçи туса хурасшăн пулнă иккен. Ырăпи килĕшмен, анчах нимĕн те тăвайман.

— Акă санăн савниӳ, тамăкра вăл. Эсĕ те ав çавăнта çунăн, — тенĕ тарăн шăтăк патне илсе пырса. Ырăпи самантрах кача пӳрнине çăварне хыпать те çыртса татать, пӳрнине савнийĕ патне ывăтать. Патша тарçисем Ырăпие те шăтăка хупаççĕ, шăтăк умне каллех вăйлă вут хураççĕ.

Паттăрпи Ырăпи пӳрнине палласа илет те мĕн май пур таран ваклама тытăнать. Ваклать-ваклать те ши-и! шăхăрать — пĕр салтак тухать, ши-и! шăхăрать — тепĕр салтак тухать. Çапла кашни шăхăрмассерен пĕрер салтак тухать: пӳрнерен миçе татăк пулнă, çавăн чухлĕ салтак тухса тăрать. Вĕсем пурте Паттăрпи тавра чупкаласа çӳреççĕ тет. Паттăрпи çак салтаксемпе пĕрле самантрах Ырăпи патне çĕр айĕпе шăтăк чавса çитет тет. Чавса çитет те каллех ши! шăхăрать — салтаксенчен кача пӳрни пулса тăрать, тепре шăхăрать те — кача пӳрни Ырăпи алли çумне çитĕнсе ларать. Тепре шăхăрать те — Ырăпи йывăр çын пулать.

— Ну, Ырăпи, халĕ пирĕн ирĕке тухасси инçе юлмарĕ ĕнтĕ, — тет Паттăрпи.

Ырăпи савăнса каять. Каллех кача пӳрнине çыртса татать те Паттăрпие парать.

— Кирлĕ кунта кирлĕ пулĕ, ан ман эпĕ пурри çинчен, — тет.

Çапла калать те патша тарçисене йыхăрма тытăнать. Лешсем пыраççĕ.

— Эпĕ çĕр айĕнче сывлăшпа йывăр пултăм. Кăларăр эсир мана çут тĕнчене, — тет.

Çакăн çинчен тарçăсем патшана каласа параççĕ. Çакна илтсен патша мар, патша хĕрĕ тĕлĕнсе каять.

— Кăларăр çав çӳп-çапа таса вырăнтан, — тет.

Патша тарçисем Ырăпие çав шăтăкран кăлараççĕ те патша хĕрне кĕртсе лартаççĕ. Пĕр кун ларать патша хĕрĕ, тепĕр кун ларать йывăрланасса кĕтсе, тепĕр эрне кĕтет — йывăрланаймасть тет.

Çав вăхăтра Ырăпийĕн ачи çуралать тет, хăвăрт ӳссе çитĕнет. Ăна Улăп ятлă хураççĕ тет. Улăп ӳссе çитĕнет те патшана хирĕç кĕрешме шухăшлать. Çавăн çинчен Паттăрпи те илтет, анчах ăна ниепле те пулăшаймасть тет. Вара Ырăпин кача пӳрнийĕ çинчен аса илет, каллех пӳрнене

май килнĕ таран ваклама тытăнать. Ши-и! шăхăрать те — каллех çав татăксенчен салтаксем пулса тăраççĕ тет.

— Мĕн тумалла, Паттăрпи? — тесе ыйтаççĕ.

— Çав-çав шăтăкра патша хĕрĕ ларать, ăна кĕçĕр йывăрлантарса килĕр, — тет.

Лешсем самантрах кайса йывăрлантарса килеççĕ тет. Йывăрланнипе савăннă патша хĕрĕ шăтăкран тухать тет, шăтăк умĕнчи вутне сӳнтерме хушать тет.

Паттăрпие çаплах шăтăкран кăлармаççĕ тет-ха. Вăл пĕррехинче каçхи тĕттĕмре ши-и! шăхăрать тет те, салтаксенчен каллех кача пӳрни пулса тăрать тет. Паттăрпи çĕр айĕнчи çулĕпе патша майри ларакан шăтăка тухать тет. Шăтăкран тухсан вăл тӳрех Улăп патне каять тет.

Çав вăхăтра патша хĕрĕ те çуратать тет. Унран Улăп мар — икĕ мăйраkаллă шуйттан çуралать тет. Паттăрпи Улăпа çак шуйттанпа çапăçма çăмăл пулмасса сисет, вара вăл каллех Ырăпи кача пӳрнинчен салтаксем туса хурать, Улăпа пулăшма хушать. Каять вара Улăп çак салтаксемпе патша çарне хирĕç кĕрешме. Пĕр кун çапăçать Улăп, тепĕр кун çапăçать, анчах ниепле те çĕнтерейместь-ха. Ырăпи вара тепĕр кача пӳрнине татса парать. Тепĕр кача пӳрнинчен те çапла салтаксем туса хураççĕ. Виççĕмĕш кунне çĕнтернĕ вара Улăп. Шуйттан çеç таçта кайса пытаннă тет. Халĕ ăна çав çĕр тĕпĕнчи шăтăксенче пурăнать теççĕ.

Паттăрпипе Ырăпи хăйсен Улăп ятлă ывăлĕпе мĕн ватăличчен пурăннă тет. Улăпĕ çав тери пысăк ӳссе кайнă тет. Шуйттанĕ çынсем умне тухма та хăрать тет.

Çапла хресченренех çуралнă имĕш ĕлĕк-авал Улăппала шуйттан. Халĕ ăна астăвакансем те çук ĕнтĕ.

## 106. Улăп — тĕнче паттăрĕ

Улăп тĕнче паттăрĕ пулнă. Ăна Юман паттăр та, Ту паттăр та, Çил паттăр та, Шыв паттăр та пăхăннă тет. Пăхăнмасан вăйпа итлеттерсе пăхăнтарнă тет.

Пĕрре çĕр çинче Шыв паттăр хуçа пулма шутланă тет. Шыв паттăр ăçта мĕн курнă, пурне те юхтарма пуçăннă. Улăп кăна курать те Шыв паттăр çулĕ çине Ту паттăрне, Ту паттăрĕ çине Çил паттăрне хăпартахăпарта лартрĕ тет. Ту паттăрĕ тавра Юман паттăра тăратса тухрĕ тет, Шыв паттăрĕ вара ирĕксĕрех:

— Каçар, Улăп, ӳлĕмрен яланах этеме пăхăнăп, — терĕ тет.

## 107. Улăп Алтăркуçа çĕнтерет

Пурăннă тет çĕр çинче, Алама çĕршывĕнче, пĕр куçлă, элес-мелес хапаллă, чурăс чунлă çăткăн Алтăркуç. Пĕр куç анчах пулин те, хăй вăл таçти-таçтине курнă тет. Хырăмне унне пĕрре çинĕ чухне çитмĕл вăкăр, вăтăр касмăк шерпет кĕнĕ тет. Алама çĕршывĕнчи пĕтĕм халăх çав Алтăркуçшăн ĕçлесе пурăннă тет, çав Алтăркуçа тăрантарнă тет.

Алтăркуçа Алама çĕршывĕнче хуçа пулса пурăнни кăна çитмен тет, Улăп паттăр çĕршывне туртса илес шухăш пырса кĕнĕ тет ун пуçне.

— Малашне Улăп паттăр та ман кĕтӳçĕ пултăр, ман кĕтĕве кĕттĕр! Мана вăйлă кĕтӳçĕ кирлĕ, — тесе ахăрашма пуçларĕ тет.

Улăп çак сăмахсене илтсен хăнк та тумарĕ тет.

— Çăткăн кĕтӳçи пулас çук, ятăма та варлас çук. Эсреметен хăраса вут тивертсе тарас çук. Тытăçассу килсессĕн атя тух хир варрине, — тесе каларĕ тет Улăп паттăр Алтăркуçа хирĕç.

Çапла каларĕ тет те Атăл хĕррине, çеçен хир варрине тухса тăчĕ тет. Леш усал килсе çитнĕ-çитмен тытăçса ӳкрĕç тет. Пĕрне-пĕри лăскаççĕ тет, пĕрне-пĕри хĕсеççĕ тет. Кĕрешсен-кĕрешсен, лутăркансан-лутăркансан Улăп хайхи юлашки вăйне пухса, хытă кăна хĕссе леш усала пĕлĕтелле çĕклерĕ тет. Лешин шăршлă сывлăшĕ пашăл! персе тухрĕ тет.

Çав шăршлă сывлăшра кăна пулнă тет Алтăркуçăн вăйĕ. Улăп вара çăткăна çичĕ тинĕс леш енне ывăтрĕ тет кăларса.

## 108. Улăп виçĕ куçлă ют йăхсене çĕнтерет

Улăп вăл калама çук вăйлă пăхаттир пулнă. Тăшмансем те, тискер кайăксем те унран питĕ хăранă.

Улăп тăшмансемпе çапăçса ывăннă хыççăн пĕлĕтсем çине хăпарса выртса çывăрма юратнă тет. Вăл выртнă пĕлĕтсем вара тӳпе маччи айĕнче сăпка пек силлене-силлене илнĕ, ун йывăрăшне чăтаймасăр çӳхе хăма пекех авăннă.

Пĕррехинче Улăп çапла пĕлĕтсем çине улăхса выртнă та тарăн ыйăха путнă. Çав вăхăтра чăвашсем çине виçĕ куçлă тискер çынсем тапăннă. Вĕсем пĕтĕм чăвашсене пĕтерме, ватти-вĕтти таранах вĕлерме тытăннă.

Чăвашсем хайхи, эх, Улăпа вăратасшăн чупкаласа çӳреççĕ тет.

— Улăп! Улăп! — тесе кăшкăраççĕ. Çӳлелле чул та ывăтаççĕ, ухăпа та переççĕ, анчах пĕлĕт патне çитрейменççĕ.

Вара темиçен Ăрăмăçа тăвĕ çине чупса хăпараççĕ. Вĕсем унтан Улăп выртакан пĕлĕт çине сиксе каçасшăн пулнă ĕнтĕ. Ăрăмăçа тăвĕн тăррине чупса çитеççĕ те хайхи пĕлĕт çине сикме хăраса тăраççĕ. Пĕлĕчĕ ту тăрринчен аяккарах пулнă.

— Эх, вăрăм турчка пулсан пĕлĕтне кунтарах туртма пулать те çав! — тесе калать тет пĕри.

Пĕри вара часрах килне чупса анса вăрăм турчка илсе килет. Ун çумне тата темиçе сăнă шăччи çыхаççĕ, вара темиçен тытса турчкипе Улăп выртакан пĕлĕте хăйсен еннелле туртма тытăнаççĕ.

— Ах, пĕлĕчĕ питĕ йывăр-çке! — тесе калаççĕ тет кусем.

Туртаççĕ-туртаççĕ те хайхи, турчкапа çаклатнă пĕлĕчĕ татăлса каять, кусем вара чикăль-макăль туса ту çинчен персе анаççĕ. Пĕлĕчĕ çапах хăй майĕн шуса ту тăррине пырса çапăнать. Вăл хытă çапăннипе Улăп вăранса каять.

Улăп! Улăп! тесе кăшкăрнине илтех каять вăл.

«Мана чĕнеççĕ-çке!» — тесе Улăп часрах пĕлĕт çинчен çĕре анать.

— Улăп! Çăлсам пире! Виçĕ куçлă ютсем пире йăлтах пĕтересшĕн! — тесе чупса пыраççĕ ун патне чăвашсем.

Улăп вара хăйĕн хĕçне туртса кăларать те пуçлать çичĕ юта турама. Виçĕ куçлă çичĕ ютсене пĕтĕмпех вакласа пĕтерет вăл.

Çавăнтанпа виçĕ куçлă усал çынсем чăвашсене урăх кансĕрлеми пулаççĕ.

## 109. Улăп виçĕ пуçлă Аçтахапа çапăçать

Рункăпа Кипеккасси хирĕсем чикĕленнĕ çĕрте, Упăçпа Вĕрлеç хăртнисем хушшинче, çӳллĕ кăна çаврака тӳпем пур. Пирĕн ăна Улăп масарĕ теççĕ. Ун çине улăхса тăрсан таçти-таçти курăнать. Ĕлĕкрех вăл тата та çӳллĕ пулнă, ун тăррине сухаламан, акман. Халĕ ĕнтĕ авă тырă та акаççĕ. Çав Улăп масарĕ çинчен пире асаттесем ак çапла халапласа паратчĕç.

Ĕлĕк-авал, сĕм авал, аслă Атăл хĕрринче чăвашсен паттăрĕ Улăп пурăннă тет. Çерем çĕтнĕ тет, тырă акнă тет, кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе выльăх-чĕрлĕх усранă тет. Унăн амăшĕ пулнă тет. Пĕрехель* çапла Улăп çĕршывне таçтан-таçтан инçетрен виçĕ пуçлă Аçтаха килсе пусать, хур кăтартма тытăнать. Асамат паттăр Улăп паттăра пăлат хĕç тыттарса çапла калать тет: «Манăн вăтăр çул шутламан кĕтӳре санпа пĕр çултах çуралнă çунатлă шурă урхамах пур. Палла та тыт эсĕ ăна, этем чĕлхи кăларттар», — тет. Улăп хайхи Асамат паттăрăн кĕтĕвĕнчи çав калаçа пĕлекен лашана палласа илет те йăлмак ывăтса тытать. Шурă лаша чăнах та этем чĕлхи кăларать.

Тухать хайхи Улăп Аçтахана хирĕç. Çапăçрĕç тет çичĕ кун. Ниепле те çĕнме çук тет Аçтахана, пĕр пуçĕ кăна тăрса юлсан та хаяр тет, çăварĕнчен çулăм пĕрĕхет тет. Ăна тĕнче тухатмăш пулăшса пынă тет. Юлашкинчен вара Улăп арăслан пек хаярланса, çилленсе Аçтахан юлашки пуçне касса пăрахрĕ тет. Текех вара çакăн хыççăн чăвашсене усал аçтахасем пусмăрлайман тет.

Темиçе çул иртнĕ тет, Улăп паттăр ватăлса, шуралса пынă тет. Вилсен ăна çӳллĕ сăрт тăррине пытарнă тет. Халĕ унăн масарĕ çине çулталăкра пĕрре, çур çĕр тĕлĕнче, çунатлă шурă лаша вĕçсе пырать имĕш. Урисемпе кукале-кукале, пĕтĕм тавралăха янăратса виçĕ хутчен кĕçенсе ярать тет. Хăш чухне çав масар тĕлĕнче Улăп хĕçĕ ялкăшнине курма пулать. Ача чухне выртмана кайсан эпĕ ăна хам та нумай курнă. Халĕ ĕнтĕ курăнмасть теççĕ.

## 110. Улăп паттăр çичĕ пуçлă Аçтахапа çапăçать

Калăттăм та парăттăм —
Чĕлхем юлчĕ хăях пек.
Юрлăттăм та парăттăм —
Сассăм пĕтрĕ хăйра пек.

Пурăннă тет çĕр çинче, аслă Атăл хĕрринче, Аслати ывăлĕ Улăп паттăр. Пурăннă тет çĕр çинче: кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе ĕне-сурăх кĕтнĕ тет, каççакĕ-каççакĕпе лаша хăваланă тет. Тырă акнă тет, пулă тытнă тет.

Пĕррехинче çак çĕре кун тухăç** енчен çитмĕл те çичĕ ту урлă, çитмĕл те çичĕ шыв урлă çичĕ пуçлă Аçтаха, вут пĕрĕхен çĕлен, килчĕ тет. Хӳрипе çапать — тăва аркатать, чĕрнипе çурать — çырма тăвать, çăварĕнчен хĕм сирпĕтет тет.

Çак сехмет сиксе тухсан Асамат тимĕрçĕ Улăп паттăра çапла каларĕ тет:

* Пĕррехинче.
** Хĕвел тухăç.

— Эсĕ ăна, Улăп, çара алăпах çĕнес çук. Усала — усалпа çĕнеççĕ, чеене — чеепе çĕнеççĕ, вута — шывпа çĕнеççĕ. Аçтахана ислетме ту пек тукмак кирлĕ, Аçтахана турама пăлатран тунă хĕç кирлĕ, — терĕ тет.

Ватă Асамат вара Улăпа чăнах та хăй йăтайми тукмак, хăй йăтайми пăлат хĕç туса пачĕ тет.

Хай Аçтаха килет тет, пĕтĕм тĕнче кĕрлет тет. Атăл хĕрнех çитрĕ тет. Вăрманне те кăклать тет, хирне-уйне вĕтет тет. Паттăр Улăп çак çĕлене хирĕç аслă çеçен хире тухрĕ тет, тытăçу пуçланчĕ тет. Çичĕ кун çапăçрĕç тет, çичĕ каç çапăçрĕç тет. Улăпăн та тукмакĕ вут пек хĕрсе кайрĕ тет. Улăпăн та çутă хĕçĕ йăлт мăкалса пĕтрĕ тет. Улăп паттăр хăй те вара лăш ывăнса çитрĕ тет. Юлашкинчен Улăп Аçтахан çиччĕмĕш пуçне касрĕ тет, ӳтне-пуçне пуçтарса хăямата ывăтрĕ тет.

Çакăн пек халап çӳретчĕ ĕлĕк-авал эп яш чух. Ăна пире ватăсем юрла-юрла паратчĕç, кала-кала паратчĕç.

## 111. Улăппа Аçтаха

Пурăннă тет карчăкпа старик. Вĕсен Улăп ятлă ача пулнă тет. Пĕрре-хинче вĕсен ялне виçĕ пуçлă Аçтаха тапăнать: илемлĕ çуртсем çине вут-хĕм тăкăнма пуçлать, уй-хирти тырă ялкăшса çунма тытăнать. Этемсем аптăраса ӳкеççĕ: мĕн тумалла? Улăп тăван ял çыннисене:

— Аçтахапа çапăçма эп тухатăп, — тесе калать тет. Чи ăста тимĕрçĕ-сем ун валли виçĕ кун хушшинче çитмĕл çичĕ пăт таякан вутлă хĕç туп-таççĕ. Уйрăлас умĕн амăшĕ ывăлне кăмакаран тин çеç кăларнă кăпăшка çăкăр тыттарать:

— Çак çăкăра пил сăмахĕ каласа çăрнă. Унра — çăл куç пек тапса тăракан хăват, вăю икĕ хут нумайрах пулĕ.

Улăп вара хăйсен умĕнче ӳсекен йăмра çине кăтартса çапла калать:

— Çак йывăç нихçанхинчен те ытларах ешерме пуçларĕ пулсан — эпĕ сывă тесе шутлăр, — тет. — Енчен те вăл шанса-хăрса ларчĕ тĕк, маншăн инкек çитнине пĕлтерĕ.

Вара çăкăрне чĕркесе кутамккине чикет те Улăп çула тухать.

Çичĕ хирпе çичĕ юхан шыв урлă каçнă хыççăн сĕм вăрман патне, çитмĕл те çичĕ çухрăм тăршшĕллĕ тусем тĕлне çитсе тухать. Лайăх сă-нама та ĕлкĕреймест Улăп — тĕлĕнмелле пысăк Аçтаха вĕçсе тухать. Куçĕсем çиçеççĕ хăйĕн. Мĕнпур тавралăх вут-çулăмпа тĕтĕм ăшне пут-рĕ тет.

Пĕ-ĕр-рех! сулса ярать Улăп хурçă хĕçĕпе — Аçтахан пĕр пуçĕ кусса каять. Аçтаха çилленнипе вăрăм хӳрипе пĕр енчен çапать. Улăп чĕркуççи таран çĕре анса ларать. Пур пек вăйне пухса Улăп тепре сулса яма тăрать — Аçтаха тепĕр енчен çапма ĕлкĕрет. Вара мăнтарăн Улăп пилĕк таран çĕр ăшне кĕрсе ларать.

Улăп амăшĕ çак самантра пӳрт умĕнчи йăмра шанса ларнине курса часрах хĕрĕх витре шыв сапать — йывăç тăруках çĕнĕрен чĕрĕлсе каять. Улăп вăй кĕнине туять, амăшĕ панă çăкăр çинчен аса илет. Ăна çисе ярать. Сисмест те — çĕр ăшĕнчен тухать. Сулса янă-яманах усал Аçтахан икĕ пуçĕ те татăлса ӳкеççĕ, кӳлепи вара чулланса каять.

Çапла вара Улăп этемсене Аçтахан мăшкăлĕнчен ĕмĕрлĕхех хăта-рать.

## 112. Хĕл Улăп чĕрине пăрлантарать

Улăп ăслă та маттур, хăюллă та ырă кăмăллă паттăр пулнă. Çавăнпа çынсем питĕ юратнă та ĕнтĕ ăна.

Улăпа çынсем питĕ юратнине Хĕл ятлă асамçă илтнĕ тет. Ăна хăйне çынсем юратман, унран вĕсем питĕ хăранă, мĕншĕн тесен Хĕл çĕр питне сивĕ юрпа та пăрпа хупла-хупла лартнă, пурне те шăнта-шăнта вĕлерме тăрăшнă. Хĕл кĕвĕç чунлă пулнă. Усал чунлисем ялан кĕвĕç пулаççĕ. Вăл вара, çав усал Хĕл, Улăпа сунарта çӳренĕ чухне çывăрма выртасса сыхлама тытăнать. Улăп хăйне усал кăмăллă асамçă сыхласах çӳренине пĕлмен: сăрт хĕррине çывăрма выртать.

Усал Хĕле çакă çеç кирлĕ пулнă. Вăл Улăп патне чупса пырать те ăна ыталаса чуптума тытăнать, вара унăн чĕрине пăрлантарса хăварать те аяккарах кайса пытанать.

Улăп ыйхинчен вăрансанах хăй умĕпе упа икĕ çурипе иртсе пынине курать. Улăп çĕмренне кăларнă та пеме тăнă.

— Ан вĕлерсем мана, ырă сунарçă. Икĕ çурам таранчченех тăлăха юлĕç! — тет упа.

Анчах Улăп вĕсене шеллемест, упине те, çурисене те персе пăрахать те тушкисене йăтса килнелле утать. Ăна хирĕç çынсем чупса тухаççĕ, какай ыйтаççĕ, анчах Улăп никама та пĕр татăк та памасть. Çакна Улăп амăшĕ пĕлет. Вăл вара ывăлне тем пулнине пĕлет те аслашшĕнчен пулăшу ыйтать. Вăл хĕвел ачин хĕрĕ пулнă.

Хĕвел Улăпа пулăшать, ун пӳртне кĕрет те ăшăтса чĕрине ирĕлтерсе хăварать.

Анчах Улăп хăй чĕри ирĕличчен темиçе усал ĕç те тума ĕлкĕрнĕ. Çавăнпа ĕнтĕ халăхра: «Улăпăн та улшу ĕç туни пулнă çав!» — теççĕ.

## 113. Улăп Майрус арманне авăрма чарать, Макçин ăстаçа хăтарать

Майрусăн арман пулнă тет. Çав арман тырă авăртман, çăм та тапман. Унта тырă вырăнне çăмарта авăртнă тет.

Чăвашсем çав Майрусран тарса та пăхнă тет, анчах тарса хăтăлайман. Çавăн çинчен Улăпа вăрманта каласа панă. Улăп вĕсем валли вăрмана çăм пек кăкласа уй та туса панă тет. Тырă акма та пулăшнă тет. Унтан вара Улăп Майрус арманне çул тытнă тет. Çитет тет Майрус арманĕ патне. Майрус арманĕн пĕвине вĕрен пек шыв юхса кĕрет тет.

Улăпа Майрус хитре хĕр пулса кĕтсе илчĕ тет. Тепĕр пӳлĕме чĕнсе кĕрет те Улăпа тĕпелелле çавăтса каясшăн тет çав хĕр.

Сак айĕнче шăй-шай тăвать тет. Улăп, çут тĕнче чĕлхине пĕлекенскер, çав шăй-шайсене часах тăнланса илчĕ тет: «Хăçан пире çын паран!» — тесе кăшкăраççĕ сак айĕнче. Улăп шутлать тет ăшĕнче: «Ку Майрус мана ахальтен мар тĕпелелле илсе каясшăн — тепĕр енне тăрас», — тет. Улăп сылтăмалла куçса тăрать тет. Çав вăхăтрах Майруса сак айне тĕксе ярать. Майрус вĕрекен шыв хаярлăхĕнче Улăп вырăнне хăй çунса кайрĕ тет. Улăп çав арман пĕвине тӳнтерет те, арман шывсăр юлнипе авăрма та пăрахать. Çавăнтан тин чăвашра çăмартасем усранаççĕ.

Çав арман кӳлли тĕпĕнче тĕрме пулнă, çавăнта Макçин ăстаç ларнă тет. Вăл асамат кĕперне те тунă, Услатие вутлă хĕçпе çил çунат лаша туянма пулăшнă тет. Çавăнпа ăна тĕрмене хупса лартнă.

Макçин ăстаç çавăнта ахаль ларман, кĕсле тунă, анчах хатри çитеймен те, ăна туса пĕтермен тет. Улăп ăна тĕрмерен кăларсан Макçин вилес умĕн Улăпа каланă тет: «Улăп, çак кĕслене пĕтерейменрĕм: хĕлĕх çитеймерĕ, тата хĕлĕхĕсене туптама кĕмĕл мăлатук пулмарĕ. Туса пĕтерсен çав кĕслене вĕрекен юхан шыв тăрăх утса кала, вара çав вĕрекен юхан шыв лăпланать, халăха çăмăл пулать», — тенĕ.

Улăп çичĕ ĕçе вĕреннĕ те, çав кĕслене туса пĕтернĕ тет те вĕрекен юхан шыв тăрăх кĕсле каласа утрĕ тет. Пин те икĕ кĕвĕ каласан тин вĕрекен шыв лăпланчĕ тет.

Улăп тем те пĕлнĕ. Ун сăввине итлеме çут тĕнче те пуçне тайнă тет.

## 114. Улăпа вăрă-хурахсем тапăнаççĕ

Ĕлĕк-тахçан пĕр вăрă шайкки Улăпа тапăнма шутланă тет. Улăпĕ çывăрса кайсан тӳрех ун çине утланса ларнă тет.

«Мĕн мана ӳпресем тапăнчĕç?» — тесе ыйхă тĕлĕшпе Улăп аллине хăй тăрăх шăлса аяккалла хучĕ тет. Вăрансан пăхать — Улăп алли айĕнче этем виллисем выртаççĕ тет. «Ма кун пек ман алă айне килсе выртнă кусем?» — кулянать тет Улăп.

## 115. Улăпа карликсем тапăнаççĕ

Пĕчĕккĕ чухне эпĕ пĕр юмах (халап) илтнĕччĕ. Ĕлĕк-авал пĕр патшалăхра Улăп (питĕ пысăк, чиркӳ çӳллĕ çын) пурăннă тет. Çав патшалăхрах тата питĕ вĕтĕ, тăваттăшне пĕр-пĕрин çине тăратсан та пĕр шите аран çитнĕ çынсем (карликсем) пурăннă. Çав карликсем кăткă пек йышлă пулнă. Улăп пĕр-пĕччен пулнă. Улăп утнă чухне çав карликсем час-часах унăн ури айне кĕрсе аманса, вилсе пĕтнĕ. Улăп сывланипе тĕк çилпе вĕçнĕ пек вĕçе-вĕçе кайнă. Çавăнпа карликсем Улăпа пит курайман. Вĕсем пĕр-пĕринпе пуçтарăнса: «Мĕнле çав Улăпа пĕтерер-ши?» — тесе канаш тăва пуçланă.

Пĕр карликĕ шухăшласа тупнă хайхи епле пĕтермеллине: «Атьăр эпир, — тет ку юлташĕсене, — Улăпа çывăрнă чухне пурте пĕрле пуçтарăнса унăн çăварне, хăлхисене, сăмси шăтăкĕсене кĕрсе тулар та, вăл сывлăшсăр пăчăхса вилтĕр», — тет ку.

Пурне те ку сăмахсем кăмăла килнĕ. Улăп çывăрнă вăхăтра кусем пуçтарăнса ун çине тапаланса улăха пуçланă. Çăварне те аппаланса кĕркеленĕ кусем, хăлхи шăтăкне те тулнă, анчах сăмси шăтăкне ниепле кĕме пултарайман. Улăп сывланипе сирпĕне-сирпĕне кайнă. Куç енчен те, пит çăмарти енчен те пынă кусем, анчах сăмса шăтăкĕ патне çитсессĕнех сирпĕне-сирпĕне кайнă. Карликсем айкашнипе Улăп сăмси кăтăкланса кайнă. Ыйхă хушшинчен ку пĕтĕм вăйĕпе ачху! тесе сăмсаран ӳсĕрсе янă та, мĕн пур карликсем таçта çитиччен сирпĕнсе хăшĕ аманса, хăшĕ вилсе кайнă. Унтан вара карликсем пусмăрлама пултарас çук тесе Улăпа парăннă.

## 116. Улăп патша арăсланĕпе çапăçать

Улăп патша арăсланĕпе çапăçнă тет йĕтем çинче. Патшан паттăр арăсланĕ, веç ылтăнранскер, пĕрре вĕрет тет — чукун йĕтем кăларать тет. Улăп вĕрет тет, тимĕр йĕтем кăларать тет. Хайхи пуçларĕç тет çапăçма. Патшан паттăр арăсланĕ Улăпа туртса çапать тет те — тĕнче тайăнса каять. Улăп ăна туртса çапать — тĕнче хăй вырăнне çитсе ларать. Вĕсем эрне-и, уйăх-и çапăçаççĕ — пĕр-пĕрне ниепле те çĕнеймеççĕ. Улăп вут хĕçпе те туртса пăхать — ним тăваймасть: арăслан вутлă хĕçрен ирĕлет те касăк-кĕсĕкĕн çыпăçса каллех хытса ларать. Хайхи Улăп хĕрсе каять те çĕклет арăслана, тытать кăвар, тин ун чунне кăларать. Лешĕ Улăп чĕрине кăларса çиме тем чул чаврĕ тет Улăп кăкринчен, анчах ним те тăваймарĕ тет. Ăстан ун кăкрине туртса çурăн: ун çинче кукамăш сăхманĕ пулнă иккен. Кукамăш пиллĕхĕ пин çуллăх-çке!

## 117. Улăпсем ача тата тиха ывăтнă

Ар Сĕнтĕрте, Мăн ту хĕрринче, ĕлĕк улăпсем вăрçăпа тăнă. Эктĕрле тухури патĕнчи ачапа ывăтнă, Ар Сĕнтĕр патĕнчи тихапа ывăтнă.

## 118. Улăп Терпет хуна çĕнтерет

Ĕлĕк-авал, сĕм авал, пирĕн мăн асаттесен аслашшĕсен ĕмĕрĕнче, çакă аслă тĕнчере Улăп пурăннă тет. Кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе лаша, ĕне, сурăх усранă тет вăл.

Пĕрре çапла Терпет хун, атта вăрă, хăйĕн хурахĕсемпе Улăп çĕрнешывне пырса унăн выльăхĕсене хăваласа кайнă тет. Улăп паттăр вара хăйĕнчен кĕçĕн паттăрсене пĕр çĕре пуçтарса Терпет вăррисене йĕрлеме кайрĕ тет.

Çичĕ кун та çичĕ каç йĕрлерĕç тет паттăрсем хурахсене. Тупрĕç-тупрĕçех тет вĕсем усал тăшмансене. Çапăçма тытăнчĕç тет Улăппа ун юлташĕсем. Шыв вырăнне тăшман юнĕ юхрĕ тет, йывăç вырăнне тăшман пуçĕ касăлчĕ тет. Питĕ те йышлă тет Терпет хунăн хурахĕсем.

Лара-тăра пĕлмест тет Улăп амăшĕ ăшĕ вĕçнипе: пĕрре хире тухать тет, тепре алачăкне кĕрет тет. Хĕресле тухакан хĕвеле хирĕç тăрса çапла каларĕ тет:

> Чăпар пăлан пăрушне чĕннĕ пек, кĕтнĕ пек,
> Ăмăрт кайăк чĕппине чĕннĕ пек, кĕтнĕ пек,
> Хур кайăк чĕппине чĕннĕ пек, кĕтнĕ пек,
> Хурчăка чĕппине чĕннĕ пек, кĕтнĕ пек,
> Арăслан çурине чĕннĕ пек, кĕтнĕ пек,
> Парăс кайăк çурине чĕннĕ пек, кĕтнĕ пек,
> Урхамах тихине чĕннĕ пек, кĕтнĕ пек
> Чĕнетĕп эпĕ сана, ывăлăм, кĕтетĕп эпĕ сана, ывăлăм...

Çĕнтерчĕç-çĕнтерчĕçех тет улăпсем Терпет хун хурахĕсене. Пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхе каялла хăваласа таврăнчĕç тет.

## 119. Улăп Ханпан çарне хуса ярать

Улăп çинчен маçак каласа панине астăватăп.

Тахçан авал Авраль çĕршывĕнче Улăп пурăннă тет. Вăл вăрăм та маттур пулнă. Пуçа пĕлĕт ан перĕнтĕр тесе пĕшкĕнсе çӳренĕ тет.

Çĕр çинче тăсăлса выртнă та çитмĕл çухрăм вăрман, тепĕр майлă тăсăлса выртнă та çитмĕл çухрăм уй йышăннă.

Хайхи Ханпан текенни: «Ман вăрмана илчĕ, ман çĕре йышăнчĕ», — тесе çилленсе тарăхса кайнă тет. Нумай та вăхăт иртмен — Ханпан хăй патне çар пухнă та Улăп çине вăрçăпа кайнă.

— Вăрманне те эс лартман, çĕрне те эс туман. Канма выртнă çĕрĕ те, вăрманĕ те ман пултăр. Урăх тивес çук. Вăрçмасăр çураçар, — тенĕ Улăп.

— У-у-у! — тенĕ шăртланнă Ханпан. — Тасал кунтан! Тасалмасан нимĕр тăватпăр! — кăшкăрнă вăл.

— Юрĕ эппин, — тенĕ Улăп.

Ун-кун пăхкаланă — çапмалли ал айĕнче нимĕн те пулман. Ним тума аптраса çăнăх кункри çинчен йĕтĕре илет те Ханпан çарĕ еннелле чуптарса ярать тет.

Йĕтĕр чупса кайнă вырăнта сĕтел çинчи пек тӳрем çĕр пулса юлать тет. Ханпан çарĕ Улăпа хирĕç урăх сăмах чĕнеймен тет.

## 120. Улăп Тур патши çарне сăрт-ту айне тăвать

Тахçан авал Тур патши Сăвар патши çине тапăннă тет. Сăвар патши вăрçă пуçăниччен халăха пухса кам вăйлине ыйтса пĕлнĕ. Халăх хушшинчен:

— Улăпран вăйли çук. Улăпа чĕн, — тенĕ тет.

Патша Улăпа чĕнме янă. Улăп килте пулман. Таçта кайнă пулнă тет. Улăп çитиччен Тур патши çĕмĕрсе килсе кĕнĕ. Çурт-йĕре кĕл пуличчен çунтарнă, выльăх-чĕрлĕхсене пусса çинĕ, юлнине хуса кайнă. Парăнманнисене вĕлернĕ, парăннисене тарçа илсе кайнă тет.

Улăп таврăннă. Кил-çурт кĕлĕ çилпе вĕçсе выртнă. Ял-йыш вырăнĕ кĕллĕ, кăмрăклă уй пулса юлнă. Мухтар, Вахши, Мыска çырмисем тăрăх юн юхнă тет. Таврара тăшман савăнса туй тунă.

Тарăхса кайнă Улăп ту паттăрĕсене чĕнсе илнĕ те тăшмана ашкăнма ирĕк панăшăн Турхан, Пешкан, Чупантан, Машук ту паттăрĕсене тăшман çарĕ çине йăта-йăта лартнă тет. Çапла Тур патша çарне тĕпĕ-йĕрĕпе сăрт-ту айне туса пĕтернĕ тет. Халĕ çав вырăнта сăрт-ту тет.

## 121. Улăпсем Пăлхара çăлаççĕ

Улăп пĕррехинче юлташĕсемпе Ылтăн ту таврашĕсенче çӳренĕ тет. Çиччĕмĕш кун иртсен Марка улăп калать ăна:

— Атя киле таврăнар! Пăлхара каяр!

— Пăлхар Чĕмпĕр мар, Пăлхаршăн хăрар мар. Пăлхарта унта çитмĕл те çичĕ пин салтак пур.

Пăлхар вăл хула пулнă тет. Чĕмпĕр те хула пулнă тет.

Çавăн хыççăн Улăп шыв ĕçме тесе куркине кăларнă. Курки ун аллинчен тухать ÿкет. Улăп хайхи куркине пăхать те курать каять: унта тăп тулли юн.

Атьăр-атьăр, атьăр-и-и?
Курка юнлă, куртăр-и-и?
Каяс пулать каялла,
Хавхав çитрĕ пулмалла! —

тесе кăшкăрса ярать вара Улăп.

— Пăлхарта шыв вырăнне юн юхать! — кăшкăрса ярать Марка улăп та.

Пурте хайхи тăван хулине тăшмансем тапăннине ăнланса илеççĕ:

— Каялла чупас! — теççĕ.

— Çук, кайăк пулса вĕçсе каяр! — тет вĕсене Улăп.

Вăл юлташĕсене кирлĕ пек тăратса тухать, Марка улăпа чăн хыçала хăварать:

— Эпĕ ывăнса хыçа юлсан эсĕ мала тух ман вырăна — тет.

Арăм-сарăм Сăр тăрăх,
Пирĕн шухăш хăр тăрăх.
Икĕ алă — ик çунат,
Икĕ ура — пĕр хÿре,
Эпир кайăк пулăпăр,
Пăлхараллаваскăпăр!
Кайрăмăр! —

тет Улăп.

Вара пурте хур кайăк пулса Пăлхар еннелле вĕçсе каяççĕ. Часах вĕсем хăйсем тĕлĕнчен ĕнер вĕçсе иртнĕ хур кайăксене кураççĕ. Хур кайăксем ним йĕркесĕр вĕçеç тет. Улăп вара хăйĕн юлташĕсене карта туса ертсе пырать тет.

Кикак-кикак хур кайăк,
Кикаклатса вĕçрĕмĕр,
Карта мĕнне пĕлтĕмĕр, —

тесе калаççĕ тет Улăп ушкăнне курсан хур кайăксем.

Улăп çапла хур кайăк пулса Пăлхара вĕçсе çитнĕ те тăшмансене çĕмĕрсе тăкнă.

## 122. Улăп Пăлхара çăлать

Аннепе асаннене аса илсе калаçма тытăнтăмăр.

— И-и-и, — терĕ анне, — асаннÿ юмах яма тытăнсан ватти-вĕтти пухăнса итлетчĕç вара. Хăй пек ваттисем ăна ялан «ăста Наçтук», «ăста Наçтук пĕлет ăна», «ăста Наçтукран ыйтăр» тетчĕç.

— Улăп çинчен каланине астăватăн-и?

— Астумасăр, ачам. Тем те калатчĕ асаннÿ. Вăл Хĕрĕх Сутах* патĕнчи Утна — Султан — Айпике вил тăпри çинче ача чухнех пулнă тет. Утна — Султан — Айпике вăл Хусан патшипеле пĕрле кайăк пулса вĕçсе кайнă чăваш хĕрĕ**. Вăл калама çук ăста юрăçă пулнă тет. Ăна çав Хĕрĕх Сутах

* Ял ячĕ, Хырлан сылтăм çыранĕнче.

** Хусан патши кайăк пулса вĕçсе кайни. Сăвăллă юмах.

патне пытарнă тет. Ун тăпри çинче пысăк чул юпа пурччĕ. Унта чăвашсем пуççапма çӳретчĕç, Утна — Султан — Айпике кама кăмăллать, çавă ăста юрăçă пулать тетчĕç. Асаннӳне çав Утна — Султан — Айпике ăста тунă имĕш.

— Чим, кайăк пулса вĕçсе кайнă тенине аса илтĕм. Асанне Улăппала юлташĕсем хур кайăк пулса вĕçнĕ тесе калатчĕ.

— Калатчĕ çав. Вĕсем Пăлхар хулине çăлма васканă тетчĕ.

Анне Улăп Пăлхара çăлнине каласа кăтартрĕ, анчах юррисене пĕрне те аса илеймерĕ. Легендине урăхларах вĕçлерĕ: «Çичĕ юта пĕтĕмпех тĕп тусассăн вара хĕвел йăлтăртаттарса пăхса ярать. Çав вăхăтра тӳпере хур кайăксен кĕтĕвĕ курăнса каять. «Пирĕн пата улăпсен тепĕр ушкăнĕ килет!» — тесе калать тет хула çынни çакна курса. «Çук, ку вăл чăн-чăн хур кайăксен кĕтĕвĕ. Вĕсем пире курса карталанса вĕçме вĕренчĕç», — терĕ тет ăна Марка улăп.

Çавăнтан пуçласа вара чăнах та хур кайăксем карталанса вĕçме тытăннă».

## 123. Улăп Пӳлере хăтарма тухаймасть

Чăвашсен Улăп пуррине пурте илтсе-пĕлсе тăнă.

Темле çапла çак халап-юмах ача-пăча хăлхине те кĕнĕ. Ача-пăча ĕлĕк те пуçтах пулнă çав. Ав паçăр кунта мĕн айкашрĕç те иçмасса!

Темле çапла ача-пăча хастарланса кайса çав Улăп чăнах пурри-çуккине тĕрĕслесе пăхма картса хунă. Сĕм çĕрле Улăп тăпри çине кайнă та харăслатса:

— Улăп, Улăп! Çуй килчĕ, вăрçă килчĕ! Турă хушнипе пирĕн хута кĕме тух! — тесе кăшкăрнă.

Çĕр хута аçа авăтнă пек сасă кĕрлесе кайнă... Улăп тăпри уçăлнă та, ачасен умне Улăп тухса тăнă: «Нумай çывăрнă-çке эп», — тесе анасласа илнĕ те — çил-тăвăл кĕрлеттерсе иртнĕ, вăрманти йывăççем тӳне-тӳне кайнă... Улăп вăл пысăк, çӳллĕ кевтеллĕ пулнă, тумĕ-сумĕ ылтăн та кĕмĕл йăлтăртатса тăнă... Аллинче леш хайхи юман чукмар...

— Ăçта çуй? Ăçта тăшман? — тенĕ Улăп куçне-пуçне чалтăртаттарса. Аслати сасси пек кĕрлесе кайнă Улăп сасси. Ачасем пĕр хăраса, пĕр тĕлĕнсе пăлтăр-палтăр йăванса ӳкнĕ.

— Эпир мĕн... Ахаль кăна... Ваттисем чăнах калаççĕ-и, çавна пĕлес тесе кăна чĕнсе пăхас терĕмĕр, — тенĕ пĕри чĕтре-чĕтре.

— Эй, сарăмсăр япала! Ыратман пуçа тимĕр чукмар! — тенĕ те Улăп каялла Улăп тăпри ăшне кĕрсе кайнă...

Ваттисем çакна илтсе пĕлсен витĕр хуйха ӳкнĕ вара... Мĕн тăвăн çав, чавса çывăх та — çыртма çук. Ачисене хуть вăрç ĕнтĕ, хуть ятла — пĕррех каялла çавăраймастăн.

Усал хыпар утпа çӳрет тенĕ пек, çак хыпар ут юрттипе, куян куссипе тутарсем патне те çитнĕ. Чăваш хутне кĕрекен Улăп урăх тухмасса пĕлсен вĕсем çар пухса килнĕ те хурах пусма пуçланă. Хай тутарсем чăвашсене хĕссе пынă, пусахласах çитернĕ. Вара чăвашсем Улăпа чĕнсе кăларма çынсем янă. Кусем хайхи Улăп тăпри патне пынă та тайма пуççемпе, ăшă питсемпе Улăпа тархаслама пуçланă:

— Улăп! Улăп! Çуй тухрĕ, çар килчĕ! Турă хушнипе, Пӳлĕх пӳрни-

пе тухса пирěн хута кěрсемччě! — тесе тайла-тайла витěннě — Улăп тухман.

Улăп тăпри ăшěнчен:

— Тухăттăм та пулăшма, Турри ямасть, Пӳлěхçи пӳрмест, — тесе кăна хуравланă. Улăп урăх нихăçан та халăха тухса курăнман тет...

Чăвашсем вара тутарсене хирěç хăйсене хăйсем кăна таппа-тан тăнă. Анчах тутар вăйлăрах пулнă та сăр илнě. Чăваш çěрне-шывне вара йăлтах тутар пусса илнě.

## 124. Супетей Улăпа пěтерме тăрать

Чăвашсене пит пулăшса тăнă тет улăпсем: вăрман хăртса тěплесе пусăсем тума, кěçмерсене сухаласа акалама пулăшнă тет. Йышлă тăшмансем вăрçăпа тухсан вěсене хăвала-хăвала ярса чăвашсене хӳтлěх панă тет.

Ěлěк çапла чăвашсене тутарсем пит аптăратса çитернě тет. Чăвашсене вěсем темиçе те вăрçăпа пыра-пыра тапăннă, анчах вěсен çарне кашнинчех чăвашсем Улăп пулăшса пынипе хăвала-хăвала янă. Тутар патши Супетей аптăрасах çитнě. Вара вăл асăмчахсемпе* тухатмăшсене пуçтарса канаш ыйтать:

— Калăр-ха мана, асăмчахсем: миçе халăха парăнтартăм эпě? Миçе халăх пирěнтен хăраса тăрать? Калăр-ха тата: миçе пин çын тăрать ман çарта?

— Атăл хăйăрне кам шутласа тухни пур! — теççě асăмчахсем.

— Калăр-ха тата, асăмчахсем: миçе çул эпир чăвашсемпе çапăçса тăратпăр? Миçе çул ěнтě эпир чăвашсене парăнтараймасăр тăратпăр? Мěн чухлě çар пěтертěм эпě вěсемпе çапăçса? — ыйтать Супетей патша.

— Мěн чухлě пулнă, çавăн чухлě пěтнě; мěн чухлě пěтнě, çавăн чухлě çěнěрен тăнă, — тенě асăмчахсем.

— Калăр-ха тата, асăмчахсем: ăçта чăвашсен вăй-хăвачě, мěнле пěтерме пулать чăвашсен Улăп паттăрне? — ыйтнă Супетей патша. — Сиртен хăшě Улăпа çěнтерме май тупать, çавна чăваш патши тăватăп! — тенě патша.

Асăмчахсемпе тухатмăшсем пěри те ыр та, хаяр та шарламан. Супетей патша вěсене шухăшласа пăхма хěрěх кун срук панă.

Хěрěх кун иртсен асăмчахсене çěнěрен пуçтарнă та малтанхи пекех ыйтнă Супетей:

— Калăр-ха мана, асăмчахсем: мěн чухлě халăх мана пăхăнса пурăнать, мěн чухлě халăх хырçă-марçă тӳлесе тăрать?

— Атăл хăйăрне кам шутласа тупни пур! — хуравланă лешсем.

— Калăр-ха мана, асăмчахсем: мěн чухлě çар пěтрě манăн чăвашсемпе çапăçса?

— Мěн чухлě пěтнě, çавăн чухлě пěтнě пуль, — хуравланă асăмчахсем.

— Калăр-ха тата, асăмчахсем: мěнле парăнтарма пулать чăвашсен Улăпне? — ыйтнă Супетей патша.

Асăмчахсем халě те ăна хирěç ыр та, хаяр та шарламан. Тутар патши вара кашни кун вунă асăмчахран пěрин пуçне касма хушнă. Ыттисене шухăшласа пăхма çирěм кун срук парса салатса янă.

---

* Асамçăсемпе.

Çав вăхăтра пĕр аякри-аякри ялта тăхăр вун тăхăр çулхи ватă асăмчах пурăннă. Çула тухса çӳреме унăн вăйĕ пулман. Вăл вилме хатĕрленнĕ, виличчен хăй ĕçне ывăлне вĕрентсе хăварасшăн пулнă. Асăмчахсем кама та пулин хăйсен ĕçне, ăрăмăç ĕçне, вĕрентсе хăвармасăр вилеймесĕр асапланаççĕ тет. Супетей патша пуххине кайман ку асăмчах: ватă тесе килтех юлнă.

Çирĕм кун иртсен Супетей патша пур асăмчахсене те виççĕмĕш хут пухнă та малтанхи пек ыйтнă:

— Калăр-ха мана, асăмчахсем, миçе халăха пăхăнтарса тăратăп эпĕ?

— Атăл хăйăрне кам шутласа тупĕ! — хуравланă асăмчахсем.

— Калăр-ха мана, асăмчахсем: мĕн чухлĕ çар пĕтрĕ манăн чăвашсемпе çапăçса?

— Мĕн чухлĕ пулнă, çавăн чухлĕ пĕтнĕ; мĕн чухлĕ пĕтнĕ, çавăн чухлĕ çĕнĕрен тăнă! — тенĕ асăмчахсем.

Каллех шăпланса тăнă асăмчахсем. Каллех вунă çынтан пĕр пуçне касма хушнă Супетей — тутар патши. Çав ăрăмçăсен хушшинче ватă асăмчахăн ывăлĕ те лекет. Ватă асăмчах ывăлне шеллесе Супетей патша умне тухса чĕркуçленет те калать:

— Эй, аслă патша! Ан кастар айăпсăр çынсен пуçне! Хам каласа парам сана Улăпа çĕнмелле ăрăма, — тет.

Супетей ăна хăтăрса тăкать:

— Эс, ватсупнă карчамас, мĕншĕн малтанах каламарăн? Ма пытартăн аслă патшаран хăвăн пĕлĕве? — тет.

— Эй, аслă патша! Эсĕ нумай айăпсăр халăха хур кӳтĕн. Чăвашсем сана нимле шар та туман. Ма йăваш чăваша пĕтересшĕн эсĕ? Вĕсем никама та ним шар та туман. Улăп вăйне пĕтермелли мая эпĕ кăна пĕлетĕп. Сана пĕрех каламастăп! — тенĕ ватă асăмчах.

Супетей ватă асăмчахăн ывăлне тытса килме хушнă. Ăна тытса килнĕ те асаплантарма пуçланă: унăн куçĕсене чавса кăларма пĕрхĕт кайăк илсе пынă. Пĕрхĕт кайăк ывăлĕн куçĕсене чавма тытăнсан чăтайман ватă асăмчах.

Вара çапла каласа панă:

— Улăпа пĕтерес тесен хĕрĕх чалăш çĕр алтса шăтăк тумалла. Шăтăк çине çапă сарса шăналăк витмелле. Шăтăкне çиелтен тăпрапа хупласа хумалла. Пирĕн çарсене çапă чăтĕ, Улăп йывăрăшне чăтаймĕ, хуçăлса анĕ. Ун чухне эсĕ тин чăвашсене çĕнтерме пултаран, эй, аслă патшамăр!

Супетей патша тарçисем шăтăк алтма чупнă. Шăтăк хатĕрлесе çитерсен Супетей çар кăларса янă. Ватă асăмчах каланă пек, шăтăк çинчи çапă Улăпа чăтайман. Улăп шăтăка кайнă та тухайман. Тутар çарĕ чăвашсене хăваласа кайнă.

Улăп шăтăкра хĕрĕх талăк выртрĕ тет кăвак пĕлĕте тинкерсе. Тухма тапаланать — тухма çук. Пăхать çӳлелле Улăп — çăхан вĕçсе пынине курах каять. Улăп çăхана тархаслать тет:

— Эй, çăхан, çăхан! Эсĕ ирĕклĕ кайăк. Таçта та çитетĕн, таçта та пулатăн, тăват кĕтеслĕ çут тĕнчере вĕçсе çӳретĕн. Чăвашсем патне вĕçсе кайсамччĕ. Кала чăвашсене ман инкекĕм çинчен. Мана тутарсем ултавпа шăтăка ячĕç. Халĕ шывсăр, апатсăр типĕтсе вĕлересшĕн. Килсе хăтарччăр мана чăвашсем.

Çăхан ăна хирĕç:

— Вилех, вилех! Вилсен куçусене чавса кăларăп, — тесе кăранклатрĕ тет те вĕçсе кайрĕ тет.

Тăрсан-тăрсан чакак вĕçсе иртет. Улăп ăна тархаслать:

— Эй, чакак, чакак! Эсĕ ирĕк кайăк, таçта та вĕçсе ирĕкре çӳретĕн. Тăват кĕтеслĕ çут çанталăкра вĕçсе çӳретĕн. Чăвашсем патне вĕçсе кайсамччĕ, килсе çăлччăр мана кунтан. Тутарсем мана улталаса шăтăка ячĕç, апатсăр, шывсăр типĕтсе вĕлересшĕн. Килсе пулăшчăр мана чăвашсем!

Чакакĕ чак-чак! терĕ тет те:

— Вилех, вилех! Вилсен куçусене чавма килĕп, — тесе чакăртата-чакăртата вĕçсе кайрĕ тет.

Улăп пĕчченех хурланса юлчĕ тет шăтăкра. Çӳлелле пăхать: тухасчĕ — тухма çук. Пăхать те курах каять — кайăк хур вĕçсе иртет.

— Эй, хур кайăк, хур кайăк! Эсĕ ирĕк кайăк, таçта та çитетĕн, таçта та вĕçетĕн, тăват кĕтеслĕ çут çанталăкра ирĕкре çӳретĕн. Кайса каласамччĕ чăвашсене манăн хуйхăма. Тутарсем ултавпа мана шăтăка ячĕç, апатсăр, шывсăр типĕтсе вĕлересшĕн. Кайса каласамччĕ чăвашсене, кӳлсе килччĕр хĕрĕх лав, хĕрĕх аршăнлă вĕрен тиесе килччĕр, шăтăкран кăларччăр мана. Хĕрĕх лав ĕçме-çиме илсе килччĕр. Унсăрăн пĕтеççĕ чăвашсем.

Вĕçсе кайнă ки-как! ки-как! хур кайăксем юн юхтарса çапăçакан çĕре, каласа панă чăвашсене Улăп паттăр инкеке лекни çинчен.

Чăвашсем хĕрĕх лав хĕрĕх аршăнлă вĕрен тиенĕ тата хĕрĕх лав ĕçме-çимелли илнĕ те кайнă Улăпа хăтарма. Хĕрĕх кун кайсан чăвашсем Улăп выртакан шăтăк патне çитнĕ. Улăпа ĕçтернĕ-çитернĕ, хĕрĕх лав апат çисе янă хыççăн Улăпа вăй кĕнĕ. Унтан чăвашсем шăтăка вĕрен яма пуçланă. Çакна тутарсем сиснĕ те чăвашсене вĕлерсе пĕтернĕ. Улăп шăтăкне чулпа та тăпрапа хуплама тапратнă — Улăпа çĕр айĕнче пăчăхса вилтĕр тенĕ.

Нумай пулнă-и, сахал-и, — пĕлместĕп, — тутарсем шăтăка çиелтенех таптаса хупларĕç те кайрĕç тет. Улăп текех çĕр айĕнчен тухаймасть терĕç пуль ĕнтĕ.

Хĕрĕх лав ĕçме-çиме çисе вăй илнĕ те Улăп мĕнпур вăйне пухса хăйне хупласа тăракан чулсене хирме пуçланă. Хирсен-хирсен шăтăкран хирсе тухнă Улăп, тухнă та чăвашсене çăлма васкаса кайнă.

Улăп пырса çитнĕ çĕре тутарсем чăвашсене сĕм вăрмансене хăваласа кĕрсе кайнă иккен. Улăп вара тутар çарĕсене пĕтĕмпех хирсе тухнă тет. Тулькккăш чăвашсем кайран та вăрмантан тухмарĕç тет, çавăнтах юлчĕç тет.

Улăп шăтăкран хирсе тухнă çĕрте пысăк тĕмеске пулса юлнă. Çав тĕмеске халь те пур. Ăна Улăп тĕмески теççĕ. Ĕлĕкех суха тунă чух асаттепе çав тĕмеске çине ларса канаттăмăр. «Улăп тĕмески çине ларса кансан вăй кĕрет», — тетчĕ асатте. Ку халапне те асатте çавăн пек Улăп тăпри çинче ларнă чух каласа панăччĕ. Халь те лайăх астăватăп.

## 125. Улăп вăрман кăклать

Пирĕн енче Улăп уйĕ пур. Çав уя Улăп тунă тет.

Ĕлĕк-авал пирĕн ял таврашĕнче сĕм вăрман пулнă. Çав вырăна халăх куçса килнĕ-мĕн те, нумайăшĕн лашисем ӳксе вилнĕ те, вĕсем вăрманта макăрса ларнă.

Çавна Улăп курнă пулать те, ăна çынсем хуйхи-суйхине каласа панă тет.

Улăп каланă тет: «Чим-ха, ку уй ытла çăмлă, эпĕ çав çăмсене наччас çăмласа тухатăп», — тенĕ тет.

Пуçларĕ тет Улăп пин çулхи йывăçсене пĕшкĕнсе кăклама! Улăпшăн пин çулхи йывăçсем çум курăкĕ кăна! Улăп ун чух суха пуçне кӳлĕнсе суха та тунă тет, тырă та акнă тет.

## 126. Улăп суха тăвать

Тахçан ĕлĕкех çĕр çинче пит шултра мăн çынсем пурăннă тет. Çав çынсене пысăк пулнипе улăп теççĕ. Вĕсен çӳллĕш те пысăк пулнă тет, пĕлĕте пуçĕпе перĕнсе тăнă тет. Урисенче вара темĕн пысăкăш çăпатасем пулнă тет вĕсен.

Çынсен тăранмалла пулнă вĕт хуть мĕн те пулин çисе. Улăпсен ахаль те хырăмĕ час выçнă тет, апатне те вĕсем хальхи çынсенчен нумай çинĕ тет. Вĕсем çĕр сухаласа акса пурăннă тет. Пит вăйлă пулнă тет çав çынсем. Суха тăвасси вĕсемшĕн пĕрре сурмалăх анчах пулнă тет.

## 127. Улăп суха тума пулăшать

Ĕлĕк пиртен малтан çĕр çинче питĕ пысăк çынсем пурăннă тет. Улăпсем тенĕ вĕсене. Вăрмансем вĕсемшĕн курăк мыраăнне пулнă, пĕр утăм тусах вĕсем вăрман урлă каçнă. Питĕ вăйлă пулнă хăйсем, пирĕн пек çынсем вĕсемшĕн кăткă пек пулнă.

Пĕр хресчен уйра суха тунă пулнă. Сасартăк вăл Улăп пынине курах каять.

— Эх, мĕскĕн, мĕнле тăрмашатăн эсĕ, усси вара питĕ сахал, пулăшам-и? — пиллесе ыйтнă вăл пĕчĕк çынран.

Вара Улăп хăйĕн сухине илсе килет те çак уя темиçе шутланă çĕрех сухаласа пĕтернĕ тет. Пĕчĕк çын куншăн питĕ савăннă. Юлашкинчен Улăп канма ларнă тет, икĕ аттине хывса тăприне силленĕ тет. Тӳрем вырăнтах çапла икĕ пысăк тăпра купи пулса ларнă. Халĕ те пур вĕсем, Анат Кĕпер ялĕнчен инçех мар. Улăп тăпри теççĕ вĕсене.

## 128. Асамат паттăр Улăпа тимĕр тĕрен туса парать

Улăп паттăр пĕррехинче пăри акма тесе çерем сухалама тытăнчĕ тет. Ĕçĕ вара, шеремет, ниепле те ăнса пымасть тет. Ана тавра пĕрре çаврăнса килнĕ-килменех ака пуç тĕренĕ шатăрт! хуçăлать тет. Улăп вара каллех шултăра юман кăкласа ака пуç тума тытăнать. Иртен пуçласа каçчен вăл çичĕ ака пуç хуçса-тустарса пăрахрĕ тет.

Çав вăхăтра хирпе хăй лаши çине утланса Асамат паттăр иртсе пырать тет. Улăп ĕмĕрхи вată юмана кăкласа ака пуç тунине курсан чарăнса тăрать çакă.

— Эх-хе-хей, ку çереме эсĕ капла уйăхра та сухаласа пĕтерес çук. Ака пуç тĕренне ăна тимĕртен тумалла. Атя хам пата, вĕрентеп, — тесе каларĕ тет.

Икĕ кун хушши шаккарĕç тет Асамат паттăрпа Улăп паттăр тимĕрçĕ хӳшшинче. Çитмĕл те çичĕ лаша кӳлсе сухаламалли ака пуç турĕ тет Асамат паттăр. Çав ака пуçне вăл кайран пирĕн мăн асаттесене пехиллесе хăварнă тет.

# УЛĂПСЕН ЮЛТАШĔСЕМ

## 129. Улăпăн юлташĕсем

Улăппалан юлташĕсем çиччĕн пĕрле çӳренĕ тет. Пĕрне Асламас тетчĕç мар-и? Тепри Ламунччĕ пулас. Те Ламанччĕ-ши? Çавăччĕ пуль-ха вăл, Улăп пекех вăйли. Çакăччĕ çав. Наçтук инке вара каласа кăтартатчĕ, çав Ламун е Ламан текенни вăл çичĕ паттăр ĕç тунă тетчĕ. Çав çичĕ паттăр ĕçрен чи чапли — чăвашсене ылтăн кĕнекине тупса пани тетчĕ. Ламун текенни вăл вилмен тет, çĕр айне çывăрма выртнă тет. Анчах усал çынсем шуйттан хĕтĕртнипе ăна улталанă тет, çавăнпа вăл çĕр айĕнчен тухмасть тет.

Улăпăн ытти юлташĕсенчен пĕрне Тимĕрç улăп тетчĕ Наçтук инке. Çапла калатчĕ. Вăл пит ăста пулнă тет. Улăппа унăн юлташĕсене чи йывăр вăхăтра ăслă канашсем панă тет.

Пиллĕкмĕшĕ вăл ăрамçă пулнă тет. Ăна Сар улăп тетчĕ пулас-ха.

## 130. Марка улăп

Марка улăп çинчен асанне темиçе те каласа панă мана. Хальхинче вара эпĕ асанне каланине çырсах пырас терĕм.

— Итле эппин, — терĕ те асанне юрласа ячĕ:

> Пĕлмеп тесен — пĕр сăмах,
> Пĕлеп тесен — çĕр сăмах.
> Ватта савнă — юп курнă,
> Халап янă — юптарнă.

Марка улăп вăл пирĕн улăпăн юлташĕ пулнă. Пирĕн ялсем çав Марка улăпран тăван тет. Марка улăп ката çумĕнчи сăрт çинче пурăннă, халь Марка çырми текен вырăнта.

Вăл пирĕн пек çĕр ĕçлесе пурăнман, вăл сунара çӳренĕ тет. Пăлансем тытса виçĕ пăлана пĕрре çинĕ чухне çисе яма пултарнă тет çав Марка улăп.

Пирĕн улăп ун чухне Атăл хĕрринче, Чĕмпĕр сăрчĕ çинче, пурăннă. Марка улăп пĕррехинче Атăл еннелле сунара кайнă.

> Авруль çырми кĕрет Пăлана,
> Марка улăп тухать ухутана.
> Çӳллĕ тусем çинче кайăк вĕçет,
> Вăш-ваш, вăш-ваш кăна çунат çапать.
> Марка улăп килет тесе шуйханать,
> Чĕпписене часрах пытарать...

Марка улăп хăй умĕнчен халиччен курман пысăк кайăк вĕçсе иртнине курах каять. Вара вăл вăтăр виçĕ пăтлă уххине çĕклет те пеме тăрать.

— Ан пер мана, Марка улăп! — тет сасартăк ăна кайăк этем сассипе. Çавăнтах вăл çĕре пырса çапăнать те чип-чипер хĕр пулса тăрать.

> Улăп вăйĕ — аллинче,
> Пике ăсĕ — питĕнче.
> Пике кулать — юн вылять,
> Пӳлĕх пӳрет — пур пулать.

Çакă вăл Турă хĕрĕ пулнă. Вăл Марка улăпа юратса пăрахнă.

Сар хĕр урлă сăн кĕрет,
Атăл урлă ăс кĕрет.

Марка улăп Турă хĕрĕпеле тĕл пулни хăйне хурлăх кӳрессе пĕлмен. Пирĕн улăп ăна калать тет:

— Турă хĕрĕпеле пирĕн арлă-арăмлă пулма юрамасть, пирĕн этем хĕр-упраçне качча илмелле.

Марка улăп калать тет:

— Çук, эпĕ Турă хĕрне качча илетĕп.

Вăл вара Чĕмпĕр сăрчĕ çине улăхнă та Турă хĕрне курас тесе тӳпе маччинелле кармашнă, пуçĕпе пĕр пĕлĕте шанк! перĕннĕ, ăна чăл-пар салатса янă. Çав пĕлĕт çинче Аслатти çывăрнă. Вăл хайхи пĕлĕт çинчен тухать ӳкет.

Ахальтен каламан çав: пӳкле вилĕм нехекрен, этем вилĕм пĕлĕтрен.

Аслатти Марка улăпа çав тери çилленсе каять.

— Сан ĕмĕрӳ вăрăма ан пытăр. Сан несĕлӳ пĕчĕккĕ пултăр! — тет.

Çавăнпа вара Марка улăпăн ачисем те, ачисен ачисем те ун пек пысăк пулман, пĕчĕккĕ пулнă. Аслатти ĕнтĕ Марка улăп ачисем те пĕлĕтелле кармаша-кармаша хăйне кансĕрлесрен хăранă пулĕ.

Аслатти кăмăлне пĕлес çук,
Çамкана çырнинчен иртес çук, —

тесе юрланă тет хăй вилес умĕн Марка улăп.

## 131. Марка улăп çырми

Ĕлĕк пирĕн ял патĕнче пĕр Марка ятлă улăп пурăннă тет. Вăл ялан суха туса пурăннă тет. Пĕрре хăйĕн суха пуçĕпе сухаласа пынă тет çĕрле килне таврăннă чух. Çавăнтан вара унта питĕ пысăк çырма пулса кайнă тет. Çырми вăл питĕ пысăк пулнă, хăш-пĕр чухне хăпарма та çук. Çырма ятне те улăп ячĕпе Марка тесе ят панă теççĕ.

## 132. Мерекепе Ламан

Улăп тĕми текен вырăнта унта ултă сăрт. Улăппа пĕрле çав вырăнта икĕ юлташĕ çӳренĕ тет. Вĕсем виççĕшĕ те вара çав вырăнта ларса каннă. Кунта киличчен вĕсем утма кансĕрлеççĕ тесе вăрманти çӳллĕ йывăççене кăкла-кăкла ыватнă. Çавăнпа вĕсен пушмакĕсене çĕр тулнă. Çав çĕре унта силлесе хăварнă.

Вĕсем те пысăк пулнă тет. Анчах Улăпа çитеймен. Улăп хăй пушмакĕсене шакканă тĕмĕсем çӳллĕрех.

Улăп юлташĕсенчен пĕрне Мереке, теприне Ламан тенĕ. Çав кăнтăр енчи чăнкă питлĕ сăртне халĕ те Ламан сăрчĕ теççĕ. Ытти сăрчĕсен ячĕ — Тайлăк сăрт, Мереке сăрчĕ, Ватă сăрт, Шĕвĕркке, Малти сăрт. Шĕвĕркки вăл çав чи çӳлли. Шĕвĕркkипе Малти сăрчĕ шăп та лăп Улăп пушмакĕпе шакканинчен пулнă. Улăп купарчисем çĕре пусарнипе пулнă васансем те вĕсем çумĕнчех.

## 133. Ентимер, Шан-Шаккай, Кăтра Авруль — улăпсен тусĕсем

Виççĕн пĕртăван пулнă: Ентимер, Шан-Шаккай тата Кăтра Авруль. Вĕсем малтан Сăкăтăн çӳл енне, сăрт çамкине ларнă. Кайран вара Шан-Шаккайпа Ентимер айлăма куçса ларнă. Кăтра Авруль вĕсенчен уйрăлса пирĕн ял тĕлне вырнаçнă. Шан-Шаккайпа Ентимер йăхĕнчен Сăкăт халăхĕ, Кăтра Авруль йăхĕнчен Сăкăт Мишер халăхĕ хунаса кайнă.

Вĕсем виççĕшĕ те питĕ вăйлă çынсем пулнă. Вĕсем улăпсемпе те туслă пулнă. Ентимер сунара çӳреме юратнă, çавăнпа Марка улăппала уйрăмах туслă пурăннă. Вĕсем иккĕшĕ пĕрле сунартан тем тĕрлĕ кайăк-кĕшĕк тытса таврăннă.

Кăтра Авруль Ламан улăппа туслă пулнă. Кăтра Авруль кайран Ламан улăпа хăйĕн хĕрне Телейпие качча панă. Шан-Шаккай Сартун улăппа туслă пулнă. Вăл сап-сар сухаллă пулнă тет, çавăнпа ăна Сартун улăп тенĕ. Сар улăп тесе ăна ыттисенчен сарă пулнипе каланă. Ячĕ унăн Сартун пулнă. Вăл Çӳлти турăпа туслă пулнă. Сартун улăп хăй куç вăйĕпе пĕлĕтсене тыта-тыта чарма пултарнă.

Улăпсем нумаййăн пулнă вĕсем. Вĕсенчен чи ăсли Асамат пулнă тет. Вăл ыттисенчен уйрăм, çеçен хир варринче пурăннă.

Ламан улăп чи вăйли пулнă. Вăл тем тĕрлĕ паттăр ĕç те туса çӳренĕ. Унăн арăмĕ Телейпи нумай пурăнман, час вилнĕ. Вăл калама çук хитре пулнă. Юрă ăсти пулнă.

## 134. Телейпи юрри

Чĕнтĕрех те кĕпер, юман кашта,
Йĕс таканлă утсем каçнă йĕрсем пур;
Йĕс таканлă утсен купарчи çинче
Турă ачи çырнă çыру пур.

Турă ачи çырнă çыру çинче
Пирĕн атте-анне ячĕ пур;
Пирĕн атте-анне чĕрки çинче
Мĕн кĕçĕнтен пирĕн йĕрсем пур.

Телейпи ку юрра ашшĕпе амăшĕ хăйсем патне хăнана килсен юрланă тет.

## 135. Алмăш паттăрпа Яппар

Ĕлĕк-авалах пулнă тет çак ĕç.

Чăваш хушшине пĕр темскерле пит вăйлă Яппар ятлă асаймăç* килсе тухнă тет. Эскентер çитмен çĕрсене çитсе тытасшăн пулнă тет çак паттăр.

Упа-кашкăр та хăранă тет унран, арăслансем вăл çӳрекен çултан пăрăнса çӳренĕ тет. Тăхăр уйăх каймалăх çула тăххăр пусса çитекен пит чаплă урхамах пулнă тет çак паттăрăн. Чăваш паттăрĕ пулман вăл, темскерле урăх халăх паттăрĕ пулнă.

---

* Асамçă.

Темскерле, хальччен курман-пĕлмен йĕрке илсе килнĕ тет çак Яппар паттăр, çав йĕркепе пурăнман çынсене хĕçпе касса, вутпа çунтарса пĕтернĕ тет. Вăт çак Яппар чăвашсем патне çав темскерле йĕрке илсе килесшĕн пулнă. Çав йĕркене темле кĕнеке çине çырнă пулать те саккун пек тунă тет.

Килсе кĕрет çак Яппар чăваш патши патне. Чăваш патши Алмăш паттăр пулнă тет; Яппар пырса кĕнĕ чух ачисемпе апата ларнă тет. Яппар пит тĕлĕнчĕ тет чăваш паттăрĕсене курсан. Алмăшăн ачисем те хăй пекех паттăр тет. Чăвашăн çавăн пек паттăрсем пурне шутламан та-ха вăл. Лешсем пы-ысăк хуранпа вăкăр пĕçернĕ тет, пĕр вăкăра пĕтĕмпех. Вăкри те пы-ысăк тет. Паттăрсен выльăххи те шултра йышши пулнă пуль çав. Вăкăр пуçĕ кăмака пек тет.

Леш, Яппар текенни, пырса кĕчĕ тет те:

— Саламаликкĕм! — терĕ тет.

Чăваш патши ку мĕн каланине ăнланмарĕ тет. Чăваш йăлипе:

— Иртсе лар, апат пĕрле пултăр, — тесе сĕтел хушшине чĕнет тет. Лешĕ ăна-кăна ăнланмарĕ тет те айккинелле пăрăнса тăчĕ тет.

— Çĕр вырттарса ярăр-ха мана, ыр çынсем, — тесе сăмах çукран сăмах тупса каларĕ тет хăй чĕлхипе.

Алмăш паттăр каллех ăнланмарĕ тет ку каланине:

— Мĕн ĕнĕрлесе тăран эс? — тесе ыйтрĕ тет. — Сана апата чĕнеç, эс мĕн çăкăр-тăвартан аслă пулса тăран? — терĕ тет хытах.

Яппарăн пит çил килчĕ тет те, тулькkăш ним тума тет, Алмăш паттăр ачисем кашкăр пек лараç тет, ачисем те ашшĕ пекех паттăр. Вара кăмăлне пусарчĕ тет те хĕвĕнчен кĕнеке туртса кăларчĕ тет:

— Ак эп сирĕн валли çĕнĕ йĕрке илсе килтĕм, малашне сирĕн çак саккун тăрăх йĕрке тытса пурăнмалла, — тесе калать тет.

Алмăш каллех ним те ăнланмарĕ тет кун юмаххине, вăкăр пуç ыйтать пуль ку тесе шутларĕ тет. Вăкăр пуçне илсе парать тет хайхи. Леш, Яппар, вăкăр пуçне илмесĕр пăрăнса тăчĕ тет те каллех кĕнекине тăсса парать тет.

— Киттап, киттап, — тесе калать тет.

Вара çав кĕнекене вула пуçларĕ тет. Сăмаххисем юрă пек юхать тет, çемçен çеç вулать тет Яппар. Вуларĕ-вуларĕ тет те кĕнекине Алмăша тăсса парать тет. Алмăш тыткаласа пăхрĕ тет кĕнеки шăпăрт та шарламасть тет кун аллинче.

— Мĕн тăвас ман кунпа, ман алра юрламасть вăл, санра çеç тем калать. Чиксе хур та киттапна хĕвне кил лар апата. Вăкăр пуçне ахалех парап эп сана, эс ман хăна. Лар, çи, — тет хай Алмăш.

Леш куна ним те ăнланмарĕ тет, мĕн вăкăр пуçпе мăшкăллать ку мана тесе çилленсе кайрĕ тет те хĕçне туртса кăларма тăчĕ тет.

Алмăш ачисем çавăнтах вăкăр шăммисене йăпăр-япăр ярса тытрĕç те тет, халь-халь вăкăр пĕççипе туртса çапас пек тăраç тет. Вăкăр шăммисем пы-ысăк тет, юман кĕрешĕ пек тет. Паттăрсен выльăхĕ те пысăк çав ĕнтĕ. Леш тухса кайрĕ тет вара хăраса. Алмăш паттăр хыçалтан вăкăр пуçпе яра пачĕ тет. Леш вара урхамахне утланса ĕлкĕрнĕрен çеç хăтăлса юлчĕ тет. Тара пачĕ тет вара, тек чăваш хушшине вуç килмерĕ тет. Чăвашсем ĕлĕкхи йĕркепех пурăннă вара. Тутарсене кайса панă леш кĕнекине Яппар, тутарсем çавăнпа кĕнекене «киттап» теç.

Атăл хĕрринче Вăкăр пуç текен сăрт пур тет, чăнах вăкăр пуç шăмми пек тет вăл. Çав Алмăш кăларса пенĕ вăкăр пуç çавăнта пырса выртнă тет те сăрт пулса кайнă тет.

## 136. Хăлиман паттăр

Хăлиман текен пĕр пысăк çын уйра суха сухаланă çĕртен тӳрех куçса килнĕ – суха пуçне те çавăрса кӳлмен тет, ал вĕççĕн çĕклесе пырать тет. Ёнеш* тăвайккинчен аннă чух суха пуçĕ шăйăрттарса кайнă та ав мĕн пысăкăш çырма туса хăварнă. Хăлиман пысăк пулнă тет, вăл улăп пулнă тет. Суха пуçĕ те пысăк пулнă ĕнтĕ унăн — çавăн пысăкăш çырма тума пултарнă.

## 137. Сарă паттăр

Сĕм вăрмана каçхи тĕттĕм хупăрласа илчĕ. Шурлăхлă, лачакаллă тарăн варта вут çути мĕлтлетет. Вăл кăн-кăвак çӳçлĕ ватă çынсен пичĕсене вăйсăррăн çутатать. Каччăсен куçĕсем хăюллăн ялкăшаççĕ, аллисенче — вăрăм сăнăсемпе хытă карăнтарнă ухăсем. Вĕсенчен пуринчен те çӳлли, сăнĕпе чи илемли — Сарă Паттăр. Вăл халăха çапла калать:

— Хамăр вăйпа эпир ылханлă Анчик хана çĕнтерейместпĕр. Вырăс патши патне çыру çырар.

Çынсем кăвайт умне пĕшкĕнчĕç.

— Чăвашсене пулăшма килĕр. Çăкăр-тăварпа кĕтсе илĕпĕр. Хусана çул кăтартăпăр... — çыраççĕ Нишаварти чăвашсем вырăс патши Василий III патне.

Вĕри куççуль витĕр чăвашсем хăйсен ялĕсене çунтаракан, ватă çынсемпе ачасене вĕлерекен, арçынсемпе каччăсене чуралантаракан, хĕрарăмсемпе хĕрсене пусмăрлакан хаяр тăшмансене ӳпкелешеççĕ.

— Вырăс патши похода хатĕрленнĕ вăхăтра эпир Анчик хана хирĕç вăрçă пуçлатпăр! — кăшкăрнă Сарă Паттăр. — Кунта вара крепость тăватпăр.

## 138. Сартон улăп

Хальхи Муркаш районне кĕрекен Макçикасси ялĕнчен инçех мар, Сĕнтĕр шывĕ урлă каçсан Каршлăха хăпарнă тĕлте, Сартон сăрчĕ пур. Халĕ ĕнтĕ вăл йывăççенчен çаралнăран хĕвеллĕ уяр кунсенче сап-сарă курăнать, мĕншĕн тесен сăрчĕ ишĕлнĕрен сап-сарă хăйăрпа витĕннĕ. Каршлăх вăрманĕ ĕлĕк-авал пысăк та чăтлăх пулнă. Çын кĕрсе тухма май пулман: йĕри-тавра катмар йывăççем, шыв-шурлă вырăнсем пулнă. Çак сăртра питĕ пысăк хӳшĕре Сартон ятлă улăп пурăннă. Вăл салтака каясшăн мар тарса пурăннă пулас кунта. Ĕлĕк улăпсен те служить тумалла пулнă тет. Сартон çывăхри ялсене кайса пуянтарах пурăнакансене çараткаланă, чухăнсене тивмен.

Вăл хăйĕн тăванĕсем патне Атăл урлă кайкаласа килнĕ. Унта унăн тăванĕсем — амăшĕ тата шăллĕсемпе йăмăкĕсем — пурăннă пулать. Улăпсен амăшĕ тĕплĕ шухăшлама пултаракан хĕрарăм пулнă. Унăн мăшăрĕ пĕр çапăçура вилнĕ пулнă. Пĕрре амăшĕ ачисене пухать те калать:

— Халĕ ĕнтĕ, ачамсем, çитĕнсе çитрĕр. Йăлăмра пурăнса çитĕ пире. Аçуна вĕлернĕ Çеçмер ялне кайса пăхăр. Çеçмер халăхĕ усал халăхчĕ. Ял çывăхĕнчи вăрманта пĕр пысăк юман çинче пыл хурчĕсем пурăнатчĕç ĕлĕк. Çав пыл хурчĕсем вилсе пĕтнĕ пулсан сире Çеçмер халăхĕ йышăнмĕ,

---

* Енĕш.

вилсе пĕтмесен йышăнĕ. Атăл урлă каçиччен малтан пуртăпа кассан этем юнĕ тухакан хунав йывăçран йĕлтĕр тăвăр, — тенĕ амăшĕ.

Шырасан-шырасан ывăлĕсем кассан этем юнĕ тухакан хунав йывăç тупнă. Йывăçсене касса ӳкерсен, йĕлтĕр тăршшĕ татма тытăнсан йывăçа пуртă витми пулнă: хытă йывăç çивчĕ пуртта парăнман. Пĕртăвансем каллех амăшĕ патне чупса пынă та:

— Анне, этем юнĕ тухакан йывăç тупрăмăр. Аран-аран касса ӳкертĕмĕр, пуртăсем те катăлса шăлланса пĕтрĕç. Йĕлтĕр тăвайрас çук: ниепле те йĕлтĕр тăршшилĕх татаймарăмăр, — тенĕ улăп ачисем.

Амăшĕ каланă:

— Малтан йывăç урлă пĕр кĕтӳ сурăх хăваласа каçарăр, вара йывăç çемçелет, пуртă витекен пулать, — тенĕ.

Хайхисем йывăç урлă хăйсен картинчен хăваласа кăларнă сурăх кĕтĕвне каçарнă. Йывăç чăнах та çемçелнĕ. Виçĕ пĕртăван йĕлтĕр туса пĕтерсе çула тухма хатĕр тăнă. Амăшĕ ывăлĕсене пиллесе хăйсен ашшĕ çуралса ӳснĕ вырăна, Çеçмер ялне, ăсатса янă.

Хурăн йывăçĕнчен тунă сулăмлă йĕлтĕр юр çийĕн çăмăллăн ишсе пынă. Атăл урлă каççан пĕртăвансем Çеçмер вăрманне пырса кĕнĕ, амăшĕ сăнласа панă пысăк хăвăл юмана шырама тытăннă. Шырасан-шырасан пĕртăвансем çав пыл хурчĕллĕ юмана тупаççĕ. Асли юман çине хăпарса хăвăл ăшнелле пăхать — пыл хурчĕсем пĕтĕмпех вилсе пĕтнĕ, хăвăлтан пыл шăрши çеç кĕрет. Аслă ывăлĕ шăллĕсене пĕр çĕре пухать те калать:

— Пыл хурчĕсем пĕтнĕ. Пире Çеçмер халăхĕ йышăнас çук. Пирĕн хыççăнхисем аннен татах нумай. Пирĕн аннепе йăмăксене пулăшмалла, анчах хальлĕхе кам ăçта пĕлет — унта кайса пурăнма тытăнмалла, — тенĕ.

Аслă ывăлĕ хайхи Юнкăпуç ялĕ вырăнне кайса пурăнма тытăннă, вăталăх ывăлĕ — хальхи Ильинкăран инçех мар Вăртах вăрри текен вырăна кайса вырнаçнă. Кĕçĕнни, Сартон ятли, хальхи Каршлăх вăрманĕнче çак Сартон сăртне килсе вырнаçнă, пысăк хӳшĕ туса лартнă, пĕчченех пурăннă. Унăн хӳшши Йăлăм енченех курăннă, тĕтĕмĕ Шупашкар ТЭЦĕн трубинчен тухнă пек йăсăрланнă тет.

Сартон ирĕккĕн пурăннă, аслă вăрманта ăна валли тем те пулнă: кайăкĕ-кĕшĕкĕ, кашкăрĕ-упи. Ырă çанталăкра Сартон сунара çӳренĕ, таврари Кармăш, Хачăк, Шатракасси, Кĕрекаç, Катькас ялĕсенчи çынсене уй тума пулăшнă: ял çывăхĕнчи йывăçсене кăкласа панă тет. Кăкланă йывăç тымаррипех хăртнăри çĕре сухаланă пулать вăл. Сухаласан-сухаласан вăл канма ларнă, нӳрлĕ çăпатине хĕвел питне типме хунă, выртса каннă. Унтан ял çыннисемпе пĕрлех вăраннă, хĕвел çинче шултăрканă çăпатинчи тăпрана шаккаса ура сырнă. Çав çăпатари тăпраран ĕнтĕ хальхи Катькас çĕрĕ çинчи улăп тăпри тĕмисем пулса кайнă.

Сартон улăп паттăр хăйĕн ашшĕне вĕлернĕ Çеçмер ялĕн халăхне курайман, уншăн тавăрма тăрăшнă. Вăл Çеçмер ялĕнчи пуянсен лашисене, ĕнисене вăрланă, хăй пурăнакан хӳшше илсе кайнă. Пĕрре çапла сĕм хĕлле Çеçмер халăхĕ Сартона сыхланă, йĕлтĕрĕн йĕрĕпе йĕрлесе унăн хӳшши патне çитсе тухнă. Халăх хӳшше хупăрласа илнĕ, Сартона чĕррĕн тытса ашшĕне вĕлернĕ пек вĕлересшĕн пулнă.

Çывăракан Сартон халăх хĕвĕшнипе вăраннă та хӳшĕрен пуçне кăларса пăхнă: йĕри-тавра — хуп-хура халăх. Çеçмер халăхĕ Сартон йĕлтĕрпе пит ăста çӳренине пĕлнĕ, çавăнпа та вĕсем вăл йĕлтĕр çине тăрса ярăнса каясран хăраса юман çумĕнчи сĕвентерсе тăратнă йĕлтĕре маларах тытса

илме шутланă. Вăтăр-хĕрĕх çын Сартон йĕлтĕрне тытса илме юман патне чупнă. Йĕлтĕре ярса тытаççĕ, анчах ниепле те йăтаймаççĕ: вăл питĕ пысăк та йывăр. Халăх тĕлĕнсех кайнă: «Мĕнле çÿрет-ха вăл çак йĕлтĕрпе?» — тенĕ. Халăх каланă:

— Сартон, сана çапах тытрăмăр, вĕлериччен хăвăн йĕлтĕрÿпе утса кăтарт-ха! — тенĕ.

Сартон хÿшĕрен тухнă та йĕлтĕр тăракан юман патне утнă. Халăх ăна хуптĕрлесе илнĕ, йĕлтĕрпе утса кăтартмалăх пĕр лаптăк пушă вырăн хăварнă. Йĕри-тавра халăх кăшăл пек йĕркеленсе тăнă. Сартон каланă:

— Юрĕ эппин, ывăннă пулин те сире утса кăтартăп, — тенĕ.

Сартон йĕлтĕрне майласа сырнă. Халăх ун çине сывламасăр, куç хускатмасăр пăхса тăнă. Вăл юман тураттине карăнса авса хуçнă та хăйне валли туя тунă. Уншăн хура халăх кăткăсем пек çеç туйăннă. Сартон ункăра меллĕ уткаласа çÿренĕ, халăх ун йĕлтĕрĕнчен, пысăк утăмĕсенчен тĕлĕннĕ, унтан Сартон каллех çав юман патне пынă та (юманĕ йĕкĕр пулнă теççĕ) ăна икĕ еннелле туртса уйăрнă, патвар та ватă юман аслати авăтнă пек шатăртатса икĕ еннелле хуçăлса аннă, хупăрласа тăракан халăх сасартăк сирĕлсе кайнă. Çав хушăра Сартон сăртран аналла ярăнса кайнă. Вăл самантрах тĕпсĕр кÿлĕ çине çитнĕ те Сĕнтĕр шывĕн тикĕс шăннă çийĕпе Атăл еннелле вĕçтере панă, ун хыçĕпе çил-тăман çеç савăрăнса юлнă.

Çеçмер халăхĕ Сартон хыççăн хăвала пуçланă. Сартон тикĕс юр тăрăх шав малалла вирхĕнтерсе пынă. Атăл хĕррине çитсен Сартон ĕшеннипе вакă касса шыв ĕçнĕ те малалла ярăнса кайнă. Халăх Атăл хĕрне çитсен Сартон выртса шыв ĕçнĕ вакка курах каять, анчах шывĕ çÿхе икерчĕ хулăнăш пăрпа витĕннĕ пулнă. Урса кайнă халăх вăйлă та чее Сартона тытмах шутланă, унăн йĕлтĕрĕн йĕрĕпе малаллах хăваласа кайнă. Сартон йăлăмри Çутă кÿлĕ хĕррине çитсен ĕшеннипе каллех вакă касса выртса шыв ĕçет. Хăвалакан халăх çитнĕ çĕре шывĕ хулăн икерчĕ пек пăрланнă тет. Халăх малалла хăваласа кайнă. Кăнтăр кÿлли хĕрне çитсен Сартон каллех вакă касса шыв ĕçнĕ. Халăх вакă тĕлне çитсен пăхать — шывĕ пашалу хулăнăш шăннă. Халăх чарăнса тăнă та:

— Сартон пит инçе кайнă, ăна халĕ тытайрас çук, — тесе каялла çаврăннă.

Сартон каллех амăшĕ патне таврăннă тет.

## 139. Чура паттăрпа Шиçту

Вĕсем хире-хирĕç пуртă ывăтса илнĕ тет кирлĕ пулсан. Хушши çичĕ çухрăм пулĕ. Иртен-çÿрекенсене çул паман. Вĕсене кăмăл тусан анчах çул панă.

## 140. Чура паттăр

Чура паттăр киремет хыснан юман катинче пурăнать. Ку ката Атăлăн сылтăм енче Анат Кĕнертен çурçĕр еннелле сакăр çухрăмра вырнаçнă. Вăл епле пулса кайни çинчен çапла калаççĕ. Тахçан-авал патшалăх çĕрĕ çинче тутар паттăрĕ пурăннă. Вăл Атăл тăрăх çÿрекен карапсене çаратнă. Хайхискер çапла хăтланнă: карап çÿлтен аннă чухне сылтăм урине Атăлăн сылтăм енне, сулахай урине сулахай енне пусса тăнă; карап аялтан

хăпарнă чухне — тепĕр майлă. Вара вăл аллипе карап юпине ярса тытнă та хăйне мĕн кирлине илнĕ. Ку паттăр тытăçура вилнĕ те ăна асăннă çĕре пытарнă. Чăвашсем ăна асăнма çав катана çÿреççĕ те ĕнтĕ. Вĕсем хăйсен чÿк парнисене юмансем кутне çухрăм тăршшĕпех хурса хăвараççĕ.

## 141

Унта часовня пур, çурта пăрахаççĕ — çулталăкĕпе пухсан, пĕр пăт пулать пуль. Ĕлĕк унта паттăрсем пурăннă тет. Атăл тăрăх çÿрекен хуçасене пĕрне те ахаль укçасăр ирттерсе яман (ĕлĕк вутлă кимĕ пулман, канатпа туртнă).

Пĕр çын, кĕнерсем, Шупашкара Турра пуççапма кайнă. Кĕнерсем сукмакпа тÿрĕ çÿреççĕ. Чура паттăр тĕлне çитсен пĕр паттăрĕ ăна курах кайнă. Сехри хăпса тухнă, лешĕ чĕнет тет. Каяс пулать, юрамасть. Пычĕ тет патне те, укçа ылтăнпа кĕмĕл купаланă тет. (Ĕлĕк ылтăн та кĕмĕл çÿренĕ). «Пĕр лав тиесе кай, — тет куна. — Никама та ан кала», — тет.

Ку кайса килчĕ тет хулана. Киле çитсен арăмне анчах каларĕ тет хĕпĕртенипе. Ут кÿлчĕ тет те — укçа тиеме. Çитрĕ тет, укçа та, çын та çук тет.

## 142. Чур упăшка

Чур упăшка вăл питĕ пысăк çын пулнă: пуçĕпе пĕлĕте лекнĕ, йывăçсем пек тĕреклĕ пулнă, утнă чух вăл йăмрасем урлă утатчĕ тет. Арăмĕ ăна валли йĕм çичĕ кун çĕленĕ тет. Унăн ывăлĕ вилнĕ тет, вара вăл питĕ хытă макăрчĕ тет. Ял çумĕнчи кÿлĕ унăн куççулĕнчен пулнă тет.

Çавăн пек пысăк пулнă пуль ĕнтĕ авалхи çынсем.

## 143. Таттаймăспа юлташĕсем

Таттаймăс — çĕлен патши патне кушак пулса кайнă паттăр. Курмин Курминчпа Туппин Туппинч — унăн юлташĕсем. Çĕлен йышĕсем вĕсене чеелĕхпе вĕлерме шут тытсан Таттаймăс иккĕшне те вилĕмрен хăтарнă.

## 144. Ахпăлат турхан

Аслă Пинер (Турханкасси)ялĕнчи 80 çулхи Иван Михайлов колхозник каласа панă тăрăх, XVI ĕмĕрте çак ялта Ахпăлат ятлă чăваш турханĕ пурăннă (çавăнпа ялне те Турханкасси тенĕ пулмалла), унăн чылай çĕр пулнă, çапла ĕнтĕ вăл феодал пулнă. Питĕ вăйлă пирки халăх ăна «Паттăр» тесе чĕннĕ.

Ахпăлат Хусан ханлăхне хирĕç вăрçма каякан вырăс çарĕсене пулăшнă — чăвашсене вăл шывсем урлă кĕперсем тутарнă, вырăс çарĕсене çул кăтартса янă, апат-çимĕç пухса панă. Хусан ханĕсен йывăр пусмăрне тÿссе пурăнакан чăвашсем вырăс çарĕсене кăмăл тусах пулăшнă, çавăнпа та чăвашсем Ахпăлата та юратнă. Вырăс çарĕсене пулăшнăшăн IV Иван патша Ахпăлата ылтăн грамота тата хальхи Елчĕк районĕнчи Таяпасем траврашĕнче ик çĕр теçеттин çĕр касса панă пулать. Ку çĕрпе Аслă Пинерсем XX ĕмĕрччен усă курнă...

Аслă Пинерте тата Алхаçин ятлă тепĕр турхан пурăннă, вăл хытă пулнă, ăна халăх юратман, çавăнпа та часах манса кайнă.

Ахпăлата хăй килĕн картишне, çырма хĕрринчи вăрмана пытарнă. Ун вил тăпри çине лартнă палăк XIX ĕмĕрте те пулнă, анчах каярахпа ăна çĕмĕрсе тăкнă. Халĕ унта шурă чул çеç выртать, ун çине нимĕн те çырман. Аслă Пинер çыннисем Ахпăлат вил тăпри çине пырса ăна асăннă, чӳк тунă.

Ахпăлат çинчен Вăрмар районĕнче питĕ нумай халап-юмах илтме пулать.

## 145. Ахплат паттăр

Ахплат пурăннă Турханта (Турхан — Пинер ялĕн пĕр касĕ (пайĕ). Пытарнă ăна Турхан çумĕнчи çырма хысакĕнче (эпир, ача чухне, Ахплат вил тăприйĕ çине палăк лартма та тытăннăччĕ).

Ахплат каятчĕ тет Энĕш улăхне. Пуçтарăнатчĕç тет унта таврари улăпсем хăйсен паттăрĕсемпе. Вĕсем пĕр-пĕрне саламласа алă тытнă чух вĕсен аллисенчи темиçе хут тир алсисем шартлатса çурăлса каятчĕç тет. Тытăнатчĕç тет улăпсем вăй виçме, кĕрешме. Вĕсем кĕрешнĕ чух çĕр чĕтретчĕ тет.

## 146. Атăл паттăр

Вырăссем чăвашсене Атăлта крещени тунă чух пĕр Атăл ятлă вăйлă чăваш крещени тутарас мар тесе вăйлăн çапăçнă. Чăвашсем çавăнпа та çак хăватлă юхан шыв ятне Атăл тенĕ тет.

## 147. Кăнар паттăр

Вырăссен Илья Муромец, Алеша Попович, Миклуха Селянинович тата ытти паттăрсем пурăннă вăхăтра пирĕн Чăваш çĕрĕнче те чăваш паттăрĕ Кăнар пулнă тет. Вăл вырăс паттăрĕсенчен кăштах пĕчĕкрех пулнă-и тен. Вăл пирĕн ял, Пушкăрт, çумĕнчи вăрманта пурăннă. Çав вырăна Кăнар тĕремĕ теççĕ, вăл паян кунччен упранать.

Халапра каланă тăрăх, вăл мужик чăнах та патвар кĕлеткеллĕ пулнă: чи çӳллĕ юмантан та тепĕр пуç чухлĕ çӳллĕрех пулнă, пуçĕ клуб патĕнчи лаптăка лартнă пысăк шыв катки пек, ытти пайĕсем те кĕлеткине тайăн. Вăтамран вунă метр таран яра-яра пуснă: çĕр утăм тăвать те — çухрăм тăршшĕ каять. Сасси — Ерихон кĕпçи: кăшкăрса чĕнет те ĕçленĕ вăхăтра хăш-пĕр чух хăйĕн Сивка-буркине — аслати сасси пек илтĕнет.

Кăмăлĕпе Кăнар йăвашскер пулнă, ачасене питĕ юратнă, хăйĕн вара унăн пĕр ача та пулман. Вăл ачасем валли час-часах тутлă çимĕç туяннă. Пĕррехинче вăл çулла Куçма* хулине тухса утать...

Çулла та, хĕлле те Кăнар çăпатапа çӳренĕ. Тумтирĕ унăн килте тĕртнĕ пир-авăртан пулнă.

## 148

Пĕррехинче тутарсен урти, çаратса çӳрекенскер, чăвашсем пурăнакан çĕрсене тапăнса кĕнĕ, вĕсен пурлăхне хапсăннă. Кăнар паттăр вара вĕсене хирĕç алă вĕççĕн çапăçма тухнă. Тутарсен пĕр улăпне уринчен ярса тытнă та ăна мăлатукпа çапнă пек енчен енне тӳнклеттернĕ: сылтă-

---

* Козьмодемьянск.

малла сулнă та — тутарсен кукша пуçĕсем купăста пуçĕ пек ывтăннă. Тутарсем вара ăçта куç курнă унта тарса пĕтнĕ.

Кĕске вăхăтрах Кăнар темĕн чухлĕ тутара çапса пăрахнă, вĕсен виллисене вара çапăçу хирĕнчен кун каçипе тасатма тивнĕ. Çавăн хыççăн тутарсем чăвашсен çĕрĕсене пачах тапăнма пăрахнă.

## 149. Кăнар

[Кăнар тетчĕç. Улăп пулнă пулĕ вăл. Юнасала кайнă чух. Кунтан сакăр çухрăм. Кушкăран каçсан тĕме пур. Кăнар силлесе хăварнă тăпра теççĕ ăна. Çармăсла «Кăнар» — паттăр çын. Вăл вăрманта çынна курнă та кĕсьене чиксе киле илсе пынă.

Амăшĕ:

— Мĕн ку? — тесе ыйтнă.

Лешĕ ответленĕ:

— Ку — çын, пирĕн юн пĕтет, çакă юлать, куна ан тив.]

## 150. [Кăнар]

Вăл чăвашсем çине тапăнакан тăшмансене пурне те çĕнтернĕ. Вара пĕтĕм чăваш тăшманĕсене пĕтерсессĕн çĕре кĕнĕ. Вилес умĕн çынсене хăйĕн ятне ĕмĕрлĕхех упрама хушса хăварнă.

## 151. Лапшу Çтаппанĕ ятлă пысăк çын

Ĕлĕк-авал пĕр Лапшу Çтаппанĕ ятлă пысăк та вăйлă çын пурăннă тет. Вăл пĕрре ярса пусса тăвата-пилĕк çухрăм кайнă тет. Унăн пуçĕ таçта кăвак пĕлĕтсем хушшинчех пулнă. Лапшу Çтаппанĕн арăмĕ те пулнă тет. Вăл пĕр пӳртре пурăннă. Лапшу Çтаппанĕ пӳрте кĕме пултарайман тет. Арăмĕ вара ăна апат тула тухса çитернĕ тет.

## 152. Лапшу Çтаппанĕ

Улăпа урăхла пирĕн патра Лапшу Çтаппанĕ теççĕ. Вăл пӳрт урлă каçса çӳреме пултарнă. Пирĕн таврашра утса пынă чух çăпата ăшĕнчен тăпра тухса ӳкнĕ. Çав вырăна Лапшу Çтаппан тăпри теççĕ.

## 153. Çтаппан улăп

Ку вăл тахçанах пулнă тет. Пĕр пысăках мар ялта Çтаппан улăп пурăннă тет, вăл питĕ пысăк, паттăр та харсăр, пултаруллă çын пулнă, нимĕнле тискер кайăкран та хăраман, пĕтĕм çынсене пăхăнтарса тăнă. Çынсем унпа хирĕçме те хăранă: вăл çынсене пĕр аллипех йăтма пултарнă.

Пĕрре вăл тепĕр яла кайма тухсан унăн çăпатине тăпра кĕрсе тулнă. Вара вăл уй варрине ларса тăприне шакканă: çав вырăнта ту пулса тăнă. Ăна асамлă ту тесе шутлаççĕ: çынна мĕнле йывăрлăх килсе тухать, вăл çав тăва кайса кĕлтăвать, пулăшу, çăлăнăç ыйтать.

# УЛĂПСЕМ ЕПЛЕ ПĚТНĚ

## 154. Шултăра этемсемпе вěтě этемсем

Турă малтан чухлаймасăр этеме питě шултăра тунă. Этем вăрман ҫинчен утса ҫӳренě. Юмансем армути пек анчах пěҫě хушшинчен туха-туха юлнă. Ҫăпати ăшне тăпра кěрсе тулсан ăна силле-силле хăварнă. Ҫав тăпрасем халь те пур, ăна улăп тăпри теҫҫě.

Улăп турă кăмăлне килмен. Ҫавăнпа вăл пирěн пек вěтě ҫын тунă. Вěтě ҫын пулсанах суха сухалама пуҫланă.

## 155. Улăпсем шыв айне пулса пěтеҫҫě

Авал улăпсем ҫеҫ пурăннă тет. Кайран, ҫěр пичě шыв айне пулсан, улăпсем пěтнě, улăп тăприсем ҫеҫ юлнă. Вěсем хыҫҫăн пирěн пек ҫынсем пулса кайнă. Пирěн хыҫҫăн пӳрнеске пек ҫынсем пулмалла. Вěсене: «Автан пусма ниме тăвěҫ», — теҫҫě.

## 156. Турă Улăпа чирпе асаплантарса вěлерет

Шуйттан турра питě хытă ҫиллентернě. Турă ăна тытма тăнă — тытайман, шуйттан пытана-пытана юлнă тет. Турă вара шăртне шăнараймасăр шуйттанпа шуйттан майлисене пěтерес тесе хěрěх те пěр талăк та хěрěх пěр сехет ҫумăр ҫутарса тěнчене шыв илтернě тет.

Курать Улăп — капла тěнче пěтет, нумай шутласа тăмасть — кěпер тăвать. Кěпер ҫине мěнпур чěр чунсене мăшăрăн-мăшăрăн хăпартса тăратнă тет. Кěперне шыв иле пуҫланă. Улăп вара: «Капла май ҫук-ха, пěлěт ҫине хăпартам», — тенě те чи малтан шуйттанпа эсреле, кашкăрпа арăслана, пур усал-куштансене пěлěт ҫине хăпартса янă тет.

Турă чи малтан таса пěлěт ҫине шуйттанпа шуйттан майлисене хăпартнăшăн Улăпа питě ҫилленнě тет, чирпе асаплантарса вěлернě. Ҫавăнтан вара Улăп пек пысăк ҫынсем ҫěр ҫине юлман, пěтěмпех пирěн пек вěтě этемсем юлнă тет.

## 157. Турă улăпа пěчěклетет

Ěлěк-авал пирěн таврара питě ҫӳллě ҫын пурăннă тет. Вăл пуҫěпе пěлěте перěннě тет. Ҫавăншăн вăл питě тарăхнă тет. Турă ăна шелленě тет, вара кăшт пěчěкрех тăвар-ха тесе каланă тет. Улăп вара пěчěкленнě тет, йывăҫ тăршшě кăна юлнă тет. Вăл уринчи тăпрасене силленě чухне ҫӳллě вырăнсем юлнă тет. Вара ҫав вырăнсене улăп тăвěсем теме пуҫланă тет. Ҫав вырăнсенче халě вылькăх-чěрлěх ҫӳрет.

## 158. Улăп йăхě ҫěр ылханнипе пěтет

Пырать тет ҫулпа пěр улăп. Лăп-лап пусса пырать тет. Хайхин йывăрăшне чăтаймасăр ҫěр путса пырать тет. Хаш! сывлать тет кулянса ҫěр. «Ҫук, — тесе шухăшларě тет вăл, — пулмасть хам ҫинче кун пек йывăр-

лăха чăтса. Пĕрин йывăрăшĕ мĕне тăрать те, анчах кашни кĕтессинчен харăс утса тухсан сывлама та сывлăш çитес çук. Ытамри çут çанталăк илемне кӳрекен ӳсен-тăрансемпе, вĕçен кайăксемпе чĕр чунсене хур кӳрсе мĕн чухлĕ макăртман-ши тата?» Çапла каланă тет вăл вара улăпа:

— Итле-ха, улăп, çитмест-и сирĕн йăха ĕмĕр ĕмĕрлесе, çĕр çинче пурнăç тăсса? Пурăнать сирĕн йăх çĕр çинче, усси пĕр хăвăршăн çеç, ытлашши мăн кăмăллă халăх эсир. Манăн сире усрама вăй-хал çитмест. Утатăр çĕр çинче, хăвăртан пуçне урăх нимĕн те асăрхамастăр. Унталла пăхатăп та — йывăç куççульпех макăрать: «Улăп çăпатинчи тăприне ман çине сиплесе пусарса хурайрĕ, тураттăмсене хуçса пĕтерчĕ», — терĕ тет. — Тата тепĕр енне пăхатăп та — вĕçен кайăк тăвăнса йынăшать, аманнă çуначĕпе çĕр çине çапăнать. Вăл та: «Улăп таптаса кайрĕ, кăшкăрнине те илтмерĕ», — тет.

Шухăша кайрĕ тет улăп. Килне çитсен йăхăн тĕп аслашшĕне çĕр шухăшне пĕлтерчĕ тет.

— Çĕр ылханĕ пирĕн пуç çине килсе çитетех, мăнукăм, — тесе хуравларĕ тет йăх аслашшĕ. — Тĕрĕс, пирĕн ĕмĕр вĕçленме вăхăт, пирĕн вырăна çĕр çине вак халăх, çĕр юратнă ĕçчен халăх, килсе çитсе хăйсен ĕмĕрне пуçлĕ, — терĕ тет.

Вĕçлерĕ çеç тет вăл хăйĕн сăмахне — сасартăк пĕлĕт хуралса-хуралса пычĕ тет те аçа çапса тĕнче кисренчĕ тет. Çĕр çийĕн шырлансем çурăлса, чашлаттарса çăвакан çумăр шывĕпе тулса ларчĕç тет.

Тĕнче лăплансан пăхрĕ тет те çĕр хăй çийĕн, тĕлĕнтермĕш чĕр чунсене асăрхарĕ тет. Пĕр вырăнта лара-тăра пĕлмеççĕ тет хăйсем. Хăшĕсем тăпра айне юлнă йывăçа пулăшу кӳреççĕ тет, теприсем тата суранланнă вĕçен кайăка сиплеççĕ тет. Таврара та хаваслă кĕвĕ илтĕнет тет. Тинкерсе пăхнă май йăлтăр! çуталчĕ тет çĕр пичĕ: «Хе, кусем эпĕ кĕтнĕ хăнасемçке, çĕр халăхĕ, ĕçчен халăх килсе çитрĕ-мĕн», — терĕ тет çĕр. Сывлама та çăмăлланчĕ тет ăна. Улăпсен йăхĕнчен вара пĕр çăпата хывса силленĕ тăпрасемсĕр пуçне нимĕн те юлман тет. Çапла пĕтнĕ тет çĕр çинче улăп йăхĕ. Вĕсем вырăнне вара пирĕн халăх ĕмĕр пуçланă тет.

## 159. Улăпсем халĕ мĕншĕн çук?

Пĕр улăп пурăннă. Унăн çурчĕ те пысăк пулнă. Çак çуртра ĕçлеме улăп çĕр ытла çын тара тытнă. Тарçисем вара пĕчĕккĕ пулнă, хальхи çынсем пысăкăш. Улăп вĕсене питĕ хĕсĕрленĕ. Тарçисем чăтайманнипе улăпа вĕлерме кавар тунă. Кун çинчен улăп ăнсăртран илтет те пĕтĕм тарçине вĕлерсе пĕтерет.

Çакăн хыççăн вăл хăйĕн çурчĕ тăррине хăпарса ларать те курать: пĕлĕтсем унăн пуçĕ тăрринченех шуса иртсе каяççĕ. «Пĕр пĕлĕчĕ çине ларса пăхам-ха, — тесе шухăшлать улăп, — ăçта илсе каять вăл мана?» — тет. Ларать вара пĕлĕт çине.

Кайсан-кайсан кăвак пĕлĕт çухалать. Улăп пăхать те хăй умĕнче куçкĕски пек тем çуталса тăнине курать. Çавăнтах тыткăч та пур. Тытать те тыткăчран — алăк уçăлса каять. Шалта çап-çутă. Пур çĕрте те ялтăраса çеç тăраççĕ. «Э, ку çиçĕм çурчĕ пуль-ха», — тавçăрса илет улăп. Шалта тепĕр алăк пур. Ку алăкне уçать те тĕлĕнсех каять: пӳлĕмĕ йĕп-йĕпе, шыв шапăртатса çеç тăрать, çумăр ачисем шывпа выляççĕ.

— Аçăр-аннĕрсем ăçта? — тесе ыйтать улăп кусенчен.

— Вĕсем халь ялсем тăрăх кайрĕç, — тесе хуравлаççĕ лешсем.

Ку пӳлĕм вĕçĕнче тепĕр алăк пур та, çавăнпа улăп малалла кайма шутлать. Унта пĕтĕм япали тимĕртен. Пăртак перĕнсенех кĕмсĕр те кемсĕр тăваççĕ. Тимĕр ачасем кĕмсĕрт-кĕмсĕрт! тутарса çӳреççĕ, улăп çине çаврăнса та пăхмаççĕ. «Ак камсем вĕсем аслатисем», — тесе шухăшлать улăп.

Вара тепĕр алăк курать те унта кĕрет. Кĕрсессĕнех сивĕ пирки чĕтреме тытăнать. Сĕтел хушшинче Хĕл Мучи чей ĕçсе ларать:

— Атя иртех. Пĕррелĕхе чăт. Манпа пĕрле ăшăнмалла чей ĕç-ха. Кунта эп ĕнер килтĕм-ха. Хĕле хатĕрленме тытăнас теп, — тесе ăнлантарать вăл улăпа.

Вара улăпăн Хĕл Мучи патĕнче хăналанмаллах пулчĕ. Унтан вăл сывпуллашса ун патĕнчен тухрĕ. Пăхрĕ те тепĕр пĕлĕте курах кайрĕ. Вара ун çине ларчĕ. Сасартăк улăпăн ури шуса кайрĕ те вăл аялалла вирхĕнчĕ. Унăн телейĕ те пулнă çав: шăпах хăйĕн çурчĕ тăррине ӳкет. Анчах ӳкнĕ пирки хăй те, çурчĕсем те пĕчĕкленеççĕ. Çавăнтанпа халь улăпсем урăх çук тет.

## 160. Улăпсем тайгана каяççĕ

Кайран вара, кунта ытти çынсем пурăнма пуçласан, улăпсем вăрманлă çĕре, йăлăмалла, Çĕпĕрелле тайга вăрманне кайнă. Халĕ те вĕсем тайгара çавăн пек куçса çӳреççĕ.

## 161. Улăп юн кун вилет

Анчах та акă вăрçă тухнă, тутарсемпе юн тăкса çапăçмалла пулнă. Улăп çавăн чухне тутарсене хирĕç тăрать. Çапăçма вăл хăрах аллине айпăлта тытнă, теприне хĕç илет. Хаяррăн çапăçнă, тăшмана тем чухлех пĕтернĕ, вĕсене вăл сылтăма та, сулахая та ӳкере-ӳкере пынă. Анчах Улăп ырса çитнĕ те, ăна юлан утçă çапса ӳкернĕ.

## 162. Улăпа йĕрĕхсем çывратса янă

Пĕр паттăр Улăп тăван халăха ирĕке кăларма шухăш тытнă, халăх тăшманĕсене çĕнтерме ĕмĕтленнĕ, анчах усал-тĕсел йĕрĕхсем ырă çынна мар, ăна пусмăрлакан усал çыннах пулăшнă. Йĕрĕхсем çав Улăпа ĕмĕр вăранайми çывăрмалла тухатса хунă. Амăшĕ хӳхлесе макăрни те, ывăлĕсем кăшкăрса ĕсĕклени те вăратайман Улăпа. Пĕр çемье хуйхи мар, пĕтĕм хура халăх хуйхи çеç ăна вăратма пултарнă. Халăх куççулĕ юхан çырма пек юхсан, тăварлă юхăмсем пĕрлешсе хăватлă кĕрлекен пысăк юхан шыв пулса тăрсан, çав юхан шыв Сарă ту аркинчи тĕпсĕрлĕхе çĕр çĕмĕрттерсе тапса ансан тин вăранать-мĕн Улăп. Вăранать те тăшмансене çĕнтерсе хура халăха ирĕке кăларать.

## 163. Улăп хăй кайнă чух каласа хăварнă сăмах

Улăп кайнă чух каласа хăварнă тет: «Эпĕ килнине çавăнтан пĕлетĕр, пĕлĕт çине икĕ ĕне тухать: хĕрли — эпĕ, хури — çич ют, Супар. Эпĕ кунта чăвашран патшара ларсан, вăл тĕнчипе ăс парсан, чăвашран тĕнче алăкне уçсан, тырă икĕ пучахлă пулсан, Атăл шывĕ тăвалла юхсан килĕп.

## 164. Ухтар улăппа Чĕкеç

Çак Чурачăк ялĕ вырăнĕнче улăпсем пурăннă теççĕ. Хăй вăл Ухтар ятлă, арăмĕ Чĕкеç ятлă пулнă. Пурăнасса вĕсем ытти улăпсенчен лайăх та, начар та пурăнман, пĕр майлă пурăннă. Анчах вĕсен ача тавраш пулман. Çавăн пирки арăмĕпе упăшки питĕ куляннă.

Пĕррехинче Ухтар Элпуç вырăнĕнче пурăнакан тăванĕсене курма каять. Калаçса ларсан-ларсан килне килме тухать. Элпуçпе Чурачăк хушшинчи вар тĕлне çитсен çак Ухтар пĕчĕк ача йĕнĕ сасса илтнĕ пек пулать. Вăл пĕр-пĕр кушак сасси пулĕ тесе пырса та пăхмасть, иртсе каять. Анчах киле çитсен вăл çакăн çинчен арăмне каласа парать. Чĕкеç упăшкине ача сасси илтнĕ çĕре илсе кайма сĕнет. Каяççĕ. Çитсе пынă май вĕсем çак сасса каллех илтеççĕ. Чĕкеç сасă патне пырать. Унта çиттипе чĕркесе пăрахнă арçын ачапа хĕр ача пулнă. Ухтарпа Чĕкеç çав ачасене илсе каяççĕ те усраççĕ. Ку ачасем хальхи çынсен ачисем пулнă. Çавсенчен çынсем пуçланса каяççĕ пирĕн тавралăхра. Çав вара çавăнпа ачаллă вар (Ачалвар) тесе каланă.

## 165. Улăппа унăн амăшĕ çухалаççĕ

Ана тăрăх пынă чух урине тăпра тулса çитсе утма кансĕрлет. Çăпатине салтса хывса шаккать те Улăп малалла уттарать. Вăл утнă çĕрте ун хыççăн метршар, темиçе метршар çӳллĕш, вунă-вун пилĕк метр сарлакăш тăпра куписем купаланса выртса юлаççĕ. Çавсене халĕ улăп тăпри теççĕ.

Çакăн хыççăн Улăппа ун амăшĕ çухалаççĕ, вĕсен ячĕсем кăна халапсенче тăрса юлаççĕ. Ун хыççăн халăх (хальхи этемрен чыла-а-ай пĕчĕк) пуçланать. Вĕсене вечженисем тенĕ. Вĕсем куçса çӳренĕ.

## 166. Улăп Киева çаврăнса кайнă

Мемĕрен тухсан кăнтăр енче, Павар çырми çаранĕнче, пӳртрен тем тери пысăк улăп тăпри пур. Мемĕре калатчĕç: улăпăн çăпати те хăй тăприпе пĕрле хăпса юлнă тетчĕç. Хир урлă каçма, Кӳкеçрен килме ăна питĕ тăмлă пулнă. Вăл вара малалла çарран каять: Улăп вăл — Илья Муромец, вырăс. Вăл Хусантан кунта килсе Киева çаврăнса кайнă.

## 167. Улăп кăнтăралла кайнă

Пирĕн ялăн хĕвел тухăç енче пĕр тăватă метр çӳллĕш çăпата йĕрĕ пекрех тăпра купаланса тăрать. Ун тавраш не те, ун çине те нимĕн те акмаççĕ, ун йĕри-тавра çулсерен тырă акаççĕ. Ваттисем каласа панă тăрăх, çак тĕмеске вăл Улăп çăпатинчи тăприне силлесе хăварнă хыççăн юлнă. Вăл пирĕн ял çине çурçĕр-хĕвел тухăç енчен пырса кăнтăралла кайнă. Пирĕн ялтан вун икĕ çухрăмра та ун пек улăп тăпри пур.

## 168. Улăп Етĕрнерен Çĕрпĕве кайнă

Тахçан ĕлĕк çĕр çинче Улăп пурăннă тет. Вăл çав тери пысăк пулнă. Улăп пĕрре ярса пусса темиçе çухрăм кайма пултарнă.

Хăй пысăкне кура Улăпăн çăпати те çав тери пысăк пулнă. Улăпăн çăпатине тăпра тулсан вăл ăна хывса силленĕ. Улăп тăприсем вара çав çăпатаран силленĕ тăпраран пулса кайнă. Кун пек улăп тăприсем Улăпăн çулĕ çинче тĕл пулаççĕ.

Улăп Етĕрнерен Çĕрпĕве кайнă тет. Унăн тăприсем вара Етĕрне çулĕ çинче, Красноармейски районне кĕрекен Кăмакал ятлă ял çывăхĕнче, Çĕрпӳ патĕнче пур теççĕ.

## 169. Улăп иртсе кайнă

Ĕлĕк-авал, икĕ миллион çурă çул каялла, хĕвел тухăç енчен, Янтуш патĕнчен, Камайкасси еннелле питĕ пысăк улăп иртсе кайнă. Вăл хăрах урине Пысăк Чăрăшран çĕр утăмра, тепĕр урине Камайкассинче салтса силленĕ, çав вырăнсенче вара тĕмескесем пулса юлнă.

## 170. Улăп пӳрнинчен этем пулса каять

Тахçан авал çĕр çинче этемсем пулман, вĕсем вырăнне пысăк та вăйлă улăпсем пурăннă. Пĕррехинче пĕр улăпĕ вăйне ниçта хураймасăр таврара ӳсекен пĕтĕм ӳсен-тăрансене, йывăç-курăка тăпăлтарса пăрахнă. Кăна улăпăн амăшĕ пĕлсен ывăлне: «Çак ĕçе тума сана усал вăй хушнă, — тенĕ. — Санпа усал хуçаланать», — тенĕ. Вара амăшĕ ывăлне аллисене татма хушнă. Улăп пӳрнисене татнă та çĕр айне пытарнă.

Вăхăт иртнĕ, пӳрнесенчен те пĕчĕк чĕр чунсем шăтса тухнă. Вĕсене улăпсем тивмен, каярахпа вĕсене этем тесе чĕнме тытăннă.

## 171. Улăпсем этемсем пек пĕчĕкленсе юлаççĕ

— Улăп тăприсем пур-и пирĕн таврара?

— Пур. Пĕри ав Патăрьел çулĕн хĕрринче.

Пăлакассинче Эрĕм касси текен урам пур. Çавăнта, «Тарикорнăсем» (Дария Егоровна Хитрова) тĕлĕнче, çĕр мăкăрăлса тăратчĕ. Мăкăрăлчăк халĕ те кăштах пур. Вăл вырăна бульдозерпа та тикĕслесе пăхнă. Ун чухне этем пуç купташкисем сиксе тухнă тет. Вĕсемпе ача-пăча мечĕк вырăнне футболла выляма та «ӳркенмен».

— Улăпсем питĕ пысăк пулнă-ха ĕнтĕ. Анчах вĕсен çӳллĕшĕ пирки тĕрлĕрен калаççĕ. Пĕрисем çав улăпсем пĕлĕтех кармашнă теççĕ. Теприсем каланă тăрăх, çынсенчен кăшт çеç пысăкрах пулнă-мĕн. Чăннипе вара?

— Акăш-макăш улăпсем майĕпен вĕтелсе, пĕчĕкленсе пынă тет. Юлашкинчен çынсемпе танлашнă та вĕсемпе пĕрлешсе-хутшăнса кайнă. «Эпир улăп йăхĕнчен» тени çакна пĕлтерет.

# УЛĂП ТĂПРИСЕМПЕ САРЧĔСЕМ, УЛĂП КУÇÇУЛĔНЧЕН ПУЛНĂ КӲЛĔСЕМ, УЛĂП ЛАРНĂ ВЫРĂНСЕМ

## 172. Кĕтеснер таврашĕнчи тĕмеске

Кĕтеснер таврашĕнчи чăвашсем çапла калаççĕ: Турă тĕнчене пултарнă чухне çак вырăнпа иртсе пынă, хăйĕн ури çумне çыпçăннă пылчăка силлесе хăварнă. Çав пылчăкран тĕмескесем пулса юлнă.

## 173. Мăнтăр патĕнчи улăп тĕмески

Ку ĕçĕ çав тери ĕлĕк пулнă. Пурăннă тет амăшĕпе ывăлĕ. Вĕсем иккĕшĕ те çав тери пысăк пулнă. Унăн ывăлне кĕрешнĕ чух та никам та çĕнеймен.

Пĕррехинче унăн ывăлĕ таçта тухса кайнă. Амăшĕ ăна темиçе кун хушши кĕтнĕ, анчах лешĕ час таврăнман. Амăшĕ шырама кайма шутлать. Шырама тухса каяс тенĕ кун ывăлĕ çитсе кĕрет, амăшне хире тухса пăхма сĕнет, хăй апат çиме ларать. Амăшĕ тухса пăхать те тĕлĕнсех каять: темĕнле çӳллĕ вырăн курать. Ывăлĕ ăна хăйĕн çăпатине салтса шакканипе çавăн пек тĕме пулни çинчен калать. Вара çакăнтан улăп тĕмески ят тухса каять. Ку тĕмеске пирĕн ялпа кӳршĕ ял хушшинче вырнаçнă. Вĕсен хушши пĕр тăвата çухрăма яхăн.

## 174. Тĕмеске — Улăп силлесе хăварнă пылчăк

Пĕр Улăп пурăннă, вăл питĕ пысăк пулнă, кашни утăмĕ унăн çичĕ çухрăм тăршшĕ пулнă. Çавăнпа вăл яланах пылчăк е шурлăх вырăнĕсене пусса пынă. Вара вăл ларса урисем çумне çыпăçнă пылчăкне силле-силле хăварнă. Çав пылчăкран тĕмескесем пулса юлнă. (Тутарсем ăна алыб тупрагы теççĕ.)

## 175. Çатра çĕрĕ çинчи тĕмеске

Тахçан авалах пĕр Улăп ятлă пит пысăк çын пурăннă тет. Вăл хальхи çынсем пекех тырă-пулă акса тунă.

Пĕррехинче çапла Çатра çĕрĕ çинче Улăп суха тунă пулнă. Суха тусан-тусан канма ларнă та çăпатине салтса çăпатине тулнă тăпрана шакканă. Çав вырăнта вара çак тĕмеске пулса юлнă тет.

## 176. Сăвăрлă тӳпе

Сăвăрлă тӳпе тăррине, лапчăк пулин те, ваттисем улăп тăпринчен пулнă теççĕ. Вĕсем каланă тăршшĕнчен, ĕлĕк-авал çав тӳпе пулман. Унăн вырăнне тӳп-тӳремлĕ çĕр пулнă тет. Çав улăп акăш-макăш пысăк кевтеллĕ пулнă тет, вăй-хал енчен çил-тăвăлпа та, вутпа та, шывпа та тавлашма пултарнă. Мăн кевтипе мăнаçлăн утса-утса пынă чух çĕр кисреннĕ, урисем çĕре пута-пута пынăран тарăн варсем, лупашкасем, çăллă варсем, çырмасемпе çут кӳлĕсем пула-пула юлнă...

Таçта инçетре, çичĕ ютри вăрçă хирĕнче, хаяр тăшмансемпе кĕрешнĕ вăл. Хăйĕн асамлă «ăр-чукмарĕпе» çав хаяр тăшмансене хирсе тăкнă хыççăн ылтăн хĕвел тухăçнелле хирĕç, хăйĕн тăван килнелле тунсăхласа, васкаса утнă. Çав инçетри çичĕ ютран темрен те вăрăм çулпа çуранçи утса килнĕскер самаях ырнă та пулĕ, çав Сăвăрлă тӳпе вырăнĕнчи тӳремлĕ çĕре канма ларнă. Тăхăр пушăтран тунă пысăк çăпати ăшне нӳрлĕ хура тăпра тулнăран салтса шакканă та, çак çӳллĕ сăрт çинче ларакан Сăвăрлă тӳпе пулса ларнă.

Унтан вара тем чул кун-çул, тем чухлĕ вăхăт, тен, ĕмĕрсем те иртнĕ пулĕ. Çак çӳл тӳпе аркине Пихампар пĕр пар сăвăр кӳрсе янă та, çав сăвăрсем кунта пĕтес çук нумайййăн ĕрченĕ пулнă. Çавăнпа халĕ те пулин Сăвăрлă тӳпе тесе çӳретеççĕ ăна тетчĕç ун çинчен ваттисем.

## 177. Сăвăр тĕмисем

Пирĕн ялтан инçех мар пĕр çӳллех мар сăрт пур. Çав сăрт тăррине улăхса тăрсан пĕтĕм йĕри-таврари çĕршыв курнать. Ваттисем каланă тăрăх, ку сăрт пирĕн ял урлă Улăп каçса кайнă чухне Улăп ури (çăпати) тĕпĕнчен хăпăнса юлнă. Вăл канма ларнă тет те урине утма йывăр пулнипе çак çăпати çумĕнчи тăпрана хăпартса* хăварнă тет.

Анчах вăл ку тĕле хăрах ури çумĕнчи тăприне кăна хăпартса пăрахнă тет. Икĕ ури çумĕнчине те хăпартса пăрахнă пулсан пирĕн ял патĕнче пысăк ту пулса лармалла пулнă тет.

Çак сăрт Сăвăр тĕми ятлă. Сăвăр тĕми çинче тырă аван пулать. Улăп ку тăпрана пирĕн яла шеллесе пăрахса хăварнă тет, кунта тырă начар пулнипе. Тепĕр ури çинчине çавăнпа хăпартман тет, вăл ури тĕпĕнче начар, йӳçлĕхлĕ тăпра пулнă тет. Ăна вăл урăх, тырă лайăх пулакан çĕре, кайса хăпартса пăрахнă тет. Улăп питĕ пысăк тет, унăн кĕсйине этеме чиксен пуç пӳрни пек кăна курнать тет. Вăл пĕрре ярса пуссан темиçе çухрăм пусать тет. Халĕ вăл таçта ют патшалăхра пытанса пурнать тет. Пирĕн совет çĕршывне вĕлересрен килме хăрать тет, мĕншĕн тесен пирĕн Хĕрлĕ Çарăн хĕç-пăшалĕ питĕ вăйлă тет.

## 178

Ялтан инçе мар, Элшелне каймалли çул хĕрринче, икĕ пысăк тĕмеске пур. Вĕсене хăш-пĕрисем Сăвăр тĕмисем теççĕ. Теприсем тата: «Пирĕн ял çумĕпе Улăп иртнĕ, çав сăрт çине ларса каннă, урине салтса çăпати ăшĕнчи тăпрана силлесе тăкнă», — тесе халап яраççĕ. Пĕр çăпатинче тăпра ытларах пулнă имĕш, çавăнпа пĕр тĕмески пысăкрах.

Урăхла калакансем те пур. Ĕлĕк-авал çак вырăнта питĕ хăрушă вăрçă пулнă, вилнисене çав икĕ шăтăка пытарса хăварнă тет. Теприсем тата çав вырăна темле ăру пуçлăхне пытарса хăварни çинчен калаççĕ.

## 179. Улăп икĕ тĕмене пусса тăнă

Малтанхи этемсем калама çук шултăра та вăйлă пулнă. Вĕсене улăпсем тенĕ. Улăп пĕр урипе пĕр уй тӳпинче, тепĕр урипе тепĕр уйра, çырман тепĕр енче, тăнă. Сăмахран, пĕр урипе Ункă çырмин хĕррине, хальхи Патĕрьел патĕнчи тĕмене, тепĕр урипе Мăн Çавал çырмин тепĕр енне, Именкасси çумĕнчи тĕмене, пуснă. Улăпăн çăпатисем те ким пек пысăк пулнă. Хутра-ситре вăл урине салтса çăпати ăшĕнчи тăпрана силленĕ. Çав çăпата тăприсенчен тĕмескесем пулнă. Ун пек тĕмескесем халĕ те уй-хирсенче тĕл пулаççĕ, вĕсене улăп тĕми, урăхла улăп тăпри теççĕ. Пирĕншĕн вĕсем пĕчĕк тĕмеске мар, пысăк тĕмех пулса тăраççĕ. Улăпа вăрман та улăхри курăк пек анчах туйăннă.

---

* Хăйпăтса.

## 180. Çатра Марка çĕрĕ çинчи улăп тăприсем

Пирĕн Çатра Марка çĕрĕ çинче, ялтан инçе мар çĕрте, улăп тăпри тăвата купа пур. Кун çинчен ялта тĕслĕрен сăмах çӳрет.

Хăшĕсем ĕлĕк тахçан Улăп шутсăр пысăк çын пулнă теççĕ. Вăл Улăп çӳренĕ чухне çăпати çине тулнă тăприне кăларса тăкнă та, купа пулнă теççĕ. Улăп хăй ĕлĕк шыв тулнă чухне шыва путнă теççĕ.

Теприсем вăл улăп тăпри тенĕ вырăнта ĕлĕк вăрçă килсен окоп тума чавнă теççĕ. Хăшĕсем вăл вырăнта тĕслĕрен пăшал таврашсем пур теççĕ тата ĕлĕк вăрçă чух этемсене вилсен пытарнă теççĕ.

## 181. Терпикасси уйĕнчи улăп тăпри

Терпикасси уйĕнче улăп тăпри текен пĕр пысăк тĕме пурччĕ. Ялти хресченсем çав тĕмене Улăп ятлă пысăк çын суха тунă чух çăпатинчи тăприне шаккаса пăрахнă тесе пуплесе пурнатчĕç. Нумай пулмасть вĕреннĕскерсем тăваттăн килсе çав тĕмене ĕçлекенсем тытса пилĕк кун хушши чавтарчĕç.

Чавнă хыççăн çак япаласене тупрĕç: икĕ этем шăмми (шăммисем йăлтах çĕрсе кайнă, алпа тытмалла та мар ванаççĕ) тата чӳлмексем (чӳлмеккисем те ванса, катăлса пĕтнĕ). Чавасса тарăнăш пĕр чалăшран ытла чаврĕç. Çапла вара çак вырăнти тĕме ĕлĕкхи темиçе пин çулхи этемсене пытарнă тĕме терĕç.

## 182. Пăва çумĕнчи виçĕ тĕмеске

Çĕнĕ Пăвара (Курнавăш вулăсĕ) виçĕ тĕмеске пурччĕ. Ленинградран профессорсем килсе пĕр тĕмескине чавса пăхрĕç. Унтан виçĕ пин çул ĕлĕк пурăннă çын шăммисем тухрĕç. Хресченсем çав тĕмескене улăп çăпатине силлесе хăварнă тăпра тетчĕç. Халь вăл масар иккенне пурте пĕлчĕç.

## 183. Ăнă енчи улăп тăприсем

Кăвакал кӳлли патĕнче улăп тăпри пур. Улăп çăпатинчен тăкăннă тăпра. Улăп вăрман урлă каçнă чух ларнă. Улăп вăрмана хыт хура тенĕ, йĕм тĕпне чăрмаларĕ тенĕ.

Улăп тăпри Ямпахтă патĕнче те, Çĕньял патĕнче те пур. Вăрман çине ларнă чухне Улăпăн ури пĕри пĕр тăпри çине, тепри тепĕр тăпри çине пуснă.

Улăп хăй иртсе кайнă чухне пĕчĕк çынсене курнă. Сухалакан çынна суха пуçĕпе пĕрле кĕсйине чикет. Çавсене ашшĕне кăтартать Улăп. Ашшĕ калать:

— Эпир пĕтетпĕр, вĕсем малашне пурăнĕç, — тет. — Каялла кайса яр, — тет.

Вара ачи каялла кайса ярать.

Улăп Çармăсра та ларнă. Унта та икĕ тĕм юлнă. Улăп чăнах та пулнă пулмалла. Пулман тесен каламĕччĕç.

## 184. Шалчакассипе Чурачăк патĕнчи улăп тăприсем

Пирĕн патри улăп тăпри пысăках мар, унăн çӳллĕшĕ тăватă метр çурăна яхăн, çырмана ансан янках курăнать. Вăл тăпрана тăкса хăваракан улăп ытла пысăках пулман пулмалла. Çавăнпа та сарлакăшĕ те ултă-çичĕ метра яхăн кăна.

Чурачăк патĕнчи улăп тăпри самаях пысăк вара: унти улăп самаях пысăк пулнă ĕнтĕ. Вăл тăпра сарлака сарăлса выртать. Çӳллĕшĕ те унăн çӳллĕ. Унта Çавал юхса выртать, улăп шыв ĕçме чарăннă пулмалла. Çӳренĕ чух шыв та ĕçес килнĕ пуль: вĕсем хăвăрт çӳренĕ вĕт.

## 185. Турхан ятлă улăп тăпри

Ĕлĕк-авал кунта Турхан ятлă улăп пек пысăк çын пурăннă. Утнă чухне ун çăпатине тăпра кĕрсен тăпрана кассăн-кассăн силлесе тăкса хăварнă. Çак касăсем ун ячĕпе çыхăннă та иккен. Çавăнпа ял Турханкасси ятлă.

## 186. Уплер патĕнчи улăп тăпри

Уплер патĕнче улăп тăпри пур. Ĕлĕк сĕре пысăк çынсем пулнă. Улăп суха тунă чухне канма ларнă та çăпатине хывса силленĕ. Вара мăн купа пулса тăнă. Вăт çавна ăна улăп тăпри теççĕ.

## 187. Икĕ тăван ятлă ту

Атăл хĕрринче Икĕ тăван ятлă ту выртать. Çак ту историйĕ çинчен халăх хушшинче тĕрлĕ халап çӳрет.

Пĕрремĕшĕ: çав вырăнтан ĕлĕк-авал пĕр улăп иртсе пынă. Унăн икĕ çăпатине те тăпра кĕрсе тулнă тет. Улăп вара икĕ çăпатине те салтса тăприне силленĕ. Çавăнтан вара икĕ пĕр евĕрлĕ ту пулса кайнă тет.

Иккĕмĕшĕ: çак тусем вырăнĕнче тахçан икĕ тăван пулă тытса ларнă. Сасартăк вăйлă çил тухнă та çак икĕ тăван çине пысăк çĕр куписем йăтăнса аннă. Çавăнтан пулать ĕнтĕ çак икĕ ту пĕрпеклĕхĕ теççĕ ваттисем.

## 188. Тăрачул

Меселпуç çывăхĕнче улăп тăприсем пур. Месел шывне икĕ пĕчĕк юхан шыв юхса кĕрет. Çав вырăнта тахçан авал пĕр улăп пурăннă теççĕ. Хăй тем пекех пысăк та вăйлă пулин те вăл çынсем умне тухса çӳреме юратман. Уçланкăра ака-суха тунă, тыр-пул акнă, пахча çимĕç çитĕнтернĕ, сунара çӳренĕ, кайăк-кĕшĕк тытнă. Вăрманĕ те ун чухне хальхи пек мар, чăтлăхлă пулнă, унта пăхсан çĕлĕк ӳкмелле йывăççем ӳснĕ, хăш-пĕр вырăнта хĕвел çути те мăклă вырăна çитмен.

Пĕррехинче çак çăтмахри пек илемлĕ вырăна кăнтăр-хĕвел тухăç енчен тăшмансем тапăнса килнĕ. Улăп аллине пысăк чукмар тытса хирĕç тухнă. Çапăçу пуçланнă. Улăп хăйĕн асамлă чукмарĕпе тăшмансене хирме тытăннă, виçĕ кун та виçĕ каç пынă çапăçу. Икĕ пĕчĕк çырмара шыв

мар, чĕрĕ юн юхнă. Çав çырмасенчен пĕрне паян кун та Кан-Елга теççĕ, ку вăл Юн çырма тенине пĕлтерет, тепри — Карал-Елга.

Улăп тăшмансене иртсе кайма паман, тĕп тунă, анчах хăй те вилмеллех суранланнă. Виличчен хăйне кĕрсе выртма, пытарма шăтăк чавнă, унтан çав шăтăка ĕмĕрлĕхех кĕрсе выртнă.

Ваттисем каланă тăрăх, пĕррехинче çак уçланка икĕ хĕрарăм — амăшĕпе хĕрĕ — çурлапа тырă вырма килнĕ, анчах та хĕвел аниччен вырса пĕтерсе киле таврăнма ĕлкĕреймен. Хĕвел ансан вара чул кĕлетке пулса тăнă.

Вăхăт иртнĕ, çунса хуралнă вăрман тепĕр хут хунавланнă, хăраса тарса пытаннă халăхсем те каялла таврăннă. Улăп тăпри çинче те кашни çуркуннех кĕрен чечексем çеçке çурнă. Анчах хура вăрман улăп тăприне пусса илмен, хăйне тăшмансем веçех хăртса çунтарса ярасран çăлса хăварнăшăн сыхласа усранă, шартлама сивĕрен, çил-тăманран хӳтĕленĕ, çуллахи вăхăтра сиплĕ сывлăшпа уçăлтарнă.

Ĕмĕрсен сыпăкĕсем пĕрин хыççăн тепри хупăннă. Улăп тăпри çинчи шурă чул кĕлетке тавралăхра ним пулман пекех пăхса ларнă, пурне те курнă, илтнĕ, анчах никама та, нихăçан та хирĕç хуравламан. Вăрмана çырлана кайсан уçланка ăнсăртран пырса тухнă чăвашсем çак вырăнтан пăрăнма васканă, шур чул кĕлетке канăçне хускатма хăранă.

Утмăл-çитмĕл çул каярах Меселпуçĕнче тĕне кĕмен чăвашсем юлман, пурте чиркĕве çӳренĕ, пуп мĕн каланине те итленĕ, çав вăхăтрах, инкек-синкек килсе тухсан, авалхи чăваш туррисене, йăли-йĕркине вăрттăн-хĕрттĕн аса илнĕ. Улăп тăпри патĕнче пухăннă, шыв йăтса килсе улăп тăприне шăварнă: чул кĕлеткене çуса тасатса шурă ал шăллипе типĕтнĕ. Унтан пуççапса ырлăх-пурлăх ыйтнă, çумăр çутарма тархасланă, укçа-тенкĕ, парне панă, пăтă пĕçерсе çинĕ. Çумăр çутăр тесе чӳк тунă чухне пĕр-пĕрне те, хирĕç тĕл пулакансене те шывпа сапса йĕпетнĕ. Ун чухнехи йăла-йĕркене çакăншăн çилленме те, кӳренме те юраман.

1921 çулхи выçлăх çул та, вунă çул маларах — 1911 çулхи типĕ çанталăкра та — чăвашсем авалхи йăлапа йăлăнса, чӳк туса çумăр çутарма ыйтнă, авалхи чăваш туррисенчен ырлăх кĕтнĕ.

— Пĕчĕк чух çав улăп тăпри çинчи чул кĕлетке патне анне илсе кайнине хальхи пекех астăватăп, — тет утмăл урлă каçнă Исаак Иванович Никитин. — Ăна ун чухне Тăрачул (Тăракан чул) тесе калатчĕç. Вăтăрмĕш çулсенче вара, чиркӳсене аркатнă вăхăтра, Тăрачула та йăвантарса янă.

Каярахпа çав чул кĕлетке, Тăрачул, çухалнă.

Çитĕнсе çитсен, ялти шкулти учитель пулса ĕçлеме тытăнсан, И.Никитин авалхи культура палăкне тепĕр хут шырама тытăннă. Тавралăха çитсе курман вырăн хăварман. Тупнă-тупнах: кӳршĕ ял çынни илсе килнĕ те алкумне кĕме пусма вырăнне хунă, тухса кĕнĕ чухне авалхи палăк çине ура хырса пылчăкне тасатнă. Çапла вара, авалхи чăвашсем турă вырăнне хунă, сăваплă тесе шутланă Тăрачула ир те, каç та сума сумасăр таптанă, вараланă.

— Авалхи чăвашсем ăна Турă вырăнне хурса пуççапнă пулсан та Тăрачул кунта чăвашсем киличченех пулнă, — каласа парать тăван тавралăх тĕпчевçи. — Çав ĕмĕрченех сарматсем хăварнă ăна. Сарматсен культури çинчен калакан материалсем пирĕн муçейре татах пур...

## 189. Чурачăк çывăхĕнчи улăп тăпри

Авалах улăп ятлă пысăк çынсем пурăннă тет. Вĕсем çӳллĕшĕпе пĕлĕте çитнĕ, хăйсем патвар та вăйлă пулнă. Урисем вара хальхи икĕ çурт пысăкăш пулнă. Çăпатисем те çавна май пысăк пулнă. Çăпата ăшне тăпра тулсан вара вĕсем çăпатине силлесе тасатнă. Çав вырăнсенче улăп тăприсем пула-пула ларнă. Пирĕн патри тĕмеске пĕр улăпĕ кăнтăрлахи апата ларнă чух силлесе тасатнипе пулнă теççĕ.

## 190. Ăнăпа Хупкĕпер хушшинчи улăп тăпри

Улăп тăпри пирĕн ялпа Хупкĕпер хушшинче пурччĕ, тепри çак енче. Пысăк çын иртсе кайнă тет. Çăпатинчен тăприне силлесе хăварнă тет. Çав тăпра купа пулса юлнă. Ăна улăп тăпри теççĕ. Çав улăп Шăнчă ялĕпе Ăнă ялĕ хушшине пĕр утăм туса иртнĕ тет, Ăнă ялĕпе Хупкĕпер хушшине тепĕр утăм тунă тет.

## 191. Кăлтӳпе

Пирĕн Слакпуçĕн кăнтăрла енче таçта çитиччен тип-тикĕс çеçен хир выртать. Çав çеçен хир варринче — пĕр тӳпе. Кăшт сăрт тăрăх улăхса пăхсан, хăш енчен пăхсан та 20 — 30 çухрăмран кăн-кăвак ту пек курăнать çав тӳпе. Ăна аркинчен йĕри-тавра çаврăнса виçсен 5 — 6 çухрăм та пулĕ. Патне пырса пăхсан вăл ту пек те мар. Унăн йĕри-тавра вĕтлĕх йывăç. Вырăнĕ-вырăнĕпе çырла та нумай пулать. Вĕтлĕхре мулкачсем вĕтĕ йывăç хуппине кăшласа хĕл каçаççĕ. Тӳпи çийĕ — тикĕс çĕр. Унта тырă та акса илеççĕ, утă та çулаççĕ. Юр çусан сунарçăсем мулкач, тилĕ те çапса илкелеççĕ.

Ĕлĕк çав Кăлтӳпе вырăнĕнче çеçен хирте Улăп суха сухаланă тет. Сухаласа чарăнсан çăпатине салтса шакканă тет. Çавăн тăпринчен ту пулса ларнă тет. Кăлтӳпе çапла пулнă тет.

## 192

Слакпуçĕнчен кăнтăр-хĕвел анăçĕнче Кĕлтӳпе ятлă сăрт пур. Ваттисем каланă тăрăх, çак вырăнсенче Алатăр Хайпулла ятлă вăйлă çын ака тунă. Ака тунă чухне çăпати ăшне тăпра кĕнĕ. Çăпатине хывса шакканă, силленĕ те — çак Кĕлтӳпе пулса тăнă. Чăнах та çак сăрт ытла тӳрем вырăнта, юри купаласа тунă пекех туйăнать.

## 193. Нухай ту

Нухай урине салтса шакканă та, ту пулса ларнă. Нухай пысăк çын пулнă пулмалла — çăпатине ун чухлĕ тăпра тулнă япала. Тăрăхла сăрт тăрать. Ăна алса* унта тыр акаççĕ.

* Сухаласа.

## 194

Пĕр пăхаттир çăпатине шаккаса хăварнă тет. Хăйăр унта. Ĕлĕк алманччĕ ăна, халь алнă. Унпа юнашар кӳлĕ пурччĕ. Халĕ типнĕ. Çынни Нухай ятлă пулман-ши? Унта чӳклесе çиме яшка пĕçерсе каятпăр тетчĕç ĕлĕк.

## 195. Улăп сăрчĕсем епле пулса кайнă

Пирĕн ялтан инçех мар пилĕк-ултă пысăк сăрт пур. Вĕсем пĕр ĕрете çурçĕртен кăнтăралла вĕçе-вĕçĕн ларса тухнă. Вĕсенĕн ячĕсем те пур: Малти сăрт, Шĕвĕркке сăрт, Вăта сăрт.

Ĕлĕк-авал çав сăртсем пулман тет имĕш. Вăл вырăнта тип-тикĕс лап пулнă. Пĕрре çав лаппа чăвашсенĕн Улăп паттăрне иртсе кайма тӳрĕ килнĕ тет. Вăл çав тери вăйлă пулнă. Пысăк-пысăк тусене те хăйсен вырăнĕсенчен урăх вырăна куçарса лартма пултарнă тет. Çак Улăп паттăра çав айлăмпа иртсе пынă чухне вăйлă çумăр çаклатнă имĕш. Çумăр çунипе çĕр пылчăкланса кайнă та Улăп паттăрăн çăпатисем çумне çыпçăнма тытăннă. Çăпатисем унăн питех те пысăк пулнă тет. Çăпатисем çумĕнчен тем пысăкăш пылчăк муклашкисем вăркăна-вăркăна юлнă. Çак муклашкасенчен лапри Улăп сăрчĕсем пулса кайнă тет.

Унтанпа нумай вăхăт иртнĕ ĕнтĕ. Ĕлĕк çав сăртсем хальхинчен темиçе хут пысăкрах, çӳллĕрех пулнă тет. Çулсем иртсе пынă майăн шывсемпе çилсем çак сăртсене хытă ватса пĕтернĕ. Халĕ улăп сăрчĕсем çинче пирĕн колхоз тыррисем хумханса лараççĕ.

## 196. Курнавăш таврашĕнчи улăп тăприсем

Ку улăп тăпри Курнавăш ятлă ялпа Нĕркеç ялĕ хушшинче. Халĕ пĕчĕкленсе пĕте те пуçланă. Пирĕн таврара ĕлĕкрен те ĕлĕк Улăп çӳренĕ. Вăл сĕре пысăк пулнă. Унăн пуçĕ те пĕлĕте çитнĕ. Урисем те тем пысăкăш пулнă.

Çавăн пек вăл пĕррехинче йĕммине пĕтĕмпех çурса пĕтернĕ, мĕншĕн тесен унта пирĕн вăрманлă пулнă. Çав Улăп ĕнтĕ кунта çăпатине хывса силленĕ пулать те, çавăн пысăкăш улăп тăпри пулса юлнă тет.

Килне таврăнсан вăл амăшне:

— Çак Курнавăш патĕнче çӳренипе эрĕмсем йĕме пĕтĕмпех çурса пĕтерчĕç, — тесе калать тет.

## 197

Пирĕн уйра, кăнтăр енче, Вăй кĕвви текен вырăнтан аяккарарах, Тĕме текен лаптăк пур. Ăна Улăп тĕмески теççĕ. Ĕлĕкрех вăл тата çӳллĕ пулнă теççĕ. Колхоз пуçлансан, тракторпа сухалама тытăнсан Тĕме лутраланнă, сарăлнă.

Ватă çынсем каланă тăрăх, Улăп хир урлă каçнă чух канма ларнă. Çăпатине тăпра кĕрсе тулнипе ăна хывса тăприне шакканă, унтан улăп тăпри пулса юлнă.

Çав вăхăтра пĕчĕк, лутра çынсем хирте ĕçленĕ. Улăп вĕсене кăткă вырăнне хурса çăпатари тăприне çав этемсем çине силленĕ. Çынсенчен хăшĕ-пĕрисем хăтăлнă, хăшĕ-пĕрисем вилнĕ.

Улăп пĕр çĕр ĕçлекен çынна кĕсйине чиксе килне илсе кайнă, ăна вăл амăшне кăтартнă. Амăшĕ ăна: «Ку çĕр ĕçлесе пурăнакан çын», — тесе каялла кайса яма хушнă.

Каялла кайнă чухне Улăп çăпатине тепре ларса шаккать. Çав вырăнта каллех улăп тĕмески пулса тăрать.

## 198. Арçунакасси патĕнчи тĕме

Пулнă иккен çĕр çинче тĕлĕнмелле пысăк çынсем. Вĕсенчен пĕри Лапшу Çтаппанĕ пулнă. Вăл çав тери пысăк пулнă: çӳллĕ те сарлака, патвар та вăйлă. Вăл пĕрре пусса çичĕ çухрăм кайнă иккен. Пĕрре Лапшу Çтаппанĕ çул çӳреме тухнă. Утнă-утнă та вăл ывăннă. Çăпатине тата чуллă тăпра кĕрсе тулнă пулнă, урине ыраттарнă. Вара вăл пирĕн ял пуçĕнче ларнă та çăпатине силленĕ. Ун çăпатинчен пĕр пысăк тĕме пулмалăх тăпра тухнă. Тата çичĕ çухрăмра, Ишек патĕнче, вăл каллех çавăн пек тĕме лартса хăварнă.

## 199. Пăхăрăслан патĕнчи тусем

Пăхăрăслан уесĕнче икĕ ту пур, вĕсем иккĕшĕ те çап-çаврака, пит хăрушă çӳллĕ, тăрри шĕп-шĕвĕр. Вĕсем пĕр-пĕринчен пит инçех мар, пĕр çирĕм пилĕк хăлаçран ытла пулмĕ. Вăл ту пуçланни çинчен кунти чăвашсем ак çапла каласа кăтартаççĕ.

Ĕлĕк пĕр Улăп ятлă çын пулнă, вăл акăш-макăш пысăк пулнă, вăрмансем урлă, шывсем çинчен çапла утса çӳренĕ. Çав çӳренĕ чухне пирĕн хиртен те иртсе кайнă; халĕ çӳллĕ тусем тăракан çĕре çитсен вăл ларса каннă, каннă чух уринчи çăпатине салтса тăприне силленĕ, çав тăпраран вара çӳллĕ тусем пулса юлнă теççĕ.

## 200. Тĕмеçи киремет

Ялтан инçех мар Тĕмеçи киремет пулнă. Вăл акă епле пулнă: авал шултра çынсем пулнă, вĕсене улăп тенĕ. Пĕр улăпĕ Патĕрьел ялĕ тулашне ларнă, урисене тăсса силлесен пĕр уринчи тăпра çак киремет пулнă, тепĕр ури Çĕнĕ Ахпӳрт патĕнче пулнă. Çак киремет тĕлне укça çук-и тесе шыраса та пăхнă, нимĕн те тупăнман, вĕтĕ шăмăсем кăна тет.

## 201. Учук тĕми

Унта ĕлĕк выльăх пусатчĕç, чӳк тунă, уяв тунă, кĕрешнĕ. Халь вăрттăнкарттăн тукалаççĕ. Вăкăр-така пусмаççĕ ĕнтĕ, чăх пусаççĕ. Ку тĕме ялăн хĕвел тухăç енче, ялтан тухсанах. Пĕр пилĕк метр пулать йĕри-тавра. Леререх тепĕр тĕме пурччĕ. Кĕлтăвиччен шăлса тасатаççĕ. Чӳклеме пыл та илсе пыраççĕ.

## 202. Аслă ыр тĕми

Вăл Чăвашкассин хĕвел тухăç енче вырнаçнă. Халĕ ăна сухаланă. Ăна тепĕр майлă Аслă ырсем теççĕ. Аслă ыр тĕми текен те пур. Ăна Турă пек хисепленĕ, унта чӳк тунă. Улăп вăл паттăр, вăйлă çын пулнă.

## 203. Хаяр тăпри

Унта туй тунă чух, салтака кайнă чух укçа пăрахаççĕ. Тĕмескеллĕ вырăн вăл çӳлерехех, Ухинкелĕн кăнтăр енче. Пĕр пӳрт вырăнĕ пек.

## 204. Улăп тăприсем пĕри пысăк, тепри пĕчĕк пулаççĕ

Улăп утса пынă чух чалăш çăпати çумĕнчи тăприне, сылтăм уринчине пĕр çĕре, теприне тепĕр утасра* хуса** шаккать тет. Икĕ уран тăпри хушшисем çичĕ çухрăмра пулаççĕ. Вĕсем яланах пĕри пысăккă, тепри пĕчĕккĕ пулать тет.

## 205. Улăп икĕ çырма хушшинчи мăкăр çине утланать

Пирĕн ял патĕнче икĕ пысăк çырма пур, икĕ çырма хушши пĕр-пĕринчен аякра вăл.

Пĕрре çапла Улăп уйра суха сухалать тет. Çăпатисене тăпра тулнă тет. Улăп вара икĕ çырма хушшинчи мăкăр çине лаша тесе утланса ларчĕ тет, ик урине ик çырмана усса ларать тет: пĕр урине — пĕр çырмана, тепĕр урине — тепĕр çырмана. Урисене салта-салта силлет тет: пĕр урине пĕр çырма айккине силлет, тепĕр урине — тепĕр çырма айккине. Улăп тăпри пулнă вара вăл. Пирĕн мунча çӳлли пурччĕ пуль вăл мăкри, йĕтем лапкăш пек çав икĕ мăкăр.

Çăпати мĕн пысăкăш пулнă-ши ун? Мĕнпе тунă-ши ĕнтĕ ăна? Суха тунă тет, суха пуç мĕнле пулнă-ши?

## 206. Çичĕпӳрт çумĕнчи икĕ тĕме

Пирĕн ял çумĕнче икĕ çӳллĕ тĕме пур. Вĕсен хушшинче 15 чалăш пек пулать. Ватă çынсем вĕсене улăп тăпри теççĕ. Улăп суха сухаласа килсен пĕр çăпатинчен тăпрана пĕр еннелле силленĕ, теприне тепĕр еннелле силленĕ, çавăнпа çапла икĕ тĕме юлнă теççĕ. Хăшĕ-пĕри унта ĕлĕкхи çынсене пытарнă, çыннисемпе пĕрле тĕрлĕрен япаласем те чикнĕ, çавăнпа чавса пăхас теççĕ.

## 207. Хĕрлĕçыр çумĕнчи икĕ тĕмеске

Пирĕн ял çумĕнче тепĕр ял ларать. Вăл яла Тăрмăш теççĕ. Пирĕн яла Хĕрлĕçыр теççĕ. Вĕсем халь пĕр колхоза пĕрлешнĕ.

Ĕлĕк-авал, пирĕн пек çынсем çĕр çинче пурăниччен, улăпсем пурăннă теççĕ. Çав улăпсем пирĕн таврара та çӳренĕ. Вĕсем çӳрени çинчен калакан халапсем халь те манăça тухман.

Çав Тăрмăш хирĕнче икĕ тĕмеске пур. Вĕсен иккĕшĕн хушши пĕр çухрăм пулать. Вăл тĕмескесем аякранах курăнаççĕ. Çав тĕмескесем авалтанах юлнă. Унта сĕм авал Улăп канма ларнă, икĕ ури çумĕнчи тăприне шаккаса тăкса хăварнă. Вăл çăпатапа пулнă. Унăн çăпати çумĕнчи тăпраран икĕ тĕмеске пулса юлнă.

---

* Утăмра.
** Хывса.

## 208. Услӑх ҫырмипе Арккасси патӗнчи улӑп тӑприсем

Услӑх ҫырминчен инҫех мар лапра улӑп тӗми пур. Ӗлӗк Улӑп ятлӑ ҫын пулнӑ тет. Питӗ пысӑк ҫын. Вӑл ҫӑпата сырса ҫӳренӗ тет. Хӑрах ҫӑпатине салтса силленӗ тет те, тӗме пулса юлнӑ тет. Лапшу Ҫтаппанӗ пек пысӑк ҫын пулнӑ вӑл. Тепӗр хӑрах ҫӑпатине Арккассинче силленӗ.

## 209. Арҫури тӗми

Арҫури тӗми пур. Хӑй иккӗллӗ. Пӗри ларнӑ вырӑн теҫҫӗ. Теприне уринчи тӑприне силлесе тунӑ тӗме тетчӗҫ. Тӑприне икӗ еннелле те силленӗ.

## 210. Улӑп ҫӑлтан шыв ӗҫнӗ чух хӑйпӑннӑ тӑпра

Улӑп утасси ҫичӗ ҫухрӑм пулнӑ тет. Ҫӑпати тӗпӗнчи тӑпри ӑҫта тӑкӑнса юлать, ҫавӑнта тӗме пулать. Халь ҫав тӗмесене улӑп тӗми теҫҫӗ. Ав лере, пирӗн ялтан инҫе мар, икӗ тӗме пур. Ӑна улӑп тӗми теҫҫӗ. Ҫав тӗмесем Улӑп выртса ҫӑлтан шыв ӗҫнӗ чух ҫӑпатинчен тӑпри хӑйпӑннипе пулнӑ тет. Улӑп ҫӑлтан шыв тӗппипе ӗҫнӗ пуль ҫав. Халь ҫав ҫӑла Хура ҫӑл теҫҫӗ.

## 211. Улӑп ҫӑпати тӗпӗнчен хӑйпӑннӑ тӑпра

Улӑп утса пынӑ чух пӗр ака тӑвакана тӗл пулать тет, кӗсйине илсе чикет тет. Вӑл пӗр урине Асанкасси улӑп тӑпри ҫине пусать тет, пирӗн ялта вара унӑн ҫӑпата тӗпӗнчи тӑпри хӑйпӑнса юлнӑ тет.

## 212. Пӗр ҫӑпатине пӗр енне, теприне тепӗр енне силленӗ

Тахҫан ӗлӗк-авал пулнӑ тет пӗр ҫын, вӑл питӗ пысӑк пулнӑ тата питӗ вӑйлӑ пулнӑ тет, ӑна Улӑп тенӗ тет. Вӑл пысӑк юмансене аллипех тӑпӑлтарса кӑларнӑ тет.

Вӑл пӗрреччен таҫта кайма тухнӑ тет. Вӑл канма ларнӑ тет. Ҫӑпатисене хывса пӑхать те — ҫӑпатисен ӑшӗнче тӑпра пулнӑ тет. Вӑл ҫӑпатисен ӑшӗнчи тӑпрана тытса силлет: пӗрне — пӗр еннелле, тепӗрне — тепӗр еннелле.

## 213. Вӑрҫакансене тӑпра айне хунӑ

Ӗлӗк-авал та вӑрҫакансем пулнӑ. Улӑп вӑрҫакансене юратман тет. Ӑҫта вӑрҫакана курнӑ, чап тытнӑ та хӑй ҫӑпати тӑпри айне хунӑ тет. Ҫавӑнпа хӑш-пӗр улӑп тӑпри айӗнче ҫын шӑммисем, ҫӗҫҫи-хӗҫҫисем тупӑнаҫҫӗ тет.

## 214. Улӑп виллинчен Улӑп тӗмески, шуйттан виллинчен Шуйттанту пулса кайнӑ

Пирӗн пусӑра Улӑп тӗмескипе Шуйттанту текен сӑртсем пур. Ҫавсем ҫинчен ӗлӗк ҫапла юмах яратчӗҫ.

Улӑп тӗмески ҫине Улӑп хӑпарса тӑнӑ, Шуйттанту ҫине шуйттансем сӑрса илнӗ. Улӑп шуйттансене ухӑпа пере-пере вӗлернӗ. Шуйттансем

нумайййăн пулнă. Персен-персен Улăпăн укçăвĕ пушанать, шуйттансем çаплах юлнă-ха. Улăп вара шуйттансене парăнасшăн мар пулса юлашки ухă йĕппине çурмалла çурать те çуррипе шуйттансен патшине персе вĕлерет. Тепĕр çуррипе хăйне кăкăртан чикет те вилсе выртать. Çапла вара Улăп виллинчен Улăп тĕмески пулса каять, шуйттансен виллинчен Шуйттанту пулса каять.

Улăпсем çавăнтан пĕтнĕ вара, шуйттансем те лăпланнă. Патши вилнĕ те-ха вĕсен. Ĕлĕк шуйттансем çынсене пит аптăратнă тет. Халь ав хăрамастпăр.

## 215. Чапăрлă тăвĕ тăшмансене тăпра айне тунипе пулса кайнă

Тахçан авал Сĕве тăрăхĕнче Улăп пурăннă. Ун чухне кунта вăрмансем те хальхинчен çӳллĕрех ӳснĕ. Симĕс курăк вара хальхинчен çăрарах пулнă. Вăрманта та, хирте те хальхинчен шултрарах чĕр чунсем çӳренĕ. Çапах та Улăп ятлă çынран пысăкки, вăйлăраххи пулман тет ун чухне.

Пĕррехинче Улăп вăрăм çулран тусанланса килнĕ те çăвăнма тытăннă. Силленнĕ, шакканнă тет. Хăрах аллипе Атăлран шыв ăсса илсе тепĕр аллипе хул-çурăмне çăвать тет. Çав вăхăтра Сĕве тулса таçта çити ейӳ каять тет.

Çăвăнса пĕтерсен канма шутлать иккен. Йĕпе çĕрте аван мар тесе вăл Пушчă тăвĕ çине, Атăлпалан Сĕве хушшине, вунă-вун пилĕк çухрăм тăршшĕ тăсăлса выртакан лаптăка асăрхать иккен. Пушчă тăвĕ вăл ĕлĕк-авал сĕре вăрманлă çĕр пулнă тет.

— Ай, ку вăрман манăн ӳт-тире шăрпăк пек тирĕнсе пĕтрĕ, — тесе калать тет Улăп. Çапла калать тет те ту çинчи пĕр лаптăк вăрмана тĕпĕтымарĕпе кăларса илсе хăйĕн хӳшши çывăхнерех, Сĕвен тепĕр енне, куçарса лартать тет.

Хăй çывăрса кайсан хӳшше ăнсăртран шыв юхса ан кĕтĕр тесе Сĕве çыранне Пушчă еннелле кукăртать хурать тет. Тӳп-тӳрĕ юхса килекен Сĕве вара Элшел патĕнчен пăрăнса вăрманăн тепĕр енĕпе юхса каять тет.

Çак пĕчĕк ĕçĕсене пĕтернĕ те Улăп канма выртнă. Питĕ канлĕ çывăрнă вăл. Сĕве тăрăх сарăлнă ейӳ чакса ларнă. Унччен сăрă тăм кăна пулнă çĕр Улăп силленсе тасалнă тусанпа-кирĕкпе хуп-хура пулса тăнă тет.

Анчах Улăп çителĕклĕ таран канса та ĕлкĕреймест — çĕре чĕтретсе, çеçен хир енчен тăшмансем килсе çитеççĕ иккен, ӳпре сырса илнĕ пек сырса илеççĕ ăна. Сăнăсемпе те чышса пăхаççĕ, чукмарсемпе те çапаççĕ.

— Тем чĕпĕтнĕ пек туйăнать, лайăх çăвăнаймарăм-ши? — тет Улăп.

Алă лаппипе пичĕ тăрăх сăтăрса илет. Сăтăрса илет те — тăшмансем вăрăм туна пек лапчăнаççĕ тет. Çапла пĕр вăхăт муталаннă хыççăн Улăп куçне уçать те курах каять çав тăшмансене.

Лешсем çине-çинех Улăп çинелле ыткăнаççĕ иккен.

— Эй, мур Тилçе пăванĕсем, çывăрма та памаççĕ, — тет Улăп.

Аллине сулса ярать те — тăшмансен пĕр ушкăнĕ Сĕвене ӳксе путать. Шыв хĕп-хĕрлĕ юнпа пĕвенет. Тăшмансем пурпĕр лăпланмаççĕ тет-ха. Çилленсе каять вара Улăп. Сиксе тăрать те тăшмансем çине ик аллипе ывăçласа тăпра пăрахать тет. Тăшмансем çав тăпра айне пулса чыхăнса вилеççĕ тет вара.

Çак тăпраран пулса кайнă иккен Чапăрлă тăвĕ.

## 216. Улăп ÿксе вилнĕ лашине пытарать

Мучарпа Тĕмер хирĕсем чикĕленнĕ вырăнта тĕмеске пур. Аякран пăхсан вăл лаша кĕлеткине аса илтерет. Вăл — Лаша касанĕ.

Пĕр лаши Улăпăн чи юратни пулнă тет. Унпа вăл сунара та çÿренĕ, суха та тунă. Лаши ăна инкекрен те хăтарнă.

Пĕррехинче лаши сасартăк ÿксе вилет. Вара Улăп эрленсе те кулянса ăна çĕрпе витсе хурать тет, хăй урăх çĕрелле кусса кайрĕ тет.

## 217. Хĕр Тухйи тĕме Савтепи çĕре путнипе пулса кайнă

Улăпсем пурăннă. Пĕр улăпĕ пуян пулнă. Вăл Юман ятлă пулнă. Унăн Савтепи ятлă чипер сăпайлă хĕрĕ пулнă.

Улăпсем те, çынсем пекех, çурхи ĕçсем пуçтарăнсан вăйăсем туса иртттернĕ. Савтепи те çав вăййа тухать. Вăйă çав тери лайăх иртет.

Савтепи темле майпа юлташĕсенчен уйрăлса каять. Килне вара вăл кĕскерех çулпа, Шур çырмипе килме тухать. Анчах вăл киле çитеймест: мĕскĕн хĕрĕ çĕр ăшне анса каять. Пуçĕ кăна çĕр çине юлать. Çавăнпа халĕ те пулин Савтепи тухйи курăнса ларать. Çав вырăна çавăнпа та Хĕр Тухйи тетпĕр ĕнтĕ.

## 218. Улăпа пытарнă улăп тăпри

Пирĕн ялта, Ырашпулăхĕнче (Куславкка районĕ), ял хыçĕнче улăп тăпри пур. Çавăнта аçтахапа çапăçса вилнĕ улăпа пытарнă тет.

Ĕлĕк-авал пирĕн пек вак халăха аçтаха тапăннă тет. Çав аçтаха çынсене çисе пурăннă тет. Вара ăна улăпсем çине тăрса вĕлернĕ тет. Пĕр улăпĕ аçтахапа çапăçса вилнĕ тет, вара ăна лаша çине ыклантарса* хĕçĕхăрчĕмĕнĕпех çав улăп тăпри айне пытарнă тет. Çиеле улăпсем çăпатапа тăпра çĕклесе купаланă тет. Çав тăпрана улăп тăпри теççĕ.

Асаттесем каласа паратчĕç. Ĕлĕк асаттесем астăвасса çав тăпра çинче чул юпа ларатчĕ тет. Кайран чул юпи çĕре путса анса кайнă тет. Ĕлĕкавал çынсене çапла лаши-мĕнĕпех чикнĕ тет.

## 219. Улăп тăпри çапăçса вилнĕ пăлхарсене пытарнипе пулса кайнă

Вăрмар районĕнчи Кĕлкеш ялĕнче çапла калаççĕ: çав улăп тăпри ăшне тутар-монголсемпе çапăçса вилнĕ пăлхарсене пытарнă.

## 220. Тăшмансене пăхма тунă тĕмесем

Пирĕн ялтан инçех мар — çĕр аллă-ик çĕр чалăшра — пĕр тĕме пур, ăна Киремет тĕми теççĕ. Ĕлĕк Паттăр ватăлсан, ун ывăлĕсемпе Салтыкан ханĕ вăрçнă чух Паттăр пиччен ури вырăнĕ пулнă теççĕ. Вăл вăрçма тухсассăн хăрах урине çав тĕме çине пуснă тет, тепĕр урине хальхи Эманкасси** ялĕ вырăнне пуснă теççĕ.

---

* Утлантарса.
** Именкасси.

Тата кăнтăрлара, пĕр çухрăм çурăра, Актай ятлă ял патĕнче, тепĕр тĕме пур. Ăна та вăрçнă чух хăйсен тăшманĕсене пăхма тунă теççĕ.

## 221. Улăп тăприне çапăçура хӳтĕленме тунă

Палтай ял çывăхĕнче икĕ улăп тăпри пур. Вĕсем пирки чăвашсем çапла калаççĕ: вĕсене вырăссем Хусан хулине илме кайнă чухне тунă, çав тĕмескесем хыçне çапăçакан салтаксем (вырăссемпе тутарсем) пытаннă. Анчах çакăн пек халапа пур çынсем те каламаççĕ, эпĕ пĕлекен чăваш çеç калатчĕ.

## 222. Çапăçса вилнĕ çынсене пытарнипе пулса кайнă тĕме

Çак вырăнта шутсăр хаяр çапăçу пулнă тет. Унта вырăссемпе тутарсем çапăçнă тет. Вырăссене чăвашсем те пулăшнă тет. Çапăçура вырăссем те тутарсем те вилнĕ. Вĕсене пурне те купаласа витнĕ пулать. Çакăнтан вара тĕме пулса кайнă.

## 223. Çар пуçне пытарнă улăп тăпри

Кучакасси хĕрринче улăп тăпри пур. Унта пĕр полководеца лашипех купаласа хăварнă.

## 224. Паттăра пытарнă пулас теççĕ

Туçа çывăхĕнче, хĕвел тухăç енче, Çĕнĕкас анкартийĕсем хыçĕнчех, пĕр пысăк тĕме пур, унта ĕлĕкрех чух (халь те) хăш çынсем (Туçа çынисем) укçасем кая-кая пăрахнă. Çав тĕмене улăп тăпри теççĕ. Улăп ĕлĕк çакăнтан иртсе кайнă чух ларса çăпати çумне çыпăçнă пылчăка (тăпрана) силлесе хăварнă теççĕ. Анчах çак сăмаха халь ялтисем те ĕненмеççĕ. Ун пек пулма пултараймасть теççĕ. Унта ĕлĕк чух пĕр-пĕр чаплă паттăра пытарнă пулас тесе калаççĕ. Çак тĕрĕс пуль — чăнах та эпир ĕлĕкхи çынсен йăлине пĕлетпĕр, вĕсем чаплăрах çынна пытарсан ун çине тĕме пек тăпра купаланă, çаплах Туçа патĕнчи тĕме те пулса тăнă пулас.

## 225. Улăп сăрчĕ

Ĕлĕкренех халăх ирĕк пурнăçшăн ĕмĕтленнĕ. Пусмăрлă пурнăçран хăтăлма чеелĕх, вăй тата паттăрлăх кирлине чухланă вăл. Çавăнпа халăх сăмахлăхĕнче Улăп сăнарĕсем çуралнă. Улăп çинчен пирĕн ялта та калаççĕ.

Ял таврашĕнче пĕр айлăмра аванах пысăк тĕме пур. Ăна ятарласа купаланă тейĕн. Тĕме таврашĕнчи вырăн тип-тикĕс. Çав тĕмене Улăп сăрчĕ теççĕ. Ĕлĕк çав таврара чăвашсен аслашшĕсем пурăннă тет. Вĕсем авалтанах ĕçлеме юратнă. Чăваш аслашшĕсем тырă акнă, пуçтарнă, кĕркунне пулсан хĕр панă е хĕр илнĕ, уявсенче юрă юрланă, ташша çаптарнă.

Пĕррехинче таврана ют халăх килсе пуснă. Пуçланнă чăвашсемшĕн калама çук йывăр самана. Халăх тӳсме çук асаплăх курнă, нумай куççуль юхтарнă, анчах та пусмăртан хăтăлма нимĕн те шухăшласа кăларайман.

Пĕррехинче халăх пуçлăхĕ чăвашсене пухнă та каланă: «Эпир — пĕтмеллисем, ачасем — юлмаллисем. Эпир ырă кураймастпăр, ачасем ырă курччăр. Пĕтмеллисем! Туртса кăларăр чĕрӳсене, çӳле çĕклĕр те пĕр çĕре пĕрлештерĕр. Вара Улăп çуралĕ те тăван çĕршывăмăра тăшмантан тасатĕ. Пирĕн йăх малалла аталанĕ, вăл ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ», — тенĕ.

Халăх çул пуç хушнă пек тунă. Çиçĕм пек хăвăрт ӳссе çитĕннĕ Улăп. Вăл пусмăрçăсене пĕр çĕре шăлса пуçтарнă та таптаса çĕр айне тунă. Çавăн чух Улăпăн çăпатине тăпра кĕрсе тулнă. Улăп çăпатана хывать те силлет. Вара çав тăпраран Улăп сăрчĕ пулса тăчĕ тет.

## 226. Улăп тăпри сăрчĕ

Ĕмпĕрт Туçа (е Аслă Туçа) ялĕ çумĕнчи пĕр çырма урлă каççан пĕр лаптăк çӳллĕ сăрт пур. Ăна вара пĕр Улăп хăйĕн çăпатинчен тăпрана силленĕ сăрт тетчĕç.

## 227. Кăнна Кушки патĕнчи улăп тăприсем

Пирĕн ял çумĕнчи çырмара пĕр вырăнта пĕр пĕчĕк сăрт пекки пурччĕ. Çав лаптăка Улăпăн хăрах уринчен силленĕ тăпра тенĕ.

Пирĕнтен тепĕр ултă çухрăмра çырма варринче шăп çавăн пек çӳллĕ пĕчĕк сăрт лаптăкĕ пурччĕ, ăна вара Улăпăн тепĕр уринчен силленĕ тăпри тенĕ.

## 228. Тутарсемпе чăвашсем çапăçнă вырăн

Авал Улăп ятлă çын пулнă теççĕ, вăл çын питĕ пысăккă пулнă. Çав Улăп пынă чухне çăпата тĕпне тăпра çыпăçнă, вăл çăпати тĕпне хырса хăварнă та, вара ту аякки пулса юлнă теççĕ. Çавăнпа ăна улăп тăпри теççĕ пирĕн чăвашсем. Улăп тăприсем халĕ пирĕн патра нумай. Туçи Мăрат патĕнчине пĕр вăрман улпучĕ чакалаттарнă та леçниксене, икĕ аршăн чакаласан икĕ куршак ылтăн тухнă тата нумай шăрçасем, хитре чулсем кăларнă. Халĕ ĕнтĕ шухăшла пуçларĕçĕ уйрăмах ватă çынсем: авал пирĕн староста пек çĕр çын пуçлăхĕ пулнă теççĕ, ăна улăштарман тет, староста пĕр кĕрсен çавă пулнă, ăна вара вилсен пытарнă теççĕ. Унăн çине çĕрми япаласем парне панă теççĕ, çав парнесем çине çĕр питĕ çӳллĕ купаланă. Халĕ ĕнтĕ ват çынсем шутла пуçларĕç тин, улăп тăпри мар ку тесе.

## 229. Çĕр çын пуçлăхне пытарнă улăп тăпри

Тракушкăньрен çурçĕр енче улăп тăпри пур. Ăна çапла ăнлантараççĕ. Тутарсемпе чăвашсем çапăçнă. Çапăçура вилнисене çавăнта пытарнă тет. Çавăнпа та пулĕ ăна тата «братски могила» теççĕ. Вăл тĕмеске халь ытла çӳллех мар.

## 230. Улăп тăпри — Разин паттăрĕсене пытарнă масар

Улăп тăприсем çинчен тĕрлĕрен калаçаççĕ Кушлавăш таврашĕсем. Пĕрисем каланă тăрăх, авалах улăпсем çеç пурăннă тет. Кайран çĕр пичĕ шыв айне пулнă. Улăпсенчен нимĕн те юлман, вĕсем çăпатисене силлесе

хăварнă хыççăн юлнă тăпра купи çеç хальччен те упранать. Улăпсем хыççăн пирĕн пек çынсем пуçланса кайнă. Пирĕн хыççăн пӳрнеске пек çынсем пулаççĕ имĕш. Вĕсене: «Автан пусма та ниме тăвĕç», — тенĕ.

Теприсем вĕсем тĕмескене Степан Разин пăлхавĕпе çыхăнтарнă. Кĕçĕн Çавал хĕрринче патша çарĕпе Разин çарĕ тĕл пулнă тет. Вара вăйлă çапăçу пулса иртнĕ. Паттăрсене пытарнă тет çав тĕмесем айне. Çавăнпа халĕ те улăп тăпри е улăп масарĕ теççĕ.

## 231. Пугачев салтак вилсен пытарнă чух улăп тăпри купалаттарнă

Хурăнлă çулпа кайнă чух Анатриял патĕнче улăп тăпри пур. Авалхи çынсем каланă тăрăх, унта Пугачев салтакне пытарнă тет. Пугачев хăйĕн кашни салтакĕ вилсен çавăн пек улăп тăпри купалаттарнă тет.

## 232. Улăп тăпри хĕç-пăшал пытарнипе пулса кайнă

Пăкачав пăлхавĕ вăхăтĕнче Пăкачав салтакĕсем пирĕн ял витĕр тухса кайнă тет. Те патша йĕрленине пула, те урăх сăлтавсене пула салтаксен хăйсен хĕç-пăшалĕсене пытармалла пулнă тет. Çĕрле никам çӳремен вăхăтпа усă курса вĕсем шăтăк алтса хĕç-пăшалне çавăнта пытарса хăварнă тет, тупписене те çавăнтах пытарнă тет. Ирхине салтаксем малалла кайнă тет. Çапла вара пысăк тĕмеске — улăп тăпри — пулса юлнă тет.

Вĕсем ялтан кăшт анатарах Кĕçĕн Çавал урлă каçса кайнă тет. Çар каçса кайнă вырăна халĕ те Çаркашши (Çар каççи) теççĕ.

Çав çар кайсан-кайсан Вырăскас Пикших ялĕ патне пырса тухнă. Кунти хирте те вĕсем хăйсен пăшалĕсене пытарса хăварнă тет. Çав тĕмескене те улăп тăпри теççĕ.

## 233. Пичĕкесемпе укçа пытарнă тĕме

Вăл тĕмене Улăп çăпати тĕпĕнчен хăпса юлнă теççĕ. Тата хăшĕ авалхи çынсем вырăссенчен хăраса пичкесемпе укçа алтса пытарнă теççĕ.

## 234. Тăванла масарсем

Ялтан çурçĕр енчи улăп тăприне çапла ăнлантараççĕ. Унта Пугачевăн вилнĕ çыннисене пытарнă тет, юнашар пĕр чашăк укçа лартса хăварнă тет.

## 235. Улăпсен вил тăпринчен пулнă путăксем

Кайран улăпсем вилсе пĕтнĕ теççĕ. Вĕсем вырăнне хальхи çынсем пурăнма пуçланă.

Чарту катинче пысăк лакăмсем пур. Атте: «Улăп вил тăприсем кусем», — тетчĕ. Вил тăприсем путса аннă та — шăтăк-путăксем пулса юлнă. Пӳрт вырăнĕнчен те пысăк вăл путăксем.

## 236. Улăпсем тăкнă сĕтрен пулнă пылчăк

Разумов утарĕ патĕнче сĕтлĕ пылчăк пур. Вăл улăпсем пĕр-пĕринчен пырса илнĕ чухне тăкса янă сĕтрен пулса кайнă тет. Çак улăпсем пурĕ икĕ çемье пулнă: пĕри Турай, тепри Васлей пулнă тет. Вĕсен мунча кăмакисем те пулнă тет. Çав кăмакасен чулĕсем халĕ те сăрт çинче пур теççĕ.

## 237. Улăп куççулĕнчен пулнă кӳлĕсем

Улăп ачи амăшĕ чĕчĕ паманшăн макăрса янă тет. Пĕр куçĕнчен юхакан куççулĕпе Яманак кӳлли, тепĕр куçĕнчен юхакан куççулĕпе Карай кӳлли пулнă тет.

— Ан макăр, ачам, кун пек куççуль юхтарсан тĕнчене юхтарса ярăн, — тесе чĕчĕ парса чарнă тет макракан ачана. Куççультен пулнă кӳлĕрен пăрлă çумăр тухать тет. Çавăнпа Карайпа Яманак енчен килекен çумăр часчасах пăрлă пулать тет.

## 238

Улăп тени тĕлĕнмелле пулнă тет.

Пĕр куççуль тумламĕнчен Яманак кӳлли пулнă тет, тепĕр куçĕнчипе — Карай кӳлли тет.

Икĕ кӳллин те шывĕсем куççуль пек тăрă та таса теççĕ.

## 239. Патăрьел ялĕсем касамат чулĕсенчен пуçланса кайнă

Ĕлĕк-авал Туçи сăрчĕ касамат пулнă. Çав касаматра Çĕрпӳ паттăр ларнă тет. Ăна унта сăнчăрласа усранă та Туçа сăртне йăттарнă тет.

Улăп Çĕрпӳ паттăра касаматран тыткăнран хăтарнă чухне касаматтамăк тĕпĕнчен пĕр ывăç чул илнĕ те çапла каласа сĕм вăрманалла пенĕ: «Тамăк тĕпĕнчен пĕр ывăç чул илтĕм. Вĕсем — çынсем, паттăрсем, касамат-тамăк тĕпĕнче çунса чулланса ларнă, кĕл пулман. Çав чулсем ăçта ӳкеççĕ, çав вырăнта паттăрсен ятне упрама ял пултăр...» Вăт ăçтан пуçланса кайнă Патĕрьелсем.

## 240. Улăп вырăнĕ

Пирĕн ял тулашĕнче, кăнтăр енче, Тапăр çырми хĕрринче, Улăп вырăнĕ пур. Пуçĕ тĕлĕнче урам сарлакăш кӳлĕ пулнă, вăл типсе ларнă ĕнтĕ. Унта халĕ тыр-пул акса ӳстереççĕ. Икĕ пĕçĕ вырăнне анăç енчи хиртен çеремлĕ икĕ пĕчĕк çырма сарăлса анать, тăршшĕ пĕр çухрăм пек пулĕ. Улăпăн пӳксемĕ çак çырмасемпе кӳлĕ пĕрлешнĕ тĕлте сыпăнса тăрать. Тапăр çырми сăрчĕн çамки ик еннелле каять. Вăл улăпăн икĕ алли пек курăнать.

## 241. Улăп ларнă вырăн

Шăхалĕре улăп ларнă вырăн пур. Çеремри лупашкана çапла каласçĕ: пăхсан — çын ларнă хыççăн юлнă вырăн пекех.

## 242. Улӑп пуснӑ вырӑнсенчен ҫырма-айлӑм пулса юлнӑ

Ёлӗк-авал пирӗн таврара питӗ пысӑк ҫын иртсе кайнӑ. Вӑл урипе ҫӗр ҫине пуссан ҫӗр кисренсе кайнӑ, урипе пуснӑ вырӑнсем путса пынӑ. Улӑпӑн урисем пысӑк пулнипе пуснӑ вырӑнсенче тем пысӑкӑш айлӑмсем пулса юлнӑ. Таврари ҫырмасем улӑп пуснӑ вырӑнсенчен пулса кайнӑ. Улӑп утнӑ чух йывӑҫсене тӳнтерсе пынӑ.

## 243. Улӑп хуранӗ

Тахҫан авал, улӑпсем пурӑннӑ чухне, ҫанталӑк ҫав тери ӑшӑ пулнӑ тет. Ҫавӑн чухне пӗлӗт тӑррине самантрах ту хӑпарса кайнине кураҫҫӗ ҫынсем. Лайӑхрах пӑхаҫҫӗ те — хай тӑвӗ ҫын евӗрлех тет. Тата пӑхаҫҫӗ те — тӑвӗ вырӑнтан куҫать тет. Тепре пӑхаҫ тет хайхи — хӑйсем патнелле ҫитсе тӑрать тет ку. Ҫӗртен те пӗлӗтрен тет хӑй. Ку вӑл Улӑп пулнӑ.

Улӑп мӗнпур япалана таҫтан аякранах курса тӑнӑ иккен. Хуран хӑлӑпӗ тӗлне чарӑнать те ҫав вырӑнти тӑпрана виҫӗ хутчен ывӑҫласа Атӑл хӗррине сапать, унта пысӑк сӑрт пулса тӑрать. Тӑпра илнӗ вырӑнта тарӑн шӑтӑк пулать. Ҫав шӑтӑка хай Улӑп тӑмпа шӑлать, илемлетет тет. Хӗвел ҫинче хытарать тет. Тӑмӗ пысӑк хуран пек хытать. Унта Атӑлтан ывӑҫласа илсе шыв ярать. Атӑлалла тайӑлса пулӑ ывӑтать. Пуллине ҫав хуранах чӑмтарать, темле-темле ӳсен-тӑрансем ярать, унтан хуранӗ икӗ енӗпе вӗрет. Вӗри сывлӑшпа хайхи хуран вӗриленсе каять, тата кӑшт тӑрсан вӗреме кӗрет. Ҫапла пиҫнӗ яшкапа апатланать те Улӑп малалла каять, кӑнтӑралла уттарать.

Улӑп кайсан пырса пӑхаҫҫӗ те ҫынсем: яшки те аванах юлнӑ иккен. Вӑрахчен апатланса пурӑнаҫҫӗ тет вара ҫак таврари ҫынсем яшкапа. Питӗ техӗмлӗ пулнӑ тет яшки.

Ҫапах та, темиҫе ҫул апатлансан та ҫынсем ӑна ҫисе пӗтерейменҫҫӗ. Кайран ҫанталӑкӗ те сивӗтсе пӑрахать тет.

— Пире Улӑп ӑшӑтса тӑнӑ-тӑр, — тесе калаҫҫӗ тет ҫынсем.

Вара вӗсем Улӑпа шыраса кӑнтӑралла каяҫҫӗ тет. Анчах Улӑпа курайманҫҫӗ тет. Вӑл ту пулса тӑнӑ тет. Ҫынсем вара каялла таврӑнаҫҫӗ тет.

Анчах каялла килнӗ ҫӗре Улӑп хуранӗ хупланнӑ тет. Унӑн хӑлӑпӗ кӑна Элшел тӗлӗнче кӑшт курӑнса тӑнӑ тет. Ҫавӑнпа ӑна Хуран хӑлӑпӗ тесе каланӑ тет.

Ҫав вырӑнтан Улӑп япалисем тухнӑ тенине, чӑнах та, ӗлӗкхи ваттисем астунӑ тет-ха.

## 244. Юмарт тӑвайкки

Ялтан тухсан, ҫухрӑмра, ҫурҫӗр енчи сӑртрах вырӑн пур, хӑйӑрлӑ ҫӗр, унтан хӑйӑр илеҫҫӗ. Ҫав сӑрт ҫинче халӑх революци тухсан хырлӑх лартса ӳстерчӗ. Пӑрӑнтӑк ҫӗрӗ пулнӑ вӑл ӗлӗк, унта тутарсем вӑрман уҫса тыр акнӑ. Тырри аван пулатчӗ, ҫавӑнпа Юмарт тенӗ-тӗр («юмарт» тени тутарла «аван» тени пулать). Ҫав Юмарта тата улӑп тӑпри тетчӗҫ. Улӑп унта ҫӑпата тӑприне силлесе хӑварнӑ тетчӗҫ.

## 245. Улӑп тӑвӗсем

Ҫӗр ҫинче малтан улӑпсем кӑна пурӑннӑ тет. Вӗсем пысӑк та вӑйлӑ пулнӑ тет. Пирӗн ял ҫывӑхӗнче пысӑках мар икӗ ту пур. Вӗсене Улӑп

тăвĕсем теççĕ. Мĕншĕн апла каланине çапла ăнлантараççĕ. Пĕрре пĕр улăп сунара каять тет. Çӳре-çӳре вăл ывăнать. Канма ларать тет. Урисене усăлтарма калушне хывать тет. А ун калушшисем ăшĕнче тăпра пулнă тет. Силлет калушшисене — çĕр çинче икĕ ту пулса тăрать тет.

## 246. Çăкăр тăвĕ

Пирĕн ялпа Йăвашкел хушшинче пĕве пур. Ун варринче — пысăках мар утрав. Вăл çӳллĕ, çăкăр пекех çап-çаврака. Çавăнпа ăна Çăкăр тăвĕ теççĕ (Çăкăр утравĕ тенине те илтнĕ). Улăп ачисем те этем ачисем пекех тăмпа, хăйăрпа выляма юратнă тет. Вĕсем тăмран, хăйăртан тĕрлĕ япаласем тума ăста пулнă тет. Ку ту — улăп ачисем вылянă чухне тунă çăкăр тет. Улăпсем тахçанах вилсе пĕтнĕ, вĕсен «çăкăрĕ» халĕ те сывă.

## 247. Виç тӳпе

Ĕлĕк-авал, пирĕн пек çынсем пуличчен, улăпсем пирĕн паталла та пурăннă тет. Вĕсем пысăк, сарлака хул-çурăмлă, вăрăм ураллă çынсем пулнă тет. Вăрманпа пынă вăхăтра йывăç тураттисем, тăррисем лексе вĕсен шăлаварĕн пĕççисене çура-çура янă тет.

Пĕррехинче улăп пирĕн ялтан кӳршĕ яла (Пăслăк ялне) кайма тухнă. Вăрманпа иртсе пынă чухне унăн шăлаварне йывăç тураттисем çурса пĕтернĕ. Улăп çилленсех каять. Вăл йывăççене тымарĕ-мĕнĕпех тăпăлтарса кăларать. Çав вăхăтра унăн çăпати ăшне тăпра тулать. Вăл пĕр çарарах, вăрман çук çĕре, ларать те çăпатисене силлет. Пĕр уринчи çăпатине силлет те — пĕр тӳпе тăрса юлать, тепĕр уринчи çăпатине силлет — тепĕр тӳпе тăрса юлать. Хăй ларнă вырăн путса анать тет, анса кайнă вырăн çумĕнче, тăпри ниçта кĕрсе каяймасăр, тепĕр купа тăпра (тепĕр тӳпи) ӳссе ларать тет. Çавăнтанпа пирĕн вырăнти виçĕ сăрта Виç тӳпе теççĕ. Вăл тӳпесен хушши пĕр çухрăм пулать.

## 248

Пишпӳлеке çитме пĕр вунă çухрăм пек юлсан, çулăн сылтăм енче Пăслăкпа Кистенлĕ текен чăваш ялĕсем хушшинче тип-тикĕс хир варринче виçĕ сăрт çӳллĕ те уйрăммăн çĕкленсе ларнине кураттăмăр. Ваттисем каланă тăрăх, ĕлĕк-авал кунта асар-писер пысăк улăпсем ушкăнĕпех çак ялсем çывăхĕнче ларса канма шутланă, çула тухас умĕн çăпатисене хывса тăприне силленĕ тет. Улăпсем кайнă хыççăн кунта, тип-тикĕс çĕртех, ту пек сăртсем ларса юлнă.

## 249

Виçĕ Улăп хутаçпа çĕр валеçсе çӳренĕ тет. Пурне те валеçнĕ хыççăн хутаççисенче тăрса юлнă çĕр. Кутăн илсе каяс темен. Виççĕшĕ те хутаççине пушатнă. Çав тĕлте виçĕ тӳпе пулса юлнă. Каялла çаврăннă. Яла çитес умĕн хутаççисене силленĕ. Çав вырăнта тата виçĕ тĕмĕ пулса юлнă.

## 250. Икĕ тăпра купи

Пулнă тет Улăп ятлă çын. Хайхи пĕррехинче çак Улăп вăрмансемпе улăхсем пăхса çӳренĕ тет. Вăл улăхсем пăхнă чух çумăр айне пулнă тет. Çумăр çунипе çĕр йĕпенсе кайнă, унăн уринче çăпата çеç пулнă, пылчăк сыпçăнса тулнă. Улăп хăйĕн урине тасатма ларнă. Вара ун хыççăн икĕ тăпра купи тăрса юлнă тет.

Çак улăп тăприсем пирĕн ял патĕнчи Кĕçĕн çырмара та пур. Ку юмах та çав улăп тăприсем çинчен.

## 251. Улăп тăприпе шăлĕ

Ял таврашĕнче тĕмесем те пур. Вĕсенчен пĕри вăл — Улăп тăпри. Улăп утса кайнă чух ура тĕпĕнчен тăпра татăлса юлнă. Çавăнпа Улăп тăпри тесе каланă.

Тата Шетмĕ шывĕ хĕрринче çынсем ĕлĕк Улăп шăлне тупни пирки те калаçаççĕ. Улăпĕ вилнĕ те, шăлĕ шывпа юхса кайнă тесе калаçакансем те пур.

## 252. Улăп çĕрĕ

Тахçан авал çак çĕршĕн Тĕмер ял çыннисемпе аслă таяпасем хушшинче вăрçă пулнă. Питĕ хăрушă пулнă тет çав вăрçă. Халăх кам мĕнле хĕç-пăшалланма пултарнă, çавна илнĕ: пуртă, сенĕк, лук... Çак вăрçăра пирĕн ялтан пĕр çын вилнĕ. Пирĕн ялсем çĕнтернĕ. Вара çав Улăп çĕрне пирĕн ялсем тырă акма пуçланă.

## 253. Улăп тăвĕ

Пĕррехинче Улăп уçăлма шутлать. Вара вăл уй-хире тухса каять. Çӳресен-çӳресен ывăнса каять. Вăл вара канса илме шут тытать. Каннă чухне хăйĕн çăпатисене хывса шаккать. Шакканă вырăнта икĕ пысăк ту пулса тăрать. Çакăн хыççăн ку вырăна Улăп тăвĕ теме пуçланă.

## 254. Вăтăр тĕмеске речĕ

Авалах Улăп ятлă пысăк çынсем пурăннă тет. Вĕсем çӳллĕшĕпе пĕлĕте çитнĕ, хăйсем патвар та вăйлă пулнă. Урисем вĕсен хальхи икĕ çурт пысăкăш пулнă тет. Пĕр улăп хăйĕн патшалăхне виçме тухнă. Утнă-утнă та çăпати ăшне тулнă тăпрана хывса силленĕ. Кайсан-кайсан пĕчĕккĕн шаккаса пынă. Вара пĕчĕк тĕмескесем пулса юлнă. Халь ăна вăтăр тĕмеске речĕ теççĕ. Ку вырăн Чурачăк ялĕнчен инçех мар.

## 255. Хвальен ăрăвĕсен улăп тăпри

Пирĕн районта улăп тăприсем сахал мар. Вĕсенчен пĕри Курнавăш ялĕн кăнтăр енче вырнаçнă. Ĕлĕкрех çак вырăн хĕрĕх метр сарлакăш, икĕ метр çӳллĕш пулнă теççĕ. Улăп тăпри вырнаçнă вырăнта ака-суха туман. Колхозсем йĕркелесен çĕрпе туллин усă курас тĕллевпе çак вырăна та кăпкалатма тытăннă. Вăл çулсеренех вашмăкланса пынă.

Улăп тăприн вăрттăнлăхĕсене уçса парас тĕллевпе пирĕн тăрăхра 1985 çулта чăваш археологĕсен экспедицийĕн пĕр ушкăнĕ тĕпчев ирттернĕ. Ăна истори наукин докторĕ В.Ф.Каховский ертсе пычĕ.

Улăп тăприне чавса тĕпченĕ хыççăн çакă паллă пулнă: тăвата пин çул каялла кăнтăрти çеçен хирсенчен пирĕн таврана хвальен йăхĕ-йăрăвĕсем куçса килнĕ. Вĕсем çĕр ĕçлесе тата сунара çӳресе пурăннă. Улăп тăприсене авалхи хвальен йăхĕсем аслă турă вырăнне хурса пуççапнă. Çакна унта тупнă япаласем те тӳррĕнех кăтартса панă. Çавăн пекех Курнавăшри улăп тăпри çинчен çын шăммисем, тăм чӳлмек ванчăкĕсем, çĕр чавмалли шăмă хатĕрĕсем тупнă. Асăннă улăп тăпри айне паллă йăх ертӳçин ачине пытарнă текен халап çӳрет халăхра.

Çĕнĕ Пăвари тĕмене те чавса пăхнă. Вăл, ялти шкул хыçĕнче вырнаçнăскер, тахçанах çĕрпе танлашнă ĕнтĕ. Ялти вата çынсенчен ыйтса пĕлнĕ хыççăн çеç тĕме вырăнне шыраса тупнă. Кунта та тăмран туса хатĕрленĕ савăт-сапа, йытă евĕрлĕ чĕр чунсем тата çын шăммисене тупнă. Экспедицине хутшăнакансем каланă тăрăх, кунта йăхри паллă сунарçа пытарнă иккен.

## 256. Ĕлĕкхи çынсене пытарнă теççĕ

Пирĕн ял патĕнче (Çичĕпӳрт, Шĕнерпуç вул., Шупашкар у.) икĕ çӳллĕ тĕме (курган) пур. Вĕсен хушши вун пилĕк чалăш пек пулать. Вара çынсем вĕсене улăп тăпри теççĕ. Улăп суха сухаласа килсен пĕр çăпатинчи тăпрана пĕр еннелле силленĕ, теприне тепĕр еннелле силленĕ. Çавăнпа çапла икĕ тĕме пулса юлнă теççĕ.

Хăшĕ-пĕри унта ĕлĕкхи çынсене пытарнă, çыннисемпе пĕрле тĕрлĕрен япаласем те чикнĕ, çавăнпа чавса пăхас теççĕ. Çапла кургансем йĕркипе ĕçлекен комисси çав кургансене чавса пăхма пултараймĕ-ши?

## 257. Çĕньял Упи патĕнчи улăп тăпри

Çĕньял Упи (Çĕрпӳ р.) патĕнче икĕ тĕмеске — улăп тăпри пур. Çавăнта ĕлĕк вăрçă пулнă пек асăнаççĕ, вăрçă хатрисем е çын виллисем пулĕ тесе пуплеççĕ.

## 258. [Тутарсен воеводине пытарнă]

Кивĕ Сĕнтĕр çулĕ çинче пĕр километр ытларахра лапкăшпех вăрман пулнă тет. Ун çумĕпе Улмахва çеремĕ пулнă, хăвасем кашласа ларнă. Эп астăвасса, унта йывăç тымаррисемччĕ. Колхоз тунă хыççăн вара вунă-вун икĕ гектар çерем тунă, утă çулнă. Колхоз капанĕсем çавăнтах хĕл каçнă.

Малтан кунта улăп тăпри пулнă. Чăваш халăхĕ тутарсемпе çапăçнă тет. Тутарсен воеводине вĕлернĕ тет те çакăнтах пытарнă тет. Паллă пултăр тесе çĕр купаласа хăварнă тет.

## 259. Улăп кĕтӳ пăхнă чухне çăпатине хывса силлет

Ĕлĕк-авал, сĕм авал, пирĕн мăн асаттесен аслашшĕсен ĕмĕрĕнче, Аслă Атăл хĕрринче чăвашсен паттăрĕ Улăп пурăннă тет. Çерем çĕтсе тырă акнă тет, питĕ нумай выльăх-чĕрлĕх усранă.

Улăп тени çав тери вăйлă та пысăк кĕлеткеллĕ çын пулнă тет. Кашласа ларакан хура вăрмансем ăна мăян-курăк пек туйăннă, вĕсене вăл тымарĕсемпех тăпăлтарса кăларма пултарнă. Пысăк кӳлĕсем ăна çумăр хыççăнхи кӳлленчĕксем пек туйăннă тет.

Пĕрре çапла вăл хăй кĕтĕвне хăваласа Патăрьел тăрăхне килсе çитнĕ тет. Мĕншĕн тесен Патăрьел тăрăхĕ вăрманлă-çке! Пысăк та йывăр этеме çĕр пичĕ чăтайман, путса аннă. Çавăнпа та Улăпăн кашнинчех çăпатине кĕрсе тулнă тăпрана силлемелле пулнă. Пĕрре çапла канма ларсан çăпатине салтса силлеме тытăнать. Пĕр çăпатине Çĕньял патĕнче силленĕ тет, теприне вара пирĕн патăрта, Аслă Чеменпе Кĕçĕн Чемен ялĕсем хушшине силлесе хăварнă. Халĕ те пур çак çӳллĕ вырăнсем. Ваттисем каланă тăрăх, улăп тăприсем вĕсем.

## 260. Улăп тăприне пахчана сапаççĕ

Улăп вăл пĕлĕт çӳллĕш пысăк, калама çук вăйлă çын пулнă. Улăп çăпатинчен силлесе хăварнă тăпрасем — хальхи пысăк тĕмескесем тет. Çĕр праçникĕ чухне халĕ те ваттисем çав тĕмескесенчен пĕршер ывăç тăпра илсе картишне, пахчана сапаççĕ. Пахча çимĕç лайăх пултăр теççĕ.

## 261. Ахпӳрт ялĕнчи икĕ тĕмĕ

Кивĕ Ахпӳрт ялĕнчи хĕреслĕ пăралукра икĕ тĕмĕ пулнă. Вăл пĕр çыннăн çăпатине силленĕ тăпра имĕш. Пĕрне çул сарнă вăхăтра сапаланă, теприн тĕми кăштах палăрать, халь унта уйрăм хуçалăхăн çĕрĕ. (Наумовсен.)

## 262. Улăпа пытарнă пулас теççĕ

Туçа çывăхĕнче, хĕвел тухăç енче, пĕр пысăк тĕмĕ пур. Унта ĕлĕкрех чух хăш çынсем укçасем кайса пăрахнă. Çав тĕме улăп тăпри теççĕ. Ĕлĕкхи çынсем унта улăпа пытарнă пуль теççĕ.

## 263. Улăп тăприне тивмеççĕ

Пиртен инçе мар пĕр ял пур. Çĕнĕ Ахпӳрт ялĕ. Çĕнĕ Ахпӳрт туллăсăртлă вырăнта мар, уй-хир таврашĕнче ларать. Çĕнĕ Ахпӳрте йĕритавра тип-тикĕс хирсем сарăлса выртать. Анчах ялтан инçех мар, хĕвел тухăç енче, уй-хирĕн пĕр лаптăкĕ сăрт-ту пек тăрать. Ваттисем каланă тăрăх, кунта Улăп иртсе кайнă тет. Çак Улăп канма ларсан хăйĕн çăпатинчен силленĕ тăпра халĕ сăрт пек ларать. Ăна тракторсем сухаламаççĕ, тивмеççĕ. Çак тăпра халĕ те пур. Ăна Улăп тăпри теççĕ. Ваттисем ун умĕнче пуç таяççĕ. Курман çынсем ăна курма тăрăшаççĕ.

## 264. [Улăп тăпри Киремет сăрчĕ пулса каять]

Ĕлĕк-авал икĕ миллион çурă çул каялла хĕвел тухăç енчен, Янтуш патĕнчен, Камайкассинелле питĕ пысăк улăп иртсе кайнă. Вăл хăрах урине Пысăк Чăрăшран çĕр утăмра, тепĕр урине Камайкассинче салтса сил-

ленĕ, çав вырăнсенче вара тĕмескесем пулса юлнă. Халĕ те вĕсем пур, ялти çынсем пĕлеççĕ.

Ĕлĕк-авал ял халăхĕ Пысăк Чăрăш патĕнчи тĕмеске çинче чӳк тума пуçланă. Киремете парнесем панă: укçа, апат-çимĕç, пир тĕркисем пăрахса тăнă. Киремет сăрчĕ пулса кайнă вара. Киремет сăрчĕпе юнашар каса (урама) Киреметкасси теме пуçланă, Киремет урамĕ пулса кайнă. Çырми те Киремет çырми ятлă.

## 265. [Çирĕклĕ Шăхаль патĕнчи тусем]

Ку ял çĕрĕнче тата икĕ тăв пур. Вĕсем пĕр-пĕринчен аякрах мар: иккĕшĕ те ялтан çурçĕр енче тăраççĕ, иккĕш çинче те тырă акса пурăнаççĕ. Çак тăвсем çинчен хĕрĕх пилĕк çухрăма яхăн аякри ялсем тата Пăва хули (Буинск) курăнать. (Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи.) Çак тăвсем иккĕш те авалхи Паттăртан пулнă теççĕ: çак Паттăр çуран вăрăм çул утмалла пулнă тет, çавăн чухне вăл ĕшеннĕ пек пулса ку вырăнта канма шухăш тытнă тет, ларсан-ларсан икĕ уринчи çăпатине салтса силлерĕ тет, вара çав çăпатаран силленĕ тăпраран икĕ тăв пулса юлчĕ тет.

## 266. Улăп тăприне мĕншĕн Сăвăр тĕми тенĕ

Ĕлĕк эпир пурăнакан вырăнта улăпсем пурăннă тет. Пĕрре пĕр улăпĕ пирĕн ял хирĕ урлă (ун чухне пирĕн ял пулман) каçса кайнă та юшкăнлă çĕр çинчен çăпатине тăпра кĕрсе тулнă. Вара вăл пĕр çырма хĕррине ларнă та çăпатисене çавăнта хырса шакканă. Унтанпа вăл вырăнта пысăк тĕмеске тăрса юлнă. Ăна улăп тăпри теме пуçланă. Унта сăвăрсем ĕрчесе кайнă пирки ăна пирĕн ялсем Сăвăр тĕми тесе ят панă. Халь вăл вырăн кăшт анчах палăрса тăрать.

## 267. Мелеспуç патĕнчи икĕ ту

Ĕлĕк пысăк çынсем пулнă, вăйлăскерсем. Çăпатисене шаккасассăн тăпринчен тӳпе пулса юлнă тет. Ун пек вырăн Мелеспуç ялĕн çĕрĕнче пур. Улăп çăпатинчен юлнă теççĕ ăна. Икĕ тӳпе унта: пĕри пысăк, тепри пĕчĕк. Кунтан пысăк çын иртсе кайнă тетчĕç.

## 268. Сăвăрлă тӳпе

Сăвăрлă тӳпе текенни те пур, Мелеспуç çĕрĕнчех. Унта ĕлĕкхи сăвăрсем (енлĕксем) пурăннă имĕш, халь вĕсем пĕри те çук. Унта халь хыр ӳсет. Ялăн кăнтăрпа хĕвел тухăç хушшинче пĕр икĕ çухрăм çурă ытларах çĕрте икĕ улăп тĕмиччĕ: пĕри пĕчĕкрехчĕ, халь ун палли те çук. Тепри çавăнтан 300—400 метрта. Вăл Гафури районне кĕрет, çав тĕмескесем пирки çапла калатчĕç: Улăп пĕр çăпатине пĕр енне, теприне тепĕр енне шакканипе пулнă. Пĕр çăпати тăвăртарах пулнă та, унта тăпри сахалтарах пулнă, çавăнпа тĕми те пĕчĕк. Тепĕр çăпати пысăк пулнă, вара тăпри те пысăк пулнă. Вăл халь те аякранах курăнать.

## 269. Сăвăр тĕми

Улăп тăприне Сăвăр тĕми теççĕ кунта, сăвăр кайăкран. Улăп пысăк çын пулнă тет, çăпатисене силленĕ тет.

## 270. Çатракасси патĕнчи улăп тăпри

Пирĕн ялтан инçех мар Çатракасси ятлă ял пур. Ĕлĕк-авал, çĕр çинче пирĕн пек çынсем пурăнма пуçличчен, улăпсем пурăннă теççĕ. Çав улăпсем пирĕн таврара та çӳренĕ имĕш. Вĕсем çинчен халĕ те халăхра халапсем çӳреççĕ.

Акă Çатракасси хирĕнче икĕ пысăк тĕмеске пур. Вĕсен хушши пĕр çухрăм чухлĕ пулать. Вăл уй-хир, сăрт-ту, вăрман урлă çӳресе ывăннăскер, канма ларсан хайхи пысăк çăпата ăшне кĕрсе тулнă тăпрана тăкса хăварнă теççĕ. Çавăнтан вара çав икĕ пысăк тĕмеске пулса юлнă имĕш. Таврари ялсенчи çынсем халĕ те çав тăпра тĕмескисене пырса кураççĕ, Улăп тăпри вăл теççĕ.

## 271. Икĕ ту пĕрпеклĕхĕ

Атăл хĕрринче Икĕ Тăван ятлă ту выртать. Çак ту историйĕ çинчен халăх хушшинче тĕрлĕ халап çӳрет.

Пĕрремĕшĕ: çав вырăнтан ĕлĕк-авал пĕр улăп иртсе пынă. Унăн икĕ çăпатине те тăпра кĕрсе тулнă тет. Улăп вара икĕ çăпатине те салтса тăприне силленĕ. Çавăнтан вара икĕ пĕр евĕрлĕ ту пулса кайнă тет.

Иккĕмĕшĕ: çак тусем вырăнĕнче тахçан икĕ тăван пулă тытса ларнă тет. Сасартăк вăйлă çил тухнă та, çак икĕ тăван çине пысăк çĕр куписем йăтăнса аннă. Çавăнтан пулать ĕнтĕ çак икĕ ту пĕрпеклĕхĕ теççĕ ваттисем.

## 272. Икĕ улăп хирĕçсе кайнă вырăн

Улатăр районĕнче вăрмансем нумайййине пурте пĕлеççĕ. Çав вăрман варринче пĕр тĕлĕнмелле вырăн пур. Ку вăл — улăп тăпри.

Пĕрре улăп пирĕн вăрмансенче аташкаласа çӳренĕ те канма ларнă. Ăна хирĕç тепĕр улăп килнĕ. Кусем иккĕш хирĕçсе кайнă. Вара пĕр улăпĕ теприне çĕр айне туса хурас шутпа çĕре ишнĕ, анчах çĕнтереймен. Вăт çав вырăнта вара пĕр пысăк тĕмеске пур, ун таврарах çырмаллăрах вырăн та пур.

## 273. Улăп пусса тунă лакăмлă вырăн

Эпĕ Станьял панчи Олăп тăпри çинчен илтсе. Çанта Олăп ларса каннă тет — лакăмлă вырăн пор. Çав олăп çĕр çине пĕрре поссан — çĕр анса ларнă теççĕ. Олăп пысăк çын полнă тет вăл ĕлĕк.

## 274. Улăп çăпатинчи тăпраран пулса кайнă сăмсах

Улăп Сĕвен тепĕр енĕпе пынă-мĕн. Тепле пулма пултарнă ĕнтĕ çакă, те вара асăрхаймасăртарах пуснă, ури унăн шуса кайнă. Ӳкессе вăл ӳкмен, унашкалли пулнă пулсан тăва çавнашкал пысăк хапа пĕр-пĕр çĕрте лапчăтса та хăварнă пулĕччĕ. Анчах ун пек паллă ниçта та çук. Кунта кăна

мар, нихăш çĕрте те ӳксе курман пулас вăл, мĕншĕн тесен Улăппа çакнашкал япала пулса иртнĕ тенине никам нихăçан илтмен. Хальхинче вара тепле майпа йăнăштарах пуснă та — ури якăринех шуса кайнă. Самаях вăйлă сулăннăран-тăр, çăпати çумĕнчи тăпри те вара ваштăрах хăйпăтăнса ывăтăннă. Юрать-ха вăл Сĕве çине лаплатса ӳкмен. Ун чух çавнашкал пысăк кумка ăна ним марах пĕвелесе та лартатчĕ. Тăпра, телее пула, шыв урлă ывтăннă та шăп та шай çак енчи çыран çумне килсе çапăннă. Вăйпа вирхĕнсе сăптăрăннăран пулас, вăл лаппипе чăмаккаланса мар, çĕр тăрăх сапаланса ӳкнĕ. Çавăнтан çакăнта тип-тикĕс сăмсах пулса юлнă та вара. Хăçан пулнă çакă — ăна никам та пĕлмест.

Халĕ ĕнтĕ çак ятарласах якатса тунă пек тӳп-тӳрĕ сăмсахра сакăр çĕр киллĕ Чапăрлă ялĕ сарăлса ларать.

## 275. Ик чĕреллĕ улăп тĕми

«Вăй хĕввинчен» инçех мар сăртлă вырăнта улăп тĕмески пур. Вăл ĕлĕкрех питĕ çӳллĕ пулнă теççĕ. Ун çине улăхса пăхсан таврари 12 ял курăнса тăнă пулать.

Ваттисем калана тăрăх, вăл çапла пулса кайнă. Çак вырăнта пĕр улăппаттăр пурăннă тет. Вăл пĕчченех пулнă имĕш. Ку паттăр ытти паттăрсенчен уйрăлса тăнă, мĕншĕн тесен вăл икĕ чĕреллĕ пулнă.

Пĕррехинче вăл çул çӳресе таврăннă хыççăн çак вырăна канма ларать. Каннă вăхăтра çăпатине шаккаса тасатать. Çав тăпраран вара улăп тăпри пулса кайнă теççĕ. Улăпĕ хăй ку вырăнта ăна çиме çитменнипе урăх çĕре тухса кайнă пулать.

## 276. Улăп тăвĕсем

Улăп питĕ пысăк çын пулнă тет. Унăн пуçĕ тӳпене перĕннĕ тет. Çынсем ун çумĕнче кăткăсем пек çеç пулнă тет.

Пĕррехинче, суха туса ывăнсан, улăп канма ларать тет. Çăпатине салтса унта тулнă тăпрана çĕрелле силлет тет. Çак тăпраран тусем пулса юлаççĕ тет. Çавăнпа вĕсене улăп тăвĕсем теççĕ.

## 277. Шупашкар патĕнчи Улăп тăпри

Кун çинчен мана кукамай каласа пачĕ. Улăп тăпри Шупашкара кĕнĕ çĕрте çул çинче пулнă. Халь вăл вырăнта вокзал. Эпир çавăнта пырса çăпатасенчен тăпрасене силлеттĕмĕрччĕ терĕ.

## 278. Апаш патĕнчи улăп тăпри

Апаш ялĕ çывăхĕнче халĕ те ту пекки пур. Унта улăпсем çăпатисенчен тăпрана силленĕ, вара ту пулса юлнă. Халĕ те унта тĕрлĕ япаласем тупаççĕ.

## 279. Патруй

Пĕр паттăр Улăп пынă чухне çав çырмана канма ларнă. Вăл çăпатине силленĕ тет те, вара çав вырăна сăрт пек вырăн пулса юлнă. Ячĕ вара паянхи куна та усранса юлнă. Патруй теççĕ çав çырмана. (Паттăр Улăп уйĕ имĕш).

## 280. Икĕ тĕмеске

Ĕлĕк-авал пирĕн тăрăхра питĕ вăйлă та пысăк паттăрсем, улăпсем, çӳренĕ, суха тунă, тырă вырнă тет.

Пĕррехинче пĕр улăпĕ çĕр сухаланă чухне лашине канма тăратнă та çăпатине тăпра кĕрсе тулнипе çăпатине салтнă тет, тăприне икĕ еннелле силленĕ тет. Кăшт вăхăт иртсен çак вырăнта икĕ тĕмеске пулса ларнă тет.

## 281. Хĕр тухйи

Пирĕн ял вырăнĕнче ĕлĕк-авал улăп пурăннă. Вăл Юман ятлă пулнă. Унăн питĕ хитре хĕр пулнă. Вăл та ашшĕ пекех сăпайлă çын пулнă. Хĕрĕ Савтепи ятлă пулнă.

Ĕлĕк çав пирĕн ял çумĕнчи Сакас вăрманĕнче хĕрсемпе яшсем вăйăсем ирттернĕ. Вăййисене вара вĕсем çурхи ĕç-пуç пуçтарăнсан ирттернĕ.

Çав Савтепи те вăййа кайнă тет. Малтан вăл вăйăсене тухса курман тет. Унта вăл пĕр каччăпа паллашнă, вăйă салансан тантăшĕсенчен кая юлнă. Тантăшĕсем яла таврăннă, Савтепи пирки манса кайнă. Вăл каччăпа çӳресе вăхăт иртнĕ пирки манса кайнă. Каялла вĕсем иккĕшĕ Шур çырми хĕррипе таврăннă. Каç тĕттĕмленсе килнĕ. Хĕрпе каччă пĕр-пĕрин çинчен куç илми пăхса тăнă. Сасартăк хĕр ури айĕнче çĕр уçăлса кайнă та, хĕр çĕр айне путса аннă. Каччă хĕре темĕн чул туртса кăларас тесе тăрмашнă, анчах та çĕр каччăна каялла хĕр тавăрса паман. Савтепине вăйăра чухне çĕр юратса пăрахнă пулнă тет.

Ялта та хĕре çухатнă. Пур çĕрте те шыраççĕ, анчах тупаймаççĕ. Аптранă енне чурачăксем Шур çырми тăрăх хăпараççĕ шыраса. Вĕсем çĕр çинче пĕр чипер каччă тăнсăр выртнине кураççĕ тет. Вăл хăйĕн икĕ аллипе хĕр тухйине тытнă. Вăл мĕн пулса иртнине каласа парӑть чурачăксене. Вара ял-йышсем Çĕре çапла кирлĕ пулĕ тесе шутлаççĕ. Питĕ кулянса яла таврăнаççĕ.

Çав вырăнта халĕ те хĕр тухйи евĕрлĕ вырăн пур. Вăл вырăна «Хĕр тухйи» теççĕ халĕ те.

## 282. Çимункас патĕнчи улăп тăпри

Улăп тăпри Çимункас ялĕ патĕнче пур. Питĕ çӳллĕ тăпри, пĕр çурт çӳллĕш пулĕ.

Асаттесем каласа панă тăрăх, çапла пулнă тет вăл.

Улăпсем вĕсем питĕ патвар, пысăк, çӳллĕ, сарлака çынсем пулнă тет. Урисем вара вĕсен пысăк пулнă тет. Çăпата тăхăнса çӳренĕ тет. Вĕсем те, пирĕн пекех, çăкăр çисе пурăннă тет. Ака тунă тет. Ака тунă чухне çăпатисем ăшне тăпра тула-тула ларнă тет те, вара улăпĕ çав тăприне силлесе хăварнă тет. Ун хыççăн вара пысăк тĕмĕсем юлнă тет. Кайран çĕрне темиçен пухăнса сӳренĕ тет. Пĕр виçĕ улăп пĕрле сӳренĕ тет. Ун чухне вара вĕсем тăприне харăс сӳренĕ тет. Çимункас ялĕ патĕнчи çӳллĕ вырăн шăпах çавăн пек нумайăн силленипе пулнă тет.

## 283. Улăп тĕмески

Ăна пирĕн асаттесем те калатчĕç-ха. Çав тери ĕлĕк пулнă та ĕнтĕ вăл ĕçĕ те.

Пурăннă тет амăшĕпе ывăлĕ. Вĕсем иккĕш те çав тери пысăк пулнă. Унăн ывăлне кĕрешнĕ чух никам та çĕнеймен.

Пĕррехинче ывăлĕ таçта тухса кайнă. Амăшĕ ăна темиçе кун хушши кĕтнĕ, анчах лешĕ час таврăнман. Амăшĕ шырама кайма шутлать.

Шырама тухса каяс тенĕ кун ывăлĕ çитсе кĕрет, амăшне хире тухса пăхма сĕнет. Хăй апат çиме ларать.

Амăшĕ тухса пăхать те тĕлĕнсе каять: темле çӳллĕ вырăн курать. Ывăлĕ ăна хăйĕн çăпатине салтса шакканипе çавăн пек пулни çинчен калать.

Вара çакăнтан «Улăп тĕмески» ят тухса каять. Ку тĕмеске пирĕн ялпа кӳршĕ ял хушшинче вырнаçнă. Ялсем хушши пĕр тăватă çухрăма яхăн.

## 284. Улăп тĕми

Улăп вилсен ун çине вара Улăп тĕми купалаттарнă, темĕн пысăкăш тума тăрăшнă. Чăвашсем авал ăçта-ăçта пурăннă, пур тĕле те çапла улăп тĕмисем купаласа хăварнă: ăçта патшисем çине, ăçта улăпĕсем çине, ăçта тата улпучĕсем çине те.

## 285. Улăп уй

Çав вырăнта вăрман питĕ пысăк пулнă. Кайран вара ăна касса çĕр тунă тет. «Çĕр çук, вăрман нумай пулнă. Мĕнле çĕр тăвас?» — тенĕ. Кайран вара çапла каса-каса çаралса юлнă, уй пулса тăнă.

## 286. Улăп Сĕве таврашĕнче çӳренĕ

Сĕве тăвĕ ахаль те çӳллĕ-ха, унта тĕллĕн-тĕллĕн тата ытларах хăпарса тăракан вырăнсем те пур. Уйрăммăн çĕкленсе тăракан вырăнсем, ту çинчи ту пекскерсем.

Улăп тĕмисем теççĕ вĕсене.

Ĕлĕк-авал кунта Улăп çӳренĕ-мĕн. Вăл çав тери пысăк пулнă, пуçĕ ун пĕлĕтех перĕнсе тăнă. Пĕрре хăлаçларĕ иккен — вунă-вун пилĕк çухрăм çук та хайхи. Тепĕр чухне ытларах та. Çапла хăватлă утăмлама пултарнă вăл. Ун ури пуснă тĕле кашнинчех тăпра тăкăнса юлнă. Çавсенчен вара каярах тĕмесем пула-пула тăнă.

Унта та, кунта та курăнаççĕ вĕсем, çав ыттисенчен расна хăпарса тăракан çӳллĕ вырăнсем. Сĕве леш майĕнче те, ку енче те. Апла пулсан самаях çӳренĕ пулас ĕнтĕ ку таврара Улăп.

## 287. Çĕнĕ Тăмлай патĕнчи улăп тăпри

Пирĕн ял çумĕнче икĕ Улăп тăпри вырăнĕ пур: çурçĕрти пысăкрах (ун çумĕнчех çăлкуç пур), кăнтăрти пĕчĕкрех. Эпир ача чухнех пурччĕ вĕсем. Сухаçă çăпата силлени вăл — улăп тăпри тетчĕç ваттисем. Суха

тунă чух Улăп çăпатине тулса ларнă тăпра вăл. Улăпĕсем çынсем çĕр çине киличчен пурăннă тесе калатчĕç. Пирĕн тăрăхра урăх Улăп тăпри вырăнĕ пур тенине илтмен.

Тĕрĕссипе, Улăп тăприйĕ ту çинчен юхса аннă тăпраран пулнă пулмалла. Улăп тăпри çумĕнче çӳллех мар сăрт — Туçи — пур. Темиçе çул, ĕмĕр хушши ишĕлсе пулнă тăпра пуль вăл.

Çĕр çумĕнчен çӳллĕрех вырнаçнă тĕмескесене те Улăп тăпри тенĕ.

## 288. Улăп тăпри

Авалах улăп ятлă пысăк çынсем пурăннă. Вĕсем çӳллĕшĕпе пĕлĕте çитнĕ, хăйсем патвар та вăйлă пулнă. Урисем вĕсен хальхи икĕ çурт пысăкăш пулнă. Çăпата ăшне тăпра тулсан вара çăпатине силлесе тасатнă. Çав вырăнсене тĕмескесем, улăп тăприсем, пула-пула ларнă. Ун пек вырăн пирĕн ялта та пур. Ăна Лапшу Çтаппанĕ хăйĕн урине силлесе хăварнă теççĕ.

# УЛĂПСЕМПЕ ÇЫХĂННĂ ТĔШМĔШ-ĔНЕНӲ

## 289. Улăп ачине кӳрентерме юрамасть

Ĕлĕк-авал, ял пуçланнă çулсенчех, ялти ачасем каçхине лашасем çитерме Кантăр кукри çырми çине кайнă. Вĕсем вут чĕртнĕ, улма пĕçерсе çинĕ, халапсем яркаласа вăхăт нумая кайнă.

Ачасен шыв ĕçесси килнĕ, анчах пĕри те шыва кайман, хăранă, мĕншĕн тесен ку вырăнта яланах çынсене темскер хăратнă. Пĕр каччă, Çумкка ятлăскер, пысăк, тĕреклĕ, ялта чи вăйлă ача пулнăскер, сиксе тăнă та пĕчченех шывалла уттарнă.

Нумаях та тăман — Çумкка кăшкăрма тытăннă: «Ачасем, килĕр-ха, вĕлерет!» — тенĕ. Ачасем хăраса лашисене утланса ларса ялалла вĕçтернĕ.

Кайран ялти ваттисем пуçтарăнса çав вырăна çитнĕ, анчах Çумкка ăнсăр выртнă, ăна пĕтĕмпех лучăрканă пулнă. Киле илсе кайнă, лешĕ ăна кĕрсен çапла каланă:

— Çырма хĕрне çитрĕм те шыв ăсма тытăнтăм. Пăхрăм та — хамран инçех те мар йывăç çумне тайăлнă та çарамас çын тăрать. Хăй манран аршăн ытла çӳллĕ, хулăн. Эпĕ каларăм: «А-а-а! Эсĕ мана хăратма килтĕним-ха! Эпĕ сана парăп!» — терĕм те пырса тытса çĕре ӳкертĕм ик-виç хут. Кайран хайхи тытăнчĕ мана тыллама! Çӳле йăтса илет те çĕре пăрахать, çӳле йăтса илет те çĕре пăрахать. Çапла виç-тăватă хут пăрахрĕ, кайран астумастăп мĕн тунине.

Çапла вара Çумкка виçĕ кунтан вилчĕ, çĕре кĕчĕ.

Куна ваттисем калатчĕç: «Вăл улăп ачи пулнă тетчĕç. Улăп вăл йăваш пулнă, никама та тивмен, усал ĕç туман. Çумкка хăй айăплă, хăй малтан пырса ăна тытса тăлпаланă, атту нимĕн те пулман пулĕччĕ», — тетчĕç.

## 290. Тĕтĕм витĕр Улăп курăнать

Чăвашсем чӳк тунă чух масар çине илсе пынă апат-çимĕç юлашкийĕсене кăвайт чĕртсе вутта пăрахаççĕ. Чăвашсем ĕненнĕ тăрăх, çав апат-çимĕç çуннă вăхăтра тĕтĕм витĕр вĕсене шурă тум тумланнă, кăвакарнă çӳç-пуçлă, пуçĕпе кăвак тӳпене перĕнекен, урисемпе çĕр çинче тăракан Улăп курăнать.

## 291. Вут-хĕм витĕр Улăп пики курăнать

Пирĕн енче темле калама та çук çӳллĕ тусемех çук. Çапах та вĕсене пирĕн халăх ту тесе калать. Пĕрне Валим хуçа тăвĕ теççĕ, вăл Пӳлер патĕнче. Теприне Хуралту тесе ят панă. Вăл Çарăмсан шывĕнчен ытла аякрах мар. Ĕлĕк-авал, Пăлхар саманинче, вĕсен тăрринче вут çунтарса тимĕр шăратнă тет. Виççĕмĕшĕ вара Киреметпуç ялĕпе Аксу хушшинче вырнаçнă, ăна Улăпту теççĕ. Çак тусене мĕн авалтанпах Улăп ура пуснă вырăнсем тенĕ. Вĕсен хушшисем вăтăршар çухрăма яхăн пуль. Улăп çапла пĕрре ярса пусмассерен вăтăршар çухрăм утнă тет. Пĕрисем тата çав Улăпту çине вунă икĕ паттăра пытарнă тесе калаçаççĕ.

Ĕлĕк, эпĕ ача чухне, çурхи тĕттĕм каçсенче çав Улăпту тăрринче вут хĕмĕсем вĕл-вĕл-вĕл варкăшса тăнине куратtăмăр. Ваттисем вара пире:

— Улăпăн савнă пики, Асамçă хĕр, çӳçне турама тытăнчĕ. Вăл ялан çапла, ваййа тухас умĕн, илемлĕ çӳçне варкăштарса çивĕт тăвать. Кам та кам çав пикене çывăхран курать, туранă чухне ӳкнĕ çӳç пĕрчине тупать, çав çын асамçă пулать, телейлĕ пулать, — тетчĕç.

Хăш-пĕр каччăсем вара çак пикене çывăхран курасшăн, унăн çӳç пĕрчине тупасшăн çĕрĕ-çĕрĕпе Сатук арманĕ патĕнче тип çырмара пытанса ларнă. Анчах Асамçă хĕре вĕсем пĕрре те çывăхран курайман тет, телей паракан çӳç пĕрчине те тупайман тет. Пике никама та хăй çывăхне яман тет, куçран çухалнă тет.

## 292. Улăпăн айпăлтипе хĕçĕ сăваплă теççĕ

Улăпăн çар хатĕрĕсем — айпăлтипе хĕçĕ — сăваплă теççĕ. Чăвашсем вĕсене халиччен чи хаклă япаласем вырăнне упраççĕ, ăçта та пулин ялта тытса тăраççĕ. Çуллахи чӳк вăхăтĕнче, çĕр хапхи витĕр тухнă чух, вĕсене çав хапха урлă хураççĕ. Тĕне кĕмен чăвашсен Улăп вилнине асăнса юн кун хăйсен аслă уявне (мун кунне) — Калăм кунне уяса иртте-рес йăла пур.

## 293. Улăп тăпри — мул тăпри

Лапшу Çтаппанĕ силлесе хăварнă тăпра асаттесемшĕн питĕ паха, хăватлă тăпра пулнă. Вĕсем çав асамлă тăпрана кашни çĕр праçникĕнче пĕрер ывăç илсе пахчасемпе анкартисене сапнă. Асатте вара калатчĕ: «Ку — мул тăпри», — тетчĕ. Çавăнпа та çырмана та Муллавар (Муллă вар) тетчĕç.

## 294. Ылтăн тăпра ятлă тĕмеске

Малтикас Шĕкĕр ялĕнчен инçех мар пĕр мăнă тĕмеске пур. Çак тĕмескене Ылтăн тăпра теççĕ. Ваттисем каланă тăрăх, çакăнта пĕр Улăп иртсе кайнă чух ыввăннипе ларнă пулнă канма, урине хывса тăприне шаккаса хăварнă пулать.

## 295. Улăпа кукамăшĕпе амăшĕн пиллĕхĕ вăй параççĕ

*(Салтак амăшĕн çырăвĕ)*

Çимăн ывăлăм, сан çинчен тĕлĕк куртăм. Эсĕ салтаксемпе çырмана хыпаланса анса кайрăн. Çав çырмаран каялла никам та тухмарĕ. Эпĕ сана çырмаран кăларас тесе тем чул хăтлантăм, ниепле те сана туртса кăлараймастăп. Кайран санпа пĕрле Улăп хăпарнă пек те калать пек: «Ан макăр, Окань, сан пилӳ Çимăн валли пин çуллăх, ман пек пурнĕ вăл халăха уй хапхине уçса. Пăх-ха ман çине, ман çинче те аннепе кукамай пиллĕхĕ. Вĕсен пиллĕхне никам та ку таранччен çĕнтерейменрĕ».

## 296. Сăвар улăпа пытарнă тĕме

Пирĕн ял çумĕнчи Сăвар тĕми çинче те юпа пур. Юпи халĕ персе аннă ĕнтĕ, çурри çĕр айне те пулнă. Çав юпа çине ăна чăвашлах çырнă тет кунта Сăвар ятлă улăпа пытарнă тесе. Вăл çырăва эпир вулаймастпăр, тутар муллисем вулаççĕ тет.

Сăвар вăл улăп пулнă тет. Пуçĕпе пĕлĕте перĕннĕ.

## 297. Улăп çинчен вăхăтсăр калама юрамасть

Ӳлĕм — Улăпăн малтанхи ячĕ. Ăна амăшĕ ачисем вилнипе Улăп тесе урăх ят панă...

Ах турă, сана Улăп çинчен каласа памалла марччĕ. Тарье инке те ун çинчен: «Ан кала вăхăтсăр», — тесе каласа хăварнăччĕ. Тем курăпăр ĕнтĕ...

## 298. Улăпсен йăхĕнчи виçĕ хĕр

Пĕррехинче Чĕмпĕрте улăпсен йăхĕнчи виçĕ хĕре кăтартнă тет. Вĕсем питĕ пысăк та илемлĕ пулнă тет, виççĕшĕ те пĕртăван пулнă тет.

## 299. Улăп куççулĕ çумăр пулса анать

Ĕлĕк-авал çĕр çинче улăпсем пурăннă. Ун чухне пĕлĕтсем çĕр çинченех çӳренĕ.

Çапла, çичĕ пĕртăван улăп пурăннă. Пĕррехинче вĕсем ĕçлеме кайнă. Чи кĕçĕнни пăртак юлхавланнă та пĕр кăпăшкарах пĕлĕчĕ çине выртса çывăрса кайнă.

Аслисем ĕçлесе килеççĕ те вăл çывăрнине курсан тарăхса каяççĕ ăна пĕлĕчĕ-мĕнĕпех çӳлелле çĕклесе тĕртсе яраççĕ.

Вăл вара вăранса каять те пăхать: аялта çĕр çук, пĕлĕтсем çеç ишсе çӳреççĕ. Вăл мĕн пулса иртнине ăнланса илет те пĕлĕт çинчен пĕлĕт çине чупкаласа çӳреме пуçлать. Анчах мĕн чул чупкаласа çӳресен те çĕр çине анаймасть вăл. Вара кӳреннипе вăл чăтаймасăр макăрса ярать. Унăн куççулĕ çĕр çине çумăр пулса анать. Чупса çӳренĕ чухне вăл атă кĕллипе пĕлĕтсем тăрăх шаккаса çиçĕм кăларать. Ун хыççăн вара аслати янăраса каять. Çапла вăл халĕ те пĕлĕт çинчех çӳрет.

## 300. Улăпа халăх куççулĕ ыйхăран вăратать

Пĕр паттăр Улăп тăван халăха ирĕке кăларма шухăш тытнă, халăх тăшманĕсене çĕнтерме ĕмĕтленнĕ, анчах усал-тĕсел йĕрĕхсем ырă çынна мар, ăна пусмăрлакан усал çыннах пулăшнă. Йĕрĕхсем çав Улăпа ĕмĕр вăранайми çывăрмалла тухатса хунă. Амăшĕ хӳхлесе макăрни те, ывăлĕсем кăшкăрса ĕсĕклени те вăратайман Улăпа. Пĕр çемье хуйхи çеç ăна вăратма пултарнă. Халăх куççулĕ юхан çырма пек юхсан, тăварлă юхăмсем пĕрлешсе хăватлă кĕрлекен пысăк юхан шыв пулса тăрсан, çав юхан шыв Сарă ту аркинчи тĕпсĕрлĕхе çĕр çĕмĕрттерсе тапса ансан тин вăранать-мĕн Улăп. Вăранать те тăшмансене çĕнтерсе хура халăха ирĕке кăларать...

## 301. Улăпа тĕп аслашшĕ вырăнне хураççĕ

Пирĕн мăн асаттесем Улăпа хăйсен тĕп аслашшĕ вырăннех хурса хисепленĕ. Вĕсем хальхи çынсем пекех ӳснĕ, ӳссе вăй илсе пирĕн çĕршыва сыхланă, вилнĕ. Вĕсем нихçан та пурлăха хапсăнман, ытти халăхсем çине нихăçан та малтан тапăнман тет, анчах вĕсем çине малтан тапăнакансене каçарман иккен. Çакăнтан ĕнтĕ пирĕн халăхăн ĕçченлĕхĕ, тăван çĕршывăмăра юратни.

# ЭПОСЛА ПОЭМĂСЕМ

## 1. САЛАМАЛИК

Арçын туйĕ евчĕ патĕнчен тухсан хĕр килне каять. Урам тăрăх юланутсемпе, тăрантассемпе юрласа каяççĕ. Арçынсем — юланутпа, хĕрарăмсем — тăрантассем çинче. Çула май виçĕ тапхăр чарăнса ташлаççĕ, халăха туй курма йыхăраççĕ.

Туй курма йыхăрса мăн кĕрӳ такмак калать:

Саламалик, тав сие!
Мĕн ĕçетĕр, мĕн çиетĕр?

Туй курса тăракансем: «Пыл та çу!» — теççĕ.

Е, тав сире, тантăш,
Хăта-тăхлач, хурăнташ,
Пике чура-юлташ,
Çĕнĕ хăта, хурăнташ!
Ватти пур, çамрăкки пур,
Арĕ пур, арăмĕ пур,
Атьăр пирĕнпе туя!
Урапа утан, сăмсапа сывлан,
Кутпа шăван — мĕн пур тăван.
Хушпу пурри, хушпу тăхăнăр,
Хушпу çукки, кăшкар тăхăнăр,
Сар пурри, сар çакăр,
Сар çукки, хупах çакăр,
Сурпан пурри, сурпан сырăр,
Сурпан çукки, тăла аврăр,
Ача пурри, ача çĕклĕр,
Ача çукки, тукмак çĕклĕр,
Тум тумланса сар çыхăр та
Атьăр пирĕнпе туя!
Пирĕн Ахмантей ывăл авлантарать,
Илмемет хăта хĕр парать.
Хайт! тесен хатĕр пулать,
Айт! тесен алтăр пулать.
Ыран та мар, паян та мар,
Халь те пулин халех
Атьăр пурте пирĕнпе туя!

Туй халăхĕ çапла юрласа-савăнса, выляса-кулса çĕнĕ хăта (хĕр ашшĕ) хапхи умне çитсе чарăнать. Качча каякан хĕрĕн ашшĕпе амăшĕ туй халăхне кĕтсе илме хапха умне тухаççĕ. Хĕрĕн амăшĕ сурпан çине çăкăр-тăвар лартса тухать, ашшĕ чĕреспе сăра илсе тухать.

Туя килнисем юрлама чарăнаççĕ. Мала мăн кĕрӳпе кĕçĕн кĕрӳ тухаççĕ, унтах, вĕсен хушшинче, чăн кĕрӳ тăрать. Чăн кĕрӳ çумĕнче икĕ енче ик-шерĕн тăвата кĕтес туса тăватă пуса каччи тăраççĕ. Хĕр ашшĕ мăн кĕрĕве алтăрпа сăра ăсса парать. Каччă енчисем лаша çинчех лараççĕ-ха, анмаççĕ.

Е, саламалик, тав сие!
Ĕçетре-çиетре, вылятра-кулатра,
Авалхи пек тăратра,
Çĕнĕрен йăла кăлармастра,
Пире хуш хурса хапăл тăватра?
Хапăл тăватăр пулсан — виçĕ утăм малалла,
Хапăл тумастăр пулсан — виçĕ утăм каялла.
Хапăл-и, хăтасем, тăхлачсем?

Хăта калать: «Хапăл тăватпăр, — тет, — пирĕнтен ирĕк сире туй тума», — тет.

Сиртен ирĕк пулсассăн
Эпĕ ачасене çаврăнса кăтартас тетĕп.
Халь пĕрре çаврăтăп та вара иккĕ çаврăтăп.

Вара мăн кĕрӳ, кĕçĕн кĕрӳ, чăн кĕрӳ тата пуса каччисем паçăр тăрса тухнă йĕркепе пĕрре çаврăнаççĕ те малтанхи вырăна пырса тăраççĕ. Хĕвеле май çаврăнаççĕ. Кусем çапла çаврăннă чух туй халăхĕ пĕр çавра юрă юрлать.

Хапăл тăватăр пулсан
Пĕр аллăрта пыл пултăр,
Пĕр аллăрта çу пултăр.

Унтан мăн кĕрӳ хăй аллинчи куркине ĕçсе парать, хăти ăна тепĕр хут тултарса парать, ку куркана мăн кĕрӳ чăн кĕрĕве парать. Кайран хăта кĕçĕн кĕрӳпе пуса каччисене, ытти туй халăхне ĕçтерме пуçлать. Хĕр амăшĕ пылпа çу сĕрнĕ çăкăр чĕлли парать. Ăна çамрăксен пурнăçĕ «пыл пек пылак та çу пек çăвак пултăр» тесе параççĕ. Мăн кĕрӳ ăна çурмалла хуçса пĕр татăкне хăй çиет, унтан чăн кĕрĕве парать. Вара çапла каласа пуç тайса салам парать:

Ватта — пуç, çамрăка — тав,
Тайăм пуçăм сире,
Хăта-тăхлачсем,
Хурăнташ-тăвансем!

Авалхинчен аван-и,
Малтанхинчен маттур-и,
Леш çулхинчен лайăх-и,
Кăçалхинчен чипер-и?

Эпир сире асăнни çичĕ çул,
Çула тухни виçĕ çул,

Йыш пуçтарни çичĕ çул,
Килме тухни виçĕ çул.
Асăннине астăваймарăмăр,
Каланă кун тухаймарăмăр,
Тухнă кун çитеймерĕмĕр.
Утсем ырхан пулчĕçĕ,
Çулсем хура пулчĕçĕ,
Атьсем айван пулчĕçĕ,
Çавăнпа çитеймерĕмĕр вăхăта.
Халь те шав сиккипе килтĕмĕр:
Çăмарта пек утсене
Нухайкка пек хăвартăмăр.
Урлă-пирлĕ çул пулчĕ,
Аташса çӳремелле пулчĕ.
Ан айăплăр ĕнтĕ, ырă хăтасем!

Туй халăхĕ ăна хирĕç: «Айăп тумастпăр! Кĕтсе хапăл тăватпăр! Хуш килĕрех!» — тет.

Пире кĕте-кĕте сирĕн
Ăснă сăрăр сĕвĕрĕлчĕ пуль,
Пиçнĕ яшкăр сивĕнчĕ пуль.
Кĕтнĕ хăнăрсем эпир пулсан,
Сивĕннĕ яшкăр ăшăнĕ,
Сĕвĕрĕлнĕ сăрăр тавăрăнĕ.
Эпир килес çул çинче
Туйра вăрман пит нумай,
Тĕнĕл пусĕсем çакланчĕçĕ.
Эпир килес çул çинче
Вуникĕ аршăн юр çунă.
Вуникĕ аршăн юра ишме
Çил çунатлă ут кирлĕ.
Çил çунатлă ута тытма
Кайăк чĕреллĕ çын кирлĕ.
Кайăк чĕреллĕ çынна пăхма
Чĕкеç чĕреллĕ хĕр кирлĕ.
Чĕкеç чĕреллĕ хĕр шыраса
Тăват кĕтеслĕ çут çанталăка
Тăват çул хушши тăватшар хут
Çаврăннă пирĕн ача.
Юлашкинчен çакăнта
Çаврăнса çитнĕ çав ача.
Эпир çавăн тивлечĕпе.
Эпир килмен сире хăратса,
Эпир килнĕ сире юратса.
Ан ярăрсам пире хăратса.
Айăп тумăр-и, ырă хăтасем?

Туй халăхĕ: «Айăп тумастпăр, тумастпăр! Хуш кĕтсе тăратпăр! Хапăл!» — тет.

Мăн кĕрӳ туй халăхне пĕр çавра юрлаттарать те малалла калать:

Айăп тумастăр пулсан,
Сар кайăк пек саркаланăпăр,
Аслан кайăк пек авкаланăпăр,
Хăлат кайăк пек хăпартланăпăр.
Айăп хуратăр пулсан,
Тăлăх тăрна пек тăп тăрăпăр.
Эй, хăтасем-тăхлачсем,
Каланă вăхăта çитеймесĕр,
Уйăх кĕттертĕмĕр чыспала.
Алтăр курки тулли пылпала.
Епле тупам-ши сирĕн кăмăлăра?

Туй халăхĕ мăн кĕрĕве такмак калама хушать: «Саламалик такмакне кала!»

Итлес-и-мĕн сирĕн сăмахăра?
Чунăм чухлĕ куратăп кăмăлăра.
Çитмĕл те çичĕ тинĕс уттипе,
Çитмĕл çухрăм çеçенхир хушшипе,
Утмăл çухрăм вăрман баррипе,
Урлă-пирлĕ çулсемпе килтĕмĕр эпир сирĕн пата.

Сĕм вăрман витĕр тухнă чух
Утмăл ултă упа ури куртăмăр,
Çитмĕл çухрăм çеçенхир урлă каçнă чух
Хĕрĕх те пĕр хĕрхи чĕрни куртăмăр.
Çеçенхирте — пăлан йĕрĕ,
Сĕм вăрманта — упа йĕрĕ,
Вăрман хĕрринче — кашкăр йĕрĕ,
Тарăн çырмара — тилĕ йĕрĕ,
Аслă урамра — хĕр йĕрĕ,
Çавсен йĕрĕпе килтĕмĕр.

Çитмĕл çухрăм çеçенхир урлă каçнă чух
Вуникĕ мăйракаллă пăлан кайăк
Пирĕн куçа курăнчĕ.
Унăн мăйракисем ылтăн,
Чĕрни вĕçĕсем кĕмĕл,
Хӳри вĕçĕсем çут кăлкан,
Тĕкĕ-çăмĕсем сар ука.
Мăйракипе пĕлĕте перĕнет,
Урипе çĕре перĕнмест.
Мăйракипе шăйрать те —
Тем вăрăмăш йĕр тăвать,
Чĕрнипеле пусать те —
Пире кайма çул тăвать,
Хӳри вĕçĕпе шăлса якатать,
Çавăн çулĕпе килтĕмĕр, хăта.

Çитмĕл çухрăм çеçен хир урлă каçсассăн,
Куçпа виçсе илейми,

Кайăк вĕçсе çитейми
Калама çук çӳллĕ ту куртăмăр.
Урлăшĕ утмăл çухрăм,
Çӳллĕшĕ çитмĕл çухрăм,
Сарлакăшĕ сакăр вун çухрăм,
Тăршшĕ тăхăр вун çухрăм.
Тăвĕ хĕвелпе йăлтăртатать,
Сивĕ çилпе шăлтăртатать.
Çав çӳллĕ ту çинче эпир
Хура çĕлен куртăмăр,
Çавна хăпарса тытрăмăр.
Çӳллĕ тусем çӳллĕ пулчĕç,
Хăпармашкăн йывăр пулчĕç.
Виçĕ кун та виçĕ каç
Хăпартăмăр çав ту çине.
Хура çĕлене вĕлертĕмĕр,
Хура тирне сӳтертĕмĕр,
Хура шĕлепке çаптартăмăр.
Хура шĕлепке хĕррисене
Вун икшер ярапа ярттартăмăр,
Вун икĕ ярапа тăррисене
Вун икĕ пус нухрат çактартăмăр.
Вун икĕ пус нухрат — куç çути,
Пирĕн ача — сирĕн кун çути,
Сирĕн хĕрĕр — пирĕн чун çути,
Çавсен тивлечĕпе килтĕмĕр.
Эй, хăтасем, тăхлачсем,
Тĕрĕс-и çак сăмахсем?

Туй халăхĕ: «Тĕрĕс, тĕрĕс!» — тет.

Çӳллĕ тусем хушшипе тухнă чух
Шурă кăтай чул куртăмăр,
Шурă кăтай чул çинче
Кĕмĕл старик куртăмăр.
Çав старик чал сухаллă,
Кĕмĕл çӳçлĕ, кĕмĕл саслă.
Сухалĕ çĕртен сĕтĕрĕнет,
Çав кĕмĕл старик шурă кăтай чул çине
Çыру çырать ăмăрт кайăк тĕкĕпе,
Çыру çырать ăмăрт кайăк юнĕпе.
Ыр курасса çырать шурăпа,
Хур курасса çырать хурапа.
Эпир çав старикрен чарăнса ыйтрăмăр:
«Саламалик, тав сие, асатте!
Çӳллĕ тусем çинчен ансассăн,
Çеçен хире тухсассăн,
Хăта килне çитме инçе-и?» — терĕмĕр.
Кĕмĕл старик кăмăлпа каларĕ:
«Сакăр вун сакăр сакăлта,
Тăхăр вун тăхăр тăнкăлта.

Çӳллĕ тусем çинчен ансассăн,
Çарăмсан урлă каçсассăн,
Çемçе çаран тĕл пулать.
Çарăмсанăн çаранĕнче
Хĕвелтен те çутă чечек пур.
Çаран урлă кантарса каçăр,
Улăх урлă уттарса каçăр,
Уй урлă юрттарса каçăр.
Хăта килне çитиччен
Çич сĕм вăрман витĕр тухмалла,
Çитмĕл çухрăм çеçен хир урлă каçмалла,
Çеçен хир урлă каçсассăн,
Тимĕр кĕпер урлă каçмалла,
Хура çĕленпе çапăçмалла пулать.
Пуçăннă ĕçĕр пĕчĕк мар,
Каяс çулăр çăмăл мар,
Ача маттур пулсассăн,
Хăвăр сатур пулсассăн,
Çитмĕл инкеке çĕнтерĕр,
Утмăл усала пĕтерĕр.
Кирлĕ кунта кирлĕ пулĕ,
Юман чукмар кирлĕ пулĕ.
Ман кунта пур хатĕрриех,
Асаттесем касса хуниех».

Çапла каларĕ те ăстарик
Пирĕн ачана пил пачĕ,
Юман чукмар тыттарчĕ.
Чукмарĕ пысăк иккен,
Тимĕртен йывăр иккен,
Тимĕр мар, хурçă иккен.
Аври кĕмĕл, тытки пăхăр,
Йывăрăшĕ хĕрĕх пăт,
Пăтĕнче хĕрĕх кĕренке.
Тата пире çав ăстарик
Çул тупса килме çыру çырса пачĕ,
Çавăн çырăвĕпе тупса килтĕмĕр.
Ăстарике ӳксе пуççапрăмăр,
Икĕ уринчен тытса тайăлтăмăр.
Тарлă утсене ташлаттарса
Килтĕмĕр вырăнтан хускалса.

Çӳллĕ тусем çинчен аннă чух
Çаранлăха çитсе кĕтĕмĕр.
Турă хушнипе, пӳлĕх пӳрнипе
Çӳлте вĕçекенсем турат çине,
Çĕртен кусакансем çерем çине
Ывăнсан канма лараççĕ.
Эпир хамăр — çĕртен çӳрекенсем —
Çерем çине ларса кантăмăр.

Çӳл ту хĕрри çаранлăх пулчĕ.
Ут çитерме юравлă пулчĕ.
Çаранлăхра — кăлканлăх.
Çаран ути ука пек.
Ытараймарăмăр улăх утине,
Ултă кун кантартăмăр утсене.
Утсем çаран ути çисе
Çăмарта пек сарăлчĕç.
Çаранлăхра кăлканлăх иккен,
Кăлкан айĕ çеçкелĕх иккен,
Çеçке айĕ çырлалăх иккен.
Çаранлăхра çырла пиçет-мĕн,
Çаран илемĕсене кӳрет-мĕн,
Çĕрте çырла шăрçа пек-мĕн.
Çупкăм-çупкăм çĕр çырли
Эпир татса çирĕмĕр.
Мухмăрларĕç пирĕн ачасем
Алса пӳрнески пек çырласем çисе.

Çырла çеçки айĕнче —
Улт ураллă хурт сасси.
Çакă хăта килĕнче —
Ырă çын ывăль-хĕр сасси.
Çавсен сассине илтрĕмĕр те
Айван ачасене вăратса
Тухрăмăр вырăнтан хускалса.
Çаранлăхран тухсассăн
Хăмăшлăха кĕтĕмĕр,
Хухă çулçине сирсе пăхрăмăр,
Хухă çулçи хушшинче
Тĕлĕнтермĕш куртăмăр:
Пĕр енчен пăхсан — савăнать,
Тепĕр енчен пăхсан — хурланать.
«Мана ялан илеççĕ-илеççĕ,
Хам яланах ӳссе пыратăп», — тет.
Мĕн япала-ши вăлă?
Çавна пĕлмесĕрех килтĕмĕр.

Туй тума пынă халăх: «Пĕве çитнĕ хĕр вăлă», — тет.

Симĕс курăка сирсе тухрăмăр,
Хăях хушшине хăйса кĕтĕмĕр.
Хăмăшпа хăях хушшинче
Юхлăх тăрăх юхан шыв
Шăнкăртатса юхса выртать.
Шывĕ тăрна куçĕ пек тăрă пулчĕ,
Юр ай сăри пек тутлă пулчĕ.
Ахах ятăмăр — путмарĕ,
Мерчен ятăмăр — юхмарĕ.
Çав шывпа мухмăрсене усрăмăр,
Улма чăпар утсене шăвартăмăр.

Урхамах пек утсен çилхисене
Йĕс турапа турарăмăр,
Сар укапа çитлерĕмĕр,
Хӳрисене тавăрса тĕвĕлерĕмĕр.

Ватăсене вырăна лартрăмăр та
Ик уринчен тытса тайăлтăмăр.
Урхамах утсене утланса
Тухрăмăр вырăнтан тапранса
Аслă çула тăрăх юрттарса.
Аслă çула тăрăх — çăкалăх.
Вăта çĕрне кĕрсен — йĕлмелĕх.
Йĕлмине касса ухă аврăмăр,
Йĕпписене шăмăран хыврăмăр
Ăраскалăмăра курсан персе тытма.
Аслă çул хĕрринче — çăкисем,
Вуник çăки ӳсет пĕр тĕмрен.
Тураттисем ӳснĕ хĕвел йӳней,
Çулçисем ӳкнĕ çил йӳней,
Пирĕн урхамахсем — туй йӳней.
Аслă çулпа килет аслă апус,
Улма чăпар учĕ — çул пуçĕ,
Йĕпкĕн хура учĕ — çул куни,
Тимĕр кăвак учĕ — кил куни.
Лаши-мĕнĕсем юставлă,
Урапи-кӳмисем пуставлă,
Пăхăр турти тăрăх тар юхать,
Кĕмĕл пĕкки витĕр пĕлĕт юхать,
Пурçăн çилхи витĕр çил вĕрет.
Çав апус çулĕпе килтĕмĕр эпир;
Аслă çул тусанне тустарса,
Çеçен хир урлă каçрăмăр эпир;
Утмăл çухрăм улăхпа килтĕмĕр эпир.
Утмăл çухрăм улăхпа килнĕ чух
Тĕл пултăмăр çавра кӳлĕ.
Çавра кӳлĕ тавра — сар чечек,
Сарă чечек тăрринче сарă кайăк
Ик çунаттине çапса авăтать,
Ларнă йывăççи вăль-вăль авăнать.
Çумăрпа ӳснĕ кĕпçешĕн
Антăмăр улăх варрине,
Ут кăкартăмăр сарă хăмăша.
Сарă чечексене сирсе тухрăмăр,
Хăях хушшине хăйса кĕтĕмĕр.
Хăмăшпала хăях хушшинче
Вăр çавракa кӳлĕ куртăмăр.
Çавра кӳлĕ варринче ылтăн юман,
Ылтăн юман çинче ылтăн йăва,
Ылтăн йăвара ылтăн çăмарта,
Ылтăн çăмарта çинче ылтăн кăвакал ларать.

Унăн сăмси ылтăн,
Чĕрни кĕмĕл, куçĕ мерчен,
Хӳри кăлкан, çунатти ука.
Çунаттипе çуппине çупать,
Сăмсипе кĕввине калать,
Урипе ташшине ташлать.
Унăн хĕрĕх çăмарти пур,
Хĕрĕх пĕрремĕш савăнать.
Эпир те хĕрĕхĕн килтĕмĕр
Хĕрĕх пĕрĕн пулса каясшăн.
Çĕнĕ йăла кăлармастпăр,
Ĕлĕкхи йăлана пăрахмастпăр.
Эпир кăна мар, вĕçен кайăк та
Турă хушнипе, пӳлĕх пӳрнипе
Мăшăрланса чĕпĕ кăларать.
Çав ылтăн кăвакал
Ылтăн йăвари çăмартине
Епле савăнса ăшăтать,
Эпир те сире çавăн пекех
Ăшшăн савса килтĕмĕр.
Айăп тумăсăринччĕ пире,
Ырă хăтасем, тăхлачсем!

Туй халăхĕ: «Айăп тумастпăр, айăп тумастпăр!» — тет.

Ылтăн юман тăрринче
Çунат çапса ташлакан
Ылтăн кăвакал пулман иккен,
Талай кӳлĕ патшин кĕçĕн хĕрĕ пулнă иккен.
Талай кӳлĕ патши ăна
Çичĕ çулта çичĕ хут кӳлĕрен кăларман,
Виçĕ çулта виçĕ хут тĕнче кăтартман,
Шав кӳлĕ тĕпĕнче хупса усранă.
Кăçалхи çулччен ăна
Этем ывăль-хĕрĕ мар,
Çӳлтен вĕçен ăлачăн та,
Шывран ишен çăрттан та,
Çӳлтен çӳрен уйăх та курман.
Кăçалхи çул çав пике-хĕр
Пирĕн ача ăрăсĕпе
Кӳлĕрен тарса тухнă.
Кӳлĕ патши ăна тухатса
Этем куçне курăнми кайăк кăвакалĕ тунă,
Кӳлĕ варринчи ылтăн юман çине
Ылтăн йăва çавăрма ирĕк панă.
Эпир те çав кайăк кăвакал пек
Турă хушнипе, пӳлĕх пӳрнипе
Йăва çавăрса пурăнма шутларăмăр.
Эпĕ каламастăп, пирĕн ача калать.

Пирĕн ача маттур Аймет пур,
Йĕлмерен авнă уххи пур,

Шăмăран хывнă йĕппи пур.
Пирĕн ача йĕлме уххине карăнтарчĕ те
Çав кăвакал персе те тытрĕ.
Кăвак мăйлă кăвакал
Пике чура-хĕр пулса та тăчĕ.
Пичĕ-куçĕ çăлтăр пек,
Куç харшийĕ хăнтăр пек.
Аршăн çурă пĕвĕ пур,
Ылтăн ука çӳçĕ пур,
Кĕмĕл черкке куçĕ пур,
Сĕтрен шурă ӳчĕ пур,
Шывран таса чунĕ пур.
Тарай тутри — пуçĕнче,
Ылтăн тури — аллинче.
Пике чура-хĕр пире каларĕ:
«Вун икĕ мăйракаллă кӳлĕ патши
Çак кӳлĕре пурăнать.
Вун икĕ мăйраки тăрринче
Вун икĕ кӳлĕ пур.
Вун икĕ кӳлĕре вун икĕ кăвакал,
Вун икĕ кăвакалăн вун икшер çăмарта.
Çав кӳлĕ патши манăн атте пулать,
Вуникĕ кăвакал — унăн вун икĕ хĕрĕ.
Çав кӳлĕ патши
Хура халăха хур кăтартать,
Çулсеренех чӳк ыйтать.
Çулсерен чӳк памасан,
Хура пăрлă çумăр кăларать,
Кӳлле тытса тăракан
Хĕрĕх те пĕр таса хирти
Çитмĕл те çич тĕслĕ таса курăка
Типĕтсе хăртса лартать,
Хура халăха хур тăвать.
Эпĕ ăна итлемерĕм, йӳплемерĕм,
Хура пăрлă çумăр тумарăм,
Ырă ăшă çумăр кăлартăм.
Çавăншăн мана çилленчĕç,
Çилленчĕç те тухатрĕç.
Кӳлĕ вăкăрĕн вун икĕ мăйрака,
Вун икĕ мăйраки вун икĕ пуç çинче,
Вун икĕ пуçĕнче — вун икшер çăвар,
Вун икĕ çăварĕнче — вун икĕ чĕлхе,
Вун икĕ чĕлхе тăрринче — вун икĕ кӳлĕ.
Çав вун икĕ кӳлĕрен пĕр кӳллине
Кайăк кăвакалĕ туса ячĕç.
Вун икĕ çул юман тăрринче лартăм,
Вун икĕ çулта вун икĕ чун курмарăм,
Савăнса кулса курмарăм.
Кăçалхи çул çак ача килсе
Тухатнинчен хăтарчĕ.

Ача маттур Аймет пур,
Çавăншăн сана ыр тăвассăм пур,
Пӳлемĕк парса хисеплессĕм пур.
Каяс çулăрсем çу пултăр,
Пурăнассисем пыл пултăр,
Вăрăм çулăрсем кĕске пултăр!
Ăраскална çитсе тытмашкăн
Çил çунатлă урхамах, пил сана!
Туй халăхне авалхи йăлапа
Выляса-кулса, савăнса туй тума
Ултă кĕтӳ ут сана!
Учĕсем йĕвенлĕ-йĕнерлĕ, йĕс таканлă,
Йĕнер пускăчисем — йĕс пустарнă.
Çав çил çунатлă ута утланайсан,
Ăраскалу пулĕ аллунта.
Çил çуната тытса утланаймасан,
Ăраскалу юлĕ асăнта».
Çапла каларĕ те пике чура-хĕр
Каллех кăвакал пулчĕ те,
Кӳлĕ хумне хумхантарса,
Туй халăхне хуйхантарса
Кӳлле кĕрсе çухалчĕ.

Пике чура-хĕр ирĕкĕпе,
Турă-пӳлĕх пӳрнипе
Кӳлĕ шывĕ хумханса кайрĕ,
Хура хăмăш тайăлчĕ,
Вĕçен кайăк шуйланчĕ,
Пĕтĕм тĕнче тапранчĕ.

Кӳлĕ варне пăхрăмăр та —
Улма чăпар ут куртăмăр:
Çил çунатлă çилхи пур,
Çамки çинче хушки пур,
Çитмĕл тĕслĕ çăрхи пур,
Утмăл тĕслĕ утти пур.
Çилхи витĕр çил вылять,
Хӳри витĕр хум вылять.
Çил çунат ут çӳрет çиçкĕнсе,
Ылтăн çилхисене çиçтерсе,
Кӳлĕ хумĕсене кустарса.
Пуçĕсем çӳллĕ —пĕлĕте перĕнеççĕ,
Урисем вăрăм — çĕре тивмеççĕ.
Пуçне тытма ал çитмест,
Утни-юртни сисĕнмест,
Шыв пек юхать, çил пек вĕçет.
Ылтăн-кĕмĕл йĕнерлĕ,
Йĕнер-йĕвенĕсене йĕсленĕ,
Кутлăхĕсене кĕмĕлленĕ.
Пăхăр хырăмсалăхĕ ĕнчĕллĕ,
Антăрлăхĕ мерченлĕ,

Тӳртлӗхӗсем тӗрӗллӗ,
Тӗрри ҫӗвви ахахлӑ,
Урхалӑхӗ улмаллӑ.
Йӗс пустарнӑ йӗнерӗ пур:
Йӗнер пуҫӗсем ылтӑнран,
Пускӑчисем кӗмӗлтен,
Ёсенкисем ӗнчӗрен.
Сахьян такмак — ҫумӗнче,
Кӳмӗлтӗрӗк — тӳшӗнче,
Хӑмҫи — ҫумӗнче, кутлӑхӗ — ҫиййӗнче.
Нӑхти — пурҫӑн, йӗвенӗ — шур чӗн,
Ҫӑварлӑхӗ йӗкӗр, шапи пӑхӑр.
Чӗн чӗлпӗрне йӗсленӗ,
Йӗнер ункинчен витернӗ.
Урхамахӗ — улма чӑпар,
Мӑйӗ — акӑш, хӑлхи — хӑмӑш,
Ури — сакӑл, ӑмри — чакӑл,
Ҫилхи — ука, хӳри — кӑлкан,
Куҫӗ пӑхӑр, пуҫӗ ылтӑн,
Тӑлпӑвӗ тимӗр, чӗрни чӗкӗ,
Таканӗ кӗмӗл, тӗсӗ шур пӑвӑр.
Урхамах учӗ шӑмарать, тулхӑрать,
Хӑлхисене калла пӑрахать.
Пуҫӗ — пӗлӗтре, ури — ҫӗртре,
Шыв пек юхать, ҫил пек вӗҫет,
Утни-юртни сисӗнмест.
Ҫил ҫунатлӑ ҫӑрха ҫӑрхаланине
Ҫичӗ ҫунатлӑ кайӑк ҫитеймест.

Ҫил ҫунатлӑ урхамах хыҫӗнчен
Ҫӳрен утсем тухрӗҫ ҫиҫкӗнсе,
Ылтӑн-кӗмӗл ҫилхисене ҫиҫтерсе.
Утмӑл ҫухрӑм улӑхра
Ултӑ кӗтӳ ут юртать:
Турӑ учӗсем тулхӑраҫҫӗ,
Хура ҫӑрхисем ҫӑрхалаҫҫӗ.
Пурҫӑн йӗвенӗсем пуҫӗсенче,
Вун икӗ урлӑ кутлӑх ҫиййӗсенче.
Йӗвенӗсем хӗвелпе йӑлтӑртататъ,
Чӗлпӗрӗсем ҫилпе чӑнкӑртататъ.
Таканӗсем вут-хӗм кӑларать,
Ҫеҫен хир тусанне тустарать.

Лашисене тытрӑмӑр туррисене,
Тӑватӑ ури сакӑллисене.
Утлантӑмӑр пӑхрӑмӑр — утти пур,
Юрттартӑмӑр пӑхрӑмӑр — юртти пур,
Ҫӳретрӗмӗр пӑхрӑмӑр — ҫӑрхи пур.
Утланнӑ учӗсем хура кӑтра,
Хӳри-ҫилхисем ҫӑра пӗтре,

Ыткăнайрĕç — эпир утлансассăн.
Çав утсене сиксе утлантăмăр та
Килтĕмĕр çаканта туя.
Утмăл та ултă çухрăм
Сĕм вăрман хушшипе
Утсене уттарса килтĕмĕр.
Сĕм вăрманта çил-тăвăл тапранчĕ,
Çич çĕр çулхи юмансене
Çил çĕмĕрсе пĕтерчĕ.
Уткуçленсе çумăр ячĕ,
Çитмĕл те çичĕ çырма
Çырантан тухса кайрĕ,
Сĕм вăрмана шыв илчĕ.
Ниçта кайма пĕлмерĕмĕр,
Шалт аптраса пĕтрĕмĕр.

Пăхкаларăмăр та курах кайрăмăр:
Пирĕн умра питĕ тарăн çырма пур иккен.
Çавă тарăн çырма урлă
Çĕр çĕклейми тимĕр кĕпер пур иккен.
Çĕр çĕклейми тимĕр кĕпер çинче
Улăха урлă утмăл чалăш,
Çарана йўней çитмĕл чалăш
Авкаланса выртать хура çĕлен.
Çичĕ хăлаç — çўллĕшĕ,
Ултă хăлаç — урлăшĕ,
Тăхăр чалăш — тăрăшшĕ.
Авкаланать, явкаланать,
Ахăрать, какăрать.
Çав аçтаха-çĕленĕн — çичĕ пуç,
Çичĕ пуçĕ çичĕ çĕрте тăраççĕ,
Çиччĕшĕ çичĕ çула сыхлаççĕ,
Пире иртсе килме памаççĕ.
Çичĕ пуçĕнче — çичĕ çăвар,
Çичĕ çăварĕнче — çичшер асав,
Асавĕпе шак-шак тутарать,
Çăварĕнчен çулăм кăларать.
Йывăç-курăка çунтарать,
Кĕпер патне яхăнне те ямасть.
Çав аçтаха-çĕленрен
Вĕçен кайăк вĕçсе иртеймест,
Тискер кайăк тарса ўкеймест:
Хыпать çăтать, çиет те ярать.
Ниçта кайма аптрарăмăр:
Урлă сиктерме тăтăмăр —
Сиктерсе каçаймарăмăр,
Тавра çаврăнас терĕмĕр —
Çаврăнса тухаймарăмăр.
Питĕ инçе каймалла пулчĕ,
Тăхăр çухрăм тăршшĕне

Тăххăр çаврăнмалла пулчĕ.
Тăхăр çухрăма тăххăр çаврăнтăмăр,
Çапах çаврăнса тухаймарăмăр.
Аçтаха-çĕленрен хăпаймарăмăр.
Юрать-ха пирĕн ачан
Пăлат-хурçă хĕçĕ пулчĕ,
Хурçă хĕçĕ çивчĕ пулчĕ.
Çав хĕçпе çиччĕ сулса пирĕн ача
Çĕленĕн çичĕ пуçне те касса татрĕ,
Купăста туранă пек турарĕ,
Хура юнне юхтарчĕ,
Вăрăм шăммине çĕмĕрчĕ.
Юрать-ха тата пирĕн ачан
Кĕмĕл старик парса янă
Юман чукмар ал айĕнче пулчĕ.
Çав чукмарпа вара çĕлене
Хуплу тулĕ пек сартăмăр,
Кут айĕнчи минтер пек çемçетрĕмĕр.
Ĕненмесен, хăтасем, тăхлачсем,
Ӳркенмесĕр хăвăр кайса пăхăр:
Хăта нӳхрепĕнчи кăрчама
Епле вăйлă чашкăрса ларать,
Çавăн пекех чашкăрса выртса юлчĕ.
Çав çĕленпе çапăçнă чух
Тăхăр вунă юпа тайăлчĕ,
Тимĕр кĕпер кашти авăнчĕ,
Тимĕр кĕперĕ йăванчĕ.
Ултă хут сарнă хăмисем
Икĕ пуçĕнчен çурăлчĕç,
Вăта çĕрĕнчен хуçăлчĕç.
Çĕнĕрен сăвай çапмалла пулчĕ,
Çĕнĕрен кашта хывмалла пулчĕ,
Çĕнĕрен хăма сармалла пулчĕ.
Çĕнĕрен кĕпер хывса
Пайтах вăхăт irттертĕмĕр,
Çавăнапа вăхăта çитеймерĕмĕр.
Айăп тумăсăринччĕ, хăта-тăхлачсем!

Туй куракансем, туй халăхĕ: «Айăп тумастпăр, айăп тумастпăр!» — теççĕ.

Калама çук чаплă кĕпер хыврăмăр,
Икĕ вĕçне икĕ тĕнчене турăмăр.
Тăршшĕне тăхăр вунă юпа çапрăмăр,
Сарлакăшне сакăр вунă хăма сартăмăр,
Юписене тимĕртен тутартăмăр,
Карлăкĕсене кĕмĕлпе кустартăмăр,
Хăмисене ылтăнтан сартартăмăр,
Каштисене хурçăран хывтартăмăр.
Ут пусмассайра* вăль-вăль авăнать.

---

* Пусмассерен.

Çын пусмассайра ян-ян янăрать.
Ик айккипе ик çĕр улмуççи чĕртрĕмĕр:
Пурте çитмĕл çичшер туратлă,
Туратсайра — сарă кайăк йăвисем,
Йăвасайра — çичшер çăмартисем;
Улмисем ылтăн, çулçисем кĕмĕл;
Çулçисем çуппине çупаççĕ,
Улмисем ташшине ташлаççĕ,
Сарă кайăксем юррине юрлаççĕ,
Сарă çăмартисем савăнса выртаççĕ.
Эпир çавсен юррине юрласа савăнма,
Çавсен ташшине ташласа савăнма
Çĕнĕрен кĕпер хывса
Килтĕмĕр çакăнта туя.
Эпир килтĕмĕр сире юратса,
Кĕтетĕр-ши пире юратса?

Туй халăхĕ: «Кĕтетпĕр, юратса хапăл тăватпăр», — тет.

Эпир каçса килнĕ чух
Кĕпер кашти авăнчĕ,
Хăми пуçĕ çурăлчĕ,
Тимĕр юпи тайăлчĕ;
Эпир каялла кайнă чух
Кĕпер кашти авăнĕ-ши,
Хăми вĕçĕ çурăлĕ-ши,
Тимĕр юпи тайăлĕ-ши?

Мăн кĕрӳ кунта парне нумай памаллине, хулăм нумай тӳленине систерсе калать. Туй халăхĕ: «Авăнать, авăнать! Тайăлать! Тайăлма çеç мар, йăванать!» — тет.

Çав кĕпер пит вăрăм пулчĕ,
Урлă каçса килнĕ чух
Ут таканĕсем татăлса пĕтрĕçĕ,
Утсем такăнакан пулчĕçĕ.
Çеçен хирпе кайсан-кайсан
Пирĕн куçа тимĕрç лаççи курăнчĕ.
Çав тимĕрçĕ лаççине çитиччен
Тăхăр талăк сунтал сассипе килтĕмĕр,
Çичĕ талăк сĕрĕм витĕр килтĕмĕр,
Виçĕ талăк вут çутипе килтĕмĕр.
Пирĕн ачасем те аптрарĕçĕ,
Утсем те шăмара пуçларĕçĕ.
Эпир, çав тимĕрçĕ лаççине кĕрсе
Супнă утсене таканлаттартăмăр,
Мăкалнă хĕçсене туптаттартăмăр.
Çав тимĕрçĕ лаççинче
Татăк кутлă тимĕрçсем
Тапса такан туптарĕç.
Тимĕрçисен вĕркĕчи пит пысăк иккен,
Хĕрĕх хăлаç пысăкăш иккен,

Ăна хĕрĕх вăкăр тирĕнчен тунă иккен.
Çак хăтасен вун ик çулхи вăкăрĕ пур,
Çак вăкăр хашлатса шăмарнă пек
Хашлатса тăрать çав вĕркĕчи.
Вучаххинче вучĕ вăйлă иккен.
Çак хăта пирĕн туй халăхне кĕтсе вăкăр пуснă.
Вăкăрне урараи ўкерсе, çĕçĕ лартса,
Чун татса юн тăкнă.
Çав вăкăр юнĕ юр çинче
Епле хĕрлĕн курăнса тăрать,
Çав вучах та çавăн пек хĕрелсе çунать.
Тимĕрçĕ лаççи умĕнче
Тăвата кĕтеслĕ, сакăр ункăллă,
Сакăр кăшăллă тăвата юпа пур иккен.
Юпи кĕмĕл, уки ылтăн.
Çав юпаран утсене кăкартăмăр,
Ылтăн таканапа таканлаттартăмăр.
Тимĕрçĕсене тав туса
Килтĕмĕр çакăнта васкаса.

Çак хăтасен ялне çитесси
Çитмĕл çухрăм ытлаччĕ,
Хăта килне çитесси
Хĕрĕх çухрăм ытлаччĕ.
Çак хăтасен кил-çурчĕ
Пирĕн куçа курăнчĕ,
Хула пекех туйăнчĕ.
Çак хăта туя хатĕрленсе
Кăмака хутса кăларнă иккен,
Кăмакине хуплу хунă иккен.
Çав хуплу шăрши
Тăхăр çухрăм тăршшĕне,
Сакăр çухрăм сарлакăшне
Талккишĕпех сарăлнă иккен.
Çав хуплу шăршипе
Утсене кустарса килтĕмĕр.
Тăхăр кунта тăхăр ту çи урлă,
Сакăр кунта сакăр сакăлта урлă,
Çичĕ кунта çичĕ çырма урлă
Чупан кайăк пек чуптарса,
Вĕçен кайăк пек вĕçтерсе,
Урхамах утсене кустарса
Çитрĕмĕр çак хăта патне
Çав тутлă хуплăва тутанса пăхма.
Çитрĕмĕр çак хăтасен тĕлне,
Хăта çурчĕ — хула пек:
Пăхсан ăнран каймалла.
Хуралчĕсем тавралла
Çичĕ хут хўме хўтернĕ.
Çав хўме тавралла

Çиччĕ çаврăнтăмăр,
Ниçтан кĕме пĕлмерĕмĕр.
Çакă пирĕн хăта
Çичĕ хӳме хушшине
Çичĕ хапха кастарнă.
Хапхисем хĕрӳ хĕвелпе йăлтăртататть,
Çил-хĕвелпе шăлтăртататть.
Чĕркуççипе тапсан — уçăлать,
Чĕркуççипе тапсан — хупăнать.
Хапха хуппи — кĕленче,
Хапха тăрри — тĕренче.
Çийĕ калай, тăпси пăхăр,
Юпи мерчен, эрешĕ черчен.
Тыткăчисем кĕмĕлтен
Тăпси пăхăр, шашулкки ылтăн, сăлăпĕ тимĕр.
Пирĕн маттурсем çав хапхана
Çичĕ кун пуçĕпе сĕкрĕçĕ,
Çичĕ кун кучĕпе тĕкрĕçĕ,
Çичĕ кун хулпуççипе хирчĕçĕ,
Çавах уçаймарĕçĕ.
Шалтах халран кайрăмăр,
Ниçтан кĕме аптрарăмăр.
Такмакăма каласан
Хапхи хăех уçăлчĕ.
Хăта пире хапăл туса
Хапха уçса кĕтсе тăрать.
Эй, хăтасем, тăхлачсем!
Çав виç хапхаран пĕр хапхи
Пире уçса кĕрсе кайма пулмĕ-ши?
Эпĕ ыйтмастăп — пирĕн ача ыйтать.

Туй халăхĕ: «Ирĕк, ирĕк!» — тет. Вара пысăк хапхана уçаççĕ. Туй пуçĕпе хĕр ашшĕ сăра куркисем улăштараççĕ. Туй пуçĕ хăй илсе килнĕ сăрана хăтине парать, хăти хăй сăрине туй пуçне парать. Мăн кĕрĕве, чăн кĕрӳпе кĕçĕн кĕрĕве, пуса каччисене те хапха умĕнче курка тыттараççĕ. Пурте малтан сăрисене кăштах хапха юпи патне тăкаççĕ, унтан ĕçсе яраççĕ. Вара кил картине кĕреççĕ. Мăн кĕрӳ:

Сиртен ирĕк пулсассăн,
Эпĕ ачасене тепре çавăрса кăтартас тетĕп, —

тет. Вара малтанхи йĕркепех пурте кил карти тавралла çаврăнаççĕ. Мăн кĕрӳ пусма умне пырса тăрать. Туй халăхĕ çаврăннă чух юрлать. Çаврăнса пĕтерсен туй халăхĕ туй йыш хыçнерех тăрать.

Çак хăтасен картиш пит пысăк иккен:
Тăршшĕ тăхăр вунă хăлаç,
Сарлакăшĕ сакăр вунă хăлаç,
Урлăшĕ утмăл хăлаç.
Тăхăр вунă хăлаç тăршшĕнче
Тăхăр вун тăхăр юпа пур,
Сакăр вун сакăр кăшăл пур,

Утмăл ултă ункă пур,
Ут кăкарма хатĕрлесе хунă.
Çав утмăл ултă ункăран пĕр унки
Пирĕн супса килнĕ утсене
Кăкарса кантармашкăн пулмĕ-ши?
Эпĕ ыйтмастăп — пирĕн ача ыйтать.
Эпир кăна мар,
Вĕçсе пыракан ăмăрт кайăкĕ те
Турă хушнипе, пӳлĕх пӳрнипе
Уртăш йывăççи çине ларса канать.

Туй халăхĕ: «Пиртен пулсан чару çук! — тет. — Кăкарса кантарăр!» — тет. Вара пурте юлан ут çинчен анаççĕ, утсене тăвараççĕ, кăкара-кăкара хураççĕ. Мăн кĕрӳпе туй йышĕ юлан ут çинчен анаççĕ те çавăнтах тăраççĕ. Тăвата пуса каччи те çавăнтах юлать. Ытти туй халăхĕпе пуса каччисем лашасене лупас айне кайса тăратаççĕ.

Пăхкаларăм та курах кайрăм:
Хĕтан картиш варринче
Тата виçĕ юпи пур иккен,
Юписем ахаль юпа мар иккен:
Пĕр юпи пăхăртан,
Тепĕр юпи кĕмĕлтен,
Виççĕмĕшĕ — çут ылтăн.
Çӳлĕшĕсем — çичшер хăлаç,
Кĕтессисем — сакăршар кĕтес.
Пĕр кĕтесси çыруллă,
Тепĕр кĕтесси тĕрĕллĕ.
Çыруне вуласа пăхрăм та —
Хĕта пире хуш хурса хапăл тăвать иккен.
Тĕррине вуласа пăхрăм та —
Асатте-асаннесен йăлипе
Туй туса савăнмалла иккен пирĕн.
Эй, хĕтасем, тăхлачсем!
Тĕрĕс-и çак сăмахсем?

Туй халăхĕ: «Тĕрĕс, тĕрĕс! — тет. — Пиртен тухнă йăла мар», — тет.

Çак хĕта ырă кăмăллă иккен,
Хура халăха туя йыхăрма
Виçĕ юпа тăррине
Виçĕ кайăк лартнă иккен.
Тăхăр юпи тăрринче
Тăхăр куккук авăтса ларать.
Çунатти вĕçĕсем пăхăр,
Чĕрни вĕçĕсем кĕмĕл,
Сăмси вĕçĕсем ылтăн.
Çуначĕпе çапать,
Урипе ташлать,
Сăмсипе кĕвĕ калать.
Ырă хăнасене йыхăрать,
Усал хăнасене хуйхатать.

Ырра курсан — авăтать,
Усала курсан — нартлатать.
Эпир çавăн юррипе,
Çавăн ташшипе,
Çавăн кĕввипе
Авалхи йăлапа туй тума килтĕмĕр.

Кĕмĕл юпа тăрринче
Кĕмĕл кăвакал нартлатать.
Çунатти вĕçĕсем кĕмĕл,
Ури вĕçĕсем пăхăр,
Сăмси вĕçĕсем ылтăн.
Кăвакалĕ хăла, măйĕ ула,
Çуначĕпе çупать,
Урипе ташлать,
Сăмсипе кĕвĕ калать.
Ырă хăнасене нартлатса йыхăрать,
Усал хăнасене картлатса хăратать.
Эпир çавăн кĕввине,
Çавăн ташшине,
Çавăн юррине илтсе килтĕмĕр çакăнта
Авалхи пек туй туса савăнма.

Ылтăн юпа тăрринче
Ылтăн ăмăрт кайăк,
Пире хапăл йыхăрать çав кайăк.
Çунатти вĕçĕсем ылтăн,
Сăмси кĕмĕл, тĕкĕ мамăк,
Куçĕ мерчен, сасси черчен.
Çунаттипе çуппине çупать,
Урипе ташшине ташлать,
Сăмсипе вăйă калать.
Ырă хăнасене авăтса йыхăрать,
Усал хăнасене картлатса хăратать.
Эпир çавăн юррине,
Çавăн ташшине,
Çавăн вăййине илтсе-вĕренсе
Авалхи йăлапа туй тума килтĕмĕр.

Çав виçĕ юпа çинчи виçĕ кайăк
Пире туя йыхăрса
Виçĕ çул сиксе авăтаççĕ,
Хуш хурса хапăл тăваççĕ.
Эй, хăтасем, тăхлачсем,
Эсир пире хуш хурса
Хапăл туса тăратра?
Эп ыйтмастăп — пирĕн туй халăхĕ ыйтать.

Хĕр туй халăхĕ: «Хапăл тăватпăр! Хуш, хуш!» — тет.

Пирĕн туй халăхне кĕрсе савăнма
Çакă хăтан çурчĕ пит пысăк иккен.

Пирĕн хăта çак çурта çавăрма
Çĕр çитмĕл пĕрене кастарнă,
Çĕр çĕклейми шур пӳрт ларттарнă.
Çĕр çĕклейми шурă пӳрт çине
Пӳ çитерсе пӳс виттернĕ,
Чун çитерсе чус виттернĕ,
Вăй çитерсе шуç виттернĕ,
Симĕс кăвакпа сăрлаттарнă.
Симĕспе кăвак илемне
Чăпар кайăк иленнĕ.
Чăпар кайăкĕ кил сыхлать,
Сарă тулă хыпать, шыв сыпать,
Çакă пирĕн хăта мĕн тăвать?
Шурă сахăр хыпать, сим сыпать,
Çавă симне тутанма
Паянхи кун туй пуçлать.
Илмемет хăта пӳрчĕ тăрринче
Ама кайăк авăтать,
Ахмантей хăта пӳрчĕ тăрринче
Аçа кайăк авăтать.
Эпир çав кайăксен вăййипе
Çакăнта тухса килтĕмĕр.
Мĕншĕн авăтаççĕ-ши çав кайăксем?

Туй халăхĕ: «Иккĕн пĕрле пĕр йăвара пурăнасшăн пуль», — теççĕ.

Пăхкаларăм та курах кайрăм:
Çакă хăтан пахчи пысăк иккен,
Пахчинче утмăл ултă улмуççи,
Пурте утмăл ултшар туратлă,
Туратсайра утмăл улма,
Улми ташлать, çулçи çупать,
Сар кайăксем юрă юрлать.
Кăçалхи çул мĕнпурĕ
Миçе улма пулнă-ши?

Туй курма пынă çынсем: «Миçене пĕрре çитмест», — теççĕ.

Çав сад пахчи варринче
Пирĕн хăтан мунчи пур.
Тултан пăхсан — сакăр кĕтеслĕ,
Шалтан пăхсан — тăватă кĕтеслĕ.
Тăватă кĕтеслĕ мунчинче
Тăватă кăмака, сакăр сентре.
Мунчине хутса пултарнă,
Милĕкне пĕçерсе кăларнă,
Ăшши парса тултарнă,
Кĕмелле те çапăнмалла.
Çапăнмасăр çан канать тет,
Чӳхенмесĕр чун канать тет.
Чулĕ мерчен, милки пурçăн,
Курки ылтăн, чари кĕмĕл,

Такани пăхăр, сентри мамăк.
Çăвăннă чух шывпа мар,
Симпе çăвăнаççĕ тет.
Пирĕн туй халăхне
Çав мунчана кĕрсе
Çăвăнса-çапăнса тухма пулмĕ-ши?
Эпĕ ыйтмастăп, хăта, — пирĕн ача ыйтать.

Туй халăхĕ: «Хутнă, пултарнă! Чармастпăр!» — тет.

Çак хăтасен мунчи умĕнче
Çап-çаврака кӳлĕ пур,
Кӳлĕ тавра — сар хăва,
Сарă хăва варринче
Утмăл турат уртăш пур,
Туратсайра çичшер йĕс ункă пур.
Çав çитмĕл çичĕ ункăран пĕр ункине
Пирĕн ачан çил çунатлă урхамахне
Кăкарса кантармашкăн памăр-ши?
Эп ыйтмастăп, хăта, — пирĕн ача ыйтать.
Вара вăл хăйĕн йĕс таканлă çил çунатне
Ĕмĕрĕпех çав пĕр йĕс ункăран
Кăкарса усрăттăм тет.

Туй халăхĕ: «Паратпăр, паратпăр! Ирĕк!» — тет.

Пăхкаларăм та курах кайрăм:
Хăтан картиш варринче
Улт уралла кĕлет пур,
Улт уралла кĕлетре
Утмăл ултă пӳлми пур,
Утмăл ултă пӳлминче
Ут туртайми урпи пур,
Ар йăтайми хăмли пур,
Ырçа тулли ыраш пур,
Пӳлме тулли пăри пур,
Шерепеллĕ сĕлли пур,
Пура тулли тулă пур.
Улт уралла кĕлетне
Хырă варринче пуранă,
Пурсăнпала мăкланă,
Çине-пуçне шуç витнĕ,
Шăрçаран уртмах янă.
Шерепеллĕ сĕллинчен
Шерпет сăра тунă иккен,
Пасманапа пыл янă иккен,
Ултă урапа урпа янă иккен.
Салатне пурçăн сарса типĕтнĕ,
Муталккара авăртнă.
Сăрине çичĕ хут вĕретсе
Çичĕ шанпа юхтарнă,
Пичĕкене тултарнă.

Сăри çичĕ пичкене кĕреймен,
Виçĕ пичкене тулайман.
Пĕр вĕретĕм сăрине
Иртен-çӳрен ĕçмешкĕн
Хапха умне кăларса лартнă.
Тепĕр вĕретĕм сăрине
Кĕрен-тухан ĕçмешкĕн
Картиш варрине кăларса лартнă.
Виççĕмĕш вĕретĕм сăрине
Хăна-вĕрле ĕçмешкĕн
Шуç кустарнă нӳхрепне
Пичĕкесĕрех янă иккен.
Тарасапа ăсмалла,
Ушачĕпе тултармалла,
Патьянапа ĕçмелле.
Çавна ĕçсе çисессĕн,
Авалхи йăлапа выляса-кулса,
Туй туса иртермелле.

Кил терĕшсем: «Пиртен пулсан — чару çук», — теççĕ. Вара пурте пӳрте кĕреççĕ. Хĕр ашшĕпе амăшĕ сĕтел умне тăраççĕ.

Вĕсене хирĕç мăн кĕрӳпе кĕçĕн кĕрӳ тăраççĕ. Вĕсен хыçĕнчен чăн кĕрӳ, ун тавралла тăватă пуса каччи тăраççĕ. Мăн кĕрĕве сăра курки параççĕ. Мăн кĕрӳ кăмака енне çаврăнса кăштах сăра тăкать:

Е, саламалик тав сие, хĕрт-сурт,
Саламалик, ваттисем,
Саламалик, хăта-тăхлач!

Сăрине ĕçсе ярать те пуççапать:

Тайма пуçăм, тав сире!
Ватта — пуç, çамрăка — тав!
Çак хăтасен пӳрчĕ пит пысăк иккен,
Тултан пăхрăмăр — сакăр кĕтеслĕ,
Шала кĕтĕмĕр — тăватă кĕтеслĕ.
Çакă пӳрте кĕрсессĕн
Тăхăр вун тăхăр урай хăми пур.
Çав тăхăр вун тăхăр хăминчен
Пĕр хăмине пирĕн туй халăхне
Авалхи йăлапа выляса кулма
Ирĕк памăр-ши, хăта-тăхлачсем?
Çĕнĕрен йăла кăлармастпăр,
Ĕлĕкхи йăлана пăрахмастпăр.
Эпир анчах мар,
Турă хушнипе, пӳлĕх пӳрнипе
Çеçен хирте шевле те вылять.

Туй халăхĕ: «Ирĕк, ирĕк!» — тет.

Çакă хăтан пӳртĕнче
Сарă сăрпа сăрланă,
Саваласа якатнă

Сакăр вун сакăр сакки пур,
Сакки çинче сарми пур.
Çав сакăр вун сакăр саккинчен пĕр сакки
Пире ларса савăнма пулмĕ-ши?
Эпĕ ыйтмастăп —
Пирĕн ача ыйтать.
Эпир анчах мар,
Турă хушнипе, пӳлĕх пӳрнипе
Çунатлă ăмăрт кайăк та
Турат вĕçне ларса канать.

Туй халăхĕ: «Пиртен чару çук! Ирĕк!» — тет.

Çакă хăтан урай варринче
Улт уралла сĕтелĕ пур иккен,
Улт уралла сĕтелĕ çинче
Пĕр пусĕнче пыл-шерпет ларать,
Тепĕр пусĕнче сирсе сирĕлми сим ларать.
Сим пылпа шерпет хушшинче
Ылтăн тирĕк ларать.
Ылтăн тирĕк çинче
Кĕмĕл çурхат вылять,
Кĕмĕл çурхатра сим вылять,
Пирĕн алăра хĕр вылять.
Пире те çавăн пек выляса-кулса
Авалхи йăлапа туй туса иртттерме
Ирĕк пулмĕ-ши, хăта-тăхлачсем?

Туй халăхĕ: «Ирĕк, ирĕк! Чару-тăву çук!» — теççĕ.

Сиртен ирĕк пулсассăн,
Эпĕ ачасене тепре çавăрса кăтартас тетĕп.

Вара пӳртре пурте паçăрхи йĕркепе хĕвеле май виççĕмĕш хут çаврăнаççĕ. Мăн кĕрӳ, ун хыççăн ытти туй халăхĕ те алăк патнелле пăхса тăраççĕ.

Çакă хăтан картишĕнче
Мăкланă вити пур,
Мăкланă витинче вăкăрĕ пур.
Вăкăрĕ вун икĕ çул каçнă,
Вун икĕ çулта вун иккĕ кĕтĕве кĕмен,
Вун икĕ çулта вун иккĕ киле килмен,
Шав çеçен хир тăрăх
Çĕмĕрттерсе çӳренĕ.
Çав вăкăр тухса кайнă
Аçа-ывăл шырама,
Аçа-ывăл шыраса юта кайнă.
Вăл вăкăр сăмсипе акса,
Майракипе акаласа,
Хӳрипе сӳресе,
Чĕрнипе çул туса çӳренĕ,
Эпир çавăн çулĕпе килтĕмĕр.

Кăçалхи çул çав вăкăр
Пирĕн ача ăрăсĕпе киле килнĕ.
Хапхаран хăваласа пынă —
Тăлпăвĕ кĕреймен.
Кĕçĕн алăкран кĕме тăнă —
Мăйраки кĕреймен.
Вара ăна пирĕн хăта
Çичĕ сыпă хÿме сÿтсе кĕртнĕ,
Ăна çитмĕл паттăр тухса пуснă,
Шур парнепе тăлланă,
Кĕмĕл пуслăхпа пусарнă,
Ылтăн çĕçĕпе пусса вакланă,
Виçĕ витре кĕрекен
Туй хураньпе пĕçернĕ,
Пуçĕ пулнă пăт çурă —
Ваттисем валли,
Çăмарти пулнă пĕр хуран —
Хĕрарăмсем валли.
Çак вăкăрăн ик çăмарти
Пăт та хĕрĕх кĕрепенкĕ туртнă,
Хĕрĕх те пĕр хĕрарăм çисе ярайман,
Пĕр çынна çиме çитмен.
Вăкăрне вакласан алăкран кĕреймен,
Мачча сÿсе кĕртнĕ.
Çавна çисе пăхма
Ирĕк пулмĕ-ши пире?
Тата пирĕн хăтан
Çичĕ çулхи таки пулнă,
Çичĕ çулта çиччĕ кĕтĕве кĕмен,
Çичĕ çулта çиччĕ киле кĕмен,
Шав çаран тăрăх çĕмĕрттерсе çÿренĕ.
Хапхаран кĕрес тенĕ —

Тăлпăвĕ кĕреймен,
Кĕçĕн алăкран кĕрес тенĕ —
Мăйраки кĕреймен.
Вăл така пуçĕпе те сĕкнĕ,
Кучĕпе те тĕкнĕ,
Çавах кĕреймен.
Кăçалхи çул çав така
Пирĕн ача ăрăсĕпе киле килнĕ.
Ăна виçĕ сыпă хÿме сÿтсе кĕртнĕ.
Çав такана пирĕн хăта
Пурçăн тăлăпа тăлласа,
Кĕмĕл çĕçĕпе пусса хатĕрленĕ,
Туй халăхне чысласа яма
Тăхăр хуранпа пĕçерсе хатĕрленĕ.
«Çав такан какайĕ
Пĕр турам та юлман-ши?» —
Тесе ыйтать пирĕн ача.

Туй халăхĕ: «Юлнă, юлнă!» — тет.

Тата çакă хăтан
Виçĕ çул çитернĕ кăркки пулнă.
Вăл виçĕ султа виççĕ çĕре анман,
Шав хуралтă тăрринче
Шулап шаплаттарса,
Çунатланса вĕçсе çӳренĕ.
Çав кăрккана кăçал
Турă хушнипе, пӳлĕх пӳрнипе,
Пирĕн ача ăрăсĕпе
Çавра çил килсе çавăрттарса антарнă.
Çав кăрккана çак хăта
Пăхăр пеккипе пусса
Туй халăхне чыслама
Йĕс хуранпа пĕçерсе хывнă.
Кăркки икĕ хурана кĕреймен,
Пĕр хурана пулайман.
Кашни туй каччине
Пĕрер тукмак тивнĕ.
Тукмакки икĕ çăвара кĕреймен,
Пĕр çăвара тулайман.
Пурĕ миçе çăвар пулнă-ши?

Туй халăхĕ: «Миçене пĕр çăвар çитеймест», — тет.

Тата çакă хăтан
Пукрас чăххи пур иккен,
Куллен çичшер çăмарта тăвать.
Эпир, кĕрӳ нӳкерĕсем, саккăрăн,
Пĕрне çăмарта çитеймест.
Çавăнпа пире хăта хушса ячĕ:
«Çăмарташăн хĕрне илсе килĕр», — терĕ.
Çĕнĕрен йăла кăлармастпăр,
Ĕлĕкхи йăлана пăрахмастпăр.
Тĕрĕс-и çак сăмахсем?

Туй халăхĕ: «Тĕрĕс ĕнтĕ, тĕрĕс», — тет.

Тата çак хăтан
Çавра сад пахчийĕ пур,
Сад пахчинче утар пур,
Утарĕнче вĕлле йышлă,
Вĕллисенче хурт йышлă.
Утмăл-çитмĕл вĕллере,
Утмăл-çитмĕл туратра
Ултураллă хурт утать,
Утмăл-çитмĕл чечекрен
Хăла пылне пуçтарать.
Утар тулли хурт сĕрлет,
Çӳпçе тулли пыл кĕрлет.

Çав пылне тутанма ирĕк пулмĕ-ши?
Эп ыйтмастăп — пирĕн ача ыйтать.

Туй халăхĕ: «Ирĕк, ирĕк!» — тет.

Тата картиш варринче
Савалана сакки пур,
Сакăр уралла сĕтелли пур,
Сакăр уралла сĕтелли çинче
Пичетленĕ пички пур.
Пички хĕрĕх кăшалла,
Икĕ пăкăлла иккен.
Пĕр пăккинчен сим юхать,
Тепĕр пăккинчен пыл юхать.
Çав сим пыла ĕçсессĕн,
Ӳсĕрĕлсе каймалла;
Тутлă пылне тутансан
Тутлăн калаçмалла тет.
Çакă туя та çапла
Йӳçĕ ĕçсе, тутлă калаçса,
Выляса-кулса иртерсе ямалла.
Пичке тавра сар хĕрсем
Утса-чупса çӳреççĕ,
Çитмĕл куркапа çитереççĕ,
Утмăл куркапа ӳсĕртеççĕ.
Çитмĕл курка çитмесен
Çавра куркапа çавраççĕ.
Çавра куркапа çаврăнмасан
Тимĕр куркапа тивертеççĕ.
Эсир ирĕк парсассăн
Пирĕн ача çав хĕрсемпе
Выляса-кулса ларĕччĕ.
Эпĕ каламастăп — пирĕн ача калать.

Çакă хăтан виçĕ хĕр.
Виççĕшĕ те пике хĕр,
Турă çырни пĕрех хĕр:
Тăп-тăваткăл минтер, парча пит —
Турă çырнă пике айĕнче,
Унăн ылтăн çĕрри — аллинче,
Кĕмĕл сулли — хулĕнче.
Пĕр пичĕ уйăх иккен,
Тепĕр пичĕ хĕвел иккен,
Куç харшисем — хăнтăр, куçĕсем — çăлтăр,
Пирĕн ача телейне ӳснĕ иккен.
Аршăн çурă пĕвĕ пур,
Сарă чечек сăнĕ пур.
Ĕмĕрлĕхех пирĕн ачана
Юлташ пулса пурăнма
Турă çырнă çыру пур.

Хăта пире хăналăп та хăвалăп терĕ пуль,
Эпир унпах каймăпăр.
Хăçан та хăçан пире
Купа пек те капан пек
Хĕрне пиллесе парать,
Çавăн чухне тин кайăпăр.
Сумасăр мулне патăмăр,
Виçмесĕр пылне патăмăр,
Хĕр илмесĕр каймăпăр.
Пирĕнтен тухнă йăла мар,
Ваттисем пехилленĕ йăла.
Турă хушнипе, пӳлĕх пӳрнипе
Вĕçен кайăк та мăшăрланса йăва çавăрать.
Эпир те паян çав тивлетпе
Выляса-кулса, савăнса
Туй пуçлас тетпĕр.

Туй халăхĕ: «Пуçлас, пуçлас!» — тет. Мăн кĕрӳ:

Эсир туй пуçлама ирĕк паратăр пулсан,
Эпĕ ачасене тепре çаврăнса кăтартас тетĕп.

Вара мăн кĕрӳ, кĕçĕн кĕрӳ, чăн кĕрӳ, ытти туй халăхĕ сĕтел тавра çаврăнаççĕ. Мăн кĕрӳ сĕтел варрине çитсен сак çине ларам пек тăва-тăва илет. Пурте сĕтел тавра виççĕ çаврăнаççĕ те урай варрине тухаççĕ.

Туй пуçĕ сĕтел пуçне ларать. Хĕр ашшĕпе амăшĕ сĕтел хушшине лараççĕ. Туй пуçĕ сăра тултарса хăтисене парать, хăтисем хăйсен сăрине туй пуçне параççĕ. Мăн кĕрӳ урлă чăн кĕрĕве курка параççĕ, мăн кĕрĕве хăйне те курка параççĕ.

Çĕнĕрен йăла кăлармастпăр,
Ĕлĕкхи йăлана пăрахмастпăр.
Пылак чĕлхене пыл çитмен тет,
Сăсар тирне шыв витмен тет,
Тав сире, тайма пуçăм сире.

Пурте ӳксе пуççапаççĕ.

Кайăк кăвакарчăнăн сĕчĕ çук,
Юхан шывăн тăни çук,

Ӳт чĕлхенĕн шăмми çук,
Чăн сăмахăн суйи çук,
Сиртен савнă çынсем çук.
Сумасăр мулне патăмăр,
Виçмесĕр пылне патăмăр,
Сире сăмах витес çук,
Урăх калас сăмах çук,
Сиртен хаклă çынсем çук.
Эй, хăтасем, тăхлачсем,
Тулчĕç-и кăмăлăрсем?

Ытла каланине каçарăр,
Сахал каланине çитерĕр,
Çитменнине хăвăр саплаштарăр.
Аллăмри куркапа тав сире,
Хăтасем, тăхлачсем,
Хурăнташ-тăвансем!
Ватта — пуç, çамрăка — тав!
Тав сире!

Пурте куркисене ĕçсе параççĕ. Унтан тепĕр хут пуç таяççĕ, виçĕ тапхăр: «Тайма пуçăм сире!» — теççĕ. Вара малалла туй тапранса каять. Малтан ваттисене асăнса юрлаççĕ. Кĕрекене лараççĕ. Чăн варрине чăн кĕрӳ, икĕ айккипе пуса каччисем, вĕсен çумĕнче мăн кĕрӳпе кĕçĕн кĕрӳ лараççĕ. Чăн кĕрӳ малтан минтере нухайккапа виçĕ хут хĕреслесе çапать, вара минтер çине ларать. Ĕçсе-çисе тухсан юрлаççĕ, ташлаççĕ вара.

Вăй кил уйăрма кайнă чух мăн кĕрӳ алăк патĕнче ларакан чи ватă çынна курка парса хăварать те халăха туя йыхăрать:

Эй, пиччеçĕм Эхвентер,
Иштерен хăта туй кĕртет,
Пирĕн Ахмантей ывăлин туйне.
Ватти пур, вĕтти пур,
Сăмсипе сывлан, кучĕпе шăван,
Атьăр пурте пирĕнпе туя.
Ыран та мар, паян та мар,
Халь те пулин халех.
Хайт! тесен хатĕр пулĕ,
Айт! тесен алтăр пулĕ.
Алтăрин аври ылтăн тет,

Куркин аври кĕмĕл тет,
Сăри — шерпет, пылĕ хăла,
Атьăр каяр туй курма.
Тав сире, тайма пуç сире.
Эпир тăнă вырăна
Тивлет тăрса юлтăрин,
Эпир пуснă вырăна
Телей пусса юлтăрин,
Эпир ларнă вырăна
Хĕрт-сурт ларса çаврăнтăр.
Эпир кĕнĕ кил карти
Эпир тепре киличчен
Хула пулса çаврăнтăр.

Вара кунтан тухса каяççĕ, урăх киле каяççĕ. Çул çинче виçĕ хут чарăнса юрла-юрла ташлаççĕ. Мăн кĕрӳ туй халăхне туя чĕнсе такмак калать, иртене-çӳрене курсан туя йыхăрать.

Тепĕр çурт патне çитсен мăн кĕрӳ татах такмак калать. Ыттисем патĕнче кĕске анчах калать вара, хăта патĕнче çеç вăрăм такмак калать.

*Н.И. Егоров çырса илнĕ.*

## 2. АЛЬПИ УЛĂП

### Тинĕс хĕрринче

Çичĕ тинĕс леш енче,
Çап-çут кӳлĕ хĕрринче,
Кăвак чечек хушшинче,
Çичĕ пĕлĕт айĕнче
Чаплă кермен курăннă,
Çичĕ тĕслĕн вăл çуннă.
Тата çакă керменте
Перопа та чĕлхепе
Çырса кăтартмалла мар,
Сăнĕпе те чунĕпе
Ытармалла мар хитре
Эрпи пике пурăннă.
Икĕ куçĕ çăлтăрла
Çунса кăна тăнă тет.
Икĕ пичĕ хĕп-хĕрлĕ,
Икĕ анис улма пек.
Чĕлхи чĕкеç чĕлхи пек,
Сасси шăпчăк сасси пек
Пулнă иккен çак пикен.
Нуша куран халăха
Ертсе пыма пĕлнĕ тет.
Хăйĕн хăюлăхĕпе
Тата паттăрлăхĕпе
Усал-йĕрĕхсене хирĕç
Çĕкленĕ тет халăха.
Мĕнпур халăх çĕкленсе
Пĕтернĕ тет пуçĕпех.
Касса татнă тет пуçне,
Усал-йĕрĕхсене те
Пĕтернĕ тет пĕтĕмпех.
Çапла çакă Эрпикен
Альпи ятлă сар ывăл
Ӳснĕ тет чечекленсе,
Чечекленсе, çĕкленсе,
Улăп евĕр хăпарса.
Ӳссе çитсен çак ывăл
Хăйĕн ырă амăшне
Вара çапла калать вăл:
«Ӳссе çитрĕм, çитĕнтĕм
Çичĕ пĕлĕт таранах.
Вăйăм ман çителĕклĕ пуль
Тесе шутлап-ха хам.
Каяс теп çул çӳреве,
Çитсе курас-ха пĕрре
Çичĕ тинĕс хĕррине».
Амăш чĕри çапла-çке:
Ӳссе çитнĕ чĕппинчен
Мĕнле уйрăлмалла-çке?
Ăшшăн кăна пуç тайрĕ
Ăна савнă ывăлĕ,
Тухса кайрĕ аякка,
Амăш тăрса юлайрĕ.
Çичĕ тинĕс хĕрринче
Акă çĕре кисретсе
Альпи тухрĕ çырана,
Пăхрĕ йĕри-таврана.
Çӳллĕ-çӳллĕ ту çинче
Курчĕ вăл кĕрен чечек.
Чечекĕ вара ăна
Тĕлĕнмелле сасăпа
Пуçне тайса каларĕ:
«Ырă чунлă улăпăм,
Хĕрхенсем мана, тархасшăн!
Пĕр тумлам таса шывна
Ĕçтерсемччĕ пĕр кана!»
Альпи пысăк аллипе
Ывăçларĕ ывăçне,
Таса тинĕс шывне те
Сапрĕ чечек тымарне.
Чечек пуçне çĕклерĕ,
Çĕклерĕ те каларĕ:
«Ман тымарăм айĕнче
Выртать хĕçĕ хурçăран,
Хурçăран та çирĕпрех.
Сан аллунта пултăрах.
Тата акă мĕн калап,
Итлесемччĕ, эп ыйтап:
Кайсан-кайсан çак çулпа
Çитĕн çутă кӳл хĕрне,
Курăн пĕр кăвакала.
Кăвакалĕ, чăнах та,
Пит илемсĕр пулмалла,
Курсанах хăрамалла.
Сана курсан кăвакалĕ
Вĕçсе тарма шухăшлĕ,
Анчах эсĕ чее пул,
Чее пул та çивĕч пул.
Çавă кӳлĕ тĕпĕнче
Пурнать вут куçлă çĕлен.
Таврари чипер хĕрсе(не)
Вăл вăрлать мĕнпур енчен.
Мана та вăл вăрласа
Илсе килчĕ аякран —
Çичĕ çăлтăр тӳпинчен.

Сӳнтерчĕ ман çăлтăрăма,
Пĕтерчĕ ман чунăма.
Манăн ятăм Илпике —
Асна илсе юлсамччĕ...
Çак çĕлене çĕнсессĕн
Илсе кил çав кӳлĕрен
Пĕчĕк кăкшăмпа шывне,
Вара сап эс ман çине.
Пулса тăрăп эп каллех
Çичĕ çăлтăр тӳпинчи Илпике».
Хĕрхенсе Альпи хĕре
Чунтанах хурланчĕ,
Вăл каланă сăмаха
Тимлесех итлерĕ.
Илчĕ те хурçă хĕçне
Ярса пусрĕ урине.
Тата тепĕр урипе
Çитсе тăчĕ кӳл хĕрне.
Çап-çут шывĕ çиййĕнче
Йăлтăртатрĕ çут тĕнче.

## Тытăçу

Илпике каланă евĕр,
Тĕлĕнмелле кӳлĕре
Пĕр кăвакал ярăнса
Ишсе çӳрет хурланса.
Альпи çитсе тăнине
Асăрхаман пулмалла,
Унăн пысăк урине
Ту пуль тесе шутланă,
Тата хытă ярăнса
Ишсе кайнă малалла.
Альпи вăрăм аллипе
Кăвакала пусĕнчен
Ярса илчĕ çирĕпрех.
Хай кăвакал çын пекех
Йăлăнмашкăн пуçларĕ:
«Ан тивсемччĕ эсĕ, улăп,
Манăн пысăк пуçăма
Хăварсамччĕ, эп ыйтатăп,
Чĕррĕнех, ан тив мана.
Пĕтĕмпех каласа парăп
Çĕленĕн вăрттăнлăхне,
Тин вара эсĕ ăна
Çĕнме пултарăн чăнах,
Халь итлесем çирĕпрех:
Кӳллĕн тепĕр вĕçĕнче
Çӳллĕ йывăç çитĕнет,
Ун тымарĕ айĕнче
Выртать шĕвĕр çăмарта.
Çав çăмарта ăшĕнче
Ахах-мерчен ялтăрать,
Çав мерчене пĕтерсен
Унăн куç курми пулать.
Вара тин çеç унпала
Пултарайăн вăй виçме.
Халь васка-васка часрах,
Ак халех вăл çитмелле,
Пĕр пикене вăрласа
Паян илсе килмелле!»
Альпи хăвăрт васкаса
Кăвакала вĕçертрĕ,
Кайрĕ вăрăммăн пусса
Çӳллĕ йывăç патнелле.
Йывăç тăрри хумханать,
Хумханать те тайăлать,
Хăй пĕччен марне туять.
Альпи вăйлă аллипе
Ярса илчĕ йывăça.
Тĕпĕпех-тымарĕпех
Кăларса ывăтрĕ таçталла.
Йывăç тымар айĕнче
Шĕвĕр пуçлă çăмарта...
Выртать иккен ялкăшса!
Çăмартана хĕçпеле
Пĕррех сулчĕ тет Альпи.
Шĕвĕр пуçлă çăмарти
Шап! çурмаран çурăлчĕ.
Çăмартийĕ варринче
Ахах-мерчен курăнчĕ.
Альпи çакă мерчене
Илчĕ те аяккалла
Ывăтрĕ тет таçталла.
Мерчен ӳкнĕ вырăна
Ӳсрĕ тăчĕ çӳллĕ ту,
Çӳллĕ ту та чăнкă ту.
Акă нумай та тăмасть, —
Килет çĕлен ахăрса,
Ахăрса та чашкăрса,
Хăй сăннине кăларса.
Альпи хăйĕн хĕççипе
Хатĕр пулчĕ, сулайрĕ.
Çук, анчах та лекеймерĕ
Çĕленĕн ирсĕр пуçне.
Çĕлен вăрăм хӳрипе
Пĕррех çапрĕ çавăрса,
Чĕркуççи таран çĕре
Кĕртсе тăратрĕ паттăра.

Çĕлен суккăр куçĕпе
Нимĕн тума пĕлмерĕ,
Хăйĕн вăйĕ чакнине
Часах чухла пуçларĕ.
Мĕнпур вăйне пухайрĕ,
Альпи хатĕр пулайрĕ.
Чашкăракан çĕлене,
Хĕм саракан çĕлене
Пĕррех касса татайрĕ.
Çĕлен пуçĕ кусайрĕ
Аяккалла-аякка,
Таçта кайса çухалчĕ.
Альпи пĕтĕм вăйĕпе
Тухрĕ çĕре кисретсе,
Илчĕ те хурçă хĕçне
Утрĕ кÿлĕ хĕррине.
Кăвакал ăна кĕтсе
Шалт аптранă пулмалла:
Курсанах вăл килнине
Вĕçрĕ унăн еннелле.
Унтан çапла каларĕ
Хăйĕн ачаш чĕлхипе:
«Илпике — манăн аппам,
Хăтарсамччĕ, тархаслап.
Эпĕ унăн шăллĕ-çке,
Уйăрчĕ пире тăшман,
Ăна чул ту çине лартайрĕ,
Кăвакал манран тăвайрĕ.
Халь илсем çав кăкшăма,
Тултарсам ăна шывпа.
Малтан сылтăм аллупа,
Унтан тепĕр аллупа
Сĕрсем манăн пуçăма
Кăкшăмри шывупала».
Альпи ăна итлерĕ:
Сĕрчĕ, пăхрĕ, тĕлĕнчĕ —
Тăрать унăн умĕнче
Çивĕч куçлă сар каччă.
Ку çак паттăр Илтиван
Хăйĕн тăван аппăшне
Ирсĕр, хаяр çĕленрен
Килнĕ пулнă-мĕн иккен
Хăтармашкăн инкекрен.
Анчах çĕлен, чеескер,
Тухатлама ĕлкĕрнĕ,
Пысăк пуçлă кăвакал
Туса хума пултарнă.
Икĕ паттăр пĕр-пĕрне
Алă пачĕç, туслашрĕç,
Аппăш патне васкарĕç.

## Савăнăç

Кĕрен чечек пĕтĕмпех
Типсе ларма пуçланă.
Çитрĕç питĕ васкаса
Икĕ улăп вашлатса.
Сапрĕç кăкшăмри шывпа
Пĕрре сулахай енне,
Тепре сылтăм еннелле,
Сĕрчĕç чечек çулçисе(не),
Сапрĕç тымарĕ çине.

Йăлтăр-йăлтăр çуталса
Кайрĕ тĕнче ялтлатса.
Альпи куçĕ умĕнче
Тăрать пике çуталса.
Икĕ куçĕ кăн-кăвак,
Хирти кăвак чечек пек.
Пичĕ пĕри уйăх пек,
Тепри тата хĕвел пек.
Çамки çинче çуталса,
Çуталса та ялтлатса
Çунса тăрас çăлтăрсем,
Пĕринчен тепри таса.
Альпи сăмах чĕнейми
Пулса тăнине курса
Пике лăпкă сасăпа
Ăшшăн çапла каларĕ:
«Ырă чунлă Альпи улăп,
Тайма пуç сана пиртен.
Кăмăл пулсан пирĕнпе
Илсе кайăпăр пĕрле
Çут çăлтăрсен тĕнчине».

Альпи ассăн сывларĕ,
Пуçне тайса каларĕ:
«Тавтапуç ыр сăмахушăн
Тата ырă кăмăлушăн.
Хатĕр эпĕ яланах
Сирĕнпе пĕрле юлмах», —
Тесе пилĕк таранах
Пуçне тайса итлерĕ,
Яшт тÿрленсе тăрайрĕ.

Инçе çула тухайрĕç
Ытарайми пикепе
Тата унăн шăллĕпе.
Пĕр шухăшлă çынсем пек
Пычĕç шăкăл каласса,
Пулнине аса илсе.

## Çăлтăрсен çĕршывĕнче

Çӳллĕ-çӳллĕ тусем урлă,
Кăвак тинĕс хумсем урлă,
Уй-хирсем, вăрмансем урлă
Çитрĕç çăлтăр çĕршывне.
Пилĕк таран пуç тайса
Кĕрсе кайрĕç кермене.
Ашшĕ-амăш хуйхăпа
Паллаймаççĕ-çке хĕрне
Тата унăн шăллĕне.
Ватă çăлтăрсен патши
Пулнă Илпикийĕн ашшĕ,
Ырă чунлă, ăш кăмăллă
Пулнă вĕсен амăшĕ.
Илпикийĕ савăнса
Амăш патне ыткăннă,
Илтиванĕ пуç тайса
Хăйĕн ашшĕ умĕнче
Ăшшăн-ăшшăн калаçнă:
«Ыр аттеçĕм, аннеçĕм,
Каçарсамăрччĕ мана,
Хам аппана çăлмашкăн
Вăйăм çитеймерĕ ман.
Усал, чее тăшмана
Пĕтермешкĕн пулăшрĕ
Ырă чунлă, ыр кăмăллă
Альпи улăп, ту-паттăр —
Акă хăвăр куратăр».
Альпи улăп тин тăна
Кĕнĕ пек пула пуçларĕ,
Пилĕк таран пуç тайса
Вара вăл çапла каларĕ:
«Манăн ырă çыннăмсем,
Тайма пуç сире манран
Мана хапăл тунăран.
Вутлă куçлă çĕлене
Тата унăн йăвине
Пĕтермешкĕн Илпике
Мана питĕ пулăшрĕ.
Унăн хурçă хĕççипе
Хамăн вăя шаннипе
Çĕлен пуçне татайрăм,
Ĕмĕрлĕхе тĕп турăм.
Тата эпĕ мĕн калап:
Эсир хирĕç пулмасан
Илпикепе иксĕмĕре
Пехил пама ыйтатăп.
Хамăн пулас мăшăрма —
Хамăн савнă чунăма
Нихăçан та ĕмĕрне
Кӳрентерме никама
Парас çук эпĕ ăна».
Çăлтăрсен патши вара
Пуçне тайса илейчĕ:
«Хĕрĕм манăн, хăв куран,
Ырă чунлă пулмалла.
Амăш, кил-ха кунталла,
Пехиллер ачасене,
Телей сунар вĕсене».
Амăш чĕтрен аллипе
Хĕрĕн пуçне шăлайрĕ,
Хăйĕн мăшăрĕпе
Ĕмĕр лайăх пурăнма
Пехиллерĕ хăй хĕрне.
Илтиванĕ савăнсах,
Пысăк алне çĕклесех
Альпи енне тăсайрĕ,
Ыталаса илейрĕ.
Хăй аппăшне юратма,
Ĕмĕр телейлĕ пулма
Ырлăх-сывлăх сунайрĕ.
Сар хĕвелĕ йăл кулса
Тухрĕ çĕн кун тӳпинчен,
Икĕ çамрăк савăнса
Утрĕç аллăн тытăнса.

*Г.П.Тяканова çырса илнĕ.*

## 3. ЙĂПАР

### 1

Çеçен хир хĕрринче,
Утмăл çухрăм хура вăрман ăшĕнче,
Ăшă лăпкă Эккен кӳлĕ пур.
Эккен кӳлĕ çутинче
Лăпкă Ийпен ялĕ пур.
Лăпкă Ийпен ялĕнче
Укантей ятлă ватă пур.
Укантей пӳрчĕ пĕчĕк те мар, пысăк та мар.
Çĕр çирĕм пренерен пуранă,
Вун ик хăлаç урлăшĕ,
Çичĕ хăлаç çӳллĕшĕ.
Тултан пăхсан — виç кĕтеслĕ,
Шала кĕрсен — тăват кĕтеслĕ.
Картиш тавра хӳме çавăрнă,
Пĕр май утмăл утас,
Тепĕр май çитмĕл хăлаç.
Укантей хӳме хапхине
Тăват юпаран, виç хупăран тунă.
Юписем — пăхăр,
Тăпсисем — йĕс,
Тыткисем — ылтăн,
Çине калай витнĕ.
Укантей ашшĕ-амăш юратса ăс панăран
Çын япалине тивмен,
Çын мул-пуянне хапсăнман,
Тус-тăван хӳтлĕхне шыраман,
Мухтавлăх йăхне çухатман,
Çын патне кивçене кайман,
Ыйткалама яла тухман.
Хăй кил-çуртне хăй пăхнă,
Тар юхтарса ĕç тунă.
Уй-хирте тыр-пул акса
Çăкăр-тăварлă пулнă.
Укантей çемйи пысăк мар,
Патмар* упа евĕр виç ывăл
Яштак ӳсен юманла
Кашни кун кармашнă тăва.
Аслисен ятне астумас,
Кĕçĕнни Йăпар ятлăччĕ пулас.
Виçĕ ывăл, виç тăван
Пурăннă пĕр çавартан.
Ашшĕ-амăш сăмахĕнчен тухман,
Ял-йыша сăмах яман.
Ăс-тăн енчен аслă ывăлĕсем
Этем ывăл-хĕрĕнчен уйрăм мар.

* Патвар.

Кўршĕ-аршăнне ĕненсен,
Çăмăл ăслă пулнă тет çаксем.
Уншăн вара кĕçĕн ывăлĕ Йăпар
Тавçăруллă та, чее те чăпар.
Виç ывăл, виç тăван
Ĕçпе ĕçсĕр хушăра
Çут хĕвеле мухтаса
Юрă шăратнă куллен.
Пуш вăхăтпа ус курса,
Утсем çине утланса
Сăнă утма*, хĕçпе касма
Хăнăхнă тет каçсерен.
Укантей ăшă кил-йышĕнче
Пĕр-пĕрне пĕр сив сăмах каламан.
Ĕç тесен — пурĕ харăссăн тăнă,
Ĕçсе-çиме ларсан — пурĕ пĕрле ĕçсе çинĕ.
Савăнмалла — пурĕ пĕрле савăннă,
Ташламалла — пурĕ пĕрле ташланă.
Пурнăç йĕрки, кун-çул тăрăх
Çамрăк ўссе яшă пулать.
Çемье ăруне хушма
Вăхăтра арăм тупма килет,
Ашшĕ-амăш ĕмĕтленет,
Ыр кин килсе йыш хуштăр тет,
Пурнăç урапи ан тăтăр тет.
Виç ывăла, пĕртăван ачасене,
Укантей пухса сĕтел хушшине
Акă çапла канаш парать:
— Çул юппинчен тайăлса
Алла туя тытрăм,
Шухăш пысăк — çитес çук.
Ĕмĕт-туйăм сире пултăр.
Пурлăх туса сыхлама
Пихампар турă пулăштăр,
Малашлăх пурнăç шăпине
Хăвăр алпа хăвăр тытăр!
Пурлăх пур, мĕн тумалла?
Пўрте мĕнле пайласа
Висĕ тўпе тумалла?
Укантей хапхи — тăват юпа,
Мĕнле висĕ пĕр тан тумалла?
Пĕр пек тўпе пулмасан
Кашнин чунĕ тăвăнмалла.
— Пиччесем, — тет Йăпар, —
Пур пурлăха пайлар мар,
Салатса татăк тăвар мар.
Хамăр телее шырама
Тухса пăхар çĕршыва!

* Ывăтма.

Йăпар шăлнĕн сăмахĕ
Кăмăла килчĕ çамрăксене:
— Чăнне калан эс, Йăпар,
Хамăр шăпана шырар.
Вицĕ тăван пĕр пулса
Вăрăм çул-йĕре тухар,
Хамăр çамрăк шăллăма
Çул пуçĕ пулма ыйтар!
— Пехил сире, ачамсем,
Каяс çулсем такăр пулччăр,
Ĕмĕтленни ума килтĕр.
Ырă çынпа юмарт пул,
Сим пылпала хăна ту,
Сан пурнăçна пӳлене
Пуçне касса каска пукан ту,—
Пиллет ватă Укантей
Вицĕ çамрăк ывăла.
Вицĕ çамрăк-пĕртăван
Виçепе тăхăнмаççĕ шатир,
Çакаççĕ çума хĕç-ухă,
Çил çунат урхамах утланса
Тухаççĕ инçе çула кайма.
Инçе кайрĕç-и, сахал-и —
Ума тухрĕ хуп кĕпер,
Хуп кĕпер çинче хура çĕлен.
Урлă сиктерес терĕç — сиктереймерĕç,
Тавра каяс терĕç — каяймарĕç.
Çулĕ инçе пулчĕ,
Тăхăр вун тăхăр çухрăм çаврăнмалла пулчĕ.
Çывăхрах аслашшĕ каснă хурама чукмар,
Çампа вара хура çĕлене
Кут айĕнчи минтер пек çемçетрĕçĕ.
Ĕненмесен хăвăр кайса пăхăр,
Паян кун та хăмăшлăхра чашкăрать,
Айван чунлисене хăратать.
Вицĕ çамрăк-пĕртăван
Шыв пек юхнă, çил пек вĕçнĕ.
Сăрт-ту урлă нумай каçса,
Хыçа айлăм-улăх хăварса
Ак тухаççĕ ыраш хирне —
Атăл хум пек хумханать,
Пиçсе çитнĕ, вырма кĕтет.
— Пиччесем, — тет Йăпар, —
Ыраш вырмашкăн кĕтет,
Паян-ыран вырмасан
Тулли пучах çĕре ӳкет.
Тен, хир хуçин ал çитмест,
Хамăр вырса пулăшар,
Ыр хуçа пулсан ĕçшĕн ырăпа тӳлет.
Каланă та ĕç тунă,

Пĕр кĕтесрен пуçăнса тепринче пĕтернĕ,
Ыраш хирĕ пушаннă,
Çапма кăна çын кĕтнĕ.
Пĕчĕккĕ те çавра куçлă
Айлăмран хăпарать хан Нукар.
Виçĕ ывăл-пĕртăван
Çула кайма тăнăччĕ:
— Этем! — сăмах хушать халь Нукар, —
Сăрт-ту тавра çаврăнтăм,
Нумай шыв-шур пăтратрăм,
Сирĕн пек пуçсăра курман;
Хуçа-ханран ыйтмасăр
Çын пурлăхне хапсăнман!
Хушмасăр ĕç тунăшăн
Пуçсене касса тăвас пукан!
— Тăхта хуçаланма пирĕн пуçпа...
Песплат ĕçлеме çуралман,
Ыр ĕç туса пулăшнăшăн
Хакна парса чунна пар.
Виçĕ ывăл-пĕртăван
Пырна ларĕ, ан хăрат.
Ыр кăмăлпа, ырăпа ыйтсан
Вырнă ыраша çапма пулать.
Ĕçленĕшĕн тӳлемесен
Ханăн пуçне касма юрать, —
Тавăрать Нукара Йăпар.
Ун-кун пăхкалать Нукар,
Уйрăмах хăрамасть Йăпар.
Шикпе Йăпара тĕп тăвас шут тытса
Нукар тăвать çапла хыпар:
— Инçе те мар, çывăх та мар,
Шакăль тăвайкки хыçĕнчен,
Тăхăр çырма хӳттинчен,
Чарикки утти пусĕнчен,
Пан хан-пай килĕнчен
Илсе кил-ха аш шаркку.
Ĕçшĕн хакне тӳличчен
Така ашĕпе хăналам,
Шерпетпеле шăварам.
Унччен икĕ пичу пĕр пулса
Авăн çапса клет тултарччăр, —
Йăпар çине хăяккăн пăхса
Халапланать халь Нукар.
Хыпăнмасăр çыру çырса
Йăпара тыттарать çыру.

**2**

Пан хан-пай килĕнчи
Нукар арăмĕ патне
Йăпар çырупа васкать.

Умра мăнтăркка мулкач
Тараймасть те чупаймасть,
Урхамах урийĕ айне пулмасть.
Умри мулкача хăваласа
Пырса кĕчĕ сĕм вăрмана,
Умри мулкач пач çухалчĕ,
Йăпар лаши шалт ывăнчĕ.
Кантăр тесе вăй пухма
Урхамаха симĕс курăк çиме ярса,
Тунката çине пуç хурса
Йăпар выртрĕ кăшт канма.
Мăйра сивĕ пулман пулсан
Мĕн чул çывратчĕ — пĕлмест.
Йăпар мăя хыпашлать—
Явăннă-мĕн хура çĕлен.
Туртать, чавать халь Йăпар,
Мăйран тапранмасть çĕлен.
— Юрĕ, ăшăнтăр ман çумра,—
Халапланать учĕ çине утланса.
Çулсăр, сукмаксăр урхамах
Йăпарпа тухать уçланка,
Уçланкăна — Варачана.
Акă умра ылтăнлă кил-çурт,
Хапха çулĕн ик енче ик арăслан
Сăнчăрта тăраççĕ хăрлатса.
Çил пек вĕçен урхамах
Арăслансем урлă сикет кил картине,
Урхамах сиксе çитеймест —
Кайри ури лекнĕ арăслан çăварне.
Урхамах пуç урлă ыткăнса
Йăпар тăнă ылтăн кил-çурт варрине.
Куçа хупса илнĕ çĕре
Мăйра пушă — ним те çук,
Умра тăрать çырла пек
Кăтра çӳçлĕ хĕр пике.
— Йăпар, сана пысăк тав,
Асамçăран çăлтăн эс мана.
Кĕрер ман атте патне,
Маншăн ыр тăвĕ вăл сана, —
Халапланать хĕр пике,
Йăпара чĕнет хăнана.
Нумай шутласа тăмасть,
Ылтăн çурта, ылтăн пӳрте
Йăпар кĕрет хăнана.
Çырла сăнлă хĕрĕн ашшĕ —
Йывăç-курăкăн патши.
Патшан вун пĕрĕмĕш хĕрĕ
Чи юратни, чи ачашши.
Йăпара хĕре çăлса çитернĕшĕн
Ашшĕ-амăш пит хавас:

Пуç таяççĕ, тав тăвaççĕ,
Мĕн ыйтнине кăна мар,
Хĕрне качча пама та хавас.
— Йăпар,—теççĕ,—итле,—теççĕ,—
Патша кĕрӳшĕ пул,—теççĕ,—
Вун пĕр хĕртен хăшне саван,
Арăм тума ил,—теççĕ.
Вун пĕр хĕрĕ те Йăпара
Юратаççĕ чунпала.
Пирĕн Йăпар, хресчен ачи,
Авланмашкăн килĕшмест,
Ирĕк парса, çул кăтартса
Кăларса ямашкăн ыйтать.
— Ырă ĕçшĕн ырлăх килтĕр,
Кăмăла хуçма ан пултăр.
Пурнан пурнăçра аса илсен
Тав тумалла пултăр,
Инкек-синкеке лекнисене
Пулăшмашкăн вăй пултăр, — тенипе
Патша хĕрĕсем кăмăлласа
Тăхăнтарчĕç çĕнĕ кĕпе-йĕм.
Парне кĕпе-йĕмне тăхăнсан
Йăпар хăйне чăн вăй туять.
Ашшĕ лашийĕ вырăнне
Хура урхамахпа хĕç пачĕç.
Ку кĕпе-йĕме эсĕ ан ху*,
Хусан та аллунтан ямасан
Сана нихăçан та вилĕм тимест, —
Халапласа Йăпара ăсатаç.
Йăпар чашкăрса тухать çула,
Пан хан-пай кил-йышне çитмелле.
Нукар панă çырăва
Енчен енне çавăрать.
Шухăш чунра: пĕлес килет —
Мĕн çырнă-ши çырура?
Калла-малла шутласан
Вил куç чĕррĕн курăнать.
Ĕмĕтленни пулмасан
Ĕмĕр иртнĕн туйăнать.
Кайма тухнă çул инçе,
Пĕтĕм шухăш çыру çинче.
Чун тăвăнать, чун хирĕçет,
Çыру уçса вулас килет.
— Çук,—тет,—чăтаймас,—тет,
Туртать уçать чăркана.
Ак мĕн çырнă çырура:
«Ыр аттемĕр Аптулла!
Сан пата пырать этем,

* Хыв.

Эсрелпеле пĕртăван.
Пĕр тăхтаса тăмасăр
Пуçне кас та пукан ту.
Авăн çапса пĕтерсен,
Ик пиччĕшне майласан
Тĕл пулăпăр санпалан.
Сана юратан Нукар».
— Ах, мĕнле эс, шуйттан,
Ырра хирĕç мĕн тума шутлан!
Чим, тăхта,
Йăпар камне кăтартам! —
Çĕçĕ вĕçĕпе çырса
Шуйттан çыруне юсать.
Васкамасăр, хыпăнмасăр
Пан хан-пай патне васкать.
Çитсе кĕрет хăрамасăр,
Пан хана мăнаçлăн
Алă тытса çыру парса,
Така пусса тутлă шаркку тума хушать.
Йăпар ун-кун пăхкаласа
Сăнать Пан ханăн кил-çуртне.
Пан хан арăм апат тăвать,
Пан ханпа кил-çурт тавра Йăпар утать.
Канăç пӳлĕм чӳречинчен
Картинкăри сăн курăнать,
Хăй куçне хăй ĕненмесĕр
Йăпар куçа шăлса пăхать.
Чăтаймасăр, ытараймасăр
Йăпар канăç пӳлĕмне çитет.
Пан хан канăç пӳлĕмĕнче
Пан улми ӳсекен садри пек
Пĕр пек виçĕ чечек çиçет,
Йăпар чунне юрату хĕмĕ тивет.

Тăван пиччĕшсем валли те
Хитре хĕрпикесем ӳсеç.
Юрату вăл юрату,
Ун пекки çук та хăватли.
Сан чăн пулсан юрату
Сан пекки çук та хăватли.
— Эсир ăçти чечексем? —
Ыйтать Йăпар йăпшăнса.
— Ан ыйт пиртен, ырă çын,
Эпир Тарвел патша хĕрĕсем.
Хула тăрăх çӳренĕ чух
Çак шуйттан кил хуçи
Тытса килчĕ вăрăлла.
Халь ларатпăр пӳлĕмре
Чăтлăха хупнă кайăк пек.
Ирĕлетпĕр ир те каç

Çатма çинчи сар çу пек.
Эпир кунти чăтлăхрине
Атте, анне, тăван мар,
Тус-тантăш та тĕлленмест,—
Хуравлаççĕ хĕр пикесем. —
Эсĕ, ырă яш ача,
Мĕнле лекрĕн, мĕн шыран?
— Хам ирĕкпе хам килтĕм
Этем какай вырăнне
Така шарккăвĕ илме.
Сирĕн кăмăлăр пулсан
Хăтарăп сире вилĕмрен,
Çăлăп сире тамăкран, —
Хастаррăн пĕлтерет Йăпар.
— Ырă çыннăм, тем пекех,
Тарас килет чун пекех.
Халаппала вăхăт иртнĕ,
Шаркку пиçнĕ — сисĕнмен.
Шаритленĕ аш шарккуне
Йăпар çитерчĕ хĕре.
Чĕрĕ, йăрă Йăпара курсан
Нукар пăхрĕ тĕлĕнсе,
Какай шарккуне курсан
Чăтаймарĕ — йĕрсе ячĕ шăрчĕпе.
«Пан хан-пай килĕнчен
Халиччен калла çын тухайман,
Ку мĕне пĕлтерет?» — шухăшларĕ Нукар.
Мăкăртатрĕ, пăшăлтатрĕ,
Пуçне усрĕ шухăшпа Нукар.
Ыраш çапса ĕç пĕтерсен
Ирпе ĕçшĕн хак тӳлеме
Нукар чĕнет хăнана,
Виçĕ каччă-пĕртăван
Хăнана каяççĕ Пан ханăн килне.
Авăн пĕтернĕ ятпала
Ак ĕçеççĕ, ак çиеççĕ
Çак тĕнчене курманла.
Йăпар куна ĕçнĕн тăвать,
Шав тултарать хăй хӳмне*.
Ĕçсе çинĕ, сывăраççĕ,
Шуйттан çемйи сывăрмасть.
Ӳсĕре пенĕ Йăпар кăна
Итлет, сыхлать таврана.
Чирлĕ выртан Пан хан-пай
Касма хушать пуçсене.
— Йăпар пуçне хам касап,
Шалча çине хам çакап,—
Хаярланать халь Нукар.

* Хĕвне.

Шуйттан çемйи хыпăнсах
Çĕçĕ хăйраççĕ, тирĕк çăваççĕ,
Пысăк ĕç тума шутлаççĕ.
Шуйттан йăхĕ ĕçленĕ чух
Йăпар тăратрĕ пиччĕшсене,
Кашни пĕрер хĕр çаклатса
Тухса вĕçрĕç тамăкран.
Шуйттан урти ĕçе тухать —
Этем вырăнче çил кăна вĕрет.
Шутласа тăма вăхăт çук —
Хăвалаççĕ хыçалтан.
Хуса кăна çитмеллеччĕ —
Йăпар ушкăнĕ чикĕ урлă,
Тухатнă тинĕс леш енче.
— Ну, Йăпар!
Пурнас такана пĕтертĕн,
Виçĕ хĕре вăрларăн.
Тăхта, кунпа ĕç пĕтмест,
Тĕл пулатпăр пурнăçра,
Халех саклата хур пуçна!
— Çын валли шăтăк чавиччен
Ху кукăрруна кур.
Пуçа саклат ыйтан пулсан
Малтан сан пуç пулать каска пукань!
Атте пилĕ çĕре ӳкмест,
Тăшман ĕмĕт мана çитмест! —
Пĕлтерет Йăпар.
Виçĕ каччă, виçĕ хĕр
Утаççĕ хăйсен çулĕпе.

3

Тинĕс айлăм кукринче,
Хитре Саваш хулинче,
Тарвел патша çемйийĕ
Куçа илĕртен чечек пек
Виç хĕр ача ӳстернĕ.
Ӳссе çитсен виç кунтан
Çемье путнă хуйăха.
Выртса ыйăхĕ килмен,
Тăрса ĕçлесси килмен,
Кунпа çĕре чухламан,
Аша çунтарнă вутпалан.
Унтан ыйтнă, кунтан ыйтнă —
Никам пĕлекен пулман.
Çӳле кайни, çĕре кайни —
Хĕрсем çухалнине курман.
Юмăç пăхнă, шухăшланă —
Хĕрсем ăçтине чухламан.
Пуçелĕк панă,

Çăл питĕрнĕ —
Хĕрсем çинчен тĕлĕк те курман.
Шанăçа çухатнă патша
Шур хут çине çырсах:
«Ман хĕрсене тупакана
Мĕн ыйтнине парăттăм,
Тупаканăн кăмăль пулсан
Хамăн кĕрÿ тăвăттăм», —
Хыпар тăвать патшалăха.
Патша кĕрÿшĕ пуласшăн,
Патша парни илесшĕн
Пин-пин çын хыпăнать,
Çĕршыв тавра çавăрнать.
Çÿле пăхаç — çÿл инçе, çитеймеç,
Çĕре пăхаç — çĕр хытă, кĕреймеç,
Шыва пăхаç — шыв тарăн, анаймаç,
Хĕрсем куçа курăнмаç.
Хыпăнсан та, çунсан та — усси çук,
Хĕрсем çинчен хыпар çук,
Тупăнасси шанăç çук.
Уйăх иртни, çул иртни
Тупас шанăç çухалсан —
Кĕтмен-шутламан çĕртен
Виçĕ хĕрпе виçĕ каччă
Тăнă патша умĕнче.
Патша хăйне ĕненмесĕр
Куçне шăлнă, сăмсине чĕпĕтнĕ,
Куç умĕнче, тĕлĕкре мар,
Хăйĕн виçĕ хĕрĕпе виçĕ каччă
Тăнă уйăхăн çуталса.
Патша ним тума аптраса:
Виçĕ качча çамкисенчен чуптуса
Тăратать хăйĕнчен сылтăма.
Виçĕ хĕрне куçĕсенчен чуптуса
Тăратать хăйĕнчен сулахая.
Виçĕ каччă-пĕртăван
Хыпăнмасăр сăмах май
Пĕлтереççĕ курнине,
Пĕлтереççĕ çăлнине.
Чун хĕпĕртет, куç çиçет,
Тарвел патша чунĕ хĕпĕртет,
Виçĕ каччă-пĕртăванран:
— Мĕн кирлине ыйтăр, — тет.
Виçĕ каччă-пĕртăван
Пилĕк таран авăнса:
— Пире ним те кирлĕ мар,
Санра сывлăх пултăрччĕ, — теç.
— Сывлăх суннăшăн тав сире,
Турă ан пăрахтăрччĕ сире.
Хĕрсем çухални эрне иртсен

Пĕтĕм халăх пĕлмелле
Эпĕ сăмах парсаччĕ:
Ман хĕрсене тупакан
Ыйтнине пама пулсаччĕ,
Тупакан кăмăлĕ пулсан
Кĕрӳ тума пулсаччĕ.
Хам сăмахран хам тухмас,
Хамăн чыса çухатмас,
Халăхран намăс курмас.
Эсĕр манпа килĕшсен
«Атте» теме сăмах тупăр.
Пурнăç урапи çавăрăннă май,
Тен, хăшĕ те пулсан
Патшалăх пуçне тăрăр.
Ăна-кăна шухăшлама
Виçĕ кун та виçĕ каç.
Инкек курса нуша иртсен,
Пыл чĕресне пӳрне чиксен
Чĕресне алла илес килет.
Патша кĕрӳшĕ эс пулсан та,
Йăпар сывă, чĕрĕ пулсан
Патша пуканĕ лекмест.
Пĕртăван пиччĕшĕсен
Шухăш-туйăм пăтранать,
Кашнин патша пулас килет.
Йăпара савса пуç таяс чух
Йăпар шăтăкне чавма шутлаç.
Виç кун пурăнсан, виç каç иртсен
Йăпарăн аслă пиччĕшне чĕнсе
Патша мĕн шутланине ыйтать:
— Сирĕн хĕре юратса
Алăра йăтмашкăн пулап,
Анчах ăна парне пама
Ман ни кĕмĕл çук, ылтăн çук.
Хаклă парне памасан
Хĕр куçĕнчен мĕнле пăхас? —
Ку сăмахсене илтсен патша
Тĕлĕнсе пуçне пăркалать.
— Ниме тăман япалашăн
Кулянса вăйна ан пĕтер.
Ылтăнĕ те, кĕмĕлĕ те
Манăн кĕлет туллиех,
Хăшне саван, хăшне илен —
Ил те, кай та парнеле!
— Çук, — тет Йăпар аслă пиччĕшĕ, —
Сирĕн хисеплĕ ятăр хушать,
Сирĕн хĕре манран парне пултăр,
Никам алпа тытманни,
Никам халиччен курманни,
Шуйттан кермен клетĕнчи çитти,

Хĕвел-уйăхла çуталаканни.
Шуйттан кермен кĕлет уççине
Йăпар тупса кĕме пултарать,
Йăпар кăна илме пултарать,
Вăл эсир кайма хушасса кĕтет.
Патша ăна-кăна шутламасть,
Халь Йăпара чĕнтерсе
Хĕвел-уйăхла çутлакан çитти —
Йăпар пиччĕш ыйтнине —
Тупса килсе пама ыйтать.
Йăпар мĕншĕнне чухлать,
Йăпар хăрама çуралман.
Хĕвел-уйăхла çутлан çитти тупма
Йăпар вăрăм çула тухать.
Уй-хир, вăрман, сăрт-ту урлă каçса
Нумай кайри, сахал-и —
Çитрĕ Пан хан-пай мул кĕлетне.
Хĕвел-уйăхла çутлан çитти илсе
Килме тухрĕ çула.
Мĕнле çитрĕ, мĕнле уççи тупса çитти илчĕ—
Пĕр Йăпар кăна пĕлет.
Йăпар чикĕ урлă, тухатлă тинĕс урлă каç
Шуйттан çитрĕ, касма çук:
— Тăхта, Йăпар! Улталарăн,
Пурнас такана пустартăн,
Виçĕ хĕре вăрларăн,
Ман вăрттăнлăха пĕлсе
Халь ниçта çук çиттие вăрларăн!
Çитти витĕнсе выртакан
Ĕмĕр ыйхăран ан тăтăр!—
Ылханса кăшкăрать шуйттан.
Йăпар хăлхана та чикмерĕ,
Шав малалла талпăнчĕ.
Куçа хупса иличчен,
Пуçа шухăш киличчен
Çитсе кĕчĕ патша çуртне.
Алри çиттие курсан
Куранăн куç-пуç чалкăрчĕ.
Йăпар сывă, чиперне курсан
Аслă пиччĕш хуралса сăнне çухатрĕ,
Пĕлтерчĕ вăталăх пиччĕшне.
Савăннипе тĕлĕнсе патша чĕнет
Йăпарăн вăталăх пиччĕшне.
— Сирĕн савнă хĕрĕре
Чун-чĕререн юратап,
Чун-чĕререн юратнине пĕлтерме
Парне пама ни кĕмĕл те ни ылтăн çук,—
Хуравлать патша ыйтăвĕ çине
Йăпарăн вăталăх пиччĕшĕ.
— Ылтăнĕ те, мерченĕ те —

Мĕн кирлийĕ пурте пур.
Пурлăх клетĕнчен ил те
Пулас мăшăрна кайса парнеле, —
Кăмăлтан пĕлтерет патша.
— Çук, ырă аттемĕр,
Пулас арăма ман парасчĕ
Çур çĕр тĕлĕнче кун тăвакан
Хĕвел уйăхлă хушпу.
Кун пек хушпу пуррине
Пĕр Йăпар кăна пĕлет.
Хĕвел-уйăхла çутлан хушпу патне
Йăпар ярасса кĕтет.
Патша чĕнет Йăпара,
Хĕвел-уйăхла çутлан хушпу патне
Кайса килмешкĕн ыйтать.
Нумай халапланса тăмасть —
Йăпар тухать вăрăм çула.
Йăпар хăрама çуралман,
Мĕн ыйтнине тумалла.
Сахал кари, нумай-и,
Хĕлле-и вăл, çулла-и, —
Пире пĕлме кирлĕ мар, —
Çитет пурлăх кĕлетне,
Вăталăх пиччĕш ыйтнине —
Шуйттан курса сисиччен
Илсе тухать хушпуне.
Пĕр хыпăнса, тăхтамасăр,
Ывăннине пăхмасăр
Шав çула кĕскетет.
Тухатлă тинĕсе çитсен,
Чикĕ урлă каçса çитсен
Шуйттан кăшкăрать хыçран:
— Тăхта, Йăпар!
Ман пурлăха çаратнăшăн
Пуçу çитмест, чуну çитмест,
Пурпĕр сана тавăрап.
Ман хушпăва тăхăнакан
Çутă тĕнче ан куртăр!
Йăпар хăлхана чикмест —
Тапаланать малалла.
Патша кил-çуртне çитсен,
Йăпар хушпуне курсан
Кам куракан ал çупать,
Тĕлĕннипе пуçне суллать,
Йăпара ырлăх-сывлăх сунать.
Ăста алă-урана
Ырăпа асăнса пил сунаç.
Йăпар сывă, чĕррине курсан
Пиччĕшĕсем тата тăвăнса çилленеççĕ.
Çиллĕ шăртне ниçта хураймасăр

Эрнипеле чирлеççĕ.
Патша черечĕпе Йăпара чĕнет:
— Хĕре юратса кĕрӳ пуласшăн-и?—тет.
— Ырă çыннăм, ырă атте пул.
Ырă юрату пĕрре пулмалла.
Эпĕ сан хĕре юрататăп.
Сан хĕр мана юратать-и?
Ун чĕринче мĕн?
Пĕччен эпĕ юратни
Пурнăç илемне кӳмест, тĕнчене кичем.
— Чăнне калан эс, ывăлăм,
Кашнин чĕринче юрату пĕрре пулмалла.
Хам хĕртен хам ыйтса пăхрăм,
Ун чĕринче халĕ эсĕ кăна,
Паян килĕшсе пĕр-пĕрне алă тытар.
— Хирĕçместĕп,—тет Йăпар,—
Мĕн виличчен пĕрле пулар.
Анчах ман çук ăна валли парне,
Аслă пиччен пек çуталан çитти,
Вăталăххин пек çуталан хушпу.
Çапла çара алăпа пырсан
Пăшăрханмĕ-ши сан кĕçĕн хĕр ачу?
Мĕн калăп хĕре ыталасан?
Ăçта чикĕп пуçа намăсран?
Паян ман çула тухмалла,
Юратса ман хĕре парне кӳмелле.—
Йăпар сăмаха татса
Тухса утрĕ вăрăм çула.
Сахал кари, нумай-и —
Çул çӳрекен хăй чухлать.
Сăрт-ту тăвайкки тар кăларать,
Çырма-çатра шутлаттарать.
Йăпар мул кĕлетне кĕчĕ,
Шуйттан шăпах тĕл пулчĕ.
— Лекрĕн, — терĕ Пан хан-шуйттан,—
Уй пăрçи пек пĕрре сикрĕн, иккĕ,
Халĕ ĕнтĕ эс манран
Каçару пуласса ан ĕмĕтлен.
Айăпсăр такана пусса шаритленĕ пек
Паян сана пусса шаритлеп.
— Шуйттан патши, чăнне калан,
Ухмахла ĕлĕк эпĕ пулнă,
Ăнланман-мĕн пурнăçа.
Халĕ ĕнтĕ, чăнах, ăнлантăм,
Пурнăç урапи чуппине курап.
Вилĕм çинчен шутлани пек
Çухатнă тахçан ыйăха,
Çунан çурта ирĕлнĕ пек
Куллен çунса ирĕлеп.
Ытла кун пек асапланиччен

Хамах сан патна килсе
Парам терĕм чунăма.
Ман чун сана килет пулсан
Тавра курăнмалла çырса хур:
Эс мĕн тунă, халь мĕн тăван,
Ху ăсупа-и, кам ăспе
Çут тĕнчере пурăнан,
Тавралăх юнне ĕçен?
Паянхи çак мул кĕлечĕ
Мĕнле майпа вăл пуян?
Ху алпа ĕçлесе е куççуль тăктарса
Тĕнчене тăран пăхăнтарса?
Иртен-çӳренсем вулаччăр,
Сан пурнăçна ылханччăр.
Эсĕ камне, эс мĕнлине
Куç умĕнчи пек курччăр.
Йăпар вилĕмрен хăрамасть,
Айăпсăра хĕç витмест.
Ан ман, Йăпаршăн — мулу, чуну та çитмест!
— Юрĕ, Йăпар, эсĕ чее те чăпар,
Сана та, мана та вилĕм ан килтĕр,
Каялла чак çичĕ утас,
Мĕн кирлĕ сана, мĕн ыйтан?—
Халапланать шиклĕ хан Пан-шуйттан.
Мул кĕлечĕн алăкне уçсан
Йăпар пăхать хăйне мĕн кирлине.
Мĕн кăна çук — куç-пуç сикет,
Кăмăллани Йăпарăн нимĕн çук.
Пĕр кĕтесре лăпăра
Симĕс кайăк ларнине асăрхать.
Ун-кун пăхса тăмасăр
Лăпăран кайăка кăларать.
Шуйттан: — Кăларма тăхта, — теччен
Симĕс кайăк куçран çухалать.
Йăпар шуйттан мул клетĕнчен
Ним илмесĕр тухса утать.
Чикĕ урлă, тинĕс урлă каçсан —
Симĕс кайăк Йăпар аллинче.
Патша çуртне çитсе кĕрсен
Кайăк никама тĕлĕнтермен;
Симĕс кайăк симĕс кăна,
Хĕвел-уйăхла çутлан çитти мар,
Хĕвел-уйăхла çутлан хушпу мар,
Хĕпĕртесе савăнмалли мар.
Патша йăхне, патша йышне
Намăс кăтартмалли кăна.
— Мул клетĕнче унтан хитри пулман-и? — тесе
Йăпара ярасшăн парне патне.
— Пусăхласан кăмăллă çын пулмасть,
Килĕштермесен ан паччăр мана хĕр,

Паман хĕре пусмăрласа илмес, —
Татнă сăмаха Йăпар.
— Ман хĕрсене вилĕмрен çăлса
Пурăнма пурнăç пилленĕ.
Ыр пилĕмпе хам пиллем.
Хам сăмах улăштармасăр
Виçĕ качча-пĕртăвана
Хам хĕрсене качча парам.
Хастаррине, Йăпара,
Туйсем иртсен, вăйăсем иртсен
Хам ватăлăха тухса
Йăпара тĕп вырăна хăварам.
Туй тумашкăн хатĕрленер,
Мĕн çитменне хатĕрлер,
Сим пыл, шерпет юхтарар, —
Пĕлтерет Тарвел патша.

**4**

Лара-тăра пĕлмесĕр
Йăпар парне шырама чупать.
Ир те, каç та килте çук,
Юратмашкăн вăхăт çук.
Тарвел ĕмпӳ хĕрĕсем
Хĕпĕртесе-савăнса
Çӳреç чечек пахчинче,
Вăтанмасăр, ютшăнмасăр —
Хыçра Йăпар пиччĕшсем.
Тарвел патшан кĕçĕн хĕрĕ,
Пурĕ юратан Кулиме,
Ик çӳç хĕрри кăтралли,
Çӳхе тута йĕрчелли,
Ик пит çмарти путанни,
Мăшăр çăлтăр хура куçли,
Пĕр кашăк шывпа çăтмалли,
Ютран килнĕ патша йăхне
Савăнтарнă сăнĕпе те
Савăнтарнă пĕвĕпе.
Тарвел патшан хĕрĕ Кулиме
Ашшĕнчен пĕр уйăрăлмасăр
Патшалăх ĕçне тума пулăшать,
Ютран килнĕ патша ывăльсене
Вăтаннăн пулса сăнать.
Ютран килнĕ ĕмпӳ ывăль
Хура çĕр хурчĕ Йăпартан
Якарах та япшакрах,
Хисеплĕ те чыслăрах,
Мăшăр тума вăхăтлах.
Йăпар тăван пиччĕшсем
Çунан хĕме тивертеç,

Кулиме пуçне пăтратса
Йăпар чунĕнчен сивĕтеç.
Йăпар тăван пиччĕшсен
Пуçĕсенче пĕр шухăш:
Йăпар йышра пулмасан,
Кулиме юта качча тухсан
Ĕмпӳ пукань юлать пиччĕшне.
Ĕмпӳ креслине ларас пулсан
Йăпара йышран çухатмаллах,
Юратан хĕрĕн шухăшне
Ют патшалăх енне сирмеллех.
Ир те, каç та Кулиме пуçне
Шухăш-ĕмĕт çуратаç,
Çемçе, ăшă сăмах-юмахпа
Ют ĕмпӳ ывăлне ырлаç,
Ырлăх-пиллĕхе сунаç.
Çамрăк хĕрĕн ăс пăсăлать,
Йăпар асĕнчен тухать.
Ют патша ывăль — Армет —
Хĕр пуçĕнче çуралать.
«Чун юратнă Армет!
Мана чунтан юратсан
Çакă çитес тушма кун
Атте патне вăрç[ă]па тух.
Вăрçăпа тухса чармасан
Хура çĕр хурчĕ Йăпара
Атте мана ирĕксĕр
Пусмăрласа качча парать.
Чăн юратан пулсан мана
Ирĕксĕртен çăлса ху патна ил», — тесе
Çырса пĕлтерет Кулиме.
Ир пулать те кун пулать,
Кам мĕн шутлине кам пĕлет?
Патша йышĕ савăнса
Туй тумашкăн хатĕрленет.
Сим пыл саркавайра юрлать,
Шерпет пичкере ташлать.
Паян лăпкă, тушма кун:
Хĕвел кулать, çил лăпкать,
Ĕмпӳн чаплă туйне тума
Тăван-хурăнташ пуçтарнать,
Патшан аслă сĕтел çине
Сим пыл, шерпечĕ тухать,
Акă хай туй пуçăнмалла.
Ĕмпӳн çывăх кăрнатирĕ
Çитсе кĕчĕ, хыпарлать:
— Савăнса туй тумалли кун
Чăркăш патши тапăнать,
Халех хирĕç тăмасан
Чура сăнчăр такăрлать.

— Туй тума тăхтамалла,
Çĕршыва сыхлама тăмалла!
Пулас ман кĕрӳсем,
Кам паттăрлăх кăтартать,
Çавă ман пилĕме илет! —
Хыпарлать ĕмпӳ-патша.
— Хĕççи-сăнни çивĕч пулсан
Пĕрре тапса вăйпа сулма
Тăмасть Чăркăш патша пулкки!
Пире итлеме хушса
Пар эс пире хĕçлĕ çын пулкки?
Эпир кахал йăхĕнчен мар,
Укантейĕн аслă ывăльсем, —
Мухтаннă Йăпар пиччĕшсем.
Каланă та ĕç тунă,
Пĕрер хĕçлĕ çын пулккипе
Пуçĕсене каçăртса,
Хăйсене питех мăнаçлăн тытса
Хаяр вăрçăн çапăçу хирне
Йăпар пиччĕшĕсем утнă.
Вăрçă хирне çитнипе
Юнлă çапăçу хĕрет;
Тăшман аçа-çиçĕм çунтарса
Хĕçлĕ çын пулкне хĕсет.
Хĕçлĕ çын пулкĕсем саланать.
Йăпар пиччĕшсем ун-кун пăхса,
Тыткăна лекес мар тесе
Ĕмпӳ-патша çуртне çитеç:
— Тăшман вăйлă, çĕнес çук,
Çут тĕнчере пурнас çук.
Айăпсăр чуна париччен
Авланса арăма курас!
Тарса хăтăлма май пур чух
Вăрман-çырмана тарас!
— Тăхтăр, тăван пиччесем!
Ан хуйхăр-ха, Тарвел ĕмпӳ!
Ху çуралнă çĕршывра
Ма вилмесĕр вилĕ пулмалла?
Тăван çĕршыв илемне,
Тăван çĕршыв пуянне
Хирти хăравçă куянла таракана
Мĕнле çĕр йăтса тăмалла?!
Çук, хăравçа кун-çул çук,
Тăван çĕре тăшмана парас çук!
Нарута чĕнме ирĕк пар,
Полк-полк пĕрлешме ирĕк пар,
Вăрçă хирĕнчи çапăçу паттăрне
Асăнмалăх парне пар...
Ман сăмаха итлесен,
Пурĕ пĕр шутлă пулсан

Тăшмана çĕнме пулать ним мар!
— Сана ирĕк, Йăпар!
Намăс ан кăтарт, пурăнар,
Хамăр çуралнă çĕршыва
Тăшман кулли тăвар мар,
Ĕмĕр тăршшипе сыхлар! —
Алă тытса, чăмăртаса
Сăмах парать Йăпара Тарвел.
Йăпар пухать халăха,
Пĕлтерет пысăк та йывăр хуйăха:
Тăван пахча пек ăшши çук,
Вĕлле хурч пыль пек тутли çук.
Кам ăшша юратать,
Кам хурт пылне савать,
Çав тăван халăх ывăль пулать.
Тăван халăх ывăль тăван çĕре сыхлать.
Кам тăван çĕршыв сыхлăхĕнчен пăрнать,
Çав пĕтĕм халăх тăшманĕ пулать.
Хăравçă мулкача кун-çул çук,
Хăравçă чуна пурнăç çук, —
Пурне те пĕлтерет Йăпар.
Пур маттура, паттăра пухса,
Пĕр пичке эрех те ĕçме-çимелли илсе,
Палнай çеммипе юрласа
Çитрĕç вăрçă хирĕн чиккине.
Эрех пичкине варнчен касса
Икĕ эрех каткилле тăвать,
Палнай кĕвĕпе кĕвĕлесе
Ĕçсе-çиме, вăрçмасăр савăнма хушать:
— Эпĕ сирĕншĕн, сирĕн ачăрсен
Пуласлăхĕшĕн кĕретĕп, — тет, — вăрçа.
Чăркăш патша салтакĕсем
Урра! кăшкăрса сикеççĕ кунта.
Йăпар хура урхамахĕ çине утланса
Пĕлĕте кармашса илет,
Çӳлте, пĕлĕтре вĕçнĕ чух
Мĕнле хĕçĕпе сулласа хĕреслесе касать,
Çавăн пек тăшман çарĕ туранса ӳкет.
Пирмет çырми пĕвĕнсе
Çын юнĕпе юхать.
Йăпара пулăшма тăнă маттурсем
Чăркăш патшан Армет атаманне тытса
Минтер пекех çемçетсе
Урхамахĕ çумне çыхса яраççĕ киле.
Чăркăш тăшман çарне çĕнсе
Йăпарпа Йăпар пиччĕшсем
Ĕмпӳ-патшаран пурнăç парни илеççĕ.
Чун савăнать, чĕре сикет,
Тата паттăр пулас килет.

## 5

Хĕрĕх кун та хĕрĕх каç
Пĕр канмасăр туй сикет.
Тарвел ĕмпӳн виçĕ хĕрĕ
Укантей ывăлĕсене качча тухать.
Пĕрре пăрланнă сив чунпа
Кулиме Йăпара савмасть.
Минтер пек çемçетнĕ Армете
Кулиме асĕнчен ямасть.
Туй сикет те юр юрлать,
Кулиме Арметшĕн ăшне çунтарать.
Чăтаймасăр, ютшăнмасăр
Арметпе вăрттăн çыру çӳретет.
Туй иртсен тепĕр ирпе
Симĕс кайăк юррипе
Йăпарпа Кулиме вăраннă,
Хыпăнмасăр, васкамасăр
Тарвел ĕмпӳ патне çитсе
Ир пилĕ илме утнă.
Кулимепе Йăпара курсан
Ĕмпӳ-патша аса илчĕ.
Хĕре хаксăр парне кӳнине,
Хăй пăшăрханнине кăтартмасăр
Çапах çапла сăмах турĕ:
— Çут çанталăк тăватă енлĕ,
Тăватă ене арçынпа хĕрарăм тăрать.
Килет вăхăт, çитет кун —
Арçынпа хĕрарăм пулаççĕ тан.
Вăл кун килсе çитиччен
Йăпшăнса та лăпчăнса
Пурăнар кайăк юррипе.
Вăхăт çитет, кун килет,
Тен, çĕршыв хуçи пулма килет. —
Патша хĕрĕ Кулиме
Сăмах тумасть никампа,
Сивĕ пăрлă чуна кăтартмасăр
Юратнăн Йăпар çумне йăпшăнать,
Чăркăш патшан Арметне
Мĕнле вăйпа, мĕнле майпа
Çĕннине пĕлесшĕн хыпăнать.
Йăпар ăна-кăна чухламасăр
Çумри арăм — хам чун тесе,
Çумри арăм — эп хам тесе:
«Ман чун усси кĕпере,
Ман вăй çири кĕпе-йĕмре», —
Ыталаса чуптуса,
Арăма чун-чĕререн шанса
Йăпар вăрттăнлăха парать.
Кулимене çакă кирлĕ,

Ĕмĕтленнĕ тахçанах.
Ирпе тăнă-тăманах
Патшан тарçи-стрепкисем
Мунча хутса пултараç.
Кулимепе Йăпар
Хутнă-пулнă мунчана каяç;
Çири кĕпе-йĕме хуса
Аш мунчара çапăнаç.
Патша тарçи-стрепкисем
Йăпар кĕпе-йĕмне тĕспе улăштараç.
Мунчаран тухнипе пĕрле
Кулиме савăнса хĕпĕртет.
Йăпарăн чун уссиллĕ кĕпене,
Йăпарăн вăй тытан кĕпе-йĕмне
Армете ярса парать,
Хăвăртрах вăрçăпа тухма ыйтса
Вăрттăн çыру вĕçтерет,
Армет арăм[ĕ] пулма килĕшет.
Кун иртет те, каç иртет,
Йăпар пиччĕшсен, патша аслă хĕрĕсен
Тухса кĕни курăнмасть,
Тăрса тухни палăрмасть.
Аслă хĕрпе кĕрӳшсене
Патша кĕтсе илеймен.
Мĕншĕн хĕрпе кĕрӳшсем тăманнине
Никам чухласа илеймен.
Нумай шутласа тăмасть —
Йăпара чĕнтерсе илет:
— Мĕн пулнă-ши хĕрсене,
Мĕн пулнă-ши кĕрӳсене?
Виççĕмĕш кун ыйхăран тăраймаç.
Пĕтĕм ĕçĕн вăрттăнлăхне
Пĕлетĕн эсĕ кăна, —
Сăмах-юмах пуçăнмаллаччĕ —
Пырса кĕчĕ кăрнатир.
— Чăркăш патша вăрçăпа
Тухнă тет паян ир.
— Атте-патша, эс итле,
Ман пиччесемпе хĕрӳсем вилмен,
Тăшман пил-ылханĕпе
Вăрăм ыйхă çывăраççĕ.
Пĕр-пĕр çĕре илсе хурăр,
Халь шутлама вăхăт çук, —
Пĕлтерет хыпăнса Йăпар.
Йăпар нумай шутласа тăмасть,
Маттур паттăрсене пухса,
Ĕçсе çимеллипе эрех илсе
Палнай çеммипе тухать хире.
Вăрçă хирне çитеспе
Эрех пичкине варринчен касать хĕçпе,

Хĕç паллине те илмест пичке.
Урхамахĕпе сикме шутлать пĕлĕте,
Урхамахĕ те икĕ ури çине тăнисĕр
Йăтăнаймасть çӳллĕ.
Йăпар вара халсăрланса
Малла кайма хушать маттурсене.
Йăпар маттурĕсем парăнаç,
Армет аманнă Йăпара хăй аллипе тытса
Татăкăн-татăкăн тураса тултарать миххе,
Тулли миххе урхамахĕ çумне çыхса
Ăсатать çакса хире.
Чăркăш патша ывăль Армет
Тарвел патшалăхне çĕнсе
Ларать Тарвел ĕмпӳ-патша вырне.
Тарвелпа арăмĕн куççене шăтарса
Хупать чул нӳхрепе,
Йăпарăн ашшĕ-амăшне
Пилĕк таран чĕрĕ çи-пуçпа
Çĕр çине таптаса лартать.
Армет Кулимепе юратса
Мăшкăл тăваççĕ этемсене.

## 6

Хирсем урлă, уйсем урлă
Йăпар лаши хыпăнать.
Вун пĕр хĕр ашшĕн алăкне
Тарлă кăпăкпа çитет.
Йăпар урхамахĕ пĕлет:
Йывăç-курăк патшалăхĕн
Тем тесен те тем те пур.
Çиес тесен — çитерет,
Выртас тесен — вырттарать,
Çыврас тесен — çывратать,
Вĕлерес тесен — вĕлерет,
Тăрас тесен — тăратать.
Ăна çитес тĕнче çук,
Ăна çитен мул та çук.
Йăпар лаши пăхкалать,
Çитмĕл хăлаç çӳллĕшне
Сикме тăрать — сикеймест,
Кĕçенет те тапăртатать:
— Часрах уçма тухăр, — тет, —
Йăпар вилнĕ, сыватăр, — тет. —
Тапăр-тапăр-тапăртак!
Эпĕ сикнийĕ мĕн хак? — тет.
Урхамах кĕçеннине илтсе,
Урхамах тапăртатнине илтсе,
Пулăшу ыйтнине сиссе
Вун пĕр хĕр харăссăн

Сиксе тухнă васкавлăн.
Йăпар хутаçрине курсан
Йăпăр-япăр хыпăнса
Михри мĕнпур татăка
Çын кĕлеткийĕ туса
Вил шыв сĕрсе тĕс кĕртрĕç.
Чĕр шыв сĕрсе сыптарсан
Йăпар ура çине тăчĕ.
Нумай çывăрнăн карăнкаласа
Малтанхинчен ытларах
Хăйĕнче вăй пуррине туйрĕ.
Чун кĕрсе ура çине тăрсан
Йăпара хĕрсем патне юлма ыйтаç.
Йăпар юлма килĕшмест,
Пурнăç парса чун панăшăн
Чун-чĕрепе тав туса
Çул кăтартса ăсатма ыйтать:
— Вăйпа туслă пулас çук,
Кăмăла хирĕç каяс çук.
Эп юратсан — вăл юраттăр,
Эпĕ савсан — вăл савтăр,
Эп макăрсан — вăл макăртăр.
Пĕр хавассăн, пĕр кăмăллăн
Халапланса-пуплесе
Хĕрсем Йăпара юратса,
Малтанхи урхамахне, хĕçне парса,
Алăк уçса, çул кăтартса
Çул тăваткалне çитиччен
Вун пĕр хĕр, пĕр хĕр пек,
Йăпара çула ăсатаç.

## 7

Йăпар сывă та чĕрĕ,
Чун ыратать, пуç шутлать.
Тăван çĕршыв тăрăхĕнче
Мĕн пулса иртнине курать.
Ыр çын тени çын пултăр,
Ял-йышшăн тăван пултăр.
Çын тени çын пек пултăр,
Савап текен чĕр чуна
Тач пĕлмесĕр ан шантăр.
Ир пуçласа сĕм çĕрлеччен
Йăпар çавăрнать таврана,
Мĕн курать, мĕн илтет —
Ыраттарать чĕрĕ чуна.
Армет патшана ларнăранпа
Çĕнĕ тĕнче, çĕнĕ пурнăç йĕркере.
Кам шыв ĕçет — шыв укçи,
Çула тухнăшăн — çул укçи,

Пĕве-кĕпершĕн — кĕпер укçи,
Хĕвел çутишĕн — хĕвел укçи
Пуçтарать кашни этемрен.
Çĕрпе усă куранран — çĕр тырри,
Вутă çунтаранран — вут тырри
Хăйпăтать кашни кил-йышран.
Эх, пурнăç, мĕнле ку?
Янтă мул-пуяна курса
Çын тени хăйне хăй сутать.
Янтă мул-пуяна хапсăнса
Тăван ял-йыша сутать.
Çĕнĕ ĕмпӳ — çĕнĕ йĕрке,
Тăван ял çынни тванне маннă,
Хакне тăман мул-пуяншăн
Тăванне чĕррĕн çĕре чавса хурать.
Эх, пурнăç, мĕнле ку?
Ыйхăран тăрать ахлатса,
Кун каçать куççульпе пит çуса,
Çиме тăрать — çиме çук,
Парăм панă хан Пана.
Канма тăрать — канма çук,
Çурăм çинче тарпа йĕплĕ хул кăна.
Хĕвел пăхмасть савăнса,
Уйăх тухмасть çутăлса.
Ăçта çитен — макăру,
Ăçта пынă — ахлату.
Хан Пан тени ирĕк панă
Турхансене ашкăнма,
Хĕвел-уйăхран мăшкăлламалла,
Анчах хĕвелĕ çӳлте,
Кармашсан та хул çитмест.
Уйăх патне хăпарĕччĕç —
Çӳллĕ пусми те çитмест.
Ирĕксĕртен килемей
Хĕвел-уйăха пăхăнма тивет.
Хамăр тутă, пуян пулсан
Чухăн выççи курăнмасть.
Çĕнĕ патшан çĕн йĕркипе
Айăп çукне айăп тупса
Такан туса çакмалла,
Айăп çукне айăп тупса
Этем пуçне касмалла.
Тăхăр ял хуçи турхан юрлать,
Виç ял хуçи çĕрпӳ ташлать,
Хан Пан вăй-хал парса астарать,
Тăван тăвана пуççапать.
Йăпар çитет Ийпен ялне,
Çуралса ӳснĕ атте килне.
Ийпен ялĕ кĕл-кăмрăкра.
Атте кил кĕлне çил вĕçтерет,

Унта-кунта вĕлтрен ешерет.
Атте килĕ сÿннĕ, йĕрĕ çук,
Мăян-вĕлтрен кăна
Çурт-йĕр, кил пулнă вырна пĕлтерет.
Ял-йыш юлнă çур йышпала,
Армет пăвать пĕтĕм чунпала,
Ĕмĕр ĕмĕрлеме шутлать хуçа.
Йăпар çитет Тарвел хулине,
Тарвел хулине ĕмпÿ çывăхне:
«Атте, апай чĕрĕ те сывă,
Кăкăр таран çĕр хыттинче.
Хĕвел пăхать, çумăр çăвать,
Кĕр çумрипе хĕл сивви
Чун кăмăлне хуçаймасть,
Пулас телее çухатмасть».
Тарвел ĕмпÿ, Тарвел мăшри
Ик пăч суккăр чул нÿхрепре,
Шутра çуккă пĕтес-вилес шухăш,
Ыр кун килессе кунран-кун кĕтет.

## 8

«Çуралнă çĕршыв пур çинче
Ман ма асапа курас?
Тăван ял-йыш пур çинче
Ман ма вăрмана тарас?
Тăван халăх пур çинче
Ма юта алхастарас?..»
Лашапа сутă тăван улшуçпа
Йăпар кĕрсе килĕшет:
— Ирпе пулăп хура ăйăр,
Тăрăп сан лаша витинче,
Сутма пасара илсе тух,
Патша кăна илме пултартăр,
Хăрамасăр хакне ыйт —
Сана пулĕ ырлăхĕ,
Мана пулĕ пиллĕхĕ, —
Пĕлтерет Йăпар улшуçа.
Улшуç ĕненмесĕр ирпе
Ирех тухса пăхрĕ витене,
Ĕмĕр лашапа сутă тăвать —
Чĕррине мар, кун пеккине
Хăй тĕлĕкĕнче курман.
Çăмарта пек чăмăр та йăпар,
Хура çĕлен пек йăлтăркка та чăпар.
Улшуç тулли, хавас кăмăлпа
Илсе çитерчĕ пасара,
Кам куран тĕлĕнсе
Ăйăр тавра çаврăнать.
Илме кăмăл кашнин пур,

Кĕсье çӳхи ĕнсе хыçтарать.
Армет тухнă пасара,
Ытараймасăр ăйăра
Илсе кайрĕ патша хӳмине.
Кулиме ăйăра курсан:
— Ах, Армет, ăйăр мар ку — Йăпар,
Ан лар ку ăйăр çине,
Чунсăр тăвать иксĕмĕре,—тет.
— Ыран пусса çунтарăр,
Кĕлне çилпе вĕçтерĕр;
Эп каланине тумасан
Пуçне касса пукан тăвап,—
Пĕлтерчĕ Армет
Чĕнсе илсе пиçира.
Лаша пăхакан илтсен
Хитре ăйăра хĕрхенсе:
— Эх, çамрăк, айăпсăр чун,
Сана пусса кĕл туса вĕçтереç.
Саншăн, айăпсăршăн,
Хам ват чуна парăттăм,—
Халапланса ăйăра ачашлать.
Чул чĕреллĕ этеме
Мĕн вăл чуна илесси,
Хусканмасăр, тапранмасăр
Ăйăр çын чĕлхипе калать:
— Хĕрхенен пулсан мана пулăш,
Мана ваклана чух ман чун
Аш татăкпе сан уру çине пырса ӳкĕ,
Эсĕ кăтартмасăр
Сада кайса çĕр айне хур.
Сана пулĕ ырлăхĕ,
Мана пулĕ пиллĕхĕ.
Каланă та, ĕç пулнă,
Ăйăра пусса çунтарнă,
Кĕлне çилпе вĕçтернĕ.
Кун иртет-и, каç иртет-и—
Армет тухнă сад пахчине.
Çул хĕрринчен инçе те мар,
Садăн тăваткăл кĕтессинче
Ылтăн улмаллă улмуççи,
Илемĕ ыйтсах хăй патне чĕнет.
Савăннипе хĕпĕртесе
Татса çиме ĕмĕтленет.
Кулиме çакна курсан:
— Ах, Армет, улма мар ку — Йăпар,
Ăна çисен чунсăр тăвать иксĕмĕре.
— Садра ылтăн улмаллă улмуççи пур,
Ыран касса вутпа çунтар,
Кĕлне çилпе вĕçтерсе яр.
Эп хушнине тумасан

Пуçна касса пукан тăвап,—
Пĕлтерет чул чĕреллĕ Армет
Пахчаçă çине ал тĕксе.
Пахчаçă улмуççие курсан
Чăтаймасăр куççуль витĕр:
— Эх, чунăм, улмуççи,
Пĕр айăпсăрах сана
Ылтăн улма тунăшăн
Ыран касса çунтараç.
Мĕнле касса, мĕнле çунтарас?
Хам касса хам çунтармасан
Ман пуçа касса пукан тăваç.
Пăр чĕреллĕ Арметрен
Пур усала кĕтме пулать.
Пуçа килнĕ шухăшне
Хăй пĕлнĕ пек тăвать. —
Улмуççи чĕлхеленсе пĕлтерет:
— Хĕрхенен пулсан мана пулăш,
Ирпе касса вакланине курма килĕç,
Хăвна кастараççи, кам касать —
Чи малтан каснă турпаса
Ăçта ÿкнине сăна.
Çав турпаса никама систермесĕр илсе
Эсĕ садри кÿлле кайса яр.
Сана пулĕ ырлăхĕ,
Мана пулĕ пиллĕхĕ. —
Кун иртнĕ те, çĕр иртнĕ —
Армет тухнă сада,
Сад варринчи кÿлĕре
Симĕс-кăваккăн йăлтăртатан
Пĕччен кăвакал аçине асăрхать,
Кăвакал илемлĕхĕ хăй патне чĕнет.
Чуна илĕртекен кăвакал
Кÿл хĕрринчи хăмăшлăха кĕрет.
Армет çитрĕ кÿлĕ хĕррине,
Кăвакал ни хăрамасть, ни тармасть,
Армет тăсрĕ аллине —
Кăшт шаларах кăна шăвать.
Хăмсарса пăхать — кăвакал лапчăнать,
«Кăшша!» — тет, кăвакал илтмĕш пулать.
— Чим! — тет Армет, —
Хăвăрт саланса* пытанса тытам,
Илем кÿрен кайăка
Кулимене кайса кăтартам. —
Армет чечек кĕпине хуса
Йăвăç тĕми кутне хурать те
Хăмăш тĕлĕпе сикет кăвакал çине.
Умра кăвакал, ак-ак тытмалла,

* Салтăнса.

Хыпăнмасăр шав шăвать малалла.
Ак тытмалла, шăлпах çыртмалла,
Çук, ал тăснипе шăвать малалла.
Кӳлĕ урлă каçасси инçе юлман,
Кăвакал тăпăр-р! силленчĕ те
Армет кĕпи патне вĕçсе тухса
Чип-чиперех пулса тăчĕ этем.
Кулиме сутнă чечеклĕ кĕпене тăхăнса
Йăпар тăчĕ этем пулса.
— Тух, хăвăртрах, Армет,
Халĕ иккĕн татăлар!
Айăпсăр халăха асаплантарнăшăн
Паянтан сана халăхпа сут тăвар! —
Армет кӳлĕрен тухнипе
Чĕркуçленсе айăплăн пуçа чикет,
Хăй мĕнлине чухласа
Халăхран каçару ыйтма пуçлать.
Чул чĕреллĕ этеме,
Ыр курасшăн ял-йыша сутана,
Ан кĕт, халăхран каçару пулмасть.

*И.А. Патмар çырса илнĕ.*

## 4. ПУРÇĂХАН УЛĂПĔ

### 1

Тахçан мар, паян-ĕнер мар,
Сĕм ĕлĕк мар, сĕм авал мар
Аслă Ăмму шывĕ хĕрринче,
Ятсăр ялта, Пăркасра,
Хĕвел пăхан Пурçăханра
Эп çуралнă, асатте çуралман
Апай хырăмĕнче атте çӳренĕ чух
Наççа инке çуратнă çичĕ йĕкĕреш.
Хĕвел тухса хĕвел аниччен
Çичĕ ача-йĕкĕреш
Çăпаташар тăршшĕ сарăлнă.
Çичĕ ача-çичĕ ывăл амăшĕ
Ачасем чĕррине курса
Тăри кайăк тăриччен
Тăрса пишмет* тăхăннă.
Ачасем сыввине курса
Шăпчăк кайăк тăриччен
Тăрса тухья тăхăннă.
Çичĕ ывăл-йĕкĕрешĕн

* Бешмет.

Вĕлтрен кайăк тăриччен
Çăлтан шыв ăсса килнĕ.
Çичĕ ача-çичĕ ывăлшăн
Хура курак тăриччен
Хуран çакса апат пĕçернĕ.
Кун пулать те, каç пулать —
Çичĕ ача-йĕкĕреш
Сăмах-юмах тăваççĕ.
Каç иртет те, кун килет —
Çичĕ ача-йĕкĕреш
Ура çине тăраççĕ.
Çичĕ ача-йĕкĕрешĕн
Пурнăç кĕсри начаркка мар,
Наççа инкен çичĕ ачин
Кӳлнĕ учĕ чăхăмăç мар.
Çичĕ кун та çич каç килет —
Çичĕ ача-йĕкĕреш
Ас-тăн пухса вăй илет.
Çичĕ каç та çич кун иртет —
Çичĕ ача-йĕкĕреш
Çичĕ ĕç тума пĕлет.
Çитмĕл çичĕ кун килет те,
Çитмĕл çичĕ каç иртет,
Çичĕ ача-йĕкĕреш,
Çичĕ каччă-пĕртăван,
Çитмĕл çичĕ ĕç тăвать.
Çичĕ каччă ĕç панче чух:
«Тур пулăштăр, çĕр чунĕ», — теç.
Çичĕ каччă-пĕртăван
Хура тарпа çăвăннă чух:
«Кахала турри пулăшни пулман,
Ĕçчене турри пăрахни пулман», —
Хуравланă иртен-çӳренсене.
Çичĕ ача-йĕкĕрешĕн
Çиме çитет, ĕçме пур.
Çие тăхăнма, урана сырма
Пурнăç çитет, пурте пур.
Шутне пĕлмен сурăх йышĕ сăрт-тура,
Тĕве те мăйракалли тапăрта.
Çичĕ ача-йĕкĕреш,
Пĕрле çиппе çыхнă пек,
Йывăç кăклаççĕ вăрманта.
Çичĕ ача-йĕкĕреш,
Пĕрле çиппе çыхнă пек,
Выльăх пăхаççĕ улăхра.
Çичĕ ача-йĕкĕреш,
Çиччĕшĕ те пĕрре пек,
Уйрăлмаççĕ утас* та.

* Утăм.

Çичĕ каччă-пĕртăван
Ĕç тăваççĕ пĕр сăмахран.
Çичĕ каччă-пĕртăван
Пурăнаççĕ пĕр сăмахран.
Çичĕ каччă-йĕкĕреш
Шухăшлаççĕ пĕр шухăш.
Ял-йышпала кӳршĕ яль
Вăй виçмелле тытăнсан
Çичĕ каччă-пĕртăван
Ял-йыш умĕнче ялан.
Çичĕ каччă-пĕртăван —
Ĕç панче-и, вăйăра-и —
Мала тухаççĕ ялан.
Пăвар йăхĕнче, Пăркасра,
Çичĕ ача-йĕкĕреш
Числă çемье йышĕнче.
Çичĕ каччă çывăрман чух
Аслати авăтма вăтаннă.
Çичĕ каччă çывăрман чух
Çил-тăвăл тухма шикленнĕ.
Çичĕ çул та çитмĕл çичĕ кун çитет —
Çичĕ каччă-йĕкĕреш
Çичĕ пăхаттир ятне илтет.
Çичĕ çул та çитмĕл çичĕ каç çитет —
Çичĕ каччă-пĕртăван
Çичĕ пăхаттир пулать.

## 2

Пурçăханра, Пăркасра,
Çичĕ ача-йĕкĕреш,
Ял-йыш, кӳршĕ пĕр йышран.
Çăлтăр анса пытансан
Хĕвел кулса тухнă чух
Яла урăм-сурăм хыпар килнĕ:
Çичĕ тинĕс леш енче,
Çитмĕл çичĕ хир урлă,
Шур шурлăхлă чăтлăхра,
Йывăç ӳксе çĕрнĕ вăрманта
Хура чунлă Алтăркуç
Хуçаланнă тавралла.
Пурçăханри ял-йыша
Выç кашкăрла уласа,
Арăш-пирĕш çухăрса
Çитмĕл çичĕ еннелле
Çитмĕл çичĕ сăннипе
Хĕссе ĕмме тытăннă.
Чурăс чунлă Алтăркуç
Çич тинĕс урлине курать,
Çитмĕл çич хир урлине илтет,

Çитмĕл çич вăрман урлă
Çĕрĕк хурт шунине сисет.
Хура чунлă Алтăркуç,
Кашнă* апата ларсан
Çитмĕл çич мăкăр** çиет,
Çитмĕл лутка шыв ĕçет.
Пурçăханри ял-йышра
Пурнăç йĕрне тытакан
Вунпӳ, пинпӳ, турхан пур.
Хура чунлă Алтăркуç
Пурçăханри пурнăçа
Çитмĕл çичĕ сăннипе
Ĕмсе çăтма пуçăннă,
Кĕретĕн вăрăсем ярса
Пăвар йăхне çаратнă.
Чурăс чунлă Алтăркуç,
Пĕр чунлă Алтăркуç
Пĕр шăхăрма тытăнсан
Симĕс курăк авăннă.
Чурăс чунлă Алтăркуç
Пĕр улама тытăнсан
Юман йывăç кăкланнă.
Хура чунлă Алтăркуç
Хура çăханла карклатсан
Чунли çĕре ӳксе вилнĕ.
Хура чунлă Алтăркуç
Хирĕç сăмах калакана
Аçа вучĕпе çунтарнă.
Хура чунлă Алтăркуç
Хирĕçлеме пăхана
Ут хӳринчен кăкарнă.

3

Пăркаспа кӳршĕ Самалире
Урикке инке ӳстернĕ
Çӳллĕ-урлăш пĕр виçеллĕ
Хитререн хитре çич хĕре.
Хĕрсен сăнне курнипе
Хитрелĕхрен именсе
Тутинчен пӳрне кăларман.
Хĕрсен станне курнипе
Хитрелĕхрен вăтанса
Чечек пуçне йăтайман.
Шăнкăл-шăнкăл сасне илтсен
Шăпчăк кайăк именсе
Йывăçлăхра юрă пуçлайман.

* Кашни.
** Вăкăр.

Пĕр çўллĕшлĕ çич хĕре
Инке ирĕке яман,
Пĕр урлăшлă çич хĕре
Ял хушшине кăларман.
Урикке инке ĕмĕтленнĕ
Çичĕ кĕрў кĕртессе,
Çичĕ кĕрў хўттипеле
Ял хисепне кĕрессе.
Пăркасри Наççа инкен
Çичĕ ывăл-йĕкĕреш
Çуралнине пĕлсессĕн
Урикке инке мăн ĕмĕтпе
Çич ывăл çине куç хунă,
Çичĕ ывăл çине ĕмĕт тунă.
Йр пулнă та, каç пулнă,
Хĕвел ансан — çĕр пулнă.
Çичĕ каччă-пĕртăван,
Пурне пĕрле çыхнă пек,
Çиччĕш пĕрле суха тунă.
Çичĕ каччă-пĕртăван
Пурин пĕр кăвапа пек,
Уйра сурăх, тĕве, ашак кĕтў пăхнă.
Урикке инкен çичĕ хĕрĕ
Çичĕ каччă иртнĕ чух
Шăтăк витĕр пăхса юлнă.
Урикке инкен çичĕ хĕрĕ
Çичĕ каччă-пĕртăван
Ĕçрен киле килнĕ чух
Шăтăк витĕр пăхса тăнă.
Хĕвел тухсан —
кун килнĕ,
Хĕвел ансан — каç пулнă.
Урикке инкен çичĕ хĕрĕ
Кĕрў кĕртмелле пулнă.
Çич хĕр амăш Урикке инке
Çичĕ хĕрĕпе пĕрле
Кўршĕ ялта, Пăркасра,
Наççа тăхлачă патĕнче пулнă.
Çичĕ каччă, çичĕ хĕр
Хирĕç пăхса йăл кулнă.
Çичĕ каччă-пĕртăван
Çичĕ хĕр упăшки пулма пулнă.
Çичĕ хĕрĕн упăшки илме
Хăçан туйпа пымаллине
Пĕр сăмахран татăлнă.
Кун иртнĕ те, каç иртнĕ,
Туй тумалли кун çитнĕ.
Хура чунлă Алтăркуç панчен
Пурçăханри Самалине
Урикке инкен çич хĕр патне

Çич пуç касакан çитнĕ.
Урикке инкен çичĕ хĕрне
Илсе тухнă, йĕр çĕтнĕ.

4

Хура чунлă Алтăркуç
Кун хыççăн кун
Тавраллине тăллана,
Хирĕç пулма тăрана
Леш тĕнчене ăсатнă.
Наçça инкен çичĕ ачи
Пулас арăма вăрласа
Ытла намăс тунăшăн
Çичĕ ютăн мăшкăлне
Тавăрмашкăн шутланă.
Алтăркуçа хăвăрт çĕнсе
Урикке инке умĕнче
Пурçăханри ял-йыш йышĕнче
Чыс, хисеп илме васканă.
Çичĕ ача-йĕкĕреш,
Çичĕ каччă-пĕртăван,
Амăш пилне илмесĕр,
Ял-йыш канашне илмесĕр
Шăпчăк евĕр юрлаççĕ.
Пĕр самант-и, ик самант-и
Таçти пушă уй-хиртен
Çич урхамах-йĕкĕреш
Тапăртатса, кĕçенсе,
Чашкăртатса çитеççĕ.
Йĕнерĕсем — кĕмĕллĕ,
Пускăчисем — ылтăнлă,
Чĕлпĕрĕсем — пурçăнлă.
Çичĕ каччă-пĕртăван
Кашни урхамахĕ çине
Сăпса пекех çыпăçаç,
Ура кĕлипе хĕссе
Сиктереççĕ виç çухрăм.
Мухалепе вылятса
Сиктереççĕ улт çухрăм.
Пĕр-пĕринчен ăмăртса иртмелле.
Сиктереç те çухалаççĕ куçран.
Çичĕ каччă-пĕртăван
Уйрăлаççĕ ял-йышран.

5

Сахал мар вăхăт иртнĕ,
Пĕрре мар курăк шăтса типнĕ.
Юр ирĕлсе шыв пулса

Çыран хĕррине илнĕ.
Кунне-çĕрне пĕлмесĕр,
Кантăкран куçне илмесĕр,
Пуçа чиксе, куçа хупса,
Куççулĕпе питне çуса
Шав мал енне илнĕ.
Кăтра çÿçлĕ Наççа инке
Хăй çуратнă çичĕ качча
Чун-куççулĕпе кĕтнĕ.
Çичĕ каччă кăмăлне
Ялти кÿршĕ йĕкĕтсем
Сăрт-ту, çырма, вăрманта
Шыраман вырăн хăварман,
Çичĕ каччă-пĕртăван
Тупăнни çынна палăрман.
Кун пулнă та, çĕр пулнă,
Уйăх тулса çĕр иртнĕ.
Çичĕ каччă амăшĕн
Анса ларнă çут хĕвел,
Анса ларнă çут уйăх.
Вată йăли-йĕркипе
Элак уйĕнчи масар çине
Ывăльсен ячпе пукане туса
Çичĕ виле кăларать.
Çичĕ виле тăпри çине
Çичĕ юман юпа лартать.
Çичĕ ывăла асăнса
Çичĕ алтан* пустарать.
Çичĕ алтан ашпе асăнса
Çичĕ юман юпи çумне
Алтан лашине тăрататъ:
«Çакăнпа çÿреме юлтăр», — тет.
Наççа инке хуйăхпе
Утса çÿрен çĕр пичĕ
Таткаланса çурăлнă,
Тÿпере шурă пĕлĕте
Хура тир сăнĕ çапăннă.
Çичĕ каччă пур чухне
Аслати авăтма вăтаннă,
Çичĕ каччă пур чухне
Çил-тăвăл тухма хăранă.
Çичĕ каччă амăшне
Тавра тĕнче юратнă.
Çичĕ каччă амăшĕ
Çичĕ каччă сассăр çухалнăран
Вут кĕлĕ пек шуралнă.
Тăнă чух та, выртнă чух та
Наççа инке пуç çапать,

*Автан.

Куççуль витĕр хуйхăрса
Çапла турăран ыйтать:
«Турă ашшĕ, илтинччĕ,
Тăван йăхĕ пĕтиччен,
Мулăм сая кайиччен
Çичĕ ывăл вырăнне
Тепĕр ывăл паринччĕ».
Хитре Наççа хуйхине,
Хитре Наççа ыйтнине
Чĕкеç кайăк çĕклесе
Турă ашшĕне çитерет.
Хĕвел тухнă та аннă,
Кун çутийĕ пытаннă,
Уйăх тухнă та аннă,
Çĕр çутийĕ çухалнă.
Кун иртнĕ те, çĕр килнĕ,
Çĕр иртнĕ те, кун килнĕ.

Ĕмĕтленни-шухăшлани
Наççа пурнăçне килнĕ.
Пĕр кăмăллă ăшă каç
Ятсăр ялта, Пăркасра,
Пĕчĕк калăп пысăкăш
Ывăл ача çуралнă.
Ывăл ача кун курнипе,
Амăш хавас савăннипе
Ял-йыш, кӳршĕ-йышĕпе
Пĕчĕк калăпăш ачана
Улăп тесе ят панă.
Ĕçме те пур, çиме те пур,
Çие тăхăнма тум та пур.
Сывлăх пултăр, паттăр пултăр,
Халăх йышĕнче пултăр.
Улăп ывăла пăхма
Мĕн кирлийĕ пурте пур.
Наççа инке пурнăçĕнче
Паян савăнмалли те пур.

**6**

Кун иртет те, каç пулать,
Каç иртет те, кун килет.
Хĕвел тухса аниччен
Улăп чике тăршшĕ ӳсет.
Уйăх тухса уйăх аниччен
Çăпата тăршшĕ сарăлать.
Улăп амăш Наççа инке
Савнă ачишĕн хыпăнать.
Тăри кайăк тăриччен
Тăрса урине сырать,

Кăвак çутă килнипе
Кăвак тутрине çыхать,
Вĕлтрен кайăк тăриччен
Витре çакса тухать.
Хура курак тăриччен
Хуран çуса апат çакать.
Ир тăрсан та, каç тăрсан та
Тутлă апат пултăрч[чĕ] тет,
Йышра çук паттăр пултăрч[чĕ] тет.
Кун иртет те, каç пулать,
Каç иртет те, кун килет.
Хĕвел тухса хĕвел аниччен,
Çутă кун çути сӳниччен
Улăп чике тăршшĕ ӳсет.
Уйăх тухса уйăх аниччен,
Уйăх çути сӳниччен,
Çăпата тăршшĕ сарăлать.
Çитмĕл çичĕ хут хĕвел тухса анать,
Çитмĕл çичĕ хут килен хĕвел çутинче
Çитмĕл çичĕ чике тăршшĕ ӳсет.
Çитмĕл çичĕ хут уйăх тухса пытанать,
Çитмĕл çичĕ хут килен уйăх çутинче
Çитмĕл çичĕ çăпата тăршшĕ сарăлать.
Хĕвел кулса пытаниччен
Улăп шăчă тăршшĕ ӳсет.
Уйăх кулса пытаниччен
Анкарти урлăш сарăлать.
Хĕвел тухса хĕвел аниччен
Улăп чике тăршшĕ ӳсет.
Уйăх тухса пытаниччен
Çăпата тăршшĕ сарăлать.
Çичĕ уйăх тултарса
Çитмĕл çичĕ кун та
Çитмĕл çичĕ каç çитет,
Ырлăха-ши, хурлăха-ши —
Улăп вырăнтан хускалмасть.
Çичĕ çул та çичĕ уйăх,
Çитмĕл çичĕ кун иртет,
Çитмĕл çичĕ каç çитет,
Ырлăха-ши, хурлăха-ши —
Улăп ура çине тăмасть.
Хĕвел кулса çĕклениччен
Улăп чике тăршшĕ ӳсет.
Уйăх кулса çĕклениччен
Çăпата тăршшĕ сарăлать.
Ырлăха-ши, хурлăха-ши —
Улăп утма шутламасть.
Çитмĕл çичĕ уйăх та
Çитмĕл çичĕ каç,
Çитмĕл çичĕ çул та

Çитмĕл çичĕ кун —
Ырлăха-ши, хурлăха-ши —
Улăп вырăнтан хускалмасть.
Татăлса хуйхăрать Наçça,
Куççуль витĕр ĕсĕклесе
Йăлăнать турра:
— Хĕвел пек те уйăх пек
Ывăл ача патăн эс.
Кĕлетки сар çу сăрчĕ пек,
Пусаймасть, ури нимĕр пек.
Амăшĕн мул-пуянлăхне тытма
Парсамччĕ ура çине тăма. —
Мăн ама турра асăнса,
Чи мăнтăр такине пусса,
Пур ял-йыша кĕлтăвать.
Пӳлĕхçĕне çураçтарма
Тĕве пусса ял-йыш пухать.
Пихампарĕ çилленнĕ пуль тесе
Мăнтăр такапа чӳклет,
Улăп пур пĕрех тапранмасть.
Наçça инке тăрăшсах
Йĕрĕх тытнă пуль тесе
Çич салмапа çич пукане парса
Çуллă пăтă çитерет.
Вупкăн пуснă пуль тесе
Улăп тавра вут кĕлĕпе
Сăнă, ухă, пуртă хурать.
Ийе тылланă пуль тесе
Йăран та урлă-пирлĕ çул-йĕре
Çупа, каптăрмапа чӳклет —
Улăп пурпĕрех тăмасть.
Пысăк хуйхă пулсан та
Акнă тыр-пулă ӳсет.
Пысăк хуйхă пулсан та
Уй-хирте тыр-пулă пиçет.
Вăштăр-вăштăр çил вĕрет —
Пиçнĕ тырă вирхĕнет.
Вăхăтра пухса кĕмесен
Кĕлет пырне çимĕç кĕмест.
Уй-хир пусси сап-сарă,
Тырă пиçнĕ — вырма кĕтет.
Ывăл тăмасть, выракан çук,
Тыр выракан тупмалла.
Вырса пухмасан выçă юлмалла.
Улăп амăш мĕскĕн ывăлĕн умне
Каска пуканне сĕтел туса
Çăкăрпа чăкăтне хучĕ,
Тăм чӳлмекпе кăвас тултарса:
— Эпĕ уйран киличчен
Вырăнтан анма ан хăтлан,

Ăнсăртран ÿксе амантăн пит-куçна, —
Улăпа асăрхаттарса
Наççа кайрĕ тыр вырма.

## 7

Тул çутăлни паян хăçан,
Хĕвел йăмра çÿллĕш те хăпарман.
Вăхăт ытла майĕпен шăвать,
Кун тăршшĕ çич кунăн туйăнать.
Калаçма никам çуккăран
Улăп çăкăрпа чăкăта чăмлать,
Кăвас сыпса чăмлака антарать.
Çутăра мĕлке пуррине туйса
Улăп пăхать пуçне йăтса.
Кантăкра тăрать вată шур сухал.
— Хисеплĕ Улăпăм, Наççа ачи,
Кăмăлпа памăн-ши çăкăр татăкĕ мана? —
Ыйтать шур сухал аллине тăсса.
— Ватă шур сухалăм, атте тем сана,
Кĕрĕр-халĕ, кĕрĕр пÿртĕме,
Ывăннă пулĕ, ларса канăр сак çине!
Улăп патне кĕчĕ ватă шур сухал,
Хул хушшине çĕлĕкне хĕссе
Сăх сăхрĕ шур пуçне тайса.
— Ватă шур сухалăм, атте тем сана,
Хамăн саншăн ырă туйăм-кăмăлпа.
Çăкăр татăкĕ мар, тем парăттăм сана,
Вырăн çинчен анса тăраймастăп эп.
Тырă-пулă та апин кĕлет тулли,
Юр-варĕ те апин нÿхреп тулли.
Ылтăн шахай та парăттăм сана,
Апин ылтăн сунтăхĕ те тулли.
Вырăн çинчен анса
Ура çине тăраймастăп эп.
Çавăнпа çăкăр мар,
Ылтăн та параймастăп эп.
— Хисеплĕ Улăпăм, Наççа ачи,
Чим, тытса пăхкалам-ха сан уруна.
Хисеплĕ Улăпăм, Наççа ачи,
Сĕркелем-ха имлĕ кил курăкĕпе сан уруна.
Им пултăр та сим пултăр,
Вĕрни-сурни çак пултăр...
Халĕ ĕçтерсемччĕ тутлă кăвас,
Манăн irттĕрччĕ ăш çунас.
— Пирĕн йăлапа, килнĕ хăнана
Кăвас ĕçтерсе хăна тумаççĕ.
Апин шерпет те, сăри те пур,
Пуçламан саркавай пăрлă нÿхрепре.
Вырăн çинчен анса

Ура çине тăраймастăп эп,
Çавăнпа сана хăналаймастăп эп.
Шурă сухаллă ватă Улăп урине пусса:
— Хисеплĕ Улăпăм, Наççа ачи,
Тăрса пăх-ха ик уру çине, — тет.
— Шурă сухалăм, аттем тем сана,
Тăрса пăхăттăм та — усси пулас çук,
Пĕр кун мар выртатăп вырăн çинче,
Çитмĕл çичĕ çул та,
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç. —
Шурă сухаллă ватă чĕркуççирен пусать:
— Хисеплĕ Улăпăм, Наççа ачи,
Тăсса пăх-ха эсĕ уруна!
Сиксе тăр-ха ик уру çине!
Ура çине тăрсан туйăн ик ура вăйне. —
Шикленсе Улăп тăсать хутланнă урине,
Хăраса хускатать унтан теприне,
Сикет те тăрать ик ура çине.
Ним пулман пек хăвăрттăн утса
Кĕлетрен илсе кĕрет ылтăн сунтăха.
— Илĕр, тăван атте пек шурă сухалăм.
Манран пултăр сире тав парни.
— Тавтапуç,—тет ватă шур сухал, —
Кирлĕ мар санăн ылтăн сунтăху.
Ыр кăмăлпа ĕçтер-ха сим пылна,
Кантар манăн çунан ăш-чуна?
Хĕвел пек те уйăх пек çутăлса
Улăпваскарĕ пăрлă нӳхрепе,
Саркавай сăрине тултарчĕ чĕресе,
Алтăрпа ăсса тыттарчĕ шур сухала.
Ват шур сухал пĕр çăвар ĕçрĕ те
Сĕнчĕ юлашкине ĕçме Улăпа.
— Ну,—тет шур сухал, — мĕнлерех вăй-хал?
— Хальхи вăй-халпа хыт хура пек кăклăп
Çĕр çулхи юмана, —
Тавăрать Улăп уйăх пек çутăлса.
— Ăш канмарĕ, ĕçтер-ха тепĕр алтăрна!
Чун лăпланса ăш лăплантăр, — ыйтрĕ шур сухал.
Улăп савăнсах васкарĕ пăрлă нӳхрепе,
Саркавай сăрине ăсрĕ чĕреспе,
Алтăрпа ăсса тыттарчĕ шур сухала.
Ватă шур сухал çур алтăрне ĕçсен
Юлашкине сĕнчĕ Улăпа ĕçме.
— Ну,—тет шур сухал, — мĕнлерех вăй-хал? —
Уйăх пек, хĕвел пек те çутăлчĕ хăй,
Шуçăм пек те, шевле пек çиçейрĕ хăй,
Çитмĕл çичĕ çул ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитрĕ ун.
Халь урипе пăт-пат пускалать:
— Хальхи вăй-халпа çĕр çул ӳснĕ юмана
Кача пӳрнипе кăклăп эп.

— Улăпăм, ĕмĕр эс пулăн,
Вилмĕн ĕмĕр этемлĕхре, — терĕ шур сухал.
Хиртен килен амăш сассине илтсен
Улăп пуçне пăрса пăхрĕ сасă еннелле.
Çак самантра пач çухалчĕ шур сухал,
Ун-кун пăхрĕ Улăп — çуккă ĕнтĕ шур сухал.
Улăп ура çинче тăнине курсан
Савăнса çăмăлланчĕ Наççа инке,
Чĕркуçленчĕ те пăхрĕ анăçа,
Виçĕ хут пуç çапрĕ çĕре чуп туса.
— Мухтав!—терĕ çул çӳрен шур сухала.
Килсем тăрăх вĕçтерчĕ Наççа инке,
Ывăл çинчен пĕлтерчĕ ял-йышсене.

## 8

Савăннă та хĕпĕртенĕ Наççа инке
Сар çу сăрчĕ пек çамрăк йĕкĕте
Çитмĕл çичĕ сӳре вуннă пирринчен
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Улăп валли шур кĕпе çĕлет.
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Улăп валли кĕпе умĕ тĕрлет,
Улăпа амăшĕ кĕпе парнелет.
Кĕпе тăхăнса пилĕкне çыхсан
Сар çу сăрчĕ пек çамрăк йĕкĕт
Çавра уйăх пек çуттăн çутăлать,
Пуçĕ кăвак пĕлĕте перĕнет,
Хул пуççийĕ шур пĕлĕте хирĕнет.
Шур пĕлĕте перĕнсе çамкине ыраттарсан
Кариш тăвĕ пек шыçса тухать.
Улăп нумай шутласа тăмасть —
Унтан тĕкет, кунтан тĕкет,
Пĕлĕте тĕксе çӳле хăпартать.
Пĕлĕт каялла юхса анасран
Унта-кунта — ăçта май килнĕ —
Çĕре алтăрпа ăсса тусем купалать.
Мĕн пур чĕрчунсем çитмелле мар туса
Çӳллĕ ту хĕррипе пĕлĕте тĕкĕлет.
Улăп çĕре алтăрпа ăснă вырăнта
Шывлă кӳлĕ, тип авăр пулса юлать.
Ял-йыш хушшинче хисеппе пиçет,
Ял-йыш хушшинче чыспа илленет.
Никампа хирĕçмест, никама усал тумасть.
Ăшăра сар çу ирĕлнĕ пек,
Туйăм-кăмăл лăпăшка та çемçе,
Пуринпе йăваш та пуринпе çемçе.
Вăй-халпа Улăп пекки çук.
Улăпа тĕл пересси çитекен çын çук,
Чула инçе те тӳрĕ переспе

Унпа танлашакан этем çук.
Ватăпа ватăлла калаçать,
Вĕтте те ватта вăй-халпе пулăшать,
Çамрăкпа çамрăк пек пулать.
Нумай-и кун иртет,
Нумай-и çул иртет —
Мĕн чул вăхăт иртнине пĕлмест.
Пĕр уяр ăшă кун
Ял вĕçĕнчи сăрт хĕррипе
Çутăлса та ярăнса
Асамăç хĕрĕ Тукине
Чечеклĕ ик куршакпа
Çăлкуçне шыв патне утать.
— Улăп, пăх-ха, хĕр пырать,
Ухху тивет-и куршакне? —
Аллипе тĕллерĕ кӳршĕ каччи.
Вылямалла-кулмалла,
Кулса шуткă тумалла
Улăп тĕллет ухăпа,
Улăп уххи лăп та шăп
Тукинен чечеклĕ куршакне
Çичĕ ванчăк тăвать.
Пĕрре çĕмĕрет, тепĕр кун,
Виççĕмĕш кун хĕр çитет,
Ку куршакне çĕмĕрнĕшĕн
Улăпа халь ят тивет.
— Эх, илемлĕ яш каччă,
Шар туса ăша ан çунтар.
Çылăх çукран çылăх туса
Ман шыв куршакне ан çĕмĕр.
Çылăх çукран çылăха кĕрсе,
Çичĕ пичу* пĕтнĕ пек,
Сан кун-çулу та пĕтĕ.
Ухăпа лайăх перен пулсан,
Вăй-халупа вăйлă пулсан
Айвансене ан хăрат.
Ухăпа лайăх перен пулсан,
Вăй-халупа вăйлă пулсан
Пичусен чун иллисене туп.
Ухăпа лайăх перен пулсан,
Вăй-халпала вăйлă пулсан
Çав Алтăркуç мăшкăлĕнчен
Хĕр-пикесене хăтар.
Ӳссе çитнĕ хĕр-пике
Хăй ирĕкпе хăй пурăнтăр,
Хăйне мăшăр хăй туптăр! —
Сăмах тăкан хĕр пике

* Пиччӳ.

Улăпа илĕртнĕ сăнĕпе,
Астарнă яштак пĕвĕпе,
Савăнтарнă сассипе,
Тĕлĕнтерне ăсĕпе.
Асамçă хĕрĕ — Тукине —
Улăп туйăм-кăмăлне
Илсе килнĕ çĕн тĕнче.
Çитмĕл çичĕ çул та çитмĕл çичĕ кун,
Çитмĕл çичĕ каç пурăнса та
Паянччен хĕр-пике тытăмне лекмен:
Юрату хĕмĕ çуралман,
Паттăрлăх чунĕ çĕкленмен.
Хĕртен каçару ыйтса,
Хĕр-пикепе супуллашса*
Улăп уттарчĕ киле.
Çичĕ тăван пиччĕшĕ пулни
Паян кунччен хăлхана кĕмен.
Çичĕ тăван пиччĕшĕ кайса пĕтни
Куçне уçнă паян Улăпăнне.
— Çта ман тăван çичĕ пичче?
Кам вĕлернĕ? Каласа пар, апай?—
Пĕрре шуралса, тепре хĕрелсе,
Пĕрре шăнса, тепре вĕриленсе
Наççа инке чĕтресе илет.
Илтнĕ хыпара пытарсан та,
Пур пĕрех чăнлăх çиелте вĕçет.
Пурнăç инкекне, çемье хуйхине
Наççа инке Улăпа пĕлтерет:
— Ах, ачам, чăн та, сан пурччĕ
Чи çывăх та, чи тăван çичĕ пичу.
Пурте пĕр тĕслĕ, пурте пĕр çӳллĕш,
Çĕр çулхи юман пекехчĕ çичĕ тăвану.
Пăвар йăхне Пăркасра
Халăх йышĕ хисеп туса чыс тăватчĕ.
Кашни уявра кăмăл килен парне кӳретчĕ.
Паян хăв куран, ачам,
Пăвар йăхĕ çут кун ăшшинче мар.
Паян Пăвар йăхне, ачам,
Мăшкăл туса намăс тума ним мар.
Санăн тăван çичĕ пичу
Мăшкăл чăтса намăс курасшăн мар,
Хура чунлă Алтăркуçа хирĕç кайса
Пуласлăх çут кунне çухатрĕç.
Ман ывăлăм хĕвел тухнă пек çиçтĕр,
Пире хур тăван вун ик çул хур куртăр,
Уксах-чăлах суккăр пулса
Вут кĕлĕ пек пулса типсе хăртăр.

* Сыв пуллашса.

У л ă п

Апай, мăшкăл курма эп çуралман,
Намăс курса кун курас мар.
Çичĕ пичче-пĕр тăвана
Ман шырама çула тухас!

Наçса инке кулянать:
— Ашă йăвара тăлăххăн ӳсрĕн,
Ӳссе çитсе çут кун курсан
Мана пăрахса çула тухасшăн.
Çитес ватлăх кунăмра эс мана
Кам çине, кама шанса хăваран?
Сан пек маттур çичĕ пичу çĕнеймене
Пĕччен ăçтан çĕнме пултарăн?
Эсĕ те тăшман кулли çех пулăн.
Каяймăн, ачам, эпĕ ватăлап,
Эс пăхмасан кам пăхĕ мана?

У л ă п

Эх, апай, çуратса çут кун кăтартрăн:
Çитмĕл çичĕ çул та çитмĕл çичĕ кун,
Çитмĕл çичĕ каç та çитмĕл çичĕ ир
Тăлăххăн пăхса ӳстертĕн эс мана.
Çитмĕл çичĕ çул та çитмĕл çичĕ кун,
Çитмĕл çичĕ каç та çитмĕл çичĕ ир
Саврăн та ырă турăн эс мана,
Тавтапуç, апай, тавтапуç сана
Çут кун парса кун-çул панăшăн.
Апай, сана эпĕ пăрахмас,
Тăшман куллийĕ эп пулмас,
Хамăн тăван çичĕ пиччеме
Тăшман кулли эп тумас!
Апай, мана ан та ӳкĕтле,
Чун тухиччен хам ĕмĕтрен тухмас.
Кала, апай, чăн тĕрĕссине:
Аттен çул-йĕр хатĕрĕ юлман-и?

А м ă ш ĕ

Апла пулсан хăвăн кăмăл.
Кĕлетре аçун пулмалла
Йĕнер те йĕвен, сăнăпа хĕç.
Витере аçун пулмалла
Хăлхи таран тислĕке путнă хура çăрха.
Хăратăп, пултараймăн
Аçун сăннипе хĕççине йатма.
Хăратăп, пултараймăн
Хура çăрхана йĕвен тăхăнтарма.
Ах, хăратăп, пултараймăн
Хура çăрхана йĕнерлеме.

Улăп

Эх, апай, ху юратнă, ху ӳстернĕ ачуна
Пилле тата вăй-халлă та паттăр пулма.
Ах, апай, ху юратнă, ху ӳстернĕ ачуна
Пилле мана парăнмасăр тăшмана çулма.
Ах, апай, ху юратнă, ху ӳстернĕ ывăлна
Пилле мана çичĕ тăван пиччене çăлма.

Амăшĕ

Ах, ывăлăм, чун пилне парам,
Ырă сунса ыр телей сунам.
Ан пул эсĕ тăшманăн кулли,
Пурнăç пултăр ăнăçу тулли.

9

Улăп тулли, хаваслă кăмăлпа
Ашшĕн анкарти пек кĕлетне кĕрет.
Хĕрĕхшер пăтлă, тутăхпа витĕннĕ хĕçпе сăнă
Кĕтесрен хăй патне пыма чĕнет.
Йĕс тӳмеллĕ йĕнерпе йĕвен
Юплĕ юман пăта патне пыма кĕтет.
Витене Улăп кĕнине курсан
Хăлха таран тислĕке путнă хура çăрха
Кăларса утланасса кĕтет.
Улăп аллинче ашшĕн хĕрĕх пăтлă хĕçпе сăнă
Вăлта хулли пек вылянать,
Тислĕкрен туртса кăларнă хура çăрха
Тапăртатса ташă кĕвĕлет.
Ăмму çинчи тăрă шывпала çусан
Урхамахăн кашни çăм пĕрчи
Кĕмĕл уйăх çутăн çутăлать.
Хура çăрха çурăмне Улăп ала хурсан
Урхамах шыв пĕкки пек авăнать.
— Апай, кил-ха,— тет Улăп амăшне чĕнсе. —
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Çитерме килет шурă тулă хура çăрхана,
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Çитерме килет ем-ешĕл улăхра.
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Тăратма килет ăшă витере.
Хура çăрха пулĕ чи çывăх тус-юлташ,
Йывăр кун килсе тухсан çăлĕ вăл мана,
Усал-тĕсел тапăнсассăн таптĕ вĕсене,
Хура çăрхапа никама парăнмăп,
Урхамахпа эп нихçан ывăнмăп.

Амăшĕ

Ывăлăм, куратăп сан вăйна,
Шанатăп сан пуласлăха.

Аçу мар эс, пичусем мар,
Саншăн эпĕ те пĕтĕм ял-йышпа
Татах вăй-хал парнелем.
Кĕтнĕ ĕмĕт çитнĕ пултăр сан,
Кĕтнĕ шанчăк пўрнĕ пултăр.
Турă ячĕпе çўре эс ялан,
Саралсан уй-хире юрат эс ялан.
Тăван апуна юратсан,
Тăван ял-йыша манса сутмасан
Эсĕ пулмăн тăшманăн кулли,
Хисепў пулĕ пĕтĕм ял тулли.
Хуна кирлĕ пек
Тимĕрçе кайса тимĕр тум тутар.
Ал лаппи хулăмĕш пăхăр çĕлĕк çавăрттар,
Уххăн йĕппине хурçăран шăраттар,
Хĕртнĕ вĕри тимĕртен сăнă шĕвĕрттер,
Хĕртнĕ вĕри хурçăран хĕççине хăйраттар,
Сарă шурă пурçăнтан
Вун ик вĕçлĕ саламат явтар.
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Урхамаха шур тулăпа тăрантар.
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Урхамаха савăнтар ешĕл улăхра.
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Урхамаха ăш витере тăрантар.
Каяс кăмăлу пысăк пулсан
Каях, ачам, эпĕ чарам мар.
Сана пĕтĕм чун-кăмăлран пиллем,
Çиттĕр пысăк ĕмĕтў сан! —
Улăп татман ĕмĕте,
Çухатман та шанăçа,
Пурçăханри пурнăçа
Кăмăлланă ватă та.
Мăнтăр шывĕ хĕрринче,
Симĕс пурçăн сăрт хĕрринче
Кăмпа, серте, çырла татса
Улăп тăван ял-йышĕсем
Пурăнаççĕ Пăркасра.
Тип хăйăрлă уй-хиртен
Килнĕ ăшă Пурçăхана.
Кун килет те, çĕр çитет —
Улăп хура çăрхана сиплет.
Çитмĕл çĕре вăл çитет,
Кашкăр курать — кăшкăрмасть,
Ют çын курать — ютшăнмасть,
Çĕленрен те çўçенмест,
Упаран та хăрамасть.
Кун килет те кун иртет,
Кун иртет те, çĕр çитет.
Улăп симĕс пурçăнлă улăхра

Юратса та ачашласа
Урхамаха шур тулă çитерет.
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Улăп юратса та ачашласа
Урхамаха Ăмму шывпе шăварать.
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Улăп юратса та ачашласа
Урхамаха пурçăн улăхра çитерет.
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Улăп урхамаха юратса
Хĕл сиввинче ăш витере ачашлать.
Улăп юратса та ачашласа
Урхамаха Мăнтăр шывпе шыва кĕртет.
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç иртсен
Сарă шурă пурçăнтан
Вун ик вĕçлĕ саламат явтарать,
Урхамах утланса тухать.
Урхамах кăвак пĕлĕтрен аяларах,
Шур пĕлĕтрен çӳлерех
Сăртсем урлă вăшт кăна,
Шывсем урлă яшт кăна
Çавра çил пек хускалса вĕçет.
Уй-хир тăрăх çаврăнсан
Улăп килелле килет.
Улăп ылтăн арчине йăтса
Тимĕрçе çитсе çапла пĕлтерет:
— Тимĕр чĕлхи пĕлекен,
Сана тимĕр итлекен.
Тимĕр тумтир çĕле ман валли,
Ал лаппи хулăмĕш
Пăхăр çĕлĕк пултăр ман валли,
Ухă йĕппи вĕри хурçăран пултăр.
Çитмĕл çичĕ пăтлă сăнă пултăр,
Çитмĕл çичĕ пăтлă хĕç пултăр.
Алтăркуç патне кайма шухăш-кăмăлăм пур,
Инçе кайма вăрăм çулăм пур.
Ĕçшĕн çак ылтăн арчаран
Мĕн чул кирлине ил, пултăр сана валли.—
Çапла каларĕ тимĕрçĕ
Улăп умне тăрса:
— Мĕн тăвас сан ылтăн укçупа
Каятăн пулсан Пăвар йăхне çăлма.
Сăмахху сан ылтăнран хаклăрах,
Ман ĕç-хĕлĕм пулăштăр çапăçма.
Çĕр-шу хуçи пулсан хамăрах
Çитмĕл çичĕ хут ылтăнран хаклăрах.
Апушăн ан кулян, вăл пулĕ йышрах,
Сана та манмăпăр, пулăн чыслăрах.
Пил пултăр манран сана, ачамçăм,
Каяс çулу сĕт пултăр та,

Килес çулу çу пултăр.—
Тăхăнать Улăп тимĕр тумтирне,
Тăхăнать Улăп пăхăр çĕлĕкне,
Тăхăнать Улăп тимĕр аттине:
Хĕç ан кастăр, сăнă ан кĕтĕр тет.
Хурçă хĕççине çакать пилĕкрен,
Уххине çакать хул пуççинчен,
Аллине тытать хурçă сăннине.
Аллине çĕклерĕ пурçăн саламат,
Йĕнерлĕ лашине хĕстерчĕ кĕлипе.
Пĕр хускалчĕ, пĕр тапранчĕ тăвăл пек,
Пĕлĕте çĕкленчĕ шухă кайăк пек.

## 10

Улăп пырать пушă уй-хирпе
Çил çунат урхамахĕ çинче.
Лаша çинче ларнă пек мар,
Çĕлесе çыпăçтарнă пек йĕнерĕ çинче.
Кассăн-кассăн çаврăнать хăйăрлă пушă хир,
Хĕвелĕ хăранăн пытанать сăрт хыçне.
Тĕттĕмлĕх хуплать, тĕнче куççăр тейĕн —
Уйăхĕ кулать куç-пуçне хĕссе.
Умра пин çулхи йывăç-асамăç,
Тăрринче чĕвĕлтетет ăмăрт кайăкăн чĕппи.
Хутланса та тăсăлса улăхнă май
Ун-кун пăхкалать çĕлен çӳле шăвăнса.
— Айăпсăр чун, çылăхсăр чун.
Мĕн айăппа çĕленĕн куллийĕ пулать? —
Улăпăн юн вĕрет, чăтаймасть чун:
Татăкăн-татăкăн çĕлене ваклать,
Хура çĕлен вырăнĕнче
Çĕр тĕмески пулса юлать.
Ăмăрт кайăк чĕппийĕн амăшĕ
Катаранах курать Улăп паттăра.
Айăпсăр чуна çăлса кун панишĕн
Ăмăрт кайăк: — Ыйт, — тет, — саплăп ылтăнпа.
— Çук, — тет Улăп, — ылтăншăн çунмас,
Куç курнă чух айăпсăра инкекрен çăлас.
Ман çак тивĕç, манăн çак ĕмĕт,
Çавăншăн çех ман малалла çул хывас.
— Тавтапуç, — тет ăмăрт кайăк.
Сан таса тивĕçӳ, сан таса ĕмĕтӳ
Çитсе пытăр, ан пултăр тайлăк.
Кирлĕ вăхăтра мана та аса ил,
Сана пулăшмасăр юлаймăп катăк. —
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Уй-хир урлă хирĕнет те вирхĕнет
Улăп урхамахĕ, канăçа пĕлмест,
Шухă кайăк пек шав ĕрĕхет.

Умра ак симĕс çитти сарнă евĕр
Ем-ешĕл улăх ешерет.
Симĕс улăх варринче шу хумĕ евĕр
Сурăхсен кĕтĕвĕ çӳрет.
Сурăх кĕтӳçĕсем умне
Улăп урхамахĕпе çитет.
Пуçри пăхăр çĕлĕкне хывса
Пĕтĕм чун-кăмăлран:
— Такин мăйраки ӳстĕр,
Сурăххи хĕсĕр ан пултăр,
Пытекки пытек тутăр! —
Пуç тайса кĕтӳçсене ырă сунать.
— Мĕн сăлтавпа-ши, çакăн пек çăмăлпа,
Тăван кил-йыша хыçа хăварса,
Ырă юлан утçăм, тухнă вăрăм çула? —
Ыйтнă Улăп çине пăхса кĕтӳçĕсем.
— Эпĕ выляса ашкăнма тухман.
Хура чунлă Алтăркуçпа çапăçма каяп, —
Харсăррăн тавăрать Улăп кĕтӳçĕсене.
— Эх, ачам, сăмса шывĕ типсе те çитмен,
Канлĕ ларасчĕ апу чĕр çийĕ çинче.
Мĕн чул паттăр кайнă, пĕри те килмен,
Ăçтан эсĕ тытăçăн Алтăркуçпа?
— Мана хĕрхеннĕшĕн тавтапуç сире,
Анчах ман вилĕм паттăрсем вилнĕ çĕрте.
Урăхла ман пурнăç пулма пултараймасть. —
Çула тухнă Улăпăн сăмахне илтнипе
Кĕтӳçсем ун-кун пăхкалаç.
— Ку, чăнах та, паттăр пулма пултарĕ, — теççĕ
Кĕтӳçсем хăйсем хушшинче,
Тимлесех халапланаç.
— Чим, — тет пĕр ватти, — сăмахпа, тен, пултарĕ:
Тĕрĕслер, пĕлер ун хастарлăх вăй-халне.
Эй, çамрăк юлан утçă,
Вăрăм çул тăршшĕнче хырăм выçнă пуль,
Акă сĕт чĕресси,
Йăтса ĕç, мĕн чул ĕçме пултаран?—
Сăнас май сĕнчĕ Улăпа сĕт чĕресси,
Хăйсем утрĕçĕ сурăх кĕтĕвĕ тавра.
Улăп вăтанса, именсе тăмарĕ —
Сĕт чĕрессине йăтса ĕçме пуçларĕ.
Кĕтӳçсем çаврăнса çур кĕтӳ тавра çитмен —
Улăп тĕппех типĕтнĕ сĕт чĕрессине.
— Сывă пулăр! Мана усал ан илĕр,
Тĕппех пушатрăм сĕт чĕрессине.
Эп ĕçни вырăнне сĕт чĕресси тултăр,
Сирĕн ĕмĕт тултăр ĕмĕр тăршшĕне.
Малалла эп кайрăм, ятласа ан юлăр!
Кайрăм Алтăркуçпа тĕлме-тĕл пулма!—
Ал сулса вĕçтерчĕ Улăп малалла.

— Ырă çул пултăр! — ырă сунчĕç кĕтӳçсем,—
Ку тарана сĕт чĕресне ĕçсе типĕтекен пулман,
Ку вара... — халапланă татах кĕтӳçсем.—
Хĕрĕхшер пăтлă тимĕр аттипе хĕссе
Хура çăрхана систерчĕ малалла кайма.
Çил-тăвăл хăварса
Çичĕ хут пĕлĕте çĕкленчĕ,
Çил ачи пек çул хыврĕ мала.
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Вăрман та сăрт-ту урлă ĕрĕхет,
Улăп урхамахĕ канăça пĕлмест,
Ĕмĕтленнĕ ĕмĕте çитерме ĕмĕтленет.
Умра акă чăтлăх, ват юман хӳттинче
Ăшă йăвара упа-утаманăн çурисем.
Айăпсăр, çылăхсăр чунсене çимĕç тума
Хыпăнсах йăпшăнать арăслан.
Улăпăн чунĕ айăпсăр, çылăхсăрсемшĕн йăваш,
Ма мала ĕмĕт тăван упа-утаман пепкисене
Куçпа курсах тăшман çăварне парас?
Ак хайхи Улăп пĕр васкамасăр
Уххине тытса, йĕппине тĕллесе
Карăнтарса арăслан çине персе ярать.
Шилесе те кĕрлесе йĕп çил пек вĕçсе
Упан тăшман ĕмĕрне тĕплет.
Выçă арăслан вырăнче
Сăрт тĕмийĕ пулса юлать.
Упа-утаман сăрт хĕрринчен
Хăй пепкисене çăлнине курсан:
— Тăхта, — тет, — Улăп паттăр,
Пылпа, ылтăнпа сана хăналам!
Чăн, эс айăпсăрсемшĕн паттăр,
Кил, мĕн ыйтнине парнелем.
— Тавтапуç ырă сăмахшăн, — тет Улăп
Хăй пуçне лăнк сулса, —
Эп çунмастăп пылпа ылтăншăн,
Ман тивĕç, ман ĕмĕт —
Çылăхсăр айăпсăрсене çăласси.
Сыв пул, эпĕ кайрăм малалла!
— Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳ çиттĕр,
Ан парăн нихçан нимле тăшмана.
Кирлĕ пулсан хыпар çитер,
Ырă тĕллевшĕн, ыр ĕмĕтшĕн
Манмăп ĕмĕр пулăшма сана!—
Çапла каласа ăсатать Улăпа упа-утаман.
Çил-тăман-и, çумăр-лачака-и —
Урхамах ĕрĕхет, урхамах вирхĕнет.
Сурса сурчăк ӳкми сивĕ çил вĕрет-и —
Канăç çуккă, шав вĕçме тивет.
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Çĕрпе пĕлĕт хушшинче пурнăç иртет.

Умра сăртпа ту хушши
Кăвак тӳпе евĕр симĕс улăхра
Тĕве кĕтĕвĕ çӳрет.
Тĕве кĕтĕвĕ кĕтекенсен умĕнче
Улăп пурçăн улăхра чарнать:
— Çуллен тĕве тĕве хуштăр, —
Пуç тайса кĕтӳçсене ыр сунать.
— Çамрăк юлан утçă,
Тăван киле пăрахсах ăçта çул тытатăн? —
Канлĕ çиесчĕ апу чĕччине, —
Тĕлĕнсе пăхаççĕ тĕве кĕтӳçисем.
— Çамрăк мар эп, ан тĕлĕнĕр манран,
Çитмĕл çичĕ çул та çитмĕл çичĕ кун,
Çитмĕл çичĕ каç та çитмĕл çичĕ ир
Эпĕ вырăнтан хускалса утман.
Çамрăк мар эп, ан тĕлĕнĕр манран.
Халь тухнă, халь каятăп
Хура чунлă Алтăркуçпа тытăçма,—
Пĕлтерет Улăп тĕве кĕтӳçисене.
— Çамрăк юлан утçă,
Çитмĕл çичĕ çулта эсĕ пулсан та,
Ăçтан тытăçăн çав хура чунлă Алтăркуçпала?
Алтăркуçăн çитмĕл çичĕ пуç,
Алтăркуçăн çич çĕр çитмĕл куç.
Пĕр паттăр та ăна тытса авайман,
Пĕр паттăр та калла таврăнайман,—
Пĕлтереççĕ Улăпа тĕве кĕтӳçисем.
— Алтăркуç вăйлă, хаярне пĕлетĕп,
Хăравçă пулма эпĕ çула тухман,
Хăравçă пулма эпĕ çуралман,
Тăшман парăнмасан ăна тĕп тумалла!—
Иккĕленмесĕр харсăррăн Улăп хуравлать.
Тĕве кĕтĕвĕн хуралçи-кĕтӳçĕсем
Вилĕмрен хăраман юлан утçăна пăхса.
Ун-кун тинкереççĕ пĕр-пĕрин куçĕнчен пăхса...
— Çамрăк юлан утçăм,
Авуç ик мăкăр тĕкĕшеççĕ,
Уйăрса парса хăвар-ха вăю çитет пулсан?—
Ыйтнă Улăпăн вăйне тĕрĕслес шутпа.
Улăп урхамах çинчен анмасăр
Пĕр тĕвине кайри пĕççинчен тытса,
Пуç урлă çиччĕ çаврăрса
Çичĕ тинĕс урлă вĕçтерчĕ,
Тепĕр тĕвин пĕççинчен тытса,
Пуç урлă çиччĕ çаврăрса
Çичĕ вăрман, сăрт-ту урлă вăрăнтарчĕ.
— Усала ан илĕр, эпĕ малалла каям, —
Ал сулсах Улăп çĕкленчĕ çула.
Çула майăн урхамахĕ туй каччи евĕр
Ташă ташласа уçăлать.

Утса-чупса вĕçнĕ май капăр каччă евĕр,
Вăй илсе уçăлса чупать.
Пĕр чарăнма-канма пĕлмесĕр
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Çитмĕл çичĕ тинĕс те çитмĕл çичĕ
Хир-вăрман витĕр çил çунат вĕçет.
Урхамахăн йĕнер çинчи каччă
Хура çăхан мăн шĕпĕнĕ пек курнать.
Мăн çырма вар вĕçĕнчи шăтăкра
Кашкăр-кашаман çурийĕ чĕвĕлтетет.
Вăрă туман, айăпа кĕмен чĕр чунсене
Çимĕç тăвасшăн выç тикар* хирĕнет,
Улăп чăтаймасть чуншăн çунакансене:
Меллĕ уххине тытса йĕппине тĕллет,
Выç тикар ĕмĕрне вĕçне çитерет.
Кашкăр-кашаман çурисене пурнăç пиллет.
Кашкăр-кашаман чĕрĕ çурисене курса
Улăпа хăй патне чĕнет:
— Улăп паттăр, ман пуласлăха çăлтăн,
Сана мĕн кирлĕ — ыйт, çавна парнелеп.
— Ыр сăмахушăн тав сана, кашкăр-кашаман,
Эп сан мулушăн çуралса ӳсмен.
Ман ĕмĕтĕм, ман мĕн пур тивĕçĕм —
Пусмăрçăна тĕп туса ирĕк парасси.
Сывă юл, кашкăр-кашаман,
Эпĕ халь малалла вĕçтерем.
— Улăп паттăр, çиттĕр ĕмĕтӳ,
Ума килтĕр сан тивĕçӳ,
Кирлĕ пулсан мана та чĕн,

Пулăшмасăр юлмăп эпĕ те сана! —
Кăшкăрса илттерет кашкăр-кашаман.
Улăп утне çула тытрĕ,
Хура çăрха пĕр тапса сикрĕ,
Кутсăр-пуçсăр тусанĕ явăнса юлчĕ.
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Улăп урхамахĕ чупса ĕрĕхет,
Çĕрпе пĕлĕт хушшинче
Тĕтĕм-сĕрĕм кăларать.
Уй-хирсем урлă, сăрт-тусем урлă каçса
Мăн тăвăн айлăмне тухрĕ.
Çӳллĕ тăвăн айлăмĕнче,
Симĕс пурçăн улăхĕнче
Лаша табунĕ çӳренине курчĕ.
Улăпăн хура çăрхийĕ лаша кĕтӳне курса
Питĕ хавассăн кĕçенсех вĕçсе пычĕ.
— Тихи хăвăрт ӳссе çула тăтăр,
Кĕсри çулсерен тиха тутăр! —

* Тигр.

Ырă сунать Улăп лаша кĕтӳçисене,
— Салам, çамрăк юлан утçă!
Кала тĕрĕсне: ăçталла çул тытан? —
Çамрăка пăхса ыйтаççĕ лаша кĕтӳçисем.
— Пытарма шутламастăп,
Ман пĕртен-пĕр çул Алтăркуçпа тытăçма, —
Пĕлтерет харсăррăн Улăп паттăр кĕтӳçсене.
— Ку таранччен Алтăркуçа çĕнекен пулман,
Алтăркуçа хирĕç каякан çут тĕнче курман.
Апу ачашлăхĕ йăлăхтарчим сана кун курма
Е йăваш ачашлăх санран паян та кайман?
Эх, çамрăк ăс-пуçупа урхамаха хĕн кăтартан.
Аçу-апун тытса кутран çаптармалла, —
Халапланă ватă лаша пăхакан.
— Тăван апай мана ярасшăн пулман,
Апая итлемесĕр тухнă эпĕ çак çула.
Пĕлетĕп, Алтăркуçпа тытăçса çĕнмесен
Сывă, чĕрĕ юлас çук.
Ан манăр, мăшкăл курма эпĕ çуралман,
Юн пур, мĕн чĕре тапнă таран
Чĕрĕлле Алтăркуçран намăс курам мар.
Çичĕ пичче-пĕр тăваншăн
Вăй-хала пухса çапăçса пăхам,
Таса тивĕç, таса ĕмĕтшĕн ĕмĕр шалккă мар, —
Хастарланса пĕлтерет Улăп шухăшне.
— Мĕнле хăраса мĕнле шикленмест,
Мĕнле хăюлăх, чăтăмлăх çитерет...
Хăй ирĕкĕпе, хăй кăмăлĕпе мĕнле чун парать!
Кам ăна çуратнă, кам ăна ӳстернĕ,
Ăçтан çавăн чухлĕ хăюлăх тупăнать?..
Пĕлет-ши вăл вилсен урăх тăрас çуккине?.. —
Халапланă лаша кĕтӳçисем.
— Вăрăм çул тăршшĕнче урхамаху начарланнă сан,
Тыт пирĕн лашасенчен ху кăмăллаканне, —
Сĕннĕ ватă лаша пăхакан.
— Тавтапуç сире мана хĕрхенсе канаш панăшăн.
Урхамахăм ывăнман, ман вăл ывăнма шутламасть!
Сывă юлăр, тытăннă ĕçе ман вĕçлемелле,
Таса ĕмĕт-тивĕçшĕн вилсен те çылăх пулмасть! —
Малалла Улăп хăвалать хура çăрхана.

## 11

Аякран курăнать кĕмĕл тĕслĕ тулли шыв юххи,
Шыв юххипе юнашар лăчăр-лачăр, тумхахлă
Ĕмĕрхи пăнтăхланнă лачака сарăлать,
Пĕтĕм шурă-шурлăх тĕтĕм-сĕрĕмпе явăнать,
Шурă-шурлăх тавра сĕм вăрман пуçăнать.
Çак хăрушă, çăткăн вырăнта
Юлан утçă мар, ĕмĕрне никам пулса курман.

Ҫак хăрушă, чăтлăх вăрманта,
Ӳкнĕ йывăҫ ҫĕрсе выртакан ҫĕрте,
Ал лаппи пысăкăш ҫĕр хуппи ҫинче
Катаранах курăнать ылтăн сăрлă кунак.
Кунак тавра ешĕл тумлă симĕс пурҫăнлă тĕнче,
Ҫак ылтăн тĕслĕ ҫутă кунакра
Хура чунлă Алтăркуҫ хуҫаланать.
Пĕр чухне вăл выҫă кашкăр евĕр улать,
Тепĕр чухне вăл хура ҫĕлен евĕр шăхăрать.
Выҫă кашкăр евĕр улама тытăнсан,
Хура ҫĕлен евĕрлĕ шăхăрма пуҫласан
Чĕрĕ курăк ҫыхланса-явăнса ӳкет.
Ҫĕр-пин ҫул ӳснĕ хура сĕм вăрман
Кашла-кашла ҫĕре ҫити авăнать.
Улăп Алтăркуҫ ҫĕрне ҫывхарать,
Тавран каяс — тата ҫĕр-пин ҫухрăм ҫаврăнмалла,
Тӳрĕрен кĕрес — чĕр чун кĕмен лачака-шурлăхлă вăрман.
Умра мĕлке, тинкерсе пăхать кунак ҫутине,
Алтăркуҫ хĕрĕ тинкерет Улăп ҫулĕ ҫине.
Улăп ҫил-тăвăл кăларса пынине асăрхасан
Васкать курнине пĕлтерме амăшĕ патне.
— Анне, пăх-ха, пĕр чĕчĕ ĕмен юлан ут килет.
— Хĕрĕм, сăна: кунта мĕнле ҫитет?
Тавран каять пулсан — аҫуна савнăҫ пулать,
Тӳрĕрен килет пулсан — шыв-шур кайăкне ҫимĕҫ пулать.
Алтăркуҫ хĕрĕ ун-кун ҫаврăнкалать,
Ҫамрăк юлан утҫа куҫ илмесĕр сăнать.
Улăп пăхăр ҫĕлĕкне майласа лартать,
Ҫумри вăрҫă хатĕр-матĕрне йĕркене кӳртет.
Ату кĕлипе урхамаха хĕссе илет,
Вун ик вĕҫлĕ пурҫăн саламатне тивертсе илет.
Алтăркуҫ патне ҫитме ҫул шырамасть,
Тӳрĕ ҫулпах урхамах малалла чашкăрать.
Тусем урлă, сăртсем урлă канăҫсăрскер
Пин ҫул ӳснĕ хура сĕм вăрмана
Хура ҫĕр ҫине ҫапăнтарса хăварать.
Лăчăр-лачăр тĕмескеллĕ лачакара
Ура пуснă вырăнта сивĕ ҫăл тапса юлать.
Шыв-шурлăхлă, шыв-шурлă лачакара
Тĕтĕм-сĕрĕм вĕресе-явăнса юлать.
Нихҫан пулман, пулма пултарман ҫĕртен
Акă Улăп кĕмĕл тĕслĕ шыв хĕрне ҫитет.
Алтăркуҫ хĕрĕ шикленсе те хăраса
Юлан утҫă шыв хĕрне ҫитнине амăшне пĕлтерет:
— Пирĕн йăха чĕр инкек килет!
Амăшĕ хĕвел анăҫне пăхса сăх сăхса илет.
Ырă урхамах такăнса илет,
Маттур юлан утҫă чĕлпĕрне меллĕ тытса
Вун ик вĕҫлĕ пурҫăн саламатпа ҫиҫтерсе илет.
Ырă хура ҫăрха малалла пынă май

Улăп çаплалла хастарланса илет:
— Ан такăн, такăнма каламан,
Пире такăнма çут тĕнче паман.
Сĕмсĕррĕн этем тивĕçне пусмăрлакан
Этемлĕхре нихçан ырă курман,
Пусмăрçа паян тĕп тумасан
Ыран тĕп тăваççех.
Паян умра пирĕн мĕн пулмалли,
Паян умра мĕн пурнăç курасси!
Алтăркуç кунак хӳттинчи хыр тăрринче
Пурнăç ыррипе шӳнĕ хура çăхан,
Улăп урхамахĕ кĕмĕл шыва кĕнипе
Вĕçсе пырса чуна пăвмалли.
Улăп юлан утçă пĕлсе, васкамасăр,
Уххине тытса йĕппине меллĕ картса,
Карăнтарса вăйлăн таптарса ярать.
Нумай-и, сахал-и — хура çăхан çӳлтен ӳксе
Ĕмĕр çывăрма пуçне чикет.
Улăп урхамахĕ çăрттан пек ишсе
Тулли кĕмĕл шыв урлă каçать,
Халь юлан утçă ут çинчен анать.
Алтăркуç арăмпе хĕрĕ хыпăнсах хирĕç тухаççĕ,
Ăшран пăшăрханса та кăмăлсăрланса:
— Ырлăхпа çитнĕшĕн тав, — текелеççĕ. —
Алтăркуç каçа килет, хальлĕхе кĕтме тивет.
Унччен йывăçлăха кĕрсе шăм-шака кантар,
Выçнă хырăма йывăçлăх çимĕçпе тăрантар, —
Йăпатса та йăпанса халаплать хĕр амăшĕ.
— Ырă хыпаршăн пысăк тав! —
Пуç таять Улăп юлан утçă хĕрпе амăшне.
Урхамахне ярать симĕс пурçăн улăха,
Хăй кĕрет Алтăркуçăн йывăçлăхне.
Ларнă май пăхать çимĕç йывăççисем çине,
Йывăçлăхри çимĕç йывăççин çулçисем çинче
Тирĕннĕ ухă йĕппи те ухă, сăнă та хĕç.
Чăтаймарĕ Улăп — çимĕç йывăççине силлет,
Çимĕç йывăççи çинчен ухă, хĕç те сăнă тăкăнать,
Тепĕр çимĕç йывăççине силлет —
Йывăç çинчен вăрçă хир хатри тăкăнать.
Хĕвел пытанчĕ йывăç та сăрт хыçне,
Тĕттĕм сăнĕ çапрĕ, тĕттĕм килет тĕнчене.
Ак çĕр пичĕ чĕтренчĕ тейĕн —
Тавра кисренет çĕрте мĕн пурри,
Кашкăр уланăн та çĕлен шăхăрнăн
Сасă курăка çыхса та явса ӳкерет,
Сĕм вăрмана пуç тайса çĕре ӳкерет.
Çил-тăман та çавра çил çавăрнă тенĕн —
Кутсăр-пуçсăр тĕнче пĕтнĕн çаврăнать.
Пĕр-пĕр этем ун çывăхне лексен
Утас тунипех вăл чунне парать.

Алтăркуç халь сунартан килет,
Татнă çимĕçне, пин çул ӳснĕ юмана
Хăй хыççăн вăрманпа сĕтĕрет.
Улăпа курсан хĕрелсе каять, юмăхса каять,
Тепĕр хут шăхăрса ярать çĕленле хайхи,
Пур чул кунакĕ чĕтренсе илет,
Çыннисем йĕрĕх тытнă пек хутланса вилеç.
— Йĕпе сăмса, манпа тытăçма е çураçма?
Ман пата тухнăранпа миçе чуна çирĕн — кала чăнне? —
Шăхăрса улать Алтăркуç хаярланса. —
Эп, сан пек, айăпсăра тиместĕп, айăпсăра хӳтĕлеп.
Хура çĕленпе выç тикар пеккисем
Айăпа пăхмасăр айăп тунине тĕнче пĕлет,
Çав шутра чи тискеррисен ашшĕ эсĕ пулан,
Паянтан ашкăнма мар, сан ашкăнас ĕмĕт те пĕтет! —
Пĕлтерет Улăп ура çине тăрса.
— Ашшĕ, кăшт лăпланар,
Апат çисе вăй-хал пухар.
Тата килнĕ çамрăка хăна тăвар.
Хăна валли те пирĕн апат пиçнĕ,
Хăна апатне пĕрле ларар!..—
Йăпăлтатать Алтăркуç арăмĕ Тӳкепĕс.
Алтăркуç утать саркавай патне,
Васкавлăн вун ик витре кĕрекен луткапа
Ăсать чи хăватлăраххине те
Куç хупмасăр, пуç йăтмасăр пĕр çăвара хыпать,
Улăп енне çаврăнса сĕтел хушшине ларма чĕнет.
— Çук, юн ĕçенпе юнашар лармастăп,
Сан патна эп хăнана килмен.
Хамăр килшĕн, хамăр çĕршĕн çапăçăва тухатăп,
Кала, ăçта ман тăван çичĕ пичче?.. —
Хастарланса, хăрамасăр ыйтать Улăп.
Алтăркуç вырăн тупайми шăртланса тулхăрса каять,
Кашкăр уласа, çĕлен шăхăрнă пек пек уласа ярать, —
Шур чул кунакĕ чĕтренсе çурăлать,
Кантăк-чӳрече янаххи тухса сирпĕнет,
Çĕр çулхи кăтра юман кăкпа кăкланать.
Нӳхрепри тулли саркавай пек чышкипе
Улăпа вăйран сулласа çапать.
Алтăркуçăн сулăнчăклă чышкипе
Улăп чĕркуççи таран ик урипе çĕре путать.
Улăп ик урине туртса кăларсан майлăн çапать,
Алтăркуç чĕркуççи таран çĕре путать.
Мал енчен çутă килет,
Хĕвел тухăç сăрланăн çулăмланать,
Улăппа Алтăркуç çĕр каçа канмасăр çапăçрĕç.
Акă юлашки меллĕ те майлăн пĕлĕте йăтса
Улăп Алтăркуçа çавăрса кĕрслеттерет,
Алтăркуç мăй таран çĕре вирĕнет,
Улăп васкавлăн хурçă хĕçпе вăрçа вĕçлет.

— Халех ман тăван çичĕ пиччене тупса кил,
Тупса килмесен — мăшру çумне выртан, —
Хаярланса пĕлтерет Улăп Алтăркуç арăмне.
— Çамрăк каччă, ан тив мана,
Алтăркуçăн кача пўрнине кассан
Хăвăн тăван çичĕ пичуна тупăн, —
Хăраса пĕлтерет Алтăркуç арăм Тўкепĕс.
Нумай кĕтсе тăмарĕ Улăп —
Алтăркуç кача пўрнине касать.
Çав самантра пĕртăван çичĕ каччă
Хаваспа савăнса тухаççĕ.
Çичĕ каччă Улăпа тăванне пĕлсен
Чун-чĕрепе савăнаççĕ.

## 12

Савăнчĕ çуталнă Улăп юлан утçă,
Хĕпĕртесе макăрчĕç сакăр каччă-пĕртăван,
Хура чунлă Алтăркуçа мĕнпур курайманлăхпа
Хирчĕç те турарĕç, касрĕç те вакларĕç,
Кĕл туса çунтарчĕç, сапрĕç çил çине.
Çула тухас умĕн çичĕ каччă-пĕртăван
Улăп умне тăрса çапла халапланчĕç:
— Хамăр йăхшăн эпĕр çĕкленнĕ,
Хамăр йăхшăн эпĕр хускалнă,
Умри тăшмана эпĕр тĕп тунă.
Улăп шăллăмçăм, эпĕр ятсене ямастпăр,
Çавăншăн ял-йышран пулĕ чыспа хисеп.—
— Сакăр каччă пĕр Наççа амăшĕнчен,
Сакăр каччă-пĕртăван,
Кашни харпăр хăй урхамахне утланчĕ,
Çил пек ыткăнчĕç тăван кил енне,
Çил пек ыткăнчĕç тăван Пăркаса.
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Сакăр каччă-пĕртăван шав шăваççĕ кил енне
Инçетре-инçетре, пĕр çеçен хирте,
Сакăр каччă-пĕртăван шутламаççĕ канма.
Çеçен хирĕн варринче пĕр чатăр карса,
Утсене симĕс пурçăн улăхне ярса
Шур чатăра сакăр каччă кĕчĕçĕ канма.
Черечĕпе хурал тăрса апат пĕçерме
Пурĕ пĕр кăмăлран çапла килĕшрĕç:
Малтан апат туса хурал тăрать Пахтай,
Унтан черечĕпе Çичулта, Шутите, Микуш,
Микуша улăштарать Хуани, Тапай та Тукай.
Çула тухас, каяс умĕн Улăпăн тăмалла.
Апат çирĕç, канма выртрĕç.
Улăпăн канасси килмест.
Çăл шывĕпе питне çурĕ,
Шăлчĕ кĕпе çаннипе.

Шур чатăртан тула тухрĕ,
Пăхрĕ тавра уç* тупанĕн хӳттипе.
Киле каяс çул çинче
Сăрт хĕрринчи айлăмра
Пĕр юлан утçă çӳрет.
Алă пăтлă чукмарпе
Ута-ута вăй вылять,
Хăй утланнă урхамахĕ
Çын пек ик уран тăрать.
Улăп куна ăнланчĕ:
Халĕ çапăçма килет.
Тăван пиччĕшĕсене тăратрĕ,
Тăшман пуррине кăтартрĕ.
— Ну, тăван пиччесем,
Çав юлан утçă пăхаттира
Каннă вăхăтра тĕп тумасан
Йывăрлăх килет пурсăмăра.
— Эп каятăп, — тет Хуани,
Васкаса çĕкленчĕ, тухрĕ чатăртан.
Хуанирен юлмарĕ ак тата Çичулта.
Тытса килчĕç çаранти утсене,
Йĕнерлерĕç утсене шур кашма хурса,
Хавассăн утланчĕç лашисем çине,
Хĕстерчĕç учĕсене атă кĕлипе,
Хастарлансах вĕçтерчĕç тăшманпа çапăçма.
Сăрт хĕрринчи айлăма кĕнипе
Çул хĕрринчи хĕрарăм-паттăрăн лаши
Малти урине çӳлелле çĕклерĕ.
Пĕр самант çĕр чĕтресе çĕр кисренчĕ,
Шыв тапса тухрĕ сăрт хĕрринчен.
Хуанипе Çичулта пĕртăван
Шыва путасран хăраса
Вĕçтерчĕç калла ак куран.
— Тăвансем! Самантра тулчĕç кӳлĕпе тип вар-çырмасем,
Миçе çул вăрçă хирĕнче пулман,
Кун пек хăрушă хĕрарăм-паттăра курман, —
Хашкасах пĕлтерчĕç Хуанипе Çичулта.
— Ну, кун пек намăс, тăван пиччесем!
Кун пек намăс курмастпăр,
Пăвар йăхĕн каччисем.
Хĕрарăм-паттăр, Алтăркуç арăм Тӳкепĕс,
Мĕнпур вăйне пухать пире тĕп тума.
Тăшмана тĕппе тĕп тумасан
Канлĕх пулмасть пире çут тĕнчере, —
Пĕлтерет Улăп тăван пиччĕшĕсене.
Çичĕ каччă-пĕртăван
Пăхаççĕ пĕр-пĕрин куçĕнчен,
Сăмах чĕнме хăраççĕ,

* Ывăç.

Вăтанаççĕ Улăп шăлнĕнчен.
— Хуанипе Çичулта хăранă пулсан
Ман чун та юлмасть, — тет кĕçĕнни Тукай.
Чĕтреме пуçларĕç Микушпа Тапай.
Аслă пиччĕшĕ Пахтай:
— Эпир сана пичче тесе чĕнĕпĕр,
Пирĕн пичче Улăп паттăр тейĕпĕр,
Виличченех сана хисеп тăвăпăр,
Виличченех сана пуç тайăпăр! —
Терĕ шăлнĕсен умне тухса.
— Пул эс пирĕн аслă пичче,
Пул эс пирĕн аслă пуçлăх,
Пул эс пирĕн турхан та шамхай,
Çĕнме пулăш тăшмана, — тет Микуш.

### Улăп паттăр

Тавтапуç ырă кăмăлшăн, тăван пиччесем,
Çичĕ пичче пур çинче
Аслă пиччу эп пулмăп.
Çичĕ пичче пур çинче
Сирĕн пуçлăх эп пулмăп.
Тăшмантан хăрас кăмăл пулсан
Çапăçмашкăн хам каяп.
Инкекрен хăтарма хам килнĕ,
Халь те сире хăтарăп.
Çапăçу хирĕнчи паттăра
Халăхран пулĕ ялан чыс та хисеп! —
Улăп паттăр çĕкленчĕ,
Тухрĕ шурă чатăртан.
Урхамаха тытса йĕнерлерĕ шур кашма хурса.
Акă вĕçтерчĕ Улăп вăрçа,
Катаранах вăл курать,
Хĕрарăм-паттăр вылять чукмарпа.
Хăй сăмах май çапла такмаклать:
— Эс пĕтертĕн ман мăшăра,
Сана шывра путарап, вутпа çунтарап!
Улăп сăрт-ту айлăмĕнваррине çитсен
Тӳкепĕс лаши малти урине çĕклет,
Çĕр кисренсе çĕр чĕтрет,
Çыран хĕрринчен шыв пĕрĕхет.
Хĕрарăм лаши, çын пек, ик ури çине тăрать,
Сăрт хĕрринче вут-хĕм пĕрĕхет.
Шу сарăлса улăх тулать,
Улăпа пилĕк таран илнĕ, татах тулать,
Чăтма çук вут-хĕм çунтарать.
Улăп ăна-кăна туймасăр
Хĕрарăм-паттăра çывхарать.
Ак вăл янклаттарчĕ хурçă чукмарпа.
Хĕрарăм-паттăр вырăнтан хускалмарĕ,
Улăпа çаврăнса та пăхмасть.

Улăп аяккалла пăрăнса шухăша каять:
«Ах, ку Алтăркуç, эсрел, чун илли.
Витмест-и вара сана ман чукмар?
Алтăркуçа шаккарăм — парăнтартăм,
Ак ку вара вырăнтан та хускаласшăн мар.
Халех ватăлап-шим, халех вăйăм чакать-шим?»
Улăп паттăр аяккалла юрттарать те
Çил-тăвăл пек пырса
Хĕрарăм-паттăр пуçĕнчен
Шанк! тутарать хурçă чукмарпа.
Тинех хайхи Тӳкепĕс хĕрелсе шуралчĕ,
Мăшăрне аса илсе татах хăпартрĕ халне,
Хаярланса, вĕриленсе каялла чакса,
Ахлатса сулаççĕ çивĕч хĕçсене.
Шарт! туса хуçăлаççĕ хĕççисем.
Каялла чакаççĕ те вĕсем
Пĕр-пĕрне чикеççĕ вăрăм сăнăпа,
Шарт! тесех хуçăлаççĕ вăрăм сăнăсем.
Улăппа Тӳкепĕс анаççĕ лашисем çинчен,
Ярса тытрĕ Улăп паттăр
Тăшмана карланки тĕлĕнчен,
Çумăр пĕлĕчĕ таран çĕклерĕ те
Вăрр! çавăрса çатлаттарчĕ çĕр çумне.
Сиксе ларчĕ Улăп паттăр
Çичĕ ютăн кăкăрĕ çине.
Яшт! çĕклерĕ Улăп паттăр
Хăйраса çутатнă хĕççине.
Улăп паттăр хавасланчĕ,
Хашт! сывларĕ çĕнтерӳ ячĕпе.
Хаваспа чĕнчĕ Улăп паттăр
Çичĕ каччă-пĕртăван ачисене.
Шурă акăш тытрĕç хайхисем,
Ăшаларĕç вĕри çатăрка çинче.
Çĕнтерӳ, уяв ячĕпе
Еçрĕç те çирĕç савăнса, кулса.
Уяв турĕçĕ, уяв иртрĕ,
Сакăр каччă-пĕртăван
Хаваспала савăнса
Çула тухрĕçĕ паян.
Çитмĕл те çичĕ кун та çитмĕл те çичĕ каç
Сакăр каччă-пĕртăван
Савса кулаççĕ киле вĕçнĕ май.
Сăрт-тусем юлаççĕ вĕлтлетсе анчах.
Кунĕпе пыраççĕ — кун каçма шутламаç,
Çĕрĕпе пыраççĕ — çĕр каçма шутламаç,
Лашасене хистеççĕ — сывлама памаç.
Кун каяççĕ — ял çывхарать,
Çĕр каяççĕ — кил çывхарать,
Çичĕ каччă-пĕртăван
Пĕр пулаççĕ сăмахран.

Кут айĕнчи урхамах шунă май
Çичулта Пăркасрине аса илет,
Çичĕ каччă-пĕртăван
Пăркасра чап-хисепре пулнă.
Çичĕ каччă пур чухне
Аслати авăтма вăтаннă.
Çичĕ каччă пур чухне
Çил-тăман тухма хăранă.
Паян Пăркаса çитсен
Ял-йыш, кўршĕ мĕн калать?
— Ялтан тухнă чух, — тет Пахтай, —
Çĕнтеретпĕр терĕмĕр,
Сакăр каччă пĕр ялтан,
Яла çитсен мĕн калĕç?
Çĕтнĕ çичĕ каччăна
Улăп тупса çăлнă тейĕç.
Çĕр чăтман тăшмана
Улăп кăна çĕннĕ тейĕç.
Çичĕ каччă-пĕртăван
Чыс-хисепсĕрех пулĕç.
Пирĕнпе пулнă Улăпăн
Чыс-хисепĕн виçи пулмасть. —
Çичĕ каччă-пĕртăван
Улăпа тăван шутламасть.
Çичĕ каччă-пĕртăван
Улăп паттăртан ютшăнаç.
Çичĕ каччă мĕн шутлаççĕ —
Улăп каччă халь пĕлмест.
Çичĕ каччă-пĕртăван
Хура вăрман варринче,
Харпи çырма хĕрринче,
Чараççĕ урхамахĕсене.
— Лашасем ывăнчĕç, кăшт кантарар,
Хамăр ывăнна, кăшт канар,—
Пĕлтерет аслă пиччĕш Пахтай.
— Эсĕ, Улăп, апат туса хурал тăманччĕ,
Сана черет лашасене пăхма.—
Улăп хирĕçмест, Улăп килĕшет,
Лашасене çавăтса вăрман уçланкине кĕрет,
Пурçăн курăк çине ярать.
Çичĕ каччă-пĕртăван
Каварлашаççĕ пĕр сăмахран.
Улăп тăршшĕ, çичĕ Улăп çўллĕш
Яма чавса, çитти витсе вырăн тăваç.
Çитти витнĕ яма тавра
Çичĕ каччă вырăнпа выртаç.
Улăп лашасене çитарса* килсен:
— Эсĕ ывăнна, халь выртса кан! —

* Çитерсе.

Хатĕр вырăна выртма хушаç.
Ăна-кăна шутламан Улăп
Мĕнле выртать — ямăна вăрăнать.
Çичĕ каччă-пĕртăван
Чулпа, тăпрапа яма тултараç,
Улăпа чĕрĕлле çĕр айне тăваç.
Çичĕ каччă-пĕртăван
Киле кайма çула тухаç.

## 13

Çичĕ каччă-пĕртăвана
Улăп лаши тыттармарĕ,
Кĕçенсе те çухăрса
Тарса юлчĕ вăрмана.
Çичĕ каччă кайнипеле
Улăпа пытарнă вырăна
Урхамах пычĕ хыпăнса.
Улăп лаши кĕçенет,
Тавра вăрмана янратать.
Улăп лаши кĕçенет —
Хăлхасăра илттерет.
Улăп лаши кукалет —
Чула, çĕре сирпĕтет.
Улăп урхамах кĕçеннĕ енне
Кашкăр-кашаман тухать.
— Ырă кашкăр-кашаман,
Пулăш мана шăтăк чавма!
— Ĕç ĕçленĕшĕн мĕн паран? —
Ыйтать кашкăр-кашаман.
— Яма чавса пĕтерсен
Тачка пĕççе шеллемĕп, —
Кашкăр-кашамана хуравлать.
Улăп учпе кашкăр-кашаман
Пĕр-пĕринпе ăмăртмалла
Чула, çĕре сирпĕтеç.
Улăп урхамах кĕçеннĕ енне
Упа-утаман тухать.
— Ырă упа-утаман,
Пулăш пире шăтăк чавма!
— Ĕç ĕçленĕшĕн мĕн паран? —
Ыйтрĕ упа-утаман.
— Ырă упа-утаман,
Яма чавса пĕтерсен
Тачка пĕççе шеллемĕп, —
Пĕлтерчĕ Улăп урхамахĕ.
Улăп выртан шăтăка
Кашкăр-кашаман кашалет,
Упа-утаман упаленет,
Улăп урхамахĕ кукалет.

Улăп выртакан шăтăка
Чике хыççăн хур тăршшĕ,
Хур та хăлаç тăрăш чавсан
Тусан-тĕтĕм явăнать.
Акă ăмăрт кайăк вĕçсе тухать,
Шăтăк чаванскерсене ыр сунать.
— Ырă ăмăрт кайăкăм,
Шăтăкран чул кăларма пулăшсам?—
Ыйтнă Улăп урхамахĕ.
— Ĕçшĕн мана мĕн тӳлен?—
Ыйтать ăмăрт кайăкĕ.
— Саншăн тутлă апат пултăр—
Шеллемĕп хăрах куçăма,—
Терĕ Улăп хура çăрхи.
Кун чаваççĕ, çĕр чаваççĕ —
Тусан-тĕтĕм лăпланмасть,
Улăп тăршшĕ, çич Улăп çӳллĕш
Чулпа çĕре сирпĕтсе
Улăп шăтăкне тасатаç.
Утаманпа кашаман
Шăтăк чавса ывăнсан
Вăрман сулхăнне выртаç.
Урхамах пăхать шăтăка,
Улăп тăнине курсан
Çĕр кисретсе кĕçенет,
Çывăхри сăрт-ту çурăлать,
Пин çул ӳснĕ йывăççем
Хуçăлса çĕре тăкăнаç.
Канма ларнă ăмăрт кайăка:
— Ырă ăмăрт кайăкăм,
Ĕçлесе ывăннă, пĕлетĕп,
Темле йывăр пулсан та,
Шăтăк тĕпĕнчи ыр çыннăма
Туртса кăларма пулăшсам.
Ырă ĕç туса пулăшнăшăн
Хĕрхенмĕп тепĕр куçăма.
Ăмăрт кайăк хирĕçлемерĕ,
Çӳле, пĕлĕте йăтăнса
Чул ӳкнĕ пек анчĕ шăтăка,
Ик уринчен вăйлă чĕрнипе
Улăпа хулпуççинчен çаклатса
Йăтса кăларса тăратрĕ
Урхамахпа юнашар.
— Хам тĕллеве пурнăçларăм,
Ыр тусăма кун-çул патăм,
Халь вилсен те шалккă мар.
Вăхăтра чун парса тăрăшнăшăн
Пулăшакансене тав тăвам:
Утаманпа кашамана
Кайри тачка пĕçĕсене парам,

Çÿлте вĕçен ăмăрт кайăка
Ик куçăма парнелем,—
Терĕ Улăп урхамахĕ.
Улăппа урхамах юнашарне курсан
Упа-утаман тăрса тинкерчĕ,
Улăпа палласа илсен:
— Арăслан апач пулассинчен
Пире çăлса хăварнăшăн
Пĕтĕм чун-кăмăлран
Ырлăх-сывлăх сунатăп!
Мăн инкекре пулăшнишĕн
Ĕç укçине илместĕп.
— Чим,—тет ăмăрт кайăк.—
Эсĕ вĕт-ха чĕппĕмсене
Хура çĕлентен хăтарса
Пурнăç кун-çулне патăн!
— Улăп, эсĕ, чăн та, паттăр,
Пулас вилĕмрен хăтарса
Пире пуласлăх патăн.
Паян кун та аннепе
Тав тăватпăр чун-чĕререн,—
Терĕ кашкăр-кашаман.
Улăп чĕр чунсем умне тăрса
Халапланчĕ ак çапла:
— Кашниех пурăнасшăн
Мĕнпур вăй-халне пухать,
Кашниех пурăнасшăн
Кунĕн-çĕрĕн тăрăшать.
Кашниех пурăнасшăн
Инкек-синкекпе çапăçать.
Кам ыр чунлă, кам ыр ĕмĕтлĕ —
Юта-кÿрше тапăнмасть,
Пур таврари чĕр чунсене
Хăй чунĕ тесе шутлать.
Кам ыр чунлă, кам ыр ĕмĕтлĕ —
Икĕ питлĕ çын пулмасть,
Кам ыр чунлă, кам ыр ĕмĕтлĕ —
Ютăн мулне хапсăнмасть.
Ыр тунине ан манăр,
Икĕ питлĕ ан пулăр.
Ман урхамаха пулăшса
Утма кун-çул панăшăн
Чун-чĕререн тав тăвап.
Ан уйрăлăр йышран,
Йышран уйрăлан — хăрăк турат.
Тус-юлташа эс ан ман,
Пĕччен турат сирĕлет,
Йышли йышпа вăй илет.
Халĕ ĕнтĕ уйрăлар,
Кашни хăй çулĕпе утар!

14

Улăп урхамахпа юлсан
Тарăн шухăша каять.
Хĕвел анăçне пăхса
Пуçа тая-тая илет.
Çумри тусне туйса
Урхамахĕ кĕçенет.
Улăп васкаса, хыпăнмасăр
Утне ачашласа илет.
Шур кашма витсе йĕнерне хурать,
Вун ик чĕлпĕрне çирĕппĕн çыхать.
Ямт! сикет те утланать,
Чăшт! саламачĕпе çаптарать.
Урхамах çил пек хускалса каять.
Вăшт! анчах каçать çӳл тусем урлă,
Вăль! анчах каçать шыв-шурсем урлă.
Нумай кари, сахал кари —
Темле шухăш пуçа килнипе
Лашине чарать, ун-кун пăхкалать:
Умра виçĕ юплĕ çул.
Пĕр çулне тепĕр çулĕнчен уйăрма çук —
Пуринпе те çӳренĕ.
Пăхать — çул юппипе пĕр ватă шур сухал
Туйи çине таялса килет.
Шур сухаллă ватта хирĕç пырса
Улăп паттăр пуç таять:
— Сывă-и, ватă асаттем,
Çакă ватă çулĕнче
Аçталла кун пек çул тытан?
Шур сухаллă ват старик
Йăвашлăха тав туса:
— Пурçăханран килеп-ха,
Инкек çукран нушапа
Кăвасалла утап-ха.—
Паттăр ут çинчен анса,
Шурă сухала алă тытса:
— Ват асаттем, каласам,
Пурнăç мĕнле Пурçăханра?
Шур сухаллă ватă мучи:
— Эх, ачам, ан та асăн,
Пурçăханра пурнăç мар,
Сӳнсе ларчĕ çут хĕвел,
Анса ларчĕ çут уйăх.
Эсрел патши унта пырса
Наççа инкен çич ачине
Алли-урисене тимĕрлесе
Пăрлă нӳхрепе хупрĕ.
Хитре Наççа инкене
Тыткăна илсе касамата хупрĕ.
Эсрел патши патне пыма çук,

Хăй тавра мăн çар пухрĕ.
Улăп паттăр тарăн шухăшра:
— Ват асатте, маншăн ырă пул,
Парсам мана хăвăн тумтире?
Эпĕ парăп хамăн тумтире.
Çи-пуçран пăхсан — паттăр пулăн эс,
Çи-пуça пăхсан — кĕлмĕç пулăп эп.
Нумай калаçса тăмарĕçĕ,
Кăмăлпа улăштарчĕç тумсене.
Улăп паттăр — халь кĕлмĕç старик,
Ватă шур сухал — халĕ Улăп паттăр.
Пĕр сăмахпа пĕр килĕшсе
Урхамахпа тимĕр тум улăштарчĕç.
Хĕрĕх пăтлă тимĕр туя
Утнă майăн вăльт-вăльт тăвать.
Кашни утас — çичĕ çухрăм,
Пин çул ўснĕ вăрман юлать
Хыт хура пек саланса.
Хирсем урлă утнă май
Çăпата тĕпне тусан-пылчăк çыпăçать.
Утас утта çăмăллатма
Ларса çăпатине силлет.
Ăçта силленĕ çăпата,
Унта сăрт-ту пулса юлать;
Юхан шыв çулне силлет —
Çанта çавра кўл пулса тăрать;
Ăçта ларнă, çав вырăнта
Айлăм-лупашка юлать.
Утсан-утсан — çул каять.
Ваттăн (Улăпăн) канас шут кĕрет.
Ун пăхать те кун пăхать —
Выртмалăх таса уй тĕл пулмасть.
Ватă нумай шутласа тăмасть —
Пин çул ўснĕ вăрмана
Армути кăкланă пек кăкласа
Хăйне выртмалăх лаптăк тăвать.
Вăрманта кăкланă ват юмана
Пуç айне хурса канма выртать,
Тутлă ыйхă тĕлĕрет.
Вăрман хуçи Ăртаман
Вăрман вырнче уй курсан,
Çитсе курсан тарăхать:
— Ман вăрмана пĕтерчĕ,
Манăн çĕре йышăнчĕ. —
Тарăхнипе Ăртаман нумай шутламасть,
Лăпкă çывăран Улăп çине
Пĕр ушкăн çар ярать.
Пĕр ушкăн çар çыннисем
Кам чукмарпа, кам кисĕппе
Çапса-тĕксе хистеççĕ.

Мĕн çыртакан пур тесе
Улăп васкамасăр-хыпăнмасăр
Хăй тăрăх аллипе сĕрет.
Ăртаман çар ушкăнне
Шăна-пăван пек типĕтет.
Ăртамана шăнăçми шăрт килет,
Пĕр купа çар ярать.
Ватă (Улăп) шутласа тăмасть —
Пĕр ывăç тăпра илсе
Çар купи çине сапать.
Çар купи килен вырăнче
Ăртаман тăвĕ пулать.
Пĕр ывăç тăпра илнĕ вырăнта
Çавра кӳлĕ пулса юлать.
Ватă (Улăп) тăчĕ, ун-кун пăхрĕ, çула тухрĕ,
Васкамасăр-хыпăнмасăр витĕмлĕ çул тăвать.
Кун утать те çĕр утать,
Акă çитет Пурçăхан çĕрне.
Харпук ял çыннийĕ пулса
Эсрел патша калакне кĕрет.
Кĕтмен туман çĕртен ватăна
Выçă Эсрел хыçа çул памасăр
Ӳпре пек сăхса-çыртма тытăнаç.
Ватă (Улăп) нумай шутламасăр
Тытса утрĕ* ак пĕрне,
Тепĕрне сиктерчĕ ура пуçпе,
Виççĕмĕшне ярса илчĕ уринчен те
Вăр çавăрса утрĕ патша калакĕ урлă.
Тасалнă урампа утма тăрать,
Эсрел патши патне çитме шутлать.
Ак ушкăнпа хупăрлаççĕ тăшмансем,
Ункă варне хупса шутлаç чун илме.
Ватă (Улăп) тытса пăхать — чукмар çук,
Ватă хыпашлать — хурçă хĕççи çук,
Ватă хул хыçне хыпашлать — сăннийĕ çук,
Ни кинжал çук, çĕççи çук.
Ватă (Улăп) ун пăхать, кун пăхать—
Чутласа пĕтермен тĕнĕл выртнине курать,
Тăршшĕ ун çитмĕл çичĕ хăлаç,
Урлăш-сӳллĕш çич хăлаç.
Ватă тытрĕ çав юман тĕнĕле;
Эх! терĕ те ух! терĕ,
Ух! терĕ те эх! терĕ.
Ун сулать те — умра тасалать,
Кун сулать те — хыçра тасалать,
Тепре сулать те — урам тасалать.
Ватă (Улăп) çитет патша калакне.
Эсрел патши куна курса

* Ывăтрĕ.

Кăшкăрса ярать выç кашкăрла.
Эсрел патши куна курса
Шăхăрса ярать хура çĕленле.
Эсрел патшин калак чĕтренет,
Эсрел патшин калак кисренет.
Ватă кĕрет Эсрел калакне:
— Кам чĕннĕ сана Пурçăхана,
Пурçăханра кам хушнă хуçа пулма?
Ватта (Улăпа) сăмах памасăр,
Куштанланать Эсрел патши:
— Манпа кĕлмĕçĕн мĕн ĕç пур,
Тытăр, тимĕрлĕр çак çич ют кĕлмĕçе,
Кайса хупăр пăрлă нӳхрепе!
Ак шăв-шав тухать, хăй-хай тăвать,
Эсрел чун иллисем чашкăрма пуçлаç.
Шăв-шава кура ватă тарăхса каять,
Çилленсе çĕклет тимĕр туяна.
Шан! тутарать Эсреле пуçран,
Эсрел ӳкет, чунĕ тухса вĕçет.
Ватта сырса илчĕç, ватта хупăрларĕç,
Сăнчăрларĕç йывăр сăнчăрпа,
Тимĕрлерĕç ăна хĕртнĕ тимĕрпе.
— Ан çулăхăр, ан çыхланăр, чун иллисем,
Тавăру килет, тавăру çитет,
Сирĕлĕр ман çумран, — пĕлтерет ватă (Улăп).
Итлекен çуккă, чарнакан çуккă,
Шăна пек сырăнаççĕ, кăткă пек тăрăнаççĕ
Ватă (Улăп) кĕлмĕç тавра.
Нумай вăхăт иртет-и, сахал-и —
Ăçтан вăй кĕрет, ăçтан вăй килет,
Ватă (Улăп) кĕлмĕç, Наççа ачи,
Шăтăр-шăтăр! кăна сăнчăра татать,
Сăнчăра татать те аякка утать*.
Ăçтан вăй килет, ăçтан вăй тухать,
Ватă кĕлмĕç (Улăп), Наççа ачи,
Шăтăр-шатăр! тимĕре татать,
Хĕртнĕ тимĕре татса аякка утать,
Чун иллисене тимĕр туяпа çапать,
Чун иллисем чунне парса тăсăлса выртаç,
Чун иллисене тимĕр туяпа хаплаттарать,
Чун иллисем хутланса, лăпчăнса выртаç.
Ватă касамата пырать,
Тимĕр сăнчăрне татса перет,
Наççа амăшне тыткăнран хăтарать.
Наççа инке Улăп ывăла палласа илет,
Куççуль витĕр ыталаса чуптăвать.
Нӳхреп алăкĕн тимĕрне тытса уçать,
Наççа инкен çичĕ каччăн

* Ывтать.

Ал-ура сăнчăрне хуçса аякка утать.
Пăрлă нӳхрепрен çавăтса тухса
Пĕртăван çичĕ качча кун-çул кӳрет.
Çичĕ каччă-пĕртăван
Улăпа палласа илеççĕ.
Пурăнма кун-çул панăшăн
Чĕркуççи çине тăраççĕ,
Хăйсем тунă йăнăша илеççĕ.
Урхамаха чараймасăр
Шурă сухаллă ватă çитет,
Пăхаттир тумне хывса Улăпа парать,
Ват çын тумне калла хăй çине илет,
Ватă тимĕр туяна аллине тытать.
Шур сухалпа Улăп паттăр
Уйрăлаççĕ ал парса.

*И.А.Патмар çырса илнĕ.*

## 5. ПӲЛЕРТИ ВАЛЕМ ХУÇА

Авал Пӳлертен пĕр çын
Иерусалим хулине
Каять турра кĕлтума,
Святтойсене пуççапма.
Иерусалиме çитсессĕн
Ирхине пит васкаса
Пĕтĕм çынран маларах
Каять чиркĕве кĕлтума.
Вăл чиркĕве çитсенех
Пырса çитет пĕр ват çын
Шур сухаллă, шур çӳçлĕ,
Пĕр чарăнса тăмасăр,
Çынпа сăмах хушмасăр,
Кĕрсе каять чиркĕве
Çакă çынран маларах.
Ват çын кĕрсе кайсассăн
Урăх çынсем те нумай
Кĕрсе тулаççĕ чиркĕве
Çапса хĕстернĕ пекех.
Пăхать, пăхать çакă çын
Ватă çынна чиркӳре,
Анчах нимпе кураймасть
Тем пек хытă пăхсан та.
Тухнă чух та пăхкалать —
Пурĕ пĕрех кураймасть.
Пит тĕлĕнет çакă çын
Ку кам пулчĕ-ши? — тесе.
Тепĕр кун ирхине татах
Çакă çын пит васкаса

Пур çынсенчен маларах
Каять турра кĕлтума.
Чиркӳ патне çитсенех
Хай ватă çын каяллах
Çакă çынран маларах
Кĕрсе каять чиркĕве.
Палланă пек туйăнать
Çакă çынна çав ват çын,
Анчах сăмах хускатмасть
Пит васкаса кĕнипе.
Куçран çухатас маршăн
Çакă çын та васкаса
Ватă çыннăн хыçĕнчен
Кĕрсе каять чиркĕве.
Анчах епле пăхсан та
Каллех куçран çухатать.
Клĕрен тухнă чухне те
Татах кураймасть ват çынна.
Çакă çын питĕ ӳкĕнет
Пĕртте калаçайманшăн:
Ăмма эпĕ калаçма
Тивĕçлĕ мар-ши тет унпа.
Виççĕмĕш кунне татах
Çак çын пур çынран малтан
Чиркӳ алăкĕ умне
Кайса тăрать васкаса
Ватă çынна курасшăн.
Татах хайхи ватă çын
Пур çынсенчен те малтан
Кисе çитет чиркĕве.
Кĕрсе кайма тытăнать.
Çакă çын лайăх паллать
Хăйсен Пӳлер çыннине,
Ватă Валĕм хуçана.
Питĕ хытă тĕлĕнет,
Умне ӳксе пуççапать,
Çапла сăмахсем калать:
«Манран Пӳлерте юлтăн,
Хăçан килтĕн эс кунта,
Ырă çыннăм, ыр хуçам?
Кĕлле кĕнĕ чух курап,
Кĕрсессĕнех çухатап.
Тухнă чух та кураймастăп
Темĕн тĕрлĕ пăхсан та.
Эпĕ питĕ тĕлĕнетĕп,
Турă хвачĕ пур санра».
Ват çын каллех васкаса
Кĕрсе каять чиркĕве.
Вăл чиркĕве кĕрсенех
Пĕтĕм чиркӳ ăш çуталать.

Кĕлĕ пĕтсен ватă çын
Чиркӳ алăк умĕнче
Çакă çынна курăнса
Çапла сăмахсем калать:
«Эп çын триччен килсе çитеп,
Çын выртиччен таврăнап,
Мана кунта никам та
Кураймасть ку чиркӳре.
Халĕ турă хушнипе
Сана анчах курăнтăм.
Пĕтĕм ĕмĕр тăршшĕпе
Пĕр усал ĕç тумарăм.
Çамрăк чухне вĕрентĕм,
Пĕртте ахаль тăмарăм.
Çамрăк чухне вĕрентĕм,
Вăй кĕрсессĕн ĕçлерĕм;
Ватăлсассăн кĕлтурăм,
Турă патне çул турăм.
Ыр кăмăлăмшăн савса
Турă мана пиллерĕ,
Лар ман çия хăвăртрах,
Исе каяп Пӳлере».
Ват çын çине ларать çын
Вăл хушнине итлесе,
Сисмесĕрех юлать çын
Хăйсем Пӳлере çитнине.
Пĕр куç уçса хупиччен
Кисе çитеççĕ Пӳлере.
Унтан ват çын калать ăна
Акă çапла сăмахсем:
«Ыр кăмăлпа ыр ĕçĕмшĕн
Турă мана юратрĕ:
Ятă ĕмĕр тăтăр тесе
Çак Пӳлерте çуратрĕ.
Çакă Пӳлер тăвĕ çинче
Ятăм ĕмĕрех тăрĕ,
Мана пытарнă вырăна
Нумай çын кисе курĕ.
Эпĕ пуснă вырăнсене
Турра кĕлтăвĕç ларса,
Эп пурăнап турă панче
Усал-тĕселе чарса.
Нумай ырă сăмахсм
Калаçрăм эп санпала,
Çак Пӳлер ту савăнĕ
Ĕмĕр-ĕмĕр манпала».

*Н.И.Шелепи сăвăласа çырнă.*
*[1915]*

## 6. ТУТАРСЕМ ПӲЛЕРЕ ИЛНИ

Хура пĕлĕт хупăрлать,
Çут çанталăк хуралать,
Çиçĕм çиçет инçетре,
Автать-кĕрлет асатте,
Килет пусать çил-тăвăл
Пур тусана тустарса.
Килет çаврать çавра çил
Шăйи-шайи шăхăрса.
Хăпăл-хапăл хыпаланса,
Пĕрне-пĕри систерсе,
Çӳрен, чупан чĕрĕ чун,
Пытан часрах кил-çурта!
Пăрлă çумăр, çил-тăвăл
Хир варринче пуссассăн,
Аслă Турă-Пӳлĕхçĕ
Пултăр çавăн виткĕçĕ.
Тикĕс, лăпкă пурăнать
Чăваш халăх савăнса.
Ăна-куна уйламасть
Инкек-синкек çитессе.
Тискер инкек пуç çине
Анса çитнĕ темелле:
Тутар халăх мал енчен
Куçса килнĕ Азирен.
Юпа тăрăх вут вĕçсе
Килчĕ çитрĕ, систерчĕ.
Сыхлав çынни килсе ӳкрĕ,
Хрушă хыпар каларĕ:
«Сĕм вăрман пек сарăлса,
Тăшман килет шавласа,
Пуçĕ-вĕçĕ курăнмасть,
Чикки-хĕрри пĕлĕнмест.
Килет малтан çул уçса,
Çитни-пĕрне вакласа,
Пура-çука çунтарса.
Утлă тутар çаррисем
Килчĕç вĕсен хыçĕнчен:
Ачи-пăчи, арăмĕсем,
Выльăх-чĕрлăх, тĕвисем,
Алла* илнĕ чурисем.
Тискер, усал пичĕсем
Хура хĕрлĕ сăран пек.
Илтмен-пĕлмен чĕлхисем
Хура курак сасси пек.
Хурал пӳртне çитсессĕн
Çĕмĕрчĕç те тăкрĕçĕ.
Манăн çивчĕ юлташсем
Паттăр вăрçса вилчĕçĕ».
Çиçĕм çиçнĕ евĕрлĕ,
Пĕр вĕçĕнчен тепĕрне
Хрушă хыпар саланчĕ
Чăваш халăх хушшине.
Çивчĕ чăваш çаррисем
Çав хыпара илтсессĕн
Пухăнчĕçĕ пĕр çĕре —
Кайрĕç вăрçса тапранса.
Хĕрарăмсем, ваттисем
Юлчĕç хула сыхлама,
Хула тавра хӳмине
Тепĕр чике хăпартма.
Хули тавра çĕр алтса
Тарăнлатса шыв ячĕç,
Вăрттăн тухан шăтăка
Ирĕклетсе хучĕçĕ,
Ухă хулли, хĕç-сăнă
Нӳхрепсенчен кăларчĕç,
Ĕçме-çиме таврашне
Хула варне пухрĕçĕ.
Умри çарĕ малалла
Вăрттăн, шăппăн, ерипен
Пырать хирĕç тутара
Йышне-шутне илмешкĕн.
Чул ту урлă каçсассăн
Сыхлав çынни систерчĕ:
«Тутар инçе мар, — терĕ, —
Шыв хĕрринче вăл», — терĕ.
Тепĕри килсе хыпар турĕ:
«Пăхрăм, сăнарăм, çӳрерĕм —
Тăшман шутне пĕлмерĕм,
Вĕçне-хĕрне курмарăм.
Вăрман-çаран хĕррипе
Çĕрле шывпа антăм та
Тăшман çарĕ хушшинче
Виç кун выртрăм сăнаса.
Çĕрле тухса çӳрерĕм,
Кун çутинче пытантăм,
Хăмăш витĕр сывласа
Выртрăм шывра сыхланса.
Йышлă тутар çаррисем:
Пĕр чăваша вун тутар,
Хĕçĕ-уххи, сăннисем
Пирĕннинчен каях мар.
Ытти çапăç ĕмелĕ
Нумай йышлăн курнаççĕ.

* Тыткăна.

Ахăр, тутар халăхĕ
Иртен халăх пулмарĕ».
Чăваш çарри ваттисем
Çав хыпара илтсессĕн
Сыхланарах çапăçма
Канаш турĕç хушăра.
Сыхланарах вăрçнипе
Йышĕ-шучĕ сайралсан
Канăç паман пиркипе
Тутар çарĕ ывăнсан
Пĕтĕм вăя вăй парса
Касса, ватса, салатса
Ăшаласса тăшмана
Ĕмĕт хучĕç хушăра.
Тепĕр кунне ирхине
Чăваш икке уйрăлчĕ:
Пĕри юлчĕ вырăнта,
Тепри чакрĕ каялла.
Чăнкă тусем хушшипе,
Типĕ çырма варрипе
Унтан-кунтан çаврăнса
Выртать явăнать ту çулĕ.
Çӳллĕ тусем хушшине
Чăваш çарри çитрĕ те
Хĕсĕк тĕле суйласа
Ларчĕ шăппăн пытанса.
Юлнă чăваш çаррисем
Ирхи апат тусассăн
Тутар куçне курăнса
Вăрçă-çапăç хускатрĕ.
Тутар çарри хирĕçет,
Унтан-кунтан вăл хĕсет,
Чăваш çарне çаварса
Илме тăвать шухăшра.
Чăваш чакать каялла,
Тутар пырать малалла,
Тусем-чулсем хушшине
Хуллен кĕреç хĕстерсе.
Тутар халăх савăнать
Чăваша çăмăл хĕснĕшĕн.
Чăваш çарри савăнать
Тутар çăмăл килнĕшĕн.
Хĕсĕк çĕре çитрĕ те
Чăваш çарри çук пулчĕ.
Тутар çарри тăвăнса
Пырса çитрĕ кĕрлесе.
Анчах... Кĕрс-мерс! кĕрлесе,
Шăтăр-шатăр шартлатса,
Шайи-шайи! шăхăрса
Куçрĕ анчĕ ту тăрри.

Чулсем çăваç анаççĕ
Тутар çарĕ хушшине,
Вилеç, çухраç, хĕснеççĕ
Аннă чулсем пуснипе.
Пуçа лекет — пуç çурлать,
Миме сикет — сирпĕнет;
Мăйĕ лекет —
мăй татлать,
Пуçĕ сиксе ывтăнать.
Ури хĕснет — йăванать,
Хыçри анса имерет —
Хĕрлĕ юнпа пĕвенсе
Выртаç чулсем хĕрелсе.
Кĕр-кĕрлесе чул анса,
Тусан тухса хăпарса
Çапăç çырми çийĕнче
Тăрать тĕтре еверлĕ.
Хаяр тискер сасăпа
Тутар-тăшман кăшкăрни
Тусан витĕр ывтăнса
Тухать çӳле хăпарса.
Çӳлти чăваш шавĕпе
Вĕсен сасси явăнса
Тĕрлĕ çĕре саланса
Янра тăрать ӳкĕрсе...
Часах чулпа витĕнчĕ
Тутар çарри çырмара.
Çапăç сасси, шавлани
Вара пĕтрĕ, чарăнчĕ.
Тутар халăх хушшинчен
Тарса-туса пытанни —
Çакă чăваш сăйĕнчен
Сахал пулнă хăтăлни.
Çавă çапăç пулнă-мĕн
Икĕ çырма хушшинче.
Çапăç тунă халăхсем
Парса хварнă ячĕсене.
Вырăс чĕлхи-сварĕпе
Пĕрин ячĕ Татарка.
Тепри çӳрет пирĕн ятпа,
Унăн ячĕ Чувашка.
Çав çырмасем инçех мар,
Эпир пĕлнĕ вырăнта
«Ылтăн çăвар»* хули пур,
Çавă ларать çавăнта.
Ту хушшинчи хыпара
Тутар ханĕ илтет те
Пĕтĕм вăйне çĕклетсе

* Златоуст.

Ярать мала çапăça*.
Чăваш çарне чакарса,
Чул ту çулне тасатса,
Тикĕс çĕре ку енне
Часах kaçaç кĕрлесе.
Тикĕс çĕре тухсассăн,
Йышне-шутне курсассăн,
Чăваш çарĕ ваттисем
Тутар вăйпе кар тăрса
Çапăç тума хăймарĕç.
Вĕттĕн-вĕттĕн çапăçса
Унтан-кунтан чĕпĕтсе
Тутар йышне искĕтсе
Чакма хучĕç каялла.
Чăваш паттăр ачисем
Сисмен çĕртен — сасартăк
Пыраç хуплаç тутара,
Касаç ваклаç тăшмана.
Тепĕр чухне шыв урлă
Каçармасăр йытăлаç,
Тутар пырсан вăйпала
Çук пулаç те çухалаç.
Ерипенех хĕстерсе
Тутар килет малалла,
Пырса çитнĕ ялсене
Вутпа чĕртсе çунтарса.
Пӳлер хули яхăнче,
Аслă улăх варринче,
Чăваш çарри пухăнчĕ —
Вăрçă-çапăç тапранчĕ.
Мĕншĕн кайăк чупать-ши?
Мĕнрен кайăк тарать-ши?
Мĕнрен вĕсем хăраç-ши?
Мĕнрен сехри хăпнă-ши?
Мĕншĕн çĕршыв ӳкĕрет-ши,
Хура вăрман янрать-ши,
Вĕçен кайăк вĕçет-ши?
Мĕнле сасах илтĕнет-ши?
Çавă сасă тухать-мĕн
Хура вăрман хыçĕнчен,
Аслă улăх варринчен —
Тутар, чăваш çапăçаç-мĕн.
Икĕ енчен çурансем
Ухă переç инçетрен,
Çĕмрелçĕсем шăхăртса
Ярас чулсем кăларса.
Утлă çарă сиктерсе
Пырать çĕре чĕтретсе,
Тимĕр шăртне кăнтарса
Ывтăнать тăшман варрине.
Йăлтăр-ялтăр тутарса,
Кукăр хĕçе çутатса
Çутă хĕвел çиййĕнче
Килет тепĕри çул татса.
Тепĕри кистен-тукмакпа
Шăлĕсене шарт çыртса,
Çил-тăвăл пек çаврăнса
Çӳрет сиксе хушăра.
Çивчĕ хĕçĕ вăнт! тăвать —
Этем пуçĕ ывтăнать,
Алă сăнни тăрăнать —
Кевте* витĕр витерет.
Ухă сăнни шăхăрать —
Этем ӳтне тăрăнать,
Кистен-тукмак çат! тăвать —
Тăшман пуçĕ çурăлать.
Çĕр чĕтрет, çĕр ӳкĕрет,
Чăваш-тутар çапăçать —
Çĕр йĕпенет, хĕрелет,
Этем юнĕпе пĕвенет.
Касни-чикни аманса
Çĕрте выртать явăнса,
Тапаланса йынăшса
Тискер, хаяр кăшкăрса
Акă ӳкнĕ явăнса
Пĕрне-пĕри ыткăнса**,
Майне-пырне хĕстерсе
Выртаç иккĕн пăвăнса.
Вилни выртать купипе
Кĕпер сарри евĕрлĕ.
Хĕçĕ, сăнни, кистенĕ
Выртаç çавăнтах çумĕнче.
Тĕтĕм анчĕ çĕр çине,
Çапăç хрушне хупласа.
Ик тăшмана ик енне
Уйăрса хучĕ çĕрлене.
Касу-чикӳ нумай пулнă,
Касни-чикни те нумай,
Пĕрне-пĕри çĕнтерни
Анчах паллă пулмарĕ.
Çĕр тĕттĕмпе витĕнсе
Чăваш çарри пухăнчĕ,
Пухăнчĕ те шут илчĕ
Сывă юлнă çаррине.
Пăхса сăнаса тухсассăн,

* Çапăçăва.

* Пӳ-кĕлетке.

** Ыталаса.

Нумайăшĕ курăнман:
Пирĕн чăваш халăхĕ
Çапăçрĕ те сайралчĕ.
Вара вĕсем çавна кура
Таса хирте çапăçса
Çĕнтерессе тăшмана
Шанăç татнă пулмалла.
Аслă, чаплă Пӳлере
Хупăнса ларса, питĕрĕнсе
Çапăç туса хăтăлма
Тытнă шухăш хушăра.
Ирхи çил вăр-вăр тăвать,
Йывăç çулçи лăпăртать.
Чăваш çарри каялла
Чакса килет хулана.
Чăваш хыççăн йĕрлесе
Килет тутар кĕрлесе,
Анчах чăваш инçетре —
Пырса çитнĕ Пӳлере.
Тутар çарри явăнать
Пӳлер хули тавралла,
Унтан-кунтан пăхкалать
Хула вăйне сăнаса.
Пӳлер хули тĕреклĕ —
Утса пырса кĕрес çук:
Юман хӳме тавралла —
Часах сиксе кĕрес çук.
Кĕтес сайран* тăваткăл,
Унта тулли чăмăр чул, —
Ларать çĕмрел курăнса
Хатĕр пеме-ывăтма.
Хӳме умне алтса тухнă
Çын каçайми канавсем,
Канав тулли тулса тăнă
«Аслă кӳлĕ» шывĕсем.
Вăрçаç-çапăçаç тутарсем,
Хирĕç тăраç чăвашсем.
Вилӳ-пĕтӳ ытла та
Шутсăр нумай хушăра.
Пăрлă çумăр çунă пек
Çĕмрел ывтать хăй чулне,
Кайăк-кĕшĕк вĕçнĕ пек
Ухă ярать сăннине.
Çӳхе хăма витĕнсе
Çитрĕ тутар шыв патне,
Хăйăр-тăпра тултарса
Каçрĕ тарăн канава.
Канав урлă каççассăн
Тĕрлĕ тĕслĕ ĕмелсем
Туртса пырса лартрĕçĕ
Хула хӳми çывăхне.
Тимĕр пуçлă пĕрене
Пырса-пырса сулланса
Кĕрĕс!.. кĕрĕс! тутарса
Çитсе çапать хӳмене.
Лектеркĕçпе лектерсе
Хӳме ватаç çаклатса,
Тваткăл çине тăрнапа
Хпартаç этем пуркăпа.
Персен-персен, ватсассăн
Ватнă çĕртен кĕмешкĕн
Йышлăн пыраç ушкăнпа
Каçса кĕме хулана.
Чăваш перет çĕмрелрен,
Чăваш пĕçерет шывпалан,
Чăваш касать хĕçпеле,
Чăваш чикет сăнăпа.
Тутар ӳкет чикĕнсе,
Тутар вилет пиçĕхсе,
Тăшман вилет купипе,
Çапах кĕрет вилĕме...
Куллен-кунах çаплалла
Тутар тăрать çапăçса,
Çитет килет кĕскелсе
«Аслă хула» ĕмĕрĕ.
Юлашки куна курасса
Чăваш халăх хăраса
Тата сатур тутарпа
Тытăнаççĕ çапăçма.
Куллен-кунах тутарсем
Хĕстереççĕ хулана.
Куллен-кунах чăвашсем
Çаралаççĕ йышăпа.
Куллен-кунах сулланса
«Ватан»* ватать хӳмене,
Нумай çĕртен ватнипе
Йышĕ çитмест сыхлама.
Çитес кунсен тăрăшне
Тăма хăват пĕтнипе
Ятлă çынсем пухăнса
Канаш тăваç хушăра.
Пухăнса ларнă канашра
Тавлашаççĕ тавлашса,
Мĕнле майпа хăтласса
Ĕмел шыраç хушăра.
Ватă тăрса каларĕ

* Кетессерен.

*Хӳме ватакан машина.

Тутар янă сăмаха,
Халăх шăппăн итлерĕ
Усал-тискер хыпара.
Тутар янă чăваша
Çапла хыпар каласа:
«Ӳсен-çӳрен вырьăхран
Туса пулнă пурлăхран,
Вĕçен-çӳрен кайăкран
Пулас-килес мулсенчен
Вуннăшĕнчен пĕрине
Леçсе тăма тутара.
Тунă мулран ыйтнипе
Сахал пулнă тутара.
Тĕрлĕ чунран вуннăшне
Татах ыйтнă каласа:
«Каччăсенчен, хĕрсенчен,
Ӳссе çитнĕ çынсенчен
Вуннăшĕнчен пĕрине
Парса тăрăр хушăран.
Мĕн ыйтнине парсассăн,
Хула уçса кӳртсессĕн
Сывă юлнă çыннисене
Сывлăх пама пулатпăр».
Çемçе, хăравçă чунлисем,
Хăраса чĕри хăпнисем
Хула уçса кӳртмешкĕн
Канаш панă хушăран.
Вăйлă, паттăр çамрăксем
Тата вăрçма калаççĕ,
Тутар мăшкăль пуличчен
Вилме хатĕр пулаççĕ.
Нумай тĕрлĕ калаçса
Тăнă пуху шавласа,
Анчах татса каласа
Паман мĕнле хăтласса.
Хула ватти итлесе
Ларнă пурне астуса.
Вара тăрса каланă
Çапла сăмах халăха:
«Хула хӳми юманран —
Нăкă, треклĕ йывăçран,
Анчах тата ватсассăн
Йăванса кайĕ ишĕлсе,
Тăшман кĕрĕ вутпала,
Тăшман кĕрĕ хĕçпеле,
Ачи-пăчи ваттине
Касса тухĕ вакласа.
Сывă юлнă çыннисем
Юлĕç тутар аллине,
Иртен ĕмĕр тăрăшпе
Асапланса пурнĕçĕ.
Ывăлне уйрĕç ашшĕнчен,
Амăшне уйрĕç хĕрĕнчен,
Упăшки курмĕ арăмне,
Арăм пĕлмĕ арçынне.
Хитре чăваш хĕрĕсене
Ĕмĕрлĕхе чурана
Илсе кайĕç хӳтерсе.
Çамрăк чăваш арăмсем,
Вутран-хĕçрен юлнисем,
Хĕрсемпеле пĕрлешсе
Кайĕç ĕмĕрлĕхе ĕçлĕхе.
Вăйлă, çамрăк çынсене
Лаша вырне хурĕçĕ,
Çапса-çурса хĕнĕçĕ
Çивчĕ, виткер пушăпа.
Тарас тăвас тесессĕн
Шăнăрсене касĕçĕ,
Чупас хăтлас тесессĕн
Ура тĕпне шăртлĕçĕ.
Эпир чура пуличчен,
Ĕмĕр асап куриччен
Вăрман йышĕ пулăпăр,
Ирĕк хальлĕн çӳрĕпĕр.
Каяр, анар, тăвансем,
Вăрттăн тухан шăтăка,
Кайса тухар вăрмана
Ыран çĕрле тĕттĕмре.
Тĕрлĕ çĕре сапаланса
Пурнăç туса пурăнса
Хамăр халăх тымарне
Пĕтермĕпĕр тĕнчере.
Тĕпĕ чĕрĕ пулсассăн,
Пурна киле — ĕмĕрте
Чăваш тăрĕ чĕрĕлсе».
Хула ватти сăмахĕ
Майлă пулчĕ пурне те,
Çитес каçра тĕттĕмре
Тухса кайма пулчĕçĕ.
Тĕттĕм анса сарăлчĕ
Пĕтĕм çĕре хупласа,
Ыйăх, канăç салатрĕ
Çĕршыв питне çывăртса.
Яра кунĕ çапăçса
Тутар халăх ывăнса,
Тавра хурал тăратса
Выртрĕ канса çывăрма.
Хула тавра хӳме тăрăх
Хурал тăрать,
çывăрмасть,

Паянхи çĕр ытларах
Сыхă тăрать, астăвать.
Мĕншĕн чăваш сыхлавсем
Ытлах сыхă тăраç-ши?
Мĕншĕн чăваш хуралсем
Ытла витĕр пăхаç-ши?
Паянхи çĕр чăвашсем
Ăсанăшаç хуларан,
Пўрте-çурта пăрахса
Каяç тухса вăрмана.
Кил-çуртсенче макăрса
Пухнă мулпа уйрăлчĕç,
Вăй çитнине çурăма
Çакса тухрĕç урама.
Виççĕн-тăваттăн пĕрлешсе
Пырса çитеç шăтăка,
Шăппăн утса тухаççĕ
Тарăн çырма хĕррине.
Çырма тăрăх тухрĕçĕ
Аслă çăра вăрмана —
Хура вăрман йышăнчĕ
Пирĕн чăваш халăхне.
Тутар-тăшман ирхине
Перет, çĕмрет çĕмрелпе,
Ухă сăнни вĕшлетет,
Çĕмрел чулĕ шăхăрать.
Хула енчен пени çук,
Чăваш халăх курăнмасть.
Тутар халăх тĕлĕнет,
Перет-перет те чарнать.
Тăрнапалан çĕкленсе
Хўме çине пăхрĕçĕ,
Чăваш халăх çуккипе
Татах ытла тĕлĕнчĕç.
Хула хўме тăррине
Пусма тăрăх хăпарчĕç,
Хăпарчĕçĕ те анчĕçĕ
Хўме тепĕр айккине.
Хула ларать çутăлса,
Чăваш мулне палăртса.
Тутар кĕчĕ шавласа,
Чăваш мулне тустарса.
Алне пыран алтăрпа
Пухрĕç мула тустарса,
Кирлĕ мара кĕрлетсе
Ячĕç вутпа çунтарса.
Мăкăрланать, ялкăшать
Хĕнпе пухнă тĕрлĕ мул.
Аслă Пўлер хулинчен
Юлать анчах шурă кĕл.

*И.З. Петров сăвăласа çырнă.*

## 7. УКСАХ ТИМĔР ПЎЛЕРЕ ИЛНИ

Уксах Тимĕр çарпала
Пўлер патне çитнĕ чух
Çар пуçлăхне пурне те
Пуçтарчĕ тет пĕр çĕре
Мĕнле мелпе Пўлере
Илессине пĕлтерме.
Уксах Тимĕре çавăн чух
Каларĕ тет пĕр пуçлăх:
«Пўлер хули пит чаплă,
Таçтан-таçтан сарăлнă,
Тем тарăнăш валсемпе
Йĕри-тавра çавăрнă.
Пўлер патши хушнипе
Валĕсене чăп тулли
Вăрттăн тимĕр хапхаран
Шыв кăларса тултарнă.
Çавă Пўлер хулинче
Пăлхар патши пурăнать,
Пур çĕрте те çар халăх
Вăрман пекех курăнать.
Улт-çич çухрăм хушшинче
Ыткăнаççĕ уххисем;
Çта пăхсан та курăнать
Пĕлĕт пек çын юхнисем.
Вăрçса илес тесессĕн
Пурте вилсе пĕтĕпĕр,
Тем пек чаплă çар ятне
Намăспа çеç витĕпĕр.
Акă кунта, пĕр ялта,
Пĕр пит чаплă асамăç —
Чăваш карчăк — пурăнать.
Çĕрле вĕççе çўрет тет
Мĕлке çине утланса,
Шуйттансемпе пĕр пулса,
Темĕн те пĕр хăтланса,
Çўçне-пуçне тустарса,
Çўле вĕççе хăпарса,
Пĕкĕрĕлсе, хутланса,

Уйăх çиме хăтланса.
Вупăр пулса пусать тет
Çывăракан çынсене;
Витĕр пĕлсе тăрать тет
Малашнехи кунсене.
Вĕри кĕлпе сапсассăн
Пичĕ-куçĕ хĕп-хĕрлĕ
Хăпаланса тухать тет.
Куçне вара алтăр пек
Чармакласа пăхать тет.
Унтан эрни-эрнипе
Урама та тухмасть тет.
Йытă пек те вĕрет тет,
Кашкăр пек те улать тет,
Шуйттансемпе туй туса,
Пĕçĕ çапса кулать тет.
Тĕнĕрен тухса каять тет,
Тĕнĕрен килсе кĕрет тет,
Кунĕпеле çыврать тет,
Çĕрĕпеле çӳрет тет.
Мĕнле мелпе Пӳлере
Илмеллине пĕлет тет.
Вăл карчăкран ăс ыйтма
Таçти çын та килет тет.
Эс те çавă карчăкран
Ăс ыйтса кил, Чăнпуçхан*,
Часрах кайса пĕл-халĕ,
Инçе мар тет ун ялĕ».
Çар пуçлăхĕн сăмахĕ
Каять ханăн кăмăлне.
Утланать те лашине,
Чуптарать вăл ун патне.
Карчăк патне çитет те,
Лаша çинчен анать те,
Пӳрт алăкне тапать те,
Хăпăл-хапăл васкаса
Кĕрсе каять хашкаса.
Карчăк çавă вăхăтра
Хуран çинчен вир пăтти
Чашкă çине антарса,
Чăнпуçхана ал парса,
Сарать сĕтел çиттине,
Кӳрсе лартать пăттине.
Сар вир пăтти варрине
Сар çупала куç хывать.
Унтан Уксах Тимĕре
Хăна туса чыс тăвать.
Уксах Тимĕр малтанах
Вир пăттине куçĕнчен
Чăн варринчен, çу çинчен,
Ăсса илсе хыпать те,
Карчăк ăна курсанах
Сехĕрленсе хăраса,
Уксах Тимĕре сăнаса
Каларĕ тет уйласа:
«Уксах Тимĕр мар-и эс?
Çавă çапла куçĕнчен
Пăтăсене çу çинчен
Ăсса илет тетчĕçĕ».
«Чăн калатăн эс, карчăк,
Чăнах эп çав пулатăп.
Хам çынсенчен илтнине
Ак эп сана калатăп:
Эс пит чаплă асамăç,
Сана пурте пĕлеççĕ,
Тĕнчере мĕн пуррине,
Усаллине-ыррине,
Курманнине-курнине,
Пулманнине-пулнине
Пĕлсе тăрать терĕçĕ.
Каласа пар эс мана:
Çакă Пӳлер хулине
Мĕнле мелпе илмелле?
Ăна илем тесессĕн
Манăн мĕн-мĕн пĕлмелле?
Чăннипеле каласан,
Санăн пуçу сыв юлĕ,
Улталаса каласан,
Пуçу халех çук пулĕ».
«Эс, Чăнпуçхан, пит чаплă,
Сан çар халăх хăватлă.
Çапах Пӳлер хулине
Илеес çук вăйпала.
Ăна илме пултаран
Акă çапла майпала:
Эсĕ йĕтем шăлтарса,
Серепесем хуртарса,
Унта тулă саптарса,
Кăвакарчăнсем тыттарса,
Урисене вĕсенне
Ăвпа кӳкĕрт çыхтарса,
Каçа хирĕç пурне те
Яртар вара вĕçтерсе.
Вĕсем пурте Пӳлере
Йăвисене каяççĕ,
Вара Пӳлер хулине
Пур тĕлтен те вут хыпĕ.
Çапла тусан, Чăнпуçхан,

* Чингисхан.

Часах илĕн Пӳлере».
Карчăк çапла каласан,
Уксах Тимĕр тав туса
Тухса каять васкаса
Вăл хушнине тумашкăн
Мĕн илтнине, пĕлнине
Вăл хăвăртрах тутарать,
Пĕтĕм Пӳлер хулине
Вĕлт кăна вут хыптарать.
Акă Пӳлер хулинче
Шăри-шари хусканать,
Пĕтĕм хула халăхĕ
Урлă-пирлĕ кускалать,
Патшасене çилленсе
Вăрçа-вăрçа ылханать,
Йĕрет, куççуль юхтарать,
Хăруш сăмахсем калать.

«Ах тур, тур, тур, пĕтрĕмĕр,
Ăçта кайса кĕрер-ши?
Ах, пĕтрĕмĕр, пĕтрĕмĕр,
Мĕскер тума пĕлер-ши?
Ыр вут ама, вутамăш,
Ху вуттуна ху чарсам-и.
Ырă турă, Пӳлĕхçĕ,
Пĕр ху анчах çăлсам-и.
Эх, мĕн çисе тăрăпăр?
Мĕн-мĕн кăна курăпăр?
Мĕнле майпа вилĕмрен
Чуна çăлса юлăпăр?
Ах, хăрушă, хăрушă.
Пурте вилсе пĕтĕпĕр,
Куçпа пăхма хăрушă,
Пĕтĕм тĕнче çĕмĕрлет.
Шăна-пăван вырăнне
Хисепĕ çук çын вилет.
Тăшман, тискер кайăк пек,
Никама та хĕрхенмест.
Урса кайнă пĕтĕмпех,
Ырри çинчен ним пĕлмест.
Капан-капан çын пуçĕ
Купаласа хăварать.
Пĕтĕм тĕнче халăхне
Усаллăхпе хăратать.
Эх, Пӳлерĕ, Пӳлерĕ
Часах куçран çухалчĕ.
Ав патша çурчĕ патне те
Вут уласа çывхарчĕ.
Патша хĕрĕсем хăраса
Миçĕт тăрне тарчĕçĕ,
Йĕре-йĕре юрласа
Куççуль тăкса ларчĕçĕ.
Унта та вут çитсессĕн
Шурă акăш пулчĕç те
Çичĕ тинĕс леш енне
Вĕçсе кайрĕç виççĕш те.
Çут кĕмĕл пек çунатсем
Йăлтлатса çеç юлчĕçĕ,
Пĕр куç уçса хупиччен
Курăнми те пулчĕçĕ.
Вĕçсе каяс умĕнчен
Акă çапла каларĕç:
«Эпĕр ĕнтĕ каятпăр
Çичĕ тинĕс леш енне,
Кунти пирĕн çĕршыва
Тăшман килсе тулнăран.
Ахăр самана çитнĕ чух
Каллех кунта килĕпĕр,
Ку хамăрăн çĕршыва
Хамăр алла илĕпĕр.
Пирĕн ялсем, хуласем
Кунта пурте пĕтеççĕ,
Хăшĕ Турă хушнипе
Çаплах çĕре путĕçĕ,
Тĕнче пĕтес умĕнчен
Вĕсем каллех тухĕçĕ,
Унччен кунти çĕршывра
Нумай юнсем юхĕçĕ.
Малти кая юлĕçĕ,
Кайри малта пулĕçĕ,
Эх, Пӳлерĕн ырлăхĕ
Ăçта кайса кĕчĕ-ши?
Ку тискер ĕç çĕр çинче
Хăçан кăна пĕтĕ-ши?
Эх, çĕршывĕ, çĕршывĕ,
Эх, Пӳлерĕ, Пӳлерĕ,
Пĕтĕм халăх ырлăхне
Тăшмансене пиллерĕ.
Пуянлăхне, ырлăхне
Пурте пĕлсе тăратчĕ,
Унăн чапне, хăватне
Пĕтĕм тĕнче куратчĕ.
Эх, Пӳлерĕ, Пӳлерĕ,
Хĕрĕх пин алăк тетчĕçĕ,
Таçти патша халăхĕсем
Суту-илӳ тăватчĕç.
Сĕт-турăхсем çăвĕпех
Йӳççе-çĕрсе ларатчĕç,
Çити-çитмен вăхăтра
Пĕрне-пĕри паратчĕç.

Кĕмĕл тĕслĕ шывсенче
Хурт пек пулă вĕретчĕ,
Вăрмансенче кайăк-кăш
Кĕтӳ-кĕтӳ çӳретчĕ.
Никам татса пĕтерми
Çырла-çимĕç пулатчĕ.
Татса пĕтмен паланĕ
Çуркуннене юлатчĕ.
Шурă мамăк калпаксем
Тăхăнатчĕç пуçсене,
Тăрна куç пек тетчĕçĕ
Çăлĕсенĕн куçсене.
Чакăртатса тăратчĕç
Ытарма çук сăрансем,
Симĕс пустав халат пек
Курăнатчĕç çарансем.
Ĕшнисенче чечексем
Вутăн-хĕмĕн çунатчĕç,
Хулисемпе ялĕсем
Питĕ хăвăрт хунатчĕç.
Урхамахсем хĕлĕпех
Утă-сĕлĕ çиетчĕç,
Тĕвисенĕн çисене
Хĕрĕхшер пăт тиетчĕç.
Улăхсенче хăмлисем
Автан пуç пек пулатчĕç,
Уявсенче çамрăксем
Çĕрĕн-кунĕн вылятчĕç.
Шĕшкисенче мăйрисем
Хăмла пекех курнатчĕç,
Сар кайăк пек савăнса
Пăлхар халăх пурнатчĕ.
Çут кĕмĕл пек çутăлса
Юхатчĕçĕ çăлĕсем,
Чĕрес-чĕрес ларатчĕç
Тăварлана çăвĕсем.
Хĕлĕн-çăвĕн пĕтместчĕ
Нӳхрепсенче шăрттансем,
Кăшăлтатса тăратчĕç
Çырмисенче çăрттансем.
Вĕççĕр-хĕрсĕр выртатчĕç
Çаранлăхсем, çеремсем;
Тем чул тыр-пул çĕртетчĕç
Пуянĕсем, сарансем*.
Юр пек шурă кĕпе-йĕм
Тăхăнатчĕç çисене,
Çĕр сывăрма пĕлмесĕр
Ĕçлетчĕçĕ ĕçсене.

Арман пĕвисене те
Утăпала пĕветчĕç,
Тырă-пулă тума та
Питĕ лайăх пĕлетчĕç.
Вырăссене выçă чух
Тырă парса тăратчĕç,
Пӳлер халăх хăватне
Вĕсем лайăх куратчĕç.
Пӳлерсене час-часах
Питĕ сăтăр тăватчĕç,
Хулисене, ялсене
Куççульпеле çăватчĕç.
Тăват-пилĕк лашапа
Аккалатчĕç анасем,
Чаплă Пахтат хулинчен
Килетчĕçĕ хăнасем.
Пĕр ĕçлеме тытăнсан
Çĕрĕн-кунĕн ĕçлетчĕç.
Ĕçкĕ ĕçме тытăнсан
Эрнипеле ĕçетчĕç.
Сим пылĕсем, сăрисем
Кăпăкланса йӳçетчĕç,
Çӳлте тарай тутрисем
Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçетчĕç.
Купăссене тытатчĕç,
Сĕркĕчипе сĕретчĕç,
Шăпчăк юрри евĕрлĕ
Юррисене сĕветчĕç.
Кĕслипеле тăмрине
Харăс тăрса калатчĕç,
Ватти-вĕтти-мĕнĕпех
Вăйăсене саватчĕç.
Таçти-таçти халăхсем
Киле-киле çӳретчĕç,
Мулкачсене мăйсенчен
Чучепеле пăватчĕç.
Çамрăкĕсем ушкăньпе
Акăшсем пек çӳретчĕç,
Пурçăнпала тĕрлесе
Тумтир илем кӳретчĕç.
Ырашĕсем çулленех
Пĕкĕ çӳллĕш ӳсетчĕç.
Хăна-вĕрле пур чухне
Ялан сим пыл ĕçетчĕç.
Урпасемпе пăрисем
Касса уçăлми пулатчĕç,
Тĕрлĕ тырă-пулăпа
Кĕлечĕсем тулатчĕç.
Туллине те, вирне те
Темĕн чухлĕ акатчĕç,

* Хыт çынсем — сарансем.

Вĕсем валли çулленех
Тем чул çерем çĕтетчĕç.
Çăва тухсан нумайăш
Хиртен яла кĕместчĕç.
Улт-çич çула çитмесĕр
Лашисене кӳлместчĕç.
Сĕлĕ çăнăх пĕçерсе
Тип тинкĕле тăватчĕç,
Хĕрĕсене вăрласа
Инкисене тăватчĕç.
Улăхсенче утисем
Кăвапаран ӳсетчĕç.
Шывĕсенче чăп-чăпăр
Кимĕ-сулă ишетчĕ.
Юр юрласа, ташласа
Тăватчĕçĕ юпасем*.
Ялтан яла çӳретчĕç
Ташлаттарса упасем.
Уша юпи çумĕнче
Çунатчĕçĕ çуртисем.
Çĕлĕксене хĕстерсе
Кĕлтăватчĕç хуçисем.
Пĕтĕм хурсем пĕçерсе
Чӳклемесем чӳклетчĕç,
Хай юпине çын чунĕ
Килет тесе пуплетчĕç.
Кĕрсен çĕлĕк силлесе
Кĕрӳ салам паратчĕ.
Кĕрӳ ларас вырăна
Хунĕ кĕççе саратчĕ.
Хĕскĕчĕ пек хĕстерчĕç
Тутарĕпе вырăсĕ —
Хытă çӳппи вырăнне
Пĕтрĕ Пăлхар пурнăçĕ.
Пĕтĕм Пӳлер çĕршывне
Хупăрласа илчĕçĕ,
Тĕнче пĕтнĕ еверлĕ
Çĕр кисретсе килчĕçĕ.
Унăн мĕнпур пурлăхне
Тусан пекех тустарчĕç,
Халăх юнне-куççульне
Çырма пекех юхтарчĕç.
Хуласене, ялсене
Вутпа персе пĕтерчĕç,
Мĕнпур лайăх юр-вара
Çар халăхне çитерчĕç.
Калама та хăрушă
Усал ĕçсем турĕçĕ,
Çĕр кăкрине юнпала,
Куççульпеле çурĕçĕ.
Пĕрне-пĕри сĕлĕ пек,
Çӳрерĕçĕ тураса,
Сехĕрленсе çех тăчĕ
Пĕтĕм тĕнче хăраса.
Пĕтĕм Пӳлер маттурĕ
Пĕр вăхăтсăр пĕтрĕçĕ.
Çитĕннĕ хĕр ипраçа
Чĕр(ĕ)лех çĕрпе витрĕçĕ.
Вĕсен çинчи тăпрана
«Хĕр ту» тесе ят пачĕç,
Уксах Тимĕр çийĕнчен
Ĕмĕр тискер ят ячĕç.
Вăрмансене тарни çех
Сывă тăрса юлчĕçĕ.
Ĕмĕр-ĕмĕр манас çук
Хăруш ĕçсем пулчĕçĕ.
Вут ами те чармарĕ,
Пӳлĕхçи те пӳлмерĕ,
Çĕр çийĕнчен çухалчĕ
Чăваш чаплă Пӳлерĕ.
Кĕслепе те купăспа
Мак(ă)ра кĕвви каласа
Патши тарчĕ хăраса,
Улах вырăн шыраса.
Пусри чухăн çĕлĕкне
Васканипе Пӳлере
Хире манса хăварчĕ,
Хай пуçне те вилĕмрен
Тарса анчах хăтарчĕ.
Халь те унăн ачисем
Çичĕ тинĕс леш енче
«Аттен чухăн çĕлĕкне
Кайса илесчĕ» тесе
Тăраççĕ тет йĕтесе**.

*Н.И.Шелепи сăвăласа çырнă.*

* Юпасем — юпа уйăхĕнчи (ноябрь) чӳксем.
** Йĕтесе — иккĕленсе.

# 8. ПАТТАЙ ХАН ПӐЛЕРЕ ИЛНИ

Çак хушăра Чăвашстанăн тухăçри чиккинче тискер кӳсесен пысăк çарĕ пуçтарăннă. Вĕсене никама та шеллемен, ăçта çитнĕ унта вĕçĕ-хĕррисĕр юн юхтаракан  Паттай хан ертсе пырать.

Кӳсесен асар-писер пысăк çарĕ Ылттăнпик патша ирттернĕ туй хыççăн савăнса çеç пурăнакан чăвашсем çине ним систермесĕр пырса тапă-нать те Аслă Пӳлер хулине пур енчен те çавăрса илет.

Хĕрĕх кун та хĕрĕх каç хушши Ылттăнпик  тискер тăшмана хирĕç хастаррăн кĕрешет. Унăн юнташĕсем пĕрин хыççăн тепри çĕре кĕреççĕ. Ылттăнпик те хаяр çапăçура пуçне хурать. Çакна курса Айраслу акăш пулать те Пӳлертен вĕçсе кайма тăрать, анчах тăшман çĕмренĕ ун пурнă-çне те татать. Вăл, хăйĕн упăшкине çуначĕсемпе хуплас тенĕн, ун вилли çине ӳкет.

Пĕтĕм Аслă Пӳлер вутра çунать. Паттай хан Ылттăнпикĕн çĕнтерӳ кӳрекен шурă парслă элемне ярса илет.

## 1

Хура сурăх кĕтĕвĕ
Хура çĕре хуратать,
Хура çăхан кĕтĕвĕ
Çӳл тӳпене хуратать.
Чăваш çĕрĕн чиккинче,
Шуçăм шывĕ леш енче,
Çичĕ ютăн эшкерĕ,
Паттай ханăн эшкерĕ.
Ылттăнпике çĕнтерме
Паттай хан халь шухăшлать,
Чăвашсене пĕтерме
Кӳсе-тăшман шухăшлать.
Пуш хирти хăйăр шутне
Шутласа та тухас çук.
Çакăнти тăшман шутне
Шутласа та тухас çук.

## Паттай хан

Эпир кунта çитнине,
Эпир пытанса ларнине
Ылттăнпик те пĕлмест,
Пĕр чăваш та пĕлмест.
Çакăнпа усă курар,
Чăвашсене тĕп тăвар.
Систермесĕр тапăнса кĕрсе,
Пĕлтермесĕр çавăрса илсе.

## Кӳсесем

Ылттăнпике тĕп тăватпăр,
Пӳлере йăлт çунтаратпăр.
Пин-пин вăйлă чура.
Хĕвел пичĕ пин-пин хăрхăм
Тытса илсе çапăçура
Хуçа пулатпăр хамăр!..

**2**

Çырма урлă каçса сĕм çĕрле,
Хĕвелтен пытанса кăнтăрла
Кӳсесен Пӳлере çитмелле,
Ним систермесĕр хупăрламалла.

**3**

Туй-çуй хыççăн савăнса,
Юп курса, телей курса
Чăваш халăх пурăнать,
Артак пурнăçшăн тăрать.
Çуркунне вăл сухалать,
Сӳрелет те тыр акать,
Кĕркунне пухса кĕртет,
Çĕнĕ ĕçкĕ ирттерет.
Вăрçă ырă халăха
Нихăçан та кирлĕ мар,
Вăл савмасть суялăха,
Ултавпа вăл туслă мар,
Çавăнпа ултав кĕтмест,
Тăшмансем çинчен пĕлмест.

**4**

Çĕленсем пек килсе тапăнчĕç тăшмансем,
Урнă кашкăр пек тапăнчĕç кӳсесем,
Пӳлере хупăрласа илчĕç,
Аслă хулана çавăрса илчĕç.
Ватти те вĕтти — маттур чăвашсем,
Ама çынсемпе чипер пикесем
Алла хĕç тытса,
Ухăсем тытса
Тăшмана хирĕç тухрĕçĕ вĕсем.
Кĕрешме тухрĕç Пӳлер çыннисем.
Чи малта патша —
Ылттăнпик патша,
Унпа юнашар — ун паттăрĕсем:
Ун паттрĕсем, маттур улăпсем
Чи малта Туйкач,

Пул, тăшман, мулкач!
Юнашар Сатлай,
Унра вăй нумай.
Поймантейпеле Атлаш юнашар.
Çапса çĕмĕрес тăшмана чăл-пар.
Нокай кĕрешет,
Çичĕ ют ӳкет,
Унтах Мăрсапай
Çĕмрен пек пĕрмай.
Маттуртан маттур паян Иштимер,
Ун пек паттăрпа мухтанать Пӳлер...

5

Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Чăвашсем тăшмана лăскаç.
Çитмĕл çичĕ кун та çитмĕл çичĕ каç
Чăвашсем тăшмана тĕп тăваç.
Анчах тăшмансен шучĕ çук...
Çичĕ ют уртин вĕçĕ çук...
Пĕр чăваш çине çиччĕн тăрăнать,
Кашни паттăра çиччĕн тапăнать.

6

## Аманнă нукер куççулĕ

Хурама та пĕкĕ, йĕс ункă
Хуçăлайрĕ вăрман варринче;
Хура куçлă çинçе пуçăм
Çухалайрĕ Пӳлер урамĕнче...

7

Паттăррăн кĕрешсе пуç хучĕ Иштимер,
Куççуль юхтарать пĕтĕм Пӳлер.
Ун хыççăн пуç хучĕ Мăрсапай
Пĕтерсе, тĕп туса тăшмана нумай.
Çитмĕл çичĕ тăшмана тĕп турĕ Нокай,
Хăй те вара пуç хучĕ Нокай.
Пойментейпе Акташ тăшмана тĕп туса
Каснă юман пек ӳкрĕç çĕр çине лаплатса.
Сатлай парăнмасть,
Сатлай пуç усмасть,
Çичĕ ют хăрать,
Çичĕ ют тарать;
Анчах та çĕмрен — вилĕмĕн сăнни
Пырса çапрĕ ăна — сив çĕлен сăнни.
Туйкачпа патша
Илчĕç юлташа

Икĕ алтаспан,
Çичĕ ют, халь тин эс сыхлан!
Тăшмана чăл-пар салатаç вĕсем,
Тăшмана кĕл пек сирпĕтеç вĕсем.
Анчах çичĕ ют сĕкĕнет çаплах,
Нĕрсĕр çичĕ ют тапăнать çаплах.
Çĕлен сăнни пек йĕс çĕмрен вĕçет,
Туйкача пырса вăл хулран лекет.
Паттăрăн алли çĕре усăнать.
Унтан вăл хăй те ӳкет-йăванать.
Ылттăнпик çаплах çапăçать пĕччен,
Тăшмана çаплах пĕтерет пĕччен.
Анчах патшана илчĕç çавăрса:
Сăнăпа чиксе, хĕçпеле çапса
Халтан ячĕçĕ,
Вăйне илчĕçĕ
Ах, тата кайран
Çичĕ ют-тăшман
Вĕлерес тесе
Çĕмренпе персе
Çич-сакăр çĕртен
Хулран-пилĕкрен
Йăлт амантрĕçĕ,
Йăлт пĕтерчĕçĕ...
Касса янă юман пек,
Ват улмуççи пек
Йăванчĕ çĕрелле маттур Ылттăнпик,
Ӳкрĕ çĕр çине паттăр Ылттăнпик...
Çакна курса хĕвел тарса пытанчĕ,
Çакна курса тӳпе те çӳлтен анчĕ.
Çума пуçларĕ çумăр,
Ик витререн шыв тăкнă пек,
Талай пуçланнă чухнехи пек
Çума пуçларĕ çумăр...

8

Упăшки йывăр аманнине,
Савнă мăшăрĕ çĕре ӳкнине
Курчĕ çӳлтен Айраслу,
Турултан курчĕ Айраслу,
Питĕ йывăррăн ахлатса илчĕ,
Унтан ик аллине çĕклесе,
Савнă мăшăрăма çăлам тесе
Çунат сулнă пек сулса илчĕ.
Шурă акăш пулчĕ Айраслу,
Вĕçсе кайма тăчĕ Айраслу.
Анчах сывлăша кăшт çеç çĕкленчĕ,
Тăшман сăнни ăна тăрăнчĕ.
Çуначĕсене сарса-ыткăнса,

Упăшки çине юратса пăхса
Ӳкрĕ çĕрелле Айраслу,
Ылттăнпик çине ӳкрĕ Айраслу.

9

Пĕтĕм Пӳлер вутра çунать.
Пĕтĕм Пӳлер кĕлленсе ванать.
Тăшман урса çӳрет,
Пӳлере ишсе кĕллентерет.
Паттай хан пуринчен те малта,
Ылттăнпик элемне вăл шырать кунта.
Тем чухлĕ тăшман вилли
Пӳлер урамĕ тулли.
Çакăнта выртать Ылттăнпик,
Ĕмĕрлĕх ыйхăпа çывăрать Ылттăнпик.
Ун умĕнче выртать чăваш элемĕ,
Ылттăнпикĕн çĕнтерӳ кӳрекен элемĕ.
Паттай хан элеме ярса тытать,
Вара тин унăн ăшĕ канать,
Çĕнтертĕм тесе мухтанать,
Нăхрапа кăшкăртма хушать.

10

## Куççульлĕ пайăт

Эх, çĕршывĕ, çĕршывĕ,
Ытла та пуян-çке!..
Эх, çĕршывĕ, çĕршывĕ,
Ытла та хитре-çке!..
Тăшман аллине çакланса,
Вутра кĕлленсе-çунса
Пĕтет-çке.
Сая каять-çке!..
Çак хитре те пуян чăваш элне,
Пĕтĕм чăваш элĕн ырлăхне,
Эх, Пӳлерĕм, Пӳлерĕм,
Тăшмансене пиллерĕн!..
Эх, Пӳлерĕм, Пӳлерĕм,
Мĕншĕн-ха, кала,
Кирлĕ таран, кала,
Хӳтĕленме пĕлмерĕн?..

11

## Ылттăнпике мухтав сăмахĕ

Ылттăнпик, Ылттăнпик,
Эсĕ — Чăваш шанчăкĕччĕ.

Ылттăнпик, Ылттăнпик,
Эсӗ — Чăваш питлӗхӗччӗ.
Мӗнле-ха аллу усăнчӗ?
Мӗнле-ха чӗрӳ пусăнчӗ?
Мӗнле вăй сана пултарчӗ ҫӗнтерме,
Мӗнле вăй сана пултарчӗ ӳкерме?
Ылттăнпик, Ылттăнпик,
Эсӗ — Чăваш арăсланӗччӗ.
Ылттăнпик, Ылттăнпик,
Эсӗ — Пӳлер шурă парсӗччӗ.
Мӗнле тăшман сана ҫӗнтерейрӗ,
Мӗнле тăшман сана пӗтерейрӗ?
Мӗншӗн хăвартăн пире тăлăха,
Мӗншӗн йӗртетӗн ҫапла халăха?
Ылттăнпик, Ылттăнпик,
Эсӗ — чăваш халăхӗн ҫăлăнăҫӗччӗ.
Ылттăнпик, Ылттăнпик,
Эсӗ — чăваш халăхӗн пуласлăхӗччӗ.
Хӗвел анса ларчӗ пирӗншӗн,
Ялкăш Ҫăлтăр сӳнчӗ пирӗншӗн.
Атăл шывӗ сана сиплӗх парать.
Чăваш ҫӗрӗ сана пурнăҫ парать,
Аслă тӳпе пуласлăх парать,
Пирӗн пилӗмӗр вăй парать.
Сиксе тăр ҫӗр ҫинчен,
Юнпа пӗвеннӗ чăваш ҫӗрӗ ҫинчен,
Тыт ҫӗнӗрен хӗҫне,
Ил аллуна питлӗхне,
Тăшмана хирӗҫ тух,
Мӗнпур ҫарна пух,
Хӳтӗле пире,
Ҫăлса хăвар Пӳлере.
Кӗтетпӗр,
Чӗнетпӗр.
Ылттăнпик, Ылттăнпик,
Часрах кил.
Ылттăнпик, Ылттăнпик,
Пар-ха пил.

*Юхма Мишши сăвăласа ҫырнă.*

## 9. ЭССЕПЕ

Эссепе ҫинчен ман Ялак асатте ачисене час-часах каласа кăтартнă сăмахӗпе атте те каласа кăтартатчӗ. Тата Ҫӗн Ӳселӗнче (Чистай уесӗ) ҫырăва пӗлмен пӗр ватă тутар, Хăҫнӗттин ятлă, унăн арăмӗ, чăваш, хăйӗнчен те ватăччӗ. Ҫавсем Эссепе ҫинчен час- часах каласатчӗҫ, вӗсем ăна чăваш пулнă тетчӗҫ. Тутар халăхӗ пуҫҫапса пурăнакан хасретсем (светтуйсем) пурте Эссепе ăрăвӗнчен пулнă теччӗҫӗ.

Ĕлĕк-авал пĕр ялта
Пурăннă тет Эссепе,
Пĕтĕм тĕнче халăхне
Тĕлĕнтерсе ăсĕпе.
Ун пĕр пичĕ çиййĕнче
Хĕвел тăнă выляса,
Тепĕр пичĕ çиййĕнче
Уйăх тăнă çутăлса.
Таçти-таçти халăхсем
Унтан пырса ăс ыйтнă,
Вăл пурне те ăс парса
Хăна туса ăсатнă.
Çил çунатлă çĕленпе
Çӳретчĕ тет вĕçтерсе,
Кашлаттарса-чашкăртса,
Йăл-ял çиçĕм çиçтерсе.
Хăй патшалăх таклине—
Чиккине те пĕлмен тет,
Ун пек чаплă ăслă çын
Çĕр çинче те пулман тет.
Кĕтӳ-кĕтӳ сурăхне
Кашкăрсемех кĕтнĕ тет,
Çитес тенĕ çĕре вăл
Çиçĕм пек час çитнĕ тет.
Вăл иртнĕ чух вăрмансем
Юлатчĕç тет кашласа,
Мĕнпур йывăç савăнса
Çын пек сиксе ташласа.
Мĕскер тăвас тесен те
Вăл калани пулнă тет.
Унăн выльăх-чĕрлĕхĕ
Пĕтĕм çĕре тулнă тет.
Ылтăн-кĕмĕл тесессĕн
Никам шутне пĕлмен тет,
Вăл пĕлменни çĕр çинче
Пĕр япала пулман тет.
Мĕнпур чĕр чун унпала
Калаçнă тет çын пекех;
Вăл пурне те курнă тет
Хăй куç умĕнчи пекех.
Унтан мĕнпур патшасем
Сехĕрленсе тăнă тет,
Çĕрĕн вĕçĕ хĕрринчен
Пуççапмашкăн пынă тет.
Акă пĕрре Эссепе
Питĕ çутă уяр кун
Хĕртсе хĕвел пăхнă чух
Шурă юр пек шап-шурă
Виçĕ вĕшле йыттипе,
Урхамахпе, уттипе,
Каять тухса сунара
Ухатара çӳреме.
Вăрман хĕрне çитнĕ чух
Сиксе тухать пĕр пĕлĕт.
Кăвакарса хуралса,
Кĕмсĕртетсе кĕрлесе,
Çиçĕм çиçсе ялтлатса,
Аçа çапса шартлатса,
Пĕтĕм çĕре чĕтретсе
Ярать çăмăр чреслетсе.
Ĕнтĕркесе йĕпенсе,
Тĕнсе кӳтсе шапарса,
Асапланса ахăрса
Пырать сĕнксе Эссепе—
Хăй ăçтине пĕлмесĕр,
Малалла мĕн пуласса
Асне-пилне илмесĕр.
Çав вăхăтра пĕр мулкач
Таçтан сиксе тухать те
Çăмха кусса кайнă пек
Сирпĕнет ун умĕнчен.
Эссепен виç вĕшлийĕ
Мулкач хыççăн вăшлатса,
Пĕр-пĕринчен ăмăртса
Ыткăнаççĕ нăйлатса.
Эссепе те хыçалтан,
Вĕшлисенчен юлмантан,
Урхамахпе ерипен
Хăй вĕшлисен йĕррипе
Ним пĕлмесĕр тĕлĕнсе,
Тĕлĕкри пек тĕлленсе,
Пырать чĕп пек хутланса
Темĕн те пĕр хăтланса.
Пырсан-пырсан вăл курать
Пĕр вĕшлийĕн виллине,
Мулкач хыççăн пынă чух
Вилсе ӳксе юлнине.
Шартах сикет ун чĕри
Хăйне темĕн пулнă пек,
Тискер кайăк тулласа
Вĕшли вилсе юлнă пек.

Кайсан-кайсан вăл татах
Курать тепĕр вĕшлине,
Юн çиййĕнче пĕр сассăр
Хусканмасăр выртнине.

Ах мĕн пулчĕ-ши тесе,
Сехĕрленсе хăраса,
Юлашкине шыраса

Татах каять малалла.
Ак пĕр вăхăт кайсассăн
Вăл виççĕмĕш вĕшлине,
Чăн юратнă йыттине,
Темиçене татăлса
Курать вилсе выртнине.

«Ах эпĕ те пĕтеп пуль
Ку хăрушă çул çинче,
Мĕн курĕ-ши манăн пуç?» —
Тет вăл хăйĕн ăшĕнче.

Усал çапла ман куçа
Мулкач пулса курăнчĕ
Пулĕ тесе вуласа,
Тĕрлĕ-мĕрле уйласа,
Вĕшлисемшĕн кулянса
Кĕрсе каять малалла,
Сĕм вăрмана шалалла.

Кĕнĕçемĕн кĕрет вăл
Çулпа вăрман ăшнелле,
Пырса тухать çап-çутă
Пĕр уçланка, ĕшнене.

Акă унта курать вăл
Хăй ĕмринче курманне,
Çĕр çийĕнче ниçта та
Нихăçан та пулманне.
Тем-тем тĕрлĕ чечексем
Йăл-ял çунса тăраççĕ;
Темĕн тĕрлĕ кайăксем
Ытарма çук юрлаççĕ.

Пĕтĕм ĕшне ялкăшса
Вутăн-хĕвĕн курăнать,
Чечек ăшне пытанса
Пĕр ылтăн çурт курăнать.
Ылтăн çуртăн таврашне
Тимĕр карта çавăрнă,
Тимĕр карта варринче
Тимĕр хапха, ик енче
Ик арăслан выртаççĕ.
Иккĕшне те майсенчен
Чукăн юпа çумĕнчен
Çыхнă тимĕр сăнчăрпа,
Çăраланă çăрапа.

Çиес килет Эссепен—
Нимĕн те çук çимелли;
Ылтăн çурта кĕресчĕ —
Ниçтан çул çук кĕмелли.
Тимĕр хапха патĕнче
Ик арăслан выртаççĕ,
Пачĕсене пыма çук,
Харăлтатса тăраççĕ.

Ăçта каяс, мĕн тăвас,
Ку пуç мĕскер курĕ-ши?
Çиме те çук, вăй та çук,
Ку чун ăçта тăрĕ-ши?
Ылтăн çурта кĕрсен те,
Кĕмесен те вилмелле.
Мĕн курнă пуç куртăрах,
Унта мĕн пур, пĕлмелле.
Ак ылтăн çурт патнелле
Урхамахне уттарать.

Хапха патне çитсессĕн
Саламатпа çаптарать.
Ик арăслан хушшинчен
Мĕнпур вăйпа сиктерет.

Урхамаха ик енчен
Арăслансем хăр та хар
Харăс иксе хыпаççĕ,
Шăри-шари çухăрса
Таткаласа çăтаççĕ.

Хăй кĕлте пек уткăнса
Вĕçсе ӳкет малалла,
Тимĕр карта ăшнелле,
Çурт патнелле шалалла.
Ак вăл иксе тăрать те,
Пăлтăр умне пырать те,
Ылтăн алăк хăлăпне
Аллисемпе тытать те,
Шанкăртатса кĕрлесе
Ылтăн алăк хăй тĕллĕн
Ик еннелле уçăлать;
Пăлтăр умĕ хĕвел пек
Йăлтăртатса çутăлать.

Çав вăхăтра ун патне
Шур акăш пек шап-шурă,
Шурă пурçăн кĕпепе,
Пан улми пек пичĕпе
Уйăх пекех çутăлса,
Тутисемпе йăл кулса
Пĕр сарă хĕр тухать те,

Эссепене алинчен
Вĕçсе пырса тытать те
Илсе кĕрет пӳртелле,
Хĕрĕх те пĕр хĕр пĕрле
Пурăнакан пӳлĕме.

Ылтăн çуртра чăп тулли
Лĕпĕш пек хĕр вĕлкĕшет,
Лара-тăра пĕлмесĕр
Урлă-пирлĕ варкăшать.

Ăш хĕвел пек ăшăнса
Тăраç пичĕ-куçĕсем.
Шур кăлкан пек çап-çутă
Ялкăшаççĕ çӳçĕсем.
Ахах пĕрчи евĕрлĕ,
Пурин те куç шăрçисем.
Йăл-йăл кулса тăраççĕ
Çемçе, тутлă тутисем.
Хăлхисенчи хăлханки —
Ылтăн-кĕмĕл ярапи;
Тарай тутри енчĕкĕ —
Пурте пурçăн шерепи,
Пӳрнисенче чăп тулли
Мерчен куçлă çĕррисем,
Кĕпи арки чĕнтĕрсем
Мăкăнь чечек тĕррисем.
Вырăнĕсем пурин те —

Пăрса тунă прушин те
Йăлт-ялт сиксе тăраççĕ.
Тĕрлĕ чечек хушшинче
Сыр кăмпи пек хăпарса
Тăрать тӳшек-çăтарĕ,
Уша юпи çумĕнче
Ĕмĕр сӳнми çуртасем;
Кантăксене пурне те
Карнă шурă чаршавсем;
Сĕтеллисем çийĕнче
Ĕмĕр курман юр-варсем;
Хăй тĕллĕнех уçăлса
Хупăнаççĕ алăксем;
Вутăн-хĕвĕн çутăлса
Вĕçеççĕ вĕт кайăксем;
Хĕрсен чечен сассипе
Пӳрт купăс пек янăрать.
Ăнтан кайса Эссепе
Сехĕрленсе çех тăрать.

Хĕрсем пурте тĕлĕнсе
Эссепене пăхаççĕ,
Тĕпелелле ирттерме
Ун валли çул уçаççĕ.

Унтан ăна йăвашшăн,
Çу пек çемçен, ачашшăн,
Шăнкăрч чĕлхи сассипе,
Шăпчăк юрри-сăввипе
Пурте харăс каласа
Ирт, ирт кунта, ирт тесе,
Тĕпелелле ирттерсе
Хăйне уйрăм пӳлĕме
Пĕр-пĕчченçи хĕр патне
Илсе кĕрсе каяççĕ.

Унта пырса кĕрсенех
Пӳлĕм алăк хăй тĕллĕн
Шăнкăртатса хупăнать.

Эссепепе хĕр анчах
Уйрăм тăрса юлаççĕ,
Куçран куça пĕр-пĕрне
Ăшшăн-ăшшăн пăхаççĕ.
Унтан вĕсем иккĕшĕ
Тем-тем тĕслĕ апатсем
Пĕрле ĕçсе çиеççĕ.
Пĕрне-пĕри юратса
Ыталаса чуптуса,
Иккĕш выртса çывраççĕ.
Ылтăн çуртăн тăрринчех
Хĕвел тухать çĕкленсе,
Леш тĕнчене кайнă пек
Тĕлĕк курса тĕлленсе
Ăйхисенчен вăрансан
Шур супăньпе çăвăнса,
Шур тутăрпа шăлăнса
Икĕ ылтăн тенкелпе
Хире-хирĕç лараççĕ,
Тĕрлĕ-мĕрлĕ сăмахсем
Тин хускатса яраççĕ.

Х ĕ р

Эссепе, эс ăсупа
Тĕнче тĕлĕнтеретĕн,
Хăватупа, вăюпа
Çĕре кисрентеретĕн.
Кала-халĕ эс мана:
Мĕн-мĕн куртăн куçупа,
Мĕскер-мĕскер уйлатăн
Шухăшупа, пуçупа.

Епле килтĕн эс кунта —
Çакă пирĕн хĕр çуртне,
Çут тĕнчере нихçан та
Курман-илтмен никам та
Хĕрĕх те пĕр хĕр патне.

Эссепе

Манăн халĕ ăн пĕтнĕ,
Эп нимĕн те пĕлместĕп,
Те тĕлĕкре, те чăнах
Тăрап санăн умăнта,
Ăçтан килсе ӳкнĕ-ши
Сирĕн пата эп кунта?

Хĕр

Ку çурт пирĕн хĕр çурчĕ.
Кунта качча каймасăр
Вилнĕ хĕрсен чунĕсем
Ĕмĕр-ĕмĕр тăраççĕ.
Çулла хĕвел ăшшинче
Лĕпĕш пулса вĕçеççĕ,
Мĕнпур хитре чечексен
Пылĕсене ĕçеççĕ.
Тĕнчере мĕн пуррине,
Мĕнле ĕçсем пулнине
Пĕтĕмпеле сисеççĕ.
Çимĕк кунĕ çитсессĕн
Пурте тухса çӳреççĕ,
Ăçта çитнĕ вăл тĕлте
Çĕре илем кӳреççĕ.
Эп тĕнчери чи чаплă
Асаймăç хĕр пулатăп,
Мĕнпур вилнĕ хĕр чунне
Патша пулса тăратăп.
Пĕр асаймăç карчăкăн
Эсĕ пĕртен-пĕр хĕрне
Пит юратса пурăнан,
Ăна халĕ ху валли
Качча илсе ярасшăн.
Хĕр пит сана пырасшăн,
Амăшĕ те парасшăн.
Халь эс кунта тăнине
Пĕлсе тăрать вăл карчăк,
Вут çийĕнчи çĕлен пек
Ăшаланать вăл саншăн.
Анчах эпĕ унтан та
Хăватлăрах асаймăç,
Мана пĕтĕм çĕр çинче
Ĕмĕр-ĕмĕр асăнĕç.

Мĕскер тăвас тесен те —
Пултаратăп тумашкăн,
Кăмăл турăм эп халĕ
Сана качча пымашкăн.
Санăн мăшру пуласшăн
Турăм эпĕ ку ĕçе,
Сана хытă юратса,
Çавă хĕртен кĕвĕçсе.
Виçĕ кунтан туйăра
Тăвас тесе тăнă чух
Эсĕ виçĕ йыттупа,
Урхамахна утланса,
Кайрăн тухса вăрмана
Ухатара çӳреме.
Акă эп çав вăхăтра
Хура пĕлĕт кăларса,
Аслатипе кĕрлесе,
Тăвăл пулса уласа,
Çиçĕм пулса выляса,
Аçа çапса шартлатса,
Пĕтĕм çĕре чĕтретсе
Ятăм çăмăр чреслетсе.
Шанкăр уяр çут куна
Илчĕ тĕттĕм хупласа.
Эс пыратăн шапарса
Урхамахна утланса,
Ылтăн йĕнер çийĕнче
Чăх чĕппи пек хутланса.
Çакă пӳртри пĕр хĕре
Мулкач туса ятăм та,
Йыттусене вăл санне
Виççĕшне те пĕтерчĕ.
Эсĕ килтен тухни те
Паян ĕнтĕ хĕрĕх кун;
Сана халĕ çухатнă,
Пур çĕрте те шыраççĕ,
Тискер кайăк çинĕ пуль
Тесе питĕ хăраççĕ.
Акă пăх-ха кантăкран,
Мĕн куратăн эс унтан?
Вăхăт çитнĕ, Эссепе,
Пире кайма халь кунтан...
Шур чаршавне туртать те,
Эссепене пăхтарать.
Пĕр куç уçса хупиччен
Тĕнчере мĕн пуррине
Вăл пурне те кăтартать.
Эссепе пит тĕлĕнет
Епле унăн килĕ-çурчĕ
Инçе те мар хĕвел пек

Ялтăртатса ларнинчен.
Унтан хытă савăнса,
Питĕ чаплă туй туса,
Хĕрпе иккĕш пĕрлешсе—
Вун ик пуçлă аçтакă
Çĕлен çине юнашар
Умлă-хыçлă утланса
Таврăнаççĕ чашкăртса,
Çиçĕм пек вут кăларса,
Çил-тăвăлсем хускатса.
Çав Эссепе йăхĕнчен
Пулнă теççĕ хасретсем,
Тутар халăх пуççапса
Пурăнакан кĕтретсем.
Эссепене тутарсем
Чăваш пулнă тееççĕ.
Çакă сăмахсемпеле
Халлапсем те пĕтеççĕ.

*Н.И.Шелепи сăвăласа çырнă.*

## 10. ТУТАР ТЫТКĂНĔ

Ĕлĕк чăвашсене пурăнма пит йывăр пулнă. Элле пĕр тутарсем, элле пĕр нухайсем, элле тата калмăксем-темĕнсем, вырăсĕ-мĕнĕ чăвашсене çаратса пурăннă. Мул-тавар анчах мар, çыннисене те, выльăхсем пек, кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе тыткăна хăвала-хăвала кайнă тет. Хĕр упраçсене вăрла-вăрла кайса тутара сутнă тет. Чăваш хĕрĕсем ĕçчен пулнă вĕсем, чипер пулнă вĕсем. Çампа тутар пуянĕсем валли вăрланă вĕсене. Тутар вăл виç-тăват маткапа пурăннă ĕлĕк. Ваттисем пит кала-кала паратчĕç ĕлĕк хĕрсене вăрланине.

Пĕр хĕр каясшăн пулмасăр питĕ хытă тăнă тет те, вара çав хĕре лаша хӳринчен кăкарса илсе кайнă тет.

Пĕрре çапла тутарсем пĕр яла тĕппи-йĕрĕпех çаратса-çунтарса тухса кайнă пулать. Ватти-вĕтти-мĕнĕпех чурана хăваласа кайнă тет. Лере çитсен тутарсем пĕр-пĕрин хушшинче çынсене пайла пуçланă: «Ку — сана, ку — мана, ак ку ак — лешне», — тесе çынсене уйăраççĕ тет. Пурне те уйăрса пĕтернĕ тет, пĕр ват карчăк юлчĕ тет. Никам та илесшĕн мар тет ку карчăка. Вара пĕр тутар: «Кĕнчеле арлама юрать», — тесе хăй патне илчĕ тет. Ача пăхса, кĕнчеле арласа, кил терĕш пуçтаркаласа пурăнкалать çапла карчăк. Çав тутарăн çичĕ маткинчен пĕри çак карчăкăн хĕрĕ пулнă. Карчăк палласа илет хăй хĕрне. Палласа илессе палласа илет те калама хăрать. Вара ача сиктернĕ чух пĕрмай çапла юрланă тет:

Папа ту, паппа ту,
Мана çăмăллăх ту.
Сан аçу — усал тутар,
Аçу килсен ятлаçать,
Çӳçрен-пуçран тустарать.
Аму килсен йăпатать,
Ăшшăн-ăшшăн калаçать.
Санăн аму — манăн хĕр,
Эпĕ санăн кукаму:
Тутар ачи пулсан та,
Эпĕ сана юратап,
Лăпăс-лăпăс ачашлап,
Няння-паппа тутарап.
Уттю пур, уттю пур,
Хурама хуппи сăпки пур,
Хура тутар аçу пур,
Сарă хĕрĕ аму пур —
Хура тутар килĕнче
Хурлăх курса пурăнать.
Хурлăх куран хĕрĕмĕн
Кăкри çинче минни пур,
Алли çинче сулли пур,
Сулли çинче çыру пур,
Çыру çинче ячĕ пур —
Çантан паллап хĕрĕме.
Паппа ту, паппа ту,
Эп каланине асту:
Ачам, санăн амуна

Вун çиччĕре вăрларĕç.
Çĕртен-шывран уйăрчĕç,
Ялтан-йышран сивĕтрĕç,
Çичĕ юта кăларчĕç,
Тутара качча пачĕç...

Аçу тутар пулсан та,
Аму санăн манăн хĕр.
Çампа сана юратап,
Лăпăс-лăпăс ачашлап,
Няння-паппа тутарап...

Аллипе кĕнчеле арласа, урипе сăпка сиктерсе ху-у-урлăхлăн юрласа ларать тет карчăк. Ку карчăк çапла пит хурланса юрланине тутар майрисем илтеççĕ те каласа параççĕ çак карчăк хĕрне.

— Сан ачуна пăхакан чăваш карчăкĕ пит хурлăхлă юрлать, мĕн каласа юрлать вăл, итлесе пăх-ха,—теççĕ.

Ку хĕрĕ карчăк юрланине вăрттăн итлесе тăрать. Итлесе тăрать-тăрать те хăйĕн амăшне палласа илет. Хайхи ыталашса-чуптуса, макрашса-çухăрашса пĕтеççĕ кусем. Пĕр-пĕрне çакăнта мĕнле килсе лекнине каласа параççĕ эречкипе*. Хĕрĕ амăшне палласа илейменшĕн пит кулянать, амăшне начар усранăшăн макăрать. Унтан хай карчăка ылтăн-кĕмĕлсем, мул-таварсем кăтартма пуçлать. Амăшне ăна та, кăна та сĕнет:

— Мĕне чун туртать, çавна ил, — тет.

Карчăк ним те илмест-ха. Пăхса çӳресен-çӳресен пĕр йăм хура урхамах курать çак хĕр амăшĕ. Вара çав урхамах ута ыйтса илет хĕрĕнчен. Вара хĕрĕпе мăнучкине ыталаса чуптăвать те — урхамах ута утланса яра парать килнелле. Тутарсем лаша хӳри вĕçне те курса юлайман тет. Вăт çапла тутар тыткăнĕнчен тарнă тет вара чăваш карчăкĕ.

*Н.И.Егоров çырса илнĕ.*

## 11. ХУСАНА ИЛНИ

Иоанн Василич патăша
Мускавра çарă пухать те,
Кимĕсем çине лараççĕ те
Атăл тăрăх анаталла
Анаççĕ юхса.
Чипер пынă çĕртенех
Хусана та аякка хăвармарĕçĕ.
Чакурски тĕлне çитсен
Кимĕсем тапах чарăннă пулать.
Патăша шалт аптрать:
Çанталăк тĕтĕре тăрать,
Кимĕсем вырăнтан сикмеççĕ.
Иоанн Грознăй патăша
Ыйтать çармăссенчен,
чăвашсенчен:
— Мĕн амак пур кунта?
— Кунта Хĕрлĕ Çыр киремечĕ
пит хаяр,
Çавă тытнă пулĕ сире, —
Теççĕ лешсем патăшана.

Патăша ыйтнă киреметрен
çăлăнма.
Тупăса панă чăвашсем
Тупа ятлă юмăçа.
Юмăççă хушнă патăшана
Шурă лашапа чӳк тума.
Патăша юмăç юмахĕне
ĕненет те,
Атăл тăрăх анаталла
Кимĕсемпе салтаксем
Ярлаттараççĕ Хусаналла.
Çитĕсе тăнă Хусана
Тутар патăшана пĕтерме.
Тутар патăша хăранипе
Хупăннă хăйĕн пысăк
керепеççĕнне.
Вырăс патăша салтакĕсем
Ниçтан кĕме аптраса
Пуçланă шăтăк алтмашкăн
Керепеççĕ айнелле.
Тăприне шăтăкран салтаксем
Карттуспа çĕкленĕ тулалла.

* Йĕркипе.

Шăтăк алтса çитерсен
Кӳртеççĕ лартаççĕ тар пичкисем.
Тар пичкисем тăррине
Лартăса тухнă çуртасем.
Пĕрĕ салтака хушать патăша
Вут тивертме.
Салтак çуртана çутать те
Кĕрĕсе каять шăтăка
Çуртасене çутăма.
Çутăса тухать хăраса.
Шăтăкран тухăса тăчĕ салтак,
Иоанн Грознăй патша
Ыйтать салтакран:
— Çуртасене çутăрăн-а? — тет.
— Çутăрăм, — тет.
Тула çутăнă çурта
çунса пĕтĕнĕ тет те,
Çуртасене çутман пулĕ тесе
Патăша çилленнĕ салтака.
Патша хăйĕн хĕççине
Туртса кăларатĕ
Салтак пуçне касса татма.
Патша хĕççине çĕклерĕ,
Салтак патшаран
Виçĕ минут вăхăт ыйтать.
Виçĕ минут иртĕрĕ —
Тата нимĕн сас-хура та çук.
Патша хĕçĕне çĕкленĕ те,
Салтак пуçне касса татнă та —
Тар пичкисем
Керепеçе ывăтса янă —
Салатса янă.
Тутар патша пашĕне* тăррине
Улăхса тăнă та
Иоанн Грознăй патшана
Кутĕне çапасса кăтартнă.
Иоанн Грознăй пашĕне
тăрринчи
Тутар патшана тупă пенĕ —
Шĕлепки хывăнса ӳкĕнĕ,
Хăй шурă акăш пулса,
Мăйне малалла тăсса
Туркă çĕрĕне кайнă ларнă тет.
Тутар патша çурт вырăнне
Çутă кӳлĕ пулса юлнă —
Капан кӳлĕ.
Тутар патша улăхса ларнă
пашĕне
Халь те ларать керепеçре,
Тепĕр майлă каласан —
«Суюмбекина башня».
Пашне çӳллĕшĕ
Вăтăр пилĕк пичатнăй теççĕ.
Улăхăра ларать памятник —
Хĕçпе каснă салтак çинче
Теççĕ ватă çынăсем.

*И. Матвеев каласа панă.*

## 12. ТĂЛПАЙ

*(Чăваш халăхĕн халапĕ тăрăх)*

Мускав патши, çамрăк Йăван,
Нумай шухăшласа ларман:
Тухнă Хусан патне çитме,
Тутарсенчен ăна илме.
Çĕр те алă пинлĕ çарне
Илсе килнĕ Чăваш çĕрне.
Ыйтнă çара çимĕç пама,
Чăваш çарпе те пулăшма.
Чăваш çарĕ пулса тăнă,
Утаманĕ Тăлпай пулнă.
Кайран çавă чăваш çарне
Илсе пынă Хусан патне.
Булак** хыçне вырнаçтарнă,
Касăм*** çарĕн кӳрши тунă.
Йăван патне пĕтĕм çара
Вырнаçтарнă Хусан тавра.
Çапла тутар пуç хулинне
Ярса тытнă пулать пырне.
Пуçланă тупăпа пеме,
Тутар çарне хĕсĕрлеме.
Но Хусанне те илесси
Пулман пĕрре çех вĕресси.

* Башня.
** Капан кӳллипе Хусан çырмине çыхăнтаракан тарăн мар çырма.
*** Касăм патшин Шах-Алин çарĕн.

Хула хӳми çирĕп пулнă:
Йăван çарĕ вăрах тăнă.
Çитнĕ йĕпе кĕр кунĕсем,
Час-часах йĕнĕ пĕлĕтсем.
Йăван патша пăшăрханнă,
Ĕç тухмасран вăл хăранă.
Пухнă хай çар пуçĕсене,
Чĕнтернĕ час инженерне,
Çарпа килнĕ англичана*,
Бутлер хушаматлă çынна.
Патша ыйтнă çавă çынран,
Ютран кӳнĕ çав ăстаран:
«Мĕншĕн вăрах çав тăратпăр,
Хулана йышăнаймастпăр?»
— «Аслă патша! — тет англичан, —
Капла илеймĕр нихăçан.
Çĕмрес пулать хӳмисене
Тар пичкисем лартса айне.
Тарлă пичкисене лартма
Кирлĕ пулать шăтăк чавма.
Мĕн тăршшĕ шăтăк пулмалла —
Çавна тĕрĕс шутламалла.
Анчах кам пĕлĕ виçине?
Кам çитĕ çав хӳме патне?
Каяканĕ таврăнаймĕ,
Тутарсенчен пытанаймĕ».
Патша хушнă ыйтса пĕлме,
Шиксĕр çынна тупса килме.
Çук, тупăнман ун пек çынни,
Виçме кайма хавас пулни.
Патша сăнĕ салхуланнă
Чĕрипеле вăл хурланнă...

* * *

Çав вăхăтра чăваш çарĕ
Нуша ăшне кĕрсе кайрĕ:
Çуккă-мĕн ăшă тумтирсем,
Начар апат-çимĕçсем.
Çар çыннисем ӳпкелеççĕ,
Пĕр-пĕринпе пуплешеççĕ:
«Ку вăрçă кайрĕ вăраха,
Капла йывăр пур халăха.
Чарăнтăрччĕ вăл хăвăртрах,
Киле таврăнасчĕ часрах».
Тăлпай илтнĕ Шах-Алинчен
Мĕнле канаш пулни çинчен.
Мăн шухăшра маттур Тăлпай:
«Чăнах виçме çуккă-ши май?»
Ирпе кĕчĕ Али патне:
Пĕлтерчĕ хăйĕн шухăшне.
Ирĕк ыйтрĕ виçме кайма,
Çав хушăра пеме чарма.
Али Йăванпа сăмахланă —
Леш Тăлпая ирĕк панă...
Татах çĕн кун. Вырăс енче
Шăпах пулчĕ Булак çинче.
Тутар çарсем шалт тĕлĕннĕ:
«Вырăс вăрçма пăрахать», — тенĕ.
Вĕсем те чарăннă пеме,
Тăрăшаççĕ мĕнне пĕлме.
Çав хушăра курах кайрĕç,
Пурте харăс асăрхарĕç:
Булак енчен пĕр çын пырать,
Хӳме патнелле вăл утать.
Çук ун хĕç те, пăшалĕ те,
Çук аллинче ун уххи те.
Пырать-мĕн çынĕ юрласа,
Кĕсле кĕвĕ майпе каласа.
Юрлать чуна витермелле,
Чĕре сăвне ирĕлтермелле:
Пӳлер пĕтни çинчен юрлать,
Юррипеле хурлантарать.
Юрлать пĕрех хут чăвашла,
Юрлать тепĕр хут тутарла.
Тутарĕсем йăлт тĕлĕннĕ,
Хытса кайсах-мĕн итленĕ.
Ухăсемпе те пемеççĕ —
Маттур кĕслеçе хисеплеççĕ.
Çынĕ пирĕн Тăлпай пулнă.
Ăна-мĕн çапла чыс тунă.
Тăлпай çитрĕ хӳме патне,
Татах юрларĕ юррине,
Янраттарчĕ хăй кĕслине —
Хуçрĕ тутарăн кăмăлне:
Хăш-пĕрисем макăраççĕ,
Куççульсене шăлкалаççĕ.
Тăлпай ак утрĕ каялла,
Кайрĕ вăл кăнтăрланалла,
Анчах ахаль мар вăл утать —
Миçе утăмне вăл сăвать.
Ак таврăнчĕ Али патне,
Каларĕ хăй мĕн тунине.
Ăна ĕнтĕ пит мухтарĕç:
«Эсĕ чăнах маттур», — терĕç.
Час Тăлпая Йăван патша

* Хăш статьясен авторĕсем çав инженер нимĕç пулнă теççĕ.

Чĕнтернĕ аслă канаша.
Унран ыйтнă хӳме патне
Çитме мĕн чухлĕ пулнине.
Тăлпай чăннине пĕлтернĕ:
Çавăн чухлĕ утас тенĕ.
Ун утăмне виçсе пăхнă,
Хăйсен виçипе шутланă...
Пилĕк талăк шăтăкĕнче
Пулчĕç çынсем çĕр айĕнче.
Шăтăк чавса та пĕтерчĕç,
Хӳме тĕлне ав çитерчĕç.
Леш вĕçĕнче нӯхреп турĕç,
Унта тар пичкисем лартрĕç.
Йывăç çăвпе пичкисене
Çуллантарчĕçĕ кашнине.
Кашнин çине çурта лартрĕç,
Харăс пурне те кĕç çутрĕç,
Çынсем тухрĕç шăтăкĕнчен
Пичкисене вут тивиччен.
Йăван патшан чатринче те
Çурта çуннă шантал çинче.
Акă çурта çунса пĕтрĕ.
«Мĕншĕн çуккă?» —
патша ыйтрĕ.
Чĕнтернĕ вăл англичана
Тата Тăлпай утамана.
Хай çуртана вăл кăтартрĕ:
«Куратăр-и?» — тесе ыйтрĕ.
«Аслă патша! — Тăлпай калать, —
Унта çурта хуллен çунать».
«Ку чăн. Анчах та ан манăр:
Ĕç тухмасан ответ тытăр!»
Çапла патшийĕ каларĕ,
Сăмахĕпе вăл хăратрĕ.
Вăхăт нумай та мар иртрĕ —
Сасартăк çĕр хыт чĕтрерĕ,
Умлă-хыçлă сас кĕрлерĕ,
Вăл сывлăша хыт силлерĕ.
Хусан хулийĕн тĕлĕнче
Палт-палт тĕтĕмĕ çĕкленчĕ,
Пĕрле этем, йывăç, тăпра
Ывăткăнчĕç пĕр самантра.
Хусан хулийĕн пĕр пайĕ
(Хулан шанчăклă сыхлавĕ)
Сасартăк ав çуккă пулчĕ,
Уçă хапха пулса юлчĕ.
Йăван патша хушу панă:
Хăвăрт «пролом» тума хушнă.
Чăвашсене вăл каларĕ:
«Чăваш çулне сыхлăр!» — терĕ.
Хусан хулийĕн ăшĕнче,
Пысăк çуртсен çывăхĕнче,
Пулчĕ пит вăйлă çапăçу:
Пулмарĕ мирлĕ çураçу.
Туртса илчĕç кĕç хан çуртне:
Пролом çитрĕ хăйĕн вĕçне.
Хусан çыньсем хăйсен ханне
Пачĕç Йăванăн аллине.
Ачасемпе хĕрарăмсем
Пулчĕç тыткăнри çынсем,
Çарта пулнă арçынсене
Касса тăкрĕç лекнисене.
Пайтах çын пĕтрĕ çав кунне —
Юнĕ юхрĕ шыв вырăнне.
Тăлпай чăвашсен çарĕпе
Пулчĕ çавă кун хуралта:
Хусан — Ăслан çулне куньпе
Сыхларĕ шурлă вырăнта...
Вăрçă пĕтсен çар çыньсене
Хушнă кайма килĕсене.
Тăлпай та хăй çыннисемпе
Тавăрăннă Паттăр яльне.
Курăнăçнă кил-йышĕпе,
Канлĕх кӳнĕ тăваньсене.
Унăн ĕмĕтленни çитнĕ:
Хаяр вăрçă çапах пĕтнĕ.

*Вантер Курийĕ (Г.И.Комиссаров) сăвăласа çырнă.*

## 13. УЛĂПСЕМ

Те чăнах ку, те юмах,
Пулнă тет вăл авалах:
Аслă Атăл хĕрринче
Тĕрлĕ халăх хуниччен,
Ирĕк çĕрти уйсенче
Çуртсем, ялсем курăниччен,
Хусан хули лариччен,
Мускав чапĕ сарличчен,
Инçе-инçе, пĕр çĕрте,
Çут çеçен хир варринче
Пысăк чатăр ларнă тет.
Ларнă тет ту çумĕнче.
Аслă пулнă ку чатăр:
Урлăш-пирлĕш — пин хăлаç,

Ҫӳллӗш — пӗлӗт ҫӳллӗшех.
Курӑннӑ вӑл сӑрт пекех.
Унта капмар пӑхаттир—
Ахрат улӑп пурӑннӑ тет;
Чиксӗр вӑй та хыт ӳт-тир
Ҫак Ахратӑн пулнӑ тет.
Пурӑннӑ вӑл пӗччен мар—
Ватӑ амӑшӗпеле,
Тырӑ-пулӑ туса мар,—
Выльӑх кӗтӗвӗпеле.
Ахрат пӗвӗ ачаллах
Иртнӗ вӑрман пӗвӗнчен,
Ӑсне-халне ҫамрӑклах
Палӑртнӑ вӑл пур енчен.
Йышлӑ выльӑх-чӗрлӗхрен
Мӑн улӑпа ҫӳреме
Пулнӑ пӗрре уйрӑмах
Ҫил ҫунатлӑ урхамах.
Урхамахӑн кӳлепи
Пулнӑ таййӑн ту пекех,
Патри ҫӳллӗ ту тӳпи
Иртнӗ унран ҫухрӑм ҫех.
Урхамахне утланса
Улӑп ҫӳренӗ текех,
Курӑклӑ хир шыраса
Вӗҫтернӗ вӑл ҫил пекех.
Чупнӑ чухне урхамах
Урисене палӑртман,
Ахрат сасси яланах
Ӑна ывӑнма паман.
Вӑл пынӑ чух ҫӗр ҫинче
Янкар-тусан хусканнӑ,
Ҫеҫен хирсен варринче
Тӑвӑл тухса арканнӑ,
Ахрат ялан хӑй ҫумне
Ҫакнӑ ухӑ е чукмар,
Ҫӳренӗ вӑл вӗсемпе
Йнҫе ҫулта та хастар.
Уххине вӑл хӑй тунӑ
Яштак йывӑҫран авса,
Карнӑ ӑна канатпа
Вӑкӑр тирӗнчен явса.
Ухӑ йӗпписем тума
Тӑпӑлтарнӑ хырсене,
Чул сӑрт ҫинче хӑйраса
Вӑл якатнӑ вӗсене.
Вара карнӑ ухӑпа
Йӗпписене ыватсан
Вӗҫнӗ вӗсем сулӑмпа
Ик-виҫ ҫӗр хӑлаҫ таран.
Чукмар тума инҫетре,
Ҫӳллӗ сӑртсем хушшинче
Тупнӑ капмар ват тирек,—
Кӑкланӑ та тӗпӗпех
Тӗрнӗ ӑна сӑрт ҫумне.
Иртнӗ тураттисене,
Каскаланӑ, якатнӑ,
Алла тытма майлатнӑ.
Ҫапла пысӑк йывӑҫран
Туса ҫакнӑ вӑл чукмар:
Ҫак чукмарпа пӗр ҫапсан,
Чулсем саланнӑ чӑл-пар...
Пӗрре ҫӳренӗ чухне
Лара пӗлмен мӑн Ахрат
Ҫитет тинӗс хӗррине,
Ҫитет — хула вӑл курать.
Хули — хула майлӑ мар,
Вырнаҫнӑ сӑрт-ҫыранра,
Ҫурт пеккисем — тулта мар,
Ларнӑ таҫта, шӑтӑкра.
Ҫыннисем те ку хулан
Пулнӑ ахаль ҫын пек мар,
Пулнӑ вӗсем пит тӑлпан,
Анчах — улӑпран начар.
Капан пек пӳ тӑрринче
Ларнӑ вӗсен пысӑк пуҫ,
Ҫӗмел пек пуҫ ҫийӗнче
Ҫиҫнӗ икшер мӑшӑр куҫ.
Курнӑ вӗсем тавраллах —
Малалла та каялла,
Ют ҫынна-мӗн курсанах
Сиксе ӳкнӗ кашкӑрла.
Нимӗнле чун, нимле вӑй
Кунтан чӗррӗн тухайман.
Ҫак ҫӗршывӑн патши хӑй
Никама ҫул партарман.
Урхамахне юрттарса
Пынӑ Ахрат ҫыр тӑрӑх,
Хӗвел пӑхнӑ ҫунтарса,—
Ҫанталӑкӗ пит шӑрӑх.
Кӗтмен ҫӗртен улӑпа
Кӑшкӑрашса, ӗрлешсе
Сырнӑ илнӗ ушкӑнпа
Хайхи тискер этемсем;
Шӑмӑсемпе, чулсемпе
Пенӗ ӑна пур енчен,
Вӑрӑм сӑннийӗсемпе
Вӑркӑнтарнӑ инҫетрен.
Ахрат улӑп шикленмен,
Карт! туртнӑ ҫеҫ чӗлпӗрне,

Урхамахĕ хуптĕртен
Ялт! сикейнĕ пĕр енне.
Анчах Ахрат çав-çавах
Хăтăлайман тыткăнран,
Вуншар сăнă пĕрмаях
Лекнĕ ăна таврараn.
Сăнă лекни улăпа
Хурт сăхнăн çеç туйăннă;
Ӳхĕрнĕ вăл тарăхпа, —
Çапăçмашкăн тытăннă.
Тытнă чукмарне алла,
Çĕкленĕ те çӳлелле —
Сулнă унпа тавралла,
Тискер ушкăн çинелле.
Пĕрре сулса ушкăнран
Ӳкернĕ вун паттăра;
Вуннă çавăрса çапсан,
Пĕр çын юлман çывăхра.
Сывă юлнă паттăрсем
Тарнă хăйсен шăтăкне,
Унта патшине вĕсем
Каланă мĕн пулнине.
Вĕсен патши ку тĕллĕн
Тепĕр улăп пулнă-мĕн;
Пулнă вăл чи хаярри,
Паттăрсенчен паттăрри.
Акă тухнă вăл сиксе
Сăрт хысинчи* шăтăкран,
Яштах тăнă тӳрленсе
Ахрат улăппа пĕр тан.
Вут пек çиçен куçсемпе
Тĕлленĕ вăл Ахрата,
Алла тытнă сăннине
Силленĕ пĕр саманта.
«Эс кам?!. Епле эс хăян
Ман çĕр урлă çӳреме?
Епле майпа пултаран
Ман çынсене вĕлерме?!» —
Кĕрленĕ вăл уç хирте
Аслати пек сасăпа.
Ахрат урхамахĕ те
Чĕтреннĕ ку янтравпа.
— Эпĕ улăп — ирĕк çил, —
Хальччен чикĕ мĕн — пĕлмен.
Ан пӳл! Çапăçма ан кил!
Ырă эп — ху тивмесен...
Мĕншĕн тухрăр-ха урса?! —
Тенĕ Ахрат çывхарса.

— Эп те улăп — Эсремет...
Ку çывăхра никама
Эп памастăп çӳреме.
Эс хăятăн тавлашма!
Хальччен мана тĕнчере
Никам нимпе тĕкĕнмен;
Çапăçура, хирĕçӳре
Нимле улăп çĕнеймен.
Ан тар, тăп тăр! Акă кур
Эсĕ пирĕн хăвата...
— Э-эй, Хăямат, — тăшман пур,
Тух-ха часрах, кил кунта!—
Хыт кăшкăрнă Эсремет.
Çĕр пичĕ тăрр! кисренет.
Çав вăхăтрах çывăхран,
Шур чуллă сăрт çумĕнчи
Тĕпсĕр аслă шăтăкран
Тухать Эсремет йытти.
Тискер йыттăн кӳлепи
Çӳллĕ пулнă, çил ут пек.
Куçĕсем ун çын тӳсми
Йăлтăртатнă вут-хĕмпе:
«Вăс-си!.. сырт,
турт та аркат!»—
Хистет хаяр Эсремет.
Тискер йытă — Хăямат
Сиксе ларма хирĕнет;
Хăр-хар! тăвать, йăпшăнать,
Шăлне шатăртаттарать.
Çил урхамах хăраса
Чакать, сикет тулхăрса.
Ахрат улăп ку самант
Ухха тытса авăрлать...
Йытă тапса сикет ялт!—
Анчах кая вăл пулать.
Ухă йĕтри вăркăнса
Йытта тăрнать çамкаран,
Çамки каять çурăлса,
Ӳкет Хăямат лăштăрах.
Хаяр патша Эсремет
Шăртне ниçта хураймасть:
Кăшкăрать вăл, ӳхĕрет,
Паттăрсене йыхăрать.
Акă сывă паттăрсем
Пуçтарнаççĕ ун патне,
Анчах хăраççĕ вĕсем
Пыма Ахрат çывăхне.
Çилли тулнă Эсремет
Илет пысăк катăк чул,
Ахрат пуçне вăл тĕллет —

* Сăрт хыси — сăрт тайлăмĕ.

Вашт! сулăнать хулăн хул.
Анчах чулĕ пуçран мар,
Пырса тивет аякран...
Ахрат пĕвĕ пит капмар,
Çавах вăл чул çапăнсан
Ӳкет урхамах çинчен;
Урхамах та хыттăнах
Тайкаланса, тӳремрен
Кăштах ӳкмест çырана.
Ӳкнĕ Ахрат пӳ çине
Чыхăнаççĕ паттăрсем,
Унăн хулăн ӳт-тирне
Тăрмаласшăн ак вĕсем.
Ахрат хăвăрт çĕкленсе
Çапăçмашкăн тытăнать;
Мăн чукмарне вĕçерсе
Улăп патне ыткăнать.
Ак пуçланчĕ çапăçу —
Хаяр, тискер кĕрешӳ:
Тавлашу-мĕн текех çук —
Пырать сассăр тĕрмешӳ.
Пĕри пысăк чукмарпа
Çапа-çапа минретет,
Тепри вăрăм сăнăпа
Чиксе тирме хирĕнет...
Юлашкинчен Эсремет
Вăйран кайса сулăнать;
Ахрат пуçран лектерет—
Хайхи ӳкет, шăп пулать...
Вил пек Эсремет ӳтне
Ывтать Ахрат тинĕсе,
Ун Хăямат йыттине
Пăрахать хăй шăтăкне.
«Пулчĕ!.. Пĕтрĕ выç тăшман,
Хăямачĕ качкипех...
Эп мар, хăй тиврĕ малтан;
Тупрĕ ак халь кирлинех»—
Тет те Ахрат лач! сурать,
Çил ут çине утланать.
Ахрат улăп çамрăк чух,
Эсреметпе вăрçнă пек
Пĕрре çеç мар — темĕн чул
Çапăçнă вăл инкекпе.
Нумай ăна çул çинче
Лекнĕ тискер паттăрсем,
Нумай пӳлнĕ ун çулне
Хăй пек пысăк улăпсем.
Хăш те пĕри тĕкĕнмен —
Ăна хăй те вăл тивмен,
Анчах кам кăшт çыхлансан —
Ăна вара кун паман.
Çапăçнă вăл вутăшпа.
Тигрсемпе, Эсрелпе*
Хуть хăçан та вăрçăра
Ахрат тухнă çиеле...
Пĕрре пырать вăл инçе,
Хăмăшлă кӳл хĕррипе.
Тĕпсĕр кӳлĕ шывĕнчен
Шăвать тухать пĕр çĕлен.
Çĕлен — ахаль çĕлен мар, —
Çичĕ пуçлă чĕрĕ сăрт,
Куçĕсем ун — шĕл кăвар,
Пĕтĕм тирĕ — йĕплĕ шăрт.
Пĕтĕрĕнсе, чашкăрса
Хăвать çĕлен Ахрата,
Çил-урхамах чавкăнса
Вĕçет унран пур вăйпа.
Анчах Ахрат хăрамасть:
Авăрлать те уххине—
Урхамахне кăшт чарать,
Унтан сăрт пек çĕлене
Хыр пĕрене йĕтрепе
Яра парать кăкăртан—
Пуççем шăтнă вырăнтан.
Çĕлен хыттăн çихĕрсе
Лăштăр каять çавăнтах,
Куçĕсене сӳнтерсе
Чунсăр пулать самантрах.
Тепре Ахрат хирте чух
Çĕр арăслан тĕл пулать,
Арăслансен тĕрек çук,—
Вăл пурне те тĕп тăвать...
Паттăр Ахрат пынинчен
Пурте хăрать, çӳçенет,
Урхамахĕ чупнинчен
Сарлака хир кисренет;
Çӳллĕ сăртăн тăррине
Пĕр сикет вăл — хăпарать,
Кавсăлнă вак чулсене
Чăл-пар! тавра салатать.
Çӳллĕ тусен тăрринче
Юрлать Ахрат киленсе:
«Çӳл ту çине хăпарма
Çил-çунатлă ут кирлĕ;
Ват аннеме юрама
Вут чĕреллĕ çын кирлĕ...»

---

* Эсрел (Азраиль) — авалхи чăвашсен ĕненĕвĕ тăрăх, çын чунне илекен хаяр пирĕшти пулнă.

Ахрат сасси — аслати,
Янрать, кĕрлет инçене,
Унăн юрри — хир кĕвви,
Авкаланать ирĕкре.
Чуллă сăртсем тăрринчен
Пăхать Ахрат тавралла,
Мĕн-мĕн курăннисенчен
Хавасланать малалла.
Хăй çĕршывне вăл пăхать —
Хăйăр хирсене курать;
Вашлаттарса çил тухать,
Вĕри хăйăр алхасать.
Кăнтăр çĕрнелле пăхать —
Чуллă сăртсене курать:
Çӳллĕ тусем хыçĕнче—
Инди... шыв-шурлăх çинче!..
Хĕвел тухăçне пăхать—
Китай çĕршывне курать:
Кăткă пекех лăк халăх,—
Питĕ пысăк патшалăх.
Çурçĕр еннелле пăхать—
Сĕм-сĕм вăрмансем курать:
Вăрманĕсем çийĕнче
Юр-тăвăлĕ ахăрать.
Хĕвел анăçне пăхать —
Курнисемпе ăнтăхать;
Урхамахне тăп чарсах
Тăрать чул пек вăл хытсах:
Тикĕс, симĕс çеремсем
Курăнаççĕ ку енче;
Унтах ката вăрмансем
Кăшăлтатаççĕ çемçен.
Симĕс уйсем хушшинче
Юхаççĕ вак çырмасем,
Çăра вăрманĕсенче
Юрлаç кайăк-кĕшĕксем.
Улăхсенче хĕвĕнсе
Ухлĕм курăк хумханать,
Курăк çийĕн çиçкĕнсе
Хĕвел шевли вылянать.
Çак илемлĕ çĕршывпа
Ахрат чунĕ савăнать,
Пĕтĕм хĕрӳ кăмăлпа
Ун енне вăл туртăнать.
Çитет Ахрат чатăрне,
Курать унта амăшне;
Тин çеç мĕн-мĕн курнине
Калать ăна йĕркипе.
Тĕнчен виçĕ кĕтесне
Кала-кала вăл хурлать,
Хĕвел анăç çĕршывне
Мухта-мухта пахалать.
Çав сип-симĕс уйсене
Ахрат чунĕ туртăнать,
Хăйĕн ватă амăшне
Унта куçма вăл çаврать.
Выльăх-чĕрлĕх йышлипе
Пурăнма хĕн пуш уйра,
Хăш чух уйăх-уйăхпе
Пысăк кĕтӳ выçлăхра.
Çак выçлăха тарăхса
Ахрат каясшăн халех
Хĕвел анăçне куçса,
Пурăнасшăн ирĕкрех.
Яш улăпăн ӳснипе
Йывăрланать шăм-шакки,
Урхамахĕ майĕпе
Хăрсах пырать ват пирки.
Пĕррехинче çул çинчех
Хавшаса вăл такăнать,
Таçти пуш хир варринчех
Вилет çакскер, хускалмасть.
Урхмахне хĕрхенсе
Ахрат йĕрет, кулянать,
Хуйхă пирки ĕшенсе
Чатăр умнех вăл выртать...
Каç та пулать, ир пулать —
Ахрат-улăп хусканмасть,
Çу та иртет, хĕл каçать —
Çавах та вăл вăранмасть.
Хĕрĕх те пĕр уйăх лăп,—
Тапранмасть те çак улăп,
Çывăрать вăл пĕрмаях.
Ват амăшĕ тăтăшах
Чĕнет ăна вăранма,
Вăл шăпăртах выртнăран
Пуçлать ĕнтĕ хăрама.
Хĕрĕх те пĕр уйăхран
Ахрат тинех вăранать,
Ыйхи йывăр пулнăран
Иртнине ним астумасть.
Виç çул çурă хушшинче
Улăп татах ӳснĕ-мĕн!
Патвар пĕвлĕ шăм-шакне
Татах вăй-хал кĕнĕ-мĕн!
Ытла çӳллĕ ӳснипе
Чатăрне вăл шăнăçмасть;
Патри тусем тăррине
Тап! пусать те хăпарать.
Ахрат çӳллĕ, ун пекки

Никам çук-тăр çĕр çинче,
Вăл утнă чух кĕлетки
Курнать тĕнче хĕрринчен;
Тӳрех тăрса кармашсан
Пĕлĕте вăл çулăхать;
Шыв ĕçесшĕн ăш çунсан
Пĕлĕтсенчен шыв ăсать;
Çиес килсен çимĕçне
Пĕр аллине вăл тытать,
Ăна хĕвел айĕнче
Тытса тăрса ăшалать.
Пĕрре, чылай çӳресен,
Килет Ахрат инçетрен.
Çитет килне. Кил тавра,
Кĕтмесле вăл мĕн курать?
Кашни ик-виç утăмра—
Выльăх вилли тип уйра!..
Йышлă выльăх курăксăр
Выçăпала хирĕлет,
Пурнăç тăкăс—юрăхсăр,
Ахрат каллех тĕмсĕлет.
Каллех ĕнтĕ ун пуçне
Хĕвел анăç хускатать,
Вăйлă улăп ĕмĕтне
Илĕртсех вăл вылятать.
Чăн та, Ахрат ку ĕçне
Тăсмасть текех вăраха
(Нимшĕн те мар, хăй хирне
Тарăхать вăл выçлăхран).
Акă пĕтĕм выльăхне
Пĕр кĕтĕве вăл пухать,
Кив чатăрти пурлăхне
Пухса çыхать те йăтать;
Тĕрлĕ хатĕр-хĕтĕрне
Çакать самăр пилĕкне,
Ватă карчăк амăшне
Хăвма хушать кĕтĕвне;
Тăван хир çине пăхса
Аллипе вăл ласт! сулать,
Каяс енне çул тытса
Çĕнĕ çĕре хускалать.
Сулăнать вăл витĕрех
Хĕвел анăç еннелле,
Сукмак-çулсăр, нимсĕрех,
Кĕмĕл пăлан йĕррипе.
Куçнă чухне çул çинче
Ахрат тем те тĕл пулать,
Хĕн, хăрушлăх умĕнче
Ялан меллĕн хăтăлать.
Е сĕм вăрман хупласа
Картлать ун вăрăм çулне,
Е юхан шыв сарăлса
Пӳлсе тăрать кĕтӳне.
Утать улăп ярăнса
Сĕм вăрмансем çийĕпе,
Йывăççене кăшт тайса
Иртет вĕсен хушшипе.
Ватă чăрăш-хырсене
Пĕрре туртать те кăклать,
Эрĕм пек çеç вĕсене
Таçта çитех ывăтать.
Çак кăкланă вырăнпа
Йĕрĕклĕ çул вăл хывать,
Хăй кĕтĕвне çав çулпа
Вăрман витĕр кăларать.
Аслă шывсем пулсассăн
Тăрать шывĕ варрине,
Кĕтĕвне пĕр канассăн
Каçарать хăй аллипе.
Чылай вăхăт иртейсен
Курать Ахрат Атăла,
Аслă Атăл тӳлекрен
Каять ăна кăмăла;
Кунта ешĕл вăрмансем
Нӳрĕ çилпе хумханнă,
Тăрă шывлă çырмасем
Шăнкăртатса юхайнă.
Атăл икĕ еннипех
Тикĕс уйсем выртайнă,
Уйĕсенче хĕвĕнсех
Çăра çаран чăшканнă...
Çак илемлĕ çĕрсенчен
Улăп иртсе каяймасть,
Ăна таçти сăрт çинчен
Курнине вăл астăвать.
Савăннипе вăл вара
Карать кунта чатăрне,
Атăл тăрăх улăхра
Сарса ярать кĕтĕвне;
Ывăннă ват амăшне
Вырнаçтарать чатăра,
Куçас, çĕн çĕр шухăшне
Тин сирет çак ырлăхра.
Çĕнĕ çĕре вырнаççан
Ахрат лăпкă пурăнать,
Сайраран çеç чатăртан
Тухкаласа çаврăнать;
Е хăш чухне чатăрне
Майлă уя куçарать.
Аслă Атăл улăхне

Чунтанах вăл юратать,
Пĕрре Ахрат уттарать
Хура тинĕс еннелле,
Пынă майĕпе сăнать
Тĕрлĕ-тĕрлĕ çĕрсене.
Хирсем тăрăх утнă чух
Вĕтĕ çынсем вăл курать:
«Мĕн-ши кусем, этелю-у-ух!»,
Тесе улăп кăшкăрать.
Пĕчĕк çынсем тăрăшса
Уйĕсенче ĕçлеççĕ,
Кăшкăрашса, айкашса
Çеремсене çĕтеççĕ;
Пурте пĕчĕк утсенчен
Купташкасем кăкарнă,
Купташкисем хыçĕнчен
Хăйсем тытса уртăннă.
Вĕсем хире хуратса
Унта темскер сапаççĕ,
Симĕс курăка хăртса
Пĕтĕм çĕре пăсаççĕ.
Улăп çак вĕт çынсене
Тыта-тыта пуçтарать,
Мĕнпур алла лекнине
Кĕсйисене тултарать,
Кулькуль* е нăрă тесе,
Çĕр чавнăшăн çилленсе
Илсе каять вĕсене
Хăйĕн çĕнĕ чатăрне.
Унта амăшне курсан:
«Пăх-ха, анне, эп паян
Тытрăм кăвакарчăнсем...
Тăшман-мĕн ку кайăксем, —
Уй-хире пит чаваççĕ,
Вĕсем чавнă çеремсем
Пĕр курăксăр юлаççĕ.
Кусем нумай ĕрчесен
Хăруша-çке ӳлĕмрен;
Çарансене пĕтерсен
Выç аптратĕç кĕтĕве!..
Епле вĕсен купташки
Çĕре касса шăйăрать,
Курăксенĕн юлашки
Тымаррине кăларать!
Ку инкеке сирмесен
Пире каллех мĕн кĕтет?
Кивĕ çĕрте курнă пек
Каллех выçлăх çитĕ!» тет.
Пĕчĕк çынсене курсан
Калать улăп амăшĕ:
«Халь анчах мар, чылайран
Пулнă вĕсем ку енче;
Кăвакарчăн мар вĕсем, —
Çĕр ĕçлекен этемсем;
Хăруша мар кĕтӳшĕн,
Сиенлĕ мар пирĕншĕн...
Ачам, акă эсĕ ху та
Мăшăр тупса авлансан
Юлĕ санăн йăху та:
Ачу-пăчу пулĕ сан...
Ачусенчен ĕрчесе
Тухĕç çакăн пек çынсем;
Пурăнĕç çĕр ĕçлесе,
Пулĕç ăслăрах вĕсем.
Ан тив, ачам, çӳреччĕр,
Хăйсен ĕçне ĕçлеччĕр,
Эпир вилсен малашне
Çавсем тулĕç çĕр çине...»
Хăй амăшне итлесе
Улăп ярать çынсене,
Ӳлĕм нихçан тивмессе
Сăмах парать вĕсене.
Чăнах, вăйлă пулсан та,
Кайран çынна вăл тивмен.
Нимскере те нихçан та
Ахальтенех пĕтермен;
Килĕнчен те тапхăртан
Çӳренĕ вăл тухайса.
Хыттăн ярăнса утсан,
Атăл кайнă хумханса.
Атăл хĕрри вăрманлăх,
Вăрманлăхра — çаранлăх;
«Улăп ури» йĕррисем
Путса юлнă çак çĕрте.
Хăш чух унăн урисем
Пылчăкланнă; уй-хирте
Çăпатине силлесе
Вăл хăварнă тĕмесем.
Çав путăксем, тĕмесем
Юлнă пире тĕлĕнме,
Ĕмĕр хыççăн ĕмĕрсем
Улăп çинчен асилме.

*С.В. Элкер сăвăласа çырнă.*

---

* Кăвакарчăн.

# 14. УЛĂППА ПИКЕÇ ХĔР

## I

Пĕлĕтпе çĕр хăрăнсан,
Тусем-шывсем шавласан
Çакă аслă çĕр çинче,
Çӳллĕ-çӳллĕ ту енче
Пĕр пысăк йăх палăрать,
Пĕр хастар йăх йышланать.
Пурăнсан та пурăнсан,
Çулсем хыççăн çул иртсен
Çак йăхран тухать тет хун —
Тивлет ятлă аслă хун.
Унăн вырьăх-чĕрлĕхне
Кăларман никам суса.
Унăн çĕрĕн анлăшне
Тухайман никам утса.
Аслă турă пиллесе,
Тăнă ăна мул парса.
Пихампарĕ — шурă кашкăр,
Тăнă ăна упраса.

* * *

Тивлет те хуна савса-ырласа,
Тивлет те хуна савса-мухтаса
Çыннисем çапла юр юрланă тет,
Халăхĕ çапла сăвăланă тет.
—Туран тăва ай-хай çӳреççĕ
Хунăнах та ула учĕсем.
Çаранран çарана çӳреççĕ
Хунăнах та сарă тĕвисем.
Хунăнах та хура вăкрисем
Чĕрнисемпе тусем ватаççĕ,
Мăйракипе çĕре çураççĕ. —

Сыпăкран та сыпăка
Хунаса та ĕрчесе,
Йăхран йăха пĕрлешсе,
Кӳршисемпе килĕштерсе
Тивлет хун пурăннă тет.
Тăшман вĕсене тапăнсан —
Хун хӳттийĕ витнĕ тет.

Хунăн пулнă виçĕ ывăл,
Виçĕ паттăр, виçĕ ывăл.
Виççĕшĕ виç йăвара
Пурăннă вĕсем шăкăлтатса,
Хăйсен йышĕсемпе чăмăртанса.
Анчах вĕсен пĕрин те
Телей тени пулман тет —

Йăх тăхăмĕ пӳрмен тет.
Пĕр ывăл та пулман тет.
Çавăнпа та Тивлет хун,
Ватă пуçлă Тивлет хун,
Питĕ пăшăрханнă тет:
— Ăмăрт кайăксем те чĕпĕ кăлараççĕ,
Хирти тилĕсем те çурисене ӳстереççĕ.
Курăк хушшипе шуса çӳрекен
Çĕлен-калта та çулсеренех çăвăрлать.
Пурин те йăхĕ тăсăлать.
Ман çав тери сумлă йăхăм
Виçĕ ывăлпах татăласшăн,
Пĕрин те ывăл ача çук...
Мĕнле айăпа пула ман паттăр йăхăм
Ĕмĕрлĕхе типсе хăрмалла-ши?
Виççĕшин те виçшер хĕр,
Пĕрин ывăл пĕрчи çук.
Аслă турра çиллентертĕм-ши?..
Пӳлĕхе эп çиллентертĕм-ши?..
Пурне те чунтан эп хисеплетĕп,
Киреметре çулсерен турăсенĕн ячĕпе,
Ырăсене асăнса
чун паратăп...
Мĕн пулчĕ-ши йăхăма,
Мĕн çитрĕ-ши пуçăма?!. —
Тесе хун ялан хуйхăрнă,
Ним те тăва вăл пĕлмен.
Ывăлĕсем те аслă хунăн
Ялан çунса çӳренĕ тет.
Арăмĕсен пилĕкĕсене вĕсем
Халăх умĕнче намăс кăтартма
Сарлака хура пӳçыххисем çыхса янă тет.

Пĕррехинче Тивлет хун тĕлĕнмелле тĕлĕк курать иккен. Тĕлĕкĕнче ăна Аслă Турă ак çапла калать пулать:

Хушса яр-ха эсĕ, Тивлет хун,
Хăвăн кĕçĕн кинӳне
Кăвак шывăн хĕрринчи
Авалхи мăн аслаçусен
Таса тăприйĕ патне —
Турăсене пуççапса,
Ырăсене асăнса,
Çичĕ кун та çичĕ каç
Куççуль тăкса кĕлтума.
Çакăн хыççăн тин санăн
Тăхăр уйăх çитсессĕн
Кĕçĕн кинӳ пикеçӳ
Сумлă тăхăмна çуратĕ,
Улăп ача çуратĕ.
Çав ача пулĕ, Тивлет хун,

Санăн йăхна ĕмĕрлĕхе тăсаканĕ,
Çĕрне-шывна, халăхна
Упраканĕ, сыхлаканĕ. —

Хайхи вара Тивлет хун,
Аслă турă каланă пек,
Хăйĕн кĕçĕн пикеç кинне
Авалхи паттăр мăн аслашшĕсен
Кăвак шывăн хĕрринчи
Таса тăприйĕ патне кайса,
Турăсене пуççапса,
Ырăсене асăнса,
Кĕлĕ тума хушрĕ тет.

Çичĕ кун та çичĕ каç
Пикеç кин кĕлтурĕ тет.
Паттăр мăн асаттесен
Таса тăпри умĕнче
Аслă турăпа ун çумĕнчисене
Пуççапса, ырăсене асăнса,
Пăятăмăшĕ хушнă пек,
Куççуль тăкса кĕлтурĕ тет.
Çичĕ кун та çичĕ каç
Пирĕн пикеç сарă кин
Паттăр мăн асаттесен
Таса тăпри умĕнче,
Аслă турăпа ун çумĕнчисене
Ӳке-ӳке пуççапса, ырăсене асăнса,
Пăятамашĕ хушнă пек
Куççуль тăкса кĕлтурĕ тет.

...Кун хыççăн кун иртрĕ тет,
Тăхăр уйăх та çитрĕ тет.
Пĕрре çапла ирпелен,
Чечек пек илемлĕ шăмат кун,
Хĕвел ялкăшса тухнă чух,
Кĕçĕн хунăн чатăрĕнче,
Кăвак шывăн хĕрринче,
Ача сасси илтĕнет.
Тивлет хунăн çĕрĕнче
Улăп ача çуралать.
Çийĕнчех тет çак хыпар
Тĕнче тăрăх саланать.
Çак хыпара илтсессĕн —
Çĕр çийĕпе чупан чĕр чунсем,
Çӳлте вĕçен кайăксем
Пурте хавасланнă тет.
Тивлет хунăн çĕрĕнче
Улăп çуралнă ятпа
Çичĕ кун уяв пулнă тет.

Пĕтĕм халăх савăннă тет.
Ҫӳлти хĕвел — ҫĕр хевти —
Йăл-йăл кулса тăнă тет.

Патвар ҫитĕннĕ тет Улăп,
Паттăр ҫитĕннĕ тет Улăп —
Тивлет хуна шанчăк парса,
Ун халăхне савăнтарса.
Пилĕк ҫула ҫитсессĕн вăл
Сăсар ҫĕлĕк тăхăнса,
Юр пек шурă урхамахне утланса,
Ҫивчĕ сăннине тытса
Сунара тухса кайнă тет,
Ту вăкăрĕ тытса килнĕ тет,
Халăхне тĕлĕнтернĕ тет.
Ҫичĕ ҫула ҫитсессĕн —
Ҫич ҫулхи ăйăрăн пилĕкне,
Ҫĕлен пек ăйăрăн пилĕкне
Утланса вăл хуҫнă тет.
Тăхăр ҫула ҫитсессĕн —
Тăхăр ҫулхи вăкăрăн,
Чи те хаяр вăкăрăн
Мăйракине хуҫнă тет.
Вун ик ҫула ҫитсессĕн —
Чурăс йăхсен паттăрне
Вылямалла кĕрешсе —
Ҫӳл ту урлă ывăтнă тет.
Ҫирĕм ҫула ҫитсессĕн —
Арҫын пулса ҫитсессĕн,
Вăйне ниҫта хураймасăр
Пĕлĕт ҫӳллĕш тусенне
Хĕссе шывне пăрнă тет.

Улăп ҫирĕм тултарсан аслă хун хăйĕн тăхăмне пĕррехинче умне тăратрĕ тет те ҫапла каларĕ тет:

— Шăнăрлисем — шăмăланаҫҫĕ,
Аяк пĕрчиллисем — ӳтленеҫҫĕ.
Ураллисем — ураланаҫҫĕ,
Алăллисем — тытакан пулаҫҫĕ.
Ĕрчевлисем — ĕрчеҫҫĕ,
Йăхне малалла тăсаҫҫĕ.

Санăн та, паттăр тăхăмăм, ĕрчеме вăхăт ҫитрĕ пулĕ. Хăвна юрăхлă мăшăр тупмалла пулĕ. Акă сана вун ҫич патман таякан пăлатпа туйăран тунă ухă. Карăнтар та пĕккине кăмăлу туртнă еннелле уххине вĕҫтерсе яр. Ухă вĕссе кайнă енче сан, юратнă тăхăмăм, савнă мăшăру пулĕ.

Персе ячĕ тет вара пирĕн Улăп хăй уххине карăнтарса, юрлаттарса. Унтан утне утланса, хăй тетешĕсене, хăй ҫыннисене ертсе уххине шырама тĕнче тăрăх сăрт-сăрт урлă тухса кайрĕ тет.

Улăп уххи инçете-инçете, пĕр çеçен хир варрине, илемлĕ кăна чатăр умне, вĕçсе пырса тăрăнчĕ тет. Ку вăл çак çĕршыв хуçин — Тала патшан — чатăрĕ пулнă иккен.

Ухă янăранине илтсен чатăртан патшан кĕçĕн хĕрĕ чупса тухать.

— Атте, атте, — тет вăл, — пирĕн чатăр умне ухă вĕçсе килчĕ. Мĕне пĕлтерет-ши ку? — тесе ыйтать.

— Сан телейӳ вăл, пепкем. Хăтана килесси пур, хĕрĕм. Хатĕрленес пулать, — тет Тала патша хăйĕн кĕçĕн хĕрне:

— Паттăр пулсан вăл — йĕкĕт пулĕ,
Кайăк пулсан — кăйкăр пулĕ,
Ухă тесен — çăмăл пулĕ.
Тапнă çĕрте — çăл пулĕ,
Ларсан — ту-сăрт лăпчăнĕ,
Таянсан — вăрман йăванĕ.
Чунĕ-юнĕ вут пулĕ,
Çич араслан халлă пулĕ.
Ут тесессĕн — йĕвен кирлĕ,
Хĕр çитĕнсен — мăшăр кирлĕ.
Çавă пулĕ паттăру,
Çавă пулĕ мăшăру.
Кăмăлĕ ун юмарт пулĕ,
Çиллентерсен — кăра пулĕ.
Тăваншăн — тăван пулĕ,
Тăшманшăн вăл хĕç пулĕ.
Çакăнтан вара çĕр çинче
Сыпăкран сыпăка ĕрчесе;
Иксĕртен вара çĕр çинче
Сыпăкран сыпăка хунаса
Кайĕ Улăпсен тăхăмĕ.

...Çичĕ кун та çичĕ каç юрттарать Улăп çил пек урхамахне хăйĕн уххи вĕçнĕ еннелле. Хир-хир урлă, сăрт-сăрт урлă каять. Кайсан-кайсан хайхи аслă улăх варринче кĕтӳ кĕтсе çӳрекен пĕр пысăк йăх патне пырса тухать. Пăхать, ун уххине пĕр çав тери çӳллĕ те чаплă, тĕрĕллĕ чатăр умĕнче лăпăс-лăпăс ватă карчăк тытса тăра парать. Çӳçне-пуçне те пуçтарман тет хăй, килпетсĕр. Улăп çак карчăк умне сиктерсе пырать те учĕ çинчен анса, виçĕ хутчен çăкăнса ваттисен йăлипе çапла калать:

— Хир-хир урлă ухă петĕм,
Хура чĕкеç куçне тивертрĕм.
Эпĕ, Улăп паттăр, çав чипер чĕкеçе
Илсе кайма килтĕм, — тет.

Ватă карчăк Улăпа хирĕç:

— Хир-хир урлă ухă килчĕ,
Манăн куçа тивейрĕ.
Эп ĕнтĕ, Улăп, санăн «чĕкеçӳ»,
Эпĕ пулăп санăн мăшăру, —

тесе явап парать.

Улăп ватă карчăка хирĕç вара:

— Ухă пересси — пирĕн йăли,
Эпĕ унран иртеймĕп.
Ухă тивни — турă пӳрни,
Эпĕ унран иртеймĕп.
Ухă тивни — Аслă атте пехиллени,
Эпĕ унран иртеймĕп, — тет.

Пирĕн паттăр çапла каласанах леш килпетсĕр ватă карчăк уйăх та хĕвел сăн-питлĕ, çĕмĕрт пек хура куçлă, пилĕк таран çивĕтлĕ, тухьяллă та тенкĕллĕ, ĕнчĕ-мерчен пушмаклă пикеç хĕре çаврăнать. Патша çыннисем тухрĕç тет те чатăр алăк умне Улăппа ун тетĕшĕсене пуç тайса кĕрекене ларма чĕнчĕç тет.

Виçĕ кун хушши Улăп тăванĕсемпе çыннисем çак сумлă йăхăн патши патĕнче хăнара пулчĕç тет; чаплă туя хăçан тăвасси пирки калаçрĕç тет. Туй пуласси çинчен элем вĕлкĕштерсе çӳресе тĕнчене хыпарларĕç тет.

Виçĕ уйăх иртсен вара Тала патша йăхĕпе Тивлет хун йăхĕ туя пуçтарăнчĕç. Туй пуçĕн çитмĕл те çичĕ юрăллă, çитмĕл те çичĕ сыпăклă такмакне итленĕ хыççăн туй пуçларĕç. Тала патшан хĕрне илме Тивлет хун енчен пин те çич çĕр юлан ут килнĕ. Пике хĕршĕн панă хулăмĕ çĕр çитмĕл çичĕ урхамах та ик çĕр çичĕ пуç сурăх, çĕр тăхăр вун çичĕ вăкăр пулнă.

## II

Çичĕ кун та çичĕ каç кĕрлерĕ Улăппа пикеç хĕрĕн туйĕ. Саккăрмĕш кунхине вара Улăп, хăйне пӳрнĕ хĕре урхамахĕ çине лартса, ватă Тала патшан пехилне илсе хăйĕн тăван çĕршывне тухса кайрĕ.

Çитмĕл çичĕ тӳнкке шаккаса,
Çитмĕл çичĕ сăрнай каласа,
Çитмĕл çичĕ шăпăр вылятса
Тивлетĕн халăхне пухрĕç тет,
Улăпăн туйне-çуйне турĕç тет,
Пике хĕр туй-çуйне турĕç тет.

Тивлет хун çĕршывĕнче те,
Аслă ту çĕршывĕнче,
Çичĕ кун та çичĕ каç
Чаплă туй шавларĕ тет.
Аслă хун çĕршывĕнче те,
Аслă ту çĕршывĕнче,
Çичĕ кун та çичĕ каç
Сумлă туй кĕрлерĕ тет.
Тивлет хун хăй тăхăмне,
Ту çĕршывĕн паттăрне,
Вăрăм кун-çул пиллерĕ тет,
Сывлăх, телей пиллерĕ тет:
— Хăвăн халăхна упра,
Ăна телейлĕ ту.

Мăшăру сана çичĕ ывăл —
Çичĕ улăп паттăр —
Çуратса патăр.
Вĕсем сана тĕрек пулĕç,
Вĕсем пирĕн йăха малалла тăсĕç,
Пирĕн халăх пусĕнче
Ялан улăпсем пулĕç, — терĕ тет.
Çапла пуçланса кайнă тет,
Паттăр Улăпăн йăхĕ,
Паттăр Улăп тăхăмĕ.

...Пурăнаççĕ-пурăнаççĕ, кунсем-çулсем иртеççĕ. Улăппа пикеç Чĕкеçĕн ача-пăча йышланать, ват Тивлете савăнтарса шăри-шари чупкалать.

Тивлет йăхĕ аслăланса пынипе çĕтĕхсе, йӳçĕхсе пурăнать тет Аçтаха çĕлен.

Кутне çăпан тухнă пек кускалать тет. Пĕтĕм сивĕ чунлă çĕленсене пуçтарса Улăп çĕршывне хурлăхпа витме шутларĕ тет. Улашрĕ-сухăрашрĕ тет те вут-хĕм тăка-тăка хăй йăвинчен шуса тухрĕ тет. Улăпăн выльăх-чĕрлĕхне, çыннисене çăтать тет. Çав тери хурлăхлă кунсем пуçланса кайнă тет: пур çĕрте те вут-хĕм ялкăшать тет, юн юхать тет. Улăп вара хăй паттăрĕсене йыхăрса пуçтарса Аçтаха çĕлене хирĕç тухса кайрĕ тет. Утне йĕнерлесе аллине хĕç тытнă Улăп паттăра амăшĕ çĕлен чĕлхи каласа пиллесе ăсатрĕ тет:

— Туй хуран тĕпне хăçан та хăçан
çĕлен сăхса витерет,
Çавăн чухне тин сана çĕлен
сăхса витертĕр.
Тимĕр хуран тĕпне хăçан та хăçан
çĕлен сăхса витерет,
Çавăн чухне тин сана çĕлен
сăхса витертĕр.
Кĕмĕл хуран тĕпне хăçан та хăçан
çĕлен сăхса витерет,
Çавăн чухне тин сана çĕлен
сăхса витертĕр.
Çӳллĕ ту çинче пăхăр çурт,
пăхăр çурт тавра пăхăр хӳме.
Пăхăр хӳме варринче çавра çатма,
Çавра çатма çинче çитмĕл те
çичĕ пин çăмарта.
Хăçан та хăçан çав çăмартана
çĕлен сăхса витерет,
Çавăн чухне тин сана çĕлен
сăхса витертĕр.
Çӳллĕ ту çинче тимĕр çурт,
Тимĕр çурт тавра тимĕр хӳме,
Тимĕр хӳме варринче çавра çатма,
Çавра çатма çинче çитмĕл те
çичĕ пин çăмарта.

Хăçан та хăçан çав çăмартана çĕлен
сăхса витерет,
Çавăн чухне тин сана çĕлен
сăхса витертĕр.
Çӳллĕ ту çинче кĕмĕл çурт,
Кĕмĕл çурт тавра кĕмĕл хӳме,
Кĕмĕл хӳме варринче çавра çатма,
Çавра çатма çинче çитмĕл те
çичĕ пин çăмарта.
Хăçан та хăçан çав çăмартана çĕлен
сăхса витерет,
Çавăн чухне тин сана çĕлен
сăхса витертĕр.
Çĕлен хунĕн шуйĕ —
Хура ту тăрринче,
Çĕленлĕхĕ — Сарă шыв хĕрринче.
Çĕлен амăшĕн шуйĕ —
Хĕрлĕ ту тăрринче,
Çĕленлĕхĕ —
Шурă шыв хĕрринче.
Çĕлен ачисен шуйĕ —
Ылттăн ту тăрринче,
Çĕленлĕхĕ — Ула шыв хĕрринче.
Пурте кунтан тухса кайччăр,
Çĕленлĕхĕсене кайса выртчăр.
Çĕлен чĕлхи калатăп:
Каланă сăмахăм вырăнлă пултăр.
Аллу сан хытă пултăр,
Чĕрӳ сан çирĕп пултăр.
Вутлă-хĕмлĕ кунсенче,
Асар-писер кунсенче,
Ман пехилĕм упратăр,
Ман пехилĕм сыхлатăр.

Тытăçрĕç тет хайхи Улăппа ун паттăрĕсем Аçтаха çĕленĕсемпе. Тусемсăртсем чĕтрерĕç тет, шывсем-шурсем юнланчĕç тет. Хĕçĕсемпе сулаççĕ — тăшман пуçĕ касăлать, чукмарĕсемпе çапаççĕ — тăшман пуçĕ лапчăнать. Çичĕ кун та çичĕ каç пĕр сывлăш çавăрмасăр çапăçрĕç Улăппа тăванĕсем Аçтахапа. Хир кăлканĕ пек çемçелнĕ Аçтаха ӳтне вĕсем çичĕ курпунлă ту урлă ывăтрĕç кăларса.

Вăрçă-харçă пĕтсессĕн, хĕвел ячĕ тет çутатса, çăлтăрсем вылярĕç тет сиксе. Савăнать тет халăхĕ ватă Тивлет хунăн. Эпир те савăнар, эпир те юр юрлар.

Эпир Улăп тăхăмĕ,
Пĕтрĕ халап юхăмĕ.
Ыр ут юртти çăрхаллă,
Пирĕн халап юрăллă.
Ырă ут та ĕшенет,
Халапçă та ывăнать.

*Валем Ахун çырса илнĕ.*

## 15. УЛĂП ИСТОРИЙĚ

Çулташпа пĕрле ларатпăр
Теччĕн çӳллĕ сăртĕнче,
Тĕлĕнетпĕр, тем шыратпăр
Анлă Атăл леш енче.

Акă явăнчĕ шур тĕтĕм
Пирĕн пĕчĕк кăвайтран.
Эп асамлăха халь кĕтĕм
Пăрăнмасăр чăнлăхран.

Тĕтĕмрен тухать пĕр ватă
Тахçанхи сĕм авалтан,
Калаçма пуçларĕ акă
Ерипен хăй манпалан.

«Çак сăртран эс тĕлĕнетĕн,
Чăн та, çӳллĕ пулнипе.
Леш енче мĕн пур-ши тетĕн,
Тинкеретĕн кунĕпе.

Йĕркипе калас пулсассăн
Аякран пуçламалла.
Сывламасăр ассăн-ассăн
Шăппăн халь итле апла.

Халăхра каланă тăрăх,
Улăп пурăннă авал.
Вăл çӳренĕ ту-сăрт тăрăх,
Тапса тăнă вăй-хавал.

Айлăма пĕрре вăл аннă,
Курнă вĕтĕ çынсене,
Кĕвĕçсе вара сăхланнă
Выльăх кĕтĕвĕсене.

Çавă халăхран вăл илнĕ
Пĕр пике арăмлăха,
Пурнăç кайнă ирĕк, пиллĕ,
Маннă йăлт хуйха-суйха.

Çуралать вĕсен ак йĕкĕр,
Питĕ те хастар, кăра.
Ашшĕ хушнă: «Кĕтӳ кĕтĕр,
Çӳрĕр иксĕр сунара».

Паттăрсен уххи пит çивчĕ
Пулнă, пенĕ аякка,
Яланах тивертнĕ çичĕ
Çухрăмран пур кайăка.

Пĕринче ак савнă арăм
Вилнĕ калăм кунĕнче.
«Ăраскал тени тупмарăм
Эпĕ çак тăпра çинче, —

Чĕререн ылханнă Улăп
Хăйĕн мăшăрĕн сĕрне. —
Халь мĕнле хăраххăн пурнăп? —
Илĕп çамрăк ту хĕрне».

Çĕнĕ ĕмĕтпе хăпарнă
Арамаçи ту çине.
Виçĕ кун кĕтсе-мĕн ларнă
Йĕкĕр ывăл ашшĕне.

Улăпа вара шыраççĕ
Тĕрлĕ ту-сăрт хушшинче,
Темлерен аран тупаççĕ
Чуллă çырăн хĕрринче.

Тӳрĕ кăмăллă пулманшăн
Сăнчăрланă Улăпа.
Икĕ ывăлне хăй ашшĕ
Вĕрентет çак сăмахпа:

«Аслати унран иртнишĕн
Хĕсметлерĕ тыткăна.
Çĕршыва эп ылханнишĕн
Мăшкăлпа асап кăна.

Нихăçан ан ӳктĕр çылăх
Сирĕн ăрусем çине.
Ĕнтĕ çулăр пулмĕ çывăх,
Сăнăр Çурçĕр çăлтăрне.

Виçĕ кун енне утсассăн
Курăр аслă çырмана,
Çыранпа çич çул кайсассăн
Çитĕр кирлĕ вырăна.

Ку — пулас тăван çĕршывăр,
Чыслăр ĕмĕрех ăна.
Çылăха ан илĕр йывăр,
Маншăн леш тĕнче кăна».

Аслă чўк туса хускалнă
Паттăрсем инçе çула,
Йышĕ кунсерен сайралнă
Çапăçусене пула.

Çичĕ çул çапла иртсессĕн
Тертлĕ, йывăр çулпалан
Шыв юппи патне çитсессĕн
Чарăнаççĕ йышпалан.

Çакă кун юнкун-мĕн пулнă,
Пуснă кайăк-кăвакал.
Ыршăн Аслă Кĕлĕ тунă,
Пухнă вăй-хăват, хавал.

Ашшĕ пилĕпе вырнаçнă
Кĕçĕнни икюплĕхе,
Икĕ йăх куллен хунанă,
Икĕ йăх та пĕр чĕлхе.

Сунара ялан çўренĕ,
Акнă çур тырри — ыраш.
Майĕпен çĕршыв çĕкленнĕ,
Санăн несĕлў, Чăваш.

Çаплалла вĕçлерĕ ватă
Хăйĕн вăрăм сăмахне.
Явăнса çĕкленчĕ акă
Тĕтĕмпе хăй тўпене.

Эп ăна халап-калавшăн
Ĕлкĕрмерĕм тав туса.
Ăрăмран мана султашăм
Вăратать пăшăлтатса.

## Иккĕмĕш çавра

Час вăранмасть ĕçпе
ĕшеннĕ Теччĕ,
Тĕттĕмлĕхе çурать автан сасси.
Ирех утатпăр пристане ик элчĕ,
Ман çĕр каçа пулмарĕ çывраси.

Çавах та уçăлчĕ шуйханнă кăмăл
Пăлхар енче хĕвел чăмăртансан.
Çула тухсан ура васкавлă, çăмăл,
Ан тив, варлатăр тем
йышши тусан.

Ун вырăнне шухăшăмсем
çĕнелĕç —
Выртан каска çеç уссăр мăкланать.
Хĕвел пайăркисем шыва ўкейрĕç,
Кĕрен хумсем çапаççĕ çырана.

Çĕрле те, кăнтăрла та ĕçлĕ Атăл,
Тем тĕрлĕ халăх пристаньте
тулли.
Пĕри ав тăхăннă мĕн çўллĕш атă,
Хулпуççинче ик-виç вăлта хулли.

Тепри кĕте-кĕте çухатнă чăтăм,
Сунар йытти кăкарнă чĕнпеле.
Кăсăкланса пурне те
пăхса тăтăм —
Çак пурнăçра тем тĕрлĕ кĕнчеле.

Пуçтарăннă çынсем
нумай чĕлхеллĕ,
Пур вырăсĕ, чăвашĕ те тутар.
Билет илетпĕр кассăран
йĕркеллĕ —
Мĕнле пире кĕтсе илет Пăлхар?

...Ку йăлăм ен
мĕн талккăшпех вăрманлă,
Утатпăр çўлелле сукмакпалан.
Йывăçĕсем ĕмĕрпелен хуралнă,
Анчах этем çул-йĕрĕ çухалман.

Çитсен куратпăр:
çўллĕ кар тăпрасĕ
Саланнă, йăшнă —
тўп-тўрĕ выртать.
Хула варри халь —
пĕчĕк ялăн касĕ —
Пăтти-патти килпетсĕр курăнать.

Анчах та пурнăç çакăнта вĕренĕ!
Мĕн пурринчен мĕн
юлнă куç умне?!
Выртаççĕ кăкшăм таткисем,
тĕпреннĕ,
Майпен шăлатăп вăхăт тусанне.

Пурах чулсен тем чухлĕ каламалăх,
Кашнин çинче —
çич ĕмĕр паллисем.
Çакна туйса çĕкленчĕ
ман мăнаçлăх:
Ятне-шывне хăварнă
несĕлсем.

## Иккĕмĕш курăну

*(Лаша шăлĕ)*

Лаша шăлĕ эпĕ тупрăм
Кар тăпрасĕн хĕрринче,
Тем тесен те, вăрттăн тупсăм —
Ĕмĕрсен инçетĕнче.

Паллă мар шăпи никамшăн,
Никама та кирлĕ мар.
Хăçанччен вара малашшăн
Усрĕ вăрттăнлăх Пăлхар?

Тупсăма уçаймăп эпĕ;
Пурпĕр тахçанхи лаша
Пултăр манăн чыс-хисепĕм —
Кĕтĕн эс чуна, ăша.

Тен, ку пулнă шур çамкаллă
Сакăл, виç çулхи тиха?
Вăрçă хирĕнче çухалнă,
Куçĕпе курман суха?

Савăнса кĕçеннĕ пулĕ
Улăхра вăл, ирĕкре.
Урăхла, тен, ун кун-çулĕ,
Кам пĕлтерĕ-ши пире?

Куç умне тухать яр уççăн
Сĕм аваллăх ĕмĕлки:
Ав утать çын çара пуçăн —
Ĕмĕртен килен аки...

Мĕн пурне сăнать пек пÿлĕх,
Каш кашлать пек сĕм вăрман.
Пĕрене турттарнă пÿртлĕх
Эртелпе çынсем унтан.

Пăлхарсем хула çĕклеççĕ,
Чăмăртаннă çĕршыва.
Ÿсĕм тунă алă вĕççĕн,
Тивĕç пулнă мухтава.

Чул тиенĕ йывăр кимĕ
Каçнă сылтăм çырантан:
Турхансен шап-шурă килĕ
Курăнайтăр аякран.

Шалчаран лаша пуç çакнă
Кил карти хапхисенчен.
Сыхлăх пулнă имĕш çакă
Пур усал-тĕселсенчен.

Шăмăллă юман турачĕ —
Чÿклĕх пулнă киремет.
Çиттĕр ун асам-хăвачĕ,
Ан çыхлантăр эсремет.

Акă улăхра ÿкерчĕк:
Юлан утçă инçетрен
Илĕм-тилĕмпе сиктерчĕ,
Хыççăн вĕçрĕ çĕмĕрен.

Вут-кăваррăн хул калакĕ
Çуннине пăхмасăрах
Чупрĕ çиçĕм-урхамахĕ,
Вăл хистерĕ:
«Хăвăртрах!»

Хыçалта тусан кăларчĕ
Халиччен курман эшкер,
Çук вĕсен çын сăнĕ-лачĕ,
Çăмлă ÿчĕсем тискер.

«Ах, çитесчĕ, ĕлкĕресчĕ,
Ÿтрен чунăм тухиччен,
Халăха ман пĕлтересчĕ
Çак инкек-синкек çинчен», —

Харсăр йĕкĕт шухăшларĕ,
Учĕпе пĕрлешнĕ хăй.
Ĕнтĕ паттăрлăх ку мар-и,
Вилĕм умĕн тулнă вăй?

Ак тинех, тинех вăл çитрĕ,
Çич хăлаçлă çÿллĕ кар.
Ирĕк халăх темĕн сисрĕ:
Хапхине уçать Пăлхар.

Кăпăкланнă урхамахĕ
Ÿкрĕ кар хапхи умне,
Унăн юлашки сăмахĕ
Кĕчĕ халăх хăлхине...

Кам пĕлет?
Авал мĕн пулнă —
Çĕр сыхлать вăрттăнлăхне.
Пурринчен паян мĕн юлнă? —
Упрăп эп лаша шăлне.

## Виççĕмĕш çавра

Пăлхар!
Кунта пулни-иртни пăтравлă,
Кая пăхсан — сĕм тĕттĕмлĕх кăна.
Иртнишĕн ман хальччен
чĕрем суранлă.
Илетĕп эпĕ нӳрĕ тăпрана.

Пĕр ывăç çĕр. Мĕскер кăна
курман-тăр,
Кам юнĕпе кăна вăл хĕрелмен,
Кам аттипе шеллевсĕр
таптанман-тăр,
Кам çеç кунта тусла-ютла килмен?

Çак вырăн ячĕ пулнă чаплă,
сумлă,
Ейӳ кайсан килет çурхи пасар.
Ун чух вут кайăкла çĕр тĕслĕ тумлă
Чăпарланса кĕрлет,
шавлать Пăлхар.

Кĕрленĕ те шавланă виçĕ ĕмĕр
Çич ют килсе вутпа салатиччен.
Çав сассене упрать пек
Çĕр-аннемĕр
Пире валли илтмешкĕн халиччен.

Мăнаçлăн халь те курăнать
тĕп мечĕт,
Египет пирамиди пек капмар —
Ку пулнă киреметçĕсен сехмечĕ.
Мавзолейсем вырнаçнă юнашар.

Упраннисем унта-кунта лараççĕ,
Тӳпенелле кармашнă минарет.
Юлман ытти ахаль пӳрт,
тимĕрç лаçĕ,
Хăна çурчĕсемпе ампар-кĕлет.

Мĕн пурринчен халь
юлнă ултă палăк
Пирĕнпелен çитес ăру валли.
Рехмет сана, ĕçчен, управлă халăх:
Эппин, пурах, чĕрех Пăлхар хули.

...Хура кĕр кунĕ.
Уй-хирсем пушаннă,
Асамлă тĕссемпе çиçет ката.
Ват çыранри шăм-шак
ăшне пытаннă
Хĕле хатĕрленсе вăр-вар калта.

Ак тухрĕ куç умне татах ӳкерчĕк:
Ялтан яла çӳрет Хура Эльмук.
Вĕçне-хĕрне çитес çук унăн терчĕ,
Ăна валли хĕвел çути те çук.

Чарлан çунатти
пек шап-шурă çӳçĕ,
Çынсем те хывнă калпакĕсене.
Юрри пекех ай-хай
ытла та йӳçĕ
Куççуль ӳкет алри кĕсле çине:

«Чаплăччĕ Пăлхар,
сумлăччĕ Пăлхар,
Таçти элчĕ те кунта килетчĕ.
Чаплăччĕ Пăлхар,
сумлăччĕ Пăлхар,
Кĕйӳ хули пек çиçсе ларатчĕ.

...Вутлă тăвăл пек килчĕ Супетей,
Пăлхар хулине йăлтах çунтарчĕ.
Килчĕ те пусрĕ хаяр Супетей,
Пăлхар хулине çилпе вĕçтерчĕ».

Пуш Пăлхарта янрать
чĕтревлĕ сасă —
Хура Эльмукăн вилĕмсĕр юрри.
Паян куна çитернĕ халăх ăсĕ
Юррисене. Пиртен те юлччăр-и!

## Виççĕмĕш курăну

*(Çырулла чул)*

Ах, ытла хура кĕр ирĕ,
Çĕмĕрен пекех йĕпхӳ.
Ах, çаплах аваллăх чирĕ
Чĕрене шăнтать-çке сӳ!

Вăхăта хĕç пат! çеç татрĕ:
Утса тухнă вăрăм çул
Кăлтăр-кăлтăр калла кайрĕ —
Çиçчĕр хĕрĕх пилĕк çул.

Ун чухне кĕр кунĕ пулнă,
Çăвăр хурт пекех Пăлхар.

Тĕрлĕ сутăç йышлăн тулнă —
Шăп кăна кĕрхи пасар.

Кар патне çывхарчĕ, çитрĕ
Чи усал, хаяр урта.
Çиçĕм евĕрлĕн хĕç çиçрĕ,
Тытрĕ халăх айпăлта.

Ухă, сăнă, хӳтлĕх, пуртă,
Чӳккеçпе чукмар, кистен
Йăтса тухнă харăс пурте
Ачапча таран килтен.

Чӳлмекпе картан переççĕ
Вутлă нехчĕ, сăмала.
Хурансем сиксе вĕреççĕ,
Чул вĕçет аялалла.

Ах, чакать хула хăвачĕ,
Хапхана ишет таран.
Хӳмене те вут хыптарчĕ,
Пур енчен хирет тăшман.

Ав çывхарчĕ хĕсĕк куçлă
Чи усал этем харри,
Уртипе кунта вăл куçнă,
Çук, çитмен ăна пурри.

Ун умне чĕркуçлентернĕ
Чи илемлĕ пикене,
Супетей ут йĕнерленĕ,
Ури пуснă хĕр çине!

Ах, мĕнле тан мар истори
Валеçет çын шăпине.
Супетей мĕскер-ши турĕ,
Мĕншĕн килнĕ çĕр çине?

Вăл çунтарнă та çаратнă,
Пурпĕр ячĕ — багадур.
Кам тар тăкнă, хула лартнă —
Ячĕ-шывĕ ăçта пур?

Супетей çеç çĕнтерӳçĕ,
Юлнă халăх асĕнче.
Ах, мĕнле танмарлăх йӳçĕ
Икĕ тапхăр хушшинче!

...Çыранра мĕн чул выртаççĕ
Шăмă-кăкшăм таткисем.

Пĕр сăмах та шарламаççĕ
Пăлхарти чул палăксем.

Шур чулсем кашни çырулла,
Арапла пур сас палли.
Тем тесен те çавăн урлă
Пур пире каламалли.

Чăвашсем кунта çӳренĕ
Асăну чысне тума.
Палăк лартнă, хисепленĕ
Пирĕн ăрăва курма.

Таврара пупсем пуçтарнă
Шур çырулла чулсене.
Çĕр чавса веçех пытарнă
Чаплă чирĕк никĕсне.

Ах, епле хаяр-çке вăхăт,
Супетей-багадур пек.
Тăхăнтарнă тăвăр хăмăт
Халăха пуппа тиек.

Юрăсем анчах янраççĕ
Ĕмĕрхи вăрмансенче,
Ирĕк вăхăтсем тухаççĕ
Сăрнайсен хӳхлевĕнче...

## Юлашки çавра

Умра — хăватлă та мăнаçлă
анлă Атăл,
Куç витĕмĕ çитми
кăвак инçет.
Ват çырана çапать
хум çăтăл-сатăл,
Шап-шурă акăш пек
карап иртет.

Шур Атăл çулĕпе
килет кĕр касĕ
Салхулăх та кичемлĕх
суратса.
Пур несĕл-тĕпĕмсем
çĕрте çывраççĕ —
Çут сăнĕсем асамлă та таса.

Шур Атăлăн вăрри
миçех-ши çухрăм?
Куç умĕнчи пур йăлăм утрава

Сăнарăм та пĕрерĕн пăхса тухрăм:
Кашнин çинче хунать çăра хăва!

Унта-кунта хуралнă ват йăмра та
Шывра çăвать чармак тураттине.
Эп вунă ĕмĕр хушшинче куратăп
Юратнă халăхăн историне.

Йăмра пекех эс мар-и,
савнă халăх?
Истори кăкранах сана кассан
Эс тупнă хал çĕнрен
çунат сармалăх,
Ятна манса çул-йĕрсĕр çухалман.

Кун-çул таппи —
пăтравлă тĕпсĕр авăр,
Саманисем те — пилсĕр çавра çил.
Эсир, ватсем,
вутра-шывра путмарăр,
Таçти çĕрте те тупрăр тăван кил.

Ак çывăрать таптанă, ватнă, сӳннĕ
Кĕл айĕнчи шур чуллă ват Пăлхар.
Ман халăха çĕн ĕмĕр пиллĕх
суннă —
Ӳсет, çиçет шур тумлă Шупашкар.

Çыруллă шур чулсем,
Пăлхар шăпи те
Кĕрсе пытанмĕ ĕмĕрлĕх çĕре,
Вĕсен куçне куçмашкăн вăхăт çитĕ —
Мĕнпурĕ вилĕмсĕр историре.

Ялтан яла Хура Эльмук çӳремĕ
Паян кĕсли çине куççуль тăкса.
Чăваш юррин, çĕр пин юррин
илемĕ
Ян кайрĕ чăтлăх вăрмантан тухса.

Ан тив, çухалнă пирĕн эпос-Улăп,
Анчах çĕр пин сăмахĕ иксĕлмен,
Çĕр пин сăрсен çĕршывĕ ĕмĕр пулĕ,
Шупашкарта миçе чипер кермен!

Çĕн эпоса пур халăхпа хайлатпăр,
Манман эпир пĕри те Улăпа.
Çĕршыв чапне пухатпăр
Улăп-трактор,
Ĕçе кӳлетпĕр Атăла ГЭСпа.

Эпир ĕçпе те туслăхпа çеç паттăр,
Пĕр чăмăр пек кашнийĕ пĕртăван.
Хăва пекех пур халăх та хунатăр —
Этемлĕх тухнă пĕр тĕп тымартан!

*В. Эктел сăвăласа çырнă.*

## 16. УЛĂП АЧИ УЛТИЕР

Ял хĕрринче ачасем
Вăй выляса çӳреççĕ.
Улăп ачи Ултиер
Ухă çакса сунарта
Çӳренĕ чух пĕринче
Унта пырса тухрĕ те
Пăхса тăчĕ тĕмсĕлсе.
Хайхискер юрла пуçлать:
— Этем ачи-пăчисем,
Пĕчĕк шăкăр-макăрсем,
Çăлтăр вылять тӳпере,
Уйăх шăвать ун тавра.
Эсир — çăлтăр, эп — уйăх,
Ман вылясчĕ сирĕнпе,
Выляттарăр-ха пĕрле...
Ачисем Ултиере:
— Ухă персе кăтарт, — теç. —
Вĕçсе анан йĕппине
Çыртма пултар шăлупа.

Кап! çыртса чарайрăн тăк —
Вылямашкăн илĕпĕр,
Тытаймарăн тăк йĕпне —
Пĕтĕм айăп хăвăнта...
Улăп ачи Ултиер
Виçĕ аршăн* уххине
Салтрĕ, печĕ çӳлелле.
Нумаях та иртмерĕ —
Ухă йĕппи шăхăрса
Акă анать çĕр çине.
Çав сасăран хăраса
Тарчĕç пĕтрĕç ачасем.
Улăп ухă йĕппине
Кап çеç çыртса лартайрĕ.
Ачасене чĕнчĕ те
Каллех калать юрласа:
— Этем ачи-пăчисем,

*Аршăн — тăршшĕ виçи (7,7 м).

Пĕчĕк шăкăр-макăрсем,
Çăлтăр вылять тӳпере,
Уйăх шăвать ун тавра.
Эсир — çăлтăр, эп — уйăх,
Ман вылясчĕ сирĕнпе,
Выляттарăр-ха пĕрле...
Ачисем Ултиере
Илмеççĕ-ха выляма.
Тепре кăтарт эс вăйна, —
Теççĕ улăп ачине.
— Вăй кăтартас тесессĕн
Манăн мĕскер тумалла?
— Атăл куçне* чăмса кĕр,
Шыв айĕпе виç çухрăм
Кайса тух пăр шăтарса.
Пăр шăтарса тухсассăн —
Вылямашкăн илĕпĕр,
Тухаймасан — вылямăн...
Улăп ачи Ултиер
Атăл куçне сикрĕ те
Виç çухрăм мар, çич çухрăм
Ишрĕ шывăн айĕпе.
Этем ачи-пăчисем
Ку вилчĕ те пуль тесе
Кан-кан пăхса тăраççĕ.
Ялт! çеç тухрĕ Ултиер
Хулăн пăра çĕмĕрсе.
Çыран хĕрне çитрĕ те
Каллех юрлать юррине:
— Этем ачи-пăчисем,
Пĕчĕк шăкăр-макăрсем,
Çăлтăр вылять тӳпере,
Уйăх шăвать ун тавра.
Эсир — çăлтăр, эп — уйăх,
Ман вылясчĕ сирĕнпе,
Выляттарăр-ха пĕрле...
Ултиере ачасем
Каллех вăййа илмереç:
— Тур калашле, виçĕ хут
Эс кăтарт пире вăйна, —
Теççĕ ăна хайхисем. —
Акă ларать çывăхра
Хĕрĕх чалăш хĕрлĕ ту,
Виççĕ тапса çав тăва
Пултарăн-и салатма?
Салатайсан — илĕпĕр,
Салатса яраймасан —
Пĕтĕм айăп хăвăнта...
Улăп ачи Ултиер
Акă пычĕ ту патне,
Сулахай урипеле
Тапса илчĕ те тăва,
Лешĕ кайрĕ чĕтренсе,
Сылтăммипе тапрĕ те —
Ишĕлсе те анчĕ ту.
Пĕчĕкрех тĕме кăна
Юлчĕ унăн вырăнне.
Ачасем Ултиере
Ыталаса илчĕç те:
— Чăн-чăн паттăр! — терĕç те
Пĕрле выля пуçларĕç.
Ывăнса çитичченех
Тĕрлĕ вăйă выляреç.
— Ĕнтĕ эсĕ пирĕн тус! —
Терĕç те Ултиере,
Татах килме каларĕç.

*Г.Ф. Юмарт сăвăласа çырнă.*

## 17. УЛĂП

### Çиччĕмĕш юрă

#### Улăп аслашшĕ патне кайни

Улăп халăх хутне кĕрсе тăшмана хирĕç тухасси, ăна çапса аркатасси çинчен амăшне пĕлтерет. Çавна амăшĕ хирĕçлет, анчах та ывăлĕ хăй ĕмĕтне пурнăçлама хытă тăнине курса унпа килĕшет те аслашшĕ патне ярать. Аслашшĕ Улăпа çичĕ çул хушшинче хресчен ĕçне те, çурт-йĕр лартма та, вăрçă ĕçне те, пурнăçра мĕнле хăйне тытмаллине те, хăйĕн вăй-халне ӳстерме кукамăш патне кайнă чухне мĕнле кучченеçсем илессине те вĕрентет.

---

* Атăл куçĕ — шăнман вырăн

Картлă-картлă пашалу,
Карчĕ тăрăх çу юхтăр,
Пирĕн ырă калаçу
Пехилленсе вăй илтĕр.
Улăп каçпа амăшне
Сăмах калать ак çапла:
— Тăшман кунта пуличчен,
Унтан мăшкăл тӳсиччен
Ăна хирĕç тухмалла,
Йăлт аркатса тăкмалла.
— Ун пек сăмах вакличчен
Шутла пуçна ватиччен.
Эс халь ача, пит айван,
Санран тăшман хăрамасть.
Тăшман кулли пуличчен,
Пуçна уссăр ватиччен,
Ачам, выля лашалла
Е чышăлла, лапталла.
— Тăшман тарçи пуличчен,
Ĕмĕр куççуль тăкиччен
Ӳксе вилем çапăçса,
Çавра пуçа çухатса.
— Ав çилли пур чăххăн та,
Ун хăрушне кам курнă?
Ир юрлакан кайăка
Кушак тытса тĕп тунă—
Терĕ Чĕкеç Улăпа
Лăпка-лăпка çурăмран.
— Анне, эпĕ вĕçкĕн мар,
Пĕлетĕп эп — паттăр мар.
Тăван халăх хĕн-хурта,
Çавна илсем эс шута.
— Юрать, — терĕ амăшĕ,
Ассăн тухрĕ сывлăшĕ.
Улăпа вăл чуптурĕ,
Çавăнтах вăл ăс пачĕ. —
Вăрçă çулĕ тикĕс мар,
Ача-пăча вăййи мар,
Вăрçă ĕçне вĕренме,
Ăсна-тăнна ӳстерме
Эп хушнине тăватăн,
Плиска патне каятăн.
Плиска — санăн аслаçу,
Канлĕ пулмĕ пурнăçу.
Ялан вăрçă, çапăçу,
Хакла ларĕ савнăçу.
Улăп çĕнĕ уххине
Илсе çакрĕ хăй çине.
Çĕмренне те манмарĕ.
Хутаççине тултарчĕ.
Улăп ача çул çинче,
Кучченеççем аллинче.
Хуралту сăрт çуммипе,
Çарăмсан шыв хĕррипе
Ват аслашшĕ кив пӳртне
Улăп çитрĕ çуркунне.
Плиска сатур ачана
Лартрĕ хăйпе юнашар.
Улăпăн уç сăмаххи —
Аслашшĕшĕн сăвапли.
— Эх, асатте, асатте,
Çитересчĕ ĕмĕте,
Тĕп тăвасчĕ тăшмана,
Ман çăласчĕ халăха.
— Ĕмĕтпе çеç пуякан
Ватăлать вăл пăслансах.
Унтан тăшман хăрамасть.
Вăрçă çулне тăриччен,
Хĕçе сулса яриччен
Ăсу-тăну ӳсмелле,
Арçын шутне кĕмелле.
Арçын тени çав пулать:
Ака тăвать, сухалать
Хĕвел анса лариччен,
Тăварлă тар тухиччен.
Çурт-йĕр çаврать хĕрĕхчен,
Яла илем кӳртиччен.
Выльăх усрать кĕтӳпе,
Шăрттан çиет хăнипе.
— Эс мĕн хушан — пурне те
Пурнăçлатăп ĕмĕрте.
Анчах, хаклă асатте,
Çитересчĕ ĕмĕте.
Ав пуçупа шутла-ха,
Вăхăт каять вăраха!
Хăрап кая юласран,
Тăшман кунта пуласран.
— Уншăн эсĕ ан хăра,
Паттăр ĕççем пурнăçра
Эс тăвăн-ха сахал мар,
Халь кăшт иккĕн пурăнар.
Сĕм-сĕм вăрман хушшинче,
Ват аслашшĕ патĕнче,
Улăп çич çул пурăнать,
Çич çул ăсĕ пухăнать.
Вăл вăрман та кăларать,
Кермен лартма пултарать,
Ака тытса сухалать,
Пӳлме тулли тыр тăвать.
Виç çул çӳрет кĕтӳре,

Пит ăста вăл ку ĕçре,
Выльăх хунать кăткăлла,
Самăрланать упалла.
Хăрах куçне хĕсет те,
Çĕн ухăпа перет те —
Çич çухрăмри пакшанне
Сирпĕнтерет пĕр куçне.
Хир ăйăрне тытать те,
Вăшт! утланса ларать те
Пырать урам хушшипе
Çил шăхăртса сиккипе.
Пăлат хĕçне кăларать,
Пуçĕ тавра çавăрать,
Туртса касать хурăна,
Хурăн ӳкет лаш кăна.
Çыру çырать, йăнăшмасть,
Çут çанталăк чĕлхине
Вăл вĕренчĕ тĕппипе.
  Ват аслашшĕ Улăпа
Пӳртре лартрĕ юнашар,
Ăна ăшра мухтаса
Улăппа вăл калаçать:
— Лаша мĕнле чупасси
Тихаранах палăрать,
Арçын мĕнле пуласси
Ачаранах курăнать.
Пан улми йывăççинчен
Пит аякках ӳкмест-мĕн,
Эс, Услати ачи те,
Ăна хыврăн пуль ĕнтĕ.
Эс тăн-пуçран ача мар,
Вăй-халтан та хавшак мар,
Анчах çакна манар мар:
Така пуçне çименрен
Айван шутне эс кĕрен.
Халăх хутне кĕмешкĕн
Арăслан пек пулмалла,
Арăслан пек пулмашкăн
Кукамуна курмалла.
Кукаму сан инçетре,
Çĕр айĕнче, çĕр пӳртре.
Ун патне сан çичĕ çул
Утмалла-ха. Çирĕп пул.
Унăн екки çавнашкал,
Пур енчен те вăл кал-кал,
Тӳрĕ çынна хисеплет,
Кукăр çынна сиенлет.
Кучченеçсем ун валли
Пулма кирлĕ ак çапли:
Çăнăх — салма пĕçерме,
Шăрттан — уяв ирттерме,
Виççĕмĕшĕ — çăпата
Сан пулмалла хутаçра.
Йывăр килĕ тен — йăлтах
Памалла пĕр вăхăтрах.
Çăнăхĕ те ун валли
Пулма кирлĕ ак çапли:
Ни тулă мар, пăрçа мар,
Ни сĕлĕ мар, пăри мар.
Хăвах пĕлен: чăвашра
Урăх тĕслĕ тыр ӳсмест,
Урăх тĕсли — тулайра*,
Кукамуна килĕшмест.
Шăрттан валли вăкăрне
Ӳстермешкĕн пĕлмелле:
Кĕтӳ саран курăкне
Икĕ çĕрте çимелле.
Пĕри — Ейӳ** хĕрринче,
Сарантăвăн айĕнче,
Тепри — унтан кăшт инçе,
Татаймăст*** йăви патĕнче.
Хаклă парне — çăпата —
Кукамуна памалла,
Шăрçа пуçлă пулсан та
Вăл çĕр çула чăтмалла.
Ну, калăпăр, пурне те
Эс хатĕрлен майĕпе.

Анчах сана вĕсем те
Çĕнĕ инкек тухнипе
Кукамуна тĕл пулма,
Унпа ларса калаçма
Пулăшас çук вăхăтрах.
Пулĕç чăрмавсем татах.
Саран курăк çитерсен
Пусăн выльăх-чĕрлĕх эс.
Хатĕрлетĕн шăрттанна
Типĕтме кăмакара.
Анчах шăрттан типĕтме
Эс чĕртеймĕн кăвайтне.
Вут-кăвара пĕтерме
Вутăш çитнĕ çак енне.
  — Темле йывăр пулсан та
Çитетĕпех эп унта! —
Терĕ Улăп татăклăн,
Сиксе тăрсах хастарлăн.

---

* Ют çĕршывра.

** Урал сăрчĕ.

*** Юмахри çăмпа витĕннĕ ăмăрт кайăк.

— Сана хытă шаннăран
Урăхла сăмах санран
Илтме эпĕ шутламан,
Чăн та, эпĕ йăнăшман.
Анчах кунтан кайиччен,
Чаплă ĕççем тăвиччен
Итле ват çын сăмахне,
Ан ман эсĕ вĕсене:
Ватă çынсем умĕнче
Хывса тăрсам калпакна,
Çамрăк çынсем хушшинче
Ан çухатсам ăс-тăнна.
Ват çынсемпе тĕл пулсан,
Халаплама тапратсан
Итлесе лар пуç тайса,
Сăмахсене ăнкарса.
Ху пĕлнине, илтнине,
Ху куçупа курнине
Персе ан яр пӳртешсе,
Ватă çынна эс пӳлсе.
Суйса утăн малалла,
Анчах килен каялла
Ирсĕр суйкăç ятпала.
Тӳрĕ пул та лăпкă пул,
Никама та шар ан ту.
Çыннăн ыр ят саралать,
Пахалăхĕ чысланать
Çиллипе мар, ăсĕнчен,
Хăйне тытма пĕлнинчен.
Çынна сиен тăвакан —
Хăй те çавна куракан.
Кам çунипе каятăн —
Ун юррине юрлатăн.
Хитре тени — виç кунлăх,
Лайăх тени — ĕмĕрлĕх.

Çӳрен лаша — çул тути,
Хитре арăм — хĕн курки.
Вăл пурнăçа салатать,
Кĕлмĕç хутаç çактарать.
Чăн малтанхи арăма
Хӳме теççĕ халăхра.
Унпа пурлăх упранать.
Çавăнпа та эс ăна
Йăтса çӳре алăра.
Тепре мăшăр тупиччен
Шутласа пăх çич хутчен.
Ута лайăх пăхакан
Çуран юлмасть йывăрта,
Ватта лайăх усракан
Выçă лармасть нихçан та.
Амăш çине вĕрекен
Анчăк лекнĕ кашкăра.
Ашшĕ ятне çĕртекен
Пуçне çиет хупахра.
Эрех ан ĕç мухтанса,
Черкке тĕпне çутатса.
Унта хуйăх йăтайми —
Масартинчен хаярри.
Тăшман хирĕç тăрсассăн
Çапăç ая тăвиччен,
Вăл сан айра пулсассăн
Ан тив ăна виличчен.
Кĕççе питлĕ ан пулсам,
Питле ăна тĕл пулсан.
Улăп тимлĕн итлерĕ,
Аслашшĕне пӳлмерĕ.
Ăна ăшшăн тав турĕ,
Ыталаса чуптурĕ.
Сыв пул тесе ал парсан
Ахăрьян патне çул тытрĕ.

## Вун виççĕмĕш юрă

### Улăп кукамăшĕ патĕнче

Чĕкеç ывăлĕн ĕмĕтне пурнăçлама хăй пурнăçне хĕрхенмест, вăл вилет. Улăп çăмха хыççăн çĕр айĕнче пурăнакан кукамăшĕ патне каять. Унта вăл вăй кӳртекен им-çам ĕçет, ашшĕн кĕпе-тумтирне илет. Кукамăшĕ ăна ăсатса янă чухне Çĕрпӳ паттăрпа Сикпăрçана хĕн-хуртан хăтарма сĕнет.

Ай-хай терĕç, мĕн терĕç,
Кĕрекене лар терĕç,
Алла курка тыт терĕç,
Шăрттан касса çи терĕç.
Эй, ял-йышсем, тав сире!

Ирĕк парăр-ха пире
Иртнĕ пурăнăç çинчен
Юрлама чун каниччен.
Улăп киле таврăнсан,
Апат çисе тăрансан

Каласнă тет хурланса
Аслашшĕне асăнса.
— Асатте хăй килĕнчен
Вăрăм çула яриччен
Мана çапла каларĕ:
«Кукамуна кур», — терĕ.
Кукамай ман пурнать-ши?
Кукамая курасчĕ,
Кучченеçсем парасчĕ.
Шăрттан та пур, çăнăх та,
Шăрçа пуçлă çăпата.
Эп пĕлетĕп: ватлăхра
Ман сана халь пăхмалла,
Анчах тăшман таврара,
Ăна ман тĕп тумалла.
Каçар, анне, ывăлна,
Пиллĕхне пар эс мана.
Эсĕ мана пиллесен
Эпĕ пулăп пин çуллăх,
Санран пиллĕх илмесен —
Манра кун-çул çур çуллăх.
Кукамая курасчĕ,
Унпа сăмах хушасчĕ.
  Карчăк йывăр сывларĕ,
Унтан çапла каларĕ:
— Чĕре татти пулсан та
Йывăр сана пулăшма.
Аçу пекех халăха
Юрататăн чунтанах.
Эп те çавах. Аçуна,
Турă хĕрĕ пулсан та,
Тăн çухатсах юратрăм.
Уншăн хĕн-хур кураттăм,
Намăс кĕпе тăхнаттăм.
Юрать аçу хĕрхенчĕ,
Маншăн турĕ ырă ĕç.
Качча илчĕ вăл мана,
Пурăнтăмăр юратса.
Сан кукаму ăçтине,
Хăш ыранта пурăннине
Пĕлекенни эпĕ çеç.
Таталтăрах кун-çулăм,
Анне патне çитерĕп.
Пиллĕх сана, ывăлăм,
Чĕре татти — Улăпăм.
Манăн паян вилмелле,
Вилсен çĕре кĕмелле.
Унччен сана ыр сунса
Хăварас-ха ĕç хушса.
Халех манăн çавăнма,
Кирĕксене кăларма
Мунча хут-ха васкаса.
Мунча кĕрсе тасалсан,
Шур пир кĕпи тăхăнсан,
Кĕмĕл çӳçе турасан,
Аллăмсене лăст сулсан
Пит аякран, инçетрен,
Çут çеçен хир леш енчен
Асар-писер çилпеле
Кĕмĕл тупăк килмелле,
Ман çавăнта выртмалла,
Çĕр айнелле путмалла.
Эпĕ путнă ырăнта
Тимĕр карта çавăр та
Хурал ларсам çавăнта.
Темле хăруш пулсан та
Тимĕр карта ăшĕнчен
Ан кай виçĕ талăкчен.
Виçĕ талăк иртсессĕн,
Шăпчăк сасси илтсессĕн
Эсĕ мана хăварсам,
Кӳлĕ енне уттарсам.
Унта сан пит çумалла,
Ман пата та пымалла.
  Улăп кайрĕ хурланса,
Вĕри куççуль юхтарса
Пуçне тытрĕ аллипе
Хуйăх пусса илнипе.
Кайран чунне пусарса,
Чупа-чупа, васкаса
Муклашкасем пуçтарчĕ,
Мунча хутса çунтарчĕ.
Çитмĕл çичĕ хурăнтан
Милĕк çыхрĕ чăн малтан,
Кайран утрĕ васкаса
Алтăр илме мăн лаççа.
Мăн алтăрĕ пĕр хăех
Çирĕм патман таятех.
Такани те пĕчĕк мар,
Тĕлĕнмелле пит катмар.
Çав такана шывĕнче
Йшме пулать кимĕпе.
  Карчăк кайрĕ мунчана,
Ак пуçларĕ çапăнма,
Милĕкпеле пĕр кана
Вăл кантарчĕ ват шăмма.
Киленмелле çăвăнчĕ,
Ал шăллипе шăлăнчĕ,
Кĕмĕл тура вăл илчĕ,
Çӳç турама тытăнчĕ.

Шурă кĕпе тăхăнчĕ,
Сар хĕвеле пуç тайрĕ,
Аллипеле лăст сулчĕ
Пăхса йĕри-тавралла.
Шăнкăр кăнтăр кунĕнчех
Хĕвел хăвăрт пытанчĕ.
Уяр тăнă çĕртенех
Çиçĕм çиçме тытăнчĕ.
Кĕр-кĕр кĕрлет аслати,
Пĕтĕм тĕнче кисренет,
Улăпсен мăн кил карти
Çил-тăвăлпа кисренет.
Ват юмансем авнаççĕ,
Çĕре пырса çапнаççĕ,
— Таçтан, сăртсем хыçĕнчен,
Шăпăр сасси хутшăнчĕ.
Çиçĕм çиçрĕ ик енчен —
Кĕмĕл тупăк курăнчĕ.
Карчăк тĕлне çитрĕ те
Тупăк анчĕ çĕр çине,
Карчăк кĕрсе выртрĕ те,
Тупăк путрĕ çĕр айне.
Улăп çакăн хыççăнах
Хĕвеле хирĕç çаврăнать,
Ута-ута хуйхăрать,
Вĕри куççуль юхтарать,
Çапла сăмах вăл ваклать:
— Тăван анне, тăван анне,
Халăхшăнах çĕре кĕтĕн,
Тăван анне, тăван анне,
Эс хушнă пек кунтан каятăп.
Кунта юлан эс пĕччененех.
Пӳминкесĕр. Каçарсамăр.
Анне, тăпру çăмăл пултăр,
Çăмăллăх мана санран килтĕр.
Шурăмпуç килсен тула тухăп,
Анчах унта сан сăну çук.
Вăрман хĕрринче куккук авăтĕ,
Анчах унта сан сассу çук.
Хура чĕкеç килĕ чĕвĕлтетсе,
Санăн чĕлхӳ унта та çук.
Хĕвел тухĕ хĕрелсе те,
Ун ăшшинче сан ăшшу çук.
Улăп тимĕр туяпа
Тупăк путнă вырăна
Виç хут çĕре чĕрейрĕ,
Тимĕр карта çавăрчĕ.
Унăн вĕри куççулĕ
Юхрĕ ĕнтĕ тем чухлĕ.
Сылтăм куçран юхнисем
Аслă Çавал пулчĕçĕ,
Сулахайран юхнисем
Кĕçĕн Çавал ят илчĕç.
Тăлăх-турат хуйхине
Нимĕнпе те виçме çук,
Çĕре путнă амăшне
Ним тусан та чĕртме çук.
Е шуйттан, е эсремет
Хытă улать кашкăртан,
Тăлăх-турат сехрине
Кăларасшăн сассипе,
Тимĕр карта хăватне
Пĕтересшĕн вăл тем пек.
Анчах карта парăнмасть,
Усалсене çывхартмасть.
Арçурипе ват шуйттан
Хаярланса çитнипе
Ыткăнаççĕ мăн çăлтан
Ватă юман хушшипе.
Юмансене кăклаççĕ,
Пĕлĕт çине пересçĕ.
Çил-тăвăллă пулаççĕ,
Кӳлĕ çийĕн вĕçеççĕ.
Асамăçĕ пĕр енче
Тинĕс пулма ĕлкĕрчĕ.
Тимĕр карта умĕнче
Шавламашкăн тытăнчĕ.
Тинĕс хумсем кăларса
Çĕре çапса ватĕччĕ.
Картана йăлт салатса
Карчăк ӳтне çăтĕччĕ.
Тимĕр карта патĕнче
Тĕнче тăрать кĕрлесе,
Тимĕр карта варринче
Улăп ларать тĕлĕнсе.
Кун иртет те, каç килет,
Виçĕ талăк та çитет.
Таçтан питĕ аякран
Автан сасси илтĕнет.
Часах тимĕр картаран
Мĕнпур усал сирĕлет.
Ылтăн хĕвел çутатса
Ăшăтмашкăн тытăнчĕ.
Кайăк-кĕшĕк янратса
Юрламашкăн пуçларĕ.
Пирĕн Улăп та часах
Кил еннелле талпăнчĕ.
Килне çитсен çавăнтах
Çĕнĕ тумтир тăхăнчĕ.
Çăпатипе шăрттанне,

Пур пек салма çăнăхне
Кутамккана чикрĕ те,
Алла туя тытрĕ те
Улăп тухрĕ çул çине,
Анчĕ кӳлĕ хĕррине.
Кĕпер çине кукленчĕ,
Умри шывран тĕлĕнчĕ:
Кӳлĕ шывĕ чӳхенет,
Кассăн-кассăн çиçĕнет,
Алă çине юхăнать,
Улăп питне хăй çăвать,
  Кĕсле кĕвви янрасан,
Шур ал шăлли кăларсан,
Улăп унпа шăлăнсан
Чипер каччă вăл пулать.
Çурхи сарă хĕвелле
Сăнĕ-пичĕ курнать-çке,
Çӳлти кăвак пĕлĕтле
Кăвак куçĕ çунать-çке,
Хирти кăлкан евĕрлех
Мамăкланчĕç çӳçĕсем,
Яштак хурăн вуллиллех
Курăнаççĕ аллисем.
«Ак çак аннен вил тăпри,
Тăпри çăмăл пултăр-и», —
Терĕ Улăп ăшĕнче
Вут пек мăкăнь умĕнче.
  Мăкăнь чечек сарăлчĕ,
Ылтăн арча курăнчĕ,
Улăп кăштах тĕкĕнчĕ,
Ылтăн арча уçăлчĕ.
Улăп пăхать арчана,
Курать пурçăн çăмхана,
Илме тăрать вăл ăна,
Çăмхи кусать вăрмана.
  Пурçăн çăмха йĕрĕпе
Улăп утрĕ вăрмана.
Çăмха пырать сиккипе, —
Ăçтан тытан халь ăна?!
Ватă юман кутĕнче
Çăмха тăпах чарăнчĕ,
Темле шăтăк умĕнче
Иккĕ-виççĕ çаврăнчĕ.
Шăтăкалла кĕриччен
Çиçĕнчĕ вăл çиçĕм пек.
Çăмха хыççăн Улăп та
Кĕрсе кайрĕ çавăнта.
  Çĕр айĕнчи çулпала
Улăп утрĕ малалла.
Кайсан-кайсан пĕр çĕрте —
Çĕр пӳрт унăн умĕнче.
Шак шаккасан алăкран
Уçăлать вăл сассăрах.
  Пӳрчĕ таса, тĕттĕм мар.
Пĕренисем ылтăнран.
Пӳлĕм урлă каçрĕ те,
Сас илтĕнчĕ тĕпелте.
Улăп уçрĕ алăкне,
Ват юманран тунине.
Çут пӳлĕме кĕчĕ те,
Çара пуçăн тăчĕ те
Курах кайрĕ: сак çинче,
Хаклă чулран тунинче,
Ларать карчăк, ватăскер,
Юр пек шурă çӳçлĕскер.
— Мĕнле, ăçтан, мĕн майпа
Эсĕ килтĕн ман пата? —
Карчăк ыйтрĕ ват саспа.—
Çын килменни, чăнах та,
Иртрĕ пуль-ха пин çулах.
  Улăп карчăк умĕнче
Шăппăн-шăппăн пуç таять.
Унтан карчăк умĕнче
Çапла сăмах вăл ваклать:
— Çĕре кĕчĕ ман анне,
Йывăр мана пĕччене.
Ун вил тăпри купинчен
Кĕске вăхăт хушшинче
Мăкăнь чечек çитĕнчĕ,
Тĕлĕнмелле çурăлчĕ.
Çавă чечек ăшĕнче
Ылтăн арча курăнчĕ.
Эпĕ пăхрăм арчана —
Курах кайрăм çăмхана,
Илме тăтăм та ăна —
Çăмха тарчĕ вăрмана.
Çăмха хыççăн килтĕм те
Çитсе кĕтĕм çак пӳрте
Кукамайпа тĕл пулма.
Ăна курман пулсан та
Унпа ларса калаçма
Мана хушрĕ асатте.
Вăл пит ватă халь ĕнтĕ,
Çутă вара ăс-тăнран.
Плиска ятлă ват ăсчах.
— Сан аслаçу Плиска-и?
Чăн та эс ман кăкран-и? —
Карчăк ӳкрĕ хыпăнса,
Улăп кайрĕ савăнса.
— Ах кукамай, кукамай!

Кунта лайăх çитнĕ май
Кучченеçе эс тыт-ха.
Акă шăрттан, çăпата,
Салма валли çăнăх та.
Улăп сисрĕ: кучченеç
Кукамăшне кăмăллă.
Унпа эпĕ сăпайлă
Калаçмалли юлчĕ çеç.
Кукамăшĕ кăшт тăрсан,
Шур çĕлĕкне тăхăнсан
Кушаккине йыхăрчĕ,
Арча илсе тухтарчĕ.
Арчи ларать çуталса
Çурхи сарă хĕвелле.
Улăп тăрать хумханса
Çул хĕрринчи чечекле.
Ылтăн арча уçăлать
Кĕмĕл кĕсле кĕввипе,
Карчăк тути йăл кулать
Арча уçă тăнипе.
— Аннӳпе сан аçуна
Пулăшнă эп яланах.
Ах, сана та, ах, ачам,
Йывăр килсен манас мар.
Вара тепĕр самантран
Чапла ылтăн арчаран
Ылтăн уçă кăларать.
Кайран, темĕн калаçсан,
Улăп патне çывхарсан
Хăй шухăшне вăл калать:
— Эп çакăнта, çĕр пӳртре,
Пин-пин çулсем пурăнап,
Çĕр айĕнчи тĕнчере
Ятлă-сумлă шутланап.
Хура халăх куççульне,
Чăтма йывăр хĕн-хурне,
Тумлам-тумлам пуçтартăм,
Çĕр кăшăллă пичкене
Яра-яра тултартăм,
Унтан вара вĕсене
Çĕр çул хушши пăтратрăм,
Вăй илмешкĕн çавсене
Нумай çĕр çул кирлĕччĕ,
Йӳçсе çитсен ĕçтерме
Кирлĕ çынна кĕтнĕччĕ.
Куççуль сиксе йӳçиччен
Пысăк нӳхреп чавтартăм,
Тăшман тавраш сисиччен
Ылтăн çăра тутартăм,
Куççульпеле хуйăхне
Йӳçсен ырă ĕмĕтпе
Лартрăм вăрттăн нӳхрепе,
Унтан нӳхреп алăкне
Вăт çак ват çын аллипе
Питĕртĕм эп уççипе.
Унăн ылтăн уççине,
Уйăх çурă тунине,
Пытартăм çак арчана.
Питĕрнĕ чух чунтанах
Сăмахпала хытарсах
Каларăм эп ак çапла:
«Ылтăн арча, хуçа пул,
Ан уçăлсам тăшманшăн.
Эс сыхлакан — хаклă мул
Питĕ кирлĕ чăвашшăн».
Чăваш халăх куççулĕ,
Чăтма йывăр хĕн-хурĕ,
Йӳçсе вăйне илсенех,
Ĕçме вăхăт çитсенех
Ĕçтересшĕн эп ăна
Хам суйланă çамрăка.
Çав куççуле ĕçекен
Ялан ăспа çӳрекен
Тӳрĕ чунлă пулмалла,
Чĕри тапми пуличчен,
Таса кусĕ сӳниччен
Ун халăхшăн тăмалла.
Ăна ĕçсен çавăнтах
Туймалла çав самантрах
Хура халăх хуйхине,
Вăйĕ пин хут ӳснине.
Эсĕ ун пек пуласси
Кучченеçрен курăнчĕ.
Илсем, ачам, çăраççи,
Вăл сан енне пăрăнчĕ.
Ятлă нӳхреп пулсан та,
Ăна кайса уçар-ха.
Сан вăйлă çын пулмаллах,
Ĕçтерем çав им-çама.
Йӳçек куççуль-им-çама
Улăп ăсрĕ чĕреспе.
Ăна ĕçрĕ ерипе,
Сывламасăр, тĕппипе.
— Юнăм кайрĕ вĕресе,
Ăшăм килчĕ пĕçерсе.
Чĕремре тем уçăлчĕ,
Тăнăм-пуçăм çуталчĕ.
Çав пуçăмри çутăпа
Куççăрах эп курмалла,
Туйăмпа та, ăсăмпа

Хăватлантăм пулмалла.
— Ĕç-ха тепре тĕппипе,
Хам алăпа ăснине! —
Терĕ карчăк Улăпа
Ăш кăмăлпа лăпкаса.
  Кукамăшĕ панине
Улăп ĕçет тĕппипе.
— Акă, — тет вăл кăшт тăрсан,
Икĕ хулне вылятсан,—
Вăй хутшăнать вĕçĕмсĕр,
Халь шуйттана çĕнтереп.
— Ĕç-ха эсĕ çакна та, —
Карчăк калать Улăпа.
Тепĕр чĕрес тултарса
Ĕçрĕ Улăп им-çама.
Ĕçсенех вăл ÿт хушса
Ак пуçларĕ сарăлма.
— Халь эп ĕнтĕ, кукамай,
Калатăп-ха сăмах май,
Аркататăп сăртсене,
Вун ик пуçлă çĕлене.
  Кукамăшĕ Улăпа
Пÿлчĕ ырă сăмахпа:
— Çитĕ, урăх кирлĕ мар,
Ӳсетĕн-ха, ÿсетĕн,
Пулăн вăйлă та патвар,
Ват юманран иртетĕн.
Ĕçÿ-тăну ĕмĕрлĕх
Пултăр мĕнпур халăхшăн,
Паттăр вăю вĕçĕмсĕр
Пултăр тăван çĕршывшăн.
Пиллĕх сана ыр курма,
Ыр ĕç туса пурăнма.
— Ах, кукамай, тавтапуç,
Халăхшăн ман çавра пуç, —
Терĕ Улăп хумханса,
Тупа тытса сăмахпа.
  Ылтăн сарнă пÿлĕмрен,
Мăн капан пек çÿпçерен
Карчăк пачĕ Улăпа
Тĕрленĕ шур сăхманпа
Шăрçа пуçлă çăпата.
Мерчен çиçет çавăнта.
— Ку сăхманпа çăпата
Каяççĕ-и кăмăла?
Вĕсем аçун. Тахçанах,
Эс çуралман вăхăтрах,
Вăл хăварчĕ çакăнта
Упрамашкăн ман пата.
«Кирлĕ çынна пар», — терĕ,
Сана парап вĕсене.
Йывăр чухне иккĕш те
Сана сыхлĕç пур енчен.
  Улăп тухса кайиччен
Кукамăшĕ шур çÿçне
Кассанах пуç тÿпинчен
Ал лаппине хучĕ те
Кашни çÿçне шутларĕ,
Ункăласа майларĕ,
Унтан пĕчĕк хутаçа
Персе чиксен вĕсене
Çакрĕ Улăп мăйĕнчен.
Пĕрле ларчĕç юнашар
Çапла сăмах каличчен:
— Çулу пулать тикĕс мар,
Хĕн-хур куран пит нумай.
Çÿç пĕрчисем хутаçра
Çитмĕл çиччĕ, ан мансам,
Вăю пĕтсе çитсенех
Çунтар пĕрне хутаçран.
Çав çÿç çунса пĕтсенех,
Эс пулсассăн таçта та,
Çÿç пĕрчийĕ асамран
Вĕçсе çитет аякран.
«Ват кукамай, пулăшсам,
Хура халăх, ан мансам», —
Тесе чĕн те эс мана,
Хăвăрт пулăшăп сана.
Халăхпала пĕр пулсан
Никам айне лекместĕн,
Ман пиллĕхрен тухмасан
Ялан сывă çÿретĕн.
Çунмăн эсĕ вутра та,
Путмăн эсĕ шывра та.
Чăваш халăх хушшинчен
Виçĕ паттăр тухмалла,
Çав виç паттăр шутĕнчен
Эс чи вăйли пулмалла.
Çĕрпÿ паттăр тыткăнра,
Ăна сан халь çăлмалла.
Сикпăрça пит аякра,
Сан ăна та тупмалла.
Çĕрпÿ паттăр тамăкра,
Туçи сăрчĕ айĕнче.
Нумай пин çын асапра
Халĕ çав сăрт айĕнче.
  Çав сăмахпа Улăпа
Карчăк ячĕ ăсатса.
Пысăк вăрăм утаспа
Улăп утрĕ ярăнса.

## Вун тăваттăмĕш юрă

### Улăп çĕрпӳ паттăра çăлни

Улăп Туçи сăрчĕ айĕнче виçĕ пуçлă çĕленпе çапăçса ăна аркатать. Çĕрпӳ паттăр сăнчăрта питĕ йывăр хĕн курать. Ăна Улăп сăнчăртан хăтарать. Иккĕшĕ Туçи сăртне йăвантараççĕ, унти халăха тыткăнран хăтараççĕ.

Караппăлсем Капкасран*,
Çӳллĕ сăртсем тăрринчен,
Эпир килнĕ Актайран,
Аслă Çавал хĕрринчен.
Унта, çавра лапамра,
Ӳсет лапсăр хурама
Паха чăваш çĕрĕнче.
Хулисенче, ялсенче,
Вăрманĕнче, уйĕнче,
Пин-пин çырма-çатринче
Ун пек йывăç халь çук та...
Ват хурама пин çулта,
Пĕччен ларать вăл уйра.
Аякранах курăнать,
Çын пырсассăн савăнать.
Нумай тӳснĕ пурнăçра,
Курнă Улăп паттăра
Çĕр тĕпĕнчен тухнине,
Тухсан мĕскер тунине.
Улăп тухсан çĕр çине
Савăнăçлăн çиçнĕ те
Ват хурама умĕнче
Тĕрĕсленĕ хăй вăйне.
Çĕр çул ӳснĕ юмана
Тăпăлтарнă вашт! кăна.
Тураттинчен тасатсан
Тукшан тунă çавăнтан.
Йăтса çапать тукшана —
Аври кăна алăра.
Хăй те кĕтмен хушăрах
Ӳссе каять шутсăрах:
Сĕм вăрмантан çӳллĕрех,
Калай сăртран пĕчĕкрех.
Уй тӳпине çитсенех,
Тумланас шут килсенех
Шур чул çине ларать те
Асăнать вăл амăшне,
Çăпатине кăларсан
Ура сырать васкасах.
Çăпати ун — сар чĕнрен.
Пуçĕсене тул енчен
Шăрçаланă мерченпе,
Илемлетнĕ кĕмĕлпе.
Сăхманне вăл тăхăнсан
Йăл-йăл кулса савăнать.
Çав сăхмана хулара
Çитмĕл çĕвĕç çĕленĕ.
Сар пикесем улахра
Пурçăн çиппе тĕрленĕ.
Тĕлĕнмелле тĕрринчен:
Аслă Атăл хум ярать,
Вĕт пулăсем çавăнтах
Вăй выляççĕ савăнсах.
Сăхман умне, пĕр тĕле,
Пин-пин тĕслĕ çиппеле
Эрешленĕ хир сăнне,
Чăваш ялĕн илемне.
Унта хĕвел тухнă чух
Сарă автан автать-çке,
Кĕтӳ иртсе пынă чух
Пике кулса тăрать-çке.
Шурă сăхман аркинче
Чĕмпĕр хули курнать-çке,
Кермен лавкка хӳттинче
Хĕрпе каччă тăрать-çке.
Яштак каччă аллинче
Пурçăн тутăр вĕçет-çке,
Нар пек пике чĕринче
Савнăç кĕрлет тинĕс пек.
Çĕрпӳ паттăр тыткăнра
Сисет Улăп утнине,
Ал-уринчи сăнчăра,
Алă патман туртнине,
Турта-турта татасшăн,
Сăрт айĕнчен тухасшăн.
Анчах сăнчăр парăнмасть,
Татăлма та шутламасть.
Çĕрпӳ паттăр кăшкăрса
Чĕнет çăлма тыткăнран,
Улăп çавна тăнласа
Хăпарать пĕр лапамран.
Улăп каллех юмана —
Пин çулхи утамана —

* Капкас — Кавказ.

Тăпăлтарчĕ ним те мар.
Тукшан турĕ çавăнтан,
Тĕрĕслерĕ — пит аван!
«Тукшан пулчĕ алă май», —
Тесе утрĕ сăрталла.
Улăп тăвать пĕр утăм,
Хыçа юлать çич çухрăм,
Персе çитет сăрт патне,
Анмалла ун сăрт айне.
Анчах шăтăк курăнмасть,
Алăк-хапха палăрмасть.
Улăп тарăн шухăшра
Ларать пысăк чул çине.
Чулĕ путать йывăрпа,
Шăтăк пулать хайхине.
Сăрт айĕнчен чашкăрса,
Виçĕ пуçне каçăртса
Тухать çĕлен виркĕнсе,
Вут-çулăма сирпĕтсе.
Вăл тухсанах Улăпа
Çунтармашкăн ыткăнать,
Чанкăр-чанкăр сăнчăрпа
Яваклама тытăнать.
Пуçĕсене сулкалать,
Шăлĕсемпе шак шаккать,
Шăхăрать те ахăрать,
Улăпа вăл кăшкăрать:
— Сана никам йыхăрман,
Ма килтĕн-ха эс, тăмсай?
Эс кунта ним çухатман,
Мĕн çÿретĕн шăршласа?
Çĕлен çÿрет чашкăрса
Улăпа кĕç çăтасла,
Вут-хĕм сапать алхасса
Пурте çунса каясла.
Анчах çав вут-çулăмран
Улăп ним те шикленмест,
Кукамăш пил панăран
Шур сăхмана вут тивмест.
Çапать çĕлен Улăпа
Çитмĕл хăлаç хÿрипе,
Улăп ăна тарăхса
Сирсе ярать аллипе.
Тукшанĕ ват юманран,
Вăшт çĕкленет аванран.
Тукшан анать шăхăрса,
Çĕлен пуçне лапчăтса.
Улăп вилнĕ тăшмана
Сирсе ярать аякка,
Кĕрсе кайма сăрталла
Час тасатать шăтăка.
Сăрт тĕпнелле аннă чух
Хĕрĕх алăк уçалать,
Тĕпне анса çитнĕ чух
Хĕрĕх алăк хупăнать.
Аялта, сăрт кукринче,
Симĕс çулăм варринче
Çĕрпÿ паттăр йынăшать.
Çавах паттăр мăн сăрта
Йăтса тăрать çурăмпа,
Ялкăшакан çулăма
Сÿнтересшĕн тар тăкса.
Çĕрпÿ паттăр Улăпа
Кĕтсе илет сăмахпа:
— Ялкăшакан çулăма
Хăватăм çук сÿнтерме,
Çурăм çинчи сăртăма
Вăйăм çитмест тÿнтерме.
Ан тив-ха вут кăвара,
Аркатмашкăн тăхта-ха.
Ялкăшакан кăварсем —
Вĕсем пурте этемсем.
Мана çăлма çакăнта
Вĕсем килнĕ çак сăрта,
Тимĕр тылă кашнинне
Сÿслентернĕ ÿт-пĕвне.
Халĕ вĕсем çунаççĕ,
Анчах çунса пĕтмеççĕ.
Ман пек асап кураççĕ,
Тăшман тарçи пулмаççĕ.
Мана çăлас тесессĕн
Çак сăнчăра татсамччĕ,
Ăна татса персессĕн
Сăрта тĕртсе ярсамччĕ.
Улăп паттăр ик алпа
Ярса илчĕ сăнчăра,
Ăна мĕнпур вăй-халпа
Вăл татасшăн туххăмра.
Анчах сăнчăр татăлмасть,
Çип пек пулса тăсăлать,
Улăп ăна пăрахмасть,
Турта-турта çăмхалать.
— Эх, халь хачă тупасчĕ,
Касасчĕ те татасчĕ, —
Терĕ Улăп аптраса,
Çăмхана хыт тарăхса.
— Хачă кирлĕ пулсассăн
Чавсам çĕре аллупа,
Пĕр ик-виç шит
чавсассăн

Курăн ăна куçупа, —
Таçтан сасă илтĕнчĕ,
Çĕр кисреннĕн туйăнчĕ.
Улăп сасă илтсенех
Хăй умнелле пĕшкĕнчĕ.
Умри çӳппе сирсенех
Çĕрпӳ паттăр кăшкăрчĕ:
— Сасă сана улталать,
Вăл халь санран мăшкăллать!
Унта хачă тупаймăн,
Тимĕр тылла курайăн.
— Хачă ăçта выртнине
Эп пĕлетĕп халь тинех, —
Терĕ Улăп вăшт тăрса,
Сасă енне çаврăнса.
Вăл аптраса тăнăран
Такам кулма тытăнчĕ,
Тусан вĕçсен шăтăкран
Ватă Тивре курăнчĕ.
Тивре ларать çĕр çинче,
Капмар шур чул хушшинче,
Хӳрипе тек пăркалать,
Çавра çилсем кăларать.
Улăп çĕре чавас пек
Хăй умнелле пĕшкĕнет,
Тивре кĕçех ташлас пек
Хуçкаланма пикенет.
Тылă çине утланать,
Шăлне йĕрме тытăнать,
Улăп патне çывхарать,
Ăна хулран çакăнать.
Улăп ватă Тиврене
Ярса илет хулĕнчен.
Çăмхаланă çиппине
Сӳтет кирлĕ таранччен.
Чăркать çиппе Тиврене
Унтан çăмха тăвасла,
Тивре сикет çӳлелле
Чулран хăйăр пуласла.
— Айта çĕр чав! Чавмасан
Пуçна çурап тукшанпа,
Халех хачă тупмасан
Тытса тыллап тылăпа.
Тивре чавнă çĕр çинче
Улăп курать пит чипер
Вăрăм хачă выртнине,
Ăна илет аллипе.
Çĕрпӳ çинчи сăнчăра
Улăп касать хачăпа,
Тиврене хыт тарăхса
Ыткăнтарать тапкăпа.
Тылă патне вăлваскать,
Ăна çапса аркатать,
Туçи сăрчĕ çавăнтах
Икĕ пая уйрăлать.
Çĕрпӳ паттăр пĕр пайне
Йăвантарать пĕр енне,
Улăп паттăр теприне
Сирет айлăм хĕррине.
Туçи сăрчĕ йăвансан
Сӳнет тамăк вучĕ те,
Çĕрпӳ паттăр сас парсан
Вутран çынсем пулчĕç-çке.
Улăп Çĕрпӳ паттăрпа
Хăпарчĕçĕ сăрталла,
Кайран уçă сасăпа
Вăл каларĕ ак çапла:
— Туçи сăрчĕ тĕпĕнчен,
Çунакан вут вырăнчен
Чул пуçтартăм — пĕр ывăç,
Вăтăр иккĕ, ан манăр.
Вĕсем чунлă. Тавтапуç!
Çуннă-çуннă нумай çул —
Пулса выртнă катăк чул.
Мĕн чул асап чăтнă пуль!
Пурте курăр çавсене,
Ывăтатăп кай енне.
Çак вăрманлă çĕр çине
Улăп печĕ чулсене
Сĕм-сĕм вăрман хушшине
Сапаланма вăрманта.
Улăп тăчĕ шутласа
Чулсем çинчен пулмалла.
Сăмах тăсрĕ ак çапла:
— Чулсем ырă чунлă та
Хăйсем ӳкнĕ вырăнта
Çăлкуç пулĕç юхăнма.
Çав та пултăр малашне:
Тăр шыв хĕре килĕштĕр,
Унтан выртса шыв ĕçтĕр,
Çав вырăнтах çĕр каçтăр,
Вăл каччăпа тĕл пултăр,
Пĕр-пĕрине юратчăр,
Çав вырăна ял лартчăр,
Çĕнĕ ăрат çитĕнтĕр.
Паттăр ялсем ку теччĕр.

## Вун улттăмĕш юрă

### Улăппа Нухрат патша хĕрĕ Сарине

Ял халăхĕ патша хĕрĕ Сарине Илмейккер апачĕ пулма кайнишĕн йĕрет. Чăваш юрришĕн Улăппа Илмейккер хушшинче çапăçу пулса иртет. Улăп Илмейккере çĕнтерет. Чăваш юррипе Саринене вилĕмрен çăлать. Сарине ăна вилĕмрен çăлнăшăн ятлă çĕрĕ тăхăнтартать.

Шикли шиклех шикленет,
Кĕрĕкпеле пĕркенет,
Хăраманни хайлашать,
Пур ĕçе те пултарать.
Улăп утать айлăмпа,
Çитсе кĕрет пĕр яла.
Ялти халăх кулянать,
Вĕри куççуль юхтарать.
Ял хушшинчи ушкăна
Улăп утса çитсенех
Пуçне усса карчăка
Ыйту парать çакăн пек:
— Кунта çынсем тем чухлех,
Йăх пухăвĕ пырать тен?
Мĕншĕн пурте йĕреççĕ,
Вĕри куççуль тăкаççĕ?
Ватă карчăк Улăпа
Ларма хушрĕ хăй çумне,
Вара йывăр хуйăхпа
Вăл пуçларĕ пуплеме:
— Эх çав, ачам, пурнăçра
Куççуль юхмасть пĕр нимсĕр.
Телей-çыру тăшманра,
Çавăнпа чăваш телейсĕр.
Чăваш чунне пусарма,
Асаплăхне чакарма
Вăрттăн, тăшман сисиччен,
Юнлă, йўçĕ куççультен
Чăваш юрă ўстернĕ,
Сĕм вăрмана вĕçтернĕ.
Халăх тăшман сисиччен
Сĕм-сĕм вăрман хушшинчен
Юрра чĕнсе итлетчĕ,
Юрламашкăн ыйтатчĕ.
Халăхăн хăй юрринчен,
Çĕр пин юрă кĕввинчен
Чĕри лăштах пулатчĕ,
Вăй-хăвачĕ хушнатчĕ.
Чăваш юрри кайăкчĕ,
Сар кайăкран хаклăччĕ.
Халь вăл ирсĕр çĕленре,
Хĕн-хур тўсет инçетре.
Çăткăн çĕлен чăвашран
Ыйтать пике кунсерен:
«Хĕр памасан юрăран
Ним юлмасть, — тет, —
çур çĕрччен».
Кашни каçах çак ялта
Пуху пырать мăн касра.
Кашни пуху хушнипе
Шăпа тытать куççульпе.
Ĕнер вилĕм шăпине
Патша хĕрĕ тытрĕ-çке.
Патша хĕрĕ, Сарине,
Çĕлен патне утрĕ-çке.
Патшан кĕçĕн хĕрĕшĕн,
Сар чечек пек пикешĕн,
Халăх выртса хыт йĕрет.
Мĕншĕн тетĕн? Пĕлтерем.
Вăл ĕç пулнă тахçанах,
Пĕр пин çул пуль каярах.
Чăваш лекнĕ чурана.
Тăшман хунĕ çав тери
Пулнă теççĕ чун илли.
Вăл хушнипе Чăвашра
Арçын ача çуралсан,
Вăрттăнлăхра пулмасан,
Йыт апачĕ пулнă тет.
Арсем пĕтсе пынă тет.
Çав хăрушă вăхăтра
Çуралнă тет пĕр ялта
Чипер пике Юрекке.
Пике ўссе çитсенех
Чаплă çар пуç пулать тет.
Ун çарĕнче хĕр кăна.
Кашнин пулнă урхамах.
Çав çар кĕске вăхăтрах
Тăшмансене аркатса
Вăтам çĕр тинĕс хĕррине
Çĕр кăвапине куриччен,
Çĕр юпине* куриччен
Çулне тăснă анаçа.

---

* Гибралтар патĕнчи тинĕс пырĕнчи сăрт.

Чăваш патши Юрекке —
Чаплă патша тĕнчере.
Ун тĕп хули Шир-Пăлхар
Ялан пулнă хисепре.
Юрекке патша ватăлсан
Хули путать çĕр айне.
Вăл унтан та чăваша
Ку таранччен пулăшать.
Хăй вырăнне хăварма,
Хăй пек пире пулăшма
Юрекке патша вăрттăнра
Никам курман вăхăтра
Хăй çĕррине, хаклине,
Куйкăрăшран илнине,
Панă пулнă пĕр хĕре.
Вăт çав хĕре çак ялта
Шăпа тытнă вăхăтра
Халăх пĕлчĕ ăнсăртран:
Куçлă çĕрĕн хуçийĕ
Патша хĕрĕ Сарине.
Шурă ылтăн ун çĕрри —
Асамлăхпа çыхăнни.
Çавăнпа çĕрри йăлт! çиçрĕ,
Кам пулнине пĕлтерчĕ.
Çĕрĕ çиçнине курсанах
Ватă çынсем çавăнтах
Аса илчĕç çиййĕнчех
Чăваш патши çуртĕнче
Пулса иртнĕ пĕр ĕçе.
Пулнă ĕçе ăнкарма
Пике çинчен калам-ха.
Çав хĕр ашшĕ — ват Нухрат —
Чăваш патши тахçанах.
Пăрчкан ятлă амăшĕ,
Вăл кăмăлран тасаччĕ.
Çуратсанах ачине
Вилчĕ хĕне кайнипе.
Ăмăрт кайăк сĕчĕпе
Хĕре чăпăл тунă чух
Сĕчĕ юхрĕ пахчана,
Тем тусан та чарма çук.
Курăк çинче сĕт çунсан
Вутра чечек çуралчĕ,
Сас илтĕнсен, çил тухсан
Ватă карчăк курăнчĕ.
Чăпăл ачи ун патне
Яр! ярăнчĕ чĕкеç пек.
Сарă чечек ялкăшсан
Иккĕшĕ те çавăнтах
Çухалчĕçĕ самантрах.
Ирпе, автан авăтсан,
Сарă хĕвел хăпарсан
Чечек каллех çуралчĕ,
Патша хĕрĕ курăнчĕ.
Вăл ярăнчĕ акăшла,
Ыталарĕ патшана.
Ылтăн çĕрри пӳрнинче
Хывăнмарĕ нимле те.
Çавна кура ваттисем,
Патшаран та аслисем,
Хăруш тăшман хăлхине
Çитмелле мар пуплерĕç:
«Ку ылтăн çĕр — хаклă çĕр,
Юрекке патшан пиллĕхĕ.
Патша хĕрĕ — пиллĕ хĕр,
Çепĕç — сарă чепченрен*.
Чипер — сарă чечекрен».
Сарине ят çавăнпа
Ăна пачĕç савăнса.
Çав Сарине питĕнче
Çурхи хĕвел вылятчĕ.
Сарă пурçăн çӳçĕнче
Çамрăк уйăх ташлатчĕ.
Хĕвел ăшши çитмесен
Ăшăтатчĕ пичĕпе,
Уйăх çути ӳкмесен
Çӳçĕ çутă яратчĕ.
Куçĕ — çутă тĕнчеччĕ,
Чие çырли — тутиччĕ.
Ун пек хĕре кураймăн,
Çут тĕнчере тупаймăн.
Утти — акăш ишиччĕ,
Сасси — кĕсле кĕввиччĕ,
Юрри — шăпчăк юрриччĕ,
Тĕлĕнетчĕ çут тĕнче.
Калаçсассăн çав хĕрпе —
Сар çупа пыл çирĕм тен,
Чечексем — чи хитрисем,
Çĕр сĕткенне илнисем,
Тĕлĕннипе çав хĕртен
Пуç таятчĕçименсех.
Нухрат патша çиллине
Çил пек сирсе яратчĕ.
Турхансемпе мăрсине
Иртĕхмешкĕн памастчĕ.
Чăвашсен тĕп хулинчен
Хыпар килчĕ ирхине.
Вăт çав хыпар пирĕнне

* Чепченрен — шăпчăкран.

Туртса çурать чĕрене.
Нухрат патша çынсене
Чĕннĕ теççĕ керменне.
Каланă тет хурланса
Сăмаххине ак çапла:
— Илмейккертен, çĕленрен,
Çăлакана хĕрĕме
Кĕрӳ тăвăп эрнерен
Патша пулма ӳлĕмрен.
Илмейккерпе çапăçма,
Вун ик пуçне аркатма
Тимĕр кăвак йăрипе
Мăрса кайнă çиçтерсе.
Мăрса камне пĕлетпĕр,
Унтан ырлăх кĕтместпĕр.
Вăл халăха сутатех,
Çĕлен майлă пулатех.
Сăмах çӳрет ак çапла,
Эс те илтнĕ пулмалла.
Çуралнă тет пĕр паттăр,
Çавна хытă шанатпăр.
Чăваш халăх юррине
Çав паттăр çеç çăлать тет.
Халăх хăйĕн телейне,
Кĕнеке сăнне илнине,
Çав паттăртан илет тет.
Мĕншĕн пуçра сурпан-ши,
Мĕншĕн арçын пулман-ши?
Пуçра калпак пулнă тăк
Алла чукмар тытăттăм,
Çĕленпе тĕл пулăттăм,
Саринене çăлăттăм.
Улăп карчăк сăмахне
Хускалмасăр тăнларĕ,
Çĕклерĕ те тукшанне
Ăна çапла каларĕ:
— Эп, кинемей, ан çиллен,
Кунти Çавал хĕрринчен,
Сирĕн хуйăх ман пултăр,
Çав тăшман та тĕп пултăр!
Сывă юлăр. Утмалла,
Илмейккере курмалла.
Улăп кӳлĕ еннелле
Вăрман урлах вĕçтерчĕ,
Яштак вăрăм хырсене
Тăпăлтарчĕ, тустарчĕ.
Улăп утнă вырăнта
Мăн çул юлать тăсăлса,
Пар лашапа çавăнта
Чупма пулать савăнса.
Çавра кӳлĕ хĕррине
Улăп анчĕ васкаса.
Унта ларать пĕр пике,
Сăмах хушрĕ пуç тайса.
— Ун пекех ма макратăн,
Вĕри куççуль тăкатăн?
Кунта куççуль тăкиччен
Тухса ут-ха килелле,
Хĕвел анса лариччен
Санăн киле çитмелле.
— Йĕкĕт, ятна пĕлместĕп,
Санран çакна ыйтатăп:
Эс çак кӳлĕ хĕрринче
Мана хăвар пĕчченех.
Юлсан — çĕлен аллине
Манпа пĕрле лекенех.
— Ан тархасла, Сарине,
Сансăр кайма эп килмен.
Ирсĕр çĕлен аллине
Сана памăп. Эс ĕнен.
Ват Илмейккер киличчен,
Унпала тĕл пуличчен
Вырăн туса хурас-ха,
Выртса канас çавăнта.
Сана çĕлен курăнсан
Вăрат мана хăвăртрах, —
Терĕ Улăп. Чукмарне
Паттăр хучĕ пуç айне.
Патша хĕрĕ пĕшкĕнсе
Ларать Улăп пуç вĕçне,
Пусармашкăн чĕрине
Йĕрсе юрлать юррине:
«Атте-анне пахчинче
Хурлăхан çисе ӳсрĕм пуль,
Çавра кӳлĕ хĕрринче
Çавăнпа эп пĕтеп пуль.
Улма пахчинче утнă чух
Сар кайăксем юрлатчĕç.
Урам тăрăх иртнĕ чух
Çут тенкĕсем вылятчĕç.
Ӳсрĕ пуль шур хурăнĕ
Шăпчăксене çу каçма.
Çитĕнчĕ пуль ман пĕвĕм
Сар чечекле вĕлкĕшме.
Сив тăм ӳкрĕ улăха,
Чечек шанчĕ çав тăмран,
Эп те юлтăм хурлăха,
Çĕлен çийĕ çакăнта».
Сас илтĕнчĕ инçетрен,
Шарт! сиктерчĕ вăл хĕре.

Таçтан сăртсем хушшинчен,
Пĕр юхан шыв хĕрринчен,
Вĕри çĕлен шăвăнать,
Пĕлĕт çине ыткăнать.
Сĕм вăрмана чăмать те
Йывăççене çунтарать.
Çӳлелле вăл сывлать те
Çăлтăрсене куçарать.
   Вут çĕлене курсанах
Пике сăнĕ шуралчĕ,
Вăл Улăпа хăвăртрах
Вăратмашкăн хăтланчĕ.
Анчах Улăп мăш тумасть,
Силлесен те вăранмасть,
Харлаттарса çывăрать,
Сăмсинчен çил шăхăрать.
   Çĕлен виç хут явăнать,
Унтан çич хут ярăнать,
Çĕре ларать чăрсăрла,
Çут тĕнчене çурасла.
Вуник мăшăр куçĕнче
Тамăк вутти çунать пуль,
Тĕпсĕр çăл пек пырĕнчен
Вут-хĕм кăна тухать ун.
Çурăм çинчи шăрчĕсем
Чăнк тăраççĕ пăрăс пек,
Качамаклă урисем —
Кашни юман кăкĕ пек.
   Саринене курсанах
Ахăлтатма хăтланчĕ,
Çĕре чаврĕ çавăнтах,
Сăннисене кăларчĕ.
Сарă пике Сарине
Силлет, лăскать Улăпа.
Анчах Улăп ыйхине
Хĕр татаймасть вăйсăртан.
   Çĕлен пусне каçăртать,
Çывракана асăрхать,
Çичĕ хутчен шăхăрать,
Çитмĕл çич хут чашкăрать.
— Иккĕн, иккĕн! Ха-ха-ха!
Хĕрпе каччă? Ха-ха-ха!
Нухрат епле хисеплет,
Мĕн хушнине йăлт итлет.
Апла пулсан?.. Виç кунтан...
Виç кунтан мар, ыранах
Вăт çак кӳлĕ сăмсахне
Ик çын ятăр малашне.
   Тăсрĕ вăл вун ик пуçне,
Йăтса çапрĕ хӳрипе,
Пуçне чикрĕ Сарине,
Пат тумлатрĕ куççульне.
   Вĕри куççуль Улăпа
Çат! çунтарчĕ кăвайтла.
Ыйхă тарать паттăртан
Куççульпе пит çунăран.
— Питĕм темшĕн пĕçерчĕ, —
Терĕ Улăп вăранса,
Куçĕсене сăтăрса.
Йĕри-тавра тинкерчĕ,
Курать: умрах вут çĕлен —
Çулăм тăкать пур енчен.
Улăп тăрать васкаса,
Ярса илет чукмара.
Çĕлен ярать ахăрса,
Вун ик пуçне каçăртса,
Шăшипе ват кушакла
Вылясшăн вăл Улăппа.
Çĕр çурасла ӳхĕрет,
Вут-хĕмне те пĕрĕхет.
Анчах Улăп тумтирне,
Кукамăшĕ панине,
Вут-хĕм ним те тăваймасть,
Вăйĕ чаксан — пăшлатать.
— Сиввĕн ан пăх ман çине,
Пĕлместĕн-и эп камне?
Эп — Илмейккер! Çĕр çинче
Çĕлен патши малашне.
Мĕн тăратăн эс унта?
Тух хăвăртрах ман ума!
   Улăп хирĕç чĕнмерĕ,
Вырăнтан та сикмерĕ.
Хăй шутларĕ ăшĕнче:
«Ах, юрă хăш пуçĕнче?
Вăтам пуçĕ вылянмасть,
Унтан вут-хĕм ыткăнмасть,
Апла юрă çавăнта,
Вăтам пуçри çăварта».
— Эс апатăм пулмалла,
Ман умра сан выртмалла.
Килех тетĕп хăвăртрах,
Хырăм выçнă паçăрах.
— Саншăн ӳсмен шăм-шаксем,
Пырна лармĕç-ши çавсем? —
Терĕ Улăп çĕлене
Мăн чукмарне çĕклесе.
   Çĕлен ячĕ уласа
Вун пĕр пуçне вылятса,
Улăп сикрĕ сылтăма
Илмейккере тапăнма.

Вӑтам пуҫне ютӑнне
Пӑрса хучӗ ҫӗр ҫине,
Унтан ирсӗр ҫӑварне
Туртса ҫурчӗ хайхинне.
Чӑваш халӑх юррине,
Вилес патне ҫитнине,
Илмейккертен хӑтарчӗ,
Вӑрманалла вӗҫтерчӗ.
«Чӑваш юрри пит хитре,
Ялан пултӑр ирӗкре», —
Терӗ Улӑп ӑшӗнче.
Ирсӗр пуҫсем хушшинче:
— Уй ухмаххи! Тунката!
Чухлатӑн-и эс ҫавна?
Ма ҫӗклерӗн аллуна?
Хӑвах ҫирӗн тӑм пуҫна!
Ҫӗлен шӑвать, чашкӑрать,
Вут-хӗм сапса кӑшкӑрать.
Шӑлӗсене шак! шаккать,
Пур шӑлӗ те хӑйранать.
Виҫ ҫухрӑмлӑ хӳрине
Тӑсса хучӗ ҫӗр ҫине,
Унтан мӗнпур вӑй-халпа
Туртса ҫапрӗ Улӑпа.
Ҫӗлен пӗрре ҫапсанах
Тӗнче кайрӗ тайӑлса,
Улӑп ҫӗре путсанах
Сиксе илчӗ туртӑнса.
Улӑп каллех ирӗкре,
Вӗри ҫӗлен умӗнче.
Йӗпетрӗ ал тупанне,
Ҫӗклерӗ вӑл чукмарне,
Туртса ҫапрӗ ирсӗре.
Тӗнче хӑйӗн вырӑнне
Каллех ларчӗ темелле.
Пухрӗ Улӑп вӑй-халне,
Тепре ҫапрӗ ҫӗлене.
Илмейккерӗн виҫ пуҫӗ
Татӑлчӗҫ те кусрӗҫӗ,
Анчах ҫӗлен вӗсене
Туртса илчӗ ҫиҫтерсе.
Виҫ пуҫӗ те сыпӑнсан,
Мӑйӗсемпе ҫыпӑҫсан
Виҫӗ мӑшӑр куҫӗнчен
Ҫиҫӗм ҫиҫрӗ ҫич хутчен.
Ҫӗлен шӑвать чашкӑрса
Ҫут тӗнчене ҫурасла,
Улӑпа вӑл уласа
Пуҫран ҫапать авӑнса.
Пилӗк таран Улӑпа
Путарчӗ ҫӗр ӑшнелле,
Улӑп часах талпӑнса
Сиксе тухрӗ ҫӳлелле.
Улӑп каллех ирӗкре,
Вӗри ҫӗлен, халь чӗтре!
Илмейккерӗ явӑнать,
Урапалла кусӑнать.
Вӗри ҫӗлен хӳрипе
Ҫавра-ҫавра ҫӗкличчен
Улӑп сулчӗ тукшанне
Мӗнпур ҫитнӗ вӑй-халпа.
Ҫӗлен кайрӗ антӑхса,
Аран сывлать пашкаса,
Ултӑ пуҫӗ харӑсах
Ыткӑнчӗҫӗ аякка.
Вӑл ҫапах та самаях
Антӑхсан та вӑр-варах
Туртса илчӗ кашнине,
Унтан вӗҫрӗ йӑвине.
Анчӗ тарӑн нӳхрепне,
Тупрӗ кирлӗ пичкине,
Унтан ӗҫрӗ вӑй шывне,
Калай хунран илнине.
Вун ик хутчен карӑнса
Хасар сӑртне ҫапӑнать.
Сӑрчӗ кайсан йӑванса
Чӑвашалла ыткӑнать.
Вӗчи тӑрать вӗресе,
Вун ик пуҫне ӗшкӗртсе.
Вӗҫет Улӑп патнелле,
Ҫавра кӳлӗ еннелле.
Ҫӗлен вӗҫсе иртнӗ чух
Ишӗлеҫҫӗ ҫурт-йӗрсем,
Вӑрман урлӑ сикнӗ чух
Йӑванаҫҫӗ юмансем.
Тинӗс урлӑ каҫнӑ чух
Чул пек путрӗҫ карапсем.
Пӗлӗт айӗн вӗҫнӗ чух
Чӗтренеҫҫӗ ҫӑлтӑрсем.
Ҫӗлен вӗҫет ӗрешкен,
Хӗрсе ҫитсен виркӗнет,
Улӑп ҫине ыткӑнать,
Мӑйӗ тавра явӑнать.
Ӑна пӑвать туртӑнса,
Паттӑр каfive аптраса.
Аран-аран хӗвӗнчен
Урмӑшланса ӳкиччен
Кӑларать ҫӳҫ пӗрчине,
Кукамӑшӗ панине.
Ҫӳҫ пӗрчине ҫунтарать,

Çапла сăмах вăл калать:
— Эй, кукамай,
итлесем,
Эсĕ мана хĕрхенсем,
Хăватлăхна кăтартсам,
Ал-урана вăй парсам.
Илтсем, халăх, ывăлна,
Ан пăрахсам, ан мансам,
Хăвăн хаяр тăшманна
Çапса ватма вăй парсам!
Улăп çапла каласан
Сисет вăй-хал кĕнине.
Виçĕ хутчен карăнсан,
Улăп сывлăш çавăрсан
Йăтса перет çĕлене.
Вăшт! çĕклет те чукмарне
Туртса çапать тăшманне.
Пурте харăс татăлчĕç.
Илмейккерĕн пуçĕсем
Çĕре ÿкрĕç те вĕсем
Вун ик çĕре ыткăнчĕç.
Улăп çĕлен чĕлхине
Пĕр пуçĕнчен кăклать те
Хурать капмар чул айне,
Кайран утать хĕр патне.
— Пике, каях килелле,
Каçчен киле çитмелле.
Килте аçу хуйхăрать,
Тикĕс пултăр сан çулу,
Ăнса пытăр пурнăçу, —
Терĕ Улăп пикене
Ăшшăн пăхса ун çине.
— Мана çăлтăн вилĕмрен,
Аса илсем ÿлĕмрен.
Çĕррĕм пултăр сан алра, —
Терĕ сар хĕр паттăра.
Улăп çĕрре тăхăнать,
Саринерен уйăрлать.

## Вун çиччĕмĕш юрă

### Нухрат патша

Сĕнтĕр мăрса чапра. Ăна патша хĕрне çăлаканĕ тесе мухтаççĕ. Нухрат патша Саринене Сĕнтĕр мăрсана качча парассине пĕлтерет. Сарине ашшĕне татăклăн калать: кам мана çĕррĕме каялла тавăрса парать, кам Илмейккерĕн пĕр чĕлхине ман ума кунта пăрахса парать — эпĕ çавна качча тухатăп.

Йăмра ÿстĕр урамра,
Çирĕк тени — сырмара,
Эсир çÿрĕр хулара,
Эпир пурнар Актайра.
Актай виççĕ таврара,
Пăлхар пĕрре Чăвашра.
Çунать сарă хĕвелле,
Атăл Пăлхар хÿттинче
Йăлтăртатать кĕмĕлле.
Çитмĕл пасар Пăлхарта,
Йывăç ÿсет таçта та.
Урамĕсем тап-такăр,
Пăхăр сарнă темелле,
Керменĕсем пит капăр,
Çăлтăрсенчен иртмелле.
Ун пек хула ăçта пур,
Шырасан та тупас çук!
Пăлхар чаплă пулнăран
Курнать çитмĕл çухрăмран.
Çавах кайăк-кĕшĕксем —
Кашнин пин-пин кĕвĕсем —
Савăнтарма халăха
Юрламаççĕ ăмăртса.
Вĕсем йывăç тăрринчен,
Шур керменсем хушшинчен
Урам тăрăх пăхаççĕ,
Ак çаксене кураççĕ:
Унта патша патĕнче,
Çÿллĕ пукан хыçĕнче,
Чăваш тамки ялтăрать,
Çич çухрăмран курăнать.
Йкĕ чĕре тамкинче.
Çав чĕресем хушшинче
Ылтăн юман çитĕнет,
Уншăн чăваш киленет.
Пĕр чĕри вăл пĕлтерет
Нухрат енчи чăваша,
Тепĕр чĕри систерет
Вирьял енчи йăваша.
Юман тăрри тĕксĕм пек,

Ăна кăшт тăм çапнă пек.
Пĕлтерет пуль Лайăша,
Кĕвĕç ернĕ ăрăвне.
Икĕ чĕре яланах
Халăх вăйне кăтартнă,
Тăшман тавраш пĕрмаях
Ăна хăртма тăрăшнă.
 Патшан кăвак куçĕсем
Пит салхуллăн пăхаççĕ,
Кăвакарнă çӳçĕсем
Лĕм-лĕм çилпе выляççĕ.
Нухрат патшан çи-пуçĕ
Шутласассăн пин çурă.
Чăваш патшин тумтирри
Таса теççĕ çав тери.
Шурă — кăрлач юрĕнчен,
Таса — тăрна куçĕнчен.
Тумĕ çинчи шевлисем —
Сар хĕвелтен илнисем —
Сар кайăкла вĕçеççĕ,
Çиçĕмле те çиçеççĕ.
 Паян йывăр патшана,
Шутласан, тен, намăс та —
Чĕре татти Сарине
Каясшăн мар Сĕнтĕре.
— Эх, мăнтарăн, Сарине,
Çунтаран ман ăш-чике,
Калаçмастăн никампа,
Макăратăн пĕрмаях.
Эп те, сан пек, Сĕнтĕре,
Кĕрт йытти пек сĕмсĕре,
Çăткăн пырлă кашкăра,
Курăймастăп ăшăмра.
Мĕн тăвас тен, ăнлансам,
Саншăн чĕре çунсан ман
Йыхрав ятăм, ан çиллен,
Аслă Пăлхар хулинчен:
«Кĕçĕн хĕре çĕлентен,
Илмейккер йĕк аллинчен
Кӳл хĕрринче кам çăлать,
Манăн кĕрӳ çав пулать.
Çур патшалăх çав кунах
Халаллатăп кĕрĕве,
Вилес умĕн эп ăна
Патша туса хăварăп».
 Нухрат ылтăн туйипе
Виç хут таккать çĕрелле,
Шăлса илсен сухалне
Çапла тăсать сăмахне:
— Ĕнтĕ эрне шавлатăр,
Пĕр-пĕрине тĕртетĕр,
Намăс мĕнне пĕлместĕр.
Хуравăм ман çавăн пек:
Панă сăмах — хурçă пек.
Çил-тăвăлпа вĕçĕнмест,
Хакĕ нихçан йӳнелмест.
Сĕнтĕр мăрса пĕр-пĕччен
Хĕре çăлчĕ çĕлентен.
Çавăнпа вăл паянтан
Маншăн хаклă тăвантан.
Сĕнтĕр, хăпар ман пата,
Ларсам манпа юнашар!
Кайран эсĕ... тăхтасам.
Ак хĕрĕмпе калаçсан...
Имен, васка кермене,
Çавра кĕрен пӳлĕме
Саринене ман ятпа
Чĕнсе килем вăйпала.
 Нухрат хĕрĕ Сарине
Курсассăнах Имене
Ыталаса майĕнчен
Хыт чуптурĕ питĕнчен.
Куççульне хăй чараймасть,
Çапах унпа калаçать:
— Имен мучи, ăс парсам,
Йывăрлăхра пулăшсам.
Çав Сĕнтĕртен, мăрсаран,
Ăçтиçукран, анраран,
Мĕнле майпа хăтăлас,
Аттемĕре мĕн калас?
Вăл çĕлене курăнман,
Илмейккерпе çапăçман.
Мана çăлчĕ пĕр каччă,
Анчах пĕлмеп мĕн ятлă.
 Имен пăхрĕ хĕр çине,
Туйса илчĕ çавăнтах:
Çĕр илемĕ Сарине
Йĕкĕте хыт юратать.
Çавăнпа та сăмахĕ
Унран тухрĕ çакăн пек:
— Мĕн тăвас тен, пурнăçра
Курмаллине курмаллах,
Чăтмаллине чăтмаллах.
Итле мана, мучуна,
Усал шухăш çук унра,
Ан лар килте хурланса,
Вĕри куççуль юхтарса.
Атăл урлă каçасси
Чечек татса килни мар,
Ирсĕр çынпа пурнасси

Юр ҫине пир сарни мар.
Эпĕ, хĕрĕм, пурнăҫра
Юратупа ҫуннăскер.
Пĕлĕт мар вăл юрату,
Ҫил вĕрнипе саланмасть.
Эс ҫавсене хыт асту.
Юрату вăл турăран
Амалăхпа арлăхшăн.
Ҫавра кĕрен керментен
Иккĕн тухрĕҫ. Пĕрине,
Саринене, пикене,
Уйăрма ҫук хĕвелтен.
Хĕвел пекех ăшăтать,
Ăшăтать те ҫутатать.
Тепĕр ҫынни — ват Имен,
Ячĕ янрать тĕнчере.
Виҫ ҫĕр ҫултан иртнĕ те,
Шур юр пекех ҫӳҫĕ те.
Нухрат патша хăй хĕрне
Халăх умне тăратрĕ,
Ёнчĕленĕ чукмарне
Сылтăм алла вăл тытрĕ.
Ҫут тĕнчене сарăлма
Сăмахларĕ пуҫ тайса:
— Кĕҫĕн хĕре, Саринене,
пурте пĕлетĕр,
Илмейккерен кам ҫăлнине —
пурте пĕлетĕр,
Сĕнтĕр мăрса ăна ҫăлнă —
пурте пĕлетĕр,
Вăл паянтан маншăн хакли —
ҫавна пĕлсемĕр!
Малашне вăл, итле, халăх,
кашнин пĕлмелле,
Кĕрӳ пулать чăн-чăн хакли —
кашнин пĕлмелле,
Кĕҫĕн хĕрĕм, ҫак Сарине —
кашнин пĕлмелле,
Ун арăмĕ ĕнтĕ пулать —
кашнин пĕлмелле!

Туй тусанах эп Сĕнтĕре —
итлĕр, чăвашсем,
Ҫур патшалăх ăна паратăп —
итлĕр, чăвашсем,
Эп вилсессĕн вăл ҫакăнта —
итлĕр, чăвашсем,
Патша пулать. Чăваш патши! —
итлĕр, чăвашсем.
Халь эс, Сĕнтĕр, Саринене,
пулас арăмна,
Чăпăрккапа виҫĕ хутчен
пулас арăмна
Ҫапса ил-ха йăлапала,
пулас арăмна,
Кĕҫĕн хĕре, Саринене,
пулас арăмна.
Уншăн вара эсĕ, хĕрĕм,
Сĕнтĕр мăрсана
Алтăрпала сим пыл тытса,
Сĕнтĕр мăрсана
Тав туса ĕҫ. Упăшкам те
Сĕнтĕр мăрсана.
Хунямана хисеплетĕп тесем
Сĕнтĕр мăрсана.
— Атте, мана ан чарсам,
Сăмах хушма ирĕк пар, —
Терĕ хуллен Сарине
Ват ашшĕне кăшт хирсе. —
Сан сăмахран тухмастăп,
Эс хушнă пек тăватăп.
Ҫапах та халь эп сана
Каласшăн-ха ак ҫакна:
Качча тухап ҫав ҫынна —
Паттăрлăхне кăтартма
Ятлă ҫĕрре каялла
Паракана
Пăлхарта.
Илмейккерĕн чĕлхине,
Вун иккĕрен пĕрине,
Пăрахакана ман ума.

## Вун тăххăрмĕш юрă

### Сĕнтĕр мăрса Саринене качча илме талпăнни

Ҫĕр ҫухрăмран илтекен Сĕрккепе Улăп. Пăлхар хулинче шăй-шай. Сĕркке Улăпа Пăлхара кайма сĕнет. Улăп ват юман тăрринчи халăх юррипе — кайăкпа — Пăлхар хулинче. Чăваш юрри — кайăк — Саринене вилĕмрен ҫăлать. Сарине Улăпа курсан: «Мана Илмейккерен ҫăлакан паттăр ҫакă», — тет.

Йĕтĕр, йĕтĕр ерепи,
Йĕтĕр тăрри шерепи*.
Шереписем сарличчен,
Шерпет пулма пиçиччен
Юррăмăра тăсăпăр,
Улăппа тĕл пулăпăр.
Улăп ларать шур пуçпа,
Çĕр-çĕр çултан иртнипе.
Хыт кăмăлсăр пулнипе
Ват çын туртать хăлхине.
Улăп калать шур пуçа
Хĕрхеннипе пуç усса:
— Сăрт тăрринчен пăхрăм та
Сана куртăм аякран.
Чăтаймарăм, ан çиллен,
Çула тăсрăм кунта эп.
Шуçса ӳксе шăм-шакна
Амантрăн пуль самаях?
Ал-уруна кантарма,
Уç сывлăшпа сывлама
Вырăн тăвам сан валли
Çĕр каçиччен выртмалли.
Шур сухалĕ Улăпа
Пӳлсе хучĕ тарăхса.
— Ман çинчен ним пĕлмесĕр
Ма çĕр çинчен çĕклерĕн?
Эпĕ Сĕркке, сисекен,
Çĕр çухрăмран илтекен.
Ман пеккисем тĕнчере
Мĕнпурĕ те... эп пĕччен.
Хура халăх сăмахне,
Пăлхар хули шăй-шайне
Хăлхана чăнк тăратса
Итлеттĕмччĕ эп выртса.
Унта йăслав вăйлансан
Кĕрлет Хура тинĕсле.
Шăй-шай йăлтах лăплансан
Пăлхар пĕтнĕ темелле.
Сана хăш-пĕр шăй-шайне,
Ман хăлхана кĕнине,
Кăштах парам каласа,
Итле ăна ăнкарса.
«Сĕнтĕр çĕнчĕ çĕлене,
Тĕлĕнтерчĕ тĕнчене!
Ун пекки çук Чăвашра,
Тепĕр тесен — ниçта та!
Саринене, айвана,
Ăна качча памалла».

«Сĕнтĕр мăрса мухтавра,
Ун патшара лармалла!»
«Сĕнтĕре халь чыс тăвар,
Парне парар кăмăлран;
Пухар ылтăн-кĕмĕлне
Лартма чаплă керменне».
Сĕнтĕр мăрса сăмахне,
Пуçсăрланса çапнине,
Итленĕ чух эс мана
Чăрмантартăн. Эх, сана!
Вăл ним намăс-симĕссĕр,
Çавăнпа вăл киревсĕр.
Чĕлхипе тем кастарать,
Халăха та хыт хăртать.
Чухлатăн-и вăл мĕн тет?
«Çил-тăвăл ман чĕрере!
Ĕçчен ĕçшĕн хапсăнать,
Кахал юрра юратать.
Çамрăк пуçăм çамрăк çутă та —
Ман патшара лармалла.
Эп патшана ларсанах
Юрра чăтмăп Пăлхарта».
Халăх Сĕнтĕр мăрсана
Вăрçса питлет тарăхса:
«Сăмсуна хуть шăласчĕ
Е чĕлхӳне чарасчĕ.
Вăл сар хĕре çăличчен
Хăйне сутĕ çич хутчен.
Илмейккерпе тĕл пулман,
Саринене вăл çăлман.
Пикен ятлă çĕррине
Вăл кăтарттăр пӳрнинче.
Унсăр Сĕнтĕр сăмаххи
Хуртлă курак каяшши».
Пăлхарти пек тавлашу,
Ним вĕçĕмсĕр харкашу
Килĕшмест-ха сана та,
Çавах кай-ха хулана.
Ыран кăнтăр тĕлĕнче,
Мĕнпур халăх умĕнче
Курăн патшан пĕр хĕрне,
Саринене — пикене.
Ылтăн çĕррӳ, пӳрнери,
Питĕ хитре çав тери,
Юрах кайĕ пикене,
Патша пулăн эсĕ те.
Шур сухал та çухалчĕ,
Улăп унтан тĕлĕнчĕ,
— Эпĕ аслă Пăлхара
Каймăп пушă алăпа, —

---

* Сутмалли юмах. — Сĕлĕ.

Тет те Улăп васкаса
Çулне тытать айлăмпа.
Сĕм-сĕм вăрман хушшинче,
Çырма-çатра хĕрринче
Курчĕ ватă юмана,
Ун тăрринчи йăвана.
Юман çинчи йăваран,
Ăна тунă мамăкран,
Хитре кайăк пăр! вĕçрĕ,
Чăтлăхалла ярăнчĕ.
Кайăк Улăп паттăра
Палласанах чăтлăхран
Таврăнчĕ хăй йăвине,
Çĕр-çĕр тĕслĕ кĕвĕпе,
Темиçе пин юрăпа
Вăл пуçларĕ савăнса
Тав тумашкăн Улăпа.
— Мана çăлтăн вилĕмрен,
Тав тăватăп чĕререн.
Каяр мар-и Пăлхара
Тĕл пулмашкăн халăхпа?
Йывăр ăна юрăсăр.
— Тĕрĕс сăмах. Пăлхара
Пирĕн çитсе курмалла!
Йăву пултăр хулара
Ват юманпа яланах, —
Тет те Улăп юмана
Тытса кăклать курăкла.
Ватă ăвăс айĕнче,
Катмар шур чул патĕнче,
Улăп тăрать чарăнса,
Унти йĕре сăнаса.
— Кам-ши пулнă çакăнта,
Мĕн шыранă-ха вара?
Ăна юрă хуравлать:
— Сĕнтĕр мăрсан ĕçĕ çав.
Вăл çак шур чул айĕнчен
Вăр-хурахла çут çĕрте
Илмейккерĕн чĕлхине
Илме тăчĕ пĕринче.
Анчах мăрса вăйсăртан,
Çын каяшши пулнăран
Чул айĕнчен чĕлхене
Илеймерĕ нимле те.
Сĕнтĕр мăрса аптраса
Шăрт пек çӳçне тăратсан
Ватă ăвăс хыçĕнчен
Шăпатан тухрĕ сĕтĕрнсе.
— Сĕнтĕр, — терĕ Шăпатан, —
Лар ман çума юнашар.
Эсĕ мĕншĕн çакăнта,
Пĕлетĕп-çке, юмăç та.
Илмейккерĕн чĕлхине,
Шур чул айне хунине,
Илейместĕп эпĕ те.
Тимĕр карта пĕтерет.
Пулăшатăп эп сана
Чĕреренех, хаваспа.
Уншăн мана сăмах пар:
Ман сĕнĕве паянтан
Пурнăçлатăн кăмăлпа.
Килĕшетĕн? Пит аван.
Çăварна кар лайăхрах.
Вăт чунна та сутрăн халь.
Пӳрнӳнте çĕрĕ пулать
Ахальли мар, асамли.
Çынсен чунне кăлармалли.
Нухрат пурнăçне...
ним те мар,
Сана панă çĕрĕ тататъ.
Кирлĕ сана пиçен те.
Пиçен шăтсан умăнта
Кăкла ăна хăвăртрах,
Пике пуçне çавăрма
Чăрка упа саррипе.
Чĕлхе пулать вăл кайран
Пике умне пăрахма.
Унпа эсĕ тарăхса
Çапан пулас арăмна, —
Тет те карчăк кускалать,
Çав вăхăтрах çухалать.
Улăп, маттур паттăр та,
Чула йăтса пăрахать,
Илет çĕлен чĕлхине,
Персе чикет кĕсйине.
Ват юмана кăклать те
Васкать Пăлхар хулине.
Пăлхар хули айлăмра,
Тĕме тăслать ун тавра.
Тĕме паха карманпа*,
Хула чаплă халăхпа.
Питĕ хӳхĕм керментен,
Ăру çурчĕ тенинчен,
Патша хĕрĕ Сарине
Утса тухать хайхине.
Нухрат патша ячĕпе
Пур чăваша пĕлтерме
Пĕлтерӳçĕ хăпарса

* Крепоçпа.

Çапла калать кăшкăрса:
— Нухрат патшан çут йыхравне —
пĕлет çут тĕнче!
Нухрат патшан сăмах çирĕп —
пĕлет çут тĕнче!
Саринене ятлă çĕрре паракана —
итле, çут тĕнче!
Илмейккерĕн йўс чĕлхине —
итле, çут тĕнче!
Пике умне хураканне —
итле, çут тĕнче!
Нухрат патша кĕçĕн хĕрне —
итле, çут тĕнче!
Качча парать кĕрў теме —
итле, çут тĕнче!
Çур патшалăх халех парать —
итле, çут тĕнче!
Патша вилсен ун кĕрўшĕ —
итле, çут тĕнче!
Патша пулать, чăваш патши —
итле, çут тĕнче!
Тулайрисем — тăшмансем,
Вăр-хурахпа пуйнисем,
Нухрат патша умĕнче,
Вĕсемпеле Сĕнтĕр те.
Кăш çĕлĕкпе пулнăран
Мăн кăмăллă патшаран.
Халăх Сĕнтĕр мăрсана
Хытă хăртать сăмахпа:
— Пăх-ха паян ун çине,
Каçăртнă йĕк сăмсине.
Хўрине ват кăркка пек
Сарса янă хĕрелсе.
Йăлапала Сĕнтĕре
Кăвайт урлă сиктерме,
Патша умне çитерме
Виç хут пачĕç кутĕнчен.
«Çĕрре паман Сĕнтĕре,
Ăстан тупнă ман çĕрре? —
Шутлать пике ăшĕнче,
Йывăр хуйхă куçĕнче.—
Илмейккерĕн чĕлхине
Çĕре печĕ çитменне.
Тăхăнмаллах çĕррĕме,
Телейсĕр эп тĕнчере».
Вĕри куççуль юхтарса,
Çăлакана асăнса
Пике тăсрĕ пўрнине
Тăхăнтарма çĕррине.
Çав вăхăтрах сасартăк
Вĕçсе анчĕ пĕр кайăк,
Саринене хăлхинчен
Каларĕ ют сисиччен:
— Илсем çакна, турата,
Сана кирлĕ вăл кунта.
Çеклĕленнĕ пилешне
Алла тытсан Сарине
Çав самантрах çĕрĕрен
Пулса тăчĕ пĕр çĕлен.
Унтах пилеш хăватĕнчен
Илмейккерĕн «чĕлхинчен»
Сывла-сывла хаш та хаш
Пулса ларчĕ Шăпатан.
Çĕлен юплĕ сăннипе
Сăхма тăрсан пикене
Çĕрпў паттăр вăр-варах
Çирĕм çулхи каччăлла
Ярса тытать çĕлене,
Пăвса перет çĕрелле.
Кайран Сĕнтĕр мăрсана,
Каçăрăлнă сăмсана,
Суеç чăпти пулнăран
Шаклаттарать çамкаран.
Ирсĕр Сĕнтĕр антăхать,
Кутăн-пусăн ыткăнать.
Халăх кĕрлет, тарăхать,
Шăпатан тавра сырăнать.
— Каллех, ирсĕр, эс кунта?
Ун çунмалла халь вутра!
Шăпатан пулать ват сăпса,
Вĕçсе тарать нăрласа
Сĕм вăрмана, чăтлăха,
Ура пусман вырăна.
Çынсем, юнпа пуйнисем,
Тулайран та килнисем,
Сĕнтĕр хыççăн кайнисем,
Тухрĕç карма çăвара,
Кăшкăраççĕ урамра.
— Сарине хăй тухатмăш,
Çавăнпа çĕрри улшăнчĕ.
Патша тытмасть сăмахне,
Çĕртет чăваш ыр ятне!
Çавăнпа та мăрсана
Халех лартар патшана!
— Чарнăр, карма çăварсем,
Намăссăрсем, касмаксем! —
Аслати пек янравлăн
Сас илтĕнчĕ хаяррăн.
Халăх пăхать çаврăнса,
Курать каять Улăпа.

Унтах хула тĕлĕнет.
Ват юман ун аллинче —
Чечек çыххи пек кăна!
Юрă мĕнле савăнса
Юрра ярать? Чеченлĕх!
Йăви те ун мамăкран —
Пур халăхшăн савăнăç.
Патша хĕрĕ Сарине
Курсассăнах Улăпа
Чупса анать савăнса.
— Вăт çак паттăр пĕр-пĕччен
Мана çăлчĕ вилĕмрен.
Пăхăр, пăхăр ун çине!
Ман çĕррĕм ун аллинче!
Эпĕ панă çĕррĕм вăл,
Эпĕ кĕтнĕ йĕкĕт вăл!

## Вăтăр улттăмĕш юрă

### Патти чăваш çĕршывне тапăнни

Чăвашра халăх телейлĕ. Анчах çав пурне те килĕшмест, вĕсем Улăпран хăтăласшăн. Улăпа пĕтерме Кийӳ аслă кĕнеçне, Патти хуна, тархаслаççĕ. Патти хун Паштан паттăрпа Чăваш çĕрĕнче. Улăп Паштан паттăрпа çапăçать, ăна çĕнтерет.

Ан кулянăр, ваттисем,
Пурнăçпала шурнисем.
Вилĕм кунта пулмасть тек,
Пăрахăçа тухнă тет.
Çыру-телей халăхра,
Ырă пурнăç Чăвашра.
Çавăнпа чăваш савăнать,
Çине пустав тăхăнать.
Вĕр çĕн атти-пушмакки,
Урана шывсем яманни.
Выльăх-чĕрлĕх картишпе,
Пыл-çу тăрать каткипе.
Тĕлĕнмелле ăйрисем,
Тип аш çисе ӳснисем.
Çăва тухсан вĕсене
Çĕн çунана кӳлмелле,
Хĕл ларсассăн кашнине
Урапана тĕртмелле,
Çула тухсан уй-хире
Вĕçен кăйкăр темелле.
Тыр-пул ӳксе пулнипе,
Пур ĕç ăнса пынипе
Пура тулли тыр-пулсем,
Çӳпçе тулли çи-пуççем.
Уяв çитсен ĕçкĕре,
Мал енче те кай енче,
Кĕрекере пуш вырăн,
Вăл чаплă та пит капăр.
«Улăп валли» ку теççĕ,
Курка тытса юрлаççĕ.
Улăп паттăр, Улăп паттăр
çак ĕçкĕре çук,
Вăл Пăлхарта, вăл Пăлхарта
Нухрат патĕнче,
Халăха вăл, халăха вăл унта
манас çук,
Халăх кăна,
халăх кăна унăн чĕринче.
Хисеплетпĕр,
хисеплетпĕр Улăпа эпир,
Тав тăватпăр,
тав тăватпăр халь ăна эпир.
Халь çак ĕçке килес пулсан
пушă вырăн пур,
Çĕр витреллĕ çĕр пичкере
сим пыл сăри пур.
Çуркуннепе сар пикесем
урам хушшинче
Каска çинче юрă хывса çапнă
шур пире.
Çĕр çырли пек пиçсе çитнĕ
хĕрĕн çӳпçинче
Ик çĕр сӳре шур пир пулнă
теççĕ кашнинче.
Каçалапа ял варринчи
йăмра айĕнче
Тĕр тĕрленĕ чăваш хĕрĕ
тантăшĕсемпе.
Тĕр тĕрленĕ пурçăн çиппе,
савăннипе-çке
Улăп паттăр сăн-сăпачĕ
тĕрре ӳкнĕ те.
Каç пулас чух хĕр упраççем
вăйăа пухăннă.

Каччисем те килте ларман,
вăййа хутшăннă.
Ват уйăхăн ват чĕри те
хумханса тăнă,
Тепĕр чухне хумханнипе
анма та маннă.
Йывăç пахчи çимĕçĕсемпе
йăтăнса тăнă,
Кĕркуннепе пахча хуçи ăна
пуçтарнă.
Лав-лавĕпе умлă-хыçлă
Пăлхар хулине
Вăл çимĕçне сутма кайнă
хăй ӳстернине.
Çав хулара тем чул хуçа,
вĕсен тем те пур,
Укçа пултăр, кăмăл пултăр —
паха тавар пур.
Çитмĕл çичĕ патшалăхран
хуçасем ларнă,
Таварсене Атăл тăрăх вĕсем
турттарнă.
Китай хуçин пурçăн пирĕ
çитмĕл тĕсли-çке,
Ăна илме чăвашăн та укçа
пур иккен,
Ирак хуçин лавккинче пур
хура хутаççем,
Исĕм çырли, айва, улма,
инжир, майăрсем.
Хазар хуçи кашни çулах
кĕтĕвĕпе тухнă,
Уйра ӳснĕ ăйăрсене
Чăвашра сутнă.
Вырăссем те çав хулана килнĕ
сут тума,
Таварĕсем чаплă вĕсен —
пĕлеççĕ сутма.
Чăвашсем те таварсене
чаплă кăларнă,
Ютран килнĕ хуçа чунне
ялан хумхатнă.
Хăш-пĕрисем Чăваш çĕрне
юриех килнĕ,
Ун пеккисем чăвашсенчен
питĕ тĕлĕннĕ.
Чăваш тăнлă-пуçлă пулнă,
тем те пĕр пĕлнĕ,
Хутсем çине,
ылтăн çине сăнсем ӳкернĕ.

Хăш-пĕрисем ятарласа
чулсем якатнă,
Унта вара чулсем çине
çырусем çырнă.
Хура çăхан улпутсем,
Тата хăш-пĕр вайпутсем,
Халăх ырă курнишĕн,
Куçран пăхма маннишĕн,
Кӳтсе çитнĕ тарăхпа
Ылханаççĕ Улăпа.
Улăп çулне татмашкăн,
Ăна сăтăр тумашкăн
Çĕрме пуян таврашсем,
Ик уралла кашкăрсем
Ӳпĕнтернĕ витресем,
Катка, чашăк-тирĕксем.
Çавах Улăп çул çӳрет,
Тăшмансене вăл тӳнккет.
Хура халăх ыр курать,
Ăна ялан ыр сунать.
Аптранипе улпутсем,
Сĕнтĕр мăрса тусĕсем,
Çич ту çинчи Кийӳне
Тĕттĕм каç чух, кĕркунне,
Вăрттăн янă элекçĕ.
Çав элекçĕ кĕвĕçсе
Кийӳн аслă ĕмпĕвпе,
Улатимĕр ятлипе,
Çвяттуй ятне илнипе,
Сӳпĕлтетнĕ елчелле,
Суя ирсĕр куççульне
Тăкма пĕлнĕ Кийӳре.
— Аслă ĕмпӳ, хĕрхенсем,
Хута кĕрсем çвяттуйла.
Улăп пире çаратать,
Çарамаса хăварать.
Сахал мар сан маттурсем,
Улăпран та сатурсем.
Эс вĕсемпе Пăлхара
Çит те тĕп ту Улăпа.
Уншăн ахаль тумастпăр,
Куланайсем саплатпăр,
Сан сăмахран тухмастпăр,
Чăваш патши пулатăн.
Аслă ĕмпӳ çвяттуйла
Хуравланă ак çапла:
— Чăваш халăх пуставпа,
Кашнин атă урара.
Мана куçран пăхас çук,
Куланайне тӳлес çук.

Вырăс халăх ăстай та
Çĕрме пуян ылтăнпа.
Татах пуйма Пăлхара
Мĕншĕн вара каймалла?
Чăвашпа вырăс хушшинче
Туслăх пĕтĕ çавăн чух —
Çак сăмаха эс асту —
Мунчари шур чул çинче
Хăмла шăтса ӳссессĕн,
Хăмли сăра тунă чух
Шурă чул пек путсассăн.
Хăмла ун пек путас çук,
Чул çинче те ӳсес çук.
Чăвашпа вырăс хушшинче
Туслăх пĕтмĕ нихçан та.
Аслă ĕмпӳ хуравĕ
Улпутсемшĕн — çивĕч хĕç.
Вĕсен кĕвĕç чĕрине
Касса çурать кашнинне.
Çавна кура улпутсем,
Пуяс тесен — пурсуйсем,
Самай тĕттĕм каçхине
Ватă ăвăс хӳттинче
Каварлăхпа хыпаççĕ,
Пĕр-пĕрине калаççĕ:
— Тĕпрен пуян çынсене,
Чаплă улпут йăхсене,
Çĕр кăвапи пулсан та,
Упрансан та ыр ятпа
Аслă ĕмпӳ Кийӳрен
Пулăшмарĕ нимĕн те.
— Халăх пире итлемест,
Улăп пире пĕтерет,
Ăçта кайса кĕмелле,
Ăçта пуçа чикмелле?
Пире хальхи асапран,
Тен, хăтарĕç тухăçран?
Унтах Патти хун та халь,
Супетей те çавăнтах.
Патти пуçне çавракан
Евчĕ кирлĕ пире халь.
Сĕнтĕр мăрсан чĕлхине
Шуйттан тупса çакнă тен,
Çампа тем те кастарать,
Такам пуçне çавăрать.
Патти хунпа калаçма
Ăна ярар тухăçа,
Сĕнтĕр мăрса çул-йĕрне
Пĕлтерер мар никама,
Суя сăмах илĕртме
Юри сарар халăхра.
Сăмах пултăр ак çапла:
Кăмăллă хĕр тупманран
Сĕнтĕр мăрса авланман.
Халь хĕр шырать тулайра.
Ăшшĕ ятне каласан
Ăна такам хĕр парĕ,
Ăсне-тăнне кăтартсан
Хун хĕрне те çураçĕ.
Сĕнтĕр мăрса çич ютра,
Кĕрт йытти те —
вăтанмасть,
Патти хунпа якалса
Ĕскĕртмелле калаçать.
— Ах, хĕвел хун, каçар мана,
хăв чуруна,
Чăрсăр сăмах вакланишĕн
эп сан умра.
Ах, уйăх хун, Нухрат патша —
вăл тунката,
Вăл сан пата парне ячĕ çак
хутаçпа,
Ватă сыснан хуртлă пуçне
ай сарăмпе.
Мĕнле мăшкăл! Чăтма йывăр
ун кулăшне.
Эс — аллах пек. Пирĕн патша,
Нухрат патша,
Йӳтеленчĕ Улăп
хыççăн пĕрмай кайса.
Улăп ăна мĕскер хушать,
çавна тăвать,
Сана хурлать. Тем те калать,
ăна савать.
Çын умĕнче Улăп санран хыт
мăшкăллать,
Уй качаки,
пыйтлă çăхан тесе калать.
Эс Чăваша çитсенех
Пăлхар аслă хапхине,
Йăлт хурăçран тунине,
Çапатпăр та вататпăр,
Яри уçса яратпăр.
Улăпа тĕп тусассăн
Хунсен хунĕ пулатăн.
Эпир пурте Пăлхарта
Хисеплесе яланах
Сана йăтса çӳрĕпĕр.
Санран эпĕ, Патти хун,
Çут тĕнчери ырă чун,

Аллахран пек ыйтатăп:
Чурусене пулăшсам,
Пире пĕтме ан парсам.
Хансен ханĕ, Патти хун,
Эсĕ маншăн аллах пул:
Нухрат патшан пĕр хĕрне,
Унăн ячĕ Сарине,
Улăп тăшман арăмне,
Мана, Сĕнтĕр мăрсана,
Кăмăл туса халалла.
  Патти каять тарăхса,
Вăрçса калать мăрсана:
— Сана вăл мар, саламат
Кирлĕ паян ман патра!
Нухрат хĕрĕ Сарине,
Улăп паттăр арăмĕ,
Çăтмах пахчи чечекĕ,
Аллахăн ыр шерпечĕ
Терĕн мана шантарса.
Савăнтартăн эс мана.
Улăп паттăр арăмĕ,
Уйăх сăнлă Сарине,
Манпа йывăр пулатех,
Ачи — йытта юратех.
Эпĕ Патти, хунсен хун,
Ман пекки çук ырă чун.
Пăтă кусне çиекен
Теççĕ мана тĕнчере.
Утап — тĕнче чĕтренет,
Сурап — халăх тĕпленет.
Эпир иккĕн Паштанпа
Тĕп тăватпăр чăваша,
Кайран Улăп паттăра...
Параппан пултăр ун тирĕ!
Ӳтне-пуçне йыт çитĕр.
Итле, визир, эп сана
Ĕç хушатăп паянах:
Чăваш мулне тустарма,
Сар хĕрсемпе выляма
Çарпа тухан ман хыçран.
Хăçан тетĕн? Ыранах!
Аллах мана вăй патăр,
Тасамарсем тĕп пултăр!
  Çапах Патти çӳçенет.
Чатăрĕнчен тухиччен,
Патша патне кайиччен
Чĕркуçленет Патти хун,
Кĕлтумалли вăхăт ун.
— Эсĕ вилнĕ пулсассăн та,
                Калай хун,
Ан ман мана, вĕри çулăм,
                Калай хун.
Аçу кăвак чул сан, Калай хун,
Аннӳ — хĕрнĕ хурăç,
                Калай хун.
Кĕлтăвbooтăп сана, Калай хун,
Эп тăшмана аркатсассăн,
                Калай хун,
Эп чăвашран таврăнсассăн,
                Калай хун,
Ăш кăмăлпа сана парăп,
                Калай хун,
Тихан ăшри çуне, Калай хун.
Эсĕ мана телей парсам,
                Калай хун,
Урхамаха çунат парсам,
                Калай хун,
Аллăма та сулăм парсам,
                Калай хун,
Вато пуçа ăс-тăн парсам,
                Калай хун.
Аллах!
Аллах! Аллах!
Патти хуна йăтса тухрĕç,
Лаши çине утлантарчĕç,
Кукăр хĕçне çумне çакрĕç,
Паштан енне çул кăтартрĕç.
  Тĕпсĕр тарăн мăн çырмара
Вăл Паштана çапла йыхрать:
— Э-э! Э-э! Паштан паттăр!
Эп — Патти хун!
        Кĕтеп сана, паттăр!
Эс ман ума тухма васка,
Чăваш çĕрне пĕрле каяр!
  Тĕпсĕр çырма варринчен,
Катмар чулсем хушшинчен
Сиксе тухрĕ арăслан,
Вăл пĕтĕмпех ылтăнран.
  Паштан паттăр уласан,
Чĕрнисемпе çĕр чавсан
Чăвашалла кастарчĕç,
Пĕр лапамра чарăнчĕç.
Унта, çаран пусĕнче,
Кӳме юпи лартрĕç те
Тултан карчĕç тирсемпе,
Шалта сарчĕç кавирне.
Унтан Пăлхар хулине,
Нухрат патшан тĕп килне
Хуса ячĕç йыхравçа,
Капан шăллă Ураçа.

Ураç çитет Пăлхара
Мăн сăмсине каçăртса,
Калать чăваш патшине
Кастарса йыт сассипе:
— Хăнуна эс, хунсен хунне,
Патти хуна,
Хĕвел хунне, уйăх хунне,
Патти хуна,
Унпа пĕрле чи паттăра,
Паштана та,
Паттăрсенчен чи паттăра,
Паштана та,
Хирĕç тухса кĕтсе илтер,
Нухрат патша.
Нухрат тăмпай, эс паянтан
патша та мар,
Эс паянтан хунсен хунĕн
чури анчах,
Çапла калать хунсен хунĕ таса
Патти,
Çапла калать Паштан паттăр.
Хăлхуна чик.
Хĕрĕх те пĕр ват юманран çуна
тутар,
Хĕрĕх те пĕр ăйăра эс халех
пустар.
Вĕсемсĕр пуçсăр Çил çуната
шариклеттер,
Ăш çăвĕпе икерчсене лайăх
сĕртер.
Шерпетне те, сим пылне те
хатĕрлеттер.
Эс çавсене çĕр çунана
тиеттерсем.
Эс вĕсене хăвах леçен.
Çавна асту:
Кавир сарма, апатланма,
ура çума,
Таш ташласа е юрласа
хунăн чунне уçма
Улăп арăмне, Саринене,
манпа яран.
Ун çи-пуçĕ чаплă пултăр
хун хĕрĕнчен.
Нухрат патша вăл хушнă пек
тумасассăн,
Паттипе эс тилĕ вăйййи
вылясассăн,
Сан Пăлхартан Чĕмпĕрти
пек чул та юлмĕ,
Тĕп хуларан кĕл куписем
кăна юлĕ.
Çур халăху пуçне хурĕ,
ан ман çавна,
Пуç хуманни — чура пулĕ,
ан ман çавна.
— Эпĕ, хун пек,
çăхан пулнă пулсан,
Патти хун пек,
кашкăр пулнă пулсан,
Йыт чĕлхӳне тататтăмччĕ
санне паян,
Ик куçна та шăтараттăм
санне паян,
Чăваш—йăваш, айванран мар,
ыр кăмăлран.
Чăваш халăх хăравçă мар,
сатур вăйран.
Патти хуншăн йыхравçăна
айăпламасть,
Йыхравçăна хăй çĕрĕнче хĕн
кăтартмасть.
Хăв асапна хăвах курăн
эсĕ кунтан,
Ман хыçран ут,
кайса пăхар халь кантăкран.
Улăп паттăр Патти хунпа
йĕк Паштана
Тăн кĕртнине кăтартам-ха
халь эп сана.
Авă унта — Макаç лаппи.
Куратăн-и?
Çав лапамра Улăп паттăр.
Куратăн-и? —
Терĕ патша йыхравçăна
мăн пӳлĕмрен.
Ураç сиксе чĕтрет
мĕн курнинчен,
Аслати пек Улăп сасси
янранинчен.
— Йыхрав ятăр патшана,
Çавăнпа эп çакăнта!
Ма тухмастăр ман пата? —
Улăп ыйтрĕ тăшмантан.
Лешсем сиксе тăрсанах,
Хĕççисене çаксанах
Кăшкăраççĕ ăмăртса,
Куçне-пуçне вылятса.
— Çапăçма е парăнма
Эсĕ антăн лапама?

— Эпĕ килтĕм лапама
Парăнма мар, çапăçма! —
Терĕ Улăп тарăхса
Аслатиллĕ уç саспа.
Паштан паттăр лăш вĕрет —
Чукун итем курăнать,
Улăп паттăр ал çĕклет —
Тимĕр итем хывăнать.
Паштан тимĕр итемре
Урлă-пирлĕ кускалать,
Патти хун ун хӳттинче
Каçăр сăмса, чăнах та.
Патти хунăн кукăр хĕç,
Улăпăн та пур вут хĕç,
Кукăр хĕçрен вут хĕçĕ
Чăнкăрт туса çеç илчĕ.
Вут хĕçĕнчен кукăр хĕç
Виçĕ татăк пулчĕ-мĕн.
Паштан паттăр кăшкăрсан
Çутă тĕнче чĕтрерĕ,
Улăп çине ыткăнсан
Çырта-çырта илейрĕ.
Анчах Улăп тумтирне,
Кукамăшĕ панине,
Паштан шăлĕ витеймест,
Улăп çавна ним сисмест.
Улăп сулать вут хĕçне —
Хĕçĕ çиçет хĕмленсе.
Паштан пулать çурмаран,
Çавах ӳкмест ураран.
Те ылтăнран тăнăран,
Те ăмланса кайнăран
Паштан паттăр ирĕлет,
Хытсан каллех вăй кĕртет.
Пĕр-пĕринпе пĕрлешет.
Çапăçмашкăн чарăнмасть,
Сике-сике кăшкăрать,
Асав шăлне кăларать,
Улăп çине ыткăнать,
Мăйран çыртса усăнать.
Пăва-пăва пĕр-пĕрне
Тач ӳкеççĕ çĕр çине,
Каллех сиксе тăраççĕ,
Пĕр-пĕрине тарăхса
Çавра-çавра çапаççĕ.
Çич çухрăма çитиччен
Тимĕр итем тĕпренет,
Вутăн-хĕмĕн сирпĕнет.
Улăп паттăр Паштана,
Çичĕ ютри тăшмана,
Хăйне çыртма тăриччен
Ярса илет хӳринчен,
Пĕр хутчен мар, çич хутчен
Çавра-çавра çапать те
Ӳпĕнтерсе вырттарать,
Унтан чунне кăларать.
Ярса илет Паштана
Явакласа хӳререн,
Пуçĕ тавра çавăрса
Ыткăнтарать инçете,
Каракума çитмелле,
Унта çĕрсе пĕтмелле.

*Суйăн Хĕветĕрĕ сăвăласа çырнă.*

## 18. КОНСТАНТИН ХУЛИНЕ ТУНИ

Константин патша пырать
Хура тинĕс хĕррипе
Клин-клин уткаласа
Хура çĕлен йĕррипе.
Хула тума вырăн пăхать
Икĕ хура куçĕпе.
Пысăк шухăшсем шухăшлать
Мирă сĕрнĕ пуçĕпе.
Тинĕс çинчен çил вĕрет,
Тинĕсре хум çĕкленет,
Хура тинĕс чапĕпе
Патша шухăш çирĕпленет.
Тинĕс хумсем пыра-пыра
Çырансене çапаççĕ;
Патшан вăйлă шухăшпала
Юн тымарсем тапаççĕ.
Патша вырăн юратса каять
Хура тинĕс хĕррине
Чаплă хула тумашкăн,
Ятне ĕмĕр хумашкăн.
Хăйĕнпеле пĕр канашлă
Çыннисене те патша
Хăй шухăшне пĕлтерет,
Кăмăльсене килтерет;
Пур ватсемпе тӳресемпе
Канашласа пĕтерсен
Сывлăхпа пулăшу ыйтать
Патша çӳлти турăран.

Патша вара çын пуçтарать
Хула вырăн тасатма,
Пупсем тухаççĕ турăшсемпе
Кĕлĕ туса ăсатма.
Çар халăх пек çын пырать
Хура тинĕс хĕррине
Хула вырăн тикĕслеме,
Кăмăл парса ĕçлеме.
Патша çынсем ĕçлеççĕ,
Хула вырăн тикĕслеççĕ
Ывăнмасăр, канмасăр,
Ĕçĕсене манмасăр.
Хура тинĕс тĕлĕнче
Хура пĕлĕтсем тухаççĕ,
Çăмăр пулса çăваççĕ,
Çырма пулса юхаççĕ.
Тырра-пулла ӳстерме
Çăмăрĕ те кирлĕ çав;
Патшасенĕн сăмахсем
Çта пырсан та вирлĕ çав.
Тинĕссем те кирлĕ çавă
Çĕр çийĕнче нӳр тытма,
Кимсене те тӳр килет çав
Тинĕс çийĕнче путма.
Хура тинĕс таврашĕнче
Пур савăнăç пурте пур:
Пĕлĕт пекех вĕçсе çӳрет
Кайăк квакал, кайăк хур;
Чечекĕсен илемĕсем
Куçа шартса яраççĕ;
Тĕтрисемпе сывлăмĕсем
Час-часах нӳр параççĕ;
Тинĕс пекех хумханаççĕ
Урписемпе туллисем,
Пăтă пекех вĕреççĕ
Хвел ăшшинче пуллисем;
Шултăрисем вĕттисене
Хыпа-хыпа çăтаççĕ,
Хумĕсем те хыт çапаççĕ,
Çырансем епле чăтаççĕ.
Çĕрĕн-кунĕн ăйхă памасть
Хура тинĕс патшана.
Епле пĕлсе пĕтермелле
Ку тĕнчери хват сана?
Турра кĕлтуса выртать
Ыр тĕлĕксем курасшăн,
Пĕр пит чаплă хула туса
Ятне ĕмĕр хварасшăн.
Тинĕс хум пек шухăш çӳрет
Кçтентин патша пуçĕнче.
Пуç çĕклейми шухăш парать
Патшана та ку тĕнче.
Хăйĕн çывăх çыннисемпе
Лара-лара канашлать,
Шухăшĕсем нумай пирки
Часран-часах анаслать.
Ир те пулать, каç та пулать,
Патша çынсем ĕçлеççĕ
Юрла-юрла, шавла-шавла
Хула вырăн тикĕслеççĕ.
Саланаççĕ килсене
Тикĕслесе пĕтерсен,
Хула туса лартмалăх
Вырăн туса çитерсен.
Шаланкăсем ташлаççĕ,
Вăрманĕсем кашлаççĕ,
Хура тинĕс хĕррисем
Патша куçне ачашлаççĕ.
Патшапала канаш тума
Пухăнаççĕ çенатсем,
Патша тавра лараççĕ
Хăйĕн савнă çунатсем.
Çунат çупса савăнса
Кайăкĕсем юрлаççĕ,
Илемлĕ сассисемпеле
Çут тĕнчене ырлаççĕ.
Патшасемпе çенатсем
Пĕрле канаш тăваççĕ,
Вăйĕсене пĕлесшĕн
Халăхсене сăваççĕ.
Акă патша хыпар ярать
Таçти-таçти çĕрсене
Хура тинĕс хĕррине
Хула тума килмешкĕн.
Шаннă çынсене ярать
Ăста çынсем шырама.
Часрах пухăнма хушать
Чаплă çуртсем пурама.
Мĕнпур хатĕр çитсессĕн,
Пур ăстасем пухăнсан
Каять патша каяллах
Хура тинĕс хĕррине
Çар халăх пек халăхпа
Хула туса лартмашкăн,
Малтан хула вырăнне
Пысăк хĕрес тăратмашкăн.
Хула вырăнĕ патне
Çывăхара пуçласан
Сехĕрленсе ӳкеççĕ
Пĕтĕм патша халăхĕ.

Вӗсем тасатса кайсан
Ту пысӑкӑш хура ҫӗлен
Хура тинӗсрен тухса
Выртнӑ хула вырӑнне.
Ҫӗлен тинӗсрен тухнине
Куракансем пулнӑ тет.
Тӑвӑл вӑхӑтӗнчи пек
Пӗтӗм тинӗс шавласа,
Пакӑлтатса пӑлханса
Пӑхма хрушӑ пулнӑ тет.
Акӑ ҫавӑ вӑхӑтра
Икӗ пуҫлӑ пӗр кайӑк
Кӗмӗл пекех ҫутӑскер
Ҫӳлте, ҫӗлен тӗлӗнче,
Ҫӗлен ҫинелле пӑхса
Вӗҫсе ҫӳрет ҫиҫӗм пек.
Ҫӗлен чӗтресе выртать
Ҫав кайӑкран хӑраса,
Кайӑк ҫаврӑнса ҫӳрет
Меллӗ вӑхӑт шыраса.
Вӗҫсе анса ҫаклатать
Чӗрнисемпе ҫӗлене
Этем чунне хратакан
Усал тискер клилене.
Кайӑк чӗрни ыраттарнипе
Ҫӗлен ахӑрать, шӑхӑрать,
Кайӑкпала ҫапӑҫма
Чӗпписене йӑхӑрать.
Амӑш патне пымашкӑн
Чӗпписем те хӑраҫҫӗ,
Тинӗс тӗпӗнче йӑвара
Хускалмасӑр тӑраҫҫӗ.
Кайӑк чӗрнисемпеле
Ҫӗлене ҫӗклет ҫӳлелле,
Часах илсе ӑлӑхать
Ҫӳле, пӗлӗт ҫинелле.
Ҫӗлен хӑпарас маршӑн
Авкаланать, чашкӑрать,
Пӗтӗм ҫӗре чӗтретет,
Ҫав тер хытӑ кӑшкӑрать,
Тем пек авкалансан та
Кайӑк ямасть ҫӗлене,
Куҫпа пӑхса курӑнми
Ҫӳле илсе ӑлӑхать.
Пӑрахать кайӑк ҫӗлене
Вӗлересшӗн ҫӗр ҫине.
Патша ҫынсем тасатнӑ
Хула вырӑнӗ ҫине.
Ӳкет ҫӗлен ҫӗр ҫине
Авкаланса, ахӑрса,
Усалсенӗн пуҫлӑхӗ
Асамӑҫ пек шӑхӑрса,
Ҫӗре чӗтретсе ярать
Ытла хытӑ ӳкнипе.
Ун тирӗнчен юн юхать
Кайӑк чӗрни чикнипе.
Акӑ ҫӗлен имкенет,
Авкаланать, пӑрӑнать,
Кайӑк ҫӗлен тӗлӗнче
Ялтӑртатса курӑнать.
Пуҫне ҫӗклет ҫӳлелле,
Пӑхать кайӑк ҫинелле,
Анчах хвачӗ ҫитес ҫук
Кайӑка тытса ҫимелле.
Кайӑк ҫӗлен тӗлӗнче
Вӗҫсе ҫӳрет ҫиҫӗм пек,
Хурчӑка пек явӑнса
Вӗҫсе ҫӳрет, ҫӳрет те,
Ҫӗлен ҫине анать те
Йиккӗмӗш хут ҫаклатать
Чӗрнисемпе ҫӗлене.
Хватлӑ чӗрнисемпеле
Татах илсе ӑлӑхать
Питӗ ҫӳле ҫӗлене
Витӗр куҫпа курӑнми.
Чӗрнисене ӗҫерсе
Каллех прахать ҫӗр ҫине,
Ҫӗлен лаплатса ӳкет,
Вилме патнеллех ҫитет.
Кайӑк пӗрмай явӑнса
Ҫӳрет ҫӗлен тӗлӗнче,
Ҫӗлене вӗлересшӗн,
Пӗтӗмпех пӗтересшӗн,
Анать аҫа-ҫиҫӗм пек
Ҫӗлен ҫине вашлатса,
Сехӗрленсе, хӑраса
Ҫӗлен выртать чашлатса;
Чӗрнисемпе ҫӗлене
Виҫҫӗмӗш хут ҫаклатать,
Ҫӗлене ҫӗклет ҫӳлелле,
Юнӗ ҫӗре патлатать.
Ҫӗлен ахӑрать, ҫухӑрать
Ҫӳле хӑпарас маршӑн,
Анчах ҫӗлен вилмесӗр
Кайӑкӗ каяс маршӑн
Татах илсе ӑлӑхать
Витӗр куҫпа курӑнми,
Каллах прахать ҫӗр ҫине
Ӗлӗк ӳкнӗ йӗр ҫине;
Вилет ҫӗлен пӗтӗмпех,

Ниçталла та шăвaймасть;
Тем пек пысăк пулсан та
Кайăка ним тăваймасть.
Çут тĕнчере нихçан та
Кун пек хрушă ĕç курман
Патшасем те, çынсем те,
Мĕнпур чĕрĕ чунсем те.
Ăна куçпа курса мар,
Çынсем калаçнипе те
Сехĕрленет çын чунĕ,
Сăрăлтатать çан-çурăм.
Ку мĕне пĕлтерет тесе
Патша питĕ хуйхăрать,
Пĕтĕм патшалăх такĕнчен
Ăслă çынсем йăхăрать.
Ăслă çынсем пухăнаççĕ
Часах патша чĕннипе,
Кала-кала параççĕ
Хăйсен патшине чăннипе.
Ăслă çынсен сăмахсене
Халь çырăпăр малалла.
Шухăшласа пăхсассăн
Тĕлĕнтерсе ямалла.
Хура тинĕсрен тухса
Хула вырăнне выртнă
Ту пысăкăш хура çлен
Акă мĕне пĕлтерет:
Хула туса пĕтерсен
Пайтах вăхăт иртсессĕн
Хула чапĕ сарăлĕ
Çĕрĕн вĕçĕ-хĕррине.
Хура вăрман пек çарпа
Килĕç хулана трĕксем,
Çавă çĕлен юнĕ пек
Юхтарĕç трĕкне грексем.
Нумай вăхăт хулара
Трĕксем ыр курса пурăнĕç.
Çутă кайăк Христос,
Ун çыннисем нумайччен
Явăнса çӳрĕç кайăк пек.
Калле туртса илесшĕн
Тĕрĕксенчен хулана.
Именсе-туса тăрас мар,
Вăл ĕç часах пулас çук,
Эпĕр ăна курас çук.
Кашкăрсенчен хăрасан
Каяс пулмасть вăрмана,
Çлене ваклас, турттарас
Тарăн вара çырмана.
Тăпра витес çиялтан —
Шăрши-марши ан тухтăр,
Часрах çĕрсе çĕр пултăр,
Ун вырăнне çын тултăр.
Христос Турă çынсенчен
Тĕрĕксем пит хăрĕçĕ,
Çĕлен пекех чĕтресе
Сехĕрленсе тăрĕçĕ.
Тем чул усă кӳреççĕ
Ку ватсенĕн сăмахсем:
Вĕсем юратса калаçнă
Тĕрлĕ-тĕрлĕ юмахсем.

*Н.И.Шелепи сăвăласа çырнă.*

## 19. ХУРА ÇĂРХА*

Пирĕн ялта Тукасра,
Пĕр çемьере, кил-йышра,
Кĕлеткипе кĕреш пек,
Сăнĕпеле хĕвел пек,
Ĕç ĕçлеме пит ĕçчен,
Вăйăа тухма пит чечен
Чаплă йĕкĕт пулнă тет,
Хĕр упраçшăн ӳснĕ тет.
Савнă ăна пикесем:
«Акă каччă вăл!» — тесе
Килĕшмешкĕн йĕкĕте
Кашни хунă ĕмĕте.
Пурлăхĕпе-мулĕпе
Ун чухнехи йĕркепе
Йĕкĕт пуян пулман тет,
Çунмаллиех пулман тет.
Анчах йĕкĕт — яш ача —
Хура çăрха тытнă тет,
Ăна лайăх пăхнă тет.
Кӳршĕ ялта, салара,
Пуян кăна кил-йышра
Сăнĕпеле, пуçĕпе
Ытарма çук чипер
Каччăн пĕр хĕр пулнă тет,
Пĕве çитсе пынă тет.
Çилĕн ĕçĕ — вĕресси,
Шывăн ĕçĕ — юхасси,
Çут хĕвелĕн — çунасси,

* Çăрха — сикмесĕр тикĕс юртакан лаша.

Хĕрпе каччăн — савасси...
Ăна эпир шутламан,
Ăна эпир кăларман.
Пирĕн йĕкĕт, çак пике —
Пулнă селĕм пĕр пекех,
Пĕрне-пĕри юратнă,
Пĕрне-пĕри килĕшнĕ.
Вĕлле хурчĕ — ылтăн хурт —
Чечек çумне çыпçăнать,
Çавăн пекех йĕкĕт пур,
Пике патне çул тăвать.
Шыври хăмăш ăш çиле
Килĕштерет, саламлать,
Çавăн пекех пике пур,
Çак йĕкĕте кăмăллать,
Çак йĕкĕте юрататъ.
Ир пулать те, каç пулать,
Каç пулать те, ир пулать.
Хĕл иртет те, çу килет,
Вăхăт иртни сисĕнмест.
Пирĕн ырă йĕкĕте
Авланмашкăн çул çитет,
Пирĕн лайăх пикене
Качча тухма çул çитет.
Сăмах татнă вырăна,
Çавал хĕрне, çырана,
Йĕкĕт улăх çулĕпе
Çӳрет хура çăрхипе.
Ку вырăнта йĕкĕте
Савнă хĕрĕ ун кĕтет,
Çакă чăнкă çыранра
Пит те лайăх вĕсене.
Турă учĕ çывăхра
Кĕтсе çӳрет, кĕçенет.
Хĕрпе каччă нумайччен
Уйрăлаймаç, калаçаç,
Çитес çимĕк эрнинче
Пĕрлешмешкĕн татăлаç.
Таçта, хăва хушшинче,
Шăпчăк юрă шăрçалать,
Ик çамрăка саламлать...
Анчах санăн, юрату,
Тыткăнра-çке хăвату.
Сан çулу çине ялан
Тухайса выртать йăран.
Кĕмеç пуян ӳкĕте,
Памасть хĕрне йĕкĕте:
Ма тесессĕн — мулĕ çук,
Мулĕ çук та — чапĕ çук.
Мĕскер кăна тумалла,
Мĕнле меслет тупмалла?
Анчах пирĕн йĕкĕте
Чаплă шухăш килнĕ тет.
Хăйĕн тӳрĕ çăрхине
Хушнă тет вăл хăй ĕçне:
«Хаклă утçăм, эс, çăрха,
Сис-ха манăн тарăха:
Пуян мана хĕр памасть,
Çакă мана кун памасть.
Йĕнерлем те эп сана,
Эсĕ çаврăн салана.
Тусăм тĕлне тухсассăн
Пуçна çĕкле хавассăн,
Лартса кил эс тусăма,
Илсе кил эс тусăма,
Çакă пултăр ман сăмах».
Çимĕк эрни вĕçĕнче,
Шăп кăнтăрла тĕлĕнче,
Йĕнерленĕ çак çăрха
Тĕлĕнтерсе халăха
Утăпа мар, юртăпа
Пынă теççĕ салапа.
Пуян тĕлне тухсассăн
Кĕçеннĕ тет хавассăн.
Ут сассине илтнипе,
Унтан утне курнипе
Хĕр, ларнăскер килĕнче,
Шалт кайнă тет тĕлĕнсе.
Унтан хăйĕн ашшĕнчен
Тархасласа ыйтнă тет:
«Эх, аттеçĕм, ыр атте,
Ан çилленччĕ эс питех,
Çавă çăрха хĕрĕнне
Питех кайрĕ кăмăлне.
Эх, йĕнерĕ питĕ шеп,
Чуна питĕ килĕшет.
Ирĕк парччĕ эс мана,
Çавă утпа çаврăнам».
Вĕçне-хĕрне пĕлмеççĕ,
Çаплах тесе сĕнмеççĕ,
Анчах ашшĕ çак тĕлте
Хĕрне чарма пĕлмен тет,
Хĕрĕ ашшĕ умĕнчен
Иртнĕ теççĕ ик хутчен,
Виççĕмĕш хут иртнĕ чух
Вĕçленнĕ тет калаçу:
«Атте, атте, сывă пул,
Сывă пул та пурлă пул,
Эпĕ санăн кил-çуртна
Урăх килсе кĕрес çук».

Çавăрнă та çăрхана,
Тусĕ патне выртнă çул...
Пирĕн ялта, Тукасра,
Пулнă çакă мыскара.
Çилĕн ĕçĕ — вĕресси,
Шывăн ĕçĕ — юхасси,
Çут хĕвелĕн — çунасси,
Манăн — сăвă çырасси.
Ăна эпĕ шутламан,
Ăна эпĕ кăларман.

*Иван Ивник сăвăласа çырнă.*

## 20. ХУРА ÇĂРХА

### Лашам

Лапан-лапан вырăнта,
Аслă улăх варринче,
Аслă улăх варринче
Лаша кĕтĕвĕ çӳрет.

Çӳре, çӳре эс, лаша,
Халь ху ирĕкре чухне,
Эпĕ сана тытатăп
Шелковăй вĕренпеле.

Кил, лашам, кил, лашам,
Савни патне каятпăр.
Тапрĕ керза аттипе,
Лаши сикрĕ малалла.

Чуп-чуп, лашам, чуп, .
лашам,
Савни патне çит, лашам,
Савни патне çитсессĕн
Тăват уран тапăртат.

Тух, тух, савни,
Тух, савни.
Манăн савни тухмарĕ,
Тухрĕ унăн амăшĕ.

Кĕр, кĕр пӳрте,
Кĕр пӳрте.
Эпĕ пӳрте кĕместĕп,
Эп крыльцана кĕретĕп.
Унта кĕме юрамасть,
Йывăр ыйхăллă хĕр çыврать.

Эх, юрату, юрату,
Çиçĕм пек сан хăвату.
Çиçĕм çиçет те сӳнет,
Юрату нихçан сӳнмест.

*Г.Ф. Юмарт сăвăласа çырнă.*

## 21. ПУСЙĔКĔТПЕ АЙПИКЕ

### Пĕрремĕш пайĕ

Пирĕн паттăр Пусйĕкĕт
Çур çĕрте выртса çыврать,
Ирхине ирех тăрать.
Тăлăх ача — яш йĕкĕт
Сив шывпа питне çăвать,
Шур пӳспе пусса шăлать.
Тăхăнать шур кĕпе-йĕм,
Хĕрлĕ пиçиххи çыхать.
Шур тăла чăлха çийĕн
Çĕнĕ çăпата сырать.
Тен, таçта каяс тетĕ? —
Хăйваскать, хыпаланать.
Çирĕ ыраш çăкăрĕ
Йӳçĕ тăварпа пусса.
Кĕрекене вăл лармарĕ,
Турăна тайса пуçа
Сăхсăхса мăкăртатрĕ.
Унтан алăка уçса
Пӳртрен тулалла вăл тухрĕ.
Пусйĕкĕт тула тухать,
Хапхана уçса пăхать:
Васкаса анат енчен
Урампа пĕр çын килет.
Нимĕн те çук аллинче...
«Ĕç ăнмасть», — тĕшмĕшленет,
Çавăрăнать те килет,
Хапхана хупсах хурать.
Пăртакран татах уçать:
Шыв йăтнă хĕре курать.
«Икĕ витре чăп тулли
Тăрна куç пек тăрă шыв,
Хĕр хăй те тач шыв пулли —

Çулăм ăнтăр манăн шав...» —
Терĕ те çамрăк йĕкĕт
Утрĕ урампа тухса.
Унăн хыççăн юлчĕ тĕкĕлт!
Хăма алăк хупăнса.
Лем! туса çăвар уçмарĕç
Паллакан ял йыттисем,
Ум-хыçран чупса каçмарĕç
Мăрăлти кушаккисем. —
Кăрăк-карăк тем калаçрĕç
Енкĕ çинчи кураксем,
«Ăнтăр çул» тесе ăсатрĕç
Уçă сассăн автансем.
Пусийĕкĕт утать, утать,
Пĕчĕк курăк та шăтман —
Çитмĕл çухрăм хир выртать,
Утмăл çухрăм сĕм вăрман.
Хăрнă йывăç çеç ларать.
Яш йĕкĕт утса пырать,
Курнă-пĕри пуç таяççĕ,
Тĕл пулсан хĕресченсем
Пăрăнаççĕ, çул параççĕ
Йывăр çăклă лашасем.
Тапса-сиксе ĕрĕхеççĕ
Каçăр пуç урхамахсем,
Чĕтресе ларса пыраççĕ
Пысăк хырăм пуянсем.
Пусийĕкĕт утать, утать,
Ывăнсан ларса канать:
Çăкăр çиет, шыв ĕçет,
Татах малалла каять.
Пĕр кун утать, икĕ кун...
Ăраскал пурах пуль ун.
Пирĕн паттăр Пусийĕкĕт
Утсан-утсан ирхине
Каснă вăрман кулккине
Ерипен пырса çитет.
Тăлăх ача, яш йĕкĕт,
Виççĕмĕш кун тĕл пулать
Шур сухаллă старике.
Чĕркуçленнĕ ăстарик
Хурăн тункати патне,
Йăпăштик! те йăпăштик!
Нӳрлĕ тунката питне
Чĕлхипе çулать, çулать,
Сусăн кайни палăрмасть.
Старик хаш! хаш! сывлать,
Çăварĕ типнĕ енне
Темĕн те мăкăртатать,
Пусарасшăн та чунне.

Пусийĕкĕт пырса çитет,
Çĕлĕкне пуçран хывса
Хул хушшине хĕстерет.
Пилĕк таран авăнса:
— Аликим-салам! — тесе,
Ват çынна сума суса
Виçĕ хутчен пуç таять,
Унтан аллине тăсать...

С т а р и к

Мĕн çăмăлпалан çӳрен,
Ырă кăмăллă ачам?

П у с и й ĕ к ĕ т

Ак мĕн çăмăлпа çӳреп,
Асатте, итле, калам:
... Каç выртса эп çывăртăм,
Тĕлĕк курса тĕлĕнтĕм.
Ирхине ир вăрантăм,
Çакă çулпа сĕмлентĕм.

С т а р и к

Ырă пултăр тĕлĕкӳ,
Ачамкка, ăнтăр ĕçӳ.

П у с и й ĕ к ĕ т

Асатте, эс итлесем,
Эппин, малалла калам.
Сад пахчийĕнче çĕрле
Эп çӳретĕп пĕр хĕрпе.
Çепĕççĕн пике пуплет,
Тути мĕлт-мĕлт! сиккелет.
Витĕр писнĕ пан улми —
Хĕп-хĕрлĕ пит çăмарти.
Калаçнă чухне кулсан
Пăт! путать путăк пулса.
Мăшăр куç — çĕмĕрт çырла,
Ăшшăн пăхать куçăмран
Пулăн тенĕн чун варли.
Çав хĕр тухмасть асăмран,
Сăнĕ каймасть умăмран.
Туйăнать çемçе алли
Ачашланă çурăмран,
«Пултăрччĕ ман чун варли», —
Шухăшлап хам ăшăмра.
Çепĕççĕн пуплет чĕлхи,
Чĕкеç чĕлхи темелле,
Сăмах çук каламалли
Тĕсĕ-пичĕн илемне.
Тĕс-питрен курсан куçпа

Ытарма хал çук пăхса.
Пĕр кашăк тăп-тăр шывпа
Тейĕн ямалла çăтса —
Çав тери илемлĕ хĕр.
Мĕнле чăттăр чун-чĕре
(Каласассăн пĕр те пĕр)
Юратмасăр çав хĕре.
Икĕ çивĕт пилĕкрен
Укалла выртать çиçсе,
Ывăça та кĕрĕ тен, —
Пилĕкĕ çинçе-çинçе.
Çав хĕр манăн чĕремрен
Тухмĕ, юлмĕ манăça.
Лăпкă çамрăк ĕмрĕмрен
Çав-çке илчĕ канăça.
Ват çын путрĕ шухăша
Итлесе калаçăва.
Чарăнчĕ те кăшт кăна,
Çамрăк тăсрĕ калава:
— Эп сăмах хушса калаçрăм
Тĕлĕкре çав чиперпе,
Ыталарăм та чуптурăм
Уйăх-çăлтăр çутипе
Хĕрĕн сим пыл тутине,
Сисрĕм ăшăм çуннине...
Кĕмĕл уйăх тĕксĕмленчĕ,
Те пире курсах вăтанчĕ:
Шуса пычĕ-пычĕ те
Пĕлĕт хыçнелле пытанчĕ.
Ишĕлнĕн пĕлĕт кашти
Шăпăр-шăпăр! çумăр çурĕ,
Çĕр çинчи хура витти
Лачăкам шыв пулчĕ, шӳрĕ.
Аслати те кĕр-р! кĕрлерĕ,
Çĕр чăмăрĕ чĕтрерĕ,
Ӳтĕм-пĕвĕм сăр-р! сĕрлерĕ,
Йывăр ыйхăм вĕçрĕ кайрĕ.
Хĕр çумра утса пыни
Тĕлĕкре тăрса çеç юлчĕ.
Çурăмран ачашлани
Çĕрлехи çут уйăх пулчĕ.
Шыраса эп çав хĕре
Килсе тухрăм çак çĕре.
Пĕлĕттĕмччĕ питĕ те —
Пур-ши, çук-ши, асатте,
Çав хĕр çак çут тĕнчере?
Яшăн сăмахне итлерĕ,
Ватă çын пуçне силлерĕ.
Çакнашкал сăмах пуçларĕ:
— Пур ун пек хĕр, ывăлăм,
Усравра пурнан хĕр вăл. —
Аллине ват çын çĕклерĕ,
Шĕвĕр пӳрнепе тĕллерĕ.
— Тухнă çулпала утсассăн
Унпала эс тĕл пулатăн.
Ват çын темĕн пехиллерĕ,
Курайморăм, пĕлеймерĕм —
Сисеймерĕм, илтеймерĕм —
Мăкăр-мăкăр тем каларĕ.
Пусйĕкĕт пуç пĕксе тайрĕ,
Ватă çынна хапăлларĕ,
Ытакласа* ăна чуптурĕ,
Ыр канашшăн хыт тав турĕ,
Старике сума суса
Алă пачĕ: — Сыв пул! — терĕ,
Утрĕ мăн çула тухса.

Старик

Ăнса пытăр утăм çул,
Вăй хушăнтăр çулран-çул...
Пурнăç уттинчен ан юл! —
Ватă çын пуçне сулать,
Кăшкăрса çапла калать:
— Тĕрĕс курнă тĕлĕкӳ,
Çиттĕр шанчăк-ĕмĕтӳ!
Çичĕ тăвăн леш енче,
Пит илемлĕ хулара,
Шур патша керменĕнче,
Тарçă-тĕршĕ шутĕнче
Çав хĕр пурнать асапра.
Санăн хыт васкамалла,
Хăвăртрах та хăвăртрах
Ут, ывăлăм, малалла,
Вăл хĕре хăтармаллах.

Пусйĕкĕт утсан-утсан,
Çитмĕл çухрăм çĕр кайсан
Шăлтах ывăнса çитет,
Тӳсме çук хырăм выççан
Ăш-чик чăрлать, чĕпĕтет.
Хырăм выçă пулсан та
Пурпĕр шыв ĕçес килет.
Çиес килет — çăкăр çук,
Ĕçес килет — шыв та çук...
Йĕкĕт ун-кун пăхкалать:
Аслă вăрман хĕрринче
Хăрнă юман кутĕнче,
Мăн тымарăн хӳттинче,

* Ыталаса.

Ешĕл япала курать,
Ун патне васкав пырать.
Пулнă пăрçа йĕннисем
Илĕртеççĕ ун куçне, —
Тенĕнех: «Татса çисем!»
Пусйĕкĕт силлет пуçне,
Унтан пуçлать юррине:
«Чăмăр-чăмăр пăрçасем —
Пихампарăн куççульсем,
Куççуль нӳрпе шăтнă пуль,
Ман телейрен ӳснĕ пуль», —
Юрла-юрла юррине,
Тата-тата йĕннипе
Çурса пăрçана çиет.
Пулнă пăрçана çисен
Выçнă хырăм тăранать,
Вăй хутшăннăн туйăнать.
Кăштăм канса йăл илсен
Пирĕн йĕкĕт, Пусйĕкĕт,
Тăрать те татах сĕнккет.
Акă вăл часах çитсе
Хура вăрмана кĕрет.
Хура вăрман ăшĕнче,
Чăнкă çырлă варĕнче,
Харсăр чунлă йĕкĕте
Хуп-хура çĕр варринче
Вун ик кашкăр тапăнать,
Çыртса çурма хăтланать.
Пусйĕкĕт усмасть пуçне,
Хыттăн юрлать юррине:
«Çакă пирĕн пăрçасем —
Пихампарăн куççульсем.
Вăрманти выç кашкăрсем —
Пихампарăн йыттисем...
Ыр Пихампар, Пихампар,
Хăвăн йыттуна ху чар!»
Пихампар чĕнсе чĕнмест,
Унăн, тен, хăлхи илтмест?
«Йыттисене» те чармасть,
Тен, чарма куçĕ курмасть?
Пихампарăн «йыттисем» —
Çыншăн хаяр тăшмансем,
Мĕн сиен туман вĕсем!..
Мĕнпур чĕрĕ чĕр чунсем
Упапа кашкăрсенчен
Хăранă чун тухиччен.
Пихампарăн «йыттисен» —
Сĕм тĕттĕмри кашкăрсен
Куçĕсем вутла çунаç,
Чĕрнисем çĕре чаваç.
Кашкăрсем урсах каяç:
Шак-шак-шак! шăлне шаккаç.
Пирĕн харсăр йĕкĕте
Çыртса çурма хăтланаç,
Ахăрашса темĕн те
Хăратмашкăн хăтланаç.
Пусйĕкĕт усмасть пуçне,
Тăсать хаман юррине:
«Вăрманти выç кашкăрсем —
Пихампарăн йыттисем;
Эпĕ çинĕ пăрçасем —
Пихампарăн куççульсем...
Санăн пăрçуна татрăм,
Каçар, тен, йăнăш турăм.
Хырăм выçнăран çирĕм,
Пысăк çылăха кĕтĕм.
Ыр Пихампар, Пихампар,
Манăн çылăха каçар,
Кашкăра çыртма ан пар,
Хăвăн йыттуна ху чар!».

Пихампар чĕнсе чĕнмест,
Унăн, тен, хăлхи илтмест?
«Йыттисене» те чармасть,
Те чарма куçĕ курмасть?
Пихампарăн йыттисен —
Сĕм тĕттĕмри кашкăрсен
Куçĕсем вутла çунаç,
Чĕрнисем çĕре чаваç.
Кашкăрсем пушшех ураç:
Шак-шак-шак! шăлне шаккаç.
Пирĕн харсăр йĕкĕте
Çыртса çурма хăтланаç,
Ахăрашса темĕн те
Хăратмашкăн хăтланаç...
Пусйĕкĕт пуçне усмасть,
Хăранине палăртмасть.
Ак, тамаша! Кĕтĕрет,
Нимĕн уйламан-туман
Çĕр чĕтретсе мĕкĕрет
Паттăр упа-утаман.
Вăрман патакне курсан
Вун ик кашкăр-кашаман
Çăтăрлăха сирпĕнет.
Упа, упа-утаман
Йĕкĕт патне вирхĕнет,
Пирĕн харсăр йĕкĕте
Туртса çурма хăтланать,
Ахăрашса темĕн те
Хăратмашкăн хăтланать.

Асар-писер тытăçу
Упапалан пуçланать,
Питĕ вăйлă çапăçу
Шăп çутăличчен пырать.
Хĕвел тухсан, çутăлсан
Мăн упа халтан каять,
Вăй пĕтнипе сулăнса
Çĕр çине тӳп! йăванать,
Йăванать те шăпланать.
Пирĕн харсăр Пусйĕкĕт
Āслă çултан пăрăнмасть,
Çавăнпа нихçан çĕтмест,
Ваттăн сăмахне итлет,
Çавăнпа ун çул ăнать.
Нумай-и, сахал утсан
Āслă вăрмантан тухать,
Хирте çаплах-ха тусан
Тустарать, тусать,
тусать.
Пусйĕкĕт утать, утать,
Самаях тĕнче курать.
Курнă-пĕри пуç таяççĕ
Тĕл пулан ĕçлекенсем.
Пăрăнаççĕ, çул параççĕ
Йывăр çăклă лашисем.
Тапса-сиксе ĕрĕхеççĕ
Кукăр мăй урхамахсем,
Ӳкес пек ларса пыраççĕ
Мăн хырăмлă улпутсем.
Пусйĕкĕт утать, утать,
Умăн-хыççăн пăхкалать,
Умра хуп-хура çĕлен,
Хăрăк-харăк йывăçсем...
Çаврăнса пăхать хыçне,
Тамаша, ак мĕн курать:
Хăрнă йывăç вырăнне
Ем-ешĕл вăрман ларать,
Хуп-хура çул айккипе
Ылтăн тулă хумханать.
Хирсенче, вăрмансенче
Тĕрлĕрен чечек ӳсет,
Садсенче, пахчасенче
Тĕрлĕрен çимĕç пиçет.
Юр юрлаççĕ кайăксем
Йывăç çулçи хушшинче,
Савăнаççĕ пур çынсем
Савăк юрă илтнипе.
Пурнăç майланса пырать,
Пĕтĕм халăх савăнать,
Пусйĕкĕте тав тăвать.

## Иккĕмĕш пай

Пирĕн паттăр Пусйĕкĕт,
Харсăр ача, яш йĕкĕт,
Кун утать те çĕр утать,
Ват çын ăсĕнчен тухмасть,
Яланах пуçра тытать,
Āслă çултан пăрăнмасть.
Вăрăм çулпала утса
Çичĕ тăва хăпарать,
Анаталлине анать,
Çич вăрман витĕр тухать,
Çичĕ хир çипе иртет,
Çичĕ çырмаран каçать,
Унăн шывĕнче ишет.
Çичĕ вăрмантан тухсан
Çавă вăрман айĕнче,
Çичмĕш çырмаран каçсан
Çавă шыв кукăрĕнче
Пысăк кив хула курать,
Тата хăвăртрах утать.
Пусйĕкĕт утать, утать,
Хулана пырса кĕрет,
Пĕр çурт умне чарăнать —
Çук ниçтан кĕме ĕрет.
Патша çурчĕ питĕ чаплă,
Купаланă хыт чулран,
Çурт тавра ем-ешĕл садлă,
Сад картийĕ хурçăран.
Çитмĕл çичĕ кантăклă,
Утмăл ултă алăклă
Патша пурнан шур кермен —
Мĕн чул çын хуман термен
Çак чул çурта пĕтерме.
Кермен тавра тытса тухнă
Чалăш çӳллĕш чул хуралтă,
Сарлакăшĕ метăртан.
Кил карти çумпе пăшаллă
Пин-пин салтак хуралта.

Шурă чул çурт мал енче
Йăлтăр-йăлтăр чӳрече,
Кантăк витĕр хĕр пăхать,
Каччă тути йăл кулать:
Хум пек кăтра çырă çӳçĕ
Çил вĕрнипе вĕлкĕшет,
Çутă çăлтăр пек çут куçĕ
Хĕр çине шав тинкерет.
Тӳсеймерĕ-чăтаймарĕ,
Пусйĕкĕт такмак пуçларĕ:

— Çак хуланăн хĕрĕсемшĕн
Шутламан эп çул тытма.
Сĕмсĕр шухă тĕлĕк темшĕн
Ертсе тухрĕ сан патна.
Хам пуçа та шеллеместĕп,
Савнă тусăм, эс савсан.
Мĕншĕн-ха эсĕ чĕнместĕн?
Тен, ман шухăша сисместĕн?
Мĕншĕн ăша пăштаран,
Ман чĕрене çунтаран?
Ĕмĕр-ĕмĕр эс пулсамччĕ,
Савнă хĕрĕм, ман çумра,
Юратупа ăшăтсамччĕ,
Йăпатсамччĕ яш чуна...

Йывăр алăк, тимĕр алăк
Кĕмсĕрт-кĕмсĕрт! уçăлчĕ,
Хĕр куç харши икĕ авăк —
Алчрать каччăн куç-пуçĕ.
Хĕр тухса утса пырсан,
Хăй çумнех пырса тăрсан
Нимĕскер чĕнме аптрарĕ,
Хăмач пек пулса вăл кайрĕ.
Ыталарĕ хĕр, чуптурĕ
Урамрах Пусйĕкĕте,
Çын куласран уйламарĕ,
— Атя, — терĕ, —
кĕрер, — терĕ...
Ертрĕ кĕчĕ йĕкĕте
Хĕр хăй пурнан пӳлĕме.
Хуралсем те хăяймарĕç
Çамрăксен умне пӳлме,
«Ан кĕр», —
тесе те чармарĕç.
Ах, шеремет, тур ан пăрах!..
Аслă хуралçă çантах
Йăртлатать элеклеме,
Хыпар тума патшана,
Пысăк хырăм шампана
Хĕтĕртсе çиллентерме.

Тĕнчере тĕлĕнмелле:
Хăй пуян, тăп-тăр ухмах.
Чăн çакна ĕненмелле —
Çук çын çĕр хут ăслăрах.
Çĕршывра патша пуян,
Асĕпе ытла айван.
Итлекенĕм, ху туян —
Юмах нихăçан суйман,
Тĕрĕсне те каламан.

Юптармашкăн чарăнман,
Анчах чăн юмах ку ман.

Патша çĕн хыпар илтсен
Хĕр патне усал-тĕсел,
Тен, иленнĕ пуль тесе
Тумашкăн эмел-тĕмел
Юмăç ярать хистесех.
Юмăç карчăк керменре
Аташнă тет чĕмере.
Кунĕпеле шыраса
Тупайман хĕр пӳлĕмне,
Каç пулсассăн тин аран
Кĕнĕ тет патша патне
Юмăç карчăк хашкаса.
Хăш-хăш, хăш-хăш сывласа
Каларĕ тет патшана:
— Ах тур-тур-тур, тур çырлах.
Усал манран вăйлăрах...
Вăйăм çитмест тухатма,
Хирĕçле тьăх-тях тума.
Хальччен курман тамаша
Куртăм паян, апăрша...
Çĕр çул ытла пурăнса
Халиччен те аташса
Çӳременччĕ урамра,
Вăрманта та мар — çуртра.

Çак мыскарана илтсен
Патша ӳкет хăраса,
Çантах тĕпĕртеттерсе
Карчăка ярать хуса.
Хут çырса ятарласа
Кăларать патша указ,
Вăрçăпа тухма хушса
Янрала парать приказ.

Йывăр хыпара илтсен
Йĕкĕт ларчĕ хĕр çумне,
Тăсрĕ хăйĕн юррине,
Хумхантарчĕ чун-чĕмне,
Хĕрĕн лăпкă чĕрине:
— Ай, Айпике, Айпике!
Аçуна кайса кала:
Ан хускаттăр вăрçине,
Аçун хура халăхĕ
Хура шăна мар-çке.
Виç пин виç çĕр салтакĕ
Виçĕ минут вăрçма çеç.
Эпĕ кунта килнĕ чух

Çитмĕл çухрăм çеçен хир —
Пĕрчĕ курăк та шăтманччĕ,
Утмăл çухрăм сĕм вăрман —
Хăрнă йывăç ларатчĕ.
Эпĕ утса тухсассăн
Утмăл çухрăм сĕм вăрман
Симĕс тум йăлтах тумланчĕ,
Вак кайăксем хавасланчĕç.
Çитмĕл çухрăм çеçен хир
Тĕрлĕ чечекпе витĕнчĕ,
Çĕршыва илемлĕх кӳчĕ,
Халăха савăнтарчĕ.

Айпике çакă юрра
Макра-макра ашшĕне
Кайса каласа парать:
— Ай, аттеçĕм, аттеçĕм,
Ӳкей аттем пулсан та
Çак юррăма итлесем,
Ан хускатсам вăрçуна!
Санăн хура халăху
Хура шăна мар пуль-çке.
Виç пин виç çĕр салтаку
Виçĕ минут вăрçма çеç.
Йĕкĕт кунта киличчен
Пирĕн тавра çеçен хир
Пĕрчĕ курăк шăтманччĕ.
Йĕри-тавра сĕм вăрман
Хăрнă йывăç ларатчĕ.
Пусйĕкĕт утса тухсан
Хăрса пĕтнĕ сĕм вăрман
Çулçă çурса чĕрĕлчĕ,
Вĕтĕ-вĕтĕ кайăксем
Савăнса юрра ячĕç.
Таврари çеçен хирсем,
Вĕтĕнсе пĕтнĕскерсем,
Чĕрĕлсе йăлт ешерчĕç,
Чечексемпе витĕнчĕç,
Çĕршыва илем кӳчĕç.
Уйламасть айне-вăйне,
Патша пуçне пăркалать:
— Кăларатăп сив вăрçа
Виç пин виç çĕр салтака,
Вĕлереп, — тет, — йĕкĕте...
Путсĕрскер, ĕрете —
Нимле кĕмест ӳкĕте.
Мĕн-ха тăвăн йĕксĕке?

Ылтăн пакунлă янрал
Пемешкĕн хушать пăшал.
Уçă сасăпа янратать.
Пирĕн паттăр Пусйĕкĕт
Пушă алăпа тухать,
Харсăр ача, яш йĕкĕт,
Пульăран та хăрамасть.
Хĕç-пăшаллă офицере
Ярса тытать ураран,
Ик алăпа пĕçĕрен —
Туртса çурать çурмаран.
Унтан пăрахать çĕре.
— Мана хирĕç ан тăрăр,
Пăшалăра пăрахăр.
Мана тимĕр хĕç витмест,
Пăшал пульли те лекмест.
Мана хирĕç çапăçсан
Чĕр вилĕм сире кĕтет,
Çапăçмасан, мир тусан
Ырă пурнăç хăй килет.

Пăлханать салтак, шавлать:
Офицерпе тавлашать,
Янралран та хăрамасть,
Хирĕçме пăхса тăмасть,
Хыçран куклиш кăтартать.
Кĕр-р! кĕр-р! сасă илтĕнет,
Хуртлă вĕлле пек сĕрлет,
Ур-ра!.. тени вĕçĕмрен
Аслати пекех кĕрлет.
Пĕр ик-виçĕ сехетрен
Лăпланать хуллен шăв-шав.
Салтаксем каяççĕ шав
Хулари çĕр крепоçне
Вăрçă шавĕ лăплансан,
Салтаксем те салансан
Пусйĕкĕт кĕчĕ хĕр патне,
Тăсрĕ хăйĕн юррине:
— Ах, Айпике, Айпике!
Аçуна кайса кала,
Чартăр сивĕ вăрçине.
Чармасан аçу вăрçа
Пĕчĕк-пĕчĕк варсемпе
Юхĕ тулса çыннăн юнĕ.
Пĕр сывă салтак та юлмĕ
Çарсенчи пулăксенче*.
Вăрçă çапăçнă тĕлте
Нӳрелĕç юнпа çĕрсем,
Тулкăн-тулкăн кĕлте пек
Выртĕç этем кевтисем.

* Полксенче.

Çакă юрра Айпике
Ашшĕне кайса калать:
— Ай, аттеçĕм, аттеçĕм,
Ӳкей аттем пулсан та
Çак юррăма итлесем,
Сивĕ вăрçуна чар-ха?

Сив вăрçуна чармасан,
Чарăнмасăр çапăçсан
Пĕчĕк-пĕчĕк варсенче
Юхĕ тулса çын юнĕ,
Çарсенчи пулăксенче
Сывă салтак та юлмĕ,
Аманса, вилсе пĕтĕ.
Вăрçă çапăçнă тĕлте
Нӳрелĕç юнпа çĕрсем,
Тулкăн-тулкăн кĕлте пек
Выртĕç вилĕ кевтесем. —
Уйламасть айне-вайне,
Патша пуçне пăркалать:
— Аслă çар пуçĕ туса
Ывăла ярап вăрçа.
Тăмăп çын мăшкăль пулса,
Çĕнтеретĕп çапăçса.

Хупăрлать йĕри-тавра
Вăйлă çарпалан тăшман,
Аллипе çавра-çавра
Пемешкĕн хушать пăшал
Патша ывăлĕ — çар пуçĕ...
Çара пакарта çерçи,
Алчăранă куçĕ-пуçĕ,
Çапах пулать вĕçенçи.
Пирĕн паттăр Пусийĕкĕт
Хĕç-пăшал алла тытмасть,
Хăйĕнпе ним те илмест,
Пушă алăпа тухать.
Йывăр хĕнлĕхе тӳсет.
Тăшман çар умне тăрать,
Мĕн пуласне систерсе
Хăйĕн юррине тăсать:
— Патша ывăлĕ — çар пуçĕ,
Кула-кула килтĕн пулĕ,
Макра-макра кайăн-ха,
Тамăк тĕпне пулăн-ха!
Аннӳ сана та çуратнă,
Шурă пӳспелен чĕркенĕ,
Мана анне çуратнă,
Пир кипкепе пиеленĕ.
Хулара сана юратнă
Чаплă çынсен йăхĕнчен,
Ял çынсем мана юратнă
Тăлăх ача хакĕнчен.
Тăлăх хакĕнчен çеç мар,
Пулнинчен ытла хастар.
Йĕкĕт тăхтаса кăштах
Тăчĕ юрă хыçĕнчен,
Хушса хучĕ çапларах
Чăн сăмах хăй пуçĕнчен:
— Мана хирĕç çапăçсан
Чĕр вилĕм сире çитет,
Çапăçмасан, мир тусан
Ырă пурнăç час килет.

Патша ывăлĕ — çар пуçĕ,
Чарăнусăр шуйттан пуçĕ,
Нимле кĕмест ӳкĕте,
Ӳкĕтсĕр тач упăте:
— Пуçна хĕçпелен касап,
Çитмĕл çичĕ çухрăма
Тапса сирпĕтсе ярап.
Ан юл ман çывăхăма,
Тек ан курăн куçăма, —
Тесе хыттăн ятлаçать,
Пуç тавра хĕçе çаврать,
Йĕкĕте мăйран сĕлтет.
Чĕнкĕлт! сасă илтĕнет,
Хĕç çурмаран хуçăлать,
Хуçăкĕ вĕлт! сирпĕнет.
Паттăра хĕç витмест тет,
Патша ывăль пиртĕхет,
Пиртĕхет те макăрать,
Çарне хăварса тарать.

Пăлханать салтак, шавлать:
Вĕллери хурт пек сĕрлет,
Офицерпа тавлашать,
Янралран та хăрамасть,
Хирĕçме пăхса тăмасть,
Куçран кăтартать куклиш:
— Акă сана тыт, — тет, — шиш!
Ан хуш пире çапăçма,
Хура халăхпа вăрçма! —
Аслати пекех кĕрлет,
«Мир! мир!» тесе кăшкăрать,
Вĕллери хурт пек сĕрлет
Салтаксен янрав сасси.
Лăпланать хуллен шăв-шав
Çутăлас чух ир енне.
Чарăнсассăн шухă шав

Йĕкĕт кĕрет хĕр патне,
Хурлăн тăсать юррине:
— Ах, Айпике, Айпике!
Аçуна кайса кала,
Чартăр юнлă вăрçине.
Чарăнмасассăн вăрçма,
Аçу чармасан вăрçа
Пĕчĕк-пĕчĕк варсемпе
Юхĕ шарласа çын юнĕ,
Çарти салтак пачах юлмĕ,
Тулкăн-тулкăн кĕлте пек
Выртĕç этем виллисем.
Вăрçă таптанă тĕлте
Часах шăтмĕç курăксем,
Юнлă вăрçă хирĕнче
Час хунамĕç тырăсем.

Çакă юрра Айпике
Ашшĕне кайса калать:
— Ай, аттеçĕм, аттеçĕм,
Ӳкей аттем пулсан та,
Çак юррăма итлесем,
Юнлă вăрçуна чар-ха!
Юнлă вăрçа чармасан,
Чарăнмасăр çапăçсан
Пĕчĕк-пĕчĕк варсенче
Юхĕ шарласа чĕр юн,

Çарсенчи пулăксенче
Тăрса юлмĕ сывă çын.
Тулкăн-тулкăн кĕлте пек
Выртĕç салтак виллисем,
Вăрçă таптанă тĕлте
Часах шăтмĕç курăксем,
Юнпа шӳнĕ хирсенче
Час хунамĕç тырăсем.
Ай, аттеçĕм, аттеçĕм,
Ӳкей атте пулсан та
Çак юррăма итлесем,
Юнлă вăрçуна чар-ха!..
Уйламасть те ай-вайне,
Патша пуçне пăркалать:
— Тарçă-тĕрçĕне шанан
Хăрах куçлă юлнă тет.
Ачапчана шанакан
Тĕм суккăр пулнă тет. —
Янăрала та шанмап,
Ывăлăма та шанмап.
Хам ертсе тухап вăрçа
Виç пин виç çĕр салтака,

Пĕри юлмиччен вăрçап,
Пĕтереп, — тет, — йĕкĕте, —
Патша кĕмест ӳкĕте.

Ырă йĕкĕт, Пусйĕкĕт,
Аттине хывса силлет:
Урайне тем ӳкрĕ тӳнкĕрĕт!
Айпике ăна илет:
— Ку мĕн япала? — тесе
Йĕкĕте парать илсе.
— Каласа парам, пикеçĕм,
Савнă тусăм, чĕкеçĕм,
Чăн-чăн тĕрĕсне сана.
Пĕр ăстарик парнелерĕ
Тĕл пулсан çакна мана.
Айпике пуçне силлерĕ,
Яш татмасть калаçăва,
Тăсать-ха çав калава:
— Пеккĕн çич вĕçне уçса
Сывлăша пĕрех сулсан
Çич çухрăм йĕри-тавра
Мĕнпур — вăл касать, турать.
Çак пекке вирт пек хăйранă,
Çĕр те çитмĕл хĕлĕхсем.
Пире ăна шанса панă,
Çирĕп тытĕç аллăмсем...
Пусйĕкĕт хăй юррине
Юрласа пĕтереймест.
Хупăрлать йĕри-тавра
Сĕмсĕр çарĕпе патша,
Аллипе çавра-çавра:
— Пер-р-ĕр!..— хушать,
тамаша.
Çине-çинех хистесе
Кăшкăрать салтаксене.
Хĕн-асап пуçа ӳксессĕн
Лăпкă çын та тӳсеймест,
Чун чĕрне вĕçне çитсессĕн
Çын хăрушлăха сисмест...
Пирĕн паттăр Пусйĕкĕт,
Ырă каччă — яш йĕкĕт,
Йăлтăр çутă пекĕ тытрĕ,
Çичĕ вĕçрен пĕрне уçрĕ,
Юнлă вăрçа хирĕç тухрĕ,
Айпике ун хыççăн утрĕ.
Аслати пекех кĕрлеççĕ
Тупă, пăшал сассисем,
Сивĕ пăр пекех ӳкеççĕ
Путсĕр тăхлан пульлисем,
Каччăпа хĕре анчах,

Çук, сиен тивместъ пачах.
Пирĕн паттăр Пусйĕкĕт,
Харсăр каччă — яш йĕкĕт,
Пекĕпе пĕр хут çеç сĕлтрĕ —
Пин салтакăн пуçĕ пĕтрĕ.
Урăх пĕрре те сĕлтмерĕ —
Салтаксем тарса йăлт пĕтрĕç.
Офицерсем паçăрах
Тарса пĕтнĕ йăпăртах.
Путсĕр патша, шур патша,
Сикрĕ ўкрĕ тигр пек
Пит хăрушшăн урмăшса.
Касать, касать йĕкĕте —
Хĕç витмест Пусйĕкĕте.
Чăрсăр патшан ўт-пĕвĕ
Хĕçпе каснă вăхăтрах
Чулланса пырать тет вĕт.
Чуллансассăн урисем
Кутăн кайса ларчĕ те
Хăй хаман хĕçпе сĕлтет.
Чуллансассăн аллисем
Çут хĕç аллинчен ўкет.
Кевти çеç мар, ури те,
Ури çеç мар, алли те
Шурă патшан ĕçлемест,
Чĕлхи çеç сўпĕлтетет:
— Манăн пит вăрах çилпе
Лармалла-ши чулланса? —
Ыйтрĕ патша хурланса.
— Эс чулланнă хальлĕн юлăн
Ĕмĕр-ĕмĕрех çапла.
Саншăн çĕр çинче çук вырăн,
Каймалла сан çăвана, —
Терĕ йĕкĕт патшана,
Чул кевтеллĕ шампана.
Çакă сăмаха илтсессĕн
Чунĕ кўтсе çитнĕрен
Пĕчĕк ачалла мĕскĕннĕн
Сасăпах патша йĕрет:
— Пĕтрĕ манăн, — тет, — ăрат.

Тĕлĕк, тĕлĕк, эс мĕн калăн?
Пулчĕ тăчĕ шур патша
Икĕ пуçлă ăмăрт кайăк.
Ак пĕр мăшкăл тамаша!
Лăпсăр-лăпсăр лăпсăртатрĕ,
Хускатрĕ те çунатне
Сывлăша çĕкленчĕ кайрĕ,
Ларчĕ ват юман тăрне.
Тухрĕ вăйлă çиллĕ тăвăл,
Хуçрĕ йывăç вуллине,
Ăмăрт кайăк — пысăк кайăк —
Тўп! çеç турĕ чул çине.
Ăмăрт кайăк икĕ пуçĕ
Çурăлчĕ ирĕксĕрех,
Вата старик пурнăç пуçĕ
Пулчĕ тăчĕ ĕмĕре,
Ĕмĕре, атьсемĕре,
Телей юлчĕ хамăра,
Телей уççи хамăрта,
Пĕтĕм йышлă халăхра.

Тĕлĕк, тĕлĕк, эс мĕн калăн?
Вăл кăтартнă чăннипех,
Тĕлĕк хыççăн тухса кайнă —
Пĕлетĕр вуланипех.
Унăн халь çумра пике.
Пулчĕç тăчĕç салтаксем
Тислĕк чаван çăхансем,
Пусйĕкĕтпе Айпике —
Мир кăвакарчăнĕсем.

## Виççĕмĕш пай

### Старик

Пирĕн тăшман пĕтмен-халĕ,
Сывлăшра пурнать çăхан,
Çĕр çинче йăшăлтатаççĕ
Вĕри çĕлен-аçтаха.
Хуçа пулма хапсăнаççĕ
Çав йĕксĕк-хăяматсем,
Çынна сăхма хăтланаççĕ
Татах çав эсреметсем:
Шухăшлаççĕ, канашлаççĕ
Çĕленпе хура çăхан,
Хайăрса илме шутлаççĕ
Телей уççине алран.
Пурăнать шывра пĕр тусĕ —
Çăткăн пыр, хаяр çăрттан.
Уйласах ăçтан чун тўсĕ?
Вăл мĕн чухлĕ пул çăтман!
Çăткăн чĕр чунсен йăх-яхĕ
Ан пултăрччĕ сывлăшра,
Ан пултăрччĕ унăн йăхĕ
Çĕр çинче тата шывра.
Вăрттăн пытанса выртать
Путсĕр чĕрĕ чун — çăрттан,
Май пулсассăн пăтратать
Тăр шыва çав çĕр çăтман.
Пур тата çырмара сĕлĕх —

Вăл мĕн чул чĕр юн ĕçмен!
Уншăн ан пултăр селĕмлĕх,
Халь те чарăнмасть ĕçме.

Йĕкĕт пуçне çеç силлерĕ —
Вакламасть сăмах-юмах,
Ват çын сăмахне итлетĕ,
Тухса утать çавăнтах.
Чугун витене кĕретĕ,
Çав самантра, туххăмрах
Йĕкĕт çавăтса тухатĕ
Çил çунатлă урхамах.
Урхамах пуçне ухатĕ,
Ача çине тулхăрать,
Унăн çийĕнчи тумтирĕ
Йĕс тĕслĕ пулса тăрать.
Унтан ут çапла каларĕ
Этем чĕлхи кăларса:
— Витене пырса кĕрсессĕн
Курăн пăтара йĕнер
Çакăнса тăнине эсĕ,
Илсе тухса йĕнерле.
Йĕкĕт витене чупать,
Вăл часах калла тухать:
— Йăтаймастăп ăна, — тет.
Йĕнер пулнă хĕрĕх пăтлă,
Йĕкĕт çампа çĕклеймен.
Ача та пулнă пит вăйлă,
Хĕрĕх пăта вăй çитмен.

Л а ш а

— Йĕнер сумкинче тару пур,
Шкалик кĕленчере.
Çав тарăва ĕçсессĕн хур
Калла... Санăн вăй кĕрет.
Çакăнса тăрать алмаз хĕç
Йĕнертен кăшт çӳлерех —
Хĕç çĕклеймесен тата ĕç
Çав эмеллĕ тарăвах
Çавă ăшкапранах. —
Йĕкĕт витене чупать,
Тарăва тупса ĕçет.
Пиçиххийĕнчен çакатĕ
Илсе пăтаран хĕçе.
Туйăнать ăна хĕç йывăр,
Ĕçрĕ тару çĕнĕрен.
Унтан тухрĕ йăпăр-япăр
Лашана йĕнерлеме.
Йĕнерлесе пĕтерсессĕн
Йĕкĕт утланса ларать.
Ача йывăрне сиссессĕн
Лаша акă мĕн калать:
— Йĕнер сумкинчи тарăва
Сып илсе пĕрер çăвар,
Сулахайрине сылтăма
Унтан ылмаштарса хур:
Сылтăмри шыв вăй хушать,
Сулахайри — чакарать, —
Тет те кĕрен урхамах
Çав çеккунтра-минутрах
Тапса сикет кăвака,
Çитсе анать туххăмрах
Шыв хĕрринчи уçланка.

Хура çĕлен вун ик пуçлă —
Шывран тухрĕ чашкăрса.
— Хырăмăм ман халь выçă,
Çиеп! — терĕ кăшкăрса.

П у с й ĕ к ĕ т

Чăваш шăмми питĕ вакă,
Пырна ларăп пурпĕрех,
Памăп эпĕ сана маххă...

Ç ĕ л е н

Кăмăла каймасть юмахă*,
Чĕрене татать питĕрех.
Ытăш пур-и, тытăш пур-и?!

П у с й ĕ к ĕ т

Ытăш та пур, тытăш та пур!

Ç ĕ л е н

Çĕлен хальлĕн çапăçар-и,
Этем пулса кĕрешер-и?

П у с й ĕ к ĕ т

Çапăçиччен çĕлен хальлĕн
Çапăçар этем пулса,
Тытăçар этем ĕретлĕн,
Алла-аллăн тытăнса.
Аçтаха шывран тухайчĕ
Уçланка, çерем çине,
Айăр евĕр тулхăрайчĕ —
Турĕ-мĕн пăхăр йĕтем.
Пусйĕкĕт ув-в! тесе вĕрчĕ —
Туса хучĕ йĕс йĕтем.
Ак тапранчĕ, ак пуçланчĕ
Асар-писер тытăçу!

* Юмаху.

Виçĕ талăка шăп пычĕ
Çакă вăйлă çапăçу.
Йĕс йĕтем хăшкăлса пĕтрĕ,
Куçрĕç пăхăрри çине.
Тепĕр талăк пек çапăçрĕç
Пăхăр йĕтем çийĕнче.
Унтан вăл та тусрĕ пĕтрĕ,
— Канар, — терĕ аçтаха.
Пусйĕкĕт канма килĕшрĕ:
— Эппин, кăштăм сывлар-ха!
Аçтаха пĕрех тулхăрчĕ —
Турĕ кĕмĕл çут йĕтем.
Пусйĕкĕт майĕпе вĕрчĕ —
Туса хучĕ йĕс йĕтем.
Ак тапранчĕ, ак пуçланчĕ
Асар-писер тытăçу.
Виçĕ талăка шăп пычĕ
Çакă вăйлă çапăçу.
Йĕс йĕтем хăшкăлса пĕтрĕ,
Куçрĕç кĕмĕлли çине.
Тепĕр талăк пек çапăçрĕç
Кĕмĕл йĕтем çийĕнче.
Унтан вăл та тусрĕ пĕтрĕ.
— Канар, — терĕ аçтаха.
Пусйĕкĕт канма килĕшрĕ:
— Эппин, кăштăм канар-ха!
Аçтаха пĕрех тулхăрчĕ,
Турĕ ылтăн сар йĕтем.
Пусйĕкĕт типтерлĕн вĕрчĕ,
Туса хучĕ йĕс йĕтем.
Ак тапранчĕ, ак пуçланчĕ
Асар-писер тытăçу!
Виçĕ талăка шăп пычĕ
Çакă вăйлă çапăçу.
Йĕс йĕтем хăшкăлса пĕтрĕ,
Куçрĕç ылтăнни çине.
Тепĕр талăк пек çапăçрĕç
Ылтăн йĕтем çийĕнче.
Унтан вăл та тусрĕ пĕтрĕ.
— Канар, — тет аçтаха.
Пусйĕкĕт канма килĕшрĕ:
— Эппин, пăртак канар-ха!

### Ç ĕ л е н

Йĕнер сумкинче тару пур,
Айта-ха илсе ĕçер.
Типрĕ çăварăм, ай тур-тур!
Унтан калаçса килĕшер?
Икĕ паттăр харăс утрĕç
Йĕнерлĕ лаша патне,
Тарăва ĕçсен пуç усрĕç,
Аçтаха: — Хăвар тĕпне!
Улталанчĕ ватă пуç, мур,
Пултăр-ха ку, пултăр-ха, чур!
— Хама та ĕçме çитмерĕ, —
Терĕ те яш Пусйĕкĕт
Шкалике чул çине çапрĕ —
Ванчăксем çеç сирпĕнчĕç.
Икĕ паттăр харăс тытрĕç
Пĕр-пĕрне пăчăртаса.
Аçтаха çĕклесе çапрĕ —
Пусйĕкĕт хăнк! та тумасть.
Пусйĕкĕт çĕклесе çапрĕ —
Леш чĕркуç таран путать,
Çĕклесе тепре çапать —
Пилĕк таран путарать.
Аçтаха тухма тăрать —
Ниепле те тухаймасть.
— Ан вĕлер! — тет, йăлăнать.
Йĕкĕт çĕлене çăлса
Путнă çĕртен кăларать.
Тăшман çантах пулчĕ тăчĕ
Вун ик пуçлă Аçтаха,
Лаша патне шуса пычĕ:
— Çут алмаз хĕç ăçта-ха?..
Лаша яхăна ямарĕ,
Унтан инçене тарать,
Йĕкĕте пырса пуç тайрĕ:
— Кас ăна, кас, мĕн тăран! —
Шăппăн çеç çапла каларĕ:
— Иккĕ ан кас, хăтаран...
Алмаз хĕçĕн вăй-хăвачĕ
Иккĕмĕш хут сӳрĕлет...
Пĕрре кассан вĕлерет те,
Тепре кассан вăл чĕрлет.
Пирĕн паттăр Пусйĕкĕт,
Харсăрскер те яш йĕкĕт,
Алмаз хĕçпе пĕр хут сĕлтрĕ,
Вун ик пуç шалт татăлчĕ.
Аçтаха шăпланчĕ, пĕтрĕ,
Тăшман шăпах каçăхрĕ.
Вĕçсе çитрĕ кăрăнк-кăрăнк!
Çавăнтах хура çăхан:
— Кас тепре! —
тархаслать вăл нăк.

### П у с й ĕ к ĕ т

Чăваш икĕ хут касмасть,
Пĕрре çапать — тĕп тăвать,
Çавăнпа çырлахтарать.

Йĕкĕт çăхана чиртет —
Çухрăма сирпĕнтерет.
Кăларать пуçне мур-сĕлĕх,
Юнашар унпа çăрттан.
— Кас тепре, кас! — теççĕ чĕлĕх
Панăн иккĕш те, шуйттан.
Йĕкĕт вĕсене çантах
Каласа хурать татсах:
— Чăваш икĕ хут çапмасть,
Пĕрре кассах тĕп тăвать, —
Тет те урăх калаçмасть.
Аçтахан вун ик пуçне
Вун ик çĕртрен пуçтарса
Тата унăн кевтине
Пĕр тĕле пухса хурса,
Вăрмантан вутă йăтса,
Ун тавра купаласа,
Кăвайт чĕртсе çунтарса,
Çунсан юлнă ӳт кĕлне
Çилпе вĕçтерсе ярать.
Пирĕн йĕкĕт Пусйĕкĕт
Халĕ тăшманăн йăхне
Минкĕлĕхе пуçтарать,
Çĕр çинчен йăлт тасатать,
Йăлкăмне те хăвармасть.
Тăшман хӳрешкисене
Пусйĕкĕт халь те йĕрлет,
Куç тĕлне пулнисене
Çав самантрах пĕтерет.
Кăлтăркук та кăлтăркук!
Кăвак кăвакарчăнсен
Карнис тăрăх ух та ух!
Чупкалаççĕ чĕпписем.
Çĕр планети çинче
Пĕтсех çитмен-ха тăшман,
Пĕрре çеç мар, темиçе.
Пĕр вăхăт çук айкашман
Çавă ирсĕр путсĕрсен.
Нихăçан та чарăнман
Хурчăка, ула курак
Чăх чĕппине тапнасран,
Çăмартасем вăрласран.
Çуркуннешĕн савăннă
Пĕтĕм вакă кайăксем,
Хӳме çумне сырăннă;
Пурте хăйсен чĕлхипе
Савнăçлăн чĕвĕлтетсе
Çутă хĕвел ăшшинче
Ирĕк пурăнăç çинчен
Калаçаççĕ мухтаса,
Чĕререн хавасланса.
Сар кайăк çунат çапсах,
Шăпчăк пит хавасласах
Юрă юрлать вĕçĕмрен.
Тăр-тăр, тăр-тăр, тăр-тăри
Янкăр çутă тӳпере,
Пĕлĕтрен те вăл çӳлте...
Эх, юрри, юрри, юрри
Янăравлă та хитре,
Мĕн калать, илтетĕр-и?
«Ĕçле, ĕçле... ĕçле çи, — тет. —
Ĕçлемесен эс ан çи», — тет.
Шăнкăрчи йăва панче,
Йăмра туратти çинче,
Шăрантарать юррине
Мухтаса çурхи ире.
Эх, тĕнче, тĕнче, тĕнче,
Мĕнешкел хитре тĕнче!
Савăнтарать пурне те
Пирĕн пысăк çĕр çинче:
Кайăкне те чĕр чунне,
Савăнтарать çыннине.
Кăвакарчăн чĕппине
Хурчăка тапма тăрсан
Хускалаççĕ пур енчен
Сывлăшран та çĕр çинчен
Вĕтĕ-вĕтĕ чĕр чунсем,
Пĕтĕм вĕçен кайăксем,
Çурт çумĕнчи чĕкеçсем
Хупăрлаççĕ тăшмана —
Хурчăкапа тăманана.
Вĕтĕ кайăк та пĕлет:
Хăйĕн чĕппин йăвине
Пĕтĕм вăйран хӳтĕлет,
Тăшмансем тустарасран,
Чĕпне тапса каясран
Сыхласа тăмаллине,
Сыхлăхлă пулмаллине.
Ирĕк, савăк пурнăçшăн
Мĕнпур халăх савăнать,
Телей уççи тыттарнишĕн
Пусйĕкĕте юратать.
Хăй вăл вилчĕ пулин те
Чăваш халăх асăнать,
Харсăр паттăр Пусйĕкĕте
Ĕмĕр-ĕмĕр тав тăвать.

*П.А. Федоров-Минюк йĕркелесе çырнă.*

## 22. ПИТАХИРПЕ ЯНСИХЕРЕ

*(Пуçламăшĕ)*

Çанат пулнă, ăслă пулнă,
Хăйĕн антне нăкă тытнă.
Патша пулнă, ухмах пулнă,
Хăйĕн антне хăех çăтнă.
Патшапа çанат хире тухнă,
Хирте кусем куян тытнă.
Куян тытсан тупа туса
Çеçен хирте çĕр кăшланă:
Арăмĕсем ача тусан
Арлă-арăмлăн парласа
Хăталлă пулмашкăн пулнă.
Çанать арăмь ывăл тунă,
Патша арăмь хĕр çуратнă.
Патша пулнă, ухмах пулнă,
Хăйĕн антне хăех çăтнă:
Хĕрне çанат ывăлне
Качча парасшăн пулман.
Çанат пулнă питĕ ăслă,
Хăйĕн антне нăкă тытнă.
Патша пулнă тăп-тăр ухмах,
Хăйĕн антне хăех çăтнă.
Хура халăх курĕ-ха,
Патшана çĕр çăтĕ-ха.
Çеçен хире тырă аксан
Йăран сарлака юлтăр,
Пĕр ана çинче ўснĕ,
Пулса çитнĕ тырă пĕрчи
Ют çынсенĕн çумри ани
Çине ўксе ан тăкăнтăр,
Тарам пулса ан шăттăр.
— Манăн атте — Питахир,
Манăн анне — Янсихере,
Мана атте çуратнă
Этĕл патша çĕрĕнче.
Ман аттепе ман анне
Пĕрне-пĕри юратнă.
Каракăл патша ывăлĕ
Вĕсемшĕн тăшман пулнă...

*П.А.Федоров-Минюк йĕркелесе çырнă.*

# ПЕЙĔТСЕМ

## МИФЛА ПЕЙĔТСЕМ

### 1. Çӳлтеех те Турă, çĕрте патша

Çӳлтеех те Турă, çĕрте патша,
Арахматах тĕнче тытнишĕн.
Ах, аттеçĕм, тетĕп, ах, аннеçĕм!
Арахматах пире тунăшăн.
Аттепеле анне пире туман пулсан
Ăçтарахчĕ пире ку кунсем?

### 2. Йăлтăр-йăлтăр кĕленче ту

Йăлтăр-йăлтăр кĕленче ту;
Çав ту çинче иккĕн пур:
Пĕри — турă, тепри — патша.
Турă çырать ырлăхне,
Патша çырать хурлăхне;
Эпĕ ăна чăтас çук.

### 3. Леш тĕнчепе ку тĕнче

Сирĕн тĕнчере
Пĕр уйăх та пĕр хĕвел,
Пурĕ пĕрех çути пур.
Пирĕн тĕнчере
Çич уйăх та çич хĕвел,
Пурĕ пĕрех çути çук.

### 4. Вĕç, вĕç, акăш, вĕç, акăш

Вĕç, вĕç, акăш, вĕç, акăш,
Китай хирне ӳк, акăш.
Китай хирĕнче шур тулă,
Уйăрчĕ пире пĕр Турă

### 5. Хора хĕрсене хора торă çоратнă

Хора хĕрсене
Хора торă çоратнă,
Хĕрлĕ хĕрсене
Хĕрлĕ торă çоратнă,
Хĕрсем хĕсĕр поласран
Пире торă çоратнă.
Хора хĕрсене
Хора коркапа сăра парас,
Хĕрлĕ хĕрсене
Хĕрлĕ коркапа сăра парас.

### 6. Ылтăн юпа пур теççĕ

Эпир каяс çул çинче
Хура вăрман пур теççĕ,
Хура вăрман варринче
Çавра кӳлĕ пур теççĕ.

Çавра кӳлĕ варринче
Ылттăн юпа пур теççĕ,
Ылттăн юпа тăрринче
Ăмăрт кайăк пур теççĕ.

Хура вăрман — ман хурлăх,
Çавра кӳлĕ — ман куççуль,
Ылттăн юпа — ман атте,
Ăмăрт кайăк — ман анне.

### 7

Хора та вăрман варĕнче
Çутă та кӳлли пор теççĕ.
Çутă та кӳлĕ варĕнче
Сăрлă столпа пор теççĕ.
Сăрлă столпа тăрринче
Ăмăрт кайăк пор теççĕ.

8

Çеçен хир варринче ылтăн юпа
Ылтăн юпа тăрринче
чăпар куккук;
Чăпар куккук авăтсассăн
Ылтăн юпа чӗтӗрет;
Ылтăн юпа чӗтресен
Хура çӗр кăкри чӗтӗрет;
Хура çӗр кăкри чӗтӗресен
Хирти тырă-пулă хумханать;
Хирти тырă-пулă хумхансан
Хура халăх чунӗ савăнать.

9

Çеçен хир варринче çавра кӳлӗ,
Çавра кӳлӗ варринче ылтăн юпа,
Ылтăн юпа тăрринче хура чӗкеç.
Хура чӗкеç авăтса ярсассăн
Хирти тырă-пулă хумханать.
Хирти тырă хумханнине
курсассăн
Килти вată-вӗтӗ савăнать.

10

Çавра та кӳлӗ варринче
Ылттăн та юпа ларать-çке.
Ылттăн та юпа тăрринче
Сар-пăтитса кайăк пур.
Сар-пăтитса кайăк çутипе
Пӗтӗм çанталăк çутăлать.
Пирн аслатте пӳрт тăрнче
Чăпар та куккук ларать-çке;
Чăпар та куккук авăтнипе
Пӗтӗм çанталăк чӗтренет.

11

Вун иккӗн тăрса юрласан
Тимӗр карта çавратпăр.
Тимӗр карта варрине
Ылтăн юпа лартатпăр.
Ылтăн юпа тăррине
Мăшăр куккук лартатпăр.
Мăшăр куккук авăтать,
Вун икӗ хӗр савăнать.
Куккук сасси авăтать,
Йӗлме йывăç авăнать.

12

Хура вăрман урлă ай каçнă чух
Лаштраях та чăрăш тӗл пулсан,
Лаштраях та чăрăш ай тăрринче
Мерчен куçлă куккук авăтать,
Мерчен куçлă куккуук авăтнă чух
Лаштраях та чăрăш хумханать.
Мерчен куçлă куккук вӗçсе кайсан
Лаштраях та чăрăш лăп пулать.

13

Хура вăрманпа пынă чух
Ылтăн лăслă чăрăш тӗл пултăм.
Ылтăн лăслă чăрăш тăрринче
Мерчен куçлă куккук авăтать,
Мерчен куçлă куккук авăтнă чух
Ылтăн лăслă чăрăш янăрать.
Мерчен куçлă куккук вӗçсе кайсан
Ылтăн лăслă чăрăш лăп пулать.
Эпир пурте урамра юрланă чух
Çакă аслă урам янăрать.
Эпир пурте кӗрсе выртсассăн
Çакă аслă урам лăп пулать.

14

Вăрăм чăрăш тăрринче
Ярăнса куккук авăтать.
Ярăнса куккук авăтнипе
Чăрăш тăрри хумханать.
Чăрăш тăрри хумханнипе
Вăштăр-вăштăр çил вӗрет.
Вăштăр-вăштăр çил вӗрнипе
Хирти тырă хумханать.
Хирти тырă хумханнипе
Ялти ватăсем савăнаç.
Ялти ватăсем савăннипе
Çамрăк-кӗрӗм вăй вылять.

15

Улăхрăм çӳллӗ ту çине,
Çич хӗл каçнă юр куртăм.
Çич хӗл каçнă юр çинче
Мерчен кайăк йӗрри пур.
Мерчен кайăк йӗррине
Кайрăм-кайрăм йӗрлесе
Шурă Атăл хӗрне çитиччен.
Шурă Атăл хӗрне çитсессӗн

Икĕ хăмăш тĕл пултăм.
Вĕсем ылтăнпа кĕмĕл пучахлă,
Вĕсем юрă юрлаççĕ-мĕн, —
Атте-анне мар-ши вĕсем?

## 16. Кăкшăм тăрăх антăмăр

Кайрăм-кайрăм пĕр çолпа
Çич çол йоппи тĕл полтăм,
Çич çол йоппи хошшинче
Çич çол выртнă йор кортăм.
Çич çол выртнă йор çинче
Тилĕпе шашкă йĕрри пор.
Тилĕпе шашкă йĕррине
Эпир хамăр йĕрлерĕмĕр,
Шор Атăл хĕрне пырс(а) тăтăмăр.
Шор Атăл варĕнче
Шор сĕтелпе шор чашкă,
Шор чашкăра шорă пол.
Кăкшăм тăрăх антăмăр
Шорă полă шыраса.
Çакçи яла килтĕмĕр
Йоратнă çынсене шыраса.

## 17. Сак-сук

Атте каларĕ:
— Килте лар, — терĕ.
Анне каларĕ:
— Сак-сук пул! — терĕ.

Атте каларĕ:
— Сывă пул, — терĕ.
Анне каларĕ:
— Тухса кай! — терĕ.

Хура тутăра
Çыхса курманччĕ,
Тухса кайнă чух
Сак-сук теменччĕ.

Кайрăм хирелле
Çырла пиçнĕ чух,
Атте макрать пуль
Асне килнĕ чух.

Кайрăм хирелле
Ыраш пиçнĕ чух,
Вăрман варринче
Сак-сук! тенĕ чух.

Хура тутăра
Илсе кайăр-ха,
Аттене курсан
Салам калăр-ха.

Эпир çӳретпĕр
Хура вăрманта,
Тĕрлĕ шăтăкра
Çӳретпĕр выртса.

Эпир иккĕн çеç
Хура вăрманта,
Хырăмсем выççан
Çиетпĕр тем те...

Атте мар мана,
Анне ылханчĕ,
Пире кил-çуртран
Хуса кăларчĕ.

Эпĕ тухрăм алăкран,
Шăллăм тухрĕ тĕнĕрен,
Çавăнпа пĕр-пĕрне
Курмастпăр халиччен.

## 18

Атте каларĕ, «килтех пул» терĕ,
«Ӳлĕм кил-çурта хуçа пул» терĕ.

Анне ылханса «тарçа кай» терĕ,
«Тĕнче тăршшĕне тухса кай» терĕ.

Ют çын çăкăрĕ йӳçĕ эрĕм çав,
Ют çын сăмахĕ çивчĕ çĕçĕ çав.

Кĕтĕм вăрмана — пиçнĕ çырла çук,
Тарçă пек мĕскĕн этем урăх çук.

Кĕтĕм вăрмана çеçке çурнă чух,
Атте йĕрет пуль асне килнĕ чух.

Çĕр çырли пиçнĕ, татса тухăр-ха,
Аттене курсан салам калăр-ха.

Шур-шур çырлине кĕрсĕр ан татăр,
Ама çурине салам ан калăр.

Ан макăр, атте, тарçă ачушăн,
Ан макăр, атте, мĕскĕн ачушăн.
Аслă улăхра сар хăмăш ӳсет,
Тĕнче асапне тарçă çын тӳсет.

## 19

Атте каларӗ: килте лар терӗ,
Анне каларӗ: куккук пул терӗ.

Куккук пултăмăр шур(ă)мпуç
килнӗ чух
Вӗçсе кайрăмăр тул çутăлнă чух.

Х(ă)парса çитрӗмӗр çӳллӗ ту тăрне,
Çаврăнса пăхрăмăр хамăр ял çине.

Сакăр ял çинче çынсен сассисем,
Çӳллӗ ту çинче куккук сассисем.

Хура вăрманта вӗçсе çӳрӗпӗр,
Хырăм выçсассăн мӗскер çийӗпӗр?

Ик ту хушшинчен сивӗ çăл юхать,
Икӗ куçăмран в(ӗ)ри куççуль юхать.

Хура вăрманта хура хурлăхан,
Ан макăр, анне, ху ылханнăран.

Ман шур тутăра илсе кайăр-ха,
Аннене курсан салам калăр-ха.

Аттене курсан салам калăр-ха,
Аннерен ыйтса илсе кайтăр-ха.

## 20

Иккӗн çапăçрăмăр тимӗр ухăшăн,
Анне ылханчӗ тем тӗрлӗ çукшăн.

Анне каларӗ: тухса кай терӗ.
Атте каларӗ: килтех лар терӗ.

Хыпаланнипе к(ӗ)пене
тăх(ă)наймарăм,
Тухса кайнă чух «сыв пул» темерӗм.

Анне каларӗ: сывă вил терӗ.
Атте каларӗ: сывă пул терӗ.

Кайрăм вăрмана,
касрăм пӗр йывăç.
Ман пек тăлăха камсем асăнӗç?

Кайрăм вăрмана, татрăм хурлăхан.
Тухайрăп-ши эпӗ çак хурлăхран?

Х(ă)партăм ту çине,
пăхрăм ял çине.
Илсе кайăр-ха ман шӗлепкене?

Кайрăм вăрмана çырла пиçнӗ чух.
Анне ас(ă)нать-ши асне килнӗ чух?

Хӗвел тухнă чух сӗчӗ вӗрет пуль,
Ачи макрать пуль тул çутăлнă чух.

(Аслă) тинӗсре хура хăмăшсем,
(Хура) вăрманта Сак-Сук сассисем.

Аннене курсан салам калăр-ха,
Мана таврăнма ирӗк патăр-ха.

## 21

Анне каларӗ: Сак-Сук пул терӗ,
Атте каларӗ: килте лар терӗ.
Атте каларӗ: килте лар терӗ.
Анне каларӗ: тухса кай терӗ.

Анне каларӗ: тухса кай терӗ,
Атте каларӗ: сывă пул терӗ.
Атте каларӗ: сывă пул терӗ,
Анне каларӗ: Сак-Сук пул терӗ.

Анне юмласа пӗрчӗсем сурӗ,
Пире ылханса Сак-Суксем турӗ.
Пире ылханса Сак-Суксем турӗ,
Пирӗн çамрăк пуç тата мӗн курӗ?

Хура тутăра çуса çакăрччӗ,
Эпир кайнă чух тухса курăрччӗ,
Эпир кайнă чух тухса курăрччӗ,
Пире ыр сунса алă сулăрччӗ.

К(ӗ)тӳ х(ă)валанă чух ачи
макрать пуль,
Асне килнӗ чух атте макрать пуль.
Салма каснă чух яшки вӗрет пуль,
Асне килнӗ чух анне йӗрет пуль.

Чиркӗвӗсенче кӗнек(е) каштисем,
Сакпала Сукăн хурлă сассисем.
Аслă улăхра шăпчăк сассисем,
Хура вăрманта Сак-Сук сассисем.

Тул çутăлнă чух автан авăтать,
Пӗрлешес чухне тулӗ çутăлать.

Тулĕ çутăлать, куçсем хупăнаç,
Атте аса килсен куççульсем юхаç.

## 22

Анне каларĕ: Сак-Сук пул терĕ,
Атте каларĕ: килте лар терĕ.

Атте каларĕ: килте лар терĕ,
Анне каларĕ: тухса кай терĕ.

Анне каларĕ: тухса кай терĕ.
Атте каларĕ: сывă пул терĕ.

Атте каларĕ: сывă пул терĕ,
Анне каларĕ: Сак-Сук пул терĕ.

Анне салмине çăнăхлă турĕ,
Пире ылханса çав Сак-Сук турĕ.

Хура тутăра пухса хурсамччĕ,
Тухса кайнă чух курса юлсамччĕ.

Кайрăм вăрмана ыраш вырнă чух.
Анне тарăхать асне килнĕ чух.

Кайрăм вăрмана çырла пиçнĕ чух.
Атте хурланать асне килнĕ чух.

Ан тарăх, анне, ху ылхантăн вĕт,
Хăвах ылханса Сак-Сук турăн вĕт.

Çут тĕнчелĕхре Сак-Сук пул терĕн,
Çут тĕнчелĕхре асап кур терĕн.

Кайрăм вăрмана,
Сак-Сук пултăм эп,
Вăрман варринче хĕн-хур
куртăм эп.

## 23

Анне каларĕ: тухса кай терĕ,
Çут тĕнчелĕхре Сак-Сук пул терĕ.

Атте каларĕ: килте лар терĕ,
Хамăр кил-çуртра хуça пул терĕ.

Анне чустине çăнăхлă турĕ,
Атте килĕнчен мана çук турĕ.

Хĕрлĕ кĕпене тăхăнаймарăм,
Тухса кайнă чух ал тытаймарăм.

Кайрăм вăрмана çырла пиçнĕ чух.
Анне макрать пуль асне килнĕ чух.

Ан макăр, анне, ху ылхантăн вĕт,
Çут тĕнчелĕхре Сак-Сук пул терĕн.

Аслă урамра хĕрсен сассисем,
Хура вăрманта Сак-Сук сассисем.

Хура тутăра илсе кайăр-ха,
Савнине курсан салам калăр-ха.

Аслă улăхра сар хăмăш ӳсет,
Хура вăрманта Сак-Сук çеç ӳсет.

## 24. Сак-Сук

Пирĕн çак юрра аса илĕр-ха,
Юрламассерен куçра шăлăр-ха.

Кĕленче алăк атте килĕнче,
Пирĕн сасăсем атте асĕнче.

Вăрçрăмăр эпир тимĕр ухăшăн,
Пĕри те тепри алла тытасшăн.
Ашкăннă майăн ухă çĕмрĕлчĕ,
Атте ипленĕ йĕрли çухалчĕ.

Анне ятларĕ тимĕр ухăшăн,
Пире ылханчĕ йĕрлийĕ çукшăн.

Анне ятларĕ пире çилленсе,
Çилне шăнарми хаяр çĕкленсе.

Анне ылханчĕ: Сак-Сук пул
терĕ,
Сĕм-сĕм вăрмана тухса кай
терĕ.

Атте каларĕ: килтех пул терĕ,
Ниçта та ан кай, ылăм пул
терĕ.

Çилсем вĕреççĕ Атăл хĕрринче,
Аннемĕр касрĕ чуна тĕпĕнчен.

Хура вăрманта пиçнĕ хурлăхан,
Икĕ ачуна, аннем, ылханан.

Ҫитрӗ пуль пире анне ылханни,
Ҫапла пулмашкӑн Пӳлӗхҫӗ ҫырни.

Эпир, ачусем,
Сак-сук пултӑмӑр,
Тӗнче тӑршшӗне тухса кайрӑмӑр.

Шыв-шур хӗррипе нумай утрӑмӑр,
Икӗ тӑлӑх чун Сак-Сук пултӑмӑр.

Тӑвас терӗм эп шур ҫурт хырӑран,
Юхрӗ юн, куҫҫуль икӗ куҫӑмран.

Кӳлӗ варринче акӑш чӗпписем,
Аса илсессӗн — ҫунаҫ чӗресем.

Шурӑ кӗпене тӑхӑнаймарӑм,
Аннене курса тӑранаймарӑм.

Пӗр ҫул тулсассӑн таврӑнар терӗм,
Пӗр ҫул тулсассӑн — сӳнчӗ ӗмӗтӗм.

Пирӗн кил — вӑрман ӗнтӗ
халь пулчӗ,
Калле пулас ҫук, анне ылханчӗ.

Утӑ урине ҫилсем тустарать,
Пире тӗл пулма кун ҫути чарать.

Ир енне кайсан
куҫҫуль тӑкӑнать,
Пӗрлешес чухне тулӗ ҫутӑлать.

Тӗнче ҫуталать, пит инҫе хутлӑх,
Пирӗн хутлӑхра —
вӑрман та путлӑх.

Эпӗ: — Сак! — тетӗп, тӑванӑм:
— Сук! — тет,
Сассӑм такӑнса чӑтлӑхра пӗтет.

Пӗрлешес чухне шурӑмпуҫ тухать,
Вӗри куҫҫульпе куҫӑм хупӑнать.

Кайрӑм вӑрмана,
касрӑм шур хурӑн,
Аннем, асӑнса йӗретӗп хурлӑн.

Мамӑк ялккаса илсе кайӑр-ха,
Аннене курсан салам калӑр-ха.

Вӗҫсе анасчӗ ҫуртӑмӑр умне,
Пырса ларасчӗ аннемӗр ҫумне.

Аннемӗр йӗрет: — Ма ылхантӑм? —
тет, —
Ма ачамсене харап турӑм — тет.

Анне, ан йӗрсем, ху ылхантӑн ҫав,
Кӑра ҫилленсе Сак-Сук турӑн ҫав.

Кайрӑм вӑрмана ҫырла пиҫнӗ чух,
Аннемӗр йӗрет асне килнӗ чух.

Ҫутӑ тӗнчере Сак-Сук пул терӗн,
Чаплӑ ухӑна ҫӗмӗртӗр терӗн.

Кайрӑм вӑрмана,
Сак-Сук пултӑмӑр,
Вӑрман варринче хӗн-хур куртӑмӑр.

Хуп-хура чӗкеҫ, сап-сарӑ кайӑк,
Аннем, ылхантӑн,
пысӑкчим айӑп?..

Ан татӑл, аннем, ан хурлан,
аннем,
Пӳлӗх ҫырни пуль,
чиперккей аннем...

Юлнӑ тумтире пуҫтарса хурӑн,
Асӑна илсен — аллуна тытӑн.

Ан йӗрсем, аннем, куҫна упрасам,
Сак-Сука илтӗн пире асӑнсан.

Аннем-чиперккем, сана тӑнлӑпӑр,
Калле ҫавӑрсан — киле пырӑпӑр.

— Пуҫри явлӑка ҫилпе вӗҫтертӗм,
Икӗ ылӑма вӑрҫса пӗтертӗм.

Ҫӳллӗ ту ҫинче лапсӑркка ҫӑка,
Икӗ ылӑма ылхантӑм ҫука.

Чупрӑм ту ҫине курайӑп тесе,
Икӗ ылӑма курайӑп тесе.

Икӗ пепкемрен пӗри юлмарӗ,
Мамӑк та тӳшек сарса пулмарӗ.

Хура хурлӑхан ҫичӗ сапаклӑ,
Икӗ ылӑмшӑн хамах айӑплӑ. —

Çўллĕ сăрт çинче шурă чул палăк,
Атте килĕнче кĕленче алăк.

Аннем-чиперккей,
çўçне йĕс çитле,
Сакпала Сукăн юррине итле.

Çак куна курма Пўлĕх пўрнĕ пуль.
Анне ылханни пире çитрĕ пуль.

Атăл хĕрринче хура хăмăшсем,
Хура вăрманта Сак-Сук сассисем.

Шурă кĕпене кирĕк тивмерĕ,
Тухса кайнă чух: — Сыв пул, —
темерĕм.

Шăпчăк ай вĕçет аслă улăхпа,
Аннем, ан йĕрсем типĕн хуйăхпа.

Пирĕншĕн ялан тĕттĕм тĕнчемĕр,
Ылханчĕ пире чипер аннемĕр.

Атте вăрçмарĕ, килтех юлтăмăр,
Анне ылханчĕ —
Сак-Сук пултăмăр.

Çывăрма выртсан —
тĕлĕк куртăмăр,
Сĕм-сĕм вăрманпа йĕрсе утрăмăр...

Атăл тăршшĕпе кăвакал çўрет,
Чĕпписене вăл хăй çумне чĕнет.

Атăл тăршшĕпе кăвакал çўрет,
Аса илсессĕн — чунăм ман йĕрет.

Ултта çитиччен пĕрле чупрăмăр,
Çичче çитсессĕн —
Сак-Сук пултăмăр.

Алăк умĕнче ташлать çил çунат,
Анне ылхансан хуçăлчĕ çунат.

Кайрăм вăрмана çырла пиçнĕ чух,
Аннеçĕм йĕрет асне килнĕ чух:

— Куççулĕм типрĕ,
хăтлăх çук çуртра,
Икĕ ылăмран пĕри çук çумра.

— Аннем, унаçна ытлашши касрăн,
Атте киличчен пире çук турăн.

Эпир тилмĕрсе ютра çўретпĕр,
Сак-Сук сассипе ялан хўхлетпĕр.

Çўретпĕр эпир вăрманта вĕçсе,
Ик тăлăх ача пĕчченĕн йĕрсе.

Пĕрлешес чухне тулĕ çутăлать,
Пирĕн куççене куççулли тулать.

Хĕвеллĕ куна эпир курмастпăр,
Унăн ăшшине эпир туймастпăр.

Пĕрле пуласси пулас çук нихçан,
Ачу-пăчуна, амăш, ан ылхан.

Анне ятларĕ, ухăшăн вăрçрĕ,
Виç хут ылханса Сак-Суксем турĕ.

Сарă пиçиххи çыха пĕлмерĕм,
Килтен тухнă чух: — Сыв пул, —
темерĕм.

Аннем кĕр çурĕ Атăл хĕрринче,
Сак-Сук тăвасси пулман
пуçĕнче...

Ĕшни илемлĕ çырла пиçнĕ чух,
Атте йĕрет пуль асне илнĕ чух:

— Утсем çўреççĕ ешĕл çаранта,
Ылăмсем йĕреç хура вăрманта.

— Атте, ан йĕрсем пĕртте чарăнми,
Ку асап пулчĕ — анне ылханни.

Çичче çитиччен пĕрле сикрĕмĕр,
Анне тухатне пĕлеймерĕмĕр.

Килтен вĕçрĕмĕр, аттем,
туйрăн-и?
Анне тухатрĕ, аттем, пĕлтĕн-и?..

Пирĕн çак юрра асра илĕр-ха,
Юрламассерен куçра шăлăр-ха.

Анне ылханĕ пире пĕтерчĕ,
Сак-Суксем туса килтен хўтерчĕ.

## 25

Çулла, каç пулсан,
тěттěм çырмара
Çӳретпěр куллен хам(ă)ра шыраса.

Вăрманлă çěртен Сак-Сук!
сас парсан
Итлеççě çынсем лайăх пулнăран.

Эпир, ик тантăш, тинрех пěрлешнě,
Пире пěр «вăтăш» уйăрч(ě) ирěксěр.

Атте çук килте, ама çури çех,
Аллинчи мелкипе хěртрě вăл пире.

Пӳртрен кăларчě.
Çěрě тěттěмччě.
Хыçран та çапрě, пире уйăрчě.

Сак та вěçтерчě сылтăм еннелле,
Сук та ывăтрě тепěр еннелле.

Ешěл кěпеме тăхăнаймарăм,
Тухнă чух пӳртрен «сыв пул»
темерěм.

Çапла иксěмěр кайнă аташса.
Каçпа çӳретпěр хам(ă)ра шыраса.

Кашни каç эпир, пěри Сак,
тепри Сук,
Юрă юрлатпăр, хамăр ниçта çук.

Сак-сук! та сак-сук! тенě сассене
Илтет кашни çын,
курмасть хăйсене.

Çапла çăвěпех кашни каççайăн*
Вăрманлă çěрте илтен лайăххăн.

Шурăмпуç килсенех пирěн юрласси
Чăрăнать вуçех тепěр каçченех.

## 26. Юрă арчин уççи

Юррăмсем манăн юман сунтăхěнче,
Çăри ылтăн, уççи кěмěл,
Вěсем те пулин аттепе
анненěн аллинче.

Паян капла, ыран тепле?
Хамăр та эпир Туррăн аллинче.

## 27

Юрла кăна юрла ай теетпěр,
Ман юррăмсем юман сунтăхра,
Уççисем те ылтăн, çăри кěмěл,
Вăл та пулин атте аллинче;
Пуçăмах та ырă çын аллинче.
Чунăмах та турă аллинче.

## 28

Çынсем манран юр ыйтаççě,
Манăн та юрă арчара,
Арча уççи арăмра,
Арăм кайнă улаха,
Шорт! çупать те сěм [тăвать] ярать,
Йăлтăр-р-р курнан пир тăвать.

## 29

Юрă мыскари, ăна пěлмеççě,
Юрла та юрла тееççě,
Юрри ăçта пулине пěлмеççě.
Юрри кăвак-симěс арчара,
Кăвак-симěс арчи маччара.
Уçас терěм — çăри çук,
Çăри апайăн хěвěнче.
Апай аслă акай патěнче,
Аслă акай Атăл леш енче.
Каçас терěм — каçма çук,
Каçма хума вěрлěк çук,
Вěрлěк касма пури çук,
Пирěн ахаль телей çук.

Çапла, пурнăç юррин те мыскари пысăк.

## 30

Уничере тил выртать *2 хут*
Китай тутри витěнсе. *2 хут*
Китай тутрине çил уçать, *2 хут*
Пирěн кăмăла юр уçать. *2 хут*

Юрла, юрла тееççě,
Юр кěнеки арчара,
Арча уççи савнире,
Савни — совет аллинче.

---

* Каççерен.

## 31

И юрлăр та юрлăр ай тееççĕ,
Юрри [ă]çта пулнине пĕлмеççĕ.

Юрри [ă]çта пулнине
ай пĕлмеççĕ
Юрри симĕс-кăвак арчара.

Юрри симĕс-кăвак ай арчара,
Симĕс-кăвак арчи маччара.

Симĕс-кăвак арчи ай маччара,
Уçса илес терĕм, ç[ă]раççи çук.

Уçса илес терĕм, çăраççи çук,
Çăраççи аннеçĕм çумĕнче.

Çăраççи аннеçĕм ай çумĕнче,
Аннеçĕм шур акка патĕнче.

Аннеçĕм шур акка ай патĕнче,
Шур акка Шур Атăл леш енче.

Шур акка Шур Атăл ай леш енче,
Каçса каяс терĕм, каçми çук.

Каçса каяс терĕм ай каçми çук,
Каçма хывас терĕм, вĕрлĕк çук.

Каçма хывас терĕм
ай вĕрлĕк çук,
Вĕрлĕк касас терĕм, пуртă çук.

Вĕрлĕк касас терĕм ай пуртă çук,
Пуртă илес терĕм — укçа çук.

И укçа та укçа
ай тееççĕ,
Укçи [ă]çта пулнине
ай пĕлмеççĕ.

Укçи [ă]çта пулнине
ай пĕлмеççĕ,
Укçи патша ум[ĕ]нче,
с[ĕ]тел çинче.

Укçи патша ум[ĕ]нче
ай с[ĕ]тел çинче.
Патши ун умĕнче, стул çинче...

## 32

Хушрĕç пире юрлама —
Юррăм юман сунтăхăн тĕпĕнче.
Уçса илĕттĕм —
çăра[çсин] уçси çук,
Уçси атте-анне аллинче.

## 33

Ман çак сăввăн юрри çук,
Сăвви пур та — арчара,
Арча уççи — йăмăкра,
Йăмăк кайнă улаха.
Шарт! çапать те сĕвем тăвать,
Катан пир пек пир тăвать.
Катан пир пек пирĕнчен
Ура тупанччен кĕпе çĕлет,
Вăрăм аркă тыттарать.
Вăрăм аркăкĕ çине
Хут çыру пек тĕр тăвать.
Аркине вуласа пăхрăм та —
Пирĕн киле каймалла.
Çаннине вуласа пăхрăм та —
Сирĕн ăсатса ямалла.

## 34. Асамлă çыру

Çиччĕпеле кайрăм Ейĕке,
Çичĕ хутлă кĕпер тĕл пултăм.
Çичĕ хутлă кĕпер вĕçĕнче
Йăмра йывăç ларать кашласа.
Йăмра йывăç турат вĕçĕнче
Ăмăрт кайăк ларать сарăлса.
Ăмăрт кайăк çунат вĕçĕнче
Шурă хут çине çырнă çыру пур,
Шур хут çине çырнă çырура
Аттепеле анне ячĕ пур,
Атте-анне арки вĕçĕнче
Пĕчĕкçĕ чух сикнĕ йĕрсем пур.

## 35

Питĕрпурпа Мускав хушшинче
Чĕнтĕрлĕ пĕр кĕпер пур иккен.
Чĕнтĕрлĕ пĕр кĕпер çийĕнче
Шурăмпуçпе çунă шур юр
ай пур иккен.
Шурăмпуçпе çунă шур
юр çийĕнче

Утлӑ урхамахсен йӗрри
ай пур иккен.
Утлӑ урхамахсен те ай ҫийӗнче
Ылтӑн пуҫлӑ кӗмӗл йӗнер
пур иккен.
Ылтӑн пуҫлӑ кӗмӗл йӗнер ҫийӗнче
Аттесенӗн ырӑнӗсем ай пур иккен.
Аттесенӗн ырӑнӗсем ҫийӗнче
Кӗмӗлпеле ҫырнӑ ҫыру пур иккен.
Кӗмӗлпеле ҫырнӑ ҫыру ҫийӗнче
Ылтӑнпала хывнӑ йӗрсем пур иккен.
Ылтӑнпала хывнӑ йӗрсем
хушшинче
Пирӗн тӑван ыр ячӗсем пур иккен.

## КУН-ҪУЛ ПЕЙӖЧӖСЕМ

### 36. Чӗкету хули

Ах турӑ, турӑ, пурӑнӑҫӗ —
Пирӗн ҫыннӑн пурӑнӑҫӗ —
Йӗс кӗпер урлӑ каҫнӑ пек,
Кӗмӗл туя тытнӑ пек.

Ах турӑ, турӑ, пурӑнӑҫӗ —
Начар ҫыннӑн пурӑнӑҫӗ —
Чӗкету хулине улӑхнӑ пек,
Улмуҫҫи туйине тытнӑ пек.

*(Чӑвашсен ӗҫкӗ-ҫикӗ юрринчен)*

### 37. Мерчен хули

Хӑпартӑм ҫӳлӗ ту ҫине,
Ярӑнтӑм Мерчен хулине,
Хушрӗҫ мерчен суйлама.

### 38. Йӗпкӗн хула

Улӑхрӑм ҫӳллӗ ту ҫине,
Антӑм Йӗпкӗн хулана.
Йӗпкӗн хулара мӗн хаклӑ?
Йӗпкӗн хура лаша, ҫав хаклӑ.

### 39. Шурӑ Атӑл ҫинче пурӑннӑ чух

Шурӑ Атӑл ҫинче пурӑннӑ чух
Шур кулаччӗ пирӗн ҫимӗҫлӗх.
Кӑвак Атӑл ҫине куҫсассӑн
Мӗн пулӗ-ши пирӗн
ҫимӗҫлӗх?

Атте-анне ҫинче пурӑннӑ чух
Ырлӑхраччӗ пирӗн ҫамрӑк пуҫ.
Аттерен-аннерен уйрӑлсассӑн
Мӗн курӗ-ши пирӗн ҫамрӑк пуҫ?

### 40. Кӑвак Атӑл хӗрри — кӑвак йӗтӗн

Кӑвак Атӑл хӗрри — кӑвак йӗтӗн,
Шурӑ Атӑл хӗрри — шурӑ йӗтӗн.
Кӑвакки те йӗтӗн, шурри те йӗтӗн,
Тӑвантан уйрӑлсан тата хӗн.

### 41. Хусан варне пырса тухрӑм

Пыраттӑм-пыраттӑм пӗр ҫулпа,
Кӗмӗл кусар* тӗл пултӑм.
Кӗмӗл кусар ҫутипе
Хусан варне пырса тухрӑм.
Хусан варринче хура юпа,
Мӗн ырлӑхӗпе лартнӑ-ши?

### 42. Хусан ҫырми тӑрӑх ҫырлана

Атьӑрах та каяр, ӑҫта каяр? —
Хусан ҫырми тӑрӑх ҫырлана.
Шуррине татӑпӑр шур хут ҫине.
Хӗрлине парӑпӑр савнӑ туссене,
Шуррине парӑпӑр савманнисене.

### 43. Хусан ҫырми ҫине ҫырлана

Атьӑрах та каяр, ӑҫта каяр? —
Хусан ҫырми ҫине ҫырлана.
Хусан ҫырми юхать ай чул ҫинчен,
Пирӗн куҫҫуль юхать ай пит ҫинчен.

### 44. Шак вирелле юхтартӑм

Кайрӑм эпӗ вӑрмана,
Пытӑм эпӗ йӗлтӗрпе,
Шак вирелле юхтартӑм.
Каймӑттӑм эп вирене,
Унта суйлать теҫҫӗ тӳрене.

---

* Пайза, ҫыруллӑ кӗмӗл е ылтӑн.

Мана суйламĕçин суйламĕç —
Эпĕ çапах кайăп çӳрене.

### 45. Хăвалăн тинĕс — хăямат

Атăл шывĕ ким çăтать,
Пирĕн атте пин тытать.
Хуçа тени хуçаланать,
Атăл тĕпне пăчланать.

Пирĕн юрă юрăхсăр,
Эпир хамăр харăмсăр*.
Атте пĕрмай хăвалать
Хăвалăнсен тинĕсне.

### 46. Хусан хули йăлтăрать

Кайăк, кайăк, кайăккин
Тĕкĕ çуттăн çуталать,
Анчах пачах ăшăтмасть.
Хусан хули йăлтăрать,
Аякранах курăнать,
Çапах ăша йышăнмасть.
Шакла пуçлă пуçлăхĕ
Пире ватать, çаптарать.

### 47. Сарайтан илтĕм сар лаша

Сарайтан илтĕм сар лаша,
Чĕмпĕртен илтĕм чĕн йĕвен,
Хусантан илтĕм хура лаша çуна.
Çуни сулăнать çул майлă,
Лаши утать кил майлă.

### 48. Аçтăрхана эп çитрĕм

Урам урлă каçнă чух
Çыруллă кĕмĕл эп тупрăм,
Çыруллă кĕмĕл çутипе
Аçтăрхана эп çитрĕм.
Аçтăрханта шыв çунать,
Ман ăшăмра вут çунать.

### 49. Ăçтăрханăн хирне эп тухрăм

Аслă çулпа упус иртет-çке,
Тимĕр кăвак лаши çул пуçĕ,
Кайри малтипеле йĕс такан.
Йĕс такан çутипеле çул кайрăм,
Хăйăрлă та çула эп тухрăм.

*Ырлăхсăр.

Хăйăрлă та çулпа пынă чух
Ăçтăрханăн хирне эп тухрăм.
Ăçтăрханăн хирĕ — мамăклăх,
Пуçтарăрсам, хĕрсем, мамăкне!
Аплаттарăпăр маюр майрине,
Çыхтарăпăр Хусан çыххине.

### 50. Аçтăрханта хĕç вылять

Аçтăрханта пасарччĕ,
Эпир ун чух ачаччĕ.
Аçтăрханта хĕç вылять,
Хĕç вылин те — хĕç хаклă,
Пирĕн ялта хĕр вылять,
Хĕр вылин те хĕр хаклă.

### 51. Хусан хулине леçеççĕ

Çӳл ту çинче чиелĕх,
Аври-аврипе хуçаççĕ,
Милĕкĕ-милĕкĕпе çыхаççĕ,
Çăкĕ-çăкĕпе тиеççĕ,
Хусан хулине леçеççĕ.
Хусан шывĕ — хура шыв,
Çӳçенмесĕр эп кĕтĕм,
Хумхатмасăр эп тухрăм.

### 52. Утмăлах та пĕр тутар

Утмăлах та тутар пĕртăван:
Хăлхисемех алса туль пек,
Сăмсисем пурт аври пек.
Ах, ах, анне, ах, анне,
Хĕр кучченеçне çисе килсен
Атăл пăрне выртса кăшла.
Ах, ах, атте, ах, атте,
Хĕр сăрине ĕçсе килсен
Атăл шывне выртса ĕç.
Умăм тулли шур кĕмĕл,
Атăл пăр çи витти пултăр-и?
Çийĕм тулли кăвак кĕпе
Вăйлă çумăр çутăр-и?
Йывăр çумăр çутăр-и?

### 53. Илсе каять тутар хĕре Хусан хулине

Кӳлли пысăк, шывĕ тарăн,
Хур кайăк ишет,
Хăйĕн хурлăхлă юррине
Хурланса юрлать:

«Эп аманчӑк, вӗҫейместӗп,
Хӗл каҫас пулать,
Хӗл каҫиччен ларас пулать
Кӳлӗ хӗрринче».
Чее тилӗ чупса пырать
Хур кайӑк патне.
Ҫӗклет каять хур кайӑка
Хура вӑрмана.

Хура тутар чупса пырать
Сарӑ хӗр патне,
Ҫӗклет каять сарӑ хӗре
Хура чурана.
Чипер ача чупса тухать
Сар хӗре ҫӑлма.
Касать тӑкать тутар хӗҫпе
Сар каччӑ пуҫне.
Кусать каять каччӑ пуҫӗ
Ҫерем ҫинелле,
Йӗрсе ярать сарӑ хӗрӗ
Йӳҫӗ куҫҫульпе.
Илсе каять тутар хӗре
Хусан хулине.
Атӑл хӗрне ҫитсен сар хӗр
Атӑла сикет.
Анлӑ Атӑл вӑрман витӗр
Хурланса юхать,
Атӑлта шыв юхмасть —
Юхать пирӗн куҫҫуль.

## 54. Чӑваш тӑрать тӗлӗнсе

Утмӑл тутар,
Хӗрӗх вырӑс,
Пӗр чӑваш.
Тутар чунӗ пӑхӑртан,
Вырӑс чунӗ тимӗртен;
Тутар перет пӑхӑрпа,
Вырӑс перет тимӗрпе,
Чӑваш тӑрать тӗлӗнсе.

## 55. Хусантан хуса аннӑ хӗрсем

Ай Хусан та инҫе тесе калаҫҫӗ,
Инҫе те мар Хусан, ҫывӑх та мар:
Виҫӗ кун, виҫӗ ҫӗр кайсассӑн
Хусан курӑнчӗ.
Хусантан хуса аннӑ
Хура куҫлӑ хура хӗрсем.
Вӗсенӗн пӗвӗ-сийӗсем
Атӑл хулли пек яштака.
Вӗсенӗн куҫӗсем
Лавккари куҫкӗски пек.
Вӗсен ҫӳҫӗ-пуҫӗсем сар ука пек.
Икӗ хӗрӗнчен
Эп йышӑнтӑм кӗҫӗннине.

## 56. Тӗрӗк арӑмӗ пул, акка

Вӗҫ, вӗҫ, аккӑш, вӗҫ, аккӑш та,
Тӗрӗк хирне ӳк, аккӑш.
Тӗрӗк хирӗ — шурӑ ҫеҫке,
Эпир ӑна курнӑ-ҫке.
Кай, кай, акка, кай, акка та,
Тӗрӗк арӑмӗ пул, акка.
Тӗрӗк майрин камсульсене
Мана та тӑхӑнма пар, акка.
Сик-сик кутлӑ, пурҫӑн йӗмлӗ —
Ула кайӑк пулӗ вӑл.
Хӗрлӗ ҫӗлӗклӗ, хура иленлӗ —
Тӗрӗк каччи пулӗ вӑл.
Сӗм вӑрманлӑ, шӑршлӑ шывлӑ —
Вырӑс ҫӗрӗ пулӗ вӑл.
Ирлӗ-каҫлӑ — ял вӗҫӗнче,
Вырӑс ҫынни тӑрӗ вӑл.
Пӗр кӗсйинче ҫӗҫӗ пулӗ,
Пӗр аллинче хӗҫ пулӗ.
Сана чикӗ, сана касӗ,
Ҫамрӑк пуҫна ҫухатӗ.
Лапсӑркка пуҫлӑ, пысӑк куҫлӑ —
Вӑрман тӑмани пулӗ вӑл.
Сарӑ сухаллӑ, сарӑ ҫӳҫлӗ —
Вырӑс ҫынни пулӗ вӑл.
Пӗр кӑшкӑрӗ, пӗр ҫухӑрӗ —
Сана сассипе пӗтерӗ.
Пӗр ҫунтарӗ, пӗр ҫӗмӗрӗ —
Сана нимсӗр хӑварӗ.
Яка пуҫлӑ, пӗчӗккӗ куҫлӑ —
Хир хурчӑки пулӗ вӑл.
Ҫара пуҫлӑ, пӗчӗк сухаллӑ —
Тӗрӗк ҫынни пулӗ вӑл.
Ҫепӗҫ чӗлхеллӗ, ырӑ кӑмӑллӑ —
Сана хӑй май ҫавӑрӗ,
Йӑпӑлтатӗ, ҫупӑлтатӗ* —
Сана ҫын ҫине кӑларӗ.
Тумлантарӗ, сумлантарӗ,
Кӗмӗл айӗнче усрӗ.
Кӗмӗл мӑй ҫыххи, ылтӑн тевет —
Ҫавӑ пулать пирӗн тивлет.

---

*Ӑшшӑн калаҫӗ.

## 57. Хусан патши кайăк пулса вĕçсе каять

Вырăс патшипе чăваш çарĕсем Хусана илсен Хусан патши акăш пулса тăнă тет, мечĕт тăрне вĕçсе хăпарнă тет. Вăл çапла юрланă тет:

Каятăп, каятăп,
Эп инçене каятăп.
Кам манпа пырĕ —
Çăкăр вырăнне кулач çийĕ.
Кам кунта юлĕ —
Çăкăр вырăнне улăм çийĕ.
Кам манпа пырĕ —
Шыв вырăнне сĕт ĕçĕ.
Кам кунта юлĕ —
Шыв вырăнне юн ĕçĕ.

Çапла юрланă та вĕçсе кайнă тет.

## 58. Хусан патши арăм [Суюм пике] юрри

Хусана илнĕ чух патша майри мечĕт тăррине хăпарнă тет те ăмăрт кайăк пулса вĕçсе кайнă тет.

Катаран килен юлан ут.
Катаран килен ик юлан ут тет,
Те тăван та, те тăван мар,
Эпĕ те ăна пĕлместĕп.

Çырма хĕрринчи хурл(ă)ханĕ,
Çырма хĕрринчи хурл(ă)ханĕ тет.
Хурл(ă)хантан паха хурăнташ,
Хурл(ă)хантан паха хурăнташ тет.

Сад пахчинчи пилешĕ,
Сад пахчинчи пилешĕ тет.
Пилешрен паха пĕлĕш-тантăш,
Пилешрен паха пĕлĕш-тантăш.

## 59. Атя, куккук, каяр Хусан хулине

Куккукпала шăпчăк калаçаççĕ:
— Атя, куккук, каяр симĕс те сада,
Симĕс те садра йăва çаврăпăр.
Йăва та çаврăпăр, çăмарта тăвăпăр,
Çăмарта тăвăпăр, пусма ларăпăр,
Пусма та ларăпăр, чĕпĕ кăларăпăр:
Сана — куккукĕ, мана — шăпчăкĕ,
Сана — çул çӳреме,
мана — выляма.
Атя, куккук, каяр Хусан хулине,
Хусан хули пит аван хула тееççĕ:
Çыранĕсем сахăртан, çырми —
пыл çырма.
— Ан суй, ачам, ан суй, эп хам Хусан хĕрĕ,
Хусанта çуралнă, Хусанта ӳснĕ.
Çыранĕсем — çын пуçĕ,
çырми — юн çырма.

## 60. Хусан хули — ту çинче

Хусан хули — ту çинче.
Унăн мĕлки — шыв çинче.
Эпир унта ĕлĕк пурăнни
Халĕ килсе тухать куç умне.

## 61. Ярăнайтăм Ярăслав-шыв çине

Улăхрăм çӳлĕ эп ту çине,
Улăхрăм çӳлĕ те ту çине,
Ярăнайтăм Ярăслав-шыв çине.

Ярăславăн шывĕ ай шерпет пек,
Улпучĕсем çăваççĕ пичĕсе(не),
Шур пӳспеле пусса та шăлаççĕ.

Пирĕн пекех çамрăк ай ачасем
Куççуллипе çăваççĕ пичĕсе(не),
Çанни вĕçпе пусса сăтраççĕ.

Вăштăр кăна вăштăр ай çил вĕрет,
Вăштăр кăна вăштăр та çил вĕрет,
Мăкăнь чечекĕсене çав тăкать.

Хуларан хулана шур хут çӳрет,
Хуларан хулана та хут çӳрет,
Пирĕн куççуллисене çав тăкать.

## 62. Стенька Разин тăрса ларчĕ

Атăл тăрăх юхать кушма
Кушма çинче — çын вилли.
Юхса тухрĕ перĕке*,

* Çырана.

Кӳлсе пычĕç пар лаша,
Илчĕç хучĕç виллине,
Илчĕç кайрĕç чиркĕве.
Пуп пуçăнчĕ кĕлтума —
Стенька Разин тăрса ларч(ĕ).

### 63. Вылянчĕ Ăраçинăн кăтри

Атăл тăрăх юхать кушма,
Кушма çинче — çын вилли.
Юхса тухрĕ перĕка,
Кӳлсе пычĕç пар лаша.
Илсе кайрĕç чиркĕве,
Пупĕ сапрĕ вил тăпри.
Кистен кисренчĕ, ялт тăчĕ,
Вылянчĕ Ăраçинăн кăтри.

### 64. Раçăн патша килнĕ тет

Тани* шывĕ хĕрринчен
Вĕççĕр Атăл хĕррине
Раçăн патша килнĕ тет,
Пир(ĕ)н пек юрлă çынсене
Ĕçсе çиме парать тет.

Тани шывĕ хĕрринчен
Вĕççĕр Атăл хĕррине
Раçăн патша çитнĕ тет,
Пир(ĕ)н пек юрлă-çуксене
Тинĕсе ишме чĕнет тет.

Тани шывĕ хĕрринчен
Вĕççĕр Атăл хĕррине
Раçăн патша кĕтет тет,
Карап çинчи хуçасене
Тинĕсе яма чĕнет тет.

### 65. Раçин патша хăй килет

Хырăм выççи вăратать,
Вырăн çинчен тăрататъ,
Кăмăл-туйăма хуçать.
Раçин патша хăй килет
Шур лашапа-мулпалан.
Мулне парать, чун парать,
Хура халăха вăратать,
Ура çине тăрататъ,
Алла чукмар тыттарать.

* Дон юхан шывĕ.

### 66. Çтенькка Раçăн çӳрет тет

Сутă тинĕс çутинче
Çтенькка Раçăн çӳрет тет.
Пур çĕтĕк-çатăксемпе
Пĕр канашра пурнать тет.

Сутă тинĕс çутинче
Çтенькка Раçăн çӳрет тет.
Пур çĕтĕк-çатăксене
Пурнăç шăпи парать тет.

### 67. Çтенкки Раçăнăн ачи

Хусан хулипе, креппăç çумĕпе
Пĕр хусах çӳрет, юрласа иртет...
  Юрлăр, маттурсем!
Кăвак сăхманне йӳле янă çав,
Пилĕк çыххине урлă çакнă çав.
  Юрлăр, маттурсем!
Пилĕк çыххине урлă çакнă çав,
Сăсар çĕлĕкне чалăш лартнă çав.
  Юрлăр, маттурсем!
Уринче унăн сахьян атă çав,
Аллинче унăн мамăк перчетке.
  Юрлăр, маттурсем!
Мамăк перчетке, пилĕк пӳрнеске,
Хура кăтрисем çĕмĕрт хура çав.
  Юрлăр, маттурсем!
Кĕпĕрнаттăрсем кантăкран пăхрĕç,
Кантăкран пăхрĕç, хусаха курчĕç.
  Юрлăр, маттурсем!
Хусаха курчĕç, салтаксем чĕнчĕç,
Хусаха тытса килмелле терĕç.
  Юрлăр, маттурсем!
Хусаха тытса килмелле терĕç,
Кам таврашшине тĕпчеме хушрĕç.
  Юрлăр, маттурсем!
Салтаксем килчĕç салтака тытса
Хуçасем умне пăрахрĕç çыхса.
  Юрлăр, маттурсем!
Кĕпĕрнаттăрсем хусахран ыйтаç:
Хăш ял ачи теç, кам таврашĕ теç.
  Юрлăр, маттурсем!
Ак хусах калать: Аваççили эп тет,
Çтенкки Раçăнăн аслă ачи тет.
  Юрлăр, маттурсем!
Атте манăн тет, асаймăçч тет,
Шурă хăйăртан кимĕ явнă тет.
  Юрлăр, маттурсем!

Шурă хăйăртан кимĕ явнă тет,
Тип çĕрте карап çўреттернĕ тет.
Юрлăр, маттурсем!
Тип çĕрте карап çўреттернĕ тет,
Сывлăшра вĕçсе хăй çўренĕ тет.
Юрлăр, маттурсем!

## 68. Хусахсенĕн çулĕ ăçтан иртет

Хусахсенĕн çулĕ ăçтан иртет? —
Хыт хураллă анасен хушшинчен.
Пирĕн çамрăк ĕмĕр ăçтан иртет? —
Асаппала хурлăх та хушшинчен.

Анатри пахчари сан* айĕнче
Шăнкăртатса юхать-çке юр шывĕ.
Пирĕн асап çинчен шухăшласан
Шăпăртатса анать-çке куççулĕ.

Уйăхăн çутиех çап-çутă-çке,
Нумай хусах иртет-çке йĕнерсĕр.
Пирĕн нуша çинчен шухăшласан
Нумай çĕрсем иртет-çке ыйхăсăр.

Çўллĕ тусене Турă мĕншĕн тунă? —
Пăлан пăрушĕсене йăванма.
Пире атте-анне мĕншĕн тунă? —
Асаппала хурлăхпа пурăнма.

Çўллĕ ту çинчен килет
пĕр павуска,
Унăн çине витнĕ те шурă кашма.
Пĕр илеççĕ ăна, пĕр витеççĕ,
Тата пур-тăр унта та павуска.

Патшаран та килет ырă хыпар:
Çĕр паратпăр тесе те калаççĕ.
Пĕр параççĕ çĕрне, пĕр памаççĕ,
Тата пур-тăр унăн та вырăнĕ.

Кĕтўре ырă ут нумай пуль,
Çăлтăр хушкисене те çитес çук.

Тĕнчере ырă çын нумай пуль,
Пирĕн хута кĕрекен пулас çук.

Ейĕксенĕн шывĕ ейў юхать,
Хăçанах кĕрĕ-ши те çырана?

Айванах та чунçăм, çамрăк пуç —
Хăçанах та кĕрĕ-ши çын çине?

* Юр кĕрчĕ.

## 69. Хусан тавра хусах вылять

Çўл ту çинчен сим юхать,
Сим-сим юхмин шерпет юхтăр —
Пире пулас çĕршыв мар.

Хусан тавра хусах вылять,
Тем чул хусах вылясан та —
Пире пулас хула мар.

Çурт çумĕнче чĕкеç вылять,
Чĕкеç вылямин, кук вылятăр —
Пире пулас çурт-йĕр мар.

Кил-йыш лайăх тиеççĕ,
Тем чул лайăх пулсан та —
Пире пулас кил-йыш мар.

Кўршĕ лайăх тиеççĕ,
Тем чул лайăх пулсан та —
Пире пулас кўршĕ мар.

Тумтир лайăх тиеççĕ,
Тем чул лайăх пулсан та —
Пире пулас тумтир мар.

Ати лайăх тиеççĕ,
Тем чул лайăх пулсан та —
Пире пулас ати мар.

Самана лайăх тиеççĕ,
Тем чул лайăх пулсан та —
Эпир ырă курас çук.

## 70. Терĕш хĕрне антăм та

Терĕш хĕрне антăм та хăмла татрăм,
Мăй(ă)ма хура çĕлен те явăнтартăм.
Ўпне ялне пытăм та çурт çавăртăм,
Аюл тамăк хуранне пусăма ятăм.
Пĕр пусшăн та ураран çапатчĕçĕ,
Пĕр сумшăн та туратран çакатчĕçĕ.
Эпир Тайшăм хулине çўреттĕмĕр,
Чăпти-чăпти укçа та леçеттĕмĕр.
Тăхăнмалăх сăхман та,
ах, юлмастчĕ,
Çимелĕх те çăкăр та,
ах, юлмастчĕ.
Пире Никати тўре те, ах, хăтарчĕ,
Аюл тыткăнĕнчен те, ах, кăларчĕ.

## 71. Питтăпайăн таврашĕ

Питтăпайăн лашисем
Пурте йĕслĕ йĕвенлĕ.
Питтăпайăн ачисем
Пурте атă-пушмаклă.
Питтăпайăн кинĕсем
Пурте кĕмĕл сулăллă.
Питтăпайăн хĕрĕсем
Пурте кĕмĕл çĕрĕллĕ:
Шарттин-шарттин ал çупать,
Йăлтăр-йăлтăр курăнать.

## 72

Питтăпайăн ачисем
Ялан симĕс атăллă,
Питтăпайăн кинĕсем
Ялан кĕмĕл сулăллă,
Питтăпайăн хĕрĕсем —
Шĕлтĕр укçа умĕсем...

## 73

Питай пуян лашисем
Пурте йĕслĕ йĕвенлĕ.
Питай пуян ачисем
Пурте атă-пушмаклă.
Питай пуян кинĕсем
Пурте кĕмĕл сулăллă.
Питай пуян хĕрĕсем
Пурте кĕмĕл çĕрĕллĕ:
Шарттин-шарттин ал çупать,
Йăлтăр-йăлтăр курăнать.

## 74. Самар тăвалли

Атте пачĕ мана турă лаша, анне,
Эп кӳлтĕм те кайрăм
ай Самара, анне.
Самарăн тăвалли —
вăрăм твалла, анне,
Çав твалларан улăха, ай улăха, анне,
Чĕн хăмăт пăявсем ай татăлчĕç,
анне.
Хăмăт пăявĕсене сыпа-сыпа, анне,
Манăн пӳрне вĕсем ай çĕтĕлчĕç,
анне.
Çав пӳрне вĕçсене вĕре-вĕре, анне,
Манăн хĕрлĕ чĕре(й)
ай шуралчĕ, анне.
Çав хĕрлĕ чĕре(й)шĕн йĕре-йĕре,
анне,
Манăн ик хура куç ай пăсăлчĕ,
анне.
Ик хура куçа шăла-шăла, анне,
Манăн шурă тутăр ай хуралчĕ,
анне.
Çав шурă тутăра çăва-çăва, анне,
Самарăн шывĕ ай çитмерĕ, анне.

## 75. Петĕр патша, сывă пул!

Эпир килех каятпăр —
Петĕр патша кулянать,
Кулянать те хуйхăрать,
Хуйхăрать те макăрать:

— Ăçта ка(я)тăр, чăвашсем?
Ма каятăр, чăвашсем?
Тĕрме юлнă тумалли,
Патак юлнă çимелли.

— Петĕр патша, ан кулян,
Ан кулян та ан макăр,
Мĕн кирлине хăвах ту,
Хăвна валли хăвах ту.
Петĕр патша, сывă пул,
Юлашки хут курнă пул!

## 76. Эпир Питĕрте пултăмăр

Эпир Питĕрте пултăмăр,
Мускавра та пултăмăр.
Питĕр чаплă çав тери,
Мускавĕ те чаплă çав тери.

Анчах пирĕн чăвашсен
Арăмĕсем чаплă çав тери.
Кунĕн-çĕрĕн макăраççĕ
Эпир килте çук чухне.

Ах, путене-путенкке!
Хуньăм хĕрĕ — хура хĕр,
Эпир таçта тамăкра,
Эс арăм çеç мар — чун савни.

Путене пулса вĕçсе кил,
Анчах эс мана кураймăн.
Эпир ĕнер вуннăнччĕ,
Халь эпир — тăпра ăшĕнче.

## 77. Хура халăх куççуллисем ай шывсем мар

Хура халăх куççуллисем
ай шывсем мар —
Шур Атăла юхса ай пĕтес çук.
Атьăр юрлар, атьсем, ай юрлар-ха
Сакайĕнчи савнă ай юррине.

Хура халăх куççуллисем
ай шывсем мар.
Турă курчĕ пирĕн ай куççульне:
Турă пачĕ пире ырă патша —
Эпир ырă кунсем курмаллах.

Хура халăх куççуллисем
ай шывсем мар.
Пирĕн пата килчĕ ай Пăкачах.
Пире пачĕ Пăкачах ай ырлăхсем —
Хусан хуçисенчен ай хăтарчĕ.

Хура халăх куççуллисем
ай шывсем мар.
Хусан хули айне ям чавтарчĕ,
Виç çĕр пичке тарне ай ларттарчĕ,
Хусан хулине те ай çунтарчĕ.

Хура халăх куççуллисем
ай шывсем мар.
Хусан хулине те ай хур çитрĕ.
Пăкачах та хытă ай тăрăшрĕ
Хусан хуçисенчен хăтарма.

Хура халăх куççуллисем
ай шывсем мар.
Пăкачах та илчĕ ай Хусана.
Хура Хусан хулин ай хуçине
Хурах пусрĕ Пăкачах халăхшăн.

Хура халăх куççуллисем
ай шывсем мар.
Çунса кайрĕç Çĕрпӳ ай тӳрисем
Пăкача та патша ай хушнипе,
Хура халăх ылханĕ ай çитнипе.

Хура халăх куççуллисем
ай шывсем мар.
Пире пачĕ Пăкачах ай ырлăхсем.
Атьăр юрлар, атьсем, ай юрлар-ха
Сакайĕнчи савнă ай юррине.

## 78. Пăкач йĕрет, Пăкач йĕрет

Мамăк вĕçет, мамăк вĕçет
Шурă пусса шыраса.
Анчах мĕнле шырасан та
Шурă пусса тупас çук.

Пăкач йĕрет, Пăкач çĕрет
Хăй ирĕкне тухасшăн.
Хăть те мĕнле йĕрсессĕн те
Вăл ирĕке тухас çук.

Пăкач çунать, Пăкач çунать
Хăйĕн çарне курасшăн.
Анчах мĕнле çунсассăн та
Вăл хăй çарне курас çук.

Хĕвел анать, хĕвел тухать,
Ун тĕрмине çутатмасть.
Юн тăкăнать, куççуль юхать,
Вĕсем ахаль тăкăнмаç.

Ик аллинче икĕ сăнчăр,
Вăл вĕсене татас çук.
Анчах эпир Пăкач ĕçне
Нихăçан та манас çук.

## 79. Ял-йыш, пускил пĕр пулсан

Лутра юман хуйăрне
Хуйăрлама килтĕмĕр.
Арман хуçи пурлăхне
Шĕкĕлчеме килтĕмĕр.
Униче карти пит пулсан
Уйри тырă пит килет.
Ял-йыш, пускил пĕр пулсан
Хура çĕрĕк ким шăвать,
Пуян тĕнчи çĕнеймест.

## 80. Пукача лăпкă пулатчĕ пуль...

Атăл та шывĕ хумханать,
Атăл та шывĕ хумханать.
Кăмăль те хускалман пулсан,
Кăмăль те хускалман пулсан
Атăл хумханмастчĕ те пуль,
Атăл та хумханмастчĕ пуль.

Пурнăç ăшă пулнă пулсан,
Пурнăç ăшă пулнă пулсан

Кӑмӑл хускалмастчӗ те пуль,
Атӑль те лӑпкӑ выртатчӗ пуль
Атӑль те лӑпкӑ выртатчӗ пуль.

Пӗр пек хӗвел пӑхнӑ пулсан,
Пӗр пек хӗвел пӑхнӑ пулсан
Пукача лӑпкӑ пулатчӗ пуль,
Пукача лӑпкӑ пулатчӗ пуль,
Кӑмӑль хускалмастчӗ те пуль,
Кӑмӑль хускалмастчӗ те пуль.

## 81. Утлӑ ҫарлӑ Пӑкача

Ҫӗр ҫинче патша пор теччӗ.
Уна Пӑкача тесе чӗнеччӗ,
Ҫа патша пор ҫынсене
Парат ҫӗрсем салатса.
Ак кунта та ҫитрӗ вӑл,
Утлӑ ҫарлӑ Пӑкача.
Ларат хӑй лаши ҫинче,
Йыхӑрат пере Пӑкача
Хӑйӗн ҫарне толтармашкӑн,
Пӗтӗм олпут-пояна
Ҫапса ҫӗмӗрме чӗнет.

## 82. Ҫакрӗҫ хучӗҫ Пӑкача

Пӑкачав килнӗ — пытанар...
Пирӗн пуянсем нӳхрепсене
пытанаҫҫӗ,
Кӗрсе ларчӗҫ шӑтӑка, ай-ай-ай-ай!

Пӗррехинче каҫ пулсассӑн
Килчӗҫ параппан ҫапса.
Халӑх хӑраса сиксе
Тухрӗ урама, ай-ай-ай-ай!

Пуянсем тарма тытӑнчӗҫ,
Хӑтӑлаймӗҫ Пӑкачран.
Пуянсене тытрӗҫ, ҫакрӗҫ,
Савӑнчӗ хресчен, ай-ай-ай-ай!

Тепӗр кунне килчӗҫ пуянсем,
Илсе килчӗҫ вӗсем Пӑкача.
Ял варрине илсе тухса
Ҫакрӗҫ хучӗҫ Пӑкача, ай-ай-ай-ай!

Ҫӑка тупӑка ӑна хучӗҫ,
Пытарчӗҫ улӑха.
Хресченсем вӑрттӑн пырса лартрӗҫ
Пысӑк йӑмрасем, ай-ай-ай-ай!

## 83. Икӗ матрус*

Чӑваш ывӑль матрусра:
Шӗшкӗ туйи аллинче,
Серте кукли кӗсйинче —
Кам хӑрӗ-ши матрусран?

Вырӑс ывӑль матрусра:
Тимӗр туйи аллинче,
Симӗс кайӑк** кӗсйинче —
Ма хӑрас мар матрусран?

## 84. Атьӑрах каяр ҫӗнӗ ҫӗре

Атьӑрах каяр ҫӗнӗ ҫӗре!
Акмасӑр тулӑ пулать теҫҫӗ.
Акмасӑр тулӑ пулмасть пулӗ,
Ҫын сӑмаххи ҫеҫ пулӗ.

Атьӑрах каяр ҫӗнӗ ҫӗре!
Ҫапмасӑр авӑн ҫапать теҫҫӗ.
Ҫапмасӑр авӑн ҫапмасть пулӗ,
Ҫын сӑмаххи ҫеҫ пулӗ.

Атьӑрах каяр ҫӗнӗ ҫӗре!
Ҫулмасӑр утӑ ҫулнать теҫҫӗ.
Ҫулмасӑр утӑ ҫулӑнмасть пулӗ,
Ҫын сӑмаххи ҫеҫ пулӗ.

Атьӑрах каяр ҫӗнӗ ҫӗре!
Ҫилсӗр ҫил армань аврать теҫҫӗ.
Ҫилсӗр ҫил армань авӑрмасть пулӗ,
Пирӗн сывлӑшпа авӑрать пулӗ.

Атьӑрах каяр ҫӗнӗ ҫӗре!
Шывсӑр шыв армань аврать теҫҫӗ.
Шывсӑр шыв армань
авӑрмасть пулӗ,
Пирӗн куҫҫульпе авӑрать пулӗ.

## 85. Каять чӑваш Ҫӗпӗр енне

Чулхулапа Хусан ай хушшинче
Ҫип ҫапнӑ пек выртать аслӑ ҫул.
Аслӑях та ҫулӗ ай такӑр ҫул,
Ик айккипе шакӑр шурӑ хурӑн.

---

* Пӗрремӗш Петӗр вӑрмансене сыхлама янӑ хуралҫӑ-матрос.
** Шур эрех.

Иртет хурăн çулпа улпут тавраш,
Ун лавĕнчен юлать тăвăл тухса.
Каять Çĕпĕр енне мĕскĕн чăваш,
Лаши аран утать пуçне усса.
Каять чăваш çемйи Пушкăрт çĕрне
Хăйĕн çĕрне улпут илнĕрен.
Каять тăван инçе, Самар хирне
Хăй ялĕнче пурнăç ай хĕсĕкрен.
Ан кай, чăваш, инçе, ан асаплан,
Ху çĕрӳнте патвар юман пек лар!
Выç куç улпутсене хуса ярсан
Тăван ялунта та сан япăх мар.

## 86. Чиркӳ чанĕн юрри

Пуян, кил! Пуян, кил!
Пуян, кил!

Килĕсĕр-килмĕсĕр —
хыпăнмастпăр,
Килĕсĕр-килмĕсĕр —
хыпăнмастпăр.

Килтĕр-кайрăр,
шуйттансем,
Пĕр пус укçа памарăр.
Килтĕр-кайрăр,
шуйттансем,
Пĕр пус укçа памарăр...

## 87. Хусан сăрчĕ çинче приккас

Хусан сăрчĕ çинче приккас,
Приккас ăшĕнче икĕ тиек,
Шур хут çине çыру çыраççĕ,
Шур супăньпе пите çăваççĕ,
Шурă пӳсне пусса шăлаççĕ.
Патшалăха кайнă ачисем
Куççулĕпе питне çăваççĕ,
Çанни вĕçĕпе пусса шăлаççĕ.

## 88. Хусантан тухать хура çул

Хусантан тухать хура çул,
Ик айккипе сăрлă юпа.
Хĕртсе хĕвел пăхсассăн
Сăрлă юпаран сăр юхать.
Эй, тăвансем-туханссем!
Куçран куçа пăхсассăн
Ик хура куçран шыв тухать.

## 89. Ӳплесем турăмăр

Уй варринче кăтра хурăн,
Уй варринче яка хурăн.
Лой-ла, лой-ла, кăтра хурăн,
Лой-ла, лой-ла, яка хурăн.

Хурăнсенчен туратсене хуçрăмăр,
Вĕсем пире шăрăхран хăтарчĕç.

Туратсенчен ӳплесем турăмăр,
Вĕсем пире усрарĕç.

## 90. Вĕçсе ӳкрĕм Ейĕк хулине

Утлантăм утăма улине,
Вĕçсе ӳкрĕм Ейĕк хулине.
Ейĕк хулинче мĕн хаклă? —
Йĕпкĕн хура ут хаклă.
Çамрăк пурнăçра мĕн хаклă? —
Халь выляса кулни — çав хаклă.

## 91. Варшав шыв урлă каçăпăр

Варшав шыв урлă каçăпăр,
Çынтан кĕпер хывăпăр.
Нимĕç-француз салтаксене
Мĕн виличчен парăнмăпăр.

Атăл пăр каять хускалса,
Васанран васан чарăнса.
Напальонăн çиме пĕтнĕ,
Час çитесшĕн Парижа.

Улăхран улăха çӳреççĕ
Хуп кĕпçисем шыраса.
Раççей çĕрпе тараççĕ
Çăкăр татăк шыраса.

Куккук ăçта? — Васанра.
Француз ăçта? — Тапăра.
Парăнмасăр хиреç тăрсан —
Виç аршăнлă шăтăкра.

Кайăк хурĕ васанра.
Мамăк ăçта? — Лавккара.
Вырăс çарĕн паттăрлăхĕ
Мĕнпур тавра халăхра.

### 92. Хранцуссем туп хатӗрлеҫҫӗ

Питӗрпурӑн ҫулӗнче-ҫке
Шурӑ кайӑк выртать.
Каймӑттӑм эпӗ Питӗрпура —
Кӗрпем-ҫӑнӑхӑм туртать.
Питӗрпурӑн таврашне
Кирпӗчпеле ҫаварнӑ.
Каймӑттӑм эп Питӗрпура —
Ҫӳҫӗм ҫав тӗлте ҫыхӑннӑ.
Хранцуссем туп хатӗрлеҫҫӗ.
Пирӗн патшана ывтмашкӑн.
Етре ҫӑва пуҫласассӑн
Патшаран хыпар килет
Пире тармасса.
Анне, мана мӗншӗн ҫуратрӑн-ши?
Мӗншӗн ҫумна илсе выртрӑн-ши?
Ӳссе пӗвӗм ҫитмерӗ.
Мӗншӗн патшана сутрӑн-ши?
Тӑвӑр чӳлмек ӑшӗнче
Пиҫет салтак яшкисем.
Вӗҫен кайӑк ҫитмен ҫӗре
Каять салтак пуҫӗсем...

### 93. Французпа вӑрҫма каятпӑр

Ай, ай, ай-я,
Пирӗн ати* Питӗрте,
Пирӗн апи Питӗрте,
Хӑнча** ҫитсе курас-ши?
Хӗвел витӗр хӗр курӑнать,
Эпир илес хӗр ҫавӑ.
Уйӑх витӗр уй курӑнать,
Эпир вӑрҫас уй ҫавӑ.
Французпа вӑрҫма каятпӑр:
Ӗмпӳ пире чӗнчӗ.
Аслӑ атие, аслӑ апие
Пулӑшма каятпӑр.
Ӗмпӳ пире хӗҫ парать,
Ӗмпӳ пире пулине парать,
Ӗмпӳ пире штык парать,
Ӗмпӳ пире сӑнӑ парать,
Ӗмпӳ пире шинель парать,
Ӗмпӳ пире шӑлавар парать,
Ӗмпӳ пире атӑ парать,
Ӗмпӳ пире карттус парать,
Ӗмпӳ пире эреке*** парать.
Эреке ӗҫсен хӑюланса
Французпа вӑрҫма каятпӑр.
Пирӗн ӗмпӳ — вырӑс ӗмпӳ,
Эпир — ӗмпӳн ачисем.
Пире ӗмпӳ авлантарать,
Питӗрти хӗре илетпӗр.

### 94. Француc ҫарсен ӗмӗлки

Ҫӗр хӗрринчи сӗм вӑрман —
Витӗр тухми сӗм вӑрман,
Кӑн-кӑвак ҫанталӑка
Ӗмӗлкипе хуратать.
Ах, вӑрман мар, ним те мар:
Француc ҫарсен ӗмӗлки
Ҫӳле виттӗрех ӳкет,
Унпа пӗлӗт хуралать.

### 95. Ҫунӑк ялсем хуп-хура

Смулен хули — шур хула;
Хула тавра уй хура;
Ҫунӑк ялсем хуп-хура,
Ҫӗр вӗри, тӳсмест ура.

Унта-кунта уйсенче
Хамӑр халӑх ҫар ҫынни
Юнӗпе ҫӗр шӑварать.
. . . . . . . . . . . . . . .

### 96. Чӗп-чӗрӗ юн пӑсланать

Уй тӳпинчи вӑрмана
Кассӑн-кассӑн уйӑрнӑ,
Уйӑрсан, касса янӑ:
Уйӗпех вӑрман выртать.
Ах, вӑрман мар, ҫар выртать:
Чун тухайман салтаксем
Йӑшталанни курӑнать.

### 97. Француз ӗсӗре пуҫлать

Француз тумтир йӗтӗнрен,
Йӗтӗнрен те пусаран;
Пирӗн енчен ҫил вӗрсен
Сивӗ тытать кӑкӑртан.
Кӗр сиввийӗ пуҫлансан
Француз ӗсӗре пуҫлать,
Ҫан-ҫурӑмне сив ҫапать,
Ӳпки-пӗверӗ шыҫать.

---

* Атте.
** Хӑҫан.
*** Эрех.

Пирĕн аттен Мускавра
Сурăх нумай картара.
Пирĕн çийри кĕрĕксем
Тĕклĕ сурăх тирсенчен.
Çĕр шартлатса шăннă чух
Пирĕн çийри тумтирпе
Улпут хăй те шăнас çук.
Уншăн пулсан хуйхă çук.

## 98. Француз тăнă вырăнта

Чупрăм тухрăм пахчана,
Улма илтĕм укçалла:
Сарă хĕре лекĕ-ши
Е патшана лекĕ-ши?

Илсе кайрĕç салтака,
Манăн мĕскĕн çамрăк пуç
Французсене лекĕ-ши
Е патшана лекĕ-ши?

Уйăх пекех çуталать
Французĕсен тумĕсем.
Пурте пурçăн тăлăллă
Французĕсен учĕсем.

Француз тăнă вырăнта
Утма çук салтак пуçсем.
Тен, таврăнăпăр çаврăнса,
Ан йĕрсемĕр, йĕкĕтсем!

Варшшав тĕлне каçăпăр
Çынпа хурăн пăрахса...

## 99. Севастополь çийĕнче

Тинĕс тулли карапсем,
Çурта çунать ăшĕнче.
Çумăр пек йĕтре вĕçет
Севастополь çийĕнче.

Пирĕн патша вăрçийĕ
Пырать ĕнтĕ виçĕ çул.
Çапăçатпăр вăрçăра
Кăкăр таран юн çинче.

## 100. Утелнийĕн çаранĕ

Утелнийĕн çаранĕ —
Çава тулли курăкĕ.
Утелнийĕн паккусĕ —
Чĕр* çўлли паккусĕ.
Утелнийĕн валемĕ —
Пилĕк çўлли валемĕ.
Утелнийĕн уçăмĕ —
Кăвакарать, ешертет.
Утелнийĕн капанĕ —
Анкарти тулли капанĕ.
Утелнийĕн ырашĕ —
Кĕлет тулли ырашĕ.
Утелнийĕн укçийĕ —
Арча тулли укçийĕ.

Мĕскĕнсенĕн çаранĕ
Çулмассерен чул лекет.
Мĕскĕнсенĕн паккусĕ
Чĕлтĕр-чĕлтĕр чул çинче.
Мĕскĕнсенĕн валемĕ —
Çил илесрен чул хунă.
Мĕскĕнсенĕн уçăмĕ
Тусанланать, хуралать.
Мĕскĕнсенĕн капанĕ —
Çапнă кĕлте капанĕ.
Мĕскĕнсенĕн ырашĕ —
Пўлме тулли шăшийĕ.
Мĕскĕнсенĕн укçийĕ —
Арча тулли таракан.

## 101. Утел тырри вырнă чух

Утел тырри акнă чух
Вĕт-вĕт çумăр çăвать-çке;
Вĕт çумăр мар, мĕн те мар —
Хура халăх куççулĕ.

Утел тырри вырнă чух
Вăш-вăш çилсем вĕреççĕ;
Вăш çил те мар, мĕн те мар —
Хура халăх сывлăшĕ.

Утелнийĕн кантурне
Хĕрлĕ сăрпа сăрланă;
Хĕрлĕ сăр мар, мĕн те мар —
Хура халăх юнĕсем.

Утелнийĕн каттукне
Маттур утсем туртаймĕç;
Маттур-маттур ачасем
Утелнинчен тухаймĕç.

---

* Чĕркуççи.

Утелнийӗн хыҫӗнче
Ялан утел капанӗ;
Ир те, каҫ та тухса пӑхать
Утелнийӗн вахтӑрӗ*.

## 102. Вырӑс тӳри тӑчӗ пирӗн ҫие

Ула сысна пусӗрӗҫ,
Тушне кӗрекене хучӗҫ.
Ҫи терӗҫ те, ҫимерӗм,
Мӑйма ҫӗҫӗ хучӗҫ.

Вырӑс тӳри тӑчӗ пирӗн ҫие
Асатте-асанне тӗнне ҫухатма.
Рехмет патшана,
Пире асатте-асанне
Тӗнӗпе усрать.

## 103. Иссус турра юрарӑм

Ула сысна, мӑн сысна,
Мӑн сыснана пусрӗҫӗ.
Тушне ума хучӗҫӗ.
Ҫи! терӗҫӗ — ҫимерӗм,
Мӑя ҫӗҫӗ хучӗҫӗ.
Пуҫ касасран хӑрарӑм,
Маҫак туррине манса
Сысна тушне пуҫларӑм,
Иссус турра юрарӑм.

## 104

Ҫаврӑнса пӑхрӑм каялла —
Ик пар лаша килеҫҫӗ:
— Ларатна, ларатна? — терӗҫ те,
— Лараймастӑп, — теейрӗм.
Кӑларчӗҫ вӑрӑм ҫӗҫҫине —
Ирӗксӗрех ларайрӑм.

Илсе пычӗҫ чиркӳ умне:
— Кӗретне, кӗретне? — терӗҫ те,
— Кӗрейместӗп, — теейрӗм.
Кӑларчӗҫ вӑрӑм ҫӗҫҫине —
Ирӗксӗрех кӗрейрӗм.

Илсе пычӗҫ пуҫ кӑшӑл:
— Тӑхӑнатна, тӑхӑнатна? —
терӗҫ те,
— Тӑхӑнаймастӑп, — теейрӗм.
Кӑларчӗҫ вӑрӑм ҫӗҫҫине —
Ирӗксӗрех тӑхӑнтӑм.

Илсе пычӗҫ пӗр пӳрте:
Унта сысна пуснӑ иккен,
Пуҫне касса хунӑ иккен.
— Ҫиетне, ҫиетне? — терӗҫ те,
— Ҫиейместӗп, — теейрӗм.
Кӑларчӗҫ вӑрӑм ҫӗҫҫине —
Ирӗксӗрех ҫиейрӗм.

## 105. Атьӑр каяр тинӗс леш енне

Атьӑр каяр, тӑванӑмсем,
тинӗс леш енне:
Курӑпӑр, тӑвансем,
хумсем юхнине.
Хумӗсем хушшинчен
шхунсем иртеҫҫӗ,
Эпир те йӗретпӗр
шхунсем путасран,
Атте-анне йӗрет эпир вилесрен.
Кӑларсам, Пӗр Турӑ,
типӗ ҫӗр ҫине.
Типӗ ҫӗр ҫине те ешӗл сад айне.
Садра сар кайӑксем юрӑ юрлаҫҫӗ,
Тӗрлӗрен сӑвӑсем вӗсем калаҫҫӗ,
Аннеҫӗм куҫҫульне шӑпӑр тӑкаҫҫӗ,
Аттеҫӗм чӗрине шарах ҫураҫҫӗ.

## 106. Эпир Истампула кайсассӑн

Истампул халапӗ кала пуҫласан
Ачасем макӑра пуҫларӗҫ...
Эпир Истампула ай кайиччен
Акмасӑр тырӑ пулать тетчӗҫ.
Вырмасӑрах кӗлте тулать тетчӗҫ.
Эпир Истампула ай кайсассӑн
Аксассӑн та тырӑ ай пулмарӗ,
Вырсассӑн та кӗлте тулмарӗ.
Вутра ҫунтӑр Чанкуш Якурӗ —
Хула пек кил-ҫуртма салаттарчӗ.

## 107. Килсе лекрӗм Тӗрӗке

Ырӑ пурнӑҫ шыраса килсе лекрӗм
Тӗрӗке,
Эх, юлташӑм, юлташӑм,
атя кунтан тарар.

---
* Вахтерӗ.

Эх, юлташăм, юлташăм,
атя кунтан тарар.
Эпир каяс çул çинче
чĕрĕ тамăк пур.
Чĕрĕ тамăк леш енче
Хура тинĕс пур.
Хура тинĕс леш енче
сĕм вăрмансем пур.
Сĕм вăрмансем леш енче
çеçен хирсем пур;
Çеçен хирĕн варринче
тăван ялăм пур.

## 108. Дунай шывĕ юнлă шыв

Дунай шывĕ,
Дунай шывĕ урлă каçнă чух
Турккăсен усал хĕççи пуç касрĕ.

Дунай шывĕ,
Дунай шывĕ, юнлă юхнă чух
Турккă ханĕ хуçа пулма шутларĕ.

Дунай шывĕ,
Дунай шывĕ юнлă пулас çук,
Турккă пирĕнпе хуçа пулас çук.

## 109. Дунай шывĕ хĕрринче

Ах, сар лашу, сар лашу,
Киле каяс терĕн пуль.
Киле кайма тухсассăн
Çеçен хире тух, лашу.
Çеçен хире тухсассăн
Аслă çула туп, лашу.
Аслă çула тупсассăн
Хамăр яла туп, лашу.
Хамăр яла тупсассăн
Хамăр тĕле туп, лашу.
Хамăр тĕле тупсассăн
Хапха умне туп, лашу.
Хапха умне тупсассăн
Чĕркуçленсе лар, лашу.
Чĕркуçленсе ларсассăн
Шарăлтатса кĕçен, лашу.
Шарăлтатса кĕçенсен,
Аннӳ чупса тухсассăн
Каласа пар, сар лашу:
«Дунай шывĕ хĕрринче,
Аслă вăрçă варринче,
Чĕркуç таран юн çинче
Хĕçпе пăшал хушшинче
Манăн атте — çӳлти хĕрлĕ хĕвел,
Манăн анне — çӳлти çутă çăлтăр,
Манăн пичче — çулти çутă уйăх».

## 110. Дунай урлă кĕпер çук

Шăпăр-шăпăр çумăр çăвать,
Вырăс халăхĕн юн юхать,
Дунай шывĕ урлă кĕпер çук:
Карттус пăрахса каçам-ши,
Шинель пăрахса каçам-ши?
Епле каçса каям-ши?

## 111. Сахалина пуç янă чăваш юрри

Çынсем ака тăваççĕ.
Пирĕн çĕр çук, мĕн тăвас?
Эпир сертере, эпир сертере.

Çынсем утă çулаççĕ.
Пирĕн улăх çук, мĕн тăвас?
Эпир çырлара, эпир çырлара.

Çынсем тырă выраççĕ.
Пирĕн тырă çук, мĕн тăвас?
Эпир мăйăрта, эпир мăйăрта.

Çынсем авăн çапаççĕ.
Пирĕн тырă çук, мĕн тăвас?
Эпир кăмпара, эпир кăмпара.

## 112. Яппун патши вăрçă вăрçать

Яппун патши вăрçă вăрçать
Ырлăхшăн мар, хурлăхшăн.
Хусан çинче хут вылять
Ырлăхшăн мар, хурлăхшăн.

Яппун патши вăрçă вăрçать.
Эпир кайса чармасан
Пирĕншĕн пуян каяс çук,
Хăйĕн юнне тăкас çук.

## 113. Яппун вăрçи

Яппун вăрçи, яппун вăрçи —
Çын вилĕмĕ, çын вилĕмĕ.

Атте кайрӗ, атте кайрӗ,
Пичче те кайрӗ, эх, кайрӗ.

Юлтӑм тӑлӑх, юлтӑм тӑлӑх,
Юлтӑм пӗччене, юлтӑм пӗччене.
Макӑртӑм кунсерен,
Макӑртӑм кунсерен.

Нумай куҫҫуль юхрӗ,
Нумай куҫҫуль юхрӗ
Манӑн пит ҫинчен,
Манӑн куҫсенчен.

Пӗррехинче ирхине,
Пӗррехинче ирхине
Килчӗ кӗҫӗ пӗр салтак,
Шартах сикрӗ ман чӗре.

Вӑл ыйтрӗ манран,
Вӑл ыйтрӗ манран:
«Шыв пар-ха, ачам,
Ӗҫем пӑртакках...»

«Ачам» тесенех,
«Ачам» тесенех
Палӑртрӑм ӑна:
«Атте!» — терӗм эп.

## 114. Патша прахӑҫ пултӑр тет

Каш-каш вӑрман,
каш вӑрман,
Мӗншӗн кашлать ҫав вӑрман?
Ҫуллен турат хушас тет,
Ҫавнпа кашлать ҫав вӑрман.

Шав-шав хула, шав хула,
Мӗншӗн шавлать ҫав хула?
Патша прахӑҫ пултӑр тет,
Ҫавнпа шавлать ҫав хула.

Патша прахӑҫ пулсассӑн,
Ирӗк пурнӑҫ ҫитсессӗн
Ӗҫре ҫӳрен савӑнӗ,
Хресчен чунӗ ҫӗкленӗ.

## 115. Кермань килет вӑйпала

Кермань килет вӑйпала —
Ҫӗр палӑрми ҫарпала.
Килсен-килсен юхса карь*
Выҫлӑ** ятлӑ шупала.

Выҫлӑ хӗрне илме килнӗ —
Кӗпер курса каҫараҫ.

## 116. Кермань патши ҫураҫмасть

Уй киремеч — Кермань патши,
Киремет тата ҫураҫать,
Кермань патши ҫураҫмасть.

Кермань йытти — хӗрлӗ йыт,
Аш парсан та аш ҫимест,
Пирӗн пуҫа ҫиесшӗн.

Кермань кушак — шур кушак,
Сӗт парсан та — сӗт ҫимест,
Пирӗн юна ӗҫесшӗн.

## 117. Тӗрӗк ҫӗрне кӗтӗмӗр

Чул казарма, сывӑ пул!
Тухса кайрӑмӑр эпир вӑрҫа.
Пырса ҫитрӗмӗр Дунай хӗрне.
Дунай шывӗ — юхӑм шыв.
Пирӗн рота командирӗ
Унта кӗме хӑрарӗ,
Дунай хӗрне ҫитсессӗн
Тӑратрӗҫ пире шыв тӑрӑх.
«Е сывӑ юлӑпӑр, е юлмӑпӑр», —
Терӗҫ ватӑ салтаксем.
Ҫак сӑмахсене илтсен
Вут пек вӗри куҫҫуль
Пат-пат тумларӗ ҫӗр ҫине.
Дунай шывне кӗнӗ чух
Ултӑ пин салтакчӗ ушкӑнра.
Шывран вара тухрӑмӑр
Пӗр пин салтакран та кем.
Дунай варрине ҫитсен
Пирӗн кимӗ ӳпленчӗ.
Аран-аран тухрӑмӑр,
Вара Тӗрӗк ҫӗрне кӗтӗмӗр.
Вунӑ ҫухрӑм утрӑмӑр,
Пур ҫӗрте те салтак вилли.
Нимӗҫсем тупӑран переҫҫӗ,
Окопсене ватаҫҫӗ.

---

* Кайрӗ.
** Висла.

Пирĕн пек çамрăк салтаксем
Чĕркуççи таран юнпа выртаççĕ.
Нимĕçсем тупăран переççĕ,
Блиндажсене ишеççĕ.
Пирĕн пек çамрăк салтаксем
Хăшĕ урасăр, хăшĕ алăсăр,
Тилмĕрсе выртаççĕ.
Хăпартăмăр çӳллĕ ту çине,
Нимĕççене куртăмăр.
Вĕсен салтакĕсене
Хăваласа ятăмăр.
Нимĕççен çăкри тулăран.
Вĕсемпе çапăçасси
Пиртен мар,
Чун илли патшаран.

## 118. Урал тусен хушшинелле

Урал тусен хушшинелле
Çын мĕлкисем курăнаç,
Тĕттĕм çĕр каç ту çинелле
Санитарсем хăпараç.
Пурте йăтнă наçилккасем,
Унта çынсем вырттарнă.
Вĕсен хушшинче сас илтĕнет:
«Эпĕ час вилетĕп-и?» — тет.
Кĕтĕр халĕ, чăтăр тесе
Вĕсене сестра йăпатать.
Акă лазарета çитсен
Ĕçсе-çисе канăпăр.
Ранăсене çуса çыхса
Киле çыру çырăпăр.
Ак пĕр салтак ларчĕ çырма:
Сывă-и атте, анне,
Хăй йывăрĕпе аташать,
Киле час пыратăп тет.

## 119. Патша лаши

Патша лаши — ай тур лаша
Кайрĕ пуль, кайрĕ пуль
Комиссарăн аллине.
Каялла килесси
Ай пулаймарĕ пуль.

Улпут уйĕ — ай аслă хир
Кайрĕ пуль, кайрĕ пуль
Хресченсенĕн аллине.
Каялла килесси
Ай пулмарĕ пуль.

Пуян çын укçи — ах сар ылтăн
Кайрĕ пуль, кайрĕ пуль
Советсенĕн аллине.
Каялла килесси
Ах пулаймарĕ пуль.

Ампар туллиех,
ах, ырашăм
Кайрĕ пуль, кайрĕ пуль
Чухăнсенĕн аллине.
Каялла килесси
Эх пулаймарĕ пуль.

## 120. Çтан тухнă-ши çак колхоз?

Çтан тухнă-ши çавра çил? —
Юр тĕмине пĕтерет.
Çтан тухнă-ши çак колхоз
Пуянсене пĕтерме?

Пĕтет терĕç Волонтер,
Пĕтет терĕç Волонтер.
Пĕтмерĕ мур, тур хуплаш,
Атте килне пĕтермĕш.

## 121. Гитлер ĕни çиять пуль

Сыв пул, савни,
сыв пул.
Сыв пул, савни,
сыв пул.
Станци хĕрне
Станцă хĕрне çитсессĕн
Вăрçă хирне çитиччен.
Вăрçă хирне çитсессĕн
Çие шинель тăхниччен.
Çие шинель тăхăнсан —
Алла пăшал тытиччен.
Алла пăшал тытсассăн,
Витĕр пуля тухиччен.
Витĕр пуля тухсассăн
Хура çĕр айне кĕриччен.
Хура çĕр айне кĕрсессĕн —
Симĕс курăк шăтиччен.
Симĕс курăк шăтсассăн
Гитлер ĕни çиет пуль.
Гитлер ĕни çисессĕн
Савни мана манать пуль.

## 122. Çамрӑк хӗр каччине вӑрçа ӑсатать

Лӑпкӑ шыв юхать, тинӗсеваскатать,
Çырана çӑвать, шавласа вылять.

Çут хӗвел çӳлти хуллен çеç кулать,
Вӑл савса пурне те ӑшӑтса тӑрать.

Лӑпкӑ çил куллен шӑхӑрса илет,
Кайӑксен илемлӗ юрри илтӗнет.

Лӑпкӑ шыв хӗрринче ват йӑмра
ларать,
Ват йӑмра айӗнче çамрӑк парӑ тӑрать.

Çамрӑк хӗр каччине вӑрçа ӑсатать,
Сарӑ хӗр хӑй савнине кӗтмешкӗн
пулать.

Сарӑ хӗр юлать, хурланса юлать,
Унӑн ӑшӗ çунать, куççулӗ юхать.

Ват йӑмра пӗтӗмпех тайӑлса ларать,
Çамрӑк çын пекех пуç тайса юлать.

Çутӑ кун иртет, тӗттӗм çӗр килет,
Кивӗ кун юлать, çӗнӗ кун пулать.

Кулленех вӑхӑт шӑвӑнса иртет,
Е нумай вӑхӑт, е сахал иртет.
Каччӑран çыру час-часах илет.
Пӗрре хӗр çыру каччӑран илет.

Хӗр çыру илсен савӑнса каять,
Уçса вуласан макӑрса ярать.

«Пӗр хаяр вӑрçӑра йывӑр амантӑм.
Татӑлнӑ ман ура, алӑсӑр юлтӑм.

Çӗршыв мана уншӑн награда пачӗ,
Тӑван çӗр ӑшшӑн кӗтсе илейрӗ».

## 123. Уйрӑлу

Каçма урлӑ каçсан
Сар хӗр хӑйӗн савнинчен
уйрӑлать.
Унӑн тути кулать, чӗлхи пуплет,
Икӗ хура куçӗ шывланать.
Ан айӑпла ӗнтӗ куççулӗшӗн,
Савӑнса мар хурланса йӗрет.
Пӗрне-пӗри савса ӳссе çитӗнсен
Уйрӑлнӑ чух йӗмен çын курман.

Шурӑ пурçӑн тутӑр кӑвак чечек,
Юлашки хут çыхап юлашки.
Юрататни, савни, юратмасни,
Юлашки хут ыйтап, юлашки.

Çапла вара уйрӑлчӗç çамрӑксем,
Татрӗç хӑйсен ӗмӗтне.
Аякра таçта шӑпчӑк юрларӗ,
Пулӑсем выляччӗç çырмара.

Паттӑр каччӑ кайрӗ партизана,
Хулӗ урлӑ çакать пӑшалне.
Каях, тусӑм, хамӑр çӗнтермесӗр
Савӑк пулмӗ пире хамӑра.

## 124. Аманнӑ салтак юрри

Кӑнтӑрти фронтра çапӑçнӑ вӑхӑтра
Амантрӗç пире нимӗçсем.
Юлташӑм, юлташӑм,
ыратаç сурансем,
Ыратаç сурансем йывӑр.
Пӗри тӳрлениччен тепри
шӑтса юхӗ,
Вилме те вӑхӑт çывхарать.
Юлташӑм, юлташӑм,
тарӑн чав шӑтӑка,
Тарӑна пытар шӑммӑмсе.
Килте ман ачасем тата çамрӑк арӑм,
Кӗтеççӗ вӗт мана вӗсем.
Ан тив — халӗ кӗтчӗр,
пустуя кӗтеççӗ,
Кӗтсе илеес çук мана.
Манӑн арӑм çамрӑк,
тупӗ хӑйне юлташ,
Ачасен ашшӗ пулас çук.
Ах тур, ман ачасем
çуралчӗç телейсӗр,
Телейсӗр çуралчӗç вӗсем.
Ачасем ӳссе çитсен
ыйтӗç амӑшӗнчен:
«Пирӗн тӑван атте ӑçта?..»
Амӑшӗ калаймӗ,
куççульне юхтарӗ:
«Тӑван аçӑр вилнӗ фронтра...»

Амăшĕ каласассăн
тытăнĕç йĕмешкĕн,
Хурланĕç, йĕрĕç ачамсем.

## 125. Галя

Пурччĕ манăн Галя,
Чун юратнă тусăм,
Анчах пуçне хучĕ
Вăл çĕршывшăн халĕ.

Эх, эсĕ, Галя,
Чун юратнă Галя!..
Анчах пуçне хучĕ
Вăл çĕршывшăн халĕ.

Пирĕн ротăраччĕ
Санитарка Галя.
Пулнă унăн ячĕ
Пуриншĕн те паллă.

Паттăрччĕ хĕрарăм —
Вун çиччĕри Галя.
Çапăçусенче те
Пулнă вăл хастарлă.

Боец аманать-и —
Пирĕн савнă Галя
Сурана çыхатчĕ
Тăхлан çумăр витĕр.

Пит маттур хĕрарăм —
Ытарма çук Галя.
Эп ăна юратрăм
Ĕмĕр асăнмалăх.

Юрататчĕ хăй те
Вут чĕреллĕ Галя.
Уншăн çĕкленетчĕ
Вăрçăра вăл харсăр.

Çапăçура вилчĕ
Манăн тусăм Галя.
Ĕмĕр унăн ячĕ
Пултăрччĕ мухтавлă.

## 126. Аманнă салтак

Таса уйра, сăрт çинче
Аманнă салтак выртать.
Ун кăкăрне штык шăтарнă,
Юнлă тутăр аллинче.

Салтак юнĕ шăршипеле
Вĕçсе анчĕ пĕр çăхан.
— Ан вĕç, çăхан, ан вĕç, çăхан,
Эпĕ халĕ вилмен-ха.

Кайса кала килтисене,
Аттепеле аннене.
Вĕсем маншăн ан кулянччăр,
Тек кураймăп вĕсене.

Манран юлнă тур лашине
Ытла йывăр ан тийĕр.
Манран юлнă сарă хĕрне
Йывăр сăмах ан калăр.

Сыв пул, атте, сыв пул, анне,
Вилес вăхăт çитрĕ ман.
Сыв пул, савни, сыв пул, чунăм,
Ĕнтĕ эпĕ тин уйрăлăп.

## 127. Тусăм вăрçăра

Тухрăм лартăм урама та
Çурхи лăпкă каç,
Кĕмĕл уйăх çутинче те
Тăсрăм юррăма.

Манăн юррăм ян янрарĕ,
Кайрĕ инçете.
Вăрттăн-вăрттăн вăл вăратрĕ
Савни чĕрине.

Аслă улăх варринче те
Чечек хумханать.
Савни çинчен шухăшласан
Пуçăм çаврăнать.

Хура вăрман варринче те
Куккук авăтать,
Ман телейсĕр çамрăк пуçа
Савни çунтарать.

Ах, юратнă, савнă тусăм,
Курăп-ши сана?
Çак илемлĕ чакăр куçу
Пăхĕ-ши мана?

Ах, юратнă, савнă тусăм
Халех килес çук.
Эсĕ халĕ çапăçатăн
Германь вăрçинче.

## 128. Тавăру

Кайăксем вĕçетчĕç ушкăнпа,
Çулçине тăкатчĕ хурлăхан.
Асатма эп тухрăм инçене
Чĕререн юратнă савнине.

Юлашки хут тесе вăл мана
Алă пачĕ куçăмран пăхса:
«Вилнĕ чух та пулăн ман асра,
Пĕрле илĕп сан юратăва».

Шăп çулталăк çитнĕ çĕрелле
Çыру çитрĕ ман савнин килне.
«Пĕр хĕрўллĕ наступленире
Вилнĕ, — тенĕ, —
паттăр вилĕмпе».

Çўçĕмсем тăкăнчĕç хуйхăрса,
Хĕрлĕ сăнăм пĕтрĕ пит çинче.
Чăтаймастăп, эс пулнă чаçа
Çырăнатăп ыранах кайса.

Пуçне хунă çын юратуне
Улăштармăп çĕн юратупа,
Вилĕм кўнĕ йытă тăшманне
Çул ан пултăр çĕр çинче утма!

## 129. Манми каччă

Маттур каччă, чипер каччă
Ўсрĕ пирĕн кўршĕре.
Мухтанмашкăн юратмастчĕ,
Пултаруллăччĕ ĕçре.
Аванччĕ çав каччă,
Мана кăмăллатчĕ.
Каçсерен вăййа тухатчĕ
Ик эретлĕ купăспа.
Эпир ыйтнине вылятчĕ
Тулли, усă кăмăлпа.
Аванччĕ çав каччă,
Мана юрататчĕ.
Кил умне çитсе пырсассăн
Вăйă хыççăн урампа
«Ырă каç» тесе пĕр саслăн
Уйрăлаттăмăр унпа.
Аванччĕ çав каччă,
Мана ăсататчĕ.
Вăхăт çитрĕ, вăрçа кайрĕ,
Тусăм кайрĕ колхозран.
Пурпĕрех мана манмарĕ:
«Эс тухмастăн, — тет, — асран».
Аванччĕ çав каччă,
Мана вал хаклатчĕ.
Вăрçă хирĕнче пулин те,
Çырать ăшă çырусем:
«Тăшмансем чикке çитсен те,
Çук, каçаймĕç, — тет, — вĕсем».
Хăюллă та паттăр,
Пире вăл сыхлатăр.
Çĕршыв чысĕ татах ўстĕр,
Чечеклентĕр вăл ялан.
Ирĕн-каçăн çирĕплентĕр,
Сыхла, тусăм, халь ăна.
Хăюллă та паттăр,
Сыхла эс хăюллăн.

## 130. Савни вăрçăра

Шăпăр-шăпăр çумăр çăвать
Чўрече хупкаç çине.
Çавăн пекех пуля çăвать
Ирсĕр тăшмансем çине.

Кутамккине çакрĕ пуль те
Шинельне тăхăнчĕ пуль.
«Сыв пул, савни», —
терĕ пуль те
Вăрçа тухса кайрĕ пуль.

Аттине тăхăнчĕ пуль те
Винтовкине çакрĕ пуль.
Вăрçа кĕрсе, ранĕн пулса
Савни сая кайрĕ пуль.

Атту çутă, атту çутă,
Çутататăр урама.
Пĕвў яшта, сăну хитре,
Çунтаратăр чĕрене.

Велосипед, велосипед
Такăр çула юратать.
Савни, хуть те мĕн
кала та,
Ман чун санах юратать.

## 131. Германи çĕрĕнче

Икĕ герой килет
Германи çĕрĕнчен —
Германи çĕрĕнчен килеç.
Германи çĕрĕнчен килеç.

Инçетри çĕршывран,
Германи çĕрĕнчен.
Амантрĕç мана нимĕçсем.
Амантрĕç мана нимĕçсем.

Юлташăм, юлташăм,
Ыратать-çке суранăм,
Ыратать-çке суранăм, йывăр.
Ыратать-çке суранăм, йывăр.

Пĕри тӳрленет те,
Тепри шăтса юхать.
Вилмешкĕн вăхăт çитет пуль.
Вилмешкĕн вăхăт çитет пуль.

Юлташăм, юлташăм,
Алтăр ман шăтăка,
Пытарăр мана, тăлăха.
Пытарăр мана, тăлăха.

Килте анне-атте
Тата икĕ ача,
Кĕтеççĕ пуль вĕсем мана.
Кĕтеççĕ пуль вĕсем мана.

Тата арăм çамрăк,
Хăйшĕн мăшăр тупĕ,
Ачасен ашшĕ пулас çук,
Ачасен ашшĕ пулас çук.

Ачасем ирех тăрĕç,
Амăшĕнчен ыйтĕç:
«Атте ăçта-ши?» — тесе,
«Атте ăçта-ши?» — тесе.

Амăш ним чĕнеймĕ,
Ачисем çине пăхĕ,
Вĕçĕмсĕр тăкăнĕ куççуль.
Вĕçĕмсĕр тăкăнĕ куççуль.

Ан тив кĕтчĕр, кĕтчĕр,
Емĕр тăршшĕ кĕтчĕр —
Кĕтсе илес çук мана.
Кĕтсе илес çук мана.

## 132. Виçĕ суран

Виçĕ паттăр тухнă
Германи вăрçинчен
Тăван килĕсене таврăнма.
Финн чиккине çитсен финнсем
вĕсене тытнă,
Унтан виçĕ çĕртен амантнă.

Юлташăм, юлташăм,
ыратать ман суран,
Ыратать ман суран, тӳсме çук.
Пĕр суран тӳрленет,
тепри шыçса каять,
Виççĕмĕшне вилĕм кĕтет.

Килте ман ачасем тата çамрăк арăм,
Чунтан кĕтеççĕ вĕсем мана.
Кĕтсен кĕтеç ĕнтĕ *(2 хут),*
Кĕтсе илес çук вĕсем мана.

Ах, ачасем ӳссе çитĕç,
ыйтĕç амăшĕнчен
Ăçта пирĕн атте тесе.
Амăш çаврăнĕ,
куççульпе питне çăвĕ,
Унтан салхуллă ответ парĕ:

Сирĕн аçăр вилнĕ,
масара пытарнă
Таçти аякри çĕршывра.
Унта хĕвел пăхать,
Курăк та ешерет,
Çеçкесем те шăтать
ун çинче».

## 133. Гитлер ури хуçăк тет

— Гитлер ури хуçăк тет,
карчă-ă-ăк!
— Совет çĕрне пуснăран,
стари-и-ик!
— Гитлер алли хуçăк тет,
карчă-ă-ăк.
— Çын мулне хапсăннăран,
стари-и-ик.
— Гитлер пуçĕ ĕннĕ тет,
карчă-ă-ăк.
— Хĕрлĕ çар çунтарнăран,
стари-и-ик.

— Гитлер пуҫӗ шӑтнӑ тет,
карчӑ-ӑ-ӑк.
— Вӑл нӳхрепре ларнӑран,
стари-и-ик.
— Гитлер хырӑмь шӑтнӑ тет,
карчӑ-ӑ-ӑк.
— Вӑл ҫын юнне ӗҫнӗрен,
стари-и-ик.
— Гитлер чунӗ тухнӑ тет,
карчӑ-ӑ-ӑк.
— Тухтӑрах ҫав чунӗ ун,
стари-и-ик.

## 134. Капитан

Ку ӗҫ пулнӑ тахҫан ӗлӗк мар,
Ленинградра, ҫакӑ вӑрҫӑра.
Капитан Украина вӑрҫинчен
Ҫыру ҫырать ҫамрӑк арӑмне:
«Хаклӑ арӑм, эп каланӑ,
Ҫук урам, сылтӑм алӑ.
Вӗсем тӗрӗслӗхшӗн ӳксе юлчӗҫ
Тӑван ҫӗршыва сыхласа.
Ҫак ҫӗршывшӑн мана парнелерӗҫ
Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе.
Ҫыр-ха эсӗ, ҫамрӑк арӑм,
Мӗнле кӗтсе тӑрӑн эс мана?»
Вӑл мана ҫыру ҫырса ячӗ:
«Калеккӑшӑн урӑх арӑм ҫук.
Мана халӗ 32 ҫул кӑна,
Эпӗ пултаратӑп халӗ ташлама.
Эс килетӗн халӗ калӑп пек,
Толькка выртӑн
эс койккӑ ҫинче...»
Аяларах ҫырнӑ урӑх алӑ,
Вӑл пулнӑ юратнӑ хӗрӗн-мӗн:
«Атте, эсӗ аннене ан итле,
Таврӑн эсӗ часрах киле.
Эс килсессӗн эп пулӑп хавас
Манӑн атте пур тесе.
Ӑшӑ кунта пит тарласассӑн
Лӑпкӑ сив шыв парӑп эп сана.
Урапапа туртса ҫӳрӗп эп сана,
Чечексем татса парӑп сана...»
Ак ҫуталчӗҫ кӳлӗсем, уй-хирсем,
Поезд килчӗ Шӑхаль ялне.
Ҫак вырӑнта, ҫемҫе вырӑнта
Капитан чиперех ларать.
Вот унӑн хӗрӗ чупса тухрӗ,
«Атте, атте!» — тесе кӑшкӑрать.
«Мӗскер-ха, атте,
сан пурте чиперех,
Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗ санра».
«Чим-халӗ, юратнӑ хӗрӗм,
Пурте пӗлӗҫ эп мӗнле иккенне.
Пире тӑвансем кӗтмерӗҫ пулмалла,
Шутламарӗҫ юлташ вырӑнне».
Хӗре йӑтрӑм та эп утса кайрӑм
Хам ҫуралнӑ Шӑхаль еннелле.
— Сывӑ-и? — тесе ал патӑм
арӑма,
Арӑм чӑтаймарӗ, ҫӗре ӳкрӗ.
Ачасем, хӗрарӑмсем,
ват ҫынсем, ҫамрӑксем,
Пӗлӗр пурте хӗрарӑм ӑсне.
Арҫын лайӑх пулсан —
кирлӗ хӗрарӑма,
Арҫын калеккӑ пулсан —
кирлӗ мар хӗрарӑма.

## 135. Атӑл хӗрӗ

Атӑлҫи ялӗнче пӗр пике ҫитӗнет,
Ир-каҫ Атӑл ҫинче ун юрри
илтӗнет.
Сасӑ мар, шӑнкӑрав
янӑрать темелле
Янкӑс хӳхӗм янрав
чӗтренсен кӗмӗлле.

Ӑнсӑртран тӗл пулсан именет,
хӗрелет,
Ӑшшӑн вӑл йӑл кулсан чун-чӗре
ирӗлет.
Ҫуталать-ҫке кулли
хӗвелпе выляса,
Пичӗсем тӑп-тулли,
хӗрлӗ сӑнлӑ, таса.

Сар кӑтра ҫӳҫӗсем ҫил
ҫинче вӗлкӗшеҫ,
Ун кӑвар куҫӗсем
вут-хӗлхеммӗн ҫиҫеҫ,
Ытарма ҫук чечен,
ытарма ҫук чипер,
Халиччен-ха вӑл
тӗл пулман каччине.

Ун каччийӗ инҫе хулара пурӑнать,
Вӑрҫӑ кунӗсенче вӑл тус турӗ ӑна.

Çĕршыва шур тăшман
вут хыптарнă чухне
Кам-ши, кам тăрăшман çĕршыва
пулăшма?

Пулăшаттăмăр хĕрсе пурте
халăх çарне,
Фронт тесен хĕрĕсем
кам яман-ши парне?
Çав хаяр вăхăтра
аснă чух вут-кăвар,
Палламан паттăра
парне янăччĕ вăл.

Вăл çырсаччĕ çыру
ăна сывлăх сунса,
Пирĕнте çĕнтерӳ пуласса
ыт шанса.
Палламан йĕкĕтрен хучĕ
çитрĕ часах,
Тав тăвать чĕререн
парнене мухтаса.

Парнинчен ытларах
вăл ырлать урăхне,
Парнинчен ытларах сарă
хĕр камăлне.
Иртрĕç вутлă
кунсем шавласа-кĕрлесе,
Таврăнчĕç паттăрсем
тăшмана çĕнтерсе.

Çав-çавах хĕр илет
çыру хыççăн çыру,
Саламсем-çке килеç
хĕрӳрен те хĕрӳ.
Паттăр каччă кĕтет сарă
хĕр сăмахне;
«Тивĕç пулăп-ши, — тет, —
сирĕн мăшăр ятне?

Килĕшсен кĕркунне пырăп, —
тет, — хăтана».
Хĕр ун пек çырнине
вулама вăтанать,
Кăмăллăн хуравлать:
«Килме ирĕк сирте,
Çамрăк-çке-ха ытла,
кăшт тăхтамăр-ши?» — тет.

## 136. Куккук пулса килĕп терĕ

Çуркуннехи ешĕл вăрман
Симĕс чĕрĕлет.
Ăшă çилĕ вĕрнипеле
Лăпкăн хумханать.
Аслă вăрман хĕррипеле
Сарă хĕр утать,
Шур çеçкеллĕ çĕмĕрт çине
Тинкерсе пăхать.
«Ма пĕччен эс,
пике хĕрĕм,
Ма кунта çӳрен?
Шур çеçкеллĕ çĕмĕрт çине
Ма чунтан пăхан?
Шурă çĕмĕрт сапакине
Татас терĕн-им,
Ху юратнă савнă тусна
Парас терĕн-им?»
«Эп савнине ăсатсаттăм
Çак уçланкăра,
Çуркуннехи çĕмĕрт çеçке
Çурнă вăхăтра.
Куккук пулса килеп терĕ
Илемлĕ çулла,
Тăван çĕршĕн пуçне хучĕ
Иртнĕ вăрçăра».
Аслă вăрман варринче
Куккук авăтать,
Сар хĕр ăна итле-итле
Хурланса юрлать.

# АСӐРХАТТАРУСЕМ

## ӐНЛАНТАРУСЕМ

Халӑх эпосӗн материалӗсене туллинрех пухса кӑларакан ку кӗнекене асӑннӑ жанрӑн анлӑ сарӑлнӑ тӗслӗхӗсене — улӑп халапӗсене, эпосла поэмӑсене, мифла пейӗтсемпе кун-ҫул пейӗчӗсене кӗртнӗ. Унта халиччен ҫапӑннӑ текстсемпе пӗрле ҫӗнӗрен ҫырса илнӗ тата архивсенче тинрех кӑна асӑрханӑ хайлавсем те пайтах пичетленеҫҫӗ. Вӗсене, тӗпрен илсен, тематикӑпа сюжетсен аталанӑвӗн хронологине кура вырнаҫтарма тӑрӑшнӑ. Чылай текст темиҫе сюжета пӗрлештерсе тӑрать, ҫавӑнпа хронологи принципне пур чухне те тӗрӗс тытса пыма тӳр килмест. Сайра хутра, ал ҫыру темиҫе сюжета пайланнӑ чухне, ҫав пайсене тивӗҫлӗ ушкӑна вырнаҫтарнӑ. Тектсене ят парса тухнӑ чухне сюжет йӗрӗсене кӗскен палӑртма тӑрӑшнӑ (оригиналсене «Улӑп», «Улӑп ҫинчен» е ҫавӑн йышши пӗтӗмӗшле ятсемпе ҫырса панӑ).Вырӑсла ҫырса хунӑ е пичетленӗ тӗслӗхсене чӑвашла куҫарнӑ. Ал ҫырусенчи фонетика диалектизмӗсене кӗнекере пӗтӗмпех шута илеймен, вӗсен лексика уйрӑмлӑхӗсене ҫаплипех упраса хӑварнӑ.

Ӑнлантарусенче материалсен паспортне май килнӗ таран туллин кӑтартма тӑрӑшнӑ. Хӑвӑртрах тупма май килтӗр тесе унта хальхи территорипе администраци пайлавне тӗпе хунӑ, апла тума май килмен чухне ӗлӗкхиллех кӑтартнӑ. Ал ҫырусен уйрӑмлӑхӗсене, текстри пӗрер хут ҫех тӗл пулакан йывӑр сӑмахсене текстсерен ӑнлантарнӑ, унтах ал ҫырусен шӑпи, юмах-халапҫӑсем ҫинчен асӑрхаттарнисене кӗртнӗ.

Улӑп ҫинчен пӗрер е икшер-виҫшер пуплевпе калакан тӗслӗхсем халӑхра пайтах ҫӳреҫҫӗ. Вӗсенче анлӑ сарӑлнӑ сюжетсене кӗскетсе е пӗтӗмлетсе асилтерекеннисем те пур, унпа пӗрлех улӑпсене урӑх енчен сӑнлани, вӗсен пурнӑҫне урӑхла сюжет йӗрӗсемпе кӑтартма пикенни те палӑрать. Унашкал материалсенчен хальлӗхе ҫаксене илсе кӑтартма пулать:

1. Улӑпсем ҫара кутӑн капансем айӗнче ҫывӑрса пурӑннӑ (Ҫуйӑн).

2. Улӑп аслашшӗнчен ҫичӗ ӗҫ вӗреннӗ (Ҫуйӑн). Информатор вӑл ӗҫсем мӗне пӗлтернине татӑклӑн ыйтса пӗлеймен, ун пирки амӑшӗпе калаҫса ларнине Ҫуйӑн Хӗветӗрӗ ҫапла ҫырса кӑтартать, ӑна вуланӑ май кунта Улӑп ҫинчен калаҫма чаракан йӗрке пулни ҫинчен каланӑ (унӑн сӑлтавӗ уҫӑмлӑ мар):

«— Анне, вӗсем мӗнле ӗҫсем пулнӑ?

Анне ним чӗнмест те, хам тӗллӗн калаҫса:

— Калӑпӑр, ал ӗҫ тума вӑл пӗлет, вӑрҫӑ ӗҫне, сӑмах ҫапма пултаракан ҫынна ҫут тӗнче чӗлхине пӗлме кирлӗ — ӑна пӗлет тейӗпӗр. Чир-чӗртен эмеллесе ҫынсене сыватма пултарать, кӗсле купӑс калама пӗлтӗр. Ну сӑвӑ та ҫыртӑр... Пӗтӗмӗшле ултӑ ӗҫ. Ҫиччӗмӗш ӗҫӗ мӗнле ӗҫ пултӑр Улӑпӑн? Юрату мар-и?

— Юрату вӗренмелли ӗҫ мар, ӑна турӑ кашнинех шайпа виҫсе парать. Сана вӗсем мӗн тума кирлӗ?

— Анне, Улӑп....

— Ах турӑ, мӗн курӑн ӗнтӗ эсӗ те Улӑп пирки. Петӗр те хӗрӗсем пӑхманнипе выҫӑ вилчӗ, Хветут та урине хуҫсан хӗн-хур курса вилчӗ. Микулай та машин

айне пулса вилчĕ, тăхлач та (Татьян тăхлач) ачи хĕсĕрленипе вăхăтсăр вилчĕ. Аçу та сĕм суккăр пулса 16 çул хушши хĕн курса пурăнчĕ. Ах турă, хамăн та Тарье инке пек вилес марччĕ. Кама хурăн эсĕ, Симăн? Сана Тарье инке куç хыврĕ пулĕ сăмсунтан манкуна ĕмсе илнĕ чухне?

Улăпăн çиччĕмĕш ĕçĕ çинчен ятне асăнса анне пĕрре те каласа памарĕ. Анчах та Улăп ятне каламасăр, ун ĕçĕсем çинчен юмах пек каласа паратчĕ мана. Юлашки хут 1947 çулта март уйăхĕнче каласа кăтартрĕ».

3. Улăпа кăткăсем пулăшман пулсан, вăл ырăш («ыраш» мар-ши? — Çуйăн Хĕветĕрĕн асăрх.) тупас та çукчĕ (Çуйăн).

4. Улăпа ик çĕр паттăр тапăннă пулин те, вăл вĕсене ним маххă паман (Çуйăн).

5. Венгр халăхĕ кунтан куçса кайнă чухне Улăп каланине чăвашсем венгр халăхне çăкăр-тăвар парса янă пулать (Çуйăн). Çуйăн Хĕветĕрĕ кун пирки ыйтса пĕлнĕ май Н.А.Андреев (Урхи Наумĕ) 1968 ç. çапла пĕлтернĕ: «Чăвашсенчен венгр халăхне пулăшма 14 ăста Венгрие кайнă тет. Ун çинчен таçта çырса илни те пулас пулать (унтах).

6. Тĕнче хĕрне Улăп та утса тухайман тет.

7. Улăп çăпань ултă пăт.

8. Улăп пăшаль утмăл пăт тет.

9. Улăп лашин таканĕ утмăл пăт туртнă.

10. Улăп утмăл пăт, арăмь çитмĕл пăт.

11. Улăп кĕпи утмăл хăлаç.

12. Улăп вилсен утмăл лашапа турттарса кайнă тет.

13. Улăп çăпань çитмĕл пăт тет, кĕсенĕ ултă пăт тет (Патмар).

14. Улăп куçлă çын теççĕ. Ку сăмах «выçă куçлă çын» тенине пĕлтерет (А.Харитонов Самар облаçĕнчен 1974 ç. А.Алексеев патне янă çыруран).

Сунăм-пехил сăмахĕнче те улăпсене асăнни сахал мар тĕл пулать: «Улăп пек мăнă пул», «Мĕн улăп пек утаслан, — каччă пек пулса йăпăр-япăр уткала», «Улăп пек çирĕп пул», «Улăп пек паттăр пул», «Улăп пек çÿллĕ пул», «Улăп пек вăйлă пул», «Утас утă улăп утти пултăр», «Улăп пек ĕçлет» (Патмар).

Улăп сăнарĕ тупмалли юмахсен йышĕнче те çирĕпленнĕ.

1. Хура улăп килет те пĕтĕм тĕнчене çĕнсе тухать (каç пулни).

2. Асатте куçне алă икĕ улăп та çĕклеймĕ (кÿлĕ).

3. Улăх варринче улăп куçĕ пур (кÿлĕ).

4. Улăп урапи уй тăрăх куçать (çавра çил).

5. Икĕ кÿлĕ хушшинче улăп тĕмески (куççемпе сăмса).

Халиччен пăхса-тишкерсе пĕтереймен архив материалĕсен йышĕнче халăх эпосĕн тĕслĕхĕсем татах тупăнма тивĕç. Халăхра çÿрекен çĕнĕ йышши сюжетсем те сахалах пулма кирлĕ мар.

Кунта кĕртмен эпос материалĕсен шутне чăвашсен хăш-пĕр мифĕсене те асăнмалла (сăмахран, халăхăмăрăн мăн аслашшĕсем пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çÿрени, Атăл урлă каçни çинчен калакан халапсем), вĕсене халиччен ятарласа пухса пыман, анлăн тишкермен. Ку тĕлĕшрен Н.И.Егоров шыравĕсене палăртса хăвармалла, çав шыравсем тăван халăх эпосĕн пуянлăхне, унăн уйрăмлăхĕсене лайăххрах кăтартма пултараççĕ. Паттăрсем çинчен хывнă асамлă юмахсенчи эпос тымарĕсене кирлĕ таран палăртасси те — тĕпчевçĕсен малашнехи пысăк тĕллевĕ.

Пичетре тата архив материалĕсен йышĕнче улăпсем çинчен хывнă халăх халапĕсене чылай урăхлатса каласа панисем тĕл пулаççĕ. Юхма Мишшин «Пархатарлă пулнин ырлăхĕ», «Кăвак çути тĕнчинче» тата «Улăп чăвашсене пăрахса кайни» халапĕсенче халăхран çырса илнĕ сюжетсем хăй хальлĕн палăрмаççĕ, кунта çыравçă шухăшлавĕпе чĕлхи фольклор тексчĕн тытăмне чылаях хупласа тăрать, тĕрлĕрен материала пĕрлештерсе çыхăнтарни, çыравçă хăйĕнчен хушса анлăлатнă вырăнсем пурри вăйлă сисĕнет. Халăхпа паттăрсем çинчен çÿрекен юмахсем тăрăх Владимир Бараев «Али паттăр», Григорий Краснов-Кĕçĕнни «Сарпулат çинчен хунă юрă» ятлă юмах кĕнекисем çырнă. Вĕсенче оригиналлă литература уйрăмлăхĕсем тĕп вырăнта тăраççĕ, çавăнпа вĕсене ку кĕнекене кĕртмесĕр

хăварнă (малтанхи икĕ юмахĕ халăхра проза формипе çӳренĕ пулас, вĕсене юрласа е такмакласа калани çинчен ниçта та асăнман). Кăларăма кĕртнĕ «Пусйĕкĕтпе Айпике» эпосла поэмăна тата ытти тĕслĕхсенче тĕл пулакан юрăсен нотине информаторсем те çырса паман, çавăнпа ăна пичетлеме тӳр килмерĕ.

### ĂНЛАНТАРУСЕНЧЕ КĔСКЕТСЕ УСĂ КУРНĂ ЯТСЕМ

*Ашмарин, ЧСК* — Н.И.Ашмарин. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. I—XVII тт. Шупашкар—Хусан, 1928—1950.

*ОРРК* — Отдел редких рукописей и книг научной библиотеки Казанского государственного университета.

*ПР* — Пушкăртсан Республики.

*ТР* — Тутарстан Республики.

*Улăп* — Улăп. Чăваш халăх халапĕсем. И.И.Одюков пухса хатĕрленĕ. Шупашкар, 1975. — 36 с.

*ЧПГĂИ ĂА* — Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх архивĕ. Ку кĕскетнĕ ят хыççăнхи пĕрремĕш цифра архивăн пайне, иккĕмĕшĕ уйрăм номерне пĕлтерет.

*ЧР* — Чăваш Республики.

*Шпилевский* — Древние города и другие булгарско-татарские памятники в Казанской губернии. Казань, 1877.

Ăнлантарусенче çавăн пекех И.И.Одюков, Н.И.Егоров, Г.Ф.Юмарт, Е.С. Сидорова, А.А.Сосаева тата ыттисем тĕрлĕ çĕрте тупса хатĕрленĕ ал çырусен пуххисемпе усă курнă. Вăл материалсем ЧПГИ ăслăлăх архивĕнче тата асăннă тĕпчевçĕсен аллинче упранаççĕ.

Халăх эпосĕн тексчĕсемпе вĕсем тăрăх çырнă хайлавсен пичетленнĕ тĕслĕхĕсене библиографие кĕртмен, вĕсенчен чылайăшне ăнлантарусенче кăтартнă. Улăпла паттăрсем çинчен калакан пысăкрах мифсене «Чăваш халăх пултарулăхĕ» ярăмри «Мифсем, легендăсем, халапсем» кĕнекере пичетленĕ, çавăн пирки вĕсене ку кăларăма кĕртме йышăнман.

## УЛĂП ХАЛАПĔСЕМ

### УЛĂПСЕМ ЕПЛЕ ПУЛСА КАЯÇÇĔ

**1.** 1951 ç. ЧР-ин Патăрьел р-чи Сăкăтра хăйĕн асламăшĕнчен А.Я.Семеновăран Юхма Мишши çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 453. Л. 1. *Ĕмпӳ* патша. — Арамаçи тăвĕ — Ахурамазда (Ахăр) турра ĕненсе пуççапнă вырăнсен ятĕнчен пулса кайнă. Ун пек тусем Кавказра чылай тĕл пулаççĕ. *Чĕрĕм* — кĕске самант.

**2.** 1975 ç. ТР-ин Çĕпрел р-чи Çĕнĕ Упире Н.Г.Ятмановран И.Саландаев çырса илнĕ. — Одюков пуххи. *Чике* — чавса (1,5 метра яхăн).

**3.**1956 ç. ЧР-ин Патăрьел р-чи Тикешре П.М.Лисицынран Юхма Мишши çырса илнĕ. ЧПГĂИ ĂА, III, 453. Л. 29.

**4.** 1974 ç. унччен ЧР-ин Патăрьел р-чи Сăкăтра пурăннă асламăшĕ А.Я.Семенова каланине аса илсе Юхма Мишши çырса хунă. ЧПГĂИ ĂА, III, 453. Л. 7.

Юхма Мишши çапла асăрхаттарать: «Тепĕр çĕрте тата Хĕвел Улăп амăшĕн кукамăшĕ мар, кукашшĕ тенĕ пек астăватăп». Улăп амăшĕ Хĕвел патне мĕнле сăлтавпа вĕççе кайни паллă мар.

**5.** 1980 ç. ЧР-ин Вăрмар р-чи Мăнçырмара Т.А.Макарова çырса илнĕ. — Родионов пуххи.

### УЛĂПСЕН АЧАЛĂХĔ

**6.** 1947 ç. ЧР-ин Çĕмĕрле р-чи Юманайĕнче К.В.Ивановран Çуйăн Хĕветĕрĕ çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 353. Л. 34.

**7—8.** 1945 ç. ЧР-ин Тăвай р-чи Тăрмăшра çул-йĕр мастерĕнчен Федоровран Çуйăн Хĕветĕрĕ çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 353. Л. 33.

**9.** 1973 ç. ЧР-ин Вăрмар р-чи Çӳлти Кинчерте 68-ти А.А. Овчинниковăран Н.И.Егоров çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 454. Л.57—59. *Униче* — укăлча.

Кун йышши юмах марисен те тĕл пулать, унта «улăп» вырăнне «арçын ача» тенĕ («Гора самоцветов» сб., М., 1973. С. 181—186).

**10—12.** 1929 ç. ЧР-ин Çĕрпӳ р-чи Актайра П.Тимофеевран Çуйăн Хĕветĕрĕ çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 353. Л. 21—52. *Юхмалла икерчĕ* — çӳхӳ.

**13.** 1900 ç. тĕлнелле ТР-ин Пăва р-чи Элшелте Г.Т.Тимофеев çырса илнĕ // Г.Т.Тимофеев, Тăхăрьял. Шупашкар, 1972. С. 72. *Карман* — кĕсье.

**14.** 1875 ç. тĕлнелле ЧР-ин Сĕнтĕрвăрри р-чи Хурапха таврашĕнче М.Ф.Федоров çырса илнĕ // Известия по Казанской епархии. 1876, Хусан, 647—648 с. «Старинные люди» ятпа пичетленнĕ. Унта «улăп» вырăнне асăрхамасăр «улын» тесе пичетленĕ. И.Одюков хăй 1975 çулта пухса кăларнă «Улăп» сборникра ăна «Улăнк» тесе асăннине йăнăш тесе шутламалла. Унтан (10 с.) «что их погубить большой грех» тенĕ çаврăнăша «Улăнксем пысăк айăпа кĕнĕ, çавăнпа пĕтмелле» тесе тĕрĕс мар куçарнă. Кунта вăл тĕле тӳрлетнĕ.

**15.** 1871 ç. ТР-ин Пăва р-че В.А.Белилин çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 809. Л.35. Тĕл-тĕл ăнланма çуккипе текста кăштах тӳрлетнĕ, кĕскетнĕ.

**16.** 1910 ç. тĕлнелле ЧР-ин Вăрнар р-чи Кĕçĕн Явăш таврашĕнче И.Христофоров çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 213. С. 316. *Апай* — анне.

**17.** 1978 ç. ЧР-ин Сĕнтĕрвăрри р-че В.Сарилов çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III , 741. Л. 32.

**18.** 1907—1908 çулсенче Д.Месарош çырса илнĕ // Авалхи чăваш тĕнĕн палăкĕсем. 1 т. Будапешт, 1909. С.52—53.

**19.** 1900 ç. тĕлнелле ЧР-ин Вăрмар р-чи Пăвакассинче çырса илнĕ // Ашмарин Н.И. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки, III т. Шупашкар, 1929. С. 213—214.

**20.** ТР-ин Куйбышев р-чи Юхмачăра çырса илнĕ // Чăваш халăх юмахĕсем. Шупашкар, 1949. С. 201.

**21.** 1926 ç. ПР-ин Пишпӳлек р-чи Пишпӳлекре Г.И.Комиссаров çырса илнĕ. Малтанхи хут çав çулах ноябрĕн 28-мĕшĕнче «Красная Башкирия» хаçатра вырăсла пичетленнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III , 213. Л. 10—11. Г.Юмарт куçарнă.

**22.** 1904 ç. ЧР-ин Красноармейски р-чи Çеçмерте Т.К.Кириллов çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 144. С. 126—127. *Апи* — анне.

**23.** 1973 ç. ЧР-ин Вăрмар р-чи Çӳлти Кинчерте 68-ти А.А.Овчинниковран Н.И.Егоров çырса илнĕ. — Егоров пуххи.

**24.** 1940 ç. тĕлнелле ЧР-ин Красноармейски р-чи Яманакра М.В.Васильевăран И.А.Патмар çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 54. Л. 279.

**25.** 1896 ç. ЧР-ин Елчĕк р-че А.В.Рекеев çырса илнĕ// Известия по Казанской епархии, 1896. 298 с. Вырăсларан Г.Ф.Юмарт куçарнă.

**26.** 1956 ç. ЧР-ин Патăрьел р-чи Сăкăтра В.Барановран Юхма Мишши çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 275, 1972 инв. №.

**27.** Юхма Мишши. Эльпи чечекĕсем. Шупашкар, 1969. С. 227—228.

**28.** 1930—1940 çç. ЧР-ин Красноармейски р-чи Çĕньял Карайра Г.Федоровран (1863 çулта çуралнă) И.А.Патмар çырса илнĕ. —ЧПГĂИ ĂА, III, 356. С. 104.

**29.** 1975 ç. ЧР-ин Комсомольски р-чи Хырай Ĕнелти М.Ишмуратовăран Г.П.Тяконова çырса илнĕ. — Одюков пуххи.

## УЛĂПСЕН ПĔВĔ-СИЙĔ, ТУМĔ-ЮМĔ, КĂМĂЛĔ

**30.** 1975 ç. ЧР-ин Комсомольски р-чи Хырай Ĕнелти М.Ишмуратовăран Г.П.Тяконова çырса илнĕ. — Одюков пуххи.

**31.** 1928 ç. тĕлĕнче ЧР-ин Вăрмар р-чи Энтрияльĕнче Е.Г.Терентьев çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 132. Л. 82.

**32.** 1900 ç. тĕлнелле Ĕпхӳ кĕпĕрнин Пелепей уесĕнчи Хурамалта çырса илнĕ// Ашмарин, ЧСК, V. С. 399.

**33.** 1900 ç. тĕлнелле ЧР-ин Вăрнар р-чи Уравăшра çырса илнĕ //Ашмарин, ЧСК, III. С. 214.

**34.** 1930—1970 çç. ЧР-ин Красноармейски р-чи Яманакри А.Я.Яковлевран (1896 çулта çуралнă) И.А.Патмар çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 397. С. 72.

**35.** 1973 ç. ТР-ин Теччĕ р-чи Çĕньялта Р.Т.Самаркинăран Г.Юмарт çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 363. Л. 48.

**36.** Юхма Мишши. Элпи чечекĕсем. Шупашкар, 1969.

**37.** Юман Мĕтрин 1918 ç. çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче «Канаш» хаçатра пичетленнĕ «Шевле вылять» прозăлла сăввинчен илнĕ.

**38.** 1975 ç. ЧР-ин Патăрьел р-чи Нăрваш Шăхальте А.Петровран Н.Ф.Груздева çырса илнĕ. — Одюков пуххи.

**39.** 1932—1973 çç. ЧР-ин Çĕрпӳ р-чи Анатри Кипекçере К.Степановăран (1889 çулта çуралнă) И.А.Патмар çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 448. С. 5. *Чалăш* — тăршшĕ виçи.

**40.** 1932—1973 çç. ЧР-ин Муркаш р-чи Анфиса Степановăран И.А.Патмар çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 448. С. 14.

**41.** 1973 ç. ТР-ин Теччĕ р-чи Ăнăра 80-ри Ф.Г.Качайкинăран Е.С.Сидорова çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III. С. 367.

**42.** 1973 ç. ТР-ин Тури Услан р-чи Кӳлпуçĕнче 71-ри Е.П.Рыбаковран Г.Ф.Юмарт çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 368. Л. 66. *Касмăк* — катка.

**43.** 1961 ç. ТР-ин Аксу р-чи Салтань ялĕнче 71-ри И.Н.Бураевран В.Д.Димитриев çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 278. Л. 57. *Кĕрепенкке* (кĕренкке) — йывăрăш виçи (400 г.).

**44.** 1973 ç. ТР-ин Аппас р-чи Тĕпек Чĕрккĕнте Д.В.Реброскаяран Г.Юмарт çырса илнĕ. — Юмарт пуххи.

**45.** 1976 ç. ЧР-ин Вăрмар р-чи Çӳлти Кинчерте 71-ри А.А.Овчинниковăран Н.И.Егоров çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 386. Л. 33.

**46.** 1929 ç. ЧР-ин Çĕрпӳ р-чи Актайра амăшĕнчен — А.Дмитриевăран илтнĕ тăрăх Çуйăн Хĕветĕрĕ çырса панă. — ЧПГĂИ ĂА, III, 353. Л. 45.

**47.** 1959 ç. ЧР-ин Патăрьел р-чи Тикешре 82-ри П.М.Лисицынран А.П.Алексеева (Павлова) çырса илнĕ. — Одюков пуххи.

**48.** 1954 ç. ЧР-ин Патăрьел р-чи Сăкăтра В.Барабановран (Шавлама старикрен) Юхма Мишши çырса илнĕ. ЧПГĂИ ĂА, III, 181. С. 180.

**49.** 1975 ç. ЧР-ин Комсомольски р-чи Комсомольскире И.Красноперцовран В.Сорокина çырса илнĕ. — Одюков пуххи.

**50.** 2003 ç. ЧР-ин Муркаш р-чи Çĕнĕ Тăмлайра 64-ри Г.К.Палкинран А.Г.Палкина çырса илнĕ. — Сосаева пуххи.

**51.** 1932—1973 çç. ЧР-ин Муркаш р-чи Йӳçкассинче Анисимовран (1899 çулта çуралнă) И.А.Патмар çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 448. С. 10. *Уй-хир кайăкĕ* — тискер чĕр чун.

**52.** 1992 ç. ЧР-ин Патăрьел р-че А.Куракова çырса илнĕ. — Егоров пуххи.

**53.** 1992ç. ЧР-ин Патăрьел р-чи Турханта О.Козлова çырса илнĕ. — Егоров пуххи.

**54.** 1992 ç. ПР-че М.А.Емельянова çырса илнĕ. — Егоров пуххи.

**55.** 1970 ç. ЧР-ин Вăрмар р-чи Çӳлти Кинчерте 63-ри А.А.Овчинниковран Н.И.Егоров çырса илнĕ. — Егоров пуххи.

**56.** 1904 ç. ТР-ин Теччĕ р-че П.Питеркин çырса илнĕ.— ЧПГĂИ ĂА, I, 156, 142 с.

**57.** ЧР-ин Элĕк р-чи Тавăтра 45-ри Осипова Юлияран А.Осипова çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 1172.С.8.

**58.** 1992 ç. ЧР-ин Елчĕк р-чи Çĕнĕ Тĕмерте М.Маркова çырса илнĕ.— ЧПГĂИ ĂА, III, 368. С. 12

## УЛĂПСЕМ ТĔНЧЕНЕ ХĂТЛĂХ КӲРЕÇÇĔ

**59.** 1971 ç. ЧР-ин Тăвай р-чи Çĕн Пуянкассинче Укахви карчăкран Т.А.Никифорова çырса илнĕ. — Одюков пуххи.

**60.** 1967 ç. ЧР-ин Муркаш р-чи Шурчара 68-ти П.Ф.Сюртуковран С.С.Павлова çырса илнĕ. — Одюков пуххи.

**61.** 1969 ç. ЧР-ин Комсомольски р-чи Кивĕ Сĕнтĕрте А.А.Яковлева çырса илнĕ. — Одюков пуххи.

**62.** 1971 ç. ЧР-ин Çĕмĕрле р-чи Саватерте 60-ти Т.Н.Саеровран Т.В.Дмитриева çырса илнĕ. — Одюков пуххи.

**63.** 1936 ç. ЧР-ин Красноармейски р-чи Сурăмхĕрри Карайра 51-ри И.В.Васильевăран И.А.Патмар çырса илнĕ. — ЧПГĂИ АА, III, 448. С. 17.

**64.** 1932—1973 çç. Пермь обл-ĕн Тавда хулинче В.К.Кирилловран (1901 ç. çуралнă) И.А.Патмар çырса илнĕ.— ЧПГĂИ ĂА, 448. С. 26.

**65.** 1955 ç. ЧР-ин Патăрьел р-чи Сăкăтра В.Барабановран (Шавлама старикрен) Юхма Мишши çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 453. Л. 24.

**66.** 1948 ç. ЧР-ин Патăрьел р-чи Сăкăтра асламăшĕнчен А.Я.Семеновăран Юхма Мишши çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 453. Л. 4.

**67.** 1961 ç. ЧР-ин Çĕрпÿ р-чи Ивалчакассинче 86-ри Ф.И.Илларионовран Д.Е.Егоров çырса илнĕ. — Одюков пуххи.

**68.** ЧР-ин Çĕрпÿ р-чи Анаткасра 78-ти А.Ф.Орешкинăран Н.Егоров çырса илнĕ. — Егоров пуххи.

## УЛĂПСЕМ АТĂЛ ÇИНЕ КИЛЕÇÇĔ

**69.** 1961 ç. ТР-ин Теччĕ хулинче 77-ри С.А.Казаковран В.Ахун çырса илнĕ. — Юмарт пуххи. *Аша* — турă ячĕ. *Кемел* — чак. *Этем чĕлхи кăларса...* — этем чĕлхипе калаçса.

**70.** 1949 ç. ТР-ин Пăва р-чи Альшихре Ф.И.Волковран В.Ахун çырса илнĕ. — Юмарт пуххи.

**71.** 1960 ç. ТР-ин Теччĕ р-чи Кăнна Кушки ялĕнче Ф.П.Петровран В.Ахун çырса илнĕ. — Юмарт пуххи.

**72.** 1978 ç. ЧР-ин Вăрмар р-чи Çÿлти Кинчерте 71-ри А.А.Овчинниковăран (?) Н.И.Егоров çырса илнĕ. — Егоров пуххи.

**73.** 1957 ç. Алма-Атаран П.Г.Любимов çырса янă (1885 ç. ЧР-ин Тăвай р-чи Ураскассинче çуралнă, 16 çулта чухне тăван ялтан тухса кайнă). ЧПГĂИ ĂА, III, 132, 949 инв. №. Г.Юмарт куçарнă. *Калăм кунĕ* — христианлăха йышăнман чăвашсен мăнкунĕ, вăл юн кун килнĕ. *Сарă ту* — хальхи Саратов вырнаçнă тĕл пирки сăмах пырать пулас.

**74.** 1947 ç. ТР-ин Пăва р-чи Кипеккассинче 68-ти Н.Н.Поповран В.Ахун çырса илнĕ. — Одюков пуххи.

**75.** 1932—1973 çç. ЧР-ин Шупашкар р-чи Анаткас Тăрăнта Ф.К.Кузьминран (1893 ç. çуралнă) И.А.Патмар çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 448. С. 13. *Атăл çуттине* — Атăл сăрчĕ çине.

**76.** ЧР-ин Сĕнтĕрвăрри р-чи Атлашевăра А.И.Иллинран В.И.Сарилов çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 747. С. 33.

**77.** 1968 ç. ЧР-ин Çĕрпÿ р-чи Çатрара М.Н.Николаевăран Юхма Мишши çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 453. Л. 44—45.

**78.** 1977 ç. ЧР-ин Вăрмар р-чи Çÿлти Кинчерте 70-ти А.А.Овчинниковăран Н.И.Егоров çырса илнĕ. — Егоров пуххи.

**79.** 1930 ç. ЧР-ин Çĕрпÿ р-чи Кăшаркассинче И.Корсаковран Çуйăн Хĕветĕрĕ çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 353. Л. 52.

**80.** 1972 ç. Ульяновск обл-чи Баратаевкăра Имет старик каланине асилсе 1974 ç. Н.И.Егоров çырса хунă. — ЧПГĂИ ĂА, III, 386. Л. 31.

**81.** 1958 ç. ЧР-ин Красноармейски р-чи Чиркÿллĕ Алманчра 82-ри А.Сорокинран В.Харитонов çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 201,1661 инв.№.

**82.** Ку сыпăка «Перевод основного текста «Книги Ахмеда ибн-Фаджлана» на основе Межхедской рукописи, Йакута, Наджиба Хаммадани и Амина Рази» текстран илнĕ, вырăсла тексчĕ А.П.Ковалевскин «Книга Ахмеда ибн-Фадлана о его путешествии на Волгу в 921—922 гг.» кĕнекинче пичетленнĕ (Харьков, 1956). Чăвашла Г.Юмарт куçарнă, вăл текст малтанхи хут 1984 ç. «Революциченхи чăваш литератури. Текстсем. 1 т.» кĕнекере пичетленнĕ (45—46 с.). Текин Ибн-Фадлан-

па пĕрле Атăлçи Пăлхара килнĕ çын, кунта вăл улăп çинчен автора Багдадрах каласа кăтартни çинчен сăмах пырать. *Елтĕпер* — Атăлçи Пăлхар патшалăхĕн чичи аслă пуçлăх титулĕ. *Йаджуджсемпе маджуджсем* — халап-юмахра асăнакан гог тата магог халăхсен çыннисем. *Чике* — тăршшĕ виçи (кунта пăлхарсем хушшинче çирĕплетнĕ чике çинчен сăмах пырать, тĕрлĕ çĕрте вăл кăшт урăхларах пулнă). *Вису* (весь) — çурçĕрте Шурă кÿлĕ çывăхĕнче пурăннă халăх çĕршывĕ. Хÿме... Кунта халап-юмахра Александр Македонский çурçĕрте ылтăнпа кĕмĕлтен хывтарнă тесе шутлакан хÿме çинчен сăмах пырать. Кун йышши халап тусем çинчен калакан сăмах-юмахран тухса кайнă.

**83—84.** Ку сыпăксене «Путешествие Абу-Хамида ал-Гарнати в Восточную и Центральную Европу (1131—1153 гг.)» кĕнекерен илнĕ (М.,1971. С. 43—44, 61). Вĕсем пĕр хыпар çинчен пĕр çын икĕ тĕрлĕ каланăскерсем шутланаççĕ. *Адитсем* — халапра каланă тăрăх, Юманпа Худрамаут хушшинчи пуш хирте пурăннă пысăк пÿллĕ çынсем (халăх). Вĕсене Коранра темиçе хутчен те асăннă.

## УЛĂПСЕН ВĂРÇИСЕМ, ТĔРЛĔРЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ

**85—86.** 1978 ç. ЧР-ин Вăрмар р-чи Çÿлти Кинчерте 63-ри А.А.Овчинниковран Н.Егоров çырса илнĕ // Халăх ăс-хакăлĕ. 1997, юпа, 21, 1 №.

**87.** 1974 ç. ЧР-ин Шупашкар р-чи Улатăр Макаçра 63-ри Ф.А.Андриановран Е.С.Сидорова магнитофонпа çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, VI, 230, 4—5 кассетăсем. *Мăнă* — пысăк.

**88.** 1879—1882 çç. Ульяновск обл-ĕн Чăнлă р-чи Чăвашкассинче В.И.Михайлов çырса илнĕ. Ал çырăвĕ Хусанти патшалăх университечĕн библиотекинче упранать. — ОРРК, 2376 инв. №. С. 405—406. В.Ахун тупса панă, вырăсларан Г.Юмарт куçарнă.

**89.** 1943 ç. ЧР-ин Çĕрпÿ р-чи Актайра амăшĕнчен А.Д.Дмитриевăран Çуйăн Хĕветĕрĕ çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 353. Л. 46—47.

**90.** 1932—1973 çç. ЧР-ин Красноармейски р-чи Яманакра Н.Д.Даниловран И.А.Патмар çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 448. С.15—16.

**91.** 1950 ç. ЧР-ин Патăрьел р-чи Сăкăтра асламăшĕнчен А.Я.Семеновăран Юхма Мишши çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 453. Л.15.

**92.** 1955 ç. ЧР-ин Патăрьел р-чи Треньелте А.Ельнуков старикрен Юхма Мишши çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 453. Л. 25. *Çĕмренçĕ* — ухăçă (ухăпа перекен).

**93.** 1932—1973 çç. ЧР-ин Красноармейски р-чи Кайри Карăкра П.Александровран И.А.Патмар çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 448. С. 29.

**94.** 1931 ç. Самарти план институчĕн студенчĕ И.Марузькин çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 353. Л. 60—63.

**95.** 1932—1973 çç. ЧР-ин Шупашкар р-чи Анаткас Тăрăнта И.Ф.Федоровран (1882 ç. çуралнă) И.А.Патмар çырса илнĕ. —ЧПГĂИ ĂА, III, 448. С. 30.

**96.** 1936 ç. Оренбург обл-ĕн Октябрьски р-чи Октябрьскинче метеорологи станцийĕн пуçлăхĕнчен И.Т.Тимофеевран Çуйăн Хĕветĕрĕ çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 353. Л.35—39.

**97.** 1961 ç. ЧР-ин Çĕрпÿ р-чи Шалчакассинче 86-ри Ф.И.Илларионовран Д.Е.Егоров çырса илнĕ. — Одюков пуххи. *Шан* — катка.

**98.** 1952 ç. ЧР-ин Патăрьел р-чи Сăкăтра асламăшĕнчен А.Я.Семеновăран Юхма Мишши çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 453. Л.23.

**99.** 1929 ç. ЧР-ин Çĕрпÿ р-чи Актайра амăшĕнчен А.Д.Дмитриевăран Çуйăн Хĕветĕрĕ çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 353. Л. 49—50.

**100.** 1944 ç. ЧР-ин Муркаш р-чи Юнкăпуçĕнче Çуйăн Хĕветĕрĕ çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 353. Л.40—42.

**101.**1931 ç. ЧР-ин Çĕрпÿ р-чи Актайра П.Тимофеевпа амăшĕнчен А.Д.Дмитриевăран Çуйăн Хĕветĕрĕ çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 353. Л.58—59.

**102.** 1932—1973 çç. ЧР-ин Шупашкар р-чи Хыркассинче Т.Г.Гордеевран (1899 ç. çуралнă) И.А.Патмар çырса илнĕ. —ЧПГĂИ ĂА, III, 448. С.21—25. *Акка* — аппа, *апай* — анне.

**103.** 1935 ç. ЧР-ин Шупашкар р-чи Самоккассинче И.М.Марковран (1900 ç. çуралнă) И.А.Патмар çырса илнĕ. — ЧПГĂИ, III, 448. С.11.

**104.** 1993 ç. ЧР-ин Шăмăршă р-чи Палтиелтен 5 кл. вĕренекен И.Филиппова çырса янă // Çил çунат, 1993. 9 №. 1 с.

**105.** 1974 ç. ТР-ин Пăва р-чи Элшелте М.Т.Кверкинтан В.Ашкеров çырса илнĕ. — Одюков пуххи.

**106.** 1940 ç. ЧР-ин Красноармейски р-чи Тăватпÿртре 72-ри К.П.Прокопьевран И.А.Патмар çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 448. С. 6.

**107.** 1947 ç. ТР-ин Пăва р-чи Кипеккассинче 68-ти Н.Н.Поповран В.Ахун çырса илнĕ. — Одюков пуххи.

**108.** 1956 ç. ЧР-ин Патăрьел р-чи Тикешре П.М.Лисицинран Юхма Мишши çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 453. Л. 26—29. Паспортне пĕлтернĕ май Юхма Мишши çапла асăрхаттарать: «Петĕр кукка (П.М.Лисицин) асаннепе питĕ туслăччĕ, пирĕн пата Сăкăта килсессĕн вара асаннепе ăмăртсах юмах ярса пире савăнтаратчĕç».

**109.** 1964 ç. ТР-ин Пăва р-чи Рункăра Н.А.Енилин çырса илнĕ. — Улăп. С. 26—28. *Пăлат* — хурçă.

**110.** 1949 ç. ТР-ин Пăва р-чи Рункăра 19-ти В.М.Акулининран В.Ахун çырса илнĕ. — Одюков пуххи. *Каççак* — табун (кĕтÿ).

**111.** 1993 ç. ЧР-ин Шăмăршă р-чи Палтиелтен 5 кл. вĕренекен Д.Яковлева çырса янă // Çил çунат. 1993. 11—12 №. С. 1.

**112.** 1949 ç. ЧР-ин Патăрьел р-чи Сăкăтра Алим кĕтÿçрен Юхма Мишши çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 453. Л.5—6.

Алим пичче çинчен Юхма Мишши хăйĕн 1974 çулхи «Алим пичче улăпĕсем» ятлă ал çырăвĕнче çапла çырса кăтартать: «Алим пичче ман асра ĕмĕрлĕхех юлнă. Мĕскĕн кĕтÿç пире, ачасене, питĕ юрататчĕ çав. Эпир те ăна питĕ юрататтăмăр.

Хальхи пекех астăватăп: лăкăштин, лăкăштин тутарса утатчĕ çап-çутă калушĕпе, хăрах ури кăшт уксахчĕ унăн.

Эпир, Ентимер кассинчи ачасем, выльăхсене кĕтсе илнĕ хыççăн ялан Алим пичче тавра пуçтарăнаттăмăр. «Линькка-линькка» юрласа, шăхлич каласа пире ташă ташлаттаратчĕ вăл.

Алим пичче сăкăтсем марччĕ, çавăнпа Ентимер кассинчи çынсем патĕнче черетлĕ пурăнатчĕ: пĕрре пĕрисем патĕнче, ыран юнашаррисем патĕнче, унтан тата теприсем патĕнче. Алим пичче пирĕн пата çĕр каçма килессе эпĕ куç пекех кĕтеттĕм. Вăл вара каçхи апат çинĕ хыççăн асаннепе калаçма тытăнатчĕ. Улăп çинчен те, Ламан паттăр çинчен те, вун икĕ пуçлă аçтаха çут тĕнче хуçи пулса тăни çинчен те, Али паттăр çĕр хăлăпне шыраса тупни çинчен те, Патман паттăр çул çÿревĕсем çинчен те калаçатчĕç. Вĕсем пĕр-пĕрне каласа кăтартнине эпĕ астуса юлаттăм, кайран вĕсен халапĕсем мана «Элпи чечекĕсем» легендăна çырма та пулăшрĕç.

— И-и-и, Мишша, эс ÿссе пысăкланса кайнă-çке, — тетчĕ вăл мана ялан. — Маттур ача эсĕ, —тетчĕ. — Ваттисене хисеплен, пархатару пурах сан, — тетчĕ.

Унтан асаннене:

— Наçтуç, ÿссен акă вăл сан пекех ăста пулĕ-ха, — тетчĕ.— Эпир унпа акă машина çине ларăпăр та ту-ту-у-ут! Шупашкара кайăпăр. Мишша унта вĕренме кĕрĕ, пысăк çын пулĕ.

Шупашкарта пединститутра иккĕмĕш курс пĕтернĕ хыççăн эпĕ тахçан Алим пиччерен илтсе çырнă легендăсене тетрадьпе шкаф тăрринчен шыраса тупрăм. Асанне ун чух вилнĕччĕ ĕнтĕ. Çав тетрадь мана ачалăха аса илтерчĕ. Эпĕ аннерен ыйтрăм:

